А 23
18739

Леонид Агаков

# САЛТАКСЕМ



Национальная библиотека ЧР
4-018739

18739. чув.

*Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçинче халăх телейĕшĕн çапăçса пуçĕсене хунă чăваш писателĕсене — хамăн тусăмсене пĕтĕм кăмăлтан ырăпа асăнса кăларатăп çак кĕнекене.*

АВТОР.

**ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ**
**Шупашкар — 1975**



К С(Чув)
А23

Леонид АГАКОВ

# САЛТАКСЕМ

Повеçсемпе калавсем





Чăваш халăх писателĕ Леонид Яковлевич Агаков, Отечественнăй Аслă вăрçă ветеранĕ, вăтăр çул ытла ĕнтĕ хăйĕн произведенийĕсенче совет çыннисен иксĕлми патриотизмĕ, çапăçу хирĕнчи хастарлăхĕпе паттăрлăхĕ, вĕсем хамăрăн юратнă Тăван Çĕршывшăн, унăн чысĕпе ирĕклĕхĕшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен, хăйсен пурнăçне те хĕрхенмесĕр кĕрешме хатĕр пулни çинчен çырать.

Л. Я. Агаков вăрçă темипе çырнă кĕнекесем пурĕ 25 ытла тухнă.

Çак кĕнекере те сăмах Тăван Çĕршыва хӳтĕлекен паттăрсем çинчен пырать. Ахальтен мар автор хăйĕн кĕнекине «Салтаксем» тесе ят панă.

Пурте салтаксем унта: калавсенчи чăваш каччисем — Захаровпа Палюков сержантсем те, виçĕ вăрçăра пулнă майор та, ватă учитель Яков Ивановичпа унăн хĕрĕсем те, аллăран иртнĕ колхозница Варвара Васильевна та, партизансен юрăçи, çамрăк комсомолка Маша та, очерксенчи Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орловпа Социализмла Ĕç Геройĕ М. С. Степанов та, А. Г. Тарасов партизан та, чăваш поэчĕсем Хусанкайпа Алга та, кĕнеке авторĕ хăй те...

Пурте тискер тăшмана хирĕç хастаррăн çапăçнă, Аслă Çĕнтерӳ кунне—пĕтĕм халăх телейĕн кунне — çывхартма чунтан тăрăшнă.

ПРОВЕРЕНО



# Чăваш каччи Захаров тата ыттисем

Çĕн хăватпа вĕрет мухтавлă пурнăç,
Сая кайман эпир юхтарнă юн.
А. Алка.

1

Аякран пăхсан, кунта салтаксем — вĕсемпе пĕрле темиçе офицер — çапăçусем хушшинчи ăнсăртран килсе тухнă пушă вăхăтра канма ларнă, теме май пур...

Хутăш вăрманти уçланкă хĕррине темиçе кун каялла питĕ пысăк бомба ӳксе сахалтан та виçĕ метр тарăнăш, тăват-пилĕк метр сарлакăш лакăм—воронка туса хунă. Юнашарти çӳллĕ те тӳп-тӳрĕ ăвăс, тымарĕ-мĕнĕпех тăпăлса тухса, сывлăшалла çĕкленнĕ, унтан, аялалла çаврăнса ӳксе, лакăма урлă выртнă. Çав лакăм тавра халь салтаксем ларса тухнă—хăйсем çӳлте, урисене аялалла уснă. Пурте шăп, чылайăшĕ чикарккă ĕмеççĕ, тап-таса уçă сывлăшра махорка кăвакрах тĕтĕмĕ çӳлелле пĕтĕрĕнсе хăпарса ирĕлет.

Ĕнтĕ сентябрь уйăхĕ пĕтсе пырать, çапах та çанталăк ытармалла мар лайăх — ăшă, лăпкă. Сенкер пĕлĕт çуса тасатнă кантăк пек курăнать. Йывăççен саралнă çулçисем каçалла сулăннă хĕвел çутинче ылтăнпа сăрланă пекех туйăнаççĕ. Таçта, туратсем хушшинче, куçа курăнман кайăксем чĕвĕлтетеççĕ... Вăрман леш енче вăхăчĕ-вăхăчĕпе пулеметсем тăкăртатни, сайра-хутра снарядсем ӳксе çурăлни илтĕнес пулмасан, çĕр çинче нимĕнле вăрçă та çук, темелле. Тен, паян çапăçу çуккипе, таврара çакăн пек ырă та лăпкă пулнипе пухăнса ларнă салтаксемпе офицерсем ку уçланка?

Çук çав, ун пек мар. Канма мар, пĕр-пĕринпе ытахальтен сăмах ваклама мар килнĕ вĕсем кунта. Уçланкăра виççĕмĕш стрелковăй ротăри коммунистсен пухăвĕ пырать. Пĕр çирĕммĕн пухăннă вĕсем. Çыннисем тĕрлĕрен: хăшĕсен пичĕ-куçĕ те пĕркеленме пуçланă, тăнлавĕсем тĕлĕнчи çӳçĕ те кăвакарнă, теприсен янахĕсене бритва та лайăххăн тĕкĕнеймен-ха. Анчах пĕрре пăхсанах курăнать — вĕсем пурте çителĕклех тар шăршланă ĕнтĕ, вут-çулăм ăшĕнче сахал мар пулнă, вилĕме хирĕç куçа-куçăн тăнă, вилĕм, вĕсене çĕнтерейменнипе, хăй хăраса чакнă. Аслăраххисем хушшинче дивизи ветеранĕсем те пур: вĕсем нимĕçсене Мускав патĕнчен хăваланă, Мускавпа Смоленск облаçĕсенчи çĕршер ялсемпе вуншар хуласене ирĕке кăларнă, Калинин тăрăхĕнче çапăçнă, унтан вĕсене кăнтăралла илсе килнĕ те, халь акă, Курск хысакĕ вĕçĕнче темиçе уйăх тăнă хыççăн, Гитлер хурахĕсене пĕр вĕçĕм хĕвеланăçнелле хăвалаççĕ. Вĕсен кăкăрĕсем çинче, орденсемпе медальсемсĕр пуçне, хĕрлĕпе сарă тĕслĕ кĕске кăна хăюсем курăнаççĕ — çапăçусенче пĕрре кăна мар аманнине, Таван çĕршывшăн юн тăкнине кăтартакан хисеплĕ паллăсем...

Çак кунсĕнче дивизи — пĕтĕм фронтпа пĕрле — çĕнĕрен наступлени пуçласа, Десна шывĕ урлă каçмалла, унăн йывăр та тумхахлă çулĕ малашне Днепр еннелле, Белоруссинелле каять. Паянхи сăмах çав çитес наступлени пирки, коммунистсемпе комсомолецсен яланхи пекех малта пымалли, çапăçусенче хăйсен примерĕпе ыттисене хавхалантармалли çинчен пулмалла. Пухăва дивизи политотделĕнчен те икĕ çын килнĕ ав, ун пекки кашнинчех пулмасть.

Анчах пуху чи малтан темиçе салтакпа кĕçĕн командир хăйсене партие илме ыйтса панă заявленисене пăхса тухрĕ. Пĕр уйăх каялла ирттернĕ юлашки пуху хыççăн ун пек заявленисем вуннă таран пухăннă, бюро вĕсене çийĕнчех пăхса тухнă, анчах та тăтăшах çапăçусем пынипе коммунистсене пĕр çĕре пухма май килмен. Вăхăт çавăн пек тăсăларах кайнипе вара заявлени панисенчен темиçе çын паянхи пухăва пырайман — юлашки кунсенчи çапăçусенче е вилнĕ, е аманнă.

«Вилмелле пулсан та, хама коммунист тесе шутлама ыйтатăп»,— тесе çырнисем çеç юлнă вĕсенчен...

Бомба воронкин пĕр енче аллине хутсем тытса тăракан рота парторгĕ Белахов старшина, чикан евĕрлĕрех пĕр вăтăр çулсенчи куçлăхлă çын, çапăçусенче вилнисен хушамачĕсене каларĕ те пилоткине хыврĕ:

— Тăван çĕршывшăн çапăçса пуçĕсене хунă, пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă паттăрсене ура çине тăрса хисеп тăвар, юлташсем...

Пуху пĕр минут хушши шăп тăчĕ. Унтан старшина, аллипе хуллен сулса, пурне те ларма хушрĕ.

— Халь ĕнтĕ чĕррисен ыйтăвĕсене пăхар,— терĕ вăл.— Пирĕн кунта тăватă заявлени. Партбюро вĕсене пурне те кандидата илме йышăннă. Акă, иккĕмĕш взводри Лабазюк сержант заявленийĕ. Пур-и Лабазюк? — Старшина пĕр аллипе куçлăхне хывса илчĕ те воронка тавра ларакансем çине пăхрĕ.

— Пур! Кунта! — илтĕнчĕ çав самантрах. Воронка хĕррине пĕр çирĕм иккĕсене çитнĕ сап-сар çӳçлĕ, пысăк кăвак куçлă украинец тухса тăчĕ. Вăл гимнастерка аркине унтан-кунтан йăпăр-япăр турткаласа тӳрлетрĕ, нумай хура-шурă курнă пилоткине чалăштарарах пусса лартрĕ, кăкăрĕ умĕнчи автоматне меллĕрех вырнаçтарчĕ.

— Петр Ксенофонтович Лабазюк Донбасра, Кривой

Рогра, шахтер çемйинче çуралнă, çичĕ класс пĕтернĕ, унтан шахтăра ĕçленĕ,— аллинчи хут çине пăхнă май каласа пычĕ старшина.— Фронтра — 1941 çулхи августран пуçласа. Икĕ хут аманнă. Пирĕн дивизие кăçалхи февральте килнĕ. Автоматчик... Малтанхи «За отвагу» медаль çумне çак хушăра тата тепĕр «За отвагу», унтан Хĕрлĕ Çăлтăр хутшăннă... Партие кĕме рекомендацисене рота командирĕ аслă лейтенант Шамро тата автоматчиксен взвочĕн командирĕ аслă сержант Гудилов панă. Лабазюк çапăçура хăюллă, темле йывăрлăха лексен те çухалса каймасть, кирлĕ самантра яланах юлташĕсене пулăшать, тесе çыраççĕ вĕсем... Ново-Алексеевкăшăн çапăçнă чух, нимĕçсем контратака пуçласан, вăл чул çурт подвалĕн чӳречи умĕнчи шăтăка вырнаçса, çирĕм икĕ фашиста пĕтернĕ.— Старшина каллех пуçне çĕклерĕ.— Тен, астăватăр та пулĕ, юлташсем, кун çинчен дивизионкăра * та çырнăччĕ...

— Унсăрах пĕлетпĕр, хамăр курнă! — терĕ ăна хирĕç тахăшĕ.

— Шăп çав çапăçушăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр панă.

— Ăна та пĕлетпĕр!

— Эппин, халĕ Лабазюк юлташа хăйне сăмах парăпăр. Каласа кăтарт, сержант, хăвăн биографине.

Пăлханнипе хĕрелсе кайнă Лабазюк сăмахне тăрукках пуçлаймарĕ, юлташĕсенчен пулăшу ыйтнă пек ункун пăхкаларĕ, ерипен ӳсĕрсе илчĕ.

— Ан имен, ан имен, Лабазюк! Ай хăвăн пурнăçунта мĕн-мĕн пулнине манса кайрăн-и? — хавхалантарчĕ пĕри.

— Çапăçура именсе тăмастăн-çке! — терĕ тепри.

— Дак то ж в бою...— вырăсла-украинла сăмахсене хутăштарса кала пуçларĕ вара Лабазюк.— Туточки хрица-хвашиста бить треба, стесняться нема времени. А що про себе говорить? Товарищ старшина усе сказав... Народився у двадцатом роки, учився, потом работав. Батька мене хотив женити, да эта проклята война помешала свадьбу сыгратиме. И где тепер вона, моя невеста, поняти не маю. Може, у Неметчину угнали, а може давно у сырой земли лежить. А я сразу на хронт пошев, уже третье лито воюю...

---

* Дивизионка — дивизи хаçачĕ.

— Çапăçури ĕçсем мĕнлерех пыраççĕ? — ăна пӳлсе ыйтрĕ политотделтан пынă офицер.

— Каласа пар, Лабазюк, каласа пар,— терĕ рота командирĕ Шамро. Кам пĕлет, тен, унăн çак самантра хăйĕн салтакĕсем мĕн тери маттур пулнипе политотдел çыннисем умĕнче кăштах мухтанса илесси те килчĕ-и...

— Дак вы ж вси знаитиме,— терĕ сержант.— Як увижу хвашиста, тут же стараюся его на тот свит к господу-богу проводить. Хай там живетиме, с чортами горилку пьетиме, али с ангелями блюдуеть, мени все ровно, тильки щоб не був на нашей советской земли, окоянный. Нема ему туточки миста! И не должно быти!

Ку сăмахсене сержант питĕ тарăхса каларĕ, анчах пухурисем кулса ячĕç. Хăшĕсем шăпăр-шăпăр ал çупса та илчĕç.

— Тĕрĕс калатăн, Лабазюк, маттур! — кăшкăрчĕ тахăшĕ.

— Ну, кам тухса калас тет Лабазюк юлташ пирки? — ыйтрĕ унтан парторг.

— Мĕн калаçса тăмалли пур!

— Пĕлетпĕр ăна пурте, лайăх каччă! — илтĕнчĕç сасăсем.

— Тен, хирĕç калас текенсем пур?

— Çу-ук, йышăнас!

— Апла пулсан — тӳрех сасăлатпăр-и?

— Сасăла!

Лабазюка парти кандидатне илме пурте пĕр кăмăллăн ал çĕклерĕç.

Унтан парторг пĕрремĕш взводри пулеметчик Иван Архипкин заявленине вуласа пачĕ. Вырăс çынни иккен, Рязань таврашĕнчен. Нумай çапăçнă, наградăсем илнĕ. Ун пирки те ротăри коммунистсем питех калаçса тăмарĕç: тивĕçлĕ, йышăнас! Архипкин хыççăн Койгельды Абикеев ятлă казах йĕкĕчĕшĕн сасăларĕç. Питĕ паттăр, нимрен хăраман çын иккен вăл. Ливны хули çывăхĕнчи пĕр пысăк салашăн çапăçнă чух, нимĕçсем танксен хӳттипе контратака тапратса ярсан, çак Койгельды ПТР пăшалĕнчен пере-пере, нимĕçсен икĕ танкне çунтарса янă. Анчах виççĕмĕшĕ пирĕн траншейăсем патнех çитнĕ, вăл ĕнтĕ кĕç-вĕç траншейăна «утюглама» тытăнма пултарнă, çав вăхăтра Абикеев унăн гусени-

цисем айне гранатăсен çыххине ывăтма ĕлкĕрнĕ. Танк вара тек хускалайман, унăн экипажне тыткăна илнĕ.

Хăйне пăхсан, çав Койгельды ĕмĕрне те ун пек паттăр пулассăн туйăнмасть. Пĕвĕпе те пысăк мар, хулĕçурăмĕ те юмахри паттăрсене аса илтермест, хурарах сăнĕ-пичĕ çинчи хĕсĕкрех куçĕсем çеç хĕрӳллĕн ялкăшаççĕ. Вĕсенчен темле вĕри çутă тухса тăнăн туйăнать.

Сасăлас умĕн ăна рота командирĕ питĕ ырларĕ:

— Маттур йĕкĕт! Паттăр! Пурте Койгельды пек çапăççан, эпир тăшмана тата ытларах пĕтерсе пынă пулăттăмăр. Çак инçетри çеçенхир каччинчен пурин те пример илмелле!

Абикеев хăй ним чĕнмесĕр, çĕрелле пăхса, пĕрре чуптуса курман хĕр пек хĕрелсе кăна тăчĕ...

— Халĕ юлашки заявление пăхса тухăпăр,— терĕ парторг, казах йĕкĕчĕ пирки сасăланă хыççăн.— Ку заявление ефрейтор Гурий Захарович Захаров панă. Пур-и Захаров?

Вăл паçăрхи пекех куçлăхне хывса ун-кун пăхрĕ.

— Кунта...— илтĕнчĕ ăна хирĕç хăюсăртарах сасă.

Халь воронка хĕррине вăтам пӳллĕ, чăмăр питлĕ, кăшт каçăртарах сăмсаллă та хуратутлă яш-кĕрĕм тухса тăчĕ. Сулахай аллине бинтласа çинçе кантрапа мăйĕнчен çакса янă — алли аманнă ĕнтĕ. Кăкăрĕ çинче «За отвагу» медаль çутăлса тăрать.

Парторг каллех куçлăхне тăхăнса, аллинчи хутсем çине пăха-пăха калама тытăнчĕ.

— Захаров юлташ — иккĕмĕш взводри чи маттур стрелоксенчен пĕри. Çапăçура яланах хăюллă, атакăсем вăхăтĕнче тăшман çине ним хăрамасăр ыткăнать, тесе çыраççĕ рекомендаци паракансем. Сентябрĕн вунулттăмĕшĕнче, Сусловка ялĕшĕн çапăçнă чух, взвод командирне, Руднев лейтенанта, вилĕмрен çăлнă...

— Мĕнле майпа? — парторга пӳлсе ыйтрĕ политотдел офицерĕсенчен пĕри.— Тĕплĕнрех каласа пар-ха.

— Вĕсен взвочĕ, атакăна ыткăнма хатĕрленсе, тăшман траншейисем патнелле упаленсе пынă. Инçе те юлман ĕнтĕ. Сасартăк Руднев лейтенант хыçне, унăн урисем патнех, нимĕççен гранати пырса ӳкнĕ. Чашкăрма тытăннă, кĕçех çурăлса каймалла. Командирпа юнашарах упаленсе пыракан Захаров çакна асăрханă та, ним шутласа тăмасăр, çав чашкăракан гранатăна ярса тытса, ăна каялла, нимĕçсем еннелле ывăтнă.

Лешӗ самантрах шартлатса ҫуралнӑ. Руднев тӗрӗс-тӗкелех, анчах темиҫе вак осколок Захаров аллинчен пырса тивнӗ...

— Хытах лекрӗ-и? — Захаров еннелле ҫаврӑнса ыйтрӗ ҫав офицерах.

— Ҫук, хытӑ мар,— пуҫне пӑркаласа тавӑрчӗ Захаров,— шӑмма тивмен, ӳте ҫеҫ ҫуркаланӑ. Пӳрнесем хускалаҫҫӗ, ним те ыратмасть, часах ҫыхнине те салтса пӑрахатӑп ӗнтӗ.

— Телей пур санӑн!

— Ну, хӑвӑн биографине каласа пар, эппин, Захаров юлташ,— терӗ парторг.

— Вӑрӑм ан кала, ахалех пӗлетпӗр сана,— хушса хучӗ Захаровсен взвочӗн командирӗ Руднев.

— Манӑн нумай каламалӑх биографийӗ те ҫук,— кулам пекки туса илчӗ ефрейтор.— Эпӗ 1923 ҫулта Чӑваш республикинчи Ҫутӑкас ятлӑ ялта, вӑтам хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. Ман атте ялта пӗрремӗш колхоз председателӗ пулнӑ, ӑна 1930 ҫулхи хӗлле кулаксем вӗлерсе вакка янӑ, ун вилли ҫуркунне тин тупӑнчӗ... Хамӑр ялти шкулта сакӑр класс пӗтерсен, эпӗ...

Ефрейтор малалла мӗн калани никама та илтӗнмерӗ,— хӗвел енчен сасартӑк, ҫуначӗсемпе йывӑҫ тӑррисене касса каяс пек, нимӗҫсен «мессершмичӗ» вӑркӑнса тухрӗ те пуху ҫийӗпе ҫиҫӗм пек вӗҫсе иртрӗ. Ку ҫав тери кӗтмен ҫӗртен пулнипе, никам та ним шухӑшлама та ӗлкӗреймерӗ, пурте тӑруках пуҫӗсене пӗксе илчӗҫ кӑна. Воронкӑн икӗ енче тӑракан Белахов старшина-парторгпа Захаров ефрейтор ҫеҫ тӑшман истребительне хыҫалтан курса юлчӗҫ.

— Аҫтан мурӗнчен сиксе тухрӗ ку шуйттан?—терӗ Белахов, «мессершмитт» йывӑҫ тӑррисем хыҫӗнче куҫранми пулсан, куҫлӑхне тӳрлетсе.

— Юрать-ха, пулеметран сапса хӑвармарӗ,— сас пачӗ тахӑшӗ.

— Курмарӗ вӑл пире,— ҫӑмӑллӑн сывларӗ тепри.

Йӑпӑртлӑх пӑлханса илни часах иртсе кайрӗ, вара парторг каллех Захарова сӑмах пачӗ:

— Кала малалла...

— Хамӑр ялта сакӑр класс пӗтернӗ хыҫҫӑн эпӗ Етӗрнери педтехникумра вӗренме пуҫларӑм. Тӗрӗссипе, манӑн учитель пуласах та килместчӗ, чунӑм пӗчӗкренпех техника еннелле туртатчӗ, пӑравус ҫинчи маши-

нист е парахут капитанĕ пулас килетчĕ. Анчах пирĕн тăрăхра ун чух çавнашкал шкулсем çукчĕ те, ирĕксĕрех педтехникума кĕтĕм. Çав çулах мана комсомола илчĕç, иккĕмĕш курсра вĕренме пуçласан вара...

Çак тĕле çитсен, Захаров ефрейтор сасси каллех хупланса ларчĕ: çывăхрах, сылтăм енче, мотор хаяррăн кĕрлени илтĕнчĕ, унтан çавăнтах, йывăç тăррисем çийĕн, «мессершмитт» ыткăнса тухрĕ те пулемечĕсене шатăртаттарса иртсе кайрĕ. Тарăн воронка хĕрринче ларакансем пурте пĕр харăсах ун тĕпнелле кĕпĕр! тăкăнчĕç. Парторгпа Захаров ефрейтор тата воронка урлă выртнă ăвăс турачĕсем хушшине меллĕн вырнаçса ларнă пуху секретарĕ Воронцов — пуринчен те пĕчĕкрех пÿллĕ, анчах шутсăр çивĕч салтак — кăна хăйсен вырăнĕсенче юлчĕç.

Мотор сасси часах илтĕнми пулчĕ, «мессер» халь самаях инçе кайрĕ ĕнтĕ, анчах воронка тĕпне сикнисем çаплах шăп ларчĕç-ха, вĕсене тăшман истребителĕ кĕçех каялла таврăнассăн туйăнчĕ.

— Никама та амантман-и? Пурте сывах-и? — кăшкăрса ыйтрĕ старшина-парторг.

— Çук пулас, нихăшĕ те шарламасть-иç...

Воронка тĕпĕнчен пуринчен малтан политотделтан килнĕ офицер сиксе тухрĕ те тăпрапа вараланнă çĕнĕ шинельне унтан-кунтан çапкаласа тасатма тытăнчĕ.

— Тухăр, славянсем, хăрушлăх çук, «мессер» киле апат çиме кайрĕ,— терĕ Руднев лейтенант, политотдел офицерĕ хыççăнах сиксе тăрса.

— Таврăнма та пултарать, пĕрре тĕлленĕскер,— терĕ ăна хирĕç тахăшĕ.

— Çук ĕнтĕ, тек таврăнаймасть, «мессерăн» горючи пĕтĕмпе те хĕрĕх минутлăха çеç, ку вара паçăртанпах çапкаланса çÿрет пулмалла.

Çынсем, воронкăран тухса, малтанхи вырăнсене йышăнчĕç. Уçланкă хĕрринче часах махорка тĕтĕмĕ йăсăрланма пуçларĕ.

— Ну, Захаров, каласа пĕтер пуçланă сăмахна,— терĕ унтан старшина-парторг.— Кĕскентерех...

— Ман каламалли те нумай юлмарĕ,— терĕ ефрейтор.— Техникумăн иккĕмĕш курсĕнче мана комсомол секретарьне суйларĕç те, вĕренсе тухиччĕнех ĕçлеттерчĕç. Райкомол членĕ те пулса куртăм икĕ хутчен... Хĕрĕх пĕрремĕшĕнче вĕренсе тухрăм, ĕçлеме хамăр ялах

ямалла турĕç, анчах пĕр кун та ĕçлесе кураймарăм — вăрçă пуçланчĕ. Малтан эпĕ...

Каллех каласа пĕтерееймерĕ Захаров! Çӳллĕ йывăç-сем хыçĕнче — халь ĕнтĕ сулахай енче — паçăрхи пе-кех моторсем хыттăн кĕрлени илтĕнсе кайрĕ. Унччен те пулмарĕ — уçланкă çине хăрасах икĕ «мессер» вăркăн-са тухрĕç те вут-çулăм сапса иртсе кайрĕç. Хальхинче, çывăхрах моторпа пулемет сасси илтĕнсен, парторгпа Захаров та воронка тĕпнелле сикрĕç. Урлă выртакан ăвăс çинчи секретарь кăна, туратсем хушшинчен час тухайманнипе, сикме ĕлкĕреймерĕ. Аялалла ун чĕркуç-çийĕ çинчи хутсем çеç тăкăнчĕç. Пурте шăп выртнă вăхăтра вăл вăраммăн йынăшса ячĕ:

— Ы-ых... чорт...

— Лекрĕ-им, Воронцов? — сиксе тăчĕ парторг во-ронка тĕпĕнчен.

— Алла... сылтăм хула...— шăлĕсене шатăртаттар-са илчĕ салтак.— Сволочь, бандит...

— Атьсемĕр, Воронцова çĕре анма пулăшăр!—кăш-кăрчĕ парторг.

Виççĕн-тăваттăн харăс тытса, çынна воронка тĕпне антарчĕç. Тахăшĕ противогаз сумкинчен «индивидуаль-ный пакет» кăларса çурчĕ, тепри салтакăн фуфайкине хывса илчĕ, гимнастерка çаннине çĕçĕпе касрĕ. Хытах тивнĕ иккен, хулĕнчен юн палкать кăна, чарса та ча-рăнмасть.

— Часрах медсанбата ăсатас пулать!

Салтаксем аманнă Воронцовпа тăрмашнă вăхăтра уçланкăн тепĕр хĕрринче йывăр мина ӳксе шартлатрĕ. Кĕçех тепре, тата тепре... Унтан сывлăшра ыттисем ӳлесе килни илтĕнчĕ.

— Квадрат çине переççĕ! — кăшкăрчĕ рота коман-дирĕ.— Ман хыççăн, вăрмана! Воронцова пулăшăр!..

...Минăсем вăйлă тăвăл вăхăтĕнче улмуççисем çин-чен панулмисем тăкăннă пек тăкăнчĕç. Осколоксем йĕри-тавралла шыва чулпа персен шыв пур еннелле сирпĕннĕ пек сирпĕнчĕç. Аслă лейтенант Шамро хыç-çăн вăрманалла чупнă чух ик-виç çын аманчĕ. Юрать-ха, вилекенех пулмарĕ. Тепĕр вунпилĕк минутран тин вĕсем, вăрмана чылай шала кĕрсе, пĕр вăтă юман айне пухăнчĕç те лăпланиччен малтан питĕ хытă шавласа илчĕç.

— Ну, вăйлă мунча кĕртрĕç шуйттан фрицĕсем!

— Ашшине хёрхенсе тăмарĕç ĕнтĕ...

— Нимех те мар, кĕçех акă хăйсене кунтан та вĕрирех пулĕ, тÿссе кăна тăччăр! «Катюшăсем» ăшалама тытăнсан...

— Деснапа Днепра кутăн чăмсан та çăлăнаймĕç!

Унтан каллех пуху пуçланчĕ.

— Захарова малалла калаттарăпăр-и е паçăр каланипе те çитĕ? — ыйтрĕ парторг коммунистсенчен.

— Кирлĕ мар! — сас пачĕç иккĕн-виççĕн.— Пурте пĕлетпĕр ăна, сасăла, тавай, тÿрех!

Парторг тепре çăвар уçиччен нумайăшĕ хăйсен çапăçусенчи тусне, Етĕрне тăрăхĕнчи чăваш йĕкĕтне партие илме кăмăл туса аллисене çĕклерĕç.

— Лайăх каччă!

Çав касхине Гурий Захаров килте пĕр-пĕччен пурăнакан амăшĕ патне кĕске кăна çыру ячĕ:

«Юратнă аннеçĕм, паян ман пурнăçри чи телейлĕ кун — мана партие илчĕç. Халь ĕнтĕ эпĕ хамăрăн ниăçан манми атте пекех коммунист. Сывлăхăм лайăх, кăмăлăм çирĕп, маншăн эсĕ ним чухлĕ те ан пăшăрхан. Тăшмана çапса аркатнă хыççăн эпир питĕ телейлĕ пурăнăпăр...»

Хăй нумай пулмасть татах аманни çинчен пĕр сăмах та çырмарĕ.

## 2

Çапăçусем тепĕр виçĕ кунтан, тул çутăлнă чух пуçланчĕç...

Пĕр сехет хушши тăсăлнă хăватлă артподготовка хыççăн пĕтĕм фронт çарĕсем Десна еннелле ыткăнчĕç. Малтанхи вунă-вуникĕ километра пирĕн салтаксем çăмăллăнах иртрĕç, темелле. Артиллери хытă çĕмĕрнипе, «катюшăсем» çунтарнипе, сывлăшран калама çук вăйлăн пырса çапнипе гитлеровецсем хăйсен оборонин малти линийĕнчен пит васкавлăн тухса тарнă, вилнисемпе аманнисене те пуçтарса каяйман. Темĕн чухлĕ техника, хĕçпăшал пăрахса хăварнă. Çырма-çатрасенче, лачакаллăрах вырăнсенче лакса ларнă штаб машинисене — нимĕçсен хăйсен «оппелĕсемсĕр» пуçне пĕтĕм Европăран пухнă тĕрлĕ «шевролесене», «мерседессене», «татрсене», «хорхсене» çунтарса яма, юрăхсăра кăларма та ĕлкĕреймен, хуçисем вĕсем çинчен часрах сиксе

аннă та çуранах хĕвеланăçнелле тарнă. Унтан та ытларах: хăшпĕр автомобильсен моторĕсем те кĕрлесех тăраççĕ! Çул çине ыватса хăварнă мотоциклсен, лашисене тăварса илнĕ повозкăсен, снаряд-мина ещĕкĕсен шучĕ те çук.

— Трофей командисем хăшкăлаççĕ ĕнтĕ ку пĕтĕм пурлăха пуçтарса! — кула-кула илнĕ пирĕн салтаксем.

Анчах нимĕçсен малтанах тĕплĕн хатĕрлесе хунă иккĕмĕшпе виççĕмĕш оборона линийĕсем пулнă. Вĕсем пирĕн наступление çавăнта чарса лартма шутланă.

Ирхине пĕр вунă сехет тĕлĕнче Н-ски полкăн иккĕмĕш батальонĕ, ку таранччен ытлашши чăрмавсăрах килнĕскер, Мокрая Балка ятлă сала умне çитсе тухрĕ. Батальон командирĕ рота командирĕсем умне çакăн пек задача лартрĕ: пĕрремĕш рота салана сулахай енчен пырса кĕрет, иккĕмĕшĕ — тӳрех, сылтăм флангра вара — виççĕмĕш рота,— вăл вăрçăччен колхоз фермисем пулнă çуртсем патĕнчен çаврăнса пырса, яла ту енчен йышăнать.

Малтанах Мокрая Балкăра никам та, нимĕнле тăшман та çук пекех туйăнчĕ. Ялĕ те чиперех ларать — ни ишĕлтермен ăна, ни çунтарман. Халĕ те тĕтĕм-çулăм таврашĕ курăнмасть. Садсем те йĕркеллех, сарăхма пуçланă çеç. Вăрçă пынă çĕрте ун пек упранса юлнă ялсене сайра куратăн...

Çапах та комбат çак яла виçĕ çамрăк салтака разведкăна ячĕ: вăрçăри шăплăх час-часах калама çук хăрушă та сиенлĕ. Разведчиксем тепĕр çур сехетренех таврăнчĕç те лăплантармалла каларĕç:

— Ялта нимĕçсем çук. Эпир ял хĕрринчи пахчара икĕ хĕрарăмпа тĕл пулса калаçрăмăр. «Немуйсем» ир-ирех, обозĕ-мĕнĕпех тухса тарчĕç, анчах ялта пĕр ĕне выльăх та хăвармарĕç, йăлт хăйсемпе пĕрле хăваласа кайрĕç, теççĕ. Ĕнисене кайран пусса çиме илсе кайнă ĕнтĕ...

— Ялнех кĕмерĕр-и хăвăр? Урамсем тăрăх çӳремерĕр-и?

— Нимĕçсем çук, терĕç те — каймарăмăр...

— Анчах вăл хĕрарăмсем сире суйнă, улталанă пулсан?

— Мĕншĕн улталаччăр? Хамăр çынсем вĕт, фашистсене тем пекех ылханаççĕ, хăйсене епле асапра усрани çинчен макăра-макăра калаççĕ...

— Ну, юрӗ, эппин...

Кашни хӑйне кӑтартнӑ выранпа, ротӑсем хӑюллӑн, ним пӗшкӗнмесӗр малалла пычӗҫ. Ял енчен нимӗнле сас-хура та илтӗнмерӗ. Анчах яла ҫитесси пӗр пилӗкҫӗр метр юлсан, пирӗн боевой йӗркесем ҫине сасартӑк пӗр харӑсах минӑсем ыткӑнма, пулемет-автомат пулисем пӗлӗтрен ҫӑвакан пӑр пек тӑкӑнма тытӑнчӗҫ. Пӗтӗм тавралӑх кӗрлеме, кисренме тапратрӗ. Халь ҫеҫ тап-таса та лӑпкӑ пулнӑ уйра вут-ҫулӑм ялкӑшма, тӗтӗм-сӗрӗм, тусан-тӑпра мӑкӑрланма тытӑнчӗ. Кашни темиҫе метртах мина шартлатса ҫурӑлать те тӑпра сирпӗнет, ҫутӑлакан пульӑсем вӑрӑм курӑка ҫӗҫӗ пек касса ывӑтаҫҫӗ...

Ыттисем пекех, Гурий Захаровсен роти те тӳрех ҫӗре ӳкрӗ.

— Чавӑр! Окопсем чавса выртӑр! — илтӗнчӗҫ хыттӑн кӑшкӑрнисем.

Анчах ҫакӑн пек вут-ҫулӑм айӗнче выртса хӑвна валли окоп алтса пӑх-ха эсӗ! Кӑшт та пулин ҫӗкленме мар, хускалма та ҫук! Епле пулсан та ҫӗр ҫумне тачӑрах, ҫирӗпрех йӑпшӑнас, ун ҫумне пӑчӑртанас, пӑталанӑ пек выртас килет кӑна... Ҫапах та чавмаллах! Ҫатма пек тикӗс уй варринче типпе юлнӑ пулӑ пек выртнипе нумаях пурӑнаймӑн. Кам пӗлет, тахҫанччен тытаҫҫӗ-ха нимӗҫсем ҫакӑн пек вут-ҫулӑм айӗнче! Пуҫа чикмелӗх те пулин шӑтӑк тумаллах...

Захаров, хӑяккӑн ҫаврӑнса выртса, пиҫиххи ҫумӗнчи кӗске авӑрлӑ кӗреҫине кӑларчӗ те, пуҫне ҫӗр ҫумӗнчен ҫӗклемесӗрех, васкаса чавма тытӑнчӗ.

Нимӗҫсем ҫаплах печӗҫ. Вӗсем ҫак сала патне ҫывхарнӑ совет салтакӗсене малалла кайма пама мар, вырӑнтах пӗр ҫын юлмиччен пӗтерес тенӗ ӗнтӗ. Унта та кунта аманнисем кӑшкӑрни, йынӑшни, пулӑшма чӗнни илтӗнчӗ. Захаров хӑйӗнчен пӗр виҫӗ метрта ҫеҫ выртакан Сайгин хушаматлӑ салтак пуҫне чикмелӗх окоп алтма тытӑннине курчӗ. Кӑшт тӑхтасан, ун ҫине ӑнсӑртран тепре пӑхса илчӗ те — чӗри кӑртах турӗ: ҫав тери тӗреклӗ мӑкшӑ каччи месерле ҫаврӑнса выртнӑ та аллисене ик еннелле ҫунатсем пек сарса пӑрахнӑ... Вилнӗ!.. Ҫав самантрах Захаров ҫумӗпе тепӗр салтак упаленсе иртрӗ. Таҫтан тивнӗ вара ӑна: пичӗ-куҫӗ чӗп-чӗр юн. Хӑй нимӗн те курмасть пулмалла — пуҫне ҫӗр ҫумӗнчех тытса, йынӑша-йынӑша шӑвать.

— Аҫта каятӑн? Вырт йӑпшӑнса! Вӗлереҫҫӗ! — кӑшкӑрчӗ ӑна Захаров.— Тӑхта, санитарсем килеҫҫӗ акӑ!..

Салтак, Захаров каланине итлес вырӑнне, сасартӑк ура ҫине сиксе тӑчӗ те, аллисемпе шывра ишнӗ пек сулкаласа, тылалла чупрӗ. Ҫӑлӑнатӑп, тесе шутларӗ пуль ӗнтӗ вӑл. Анчах хӑй пӗр улт-ҫич утӑм та тӑваймарӗ — тӗшӗрӗлсе анчӗ: тӑшман пули пырса ҫапрӗ ӑна...

— Пӗтетпӗр-иҫ капла...— шухӑш вӗҫсе илчӗ те Захаровӑн, вӑл каллех, шӑлне ҫыртса, хашка-хашка, хытӑ ҫӗре кӗреҫипе танккама тытӑнчӗ. Ҫав вӑхӑтра ун пуҫӗ ҫийӗпе нимӗҫсем еннелле хамӑрӑн пирвайхи снарядсем шӑхӑрса иртрӗҫ. Кӗҫех вӗсен ротинчен чылай малта, сала патӗнче хаплатса ҫурӑлчӗҫ. Ун хыҫҫӑн тата, тата, ҫине-ҫине!

— Пирӗннисем переҫҫӗ! Курнӑ, эппин, эпир йывӑра лекнине,— шухӑшларӗ Захаров, йӑпӑртлӑха ӗҫлеме чарӑнса.— Тен, вӗсен огневой точкисене путарӗҫ, вара малалла кайма та пултарайӑпӑр...

Ҫапӑҫусенче, атакӑсенче нумай хут пулнӑ салтак тӗрӗс шухӑшланӑ. Иккӗмӗш батальон пысӑк йывӑрлӑха лекнине, тӑшман ӑна ҫӗр ҫумне лапчӑтса лартнине полк КПинчен * лайӑх курнӑ, анчах артиллери пехотӑран татӑлса каярах юлнипе ытла тӑруках пулӑшу парайман. Тӗрӗссипе, паян ирхи прорыв хыҫҫӑн артиллерие «ӗҫе яма» нуши те питех пулман, тӑшман йӗркеллӗн хирӗҫ тӑрайманнипе, пехота хӑех ял хыҫҫӑн ял ирӗке кӑларнӑ. Анчах халь акӑ, нимӗҫсен иккӗмӗш оборона линийӗ патне ҫитсен, ҫара стрелковӑй хӗҫпӑшалпа кӑна нимӗн тума та май килмен ҫав...

Мокрая Балкӑна малтан полк артиллерийӗ кисретрӗ. Питӗ хытӑ тӳрӗ. Йӑпӑрт кӑна пуҫне ҫӗклесе пӑхнӑ хушӑрах Захаров сала хӗрринчи темле ҫуртсен пӗренисем сывлӑшалла вӑркӑннине, ик-виҫ ҫӗрте пушар пуҫланнине курчӗ. Нимӗҫсем енчен сахалтарах пеме тапратрӗҫ, унтан вара пӗр хушӑ шӑпланнӑ пекех пулчӗ.

— Путарчӗҫ пулмалла,— шухӑшларӗ Захаров, халь ӗнтӗ чавсисем ҫине ним шиксӗрех ҫӗкленсе.— Кӗҫех атака пуҫланать пуль...

Чӑнах та, тепӗр ик-виҫ минутранах чылай аякран хыттӑн кӑшкӑрни илтӗнсе кайрӗ:

* КП — командный пункт.



Чувашская республиканская библиотека



878 гр

— Рота, малалла-а! Ман хыççă-ăн! Малалла, Тăван çĕршывшăн!..

Захаров самантрах кĕреçине хăй выранне чикрĕ те автоматне тытса сиксе тăчĕ. Чи малтан вăл хăйсен отделени командирне, Неделя хушаматлă сержанта курчĕ. Ирхине вăл сывахчĕ, халь янахне çыхса янă иккен, шап-шур марля витĕр юн сăрхăнса тухни палăрать. Тин çеç аманнă курăнать. Автоматне сылтăм аллипе тытса, сулахайĕпе малалла сулса, вăл темле çĕтсе ларнă сасăпа кăшкăрчĕ:

— Отделени, ман хыççăн! Малалла-а!..

Харăсах çиччĕн-саккăрăн сиксе тăчĕç те, Неделя хыççăн ыткăнчĕç. Захаров, автоматне ик аллипе пăчăртаса, унпа юнашар чупрĕ. Пĕр аллă метр хушшинче вăл темиçе салтак вилнине курма ĕлкĕрчĕ; вĕсем ĕнтĕ нимĕçсем малтан пеме тытăнсанах çĕре тăраннă...

Пирĕн артиллери çаплах печĕ-ха, салара çине-çинех снарядсем çурăлчĕç, вут-çулăм ялкăша-ялкăша илчĕ.

— Яла артиллери хӳттипе çитсе кĕрсен аванччĕ,— чупнă çĕртех шухăшларĕ Захаров.— Çуртсем хушшине кĕрсе кайсан, урăхла вара...

Унччен кăштах лăпланнă нимĕçсем сасартăк çĕнĕрен хăрушла вăйлăн пеме тапратрĕç. Путлансах çитмен иккен вĕсен пулемечĕсемпе миномечĕсем, каллех чĕрĕлчĕç, шуйттансем! Каллех вилĕм сапаççĕ! Унта та кунта минăсем çурăлаççĕ, пульăсем усал сăпсасем пек сăрлатса ирттеççĕ, таврари курăка çулаççĕ, ура патнех тирĕнсе тусан кăлараççĕ. Кăшт маларахра чупакан салтаксем çĕре ӳке пуçларĕç — те аманса-вилсе ӳкеççĕ, те малалла кайма хал çитерейменнипе, ăнланма çук. Сасартăк Захаровран пĕр виçĕ утăм çеç малта пыракан Неделя сержант тăп! чарăнса тăчĕ, ик аллине те харăсах çӳлелле çĕклерĕ. Унăн сылтăм аллинчи автомачĕ çĕре ӳкрĕ, хăй, темле каçăрăлса, пĕр-ик утăм каялла ярса пусрĕ те çурăмĕ çине ласт! турĕ.

Ах, мĕн пулчĕ-ши ăна?!

Захаров çавăнтах ун патне чупса пырса куклентчĕ.

— Сержант юлташ! Неделя! Неделя! — хулпуççинчен тытса силлерĕ вăл ăна.— Мĕн пулчĕ? Амантăн-и? Аçтан лекрĕ, кала часрах, çыхса ярам! Сержант, тетĕп!

Неделя сас памарĕ. Самантлăха кăна куçне ерипен уçса пĕлĕтелле пăхрĕ те юлашки хут вăйсăррăн сывласа ячĕ...

Захаровăн вăл вилнине ниепле те ĕненес килмерĕ. Питĕ туслă пурăннă-çке вĕсем, нумай çапăçусенче пĕрле пулнă, юлашки çăкăр татăкне те икке пайласа çинĕ, пĕр чикаркка та çурмалла туртнă тепĕр чухне...

— Сержант, тусăм! — Захаровăн куççулĕ шăпăрах юхса анчĕ.— Епле-ха ĕнтĕ эп сансăр...

— Эс мĕн кĕл туса ларатăн кунта, Захаров? — çывăхрах кăшкăрчĕ тахăшĕ. Взвод командирĕ Руднев чупса иртет иккен. Йĕп-йĕпе тар хăй, пичĕ-куçĕ тăпрапа, хăрăмпа вараланса пĕтнĕ, куçĕсемпе шăлĕсем çеç шап-шуррăн курăнаççĕ.

— Сержанта... отделени командирне, Неделя сержанта вĕлерчĕç! — кăшкăрчĕ ăна хирĕç Захаров.—Мĕн тумалла?

— Мĕн тăвассу пур? Вилнĕ пулсан — тин чĕртейместĕн! Ун вырăнне отделени командирĕ эсĕ пулатăн! Аçта сирĕн çынсем?

— Малта...

— Чуп часрах вĕсем патне! Унтан — малалла! Малалла!

— Есть...

Анчах малалла каясси пулмарĕ. Фашистсем пирĕн салтаксене каллех çĕре вырттарчĕç те пуç çĕклеме памарĕç. Лару-тăру йывăрланса çитрĕ. Каллех унта та кунта аманнисем кăшкăрни илтĕнчĕ. Захаров та отделенири салтаксемпе пĕрле выртрĕ те хăйсен командирне вĕлерни, Руднев лейтенант ун вырăнне ăна юлма хушни çинчен пĕлтерчĕ.

— Питĕ шел Недельăна, ытла та шанчăклă ачаччĕ...

— Мĕн тăвас тетĕн... Малалла та кун пекех пулсассăн, нумайăшĕ паян каçхи апата кĕтсе илеймĕпĕр-ха,— терĕ унпа юнашар выртакан Федюнин хушаматлă салтак.

Вĕсем çапла калаçса илнĕ вăхăтра сылтăм енче темскер çав тери хытă кĕмсĕртетсе илчĕ: кĕмсĕр-р... кĕмсĕр-р...

— «Катюша»! «Катюшăсем» юрлаççĕ!..— пурте пĕр харăсах хĕпĕртесе кайрĕç хайхи вут-çулăм айĕнчи салтаксем.

Сылтăмран, сарăхма пуçланă, анчах халлĕхе пĕртте çаралман вăрман енчен, çунакан вутпуççи пек тăрăхла япаласем — «катюша» снарячĕсем вăркăнма тытăнчĕç.

Кĕçех Мокрая Балкăра вĕсем шартлатса çурăлни тăпачăпа авăн çапнă пек илтĕнме пуçларĕ: тĕпĕр-тĕпĕр, тĕпĕр-тĕпĕр! Хуп-хура тĕтĕм палкаса çĕкленчĕ. Кăшт тăхтасан, салара шăпланнă пек пулсан, «катюшăсен» батарейи тепĕр залп пачĕ. Каллех тĕпĕр-тĕпĕр, тĕпĕр-тĕпĕр! Каллех тĕтĕм, хăрăм...

— Ну, фрицсем пиçрĕç пуль ĕнтĕ! — терĕ Захаров, чĕркуççи çине тăрса.

— Темле-çке, вĕсем çĕр айĕнче лараççĕ вĕт! — иккĕленчĕ тахăшĕ.

— «Катюша» персе лектернĕ вырăнта çĕр те çунать!

Нимĕçсем пеме чарăнчĕç. Те пĕтрĕç пурте, те, тӳсейменнипе, хăйсен арлан йăвисенчен тухса тарчĕç. Епле пулсан та, çапăçу хирĕ пĕр вăхăтлăха шăпланчĕ, хушшăн-хушшăн çеç тĕрлĕ çĕрте пулеметсем кĕскен тăкăртатса илни тата автоматсем çатăртаткалани илтĕнчĕ.

Пĕтĕм батальонпа пĕрле виççĕмĕш рота та çĕкленчĕ. Мокрая Балка çинелле çĕнĕрен наступлени турĕ. Ку ротăн иккĕмĕш взводĕнчи пĕр отделени умĕнче темиçе кун каялла çеç партие кĕнĕ çамрăк коммунист Гурий Захаров чупрĕ.

— Малалла, атьсемĕр! Малалла-а! Ан юлăр! — часчасах илтĕнчĕ унăн сасси.

## 3

Малтан палăртса хунă пекех, виççĕмĕш рота Мокрая Балкăна ту вĕçĕнчен пырса кĕчĕ. Пĕр-ик сехет каялла ял чип-чиперехчĕ, халĕ вара салтаксем вут хыпса илнĕ çуртсем хушшипе, тĕтĕм-сĕрĕм витĕр чупрĕç. Таврари сывлăш тӳсме çук вĕриленсе кайнă, шартлатса çунакан çурт-йĕрсенчен салтаксем çине шĕл-кăвар, вутпуççисем сирпĕнеççĕ. Боевой йĕркесем арканса кайрĕç ĕнтĕ, анчах Гурий Захаров хăйĕн отделенийĕнчи салтаксене куçран çухатмарĕ, вăл хытарсах хушнипе, вĕсем тăтăшах пĕрне-пĕри çывăх пулма тăрăшрĕç.

Салан ту вĕçĕнче тăшман палăрмарĕ, пирĕн салтаксене хирĕç те пемерĕç, çапах та Захаров боецĕсем, ун хыççăн пырса, вăхăтран вăхăта унталла та кунталла та кĕрлеттеркелесе илчĕç. Уйрăмах — куçпуçа тĕтĕм хупласа лартнă вырăнсенче. Кам пĕлет, тем пур унта, куç курман çĕрте?

Çулăм çавăрса илнĕ колхоз фермисенчен иртсе,

урампа пĕр икçĕр метр пек кайсан, сывлăш кăштах уçăлчĕ, куç куракан пулчĕ. Захаровпа унăн йĕкĕчĕсем сасартăк çыран хĕррине пырса тухрĕç. Мокрая Балка варринче тарăн та сарлака çырма пулнă иккен, унăн тĕпĕпе кăштах шыв юхса выртать, шывăн ик енĕпе — çăра хăмăшпа витĕннĕ йӳçлĕх, лачака. Вăл шурлăх урлă тӳрĕрен этем те, лаша та, танк та каçаяс çук. Эппин, ахальтен мар ку салана «Йĕпе Çырма» тенĕ! Çырма урлă каçса çӳреме икĕ тĕлте, çĕр купаласа, чул сарса, дамбăсем хăпартнă, анчах халь вĕсене гитлеровецсем татса хăварнă.

Çырман ку енче тытăнса тăма хевте çитерейменскер тăшман леш енче çирĕпленсе ларнă. Çӳллĕ çыранти кашни çурт айĕнчех тенĕ пек унăн малтанах хатĕрлесе хунă дзотсем,— вĕсенче пулеметчиксемпе автоматчиксем ларнă. Тĕрĕссипе, нимĕçсен кунта тата тепĕр «опорный пункт» пулнă.

Хăйсене çур саларан çапса кăларса, çырма урлă хăваласа янă совет салтакĕсем сылтăмри çыранра курăнма тытăнсан, нимĕçсем вĕсене каллех пур йышши хĕçпăшалпа та пеме тапратрĕç. Каллех минăсем ухлатрĕç, пульăсем çĕре кăшлама тытăнчĕç...

Çырма хĕрринчех, пĕр-пĕринчен инçетре те мар, икĕ пĕчĕк чул çурт ларать,— те нӳхреп çиййĕсем, те кĕлетсем. Урама нимĕçсем енчен пирвайхи минăсем пырса ӳксенех, Захаров хăйĕн салтакĕсене çавсен хыçне йăпшăнса тăма хушрĕ. Вĕсемваскасах чикарккăсем чĕркеме тытăнчĕç — паян иртенпех туртман-çке-ха.

— Мĕн тăватпăр ĕнтĕ малалла? — ыйтрĕ пĕр салтакĕ, чĕлĕм тивертме çине тăрсах вутчульне тимĕрпе çапса.

— Командирсем мĕн хушаççĕ, çавна! — терĕ ăна хирĕç Захаров, çурт кĕтессинчен нимĕçсен еннелле пăхса.— Халлĕхе нимĕнле приказ та...

Сăмахне каласа пĕтерейменех вăл, ун пуçĕ тĕлĕнчи кирпĕче пуля чанк! пырса çапăнчĕ.

Захаров каялла сиксе ӳкрĕ.

— Снайпер!

— Çав ĕнтĕ! Юрать-ха, пули пĕр виçĕ сантиметр çӳлерех кайнă, атту каскă та çăлаймастчĕ.

— Сыхласах лараççĕ, эппин, пире...

— Атьсемĕр, асăрханăр, чипер тăнă çĕртех тăсăлса выртма пулать!

Чĕлĕм туртакансем махорка мăкăрлантарма тытăнчĕç, ыттисем противогаз сумкисенчен çăкăр таткисем кăларса чăмларĕç. Выçнă ĕнтĕ, каçхине çинĕренпе пĕри те ăша нимĕн те яман-ха. Кухньăсем хăçан килсе çитесси те паллă мар.

— Сержанта питĕ шел, асран та тухмасть,—йывăррăн сывласа ячĕ стена çумне кукленсе ларнă Захаров.— Каялла кайса ўкрĕ те пĕр сăмах та калаймарĕ, мăнтарăн... Мĕн тери паттăр йĕкĕтчĕ! Тăванĕсем патне хамах çырса яратăп-ха, эпир пĕр-пĕринпе ятарласах хамăр килтисен адресĕсене панăччĕ. Савнин адресĕ те пур манра, ун патне те çырмалла ĕнтĕ, ан кĕттĕр тек...

— Леш мăн мăкшă... Сайгин та сан умăнтах вилсе кайрĕ, терĕн-и-ха эсĕ? — ыйтрĕ пĕри.

— Манăн куç умĕнчех. Халь çеç окоп чаватчĕ, теппе пăхатăп та — месерле выртать... Иккĕмĕш отделенинче Прокопчук мĕнле вилнине те куртăм. Пĕр наччасра...

— Пирĕннисенчен урăх никама та лекмен-и?

— Щеглов аманнă...

— Виççĕмĕш хут, эппин...

Йывăр çав вилнĕ юлташсене аса илме. Паян ир кăна вĕсем пуринпе пĕрлеччĕ. Сывăччĕ. Хаваслăччĕ. Халь ак çук вĕсем. Нихçан та пулмаççĕ...

Салтаксем пĕр хушă шăп ларчĕç. Кашниех тем çинчен шухăшларĕ. Çын шухăшне ăçтан пĕлсе çитетĕн?

Çав вăхăтра взвод командирĕн связнойĕ Колокольчиков — хĕр евĕрлĕрех чипер йĕкĕт хашкаса чупса пычĕ.

— Ак ăçта пытанса ларнă иккен эсир! Шыраса хăшкăлтăм сире, явăлсене! — çĕр çине лак! ларчĕ вăл.

— Мĕн тумалла? Мĕнле приказ? — автоматне тытса сиксе тăчĕ Захаров.— Эпир хатĕр...

— Приказ — çынсене тăрантармалла! — Связной пуçĕпе сылтăмалла сулчĕ.— Анкартисем хыçне кухня килсе тăнă. Взвод командирĕ халех кашни отделенирен виççшер çын котелоксемпе яма хушрĕ. Ыттисем вырăнтах юлаççĕ. Фрицсен кунта халех контратака тума пăсĕ çитеймест, анчах пуçра шăрка шыраса ларма та юрамасть, терĕ лейтенант... Чухлатăр-и?

— Чухланă пек туйăнать, адъютант юлташ,— кулах таварчĕ Захаров. Çак Колокольчиков хăйне ялан мăнна хума тăрăшнă тата салтак пуçĕпех командирсен

портупейлӑ пиҫиххине ҫыхса ҫӳренӗ пирки салтаксем ӑна, юриех тӑрӑхласа, «адъютант» теҫҫӗ, анчах хӑй вӑл уншӑн кӳренме мар, хӑпартланса ҫеҫ ҫӳрет.

— Кӗскен каласан, салтаксене часрах апат ҫитермелле те ҫӗнӗ приказ кӗтмелле! — терӗ те Колокольчиков, ура ҫине сиксе тӑрса гимнастеркипе портупейне тӳрлетрӗ.— Ну, эпӗ кайрӑм, манӑн сирӗнпе халап ҫапса ларма вӑхӑт ҫук, мана лейтенант кӗтет унта.

— Ҫавӑ ӗнтӗ, паллах, лейтенант сансӑр тула та каяймасть,— йӗплесе илчӗ пӗри. Ыттисем кулса ячӗҫ. Анчах связной кун ҫине ҫаврӑнса та пӑхмарӗ, ӑҫтан килнӗ, ҫавӑнталла вӗҫтерчӗ.

Захаров виҫӗ салтака, пурин котелокӗсене те тыттарса, апат илме ячӗ. Унтан, пӗр салтакне тӑшман енне час-час пӑхкаласа тӑма хушса, хӑй каллех чул стена ҫумне тайӑнса ларчӗ. Темиҫе самантранах ӑна ыйхӑ пусма тапратрӗ. Куҫ хупаххисем ҫав тери йывӑрланчӗҫ, ниепле те ҫӗкленесшӗн мар. Анчах пӗлет-ҫке Захаров — ҫывӑрмалли вӑхӑт мар халь, кӑшт тӗлӗрме те юрамасть. Ӑнсӑртран вӑл ҫывӑрса кайсан, ыттисем те ҫывӑрӗҫ — мӗн пулать-ха вара? Ҫырма леш енче — тӑшман, тем шут-ха унӑн! Кӗҫех боевой приказ ҫитет, ҫав вӑхӑтра Захаров отделенийӗ ыйхӑ туртать... Ҫук, ҫук, сыхӑ тӑмалла!

Пуссах килекен ыйӑха сирсе ярас тесе, Захаров ура ҫине сиксе тӑчӗ, аллисене ун-кун вылянкаласа, каллемалле уткаласа илчӗ. Ыттисем ларчӗҫ, хӑшӗсем тӗлӗрме те тапратрӗҫ. Захаров вӗсене тивес темерӗ. Тепӗр чух ҫын вунӑ-вунпилӗк минут тӗлӗрсе илсен те ҫӑмӑлтарах туять.

Сасартӑк Захарова таҫта хӗрарӑм йынӑшнӑ пек туйӑнса кайрӗ. Пӗрре, иккӗ... Вӑрӑммӑн, ӳлесе йынӑшнӑ пек. Захаров, тӑпах чарӑнса, пуҫне унталла-кунталла пӑрса итлеме тытӑнчӗ. Чӑнах-ши ку е туйӑнать кӑнаши? Ҫук, чӑнах иккен. Хӗрарӑм йынӑшать. Питӗ асаплӑн йынӑшать!

— Ы-ых... а-ах... о-ой!

Мӗнле япала ку? Мӗнле хӗрарӑм? Ахӑртнех, йывӑр аманнӑскер пулӗ. Анчах ӑҫта вӑл, хӑш тӗлте?

— Федюнин, эс нимӗн те илтместӗн-и? — чул стена ҫумӗнче пуҫне усса чӗлӗм туртса ларакан салтакран ыйтрӗ Захаров.— Илтместӗн-и, тетӗп сана!

— Мӗн илтмелле манӑн? — ун ҫине кӑмӑлсӑрта-

раххăн пăхрĕ Федюнин.— Фрицсем перкеленине илтетĕп.

— Çук-ха, ăна мар. Çын сассине илтместĕн-и? Çын, хĕрарăм йынăшни илтĕнмест-и сана?

— Мĕнле хĕрарăм пултăр кунта? Пулсан та, тĕпсакайĕсенче, шăтăксенче ларăççĕ пуль. Яла килсе кĕнĕ чух, пахчасенче бомбăсемпе снарядсенчен пытанмалли шăтăксем темиçе те куртăм эпĕ. Ун пеккисем ку енче кашни ялтах пур.

Çав вăхăтра хĕрарăм йынăшни тата хытăрах илтĕнчĕ.

— Халь те илтмерĕн-и? — ыйтрĕ Захаров салтакран.

— Çук, илтмерĕм,— терĕ лешĕ.

— Апла, сан хăлхуна сухăр тулса ларнă. Çывăхрах мина çурăлсан та илтместĕн пуль эсĕ.

— Ун пек те пулма пултарать, тĕлĕнмелли çук,— килĕшрĕ Федюнин.

Хĕрарăм йынăшни çине-çинех илтĕнчĕ. Пĕрре хытăрах, тепре вăйсăртарах, унтан тата хытăрах...

— А-аа! А-ахх! О-ой!

Анчах Захаров ку асаплă сасă ăçтан, хăш тĕлтен илтĕннине çаплах уйăрса илеймерĕ. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе ăна хĕрарăм сасси таçтан аялтан, çĕр тĕпĕнчен илтĕннĕ пек туйăнчĕ. Чĕри сӳ! турĕ ефрейторăн. Вăл хĕлле Орел облаçĕнчи пĕр ялта курнине аса илчĕ: гитлеровецсем унтан тухса тарас умĕн ялти юлашки çынсене — пĕр вăтăр çын ытла — пухса пурне те тарăн çăла пăрахнăччĕ, вĕсем хушшинче сакăрвун çулхи стариксем те, чĕчĕ ачисем те пурччĕ. Çăл тулса çите пуçласан, çынçиенсем унта темиçе граната пăрахнă. Çур кун кăларчĕç ун чух пирĕн салтаксем çав çăлти вилесене...

Кунта та çавăн пекки мар-ши? Нимĕçсем çырма ку енчен тин çеç чакса кайнă, çитменнине питĕ васкама тивнĕ вĕсене. Ку ялти çынсенчен кам куçа курăннă, кам алла лекнĕ — çавсене пурне те тытнă та çăла пенĕ пуль. Тен, вĕсенчен хăшĕ-пĕри ăнсăртран чĕрĕ юлнă...

Захаров калама çук пăлханса кайрĕ. Тек тӳссе тăраймарĕ вăл. Малтан пуçĕнчи каскине, унтан кăкăрĕ çинчи автоматне тӳрлетрĕ те халь çеç хăйĕнпе калаçнă салтака хыттăн:

— Федюнин, ман вырăна юлатăн! Эп часах килетĕп! — терĕ.

Вара çавăнтах, мĕн май килнĕ таран пĕшкĕнсе, сылтăмалла чупрĕ,— хĕрарăм йынăшни юлашки самантсенче çав енчен илтĕннĕ пек туйăнчĕ.

Пĕр вунпилĕк-çирĕм метртанах Захаров урисем патне пульăсем тăкăнчĕç—чăк-чăк-чăк! Эппин, çырма леш енчен асăрхарĕç ăна! Вăл темле тайлăк-тайлăк çурт хыçне сикме ĕлкĕрчĕ. Урам тăрăх тăвалла пăхрĕ: ăçта та пулин çăл пури куранмасть-и? Çук, ун пекки куç тĕлне пулмарĕ. Анчах хĕрарăм йынăшни каллех илтĕнчĕ. Паçăрхи пек те мар, тата асаплăрах кăшкăрса йынăшрĕ вăл халь.

— Темле шăтăкра выртать ку... Хăш тĕлте-ши? — шухăшларĕ те Захаров, малалла тата хытăрах пăхма тытăнчĕ.

Инçетре те мар, пĕр вăтăр метрта, çырма хĕрринчех, чылай пысăк тĕмеске пур. Мĕн тĕмески-ши? Нӳхреп мар-ши унта? Ку тăрăхри ялсенче нӳхрепсене темшĕн урамах тăваççĕ. Нумайăшĕн нӳхреп çийĕ те çук, çиелтен хăмасемпе çеç хупланă.

Татах илтĕнчĕ хĕрарăм йынăшни. Çывăхрах...

— Çавăнта вăл! — татăклă шут тытрĕ Захаров. Автоматне çурăмĕ çинелле ярса çĕре выртрĕ те упаленме тытăнчĕ. Сасă илтĕннĕ çĕрелле, тĕмеске патнелле.

Хăнăхнă салтакшăн çирĕм-вăтăр метр хырăмпа шуса каясси темех мар. Вăхăт та нумай кирлĕ мар ун валли. Пилĕк-ултă минутранах çитрĕ Захаров хăй тĕллесе хунă вырăна. Халь ĕнтĕ хĕрарăм йынăшни юнашарах илтĕнчĕ. Çĕр айĕнчен, шăтăкран...

Захаров уçă нӳхреп ани патне упаленсе пычĕ те тӳрех аялалла, пăч-тĕттĕм çĕрелле пăхрĕ.

— Кам пур унта? Мĕнле çынсем? Ан хăрăр, сирĕнпе совет салтакĕ калаçать!

— Эпир... ку ялсем... çапăçу пуçлансан пытанса лартăмăр...— терĕ ăна хирĕç темле хĕрарăм.

— Нумайăн-и эсир унта?

— Нумайăн... Ачи-пăчипе çирĕм çын та ытла...

— Аманнисем те пур-и мĕн?

— Çук, аманнисем çук, тав турра, пурте сывах-ха та...

— Кам пĕрмай йынăшать, эппин? Мĕншĕн? Эп çавна илтсе килтĕм сирĕн пата.

Нӳхреп тĕпĕнчен çав вăхăтра каллех йывăррăн, асаплăн йынăшни илтĕнсе кайрĕ. Пĕрре, тепре...

— Мĕн пулнă ăна? Чирленĕ-и? — кăшкăрсах ыйтрĕ Захаров.

— Ах, шăллăм! Нуша-ха пирĕн, хурлăх...

— Мĕнле нуша?

Захаров хăй патнелле пусма тăрăх ҫӳҫне-пуҫне сапаласа янă хĕрарăм хăпарнине курчĕ.

— Ах, шăллăм... Пĕри ача ҫуратма тапратрĕ пирĕн кунта, сасартăк, вăхăчĕ ҫитиччен... Хытă хăрарĕ пулмалла...— хăвăрт пăшăлтатса калама тытăнчĕ хĕрарăм.— Ним тума пĕлместпĕр, шалт аптраса ҫитрĕмĕр. Тухма хăратпăр, тӳрех персе ӳкерме пултараҫҫĕ. Нимĕҫсем инҫе мар, ҫырма леш енчех лараҫҫĕ-ҫке! Анчах пире пĕр витре шыв кирлĕ, шăллăм, халех, ҫак самантрах...

— Ҫыннисем ĕҫесшĕн-и?

— Ĕҫес килни темех мар-ха вăл,— тата хăвăртрах калама тытăнчĕ хĕрарăм,— шывĕ пире урăххи валли кирлĕ. Каларăм-ҫке пĕри ҫуратать тесе... Шывсăр мĕнле пултăр-ха унта? Хăвах ăнланмалла, шăллăм, шывсăр май килмест...

— Ăнлантăм ĕнтĕ,— терĕ Захаров. Анчах хăй, халь ҫеҫ илтнине лайăхрах тавҫăрса илме тăрăшнă пек, темиҫе самант шухăшласа выртрĕ. Унтан татăклă шут турĕ те хăвăрт ыйтрĕ: — Ҫăлĕ ăҫтарах-ха сирĕн?

— Ҫăлĕ ҫырмара ҫав, ак ҫакăнтан ансанах...

— Мĕнпе ăсса илмелле? Витре пур-и?

— Витри те ҫук ҫав. Витрине хирĕҫри шифер витнĕ пӳрте кĕрсе илмелле, шăпах ача ҫуратаканнин килĕ вăл, алăкĕсем уҫах... Ах, шăллăм! Шывсăр хĕрарăм пĕтме пултарать... Пулăшсамччĕ! Ĕмĕрне те манмăттăмăр...

Захаров хăйпе калаҫакан хĕрарăмăн куҫĕсем ҫав тери хурлăхлине, вăл ун ҫине калама ҫук тархасласа пăхнине курчĕ. Тен, Захаров хăйĕн ĕмĕрĕнче те ҫавăн пек тархаслакан куҫсене курман-и...

— Кĕтĕр, шыв тупса килетĕп сире валли! — терĕ те вăл, тăрук сиксе тăрса, умне решетке тытнă ҫурт патнелле чупрĕ. Темиҫе самантранах пуш витре ҫĕклесе тухса, ҫырма хĕрринелле ыткăнчĕ те хупах-вĕлтренпе хупланнă тарăнах мар вара сиксе анчĕ. Леш енчен ăна асăрхаймарĕҫ те пулмалла.

— Ăҫта-ха ҫăлĕ? Авă-ҫке... Ытла инҫех те мар, анчах пĕр вăтăр-хĕрĕх метр уҫă вырăнпа пымалла. Унта

эпĕ упаленсе ҫитĕп-ха, анчах каялла мĕнле таврăнас? Тулли витрепе упаленеймĕн... Ну, мĕн пулать те мĕн килет, тапаҫланса пăхам! — шухăшларĕ Захаров, вар тĕпне лăпчăнса ларнăскер.

...Чăн та, Захаров ҫăл патне лайăхах ҫитрĕ. Нимĕҫсем ҫак вăхăтра ҫырма тĕпне ҫын анма пултарасси ҫинчен шухăшламан та пуль ҫав, вĕсем ку енчи сăрта ҫеҫ сыхланă.

Ҫăлĕ тарăн мар иккен. Шывĕ ҫĕрпе танах, пури урлă ал ярсанах ăсса илме майĕ пур. Ҫапах та Захаров пĕр хушă пура хыҫĕнче хашкаса выртрĕ. Унтан пуҫне ула-чăла плащ-палаткăпа хупларĕ те, ерипен ҫĕкленсе, витре тулли шыв ăсса лартрĕ. Хăй каллех пура хыҫне йăпшăнчĕ. Мĕнле илсе ҫитермелле-ши ĕнтĕ ку шыва? Хырăмпа шума ҫук, ура ҫинех тăма лекет. Тăрсан вара нимĕҫсем ҫав самантрах асăрхама пултараҫҫĕ. Кунти вырăн вĕсене ал тупанĕ ҫинчи пекех курăнать. Кăнтăрла тата, ҫап-ҫутă. Ҫĕрле пулсан — хăрушах марччĕ-ха, тĕттĕмре ҫăлăнма йывăрах мар... Анчах та таврăнмалла-ҫке. Шывне те илсе ҫитермелле... Лере, нӳхрепре, ăна тем пекех кĕтеҫҫĕ... Кĕтсе те ывăнчĕҫ пуль ĕнтĕ... Тен, хĕрарăмĕ хальччен ҫăмăлланнă та-и... Вĕсене шыв кирлĕ... Кĕскерех перебежкăсемпе кайсан мĕнле-ши? Леш шырлана ҫеҫ ҫитсе ӳкесчĕ, унта пытанма пулать...

Захаров, ерипен тăрса, витрене хăлăпĕнчен тытрĕ те, пĕкĕ пек пĕкĕрĕлсе, шырлан еннелле питĕ хăвăрт чупса кайрĕ. Пĕр вунпилĕк метр пек кайсан лап! выртрĕ. Нимĕҫсем енчен пени-туни илтĕнмерĕ.

— Курмарĕҫ пулас-ха...

Темиҫе самантран каллех тăрса чупрĕ. Анчах хальхинче вунă утăм та тăваймарĕ — леш енчи ҫыранран пĕр харăсах темиҫе пулемет чыхăнса каяс пек пеме тапратрĕ.

Захаров витрине часрах лартрĕ те пĕр чăмăркка пулса выртрĕ. Чĕри сиксе тухас пек тапрĕ, сывлăшĕ те пӳлĕнчĕ унăн.

— Пĕтрĕм... кусенчен хăтăлаяс ҫук... Ак, халех, халех...

Анчах тĕлĕнмелле — ун таврашне пульăсем тăрăнни пĕрре те сисĕнмерĕ. Ахăртнех, нимĕҫсем ҫырманалла мар, тăвалларах печĕҫ пулĕ.

Пирĕн енче сасартăк тупă ухлатрĕ. Снаряд чашкăрса иртсе кайнине те илтсе юлчĕ Захаров. Кĕҫех тепре

перçе ячĕ. Унтан тата тепри, тата! Кĕрс те кĕрс! кĕрс те кĕрс!

— Тахăш батарея тӳрĕ наводкăна тухнă, нимĕçсен огневой точкисене хуплама...— вĕлтлетрĕ Захаров пуçĕнче.— Халь ĕнтĕ манăн пĕр самант та тăхтаса тăма юрамасть!

Вăл хăйне пружин çĕкленĕ пек сиксе тăчĕ те, витрине йăтса, каллех шырлан патнелле чупрĕ. Темиçе утăм анчах юлчĕ унта çитесси — кăшт сулахаярах мина хаплатса ӳкрĕ те сăрт хĕрринчи тăпра капан пек çĕкленсе сирпĕнчĕ, Захаров кукленсе ларчĕ, анчах тытăнса тăмарĕ, шырлана çитсе, ун тĕпĕпе тăвалла чупрĕ. Çав вăхăтра тата темиçе мина çурăлчĕ. Хальхинче вĕсем çӳлерех ӳкрĕç, нимĕçсем пирĕн тупăсен расчечĕсене пĕтересшĕн пулчĕç курăнать.

Захаров минăсем çине çаврăнса та пăхмарĕ, шырлан тăрăх часрах тăвалла чаваланчĕ. Акă ĕнтĕ çыран хĕрри. Урамран çурхи шыв çурса анса чăнкăлатнине пула, унта витрепе тăрукках улăхаяс çук. Çавăнпа га Захаров, кармашкаласа, малтан витрине çĕклесе лартрĕ, унтан хăй тăрмаланса хăпарчĕ.

Йĕп-йĕпе тарласа, хашкаса...

Тӳрĕ наводкăна тухнă тупăсем çаплах печĕç-ха. Нимĕçсен вут-çулăмĕ вăйсăрлана пуçларĕ. Вара Захаров, ним шухăшласа тăмасăрах, витрене çĕклерĕ те нӳхреп патнелле ыткăнчĕ.

— Мейĕр, тытăр! Шыв илсе килтĕм! — кăшкăрчĕ вăл нӳхреп ани патне пĕшкĕнсе.

Аялта пaçăр калаçнă ватăрах хĕрарăм пуçĕ курăнчĕ.

— Ах, шăллăм, мĕнле тав тума пĕлĕпĕр-ши сана...— макăрса ячĕ вăл, аллисене витре патнелле тăсса.

— Тыт, тыт! Асту, тăкса ан яр, ытла та хакла ларчĕ ку шыв,— терĕ Захаров.— Ĕçсем мĕнле унта сирĕн?

— Ывăл ача çуралчĕ,— терĕ хĕрарăм.

— Питĕ аван! Ӳссен генерал пулать! Унтан кая мар!

Хĕрарăм Захаров аллинчи витрине аялалла илсе пачĕ.

— Тавтапуç сана, шăллăм! Çав тери пысăк тав! Тур сыхласа усратăрах сана куншăн, вăрçă хыççăн киле чипер таврăнса пурăнмалла пултăр! — васкаса калама



тытăнчĕ нӳхрепри хĕрарăм.— Кала-ха хăть, ăçтисем эсĕ, яту-хушамату мĕнле, ĕмĕр ырăпа асăнса пурăнăпăр сана, ачи ӳссен ăна та каласа парăпăр...

— Гурий Захаров, теççĕ мана. Атăл хĕрринчен, Чăваш республикинчен. Ну, чипер юлăр, сывă пулăр, ман васкамалла...

Вăл сиксе тăчĕ те хăйĕн отделенийĕ ларса юлнă çĕрелле чупрĕ.

— Ăçта кун пекех çуркаласа пĕтертĕн плащ-палаткăна? — ыйтрĕ унран пасăр хăй вырăнне хăварнă Федюнин салтак.— Çĕтĕк марччĕ-çке?

Захаров хăй çийĕнчи плащ-палаткине унтан та кунтан пăхкаларĕ. Чăнах та çуркаланса пĕтнĕ иккен. Йытă туллана тейĕн.

— Пĕлместĕп...—ним калама аптрарĕ Захаров, хулпуççисене сиктерсе илсе.— Тĕлĕнмелле... Пăх-ха эс, вĕрçĕнĕ палаткăччĕ!

Хăй çав вăхăтрах тавçăрса илчĕ:

— Шыв ăсса таврăннă чух мина осколокĕсем туранă ку плащ-палаткăна. Хама мĕнле пĕрре те лекмен вара? Телей пурах иккен манăн!

Анчах кун çинчен вăл никама та шарламарĕ.

4

Пин те тăхăрçĕр утмăл пиллĕкмĕш çулхи апрель уйăхĕн вĕçĕнче Шупашкарти пĕр стройтрестра ĕçлекен инженер Гурий Захарович Захаров Пенза хулинчен çакăн пек çыру илчĕ:

«Сывлăх сунатăп сана, фронтри асран кайми тусăм, Гурий Захарович! Ку çырăва Руднев Николай Васильевич — 1943 çулта Курск хысакĕ вĕçĕнчен тапранса тухса фашистсене Днепр еннелле хăвалама тытăннă вăхăтра сирĕн взвод командирĕ пулнă, эсĕ вилĕмрен хăтарса хăварнă çын çырать. Астăватăн-и Сусловка патĕнчи çапăçăва?..

Эп сана пĕрмаях асăнса пурăнатăп, сан çинчен çĕр çынна та каласа панă пуль, эс мана çăласшăн мĕн тунине ман ачасем те пĕлеççĕ,— малалла вуларĕ Гурий Захарович.— Шел, пирĕн пĕрле нумай хушă çапăçма тӳр килмерĕ, Днепр урлă каçнă чух—астăватăн пулĕ— йывăр амантăм та фронта тăвата уйăхран тин таврăнтăм. Анчах мана урăх чаçе те мар, урăх фронта ячĕç,

Вӑрҫӑн юлашки тапхӑрӗнче эпӗ Иккӗмӗш Прибалтийски фронтра пултӑм, Эстони ҫӗрӗнче ҫапӑҫрӑм. Киле хӗрӗх улттӑмӗшӗнче тин таврӑнтӑм. Пӗр ҫулталӑк комсомол райкомӗнче ӗҫлерӗм—суйларӗҫ те, мӗн тӑвӑн?—унтан Ульяновскри ялхуҫалӑх институтӗнчен вӗренсе тухрӑм, агроном пултӑм, пӗр пысӑк совхозра ӗҫлесе пурӑнтӑм, пӗлтӗр парти обкомӗн аппаратне илчӗҫ—ялхуҫалӑх енӗпе ӗҫлеме...

Анчах ку сӑмах майӗн кӑна-ха,—тесе ҫырнӑ малалла запасри капитан Руднев,— манӑн урӑх ӗҫ пур. Халӗ пӗтӗм ҫӗршыв фашистла Германие ҫӗнтернӗренпе ҫирӗм ҫул ҫитнине паллӑ тума хатӗрленет. Пысӑк уяв, пысӑк праҫник ӗнтӗ вӑл. Уйрӑмах пирӗншӗн, Аслӑ Ҫӗнтерӗве хамӑр юнпа тӑкса ҫапӑҫса илнисемшӗн... Кунта эпӗ, ӑнсӑртран, хамӑр дивизи ветеранӗсенчен виҫӗ ҫынна тӗл пултӑм. Пурӗ пӗрле пухӑнтӑмӑр та, ҫав Ҫӗнтерӳ уявӗ кунӗсенче хамӑр ҫапӑҫнӑ вырӑнсене кайса курма шут тытрӑмӑр. Питӗ интереслӗ вӗт ку! Ман юлташсенчен пӗрин хӑйӗн машини пур. Эпӗ ҫавӑнпа сана та чӗнес, терӗм. Сан адресна тупма мана парти Чӑваш обкомӗнче ӗҫлекен юлташсем пулӑшрӗҫ,— эсӗ коммунист иккенне эп пӗлетӗп-ҫке, эпир сана партие мӗнле илнине, пирӗн ротнӑй партпухӑва «мессерсем» виҫӗ хутчен тапӑннине те пит лайӑх астӑватӑп. Ҫырса ятӑм та — темиҫе кунтанах ответ килчӗ, питӗ савӑнтӑм...

Эс килӗшсен, эпир шӑпах тӑваттӑн пулатпӑр. Хирӗҫ ан пул, Гурий Захарович, килӗш, пит лайӑх кайса килетпӗр! Урӑх ҫырмастӑп, тӗл пулсан пурин ҫинчен те каласӑпӑр, иртнине те асӑнӑпӑр, хальхи ҫинчен те пӗлӗпӗр, куҫҫулӗ те пулӗ, савӑнӑҫ та... Ответне паянах ҫыр, вӑраха ан яр. Пин хут салам!».

## 5

Паллах ӗнтӗ, Гурий Захаров ҫакӑн пек ырӑ та илӗртӳллӗ сӗнӗве йышӑнмасӑр тӑма пултараймарӗ. Хирӗҫлеме мар, куншӑн вӑл калама ҫук хӗпӗртесе ӳкрӗ. Мӑшӑрӗпе каласса татӑлчӗ те ҫав кунах Пензӑна пысӑк телеграмма ҫаптарчӗ.

Тепӗр эрнерен Шупашкарти Ленин проспектӗнчи пилӗк хутлӑ мӑн ҫурт умне кӗрен тӗслӗ «Победа» пырса чарӑнчӗ. Машинӑран ҫар тумӗ тӑхӑннӑ, анчах погонсӑр ҫынсем тухрӗҫ — виҫҫӗн. Пурин те кӑкӑрӗсем ҫинче ор-

денсемпе медальсем йăлтăртататççĕ. Пурте салтак пулнăскерсем ĕнтĕ. Ик минутран вĕсем çакăнта пурăнакан Захаров инженер хваттерне пырса кĕчĕç...

Ирхине çав кĕрен «Победа» Шупашкартан Мускав еннелле тухса кайрĕ. Шоферпа юнашар Захаров ларса пычĕ. Ик кунтан çул çинче самаях тусанланнă автомобиль, Орел хули витĕр тухса, Елец станцийĕ еннелле ыткăнчĕ.

— Калинин фронтĕнчен куçарса килсен, пирĕн дивизи хăйĕн çулне çакăнтан пуçларĕ,— терĕ Руднев, машина Елец станцине çитсен.— Астăватăн-и, Гурий Захарович, нимĕçсем еплерех кĕтсе илчĕç пире?

— Пит лайăх астăватăп,— пуçне сулчĕ Захаров,— пирĕн пирвайхи эшелон çитсе тăрсанах вунсакăр «юнкерс» ӳлесе çитрĕ. Юрать-ха, ку таврара зениткăсем чылайччĕ те, ытлашши иртĕнмех памарĕç вĕсене!

Фронтри туссем станцири ресторана апат çиме кĕрсе ларсан, Руднев сĕтел çине самаях пысăк карттă сарса хучĕ.

— Акă пирĕн дивизи çулĕ...— Вăл пӳрнине карттă çинчи кукăр-макăр кăвак йĕр тăрăх шутарчĕ.— Чи малтан эпир Ливны хулине пыратпăр... Ак çакăнта, хĕрлĕпе палăртнă вырăнсенче, пирĕн вăйлă çапăçусем пулнă. Нумай ун пек вырăнсем... Сахал юн тăкăннă-и унта!

Кăнтăрла иртсен, туссем Елецрен хĕвеланăçнелле тухса кайрĕç.

— Ан васка, лайăххах курса пырар,— терĕ Руднев «Победа» хуçине.

Анчах темле ерипен кайсан та машинăра ларса нумаях кураймастăн. Çавăнпа та вĕсем çул çинчи кашни ялта тенĕ пекех чарăна-чарăна машинăран тухрĕç те ун-кун пăхкаласа çӳрерĕç. Руднев час-часах хăй çумĕнчи фотоаппаратпа ӳкерчĕксем тăва-тăва илчĕ.

Пурте лайăх астăваççĕ вĕсем: çак ялсене гитлеровецсем пурне те çунтара-çунтара янăччĕ, урамĕ-урамĕпе хăрăмпа витĕннĕ кăмакасем çеç мăрйисемпе çӳлелле кармашса, çăварĕсене тискеррĕн карса ларатчĕç. Хăшпĕр вырăнсенче кăна ăнсăртран темиçе пӳрт-çурт упранса юлнăччĕ, вĕсем те çурри ишĕлнĕччĕ. Садсене те йăлтах пĕтернĕччĕ. Пĕрисене вутăлăх касса çунтарнă, теприсене бомба-снаряд хуçса-çĕмĕрсе пĕтернĕ... Анчах та ĕçчен халăх вăрçă хыççăнхи çулсенче пĕтĕмпех çĕнĕ-

рен туса лартма ёлкёрнё — тӳп-тӳрё урамсенче йёркипе ҫёнё ҫуртсем; вёсене ытларах тимёр витнё, хёрлё, симёс, сенкер сăрсемпе сăрласа лартнă. Чул ҫуртсем нумай...

Кашни ялтах тата ҫак ҫёре ирёке кăларасшăн ҫапăҫса пуҫёсене хунă паттăрсене асăнса лартнă палăксем... Хăш тёлте пысăкрах, хăш тёлте пёчёкрех, анчах пурте ҫав тери тирпейлё, йёри-тавра йывăҫ е тимёр карта тытнă, шалта — хитре кăна чечексем, чие, сирень, ҫёмёрт.

Пысăкрах ялсенче, уйрăмах дивизин хытă ҫапăҫма тӳр килнё вырăнсенче, туссем ытларах чарăнса тăчёҫ, кунти ҫынсемпе калаҫрёҫ, хăйсем мёншён килнине пёлтерчёҫ, ял ҫыннисем халь мёнле пурăнни ҫинчен ыйтса пёлчёҫ. Пур ҫёрте те туссене питё ăшшăн, чи ҫывăх тăвансене кётсе илнё пекех кётсе илчёҫ. Хăна турёҫ, кёрекене лартрёҫ.

Виҫ-тăват ҫёрте, хăйсем патне камсем килнине пёлсен, ҫынсене ятарласа пухмасăрах митингсем пулса иртрёҫ. Запасри капитан Рудневпа запасри лейтенант Захаров унта сăмахсем каларёҫ. Хăйсем ҫак тăрăхра мёнле ҫапăҫни, кунти ҫёр хăйсен паттăр юлташёсен вёри юнёпе шăварăнни ҫинчен аса илсе каланă хыҫҫăн, вёсем митинга пухăннă халăха яланах сыхă тăма, Тăван ҫёршыва тăшмансенчен хӳтёлеме кашни самантрах хатёр пулма чёнчёҫ. Хитре хёрсем, юн пек хёрлё галстуклă пионерсем вёсене чечек ҫыххисем пачёҫ...

Кёрен «Победа» малалла кайрё.

Пёр кун, ик кун, виҫ кун...

Ак ёнтё Севск, Ямполь хулисем хыҫа юлчёҫ.

Кёҫех Десна шывё пулать.

— Сусловкăна кёрсе куратпăр! — терё халь малта, шоферпа юнашар ларса пыракан Руднев, Захаров еннелле ҫаврăнса.— Астăватăн-и ăна?

— Астумасăр...— кулса ячё Захаров.— Сусловка палли ак кунтах вăл, аса илтерсех тăрать! — Вăл сулахай алли ҫинчи суран йёрёсене кăтартрё.

Руднев хушнипе, «Победа» хуҫи машинăна мăн ҫул ҫинчен пăрса, пысăках мар яла илсе кёртрё. Ытти ҫёрти пекех, кунта та ҫёнё ҫуртсем нумай. Сачёсем те ҫамрăк. Урамăн ик енёпе — кашни ҫурт умёнчех — чие пахчисем. Ытармалла мар. Украина ҫав!

Туссем, машинăна пёр ҫӳллё тирек айне лартса хă-

варса, ял хыҫнелле тухрӗҫ, вӗтӗ вăрманлă лапамалла утрӗҫ.

— Ак ҫакăнта,— чарăнса тăчӗ Руднев пӗр виҫҫӗр метр пек кайсан.— Пирӗн взвод ҫак лапамран тухса шуса килчӗ. Сылтăмра — пӗрремӗш взвод, пирӗнтен сулахайра — виҫҫӗмӗш. Эпир атакăна хатӗрлентӗмӗр...

— Унтан сан ура вӗҫне граната ӳксе чашкăрма тытăнчӗ,— терӗ Захаров.

— Эсӗ ăна асăрханă та илсе ывăтнă...

— Вăл ҫурăлса сан урусене татичченех кӗтес килмерӗ ҫав!

Вӗсем иккӗшӗ те кулса ячӗҫ.

— Акă мӗн, Гурий Захарович,— терӗ унтан Руднев,— атя-ха, асăнмалăх ҫакăнти тăпрана пăртакшар хамăрпа илсе каяр. Вăл пирӗн юнпа шăварăннă. Куратăн-и, тырă епле парка ӳсет халь кунта!

Вăл кукленчӗ те темиҫе чӗптӗм тăпра илчӗ, ăна шапшур сăмса тутри ҫине хурса ҫирӗп кăна ҫыхса лартрӗ. Захаров та ҫавăн пекех турӗ. Унтан Руднев тӗрлӗ еннелле ҫаврăнса темиҫе ӳкерчӗк туса илчӗ.

Уйран таврăнса машина патне пырсан, Захаров Рудневран ыйтрӗ:

— Карттă ҫине пăхса ил-ха, Николай Васильевич, Мокрая Балка тата инҫе-и кунтан?

Инҫех мар иккен, пӗр вăтăр километр ҫеҫ юлнă.

— Каҫ пуличчен ҫитетпӗр,— терӗ Руднев.—Вăл яла кӗрсе тухмаллах пирӗн, питӗ вăйлă ҫапăҫу пулчӗ вӗт унта.

— Ҫапла ҫав... Чи лайăх юлташсене ҫухатрăмăр,— ассăн сывласа илчӗ Захаров.— Хамăрăн взводранах миҫе ҫын пӗтрӗ... Сержант Неделя, мăкшă каччи Сайгин, ручной пулеметчик Прокопчук... Мӗн тери маттур каччăсемччӗ! Халь те куҫ умӗнчех... Тен, вӗсене асăнса палăк та лартнă-и унта?

— Ҫитсен курăпăр-ха.

Машина ялтан тухса, каллех хӗвеланăҫнелле ҫул тытрӗ. Туссем пӗр хушă чӗнмесӗр пычӗҫ, кашниех ҫак вырăнсенче ҫирӗм икӗ ҫул каялла мӗн-мӗн тӳснине аса илсе пычӗ пулмалла.

— Мокрая Балка мана тата тепӗр япалана аса илтерет,— терӗ Захаров, пӗр вунă километр пек кайсан.— Питӗ тӗлӗнмелле ӗҫ пулса иртрӗ ман унта...

— Мӗн-ши вăл? — ун еннелле ҫаврăнса ыйтрӗ Руд-

нев.— Пĕр-пĕр хитре хĕрпе ҫыхланма ĕлкĕрмерĕн пуль те? Салтаксен пулкалатчĕ тепĕр чухне ун пекки те... Ан тун ĕнтĕ!

— Ун пекки мар ҫав ку...

— Мĕн тата?

Захаров пирус тивертрĕ те йăл-йăл кулса илчĕ.

— Эп унта чут ҫеҫ акушер пулаттăм...

— О-о! Ку, чăнах та, тĕлĕнмелле! Мĕнле майпа, хăш вăхăтра?

Захаров ача ҫуратма тытăннă хĕрарăм валли нимĕҫсемпе хамăр хушăри «нейтральнăй ҫырмаран» епле майпа пĕр витре шыв ăсса хăпарни ҫинчен каласа кăтартрĕ.

— Эппин, эс унта чи хаклă хăна пулма пултаратăн-иҫ, Гурий Захарович! — кăшкăрсах ячĕ Руднев, вăл каласа пĕтерсен.

Ытти юлташĕсем те пăлхансах калаҫма тытăнчĕҫ:

— Ĕлĕкхи пек каласан — эсĕ чăн-чăн хреснашшĕ!

— Санăн тӳрех вĕсем патне пырса кĕмелле!

— Анчах леш ҫуратакан хĕрарăмĕн ятне-хушаматне пĕлетĕн-и-ха?

— Ăна ыйтса тăма вăхăт пулмарĕ ҫав ун чух,— терĕ Захаров.— Килĕ тĕлне пĕлетĕп, эп унтан пуш витре илсе тухрăм.

— Вăл та ҫитет! Пырса кĕретĕн те — калатăн...

— Темле-ҫке. Унтанпа ҫирĕм икĕ ҫул иртрĕ,— иккĕленчĕ Захаров.— Вăл хушăра тем те пулма пултарнă. Тен, хальччен хĕрарăмĕ те ҫук, тен, ачи те пурăнайман, тен, иккĕшĕ те сывă пулсан та, тахҫанах куҫса кайнă кунтан, кам пĕлет ăна...

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ,— килĕшрĕ «Победа» хуҫи.— Вăрҫă хыҫҫăн ҫынсем нумай куҫса ҫӳрерĕҫ.

— Ҫапах та ҫитсе курас унта, Гурий Захарович! — ҫине тăрсах каларĕ Руднев.

Мокрая Балкăна вĕсем хĕвел аничченпĕр-ик сехет малтан ҫитрĕҫ. Машина шăпах ҫырман сылтăм енчи урамне пырса кĕчĕ.

— Кĕҫĕр кунтах ҫĕр выртатпăр, колхоз правленине е ял Советне тупар та...

Вĕсене тупма йывăр пулмарĕ. Ял варринче икĕ хутлă пысăк чул ҫурт ларать,— ăна хальтерех ҫеҫ тунă курăнать,— унта ялти пур учрежденисем те вырнаҫнă иккен: клубĕ те, библиотеки те, радиоузелĕ те, колхоз

правленийĕпе ял Совечĕ те. Машинăран тухсанах, çулçӳревçĕ-туссем çав çурт крыльци умĕнче виçĕ арçын калаçса тăнине асăрхарĕç те вĕсем патне пырса сывлăх сунчĕç, унтан тӳрех ыйтрĕç:

— Колхоз е ял Совет председательне курма пулать-ши?

— Эпĕ колхоз председателĕ,— терĕ сухалне тап-таса хырнă пĕр арçынĕ, хула çынни пекех лайăх кăвак костюм тăхăннăскер. Кăкăрĕн сулахай енче орден-медаль планкисем пур, хăй пĕр хĕрĕх çулсенче пулĕ, унтан ытла мар.

Руднев хăйсем кам иккенне, мĕн пирки çӳренине кĕскен кăна каласа парсан, председатель çав тери хавасланса кайрĕ.

— Питĕ хаклă хăнасем апла эсир! Аван, аван! Атьăр, кĕрĕр, кĕрĕр, юлташсем! Питĕ хавас сирĕн пек çынсене йышăнма...

Вăл çулçӳревçĕсене иккĕмĕш хута хăпартса пĕр пысăках мар пӳлĕме илсе пычĕ. Унта чипер витсе хунă пилĕк-ултă кровать ларать иккен, варринче çаврака сĕтел. Малти стена çумĕнче пысăк тĕкĕр, юнашарах радиоприемник.

— Ку пирĕн хăна пӳлĕмĕ... «Москва» гостиницăнах çитеймест те ĕнтĕ, анчах пурăнма майĕ пур, киленкаянсем ӳпкелешмеççĕ,— кулкаласа илчĕ председатель.— Килти пек пулăр, юлташсем, çул çинче килнĕ хыççăн çăвăнăр, тасалăр, ним пирки те ан пăшăрханăр, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать. Эпĕ пĕр çур сехетлĕхе кайса килем-ха, юлташсене пĕлтерем...

— Вашават çын,— терĕ Руднев, ун хыççăн пăхса.

— Салтак пулни сисĕнет...

Пит çусанах Захаров чӳрече витĕр пăхма тытăнчĕ— «хăна пӳлĕмĕн» чӳречисем çырма еннелле тухаççĕ-мĕн. Дамба курăнать. Кĕпер. Çырма тĕпĕпе шыв юхса выртать. Ик енĕпе хăмăш ӳсе ларнă. Ним те улшăнман кунта. Ун чухнехи пекех. Питĕ лăпкă. Шыв хĕррине пĕр çемье хур пухăнса ларнă. Вĕсенчен инçетре те мар, пĕчĕк каçма çинче, виçĕ хĕр кĕпе чӳхеççĕ. Кĕпер урлă икĕ арçын ача велосипедпа каçаççĕ. Нивушлĕ çакăнта вăрçă пулнă? Татти-сыпписĕр пулеметсенчен пенĕ, минăсем шартлатнă, вут-çулăм ашкăннă, тăпра тăпăлса çĕкленнĕ, тĕтĕм-сĕрĕм йăсăрланнă?!

Пулнă çав, çаплах пулнă. Çак хальхи лăпкăлăхшăн,

шăплăхшăн çапăçнă ун чух. Велосипедсемпе ярăнакан ачасемшĕн. Кĕпе чӳхекен хĕрсемшĕн...

Тепĕр пилĕк минутран Захаровпа Руднев, юлташĕсемпе пĕрле, Мокрая Балка урамĕпе тăвалла утрĕç. Урамра тĕл пулакансем вĕсене пуç тайса саламларĕç, чарăнса тăрса, каялла çаврăнса пăха-пăха юлчĕç.

— Аçтарах вĕсен килĕ? — ыйтрĕ Руднев, пăртак утсан.

— Тăварах пулма кирлĕ.

Захаров хăйĕн чĕри хытă тапнине туйрĕ, куçĕсемпе кашни çурта витĕр курас пек пăхрĕ.

— Шел, хушаматне пĕлместĕн, председательтенех ыйтма пулатчĕ, халь суккăрсем пек çӳретпĕр,— терĕ Руднев.

— Тăхта...

Çырма хĕрринче лутра кăна чул çурт курăнчĕ. Унтан пĕр вăтăр метрта тата тепĕр çурт, çавăн пеккиех. Захаров аса илчĕ: вĕсем çак тĕлелле çитсен нимĕçсем леш енчен пулеметсемпе çунтарма тытăнчĕç те, вăл хăйĕн отделенине çав çуртсенчен пĕрин хӳттине тăратрĕ. Хĕрарăм йынăшнине илтсен, ав çавăнталла чупрĕ...

— Çитрĕмĕр пулас,— терĕ Захаров шăппăн, самантлăха чарăнса.

— Хăш çурт?

— Ак çакă, кивви, шифер витни...

Вĕсем, тек тытăнса тăмасăр, çурт патне пычĕç.

Çав вăхăтра крыльца алăкĕн шашулкки чăнкăлтатса илчĕ. Унтан алăк уçăлчĕ те крыльца çине пĕр хĕрĕх пиллĕксенчи хĕрарăм тухса тăчĕ. Самаях тулли хăй, çыхнă хура жакетпа, хура юбкăпа, пуçĕнче кăвак тутăр,— ун вĕçĕсене каялла яваласа çыхнă, тăнлавĕсем тĕлĕнчи çӳçĕ кăн-кăвак. Çар тумĕ тăхăннă палламан çынсене курсан, вăл тăпах чарăнчĕ, вĕсем çине питĕ тĕлĕнсе пăхрĕ.

— Сывлăх сунатпăр,— терĕ Руднев, ыттисенчен кăшт маларах иртсе.— Ырă каç...

— Сывлăх пултăр...— терĕ хĕрарăм та, вырăнтан хускалмасăр. Хăй çаплах ют арçынсем çине шăтарас пек пăхрĕ. Унтан ассăн сывласа ячĕ те: — Эсир... эсир çавсем пулĕ-ха...— терĕ.

— Камсем? — ăнланмасăртарах ыйтрĕ Руднев.

— Халь кăна килсе каларĕç... Пирĕн яла хĕрĕх виççĕмĕш çулта ирĕке кăларса пире фашистсенчен хăтар-

нă çынсем килнĕ, ял Совечĕпе колхоз правлени членĕсен пурин те клуба пымалла, терĕç... Мана та чĕнчĕç... Çавсем вĕт эсир?

— Çавсем,— пуçĕпе сулчĕ Руднев.— Килсе курас, терĕмĕр-çке.

— О, питĕ аван ку, питĕ аван! — Хĕрарăм крыльца çинчен анчĕ те çулçÿревçĕ-туссен аллисене тыта-тыта чăмăртарĕ.— Эпир питĕ хавас куншăн! Чи хаклă хăнасем эсир пирĕншĕн...

— Тавтапуç, гражданка, ырă сăмахушăн!

Пăлханса кайнă хĕрарăм кăштах каялла чакса тăчĕ, ют çынсене палласа илме тăрăшнă пек пăхрĕ. Пĕр хушă нихăшĕ те чĕнмерĕ.

— Калăр-ха, юлташсем, сирĕн хушăра...— Хĕрарăм сасси темшĕн чĕтреме пуçларĕ.— Ансăртран... ăнсăртран сирĕн хушăра Гурий Захаров ятлă çын çук-и?

Руднев хăйĕн юлташĕ çине пăхрĕ те ăна хулпуççинчен тĕртсе пĕр-икĕ утăм малалла уттарчĕ.

— Акă вăл, Гурий Захаров...

— Эсир-и?! — ун куçĕнчен пăхрĕ хĕрарăм.

— Эпĕ... — пуçĕпе сулчĕ Захаров.

— Чăваш çĕршывĕнчен-и?

— Çавăнтан.

— Чăнах-и?!

— Мĕншĕн улталам ĕнтĕ эп сире...

— Турăçăм!..— Хĕрарăм, тем çинчен аса илме тăрăшнă пек, темиçе самант çĕрелле пăхса тăчĕ. Хăй питĕ хытă пăлханчĕ курăнать. Унтан пуçне çĕклерĕ те, каллех Захарова куçĕнчен пăхса ыйтрĕ: — Эсир пирĕн яла килсе кĕнĕ кун, вут-çулăм çине пăхмасăрах, çырмаран пĕр витре шыв ăсса хăпарнине астăватăр-и?

— Пит лайăх астăватăп-çке...

— Ах, ырă çыннăм! — Хĕрарăм çавăнтах Захарова мăйĕнчен ыталаса илчĕ те питçăмартинчен çине-çине чуптума тытăнчĕ.

— Ырă çыннăм! Хаклă çыннăм! Ман валли пулнă вăл шыв... Мана çăлтăр эсир ун чухне, мана та, ман пĕртен-пĕр ачана та...

Хĕрарăмăн куççулĕсем шăпăртатса анчĕç.

— Эп сире çирĕм икĕ çул хушши тав туса пурăнтăм, халь те пĕтĕм чунтан тав тăватăп... Çавăн чух эсир хăвăрăн пурнăçăра хĕрхенмесĕр мана пулăшман пул-

сан, эпир, тен, ывăлпа иксĕмĕр те пурăнаймастăмăр пулĕ... Атьăр-ха, кĕрер-ха, ывăлпа паллаштарам сире, ĕнер кăна отпуска килчĕ...

Анчах пӳрте кĕресси пулмарĕ — крыльца çине артиллери училищинчи курсантсен формине тăхăннă илемлĕ, çӳллĕ, тĕреклĕ каччă тухса тăчĕ.

— Мĕн пулнă, анне? Мĕн пит хытă шавлатăн? — кăшт куларах ыйтрĕ вăл, çав вăхăтрах ют çынсем çине пăхса.

— Савăнăç, Гурий! Кил-ха часрах, кил! — кăшкăрса кăчăк туртрĕ хĕрарăм.— Пире иксĕмĕре те çăлса хăварнă çын тупăнчĕ, лешĕ ара, Гурий Захаров салтак, ун çинчен каласа панă вĕт эпĕ, ăна ырăпа асăнсах ун ятне патăм сана...

Курсант крыльца çинчен чупса анчĕ те Захаров умне пырса малтан салтакла честь пачĕ, унтан аллине тăсрĕ:

— Гурий Бахов.

— Гурий Захаров...

Вĕсем пĕр-пĕринпе хыттăн ыталаса вырăссен йăлипе виçĕ хут чуптуса илчĕç. Хĕрарăм куçĕсене шăлкаласа пăшăлтатрĕ:

— Мĕн тери телейлĕ тĕлпулу...

Ыттисем ним те чĕнмерĕç.

— Çар училищинче вĕренетĕн, эппин? — ыйтрĕ унтан Захаров, хитре каччă çине тулли кăмăлпа пăхса.

— Килес çул вĕренсе тухатăп,— терĕ курсант.

— Эп йăнăшман иккен... Çавăн чухнех, шыв ăсса хăпарсан, мана: ывăл ача çуралчĕ, терĕç те, эп тӳрех: «Пит аван, генерал пулать!» терĕм... — кулса илчĕ Захаров.

— Илтсе юлтăм ăна, астăватăп, илтсе юлтăм, чăнах та çапла каларăр эсир! — халь ĕнтĕ хĕрарăм та кулса илчĕ.

Калаçăва Руднев хутшăнчĕ:

— Каçарăр та-ха мана... Ку пулас генералăн ашшĕ пур-и, сывă-и? Е вăрçăра пуçне хунă?

— Партизан отрячĕн командирĕччĕ вăл, эп отрядран яла çăмăлланма килсен темиçе кунтанах засадăна лекнĕ те — çапăçуран тухайман çав...— терĕ хĕрарăм хуллен.— Юрать, çак ывăл çуралчĕ. Ашшĕ сăнлах пулчĕ тата. Характерĕ те унăннах. Çавă çеç лăплантарать чуна...

## 6

...Çак историе мана хамăр хулари пĕр стройтрестра ĕçлекен инженер Гурий Захаров, иртнĕ вăрçăра ытти орденсемпе медальсемсĕр пуçне «Слава» орденăн виçĕ степенне те илнĕ кăвак çӳçлĕ сын каласа пачĕ.

Унпа паллашасси çапла пулчĕ.

Пĕррехинче эпĕ Карл Маркс урамĕнчи «Политическая книга» текен магазина кĕтĕм. Хамăн яланхи йăлапа, тӳрех çар кĕнекисем тăракан уйрăма пытăм: çĕнни мĕн те пулин çук-ши?

Çавăнта пĕр çынна асăрхарăм — вăтам пӳллĕ хăй, кăвак плащ тăхăннă, кивелерех панă шлепкепе. Хăй умне вăрçă çинчен çырнă темиçе кĕнеке хунă та, вĕсенчен пĕрине уçкаласа тăрать.

— Ку халь çеç килнĕ-и сирĕн? — тесе ыйтрĕ вăл хитре продавщицăран, кĕнекене хупса.

— Ĕнер çеç,— терĕ хĕр.— Илетĕр-и?

— Илетĕп, пурне те пĕрле шутлăр.

Продавщица шут шăрçине шăкăр-шакăр тутарчĕ.

— Çичĕ тенкĕ те аллă пилĕк пус...

— Юрать, халех тӳлетĕп.

Кăвак плащлă çын касса еннелле утрĕ. Эпĕ вăл суйланă кĕнекесене тыта-тыта пăхрăм. Пурте пирĕн паллă военачальниксем — Рокоссовский, Штеменко, Еременко, Батов çырнă кĕнекесем иккен. Эп хам ку кĕнекесене унчченех туяннăччĕ ĕнтĕ.

«Мĕнле çын-ши ку, вăрçă çинчен вулама юратаканскер? Тĕсĕпе пĕртте çар çынни пек мар, çав тери «цивильнăй», «штатский»...— шухăшларăм эпĕ.

Вăл касса патĕнчен таврăнсан, ытахальтен тенĕ пек ыйтрăм:

— Эсир мемуарсем вулама юрататăр пулас?

— Туянатăп май килнĕ таран,— терĕ вăл.— Хам çеç мар, ман ачасем те пит вулаççĕ вĕсене.

— Эсир хăвăр та çар çынни пулнă пулĕ-ха?

— Ман çулхисенчен кам çар çынни пулман-ши?— Вăл питĕ кăмăллăн, йăл-йăл кулса илчĕ.

Тек калаçаймарăмăр эпир. Вăл хăйне чĕркесе панă кĕнекесене хул хушшине хĕстерчĕ те тухса кайрĕ.

— Вăрçă çинчен çырнисене пĕрмаях илет,— терĕ продавщица, çав çын тухса кайсан.— Эрнере пĕрре килетех пирĕн пата...

Çакăн хыççăн пĕр-ик эрнерен мана комсомол хула комитечĕ политвĕренӳ çуртне, допризывниксемпе тĕл пулма чĕнчĕ. Мана çеç мар, иртнĕ вăрçă ветеранĕсенчен нумайăшне чĕннĕччĕ унта. Пулас салтаксемпе калаçма отставкăри пĕр генерал, икĕ Совет Союзĕн Геройĕ, темиçе полковник тата кĕçĕнрех званиллисем те пынăччĕ. Хăшĕсем çар формипе, хăшĕсем ахаль тумпах. Анчах пурте орденсемпе, медальсемпе. Пурин те кăкăрĕсем йăлтăртатаççĕ кăна.

Питĕ лайăх иртрĕ çав тĕлпулу. Ветерансем туха-туха калаçнине пулас воинсем çав тери тимлĕн итлерĕç. Ыттисем хушшинче хайхи эпĕ кĕнеке магазинĕнче тĕл пулнă лутрарах çын та тухса каларĕ. Сăнран пăхсан — йăваш чăваш кăна хăй, анчах мĕн тери хĕрӳллĕ каларĕ вăл Берлин урамĕсенчи çапăçусем çинчен, хăйсем фашизмăн тĕп йăвине—рейхстага штурмлани çинчен!..

Хытă алă çупрĕç пулас салтаксем вăл каласа пĕтерсен.

Çав каçхине эпир унпа лайăх паллашрăмăр та кайран туслашсах кайрăмăр. Пĕр-пĕрин патне хăнана çӳреме тытăнтăмăр. Мĕн кăна каласа кăтартмарĕ пуль вăл мана! Пурне пĕрле пухсан — тем хулăнăш кĕнеке пулмалла çав! Кунта эпĕ ун калавĕсенчен пĕрне çеç илсе çыртăм...



# Майор калавӗ

...Сывалаканнисен палатинче эпир виççӗн выртаттӑмӑр.

Çанталӑк кунтан-кун ӑшӑтса пычӗ, майӗпе пӗтӗм тавралӑх симӗсленчӗ, йывӑç çулçисем те сарӑлчӗç, унтан пирӗн медсанбат вырнаçнӑ темӗн пысӑкӑш илемлӗ сад, кӑпӑш юрпа витӗннӗ пек, чечексем айне пулчӗ.

Каçсерен садра шӑпчӑк юрри янрарӗ, унта та кунта — кашни палата умӗнчех — е купӑс, е патефон сасси илтӗнчӗ, хушӑран юрлакансем те пулчӗç. Вӑхӑтран

вăхăта малти линирен тупăсем пени тата пуç тăрринче фашистсен «юнкерсĕсем» хаяррăн ĕрлесе иртни, вĕсем хыççăнах хĕрлĕ çăлтăрлă истребительсем ыткăнни илтĕнмен пулсан, пирĕн пурнăç мирлĕ вăхăтри курорт пекех туйăнмаллаччĕ. Анчах та фронт пирĕнтен ултçич çухрăмра кăначчĕ, кашни кун тенĕ пекех вăйлă артиллери налечĕсем туни илтĕнетчĕ, аманнисене те илсе килкелетчĕç, çавăнпа та хамăр вăрçăра пулнине манса кайма çукчĕ. Тем çинчен калаçсан та, сăмах-юмах юлашкинчен пурпĕрех çапăçусем, вăрçăра пулнă тĕлĕнмелле эпизодсем çине пырса тухатчĕ.

Пĕрре, каçалапа, тухтăрсем обход туса тухса кайсан, манпа хирĕç выртакан çамрăк кăна лейтенант палата чӳречине уçса ячĕ те, çывăхрах усăнса тăракан шурă чечексем çине пăхса, чылай вăхăт шухăша кайса ларчĕ. Унтан стена çинчи пăтаран гитара илсе унăн хĕлĕхĕсене йăвашшăн янратрĕ те ерипен юрлама пуçларĕ. Вăл ун чухне пур фронтовиксем те çав тери юратакан «Землянка» текен юрра юрларĕ... Малтан хуллен çеç, çăварне кăшт кăна уçса, сăмахĕсене шăл витĕр каласа юрларĕ, унтан çирĕпленсех, вăйлансах пычĕ унăн юрри. Юрланăçемĕн хăйĕн сăнĕ те улшăнса пычĕ, куçĕ те темле урăхларах çутăлчĕ...

Ку лейтенант пĕтĕмпе те вунтăххăра çеç кайнăччĕха, çапах та вăрçăри хурапа шурра сахал мар тутанса пăхнăччĕ. Вăтам шкул пĕтерсен, командир пуласшăн çуннипе, вăл тӳрех çар шкулне вĕренме кĕнĕ, анчах пĕр уйăхранах вăрçă пуçланнă та — хăй ирĕкĕпе фронта кайнă. Кунта вара нумай тӳсме тивнĕ ăна, тем тĕрлĕ çапăçусенче те пулнă вăл, тыткăна лексе те тарса тухнă, виçĕ хут аманса сывалнă, каллех строя таврăннă, халĕ ак тăваттăмĕш хут суранланнă хыççăн выртатчĕ. Унăн çамрăк кăкăрне орденпа медаль капăрлатса тăратчĕç.

Тăванĕсем пулман унăн, хăй ача çуртĕнче ӳснĕ; çырусем пит сайра, ытти фронтсенчи юлташĕсенчен çеç илкеленĕ. Çав вăхăтрах унăн чĕринче сӳнми юрату çуннă...

Вунтăхăр çул! Эпир кашниех астăватпăр вăл вăхăта. Пĕр-пĕр илемлĕрех хĕр çĕр çинчи пĕтĕм хитрелĕхе пухса йышăннă пек курăнать, тĕнчери пĕр çын та сан пек юратма пултарас çук пек туйăнать. Çак лейтенант та, çар шкулĕнче чух хулана тухса çӳрекелесе, хаçат

киоскěнче сутă тăвакан пěр Наташăпа паллашнă та ăс-тăнне çухатмаллах юратса пăрахнă.

Миçе çěр хут каларě-ши вăл пире ун çинчен! Хамăр унăн савнă хěрне ěмěрне те курман пулсан та, ăна халь эпир пин çын хушшинче те палласа илме пултараттăмăр пулě. Пěтěмпех пěлсе çитрěмěр эпир: Наташăн çÿçě сăмала пек хура, куçě — пиçнě çěмěрт пек, сулахай питçăмарти çинче çаврака турпалли пур, шăлěсем — ахах евěрлě, калаçнă чух вăл яланах хěрелсе каять... Вăтам пÿллě, хулпуççийě тăваткăлрах, утти вěтě, пуринчен ытла ăна чечеклě сенкер платье килěшет...

Наташа пурăнакан хула халě гитлеровецсен аллинче пулнă. Те тарса хăтăлнă Наташа, те унтах юлнă — лейтенант ăна пěлмен. Тен, вăл тахçанах асапланса вилнě пуль, тен, партизансем патне кайнă — нимěн те паллă пулман. Çапах та лейтенант ăна малтанхи пекех юратнă, хěрěн сăнě унăн куçě умěнчен çухалман, ячě çăвартан кайман.

— Пěлетěр-и? — терě вăл пире пěринче.— Эпě кашни çапăçу умěнех Наташăн сăнÿкерчěкне кăларса пăхаттăм. Сире кулăшла пек туйăнать-и, тен... Анчах эпě чăнах çавăн пек тăватăп. Наташа çине лăйах кăна пăхса илетěп те, кайран вара вăл яланах манпа юнашар пынăн туйăнать, çавна пула чěрере темле чарусăр вăй хутшăнать. Пěрре, Ржев тăрăхěнче, эпě хамăн взводпа тăшмана фланграан пырса çапас тесе вăрмана кěрсе кайрăм... Нимěçсен унта засада пулнă-мěн. Кăпăрах çавăрса илчěç пире! Ну, эпě часрах круговая оборона турăм та юлашки патрон юлмиччен çапăçас, терěм. Пурпěрех вилěм... Ачисем манăн питě маттурччě: хăшěсем Çěпěртен, хăшěсем Атăл тăрăхěнчен... Арăслансем пекех çапăçрěç ěнтě, каламалли те çук. Фрицсене курăк çулнă пекех çулаççě. Анчах лешсем те хытă тарăхрěç пулмалла — пěрисем вырăнне теприсем тухаççě, çěр айěнчен шăтса тухнă пекех. Пěр сехет пычě çапăçу, иккěмěш сехет çине кайрě... Манăн взводран пěтěмпе те çичě çын çеç юлчě, ыттисем е вилнě, е йывăр аманнă. Патронсем те пěте пуçларěç. Тăшмансен пуçěсем хамăртан аллă-утмăл метра курăнаççě. «Русс, сдавайсь!» — тесе кăшкărма тытăнчěç, сěмсěрленсех çитрěç. Пěтмелли курăнсах тăчě... Çав вăхăтра сасартăк Наташа çинчен аса илтěм. Ниушлě ăна курмасăрах вилес пулать? Йăпăрт кăна гимнастерка кěсйинчен унăн

сăнўкерчĕкне кăларса пăхрăм. Наташа куçĕ ман çине кўренўллĕн пăхнăн туйăнчĕ... «Ваня, паранатăн-и вара?» — терĕ пек вăл мана. Чĕрем тăрук пĕçерсе кайрĕ... «Взво-од, за мной, в атаку!» — тесе кăшкăрса ятăм та вара эпĕ, юлашки гранатăсене унталла та кунталла, ăçта тăшман курăнать — çавăнталла вăркăнтарма тытăнтăм... Сиксе тăчĕ манăн «взвод» — хампа пĕрле ултă çын! Урра кăшкăрсах сиксе тăчĕ-ха! Граната хыççăн граната çурăлать, автомат кĕпçисем тытмалла мар хĕрса кайнă... Вара, мĕн тетĕр? Тухрăмăр вĕт тимĕр ункăран! Аманнисене те хăтартăмăр... Тупата, çав Наташа çине пăхниех пулăшрĕ çавăн чух!

Ку сăмахсене çамрăк лейтенант пĕтĕм чĕринченех, ĕнентерсех каларĕ, çавăнпа та, унăн калавĕнче ачалла айванлăх пулнă пулин те, эпир ăна чăнласах йышăннă пек турăмăр. Кăшт кăна ĕненменниех ăна хытă кўрентернĕ пулĕччĕ. Вунтăхăр çул! Чĕре çавăн пек çав ун чух...

Халĕ те, аллине гитара тытса, чўрече умĕнчи чечексем çине пăхса юрласа ларнă чух та, лейтенант çав Наташа çинченех шухăшланă ĕнтĕ. Эпĕ ăна унăн куçĕ яланхи пекех мар, темле урăхла çутăлма тытăннинченех асăрхарăм. Паллах, ун умĕнче Наташа сăнĕ тăнă. Тен, ăна çав самантра хăйĕн юррине Наташа çак чўрече патĕнче, чечексем хушшинче тăрса итленĕ пек туйăннă пуль... Майĕпе юрлакаласа ларсан, вăл сасартăк вайлă аккорд турĕ те хыттăнрах юрласа ячĕ:

— До тебя далеко, далеко,  
Между нами снега и снега,  
До тебя мне дойти нелегко,  
А до смерти четыре шага...

Унтан тата çĕнĕ аккорд туса, юррăн тепĕр çаврăмне ачашшăн, пысăк туйăмпа юрласа вĕçлерĕ:

— Пой, гармоника, вьюге назло,  
Заплутавшее счастье зови,  
Мне в холодной землянке тепло  
От моей негасимой любви...

Гитара хĕлĕхĕсем янрама чарăнсан, лейтенант кăкăр туллин сывласа илчĕ те каллех шухăша кайнă пек пулчĕ, пĕр хуша ним чĕнмесĕр, чўрече витĕр садалла пăхса ларчĕ.

— Аван юрă,— терĕ вăл унтан,— чĕренех пырса тивет...

— Куççуль кăларма та пултарать çав,— терĕм эпĕ те.

— Ну, куççуль çинченех калаçмăпăр,— килĕшмерĕ вăл манпа, пирус чĕркеме тытăнса,— салтакăн куççуль пулма пултараймасть... Макăракан салтак — салтак-и вăл?

— Ай-ай, ытла та тӳрĕ кастаратăн-çке! — сасартăк калаçăва хутшăнчĕ çав вăхăтра виççĕмĕш койка çинче выртакан кăвак çӳçлĕ майор.— Салтакăн чĕри çук, тесшĕн мар-и тата эс? Ай чунсăр пĕрене тетĕн-и ăна?

Майора эпир çывăрать пуль тесе шутланăччĕ, анчах вăл çывăрман иккен, чип-чиперех лейтенантăн юррине итлесе выртнă. Эпир калаçма пуçласан, тăрсах ларнă-мĕн.

— Кала-ха,— пуçĕпе лейтенант еннелле сулчĕ вăл,— салтак вара, сан шутпа, ытти çынсем пекех чĕре чун мар-и-мĕн? Калăпăр, санăн чĕрӳ пулман пулсан, хăвăн Наташуна çакăн пек юратма пултараттăнччĕ-и эс?

— Вăл апла та-ха... — тытăнарах тăчĕ лейтенант.

— Чĕре пурах эппин салтакăн, туйăмĕсем те пур унăн?

— Паллах, пур.

— А мĕн кирлĕ мара калаçатăн апла пулсан?

— Килĕшмест салтака...

— Мĕн?

— Куççуль юхтарни...

— Салтака сĕлехе юхтарни килĕшмест, куççуль кăларни мар! — Майор малти сĕтел патне пырса пирус тивертрĕ.— Ниепле те йышăнма пултараймастăп сан теорине...

— Хăвăрăнне каласа парăр эппин.

— Калас тетĕп çав. А эс итле. Темле пулсан та, эп санран ытларах пурăнса курнă çын...

— Хирĕçместĕп.

— Эпĕ ĕнтĕ ватă салтак, çирĕмултă çул пĕрмай çарта служить тăватăп, тăваттăмĕш вăрçа пурăнса ирттеретĕп. Ман чухлĕ юн курсан, тепри, тен, тахçанах ухмаха ернĕ пулĕччĕ, анчах эпĕ хăнк та тумастăп-ха. Чăнах та, нервăсем выляççĕ ĕнтĕ, анчах вăл ватлăх çывхарнă май та пулма пултарать. Пĕр сăмахпа калас-тăк,

ман чӗре тахҫанах чул пек хытса ларнӑ тес пулать. Ҫапах та эпӗ те макӑрма пултаратӑп иккен... Ӗненместӗн-и?

Майор пӗрре ман ҫине, тепре кӑштах тӗлӗннӗ ҫамрӑк лейтенант ҫине пӑхрӗ.

— Хирӗҫместӗп, вӑрҫӑ этемӗн чӗрине чӑнахах та хытарать, ҫирӗплетет, унӑн хӗрхенӳ туйӑмӗ ҫухалса пырать. Ун вырӑнне тӑшмана курайманни ӳссе, тулса хӑпарать, час-часах вӑл курайманлӑхран ним умӗнче те чарӑнса тӑман хаярлӑх ҫуралса тухать... Ку пӗтӗмпех тӗрӗс. Вӑл ҫапла пулмалла та ӗнтӗ. Анчах ҫапах та — ӗненӗр мана! — чи ватӑ фронтовикӗн те тепӗр чух чунӗ кӳтсе ҫитет, унӑн куҫӗ ирӗксӗрех шывланать...

Кӑвак ҫӳҫлӗ командир вӑраммӑн сывласа илчӗ. Эпир ытти чух та унӑн калавӗсене питӗ юратса итлеттӗмӗр те, халь, вӑл хӑйӗн пурнӑҫӗнче уйрӑмах паллӑ пулса юлнӑ саманта аса илнине сиссе, пушшех ним шарламасӑр, тимлӗн итлерӗмӗр.

— Иртнӗ ҫулхи август уйӑхӗнче ҫакӑн пек истори пулчӗ,— терӗ майор.— Тӗлӗнмелле истори... Нихҫан та манас ҫук эпӗ ӑна! Сычевка районӗнче тӑшман оборонине ҫӗмӗрсе кӗрсе кайсан, виҫҫӗмӗш кунӗнче эпир пӗр пысӑк ял патне ҫитсе тухрӑмӑр. Нимӗҫсен кунта вӑйлӑ опорнӑй пункт пулнӑ. Ана вӗсем малтанах хатӗрлесе хунӑ — чакмалла пулсан часрах ҫӗнӗ оборона йышӑнса ларма. Шуйттан чухлӗ дзотсем, курӑнми огневой точкӑсем лартса тултарнӑ, темиҫе рет йӗплӗ пралук карнӑ... Ну, ун пеккисене ӗнтӗ наступленисенче пулнӑ кашни ҫынах курнӑ, хӑвӑрах пӗлетӗр. Кӑпӑр-капӑрах ҫӗмӗрсе кӗрсе кайма ҫук, ҫамкана ыраттарма пулать! Ҫакӑнта самаях тапаҫланмалла пуласси ял патне ҫывхарма пуҫласанах сисӗнчӗ. Сӑмах артиллерипе миномётсене патӑмӑр... Хӗрӗх пилӗк минут пӗр чарӑнмасӑр тӳпкерӗҫ вӗсем, ялта снаряд е мина ӳксе ҫурӑлман вырӑн та юлмарӗ пулӗ. Нумай ҫуртсем ишӗлсе анчӗҫ, теприсем ҫунма тытӑнчӗҫ.

— Малалла! — команда патӑм вара эпӗ пӗтӗм батальона.

Виҫӗ ротӑпа виҫӗ енчен пӗр тӑрук пырса кӗме план тунӑччӗ. Ротӑсем харӑсах ҫӗкленчӗҫ, пӗр 200 метр пек хӑвӑртах малалла шурӗҫ, анчах урӑх каяймарӗҫ — тӑшман пулеметсемпе автоматсенчен каллех тӳсмелле мар ҫунтарма тапратрӗ. Пуҫа ҫӗклеме те ҫук. Пӑр ҫунӑ

пекех çăваççĕ пульăсем... Анчах ялĕ инçе те мар ĕнтĕ, пулсан пулĕ пĕр 250—300 метр. Тепре тăрса чупмалла кăна, анчах çынсене нумай çухатма пулать. Çавăнпа та ирĕксĕрех çĕр çумнерех лăпчăнса выртма тивет.

Темиçе минутран, эпир хускалманнине кура пулас, нимĕçсем кăшт сайрарах пеме пуçларĕç. Эпĕ пуçа умри тĕмескерен çӳлерех çĕклерĕм те бинокльпе пăхса сăнама тытăнтăм. Манăн тăшманăн чи çывăхри огневой точкисене палăртас килетчĕ. Сулахайран сылтăмалла йĕркипе пăхса пытăм... Çав вăхăтра, сасартăк, пĕр ишĕлнĕ арпалăх хыçĕнчен хĕрарăм чупса тухрĕ. Чип-чипер вырăс хĕрарăмĕ — шурă тутăрпа, хура пиншакпа, хăрах аллипе чĕчĕ ачине çĕкленĕ, тепринпе пĕр тăват-пилĕк çулхи ачине çавăтнă. Ним тытăнса тăмасăрах, унталла-кунталла пăхмасăрах, вăл пирĕн паталла чупрĕ... Чĕре яштах турĕ манăн... Бинокле çĕмĕрсе пăрахас пекех пăчăртаса лартрăм...

Хĕрарăм хире чупса тухсанах, нимĕçсем ăна хыçран пеме тапратрĕç. Пур енчен те переççĕ, çутăлакан пульăсем ун çуммипех ирте-ирте каяççĕ, анчах вăл çаплах чупать, çаплах чупать... Пур вăйне пухса, каялла çаврăнса пăхмасăр, пирĕн паталла чупать!

Майор хăйĕн калавне лăпкăнах пуçланăччĕ, анчах ку тĕле çитсен палăрмаллах пăлханма пуçларĕ. Вăл пирус тĕпне умлăн-хыçлăн ĕме-ĕме илчĕ, унтан ăна чӳрече витĕр тулалла ывăтрĕ те, ура çине тăрса, каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ.

— Эпĕ вут çинче выртнă пек выртрăм... Хĕрарăм хамăр паталла çывхарнă май ăна пит лайăх куракан пултăм эпĕ: унăн шурă тутри ĕнси çинелле анса ларнă, çӳçĕ сапаланса çилпе вĕлкĕшме тытăнчĕ, пиҫҫăмартийĕ тăрăх куççулĕ юхать... Тахăш самантра бинокле куç патĕнчен илсе хамăр боецсем çине пăхрăм та, вĕсем пурте, нимĕçсен пульлисенчен асăрханмаллине манса кайсах, пуçĕсене çӳлелле çĕкленине куртăм — пурте çав хĕрарăм çине куç илмесĕр пăхаççĕ иккен... Çитет-и вăл пирĕн пата, çитмест-и? Ах, çиттĕрччĕ, ах, ан лектĕрччĕ ăна! — тенĕ ĕнтĕ кашниех...

Нимĕçсем çаплах печĕç, пур енчен те печĕç ăна. Пулеметсенчен çеç мар, минометсенчен те кĕрслеттерме тытăнчĕç вĕт, ирсĕрсем! Акă, пĕр мини унран инçетерех те мар вăркăнса çурăлчĕ. Хĕрарăм ӳкрĕ. Вилчĕ, пĕтрĕ ку, терĕм эпĕ... Çук, вилмен иккен-ха. Каллех тă-

чĕ, каллех чупа пуçларĕ. Анчах паçăрхи пек хăвăрт чупаймарĕ вăл, пĕр енчен тепĕр еннелле сулăнса кайрĕ, çавăн пирки сылтăм аллипе çавăтнă ачи те çĕр çийĕн сĕтĕрĕнсе пычĕ. Ачин пичĕ — чĕп-чĕр юн, вăл чĕрри-виллине те уйăрса илмелле мар... Хĕрарăм пирĕн пата çитесси пĕтĕмпе те пĕр çĕр метр çеç юлчĕ, анчах та вăл çак вилĕм хирĕ урлă чĕррĕнех каçса çитес шанчăк пит сахал пулчĕ çав, нимĕçсем хытăран хытă печĕç. Вĕсем ăна епле пулсан та вĕлермех тăрăшрĕç... Унтан мĕнле пулнине астумастăп, анчах та эпĕ çак самантра хамăн куççуль юхса аннине туйса илтĕм... Ăнлантăр-и çавна? Эпĕ, вата салтак, хам пурнăçра темтепĕр курнă çын, куççулĕпех макăрса ятăм вĕт! Салтак чунĕ те чăтаймасть иккен тепĕр чух.

— Вперед, в атаку! — мĕн вăй çитнĕ таранах хыттăн кăшкăрса команда патăм та вара эпĕ, хамăн боецсем вырăнтан тăни-тăманни çине пăхмасăрах, малалла, çав ачаллă хĕрарăм патнелле ыткăнтăм... Эпĕ хăйĕн еннелле чупнине курсан, вăл та ман паталла чупрĕ. Темиçе самантран эпĕ ăна ачи-мĕнĕпех ыталаса илтĕм...

— Тăвансем, тăвансем... Юлташсем, çăлăр! — теме çеç пултарчĕ вăл, унтан, халтан кайса çитнипе, çавăнтах ÿкрĕ.

— Нумаййăн-и вĕсем? — кăшкăрса ыйтрăм эпĕ, хăвăртрах ун патне кукленсе.

— Икçĕр çын та пулĕ... Тупăсем, пулеметсем нумай...— Хĕрарăм ниепле те сывлăш çавăрса илеймерĕ.

— Халех вĕсем пĕри те пулмаççĕ! — каллех кăшкăртăм эпĕ ăна илттерме тăрăшса, мĕншĕн тесен пирĕнтен темиçе метрта пысăк мина ÿксе çурăлчĕ. Осколоксем хăлха çуммипех чашкăрса иртсе кайрĕç.— Эсĕ вырт çак воронкăра, кайран килĕпĕр сан пата!

Нимĕн те хăрушă пулмарĕ пирĕншĕн... Эпĕ хĕрарăмпа темиçе сăмах хушнă вăхăтра манăн боецсем ялăн анкартийĕсем патнех çитме ĕлкĕрнĕ. Чарусăр хаярлăхпа штурмласа кĕрсе кайрăмăр вара эпир çак яла. Боецсем пуринчен ытларах винтовкăсенчен, автоматсенчен персе мар, штыкпа, пăшал аврипе, çумри кинжалсемпе ĕçлерĕç. Траншейăсемпе окопсенче нумай фашистсем аллисене çĕкленине куртăм эпĕ, анчах вĕсене пĕрине те каçару пулмарĕ. Ултă тупă, пулеметсем, минометсем — тĕп-тĕрĕссипе! — пирĕн алла лекрĕç, çав кунах тăшмана хирĕç пеме тытăнчĕç.

Майор калама чарӑнчӗ. Пӗр вӑхӑт палатӑра никам ҫук пекех пулчӗ. Эпир майоран калавне итлесе тӗлӗннипе шарламарӑмӑр, вӑл хӑй, ҫавӑн чухне ӗҫсем мӗнле пулса иртнине аса илсе, тӑруках лӑпланаймарӗ пулас. Чылайран, ҫӗнӗ пирус чӗркесе тивертсен тин, сӑмахне тепӗр хут пуҫларӗ.

— Ҫапла вӑл салтакӑн чунӗ,— терӗ майор.— Ҫиелтен пӑхсан ҫеҫ хытса ларнӑ пек туйӑнма пултарать... Шаларах кӗрсе пӑхсан — урӑхла иккен, пачах урӑхла! Вӑл ҫав тери юратма та пултарать, вӗҫӗмсӗр савӑнма та пӗлет, хурланни те пулать унӑн. Ну... курайманлӑх енчен илсен, салтак чунне никам чунӗ те ҫитмест ҫав... Салтак чӗринче чӑн-чӑн курайманлӑх вӗреме пуҫласан, тытӑнса кӑна тӑр вара!

Каллех пӗр хушӑ шарламарӑмӑр эпир. Чӗрене кӗрсе ларнӑ тӗрӗс сӑмаха хирӗҫ мӗн калӑн?

— Леш хӗрарӑма кайран куртӑр-и? — ыйтрӗ унтан лейтенант.— Кам пулнӑ вӑл?

— Эпир ӑна ачи-пӑчипех госпитале ӑсатрӑмӑр,— терӗ майор.— Хӑй вӑл ҫав ялти учительница пулнӑ, упӑшки Хӗрлӗ Ҫар командирӗ пулнӑшӑн вӗлересрен хӑраса, нумай вӑхӑт фашистсенчен подвалта пытанса пурӑннӑ. Эпир ҫывхарса ҫитнине курсан вара тарма шут тытнӑ. Тахҫанчченех аса илсе пурӑнтӑмӑр ӑна. Эпир пӗрмай малалла кайса пытӑмӑр, нумай ялсемпе хуласене фашистсенчен тасатса ирӗке кӑлартӑмӑр, анчах та ҫӑлӑнӑҫ шыраса пирӗн пата вилӗм витӗр чупса пынӑ икӗ ачаллӑ хӗрарӑм сӑнӗ пӗрмаях куҫ умӗнче тӑчӗ...



# Старик № 33

...Муокав патёнче тăшман çарĕсене аркатса хĕвеланăçнелле хăвалама тытăннăранпа тăватă уйăх хушши тăтăшах çапăçусенче пулнă хыççăн, 1942 çулхи апрелĕн юлашки кунĕсенче пирĕн дивизие малти линирен тыла канма илсе тухрĕç.

Çанталăк вăл вăхăтра питĕ начарччĕ, кашни кунах юр та çумăр, çумăр та юр çăватчĕ. Смоленск тăрăхĕнче ахаль те шурлăхсем нумай та, халĕ çул-йĕрсем пачах

та иртсе ҫӳремелле мар пулса тӑчӗҫ. Пылчӑк, шыв, лачака... Машинӑсем хӑйсен кустӑрмисем курӑнми пуличченех кӗре-кӗре ларчӗҫ, лашасем ҫур хырӑм таранах путрӗҫ, вара пирӗн, шӗвӗ кӗсел пек лапра ӑшне кӗрсе кайса, машинӑсемпе тупӑсене те, йывӑр лавсене те алӑ вӗҫҫӗн, хамӑр вӑйпах сӗтӗрсе кӑлармалла пулчӗ.

Вӑтӑр километра икӗ талӑк ытла пытӑмӑр. Ҫынсем те, лашасем те калама ҫук ывӑнса ҫитрӗҫ. Вырӑна ҫитмешкӗн тата тепӗр вунӑ километр юлнӑччӗ те, виҫҫӗмӗш кунӗнче пире Вишни ялӗнче ҫӗр каҫма хушрӗҫ.

Тӗрӗссипе, Вишни ялӗ ҫӗр ҫинче юлманччӗ ӗнтӗ. Карттӑ тӑрӑх унта 287 кил шутланнӑ, анчах хӗлле кунтан чакса кайнӑ фашистсем вӗсене пурне те тӗппипех ҫунтарса янӑ, вӑрҫӑччен садсем хушшинче илемлӗн йӗркеленсе ларнӑ ҫуртсем вырӑнне халӗ унта-кунта кӑмака мӑрйисемпе ҫунӑк хапха юписем кӑна тӑрса юлнӑ.

Эпир, юлташпа иксӗмӗр, ял хӗррипе шарлатса юхса выртакан шыв урлӑ пӑрахнӑ перенесем тӑрӑх каҫрӑмӑр та ишӗлтернӗ чиркӳ патнелле хӑпаратпӑр. Ниҫта та пӗр ҫын та курӑнмасть. Килхушши вырӑнӗсенче, пахчасенчи хӑрӑк йывӑҫсем хушшине алтнӑ ҫӗрпӳртсенчен шурӑрах кӑвак тӗтӗм тухни ҫеҫ фашистсем ҫӗрпе танлаштарса хӑварнӑ ялта ҫапах та чӗрӗ ҫынсем пуррине систерет.

Пит те салхуллӑн, йывӑр шухӑшсемпе утрӑмӑр эпир... Мӗн тери тискер чӗреллӗ пулас пулать ӗнтӗ чечекленсе ларнӑ мирлӗ хуласемпе ялсене ҫак таран пӗтерсе хума! Фашистсем кӑна пултарнӑ ҫав ҫакӑн пек чарусӑр хӑтланма! Никама та усал туман, никамӑн пурлӑхне те нихҫан хапсӑнман совет ҫыннисем хӑйсен пур вӑйне хурса, тар юхтарса тунӑ пӗтӗм ырлӑх-пурлӑха вӗсем кӗлпе кӑмрӑк туса хӑварнӑ вӗт-ха... Чӗрере ҫак хӑрушла вӑрҫа пуҫарса яракансене хирӗҫ хаяр тарӑху тата ытларах ӳсе хӑпарать, пӗтӗм кӑкӑра вӗри курайманлӑх пӗҫертет... Ҫутӑ ӗмӗтсемпе пурӑнакан этемлӗх сире кунӑн нихҫан та каҫарас ҫук, ирсӗр фашистсем, ӑна ан кӗтӗр!..

...Тӑруках ҫумӑр тепӗр хут ҫума пуҫларӗ те, эпир, хӳтлӗх шыраса, унӑн-кунӑн пӑхкалама тытӑнтӑмӑр.

— Ав ҫавӑнта темле ҫурт пур,— терӗ ман юлташ, сулахайри сайра туратлӑ йӑмрасем еннелле кӑтартса.— Атя, ҫавӑнта кайса пӑхар!

Эпĕ сăмахсăрах килĕшрĕм, мĕншĕн тесен эпир унччен те аялти кĕпесем таранах исленнĕччĕ те, текех йĕпенес килмерĕ. Çитменнине каç та пулса килетчĕ ĕнтĕ, ăçта та пулин вырăн тупса çĕр каçас пулать, типĕнмелли вырăн тупăнсан тата лайăхрахчĕ. Ик-виç минутран эпир çав çурт патне çитсе те тăтăмăр. Шалтан сасăсем илтĕннипе кунта çынсем пурăнни паллă пулчĕ.

— Ку пырать-ха, тен, унта ăшă пуль,— шухăшларăм та эпĕ, кивĕ чус хăмаран çапса тунă алăка яриех уçрăм.

— Кĕме юрать-и?

— Кĕрĕрех, кĕрĕрех,— илтĕнчĕ шалтан харăсах темиçе сасă.

Нихçан та пĕр пӳртре çакăн чухлĕ халăх пурăннине курман вара эпĕ! Пӳрчĕ те — пӳрт мар, темле кĕлет пулнăскер кăна. Тултан çутă кĕме стенана ик-виçĕ çĕртен шăтарса, кантăк куçĕсем лартнă. Йĕри-тавра икĕ хутлă нарсем — сарлака саксем туса тултарнă, пурин çинче те тăп-тулли çын: хĕрарăм, ача-пăча, стариксем. Çавăнтах — кивĕ утиялсемпе, çĕтĕк шăналăксемпе чĕрке-чĕрке çыхнă япаласем, тумтирсем; маччаран тăватă сăпка çакса янă, урайĕнче, вĕт-шак ачасемпе хутăш, путексем çӳреççĕ, пĕр сакĕнчен имшеркке кăна пăру кăкарнă. Нимĕнпе те танлаштарма пулмарĕ ку çынсен йăвине — ни казарма мар, ни вокзал, ни пăрахут çинчи тăваттăмĕш класс теме çук. Пичкери пулăсем пек чыхăннă, теççĕ тепĕр чух. Чăнах çавнашкал тулса ларнă çав! Калаçу, шав, çуйăху — нимĕн те ăнланмалла мар.

Тултан тата тепĕр ватă карчăк кăштăртатса кĕчĕ те, эпир алăк патĕнче ура çинчех тăнине курса, тĕттĕм кĕтеселле кăтартрĕ:

— Ма лармастăр, ывăлăмсем? Ав çавăнта пĕчĕк тенкел пулмалла, иртсемĕр...

— Тавтапуç, эпир ытлах ывăнман-ха, çумăртан çеç кĕтĕмĕр, халех каятпăр,— терĕм эпĕ ăна, урăх ним калама аптраса.

— Ывăнманни курăнсах тăрать, аттăрсем те çара лапрах акă, пĕр çирĕм-вăтăр çухрăм утнă пулĕ-ха,—пире тăрăххăн пăхса илчĕ карчăк.— Э-эх, мăнтарăнсем... Темле йывăр пулсан та, тӳсесех пулать ĕнтĕ! Манăн хамăн та сирĕн йышшисем виççĕ те, кашни салтака курмассеренех аса килеççĕ. Пуçĕсем ку таранччен сывă

пулсан, вӗсем те ҫакӑн пекех ҫӳреҫҫӗ пуль ҫав! Чипер йышӑнса ӑшӑ сӑмах калакансем пур-ши хуть, тетӗп...

— Салтаксене пур ҫӗрте те ырӑ кӑмӑлпа йышӑнаҫҫӗ,— терӗ ман юлташ.— Хуть те хӑҫан та...

— Ара, сире йышӑнмасан, кама йышӑнас тата? — Карчӑк пирӗн ҫине тинкеререх пӑхрӗ. Эпӗ унӑн куҫӗ шывланнине асӑрхарӑм.— Хамӑрӑн вӗт эсир, хамӑрӑн! Пӗтӗм пурнӑҫа та халь сирӗн ҫине шанса ҫеҫ пурӑнатпӑр пулать те...

Карчӑк пире валли тенкел илсе пырса лартрӗ те куҫне тутӑр вӗҫӗпе шӑлса илчӗ.

— Пилӗк уйӑх хушши тамӑкра ҫуннӑ пек пурӑнтӑмӑр вӗт. Аса илсенех куҫҫуль тухать... Сӑпаҫҫипах сире, ирӗке кӑлартӑр... хӑваласа ятӑр ҫынҫиенсене...

— Иртни — иртнӗ ӗнтӗ вӑл, текех таврӑнас ҫук, халӗ пурнӑҫа юсасси ҫинчен ҫеҫ шухӑшлас пулать сирӗн,— лӑплантарчӗ ӑна ман юлташ.

— Ҫаплах, ара, ҫаплах,— килӗшрӗ карчӑк.— Хамӑр та ҫавӑн пирки кӑна хыпкаланатпӑр. Колхоз каллех ӗҫлеме пуҫларӗ ав, вӑрлӑх пуҫтарать, ҫуртырри акасшӑн...

— Акас пулать ҫав, тӑшмантан хӑтарнӑ ҫӗре ахаль выртттарма юрамасть. Эпир вӑл ҫӗре хамӑрӑн юнпа шӑварнӑ.

Юлташ карчӑкпа ҫавӑн пек калаҫса кайнӑ хушӑра эпӗ, пӳрт ашчиккине лайӑхрах сӑнаса, пӗр кӗтесре, пӗчӗкҫеҫ сӗтел хушшинче, икӗ хӗрача тата вӗсене хирӗҫ кукша пуҫлӑ, шӗвӗртерех кӑвак сухаллӑ, тимӗр кӑшӑллӑ кивӗ куҫлӑх тӑхӑннӑ старик ларнине асӑрхарӑм. Вӗсем хӑйсем хушшинче хуллен кӑна калаҫатчӗҫ. Старик темскер ыйтрӗ, хӗрачасем ӑна ответ пачӗҫ, кайран хӑйсем унран ыйтрӗҫ... Эпӗ тинкеререх итлерӗм, ҫапах та, пӳртре питӗ шавлӑ пулнипе, вӗсен уйрӑм сӑмахӗсене ҫеҫ илтме пултартӑм.

— Имя существительное... прилагательное, глагол...

Кӑшт тӑрсан пӗр хӗрачи ҫинҫе кӑна сасӑпа калама пуҫларӗ:

— Сложным предложением называется...

— Миҫе ҫемье пурӑнать вара ку пӳртре? — ыйтрӗ ҫав вӑхӑтра ман юлташ хайхи карчӑкран.

— Тӑхӑр ҫемье,— терӗ карчӑк,— питӗ тӑвӑр, анчах ним тума та ҫук, ҫӑва тухиччен тӳсесех пулать. Хӑшӗ-

сем çĕрпӳртсем алтса кĕчĕç, анчах эпир — вата-вĕтĕсем — вăй çитерейменĕмĕр çав.

— Леш старикĕ кам вăл? — ыйтрăм эпĕ çав хушăрах, кĕтесри сĕтел хушшинчи калаçусенчен тĕлĕнe пуçласа.

— Учитель вăл пирĕн, Яков Иванович...

— Кунта пурăнать-и?

— Çук, вăл хăйне уйрăм çĕрпӳртре пурăнать, кунта çав хĕрачасене вĕрентме килнĕ çеç. Нимĕçсем пирĕн шкула та çунтарса ячĕç те, халь Яков Иванович ачасене вĕрентме килтен киле çӳрет.— Карчăк хурлăхлăн сывласа илчĕ.— Ăна та çăмăл мар, ватлăхра пĕр-пĕччен тăрса юлчĕ. Хуйхи тем пекех пысăк пулсан та, хăй ĕçне пăрахмасть тата, çӳрет майĕпе кăштăртатса.

— Ну, ыранччен çак виçĕ параграфа вĕренĕр эппин, ыран вара иксĕртен те ыйтатăп,— илтĕнчĕ çак самантра старикĕн сасси,— хутлă тата хутсăр предложенисене лайăххрах уйăрма пĕлес пулать... Унтан тата — хутламалли таблица. Эс ăна пачах манса кайнă, Тамара, аса илес пулать, унсăр арифметика малалла каймасть пирĕн...

— Эп вĕрентетĕп ăна, Яков Иванович,— терĕ çинçе саслă хĕрачи.

Старик куçлăхне хывса хучĕ те, темле кивĕ хаçат татки çурса илсе, кĕсйинче табак шырама пуçларĕ. Анчах табакĕ пĕтнĕ пулмалла, пирус чĕркемелĕх тупăнаймарĕ. Çавна асăрхаса, эпĕ вырăнтан тăтăм та, нарсем хушшипе ун патне пырса, портсигара уçса пирус сĕнтĕм:

— Туртăр...

— Ой, спаççипă, командир юлташ! — ман çине кăмăллăн пăхрĕ вăл.— Табакран начар пурăнатăп-çке çав! Ыттинчен аптрамастăп, пулăшаççĕ мана, анчах табак çук вара, питĕ кансĕр вăл енчен...

Унпа пĕрле эпĕ те пирус чĕртрĕм. Алăк патĕнчи карчăк ун çинчен кĕскен кăна каласа паниех мана питĕ интереслентерсе ячĕ те, манăн ку старикпе çывăхрах паллашас килсе кайрĕ. Старикĕ те калаçма юратакансккер пулнă-мĕн; пирĕн паллашу хăвăртах йĕркене кĕчĕ.

— Вĕрентетĕр эппин? — сăмах пуçларăм эпĕ.

— Майĕпе вĕренткелетĕп,— терĕ Яков Иванович.—

Çамрăк вăхăта сая яма юрамасть вĕт. Ахаль те ачасем пилĕк уйăх ытла вĕренеймесĕр пурăнчĕç...

— Куна сире мĕнле... районтан хушрĕç-и е эсир хăвăр...

— Çук, эпĕ нихçан та çын хушнипе ĕçлемен, командир юлташ. Мĕн тумаллине, хăш вăхăтра тумаллине эпĕ хамах пит аван пĕлетĕп,— терĕ Яков Иванович.— Ачасене вĕрентме тытăнни хĕрĕх виçĕ çул ĕнтĕ. Ман учениксенчен халĕ ученăйсем те, генералсем те, поэтсем те, орден илнисем те, темлисем те пур... Пуринчен хакли — вăхăт. Вĕренме нихçан та кая мар, теççĕ те, çапах та çынна вĕрентессине кая хăварма юрамасть. Пахчаçă хăйĕн ӳсентăранĕсене епле вăхăтра шăварса, çĕре çемçетсе çитĕнтерет, учителĕн те çавнашкалах пулмалла. Нимĕçсене хăваласа яриччен эпĕ, пуринчен ытла, пирĕн ачасем вĕренмесĕр юлнишĕн хуйхăртăм, яла хамăрăннисем ирĕке кăларсан вара ик-виç кунтанах ĕçе тытăнтăм. Хăшĕсем мана: тăхта, ăçта васкан, кăштах лăпланар-ха, пурнăç пăртакках йĕркене кĕтĕр, текелерĕç, анчах эпĕ никама та итлесе тăмарăм. Шкул çурчĕ çук пулсан, килтен киле çӳретĕп, терĕм. Малтан темле тĕлĕнмеллерех пекчĕ те, халь ним те мар, ачасем те хăнăхрĕç, хам та...

— Ĕç чиперех пырать эппин?

— Пырать-ха. Тăрăшатпăр, йывăр пулин те...

— Кĕнекесем пирки мĕнле-ха тата сирĕн? Шкулне çунтарса янă пулсан, вĕсем те пĕтнĕ пуль?

— Çителĕклех мар та — пур пăртак. Эпĕ вĕсене упраса хăварма пĕлтĕм. Микроскоп та пур, ытти хăшпĕр приборсем те. Чăнах та, эпĕ вĕсемшĕн чутах хамăн пуçăма хураттăм, çапах та çăлтăм-çăлтăмах... Вăхăтăр пур пулсан, нума-ай каласа пама пултаратăп эп сире хамăн мĕн-мĕн курма тӳр килни çинчен!

Эпĕ юлташ çине пăхса илтĕм; вăл, ĕшенсе çитнĕскер, пуçне стена çумне тайăнтарнă та ларнă çĕртех тĕлĕрсе кайнă иккен.

— Вăхăчĕ пур-ха пирĕн, ыран иртчен ку ялтах пулатпăр,— терĕм эпĕ.— Анчах тем тумалла пулать...

— Çĕр выртма хваттер пур-и?

— Шыраман-ха ăна...

Старик, куçлăхне каллех тăхăнса кăмăллăн кулса илчĕ...

— Шырасан та тупаймастăр. Çак кĕлет — пĕртен-

пĕр «гостиница» пирĕн. Пĕркун полковниксем те вырт-са кайрĕç. А эсир, тиркеместĕр пулсан, атьăр ман пата, çĕрпӳрте. Комфорт пулмасть ĕнтĕ, анчах ăшши пулать, ăна шантарсах калама пултаратăп.

Ку сĕнӳ пирĕншĕн питех те майлă пулчĕ.

Тепĕр темиçе минутран эпир, Яков Ивановичпа пĕр-ле, икĕ вата улмуççи хушшине алтнă çĕрпӳрте пырса кĕтĕмĕр.

— Ан тиркĕр ĕнтĕ,— терĕ вăл,— вырнаçăр. Халех вут хутса ярăпăр та, ăшă пулĕ пире...

Вăл алăк патĕнчи тимĕр кăмакапа тăрмашма ты-тăнчĕ, эпир, шинельсене хывса, пĕчĕкçеç хăрах куçлă чӳрече умĕнчи сĕтелĕн икĕ енне лартăмăр. «Сорокопят-ка» * гильзинчен тунă лампăна çутатса ярсан, мана, чăн малтан, çĕрпӳртри тирпейлĕх тĕлĕнтерчĕ. Стенисе-не, тăпра тăкăнасран, снаряд ещĕкĕсенчен кăларса илнĕ хăмасемпе картланă, сĕтел çине шурă çитти сар-нă, унтах чечек лартнă; пĕчĕк тĕкĕр, çырмалли хатĕр-сем пур. Шăп чӳрече тĕлĕнче Ленинпа Горький сăнĕ-сем, кĕтесре Пушкинăн пысăках мар бюстне лартнă.

— Сирĕн çĕрпӳрт чăн-чăн кабинет пекех-çке, питĕ кăмăллă,— терĕм эпĕ, йĕри-тавра темиçе хут та пăхса çаврăнса.

— Йĕркелĕхе юрататăп,— терĕ Яков Иванович.— Этем кирек мĕнле условисене лексен те, унăн этемлех пурăнма тăрăшас пулать.

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ.

— Эпир фашистсем мар вĕт. Вĕсем, ав, хăйсен культурăлăхĕпе тем пекех мухтанаççĕ пулин те, хăйсем сыснаран та сысна. Куртăмăр ĕнтĕ вĕсен «культури-не» — виличчен те манас çук! Тискер кайăксемпе тан-лаштарма та йывăр вĕсене...

* * *

...Сĕтел çине Яков Иванович пăсланакан чейник пырса лартрĕ те, эпир хамăрăн сумкăсенчен çимелли-сем кăларса апатланма тытăнтăмăр. Хăйĕн хăнисем хаçатра ĕçлекен çынсем пулнине пĕлсен, вăл тата ытларах хавхаланса каласма пуçларĕ.

* 45 мм тупă. Вăл тупăсемпе вăрçăн малтанхи çулĕсенче танксене хирĕç кĕрешнĕ.

— Историре пулман вӗт-ха кун пек тискерлӗх, ывӑлӑмсем... Хамӑн куҫпа курман пулсан, хам тӳссе ирттермен пулсан, тупата, ӗненессӗм те ҫук ҫав, мӗншӗн тесен чипер ӑстанлӑ этем ҫав тери тискер ӗҫсем тума пултарнине ниепле те йышӑнма ҫук,— терӗ вӑл.— Ну, историре Чингис-хан пулнӑ, Батый... Феодализм вӑхӑтӗнче инквизиторсем пулнӑ... Анчах вӗсем пӗри те фашистсемпе танлашма пултараймаҫҫӗ. Культура! Пуртӑпа ҫулӑм «культури» вӗсен, акӑ мӗн!

— Тен, эсир хӑвӑр мӗн-мӗн курнисем, тӳснисем ҫинчен пире йӗркипе каласа парӑр? — ыйтрӑмӑр эпир, старик чӗринче фашистсене хирӗҫ нихҫан сӳнмелле мар курайманлӑх вӗресе тӑнине кура.

— Пӗтӗмпех каласа паратӑп, итлеме кӑмӑл тӑвӑр кӑна. Каласа памасӑр тӳсме ҫук. Эсир кайран ман калава пичетлесе кӑларӑр, пурте пӗлччӗр фашистсен чӑнчӑн сӑн-сӑпатне: ватти те, вӗтти те, пулас ӑрусем те пӗлччӗр!

— Юрӗ, Яков Иванович, ҫырӑпӑр.

...Акӑ мӗн каласа кӑтартрӗ вара фашистсем ҫинчен пирӗн ҫӗнӗ тус, ватӑ учитель Яков Иванович Просветов.

— Малтанах питӗ чееленсе хӑтланчӗҫ вӗсем... Пирӗннисем чакса кайсан тепӗр кунне, шӑп кӑнтӑрла, мотоциклетсемпе килсе кӗчӗҫ те ҫавӑнтах халӑха илӗртме тытӑнчӗҫ. Ҫынсем унта-кунта пытанса пӗтнӗччӗ, анчах гитлеровецсем вӗсене тупа-тупа урама илсе кӑларчӗҫ. Эпӗ те лекрӗм вӑл шута. Пӗр сехет-сехет ҫурӑра ҫӗр ҫынна яхӑн пухрӗҫ. Вара ҫавӑнтах пӗри, вырӑсла пӗлекенскер, «митинг» тума тытӑнчӗ.

— Ан хӑрӑр пирӗнтен, ан пытанӑр, эпир — сирӗн тусӑрсем, сире ҫӗнӗ йӗрке, ырӑ пурнӑҫ паракансем пулатпӑр! — Тӳсмелле мар демагоги пуҫласа ячӗ! Мухтанать, суять, ҫынсен пуҫӗсене пӑтраштармалли меслетсем шырать ҫав, ӑшчик лӗкленет, ниҫта кайса кӗме ҫук! Вӑл каланӑ хушӑрах темиҫе салтакӗ ачасене канфетсем, печенисем валеҫсе пачӗҫ, хӗрарӑмсене — темле тутӑрсем, лентӑсем, шӑрҫасем. Пӗрисем параҫҫӗ, теприсем ҫав вӑхӑтрах фотоаппаратсемпе чаклаттараҫҫӗ— ӳкере-ӳкере илеҫҫӗ. Паллах ӗнтӗ, хӑйсен хаҫачӗсем валли...

— Ҫук, ултавлӑ та ирсӗр вӑйӑ кӑна ку,— терӗм эпӗ хама хам.— Сарасса ҫемҫе сарма хӑтланаҫҫӗ те, ҫывӑрма питӗ хытӑ пулать...

Эп кăна мар, пурте çапла шутланă ĕнтĕ. Ютран килнĕ хурахла тăшмансем пире валли епле «ырă пурнăç» хатĕрленине кашни ăсла-пуçлă çынах ăнланнă. Ик-виç кунтанах пит лайăх кăтартрĕç ăна фашистсем. Малти чаçсем иртсе кайсан, гестаповецсем çитсе кĕчĕç. Пуçланчĕ вара тӳсмелле мар çарату, никам шухăшласа кăларма пултарайман тискерлĕх...

Чăн малтан, ялти «власть» валли хăйсене юрăхлă çынсем суйласа тупрĕç. Пĕр пӳтсĕре — виç-тăватă хут тĕрмере ларса тухнă бандитла çынна староста турĕç, ăна пирĕн Кузьма Битый тесе чĕнетчĕç,— çамрăк чухнех темиçе хут та вăрăпа тытса пĕтĕм халăхпа хĕненĕ пирки. Мана писарь пулма сĕнчĕç.

— Германи командованийĕ сана шанать, çавăнпа та эпир паракан ĕçе санăн савăнсах тытăнас пулать,— терĕ мана гестапо пуçлăхĕ тăлмачă урлă, ман умма çимелли-ĕçмеллисем кăларса лартса.— Саншăн нимĕнле хăрушлăх та пулмасть, эпир сана хамăр хӳтлĕхе илетпĕр. Пирĕн кăтартусене тĕп-тĕрĕс туса пыр кăна!

Манăн чĕре те тапми пулчĕ çакăн пек сĕнĕве илтсен. Хĕрĕх çул ытла вырăс халăхне çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçленĕ хыççăн, çирĕм çул ытла совет ачисене вĕрентсе, социализм строителĕсене хатĕрлесе пурăннă хыççăн фашистсен холуйĕ пулма ниепле те пултарайман ĕнтĕ эпĕ, хăвăрах ăнланатăр! Гестапо сĕнекен «ырлăхсенчен» çавăнтах пăрăнма тытăнтăм. Ватта петĕм. Вăйăм çук, куç курмасть, çырма — алăсем чĕтреççĕ... Пултараймастăп, урăххине шырăр!

— Хăратăн эсĕ,— терĕ мана фашистсен начальникĕ.— Большевиксем каялла таврăнасси çинчен шухăшлатăн. Анчах та вăл шухăша пуçран кăларса ывăт, сирĕн Совет влаçĕ пĕтнĕ ĕнтĕ, Хĕрлĕ Çар çук, эрнеренех эпир Мускавра пулатпăр! Пурпĕрех пирĕн йĕркесемпе килĕшмелле пулать, темле кутăнлансан та!

Хăй çаплах эрех черккине ман патalla шутарать. Анчах эпĕ, паллах, ăна алла та тытмарăм, нихçан та эрех тавраш ĕ сыпса курман, тин сыпассăм та çук, терĕм.

Пĕр хушă чĕнмесĕр лартăмăр. Вăл ман çине витĕр шăтарас пек пăхать, эп татăклă ответ парасса кĕтет, эп шарламастăп...

— Ну, асту, кайран ӳкĕнмелле пулса ан тухтăр санăн,— терĕ вăл юлашкинчен, пӳрнисемпе сĕтеле тăкăр-

таттарса илсе.— Саботажниксемпе урăхла калаçатпăр эпир... Çакна лайăххрах асту: эпир сире çĕнтернĕ ĕнтĕ, власть — пирĕн алăра!

— Хуть те мĕн тăвăр...

Гестаповец, сĕтел хушшинчен тухса, каллĕ-маллĕ уткаларĕ те сасартăк ман умма пырса кăкăртан çатăрах тытса лартрĕ:

— Учитель! Эс хăвна та, çемйӳне те хĕрхенместĕн курăнать. Ыранччен шухăшласа пăх. Ирччен сана ăс кĕрессе шанатăп! Асту: кам пирĕнпе ĕçлеме килĕшмест — вăл пире хирĕç пырать, анчах хирĕç пыракансемпе эпир нумай чăрманса тăмастпăр!

Вĕри тамăкран хăтăлса тухнă пекех пулчĕ вăл мана киле кайма ирĕк пани. Урампа мĕнле иртсе пынине те астумастăп. Анчах килте мана çĕнĕ инкек кĕтсе тăнă...

Манăн аслă хĕр Вера, хампа пĕрле шкулта ĕçлекенскер, эп алăкран кĕрсенех ман паталла макăрса чупса пычĕ.

— Шкула аркатрĕç пирĕнне... ним те хăвармарĕç! — терĕ вăл куççулĕ витĕр.

— Епле апла? Мĕн туса хунă?

— Партăсене кăларса пăрахрĕç, вĕсен хăмисенчен лашасем валли кормушкăсем тăваççĕ, шкулта вите пулать пулмалла... Шкапсенчи кĕнекесемпе кăмака хутаççĕ!

Ăшчик вутпа çунтарнă пекех пĕçерсе илчĕ. Кĕнекесем маншăн пурнăçри чи хаклă пуянлăх пулнă. Эпĕ вĕсене çирĕм çул ытла пухнăччĕ, пирĕнни пек пуян библиотека районĕпе те çукчĕ...

— Пĕтĕмпех çунтарса ячĕç-и? — тесе ыйтма çеç пултартăм эпĕ.

— Кăштах юлнă пулас та, нумай çунтарчĕç çав, — терĕ Вера.

— Атя эппин, юлашкисене кайса çăлар!

Хĕр хăраса ӳкрĕ:

— Юрамасть пуль унта пыма... Курсан, персе те пăрахĕç!

Эпĕ пурпĕр хамăн шухăша пăрахмарăм. Вара Вера тумланчĕ те, эпирваскасах шкула кайрăмăр. Каç пулнăччĕ ĕнтĕ, урамра тĕттĕмччĕ; хӳме çуммипе йăпшăнкаласа, шкула пырса кĕтĕмĕр те, манăн куççулĕ шăпăртах юхса анчĕ... Шкулăн стенисем кăна тăрса юлнă! Партăсем, сĕтел-пукансем, класри доскасем — пĕтĕмпех

шкул умĕнче шанкă пек выртаççĕ, ăçта ан пăх — пур çĕрте те кĕнеке, хут, карттăсем, картинăсем сапаланнă.

Мĕн тăвас? Шкул пуянлăхне ытла пĕтĕмпех аркатса çунтарса яриччен кăшт та пулин хăтарас пулать вĕт! Анчах ăçта чикес ăна? Тăшмансем пур çĕрте те ухтарса тупма пултараççĕ,— пытарнă япалана тупсан пуштех пуçа çийĕç!

Сасартăк аса илтĕм: шкул картинче пирĕн питĕ пысăк пусă шăтăкĕ пурччĕ, унта эпир кашни çулах шкулăн çĕрулмине хываттăмăр.

— Тултарас çав шăтăка!

Вера ку шухăша ырларĕ. Мĕн пулать, мĕн килет! Вара эпир çĕрĕпех ĕçлерĕмĕр. Шкапсенче хăтăлса юлнă кĕнекесене пĕтĕмпех çав пусса леçсе хутăмăр, çиелтен улăм сарса, тăпра сапса лартрăмăр. Пирĕн телее, ку çывăхра нимĕçсен хурал тавраш пулман-мĕн, çавăнпа та пире никам та кансĕрлемерĕ.

Каялла таврăннă чух, шкул сарайĕ хыçĕнче, эпĕ темле хытă япаларан такăнтăм. Темскер шуррăн курăнса кайрĕ. Хыпашласа пăхрăм та — Пушкин выртать! Ак çакă... (Яков Иванович çĕрпӳрт кĕтессинче тăракан бюст çине кăтартрĕ.) Темле майпа çĕмĕрĕлмен вара, тĕлĕнсе каймалла! Анчах маншăн вăл питĕ, питĕ хаклă япала, ăна мана Ленинградран килнĕ пĕр скульптор асăнмалăх панăччĕ. Эпĕ Пушкина часрах çĕклерĕм те килелле тата хăвăртрах утрăм.

— Мăшкăллатармастăп вырăс генийĕнчен!— тесе, Александр Сергеевича питĕ тĕплĕ вырăна пытарса хутăм...

Ирхине мана каллех чĕнтерчĕç. Гестапо начальникĕ манпа ĕнерхи майлах калаçма тытăнчĕ.

— Тупăшлă вырăнтан пăрăнатăн! — тет. Эпĕ çаплах хамăн вăй çукки çине петĕм.

— Ватă ухмах! Ашак! — тесе кăшкăрса пăрахрĕ те вăл мана юлашкинчен, сĕтел çине чант! çапрĕ.— Тинех пирĕнтен ыррине ан кĕт ĕнтĕ, тем пулсан та, хăвна çеç ӳпкеле!

— Пурпĕр сан умăнта чĕркуçленсе ларассăм çук,— терĕм куна хирĕç хамăн ăшăмра.— Вĕлерĕр, анчах парăнтараймастăр!

Калама та çук тарăхса кайрăм çав. Çине тăрсах, куçкĕретĕнех мана сутăнчăк тăвасшăн! Эпĕ вĕрентсе ӳстернĕ çĕршер ывăлсем фронтсенче Тăван çĕршывшăн

çапăçаççĕ, анчах манăн вăл вăхăтра фашист чунилли-семпе юнашар ларса, вĕсен йытти пулса, тăшман майлă ĕçлемелле иккен!..

Хальхинче эпĕ киле таврăннă çĕре район салинче фельдшерицăра ĕçлекен хĕрĕм Соня çитсе ларнăччĕ. Алăк патĕнче унăн япалисен çыххине курсанах, вăл та ырă мар сăлтавпа килнине туйса илтĕм...

— Больницăра нимĕçсем казарма тăваççĕ, пире хăваласа кăларса ячĕç. Хамăрăн япаласене те ĕретлĕн пуçтарса тухма памарĕç,— терĕ Соня.

— Çапла пулмалла та ĕнтĕ вăл,— ответ патăм ăна.— Кун пеккине кăна мар курăпăр-ха малашне...

Ĕнертенпех çименччĕ те эпир, аслă хĕрĕм апат хатĕрлеме пикенчĕ. Кĕçĕн хĕрĕм нимĕçсем район центрĕнче мĕнле урса кайса хăтланни çинчен каласа пама тытăнчĕ. Больницăра выртакан çынсене, вăл шутрах халь çеç ача çуратнă хĕрарăмсене те, пăшал кĕпçисемпе чыша-чыша кăларса янă иккен, больницăри аслă тухтăр чирлĕ çынсен хутне кĕме тăрсан, ăна çавăнтах персе пăрахнă...

Çаксене илтсе, тĕлĕннипе хытнă пек пулса, тарăхнипе шăлсене çыртса лартнă вăхăтра пирĕн пата хайхи Кузька Битый, староста, пырса кĕчĕ. Чĕре тата хытăрах пăчăртанса илчĕ. Унччен малтан эп ăна ĕмĕрне те хамăн кил çывăхне яманччĕ, мана куçран пăхма та пултарайман вăл, анчах халĕ чăн хуçа пекех пырса кĕчĕ. Нимĕн те шарлаймарăм — власть!

Кĕрсе тăчĕ те — сывлăх та сунмарĕ, вăрă куçĕпе йĕри-тавралла пăхса илчĕ кăна. Унтан кĕсйинчен хут кăларса, тӳрех темскер çырса хучĕ.

— Эсир виççĕн-ха эппин халь...— терĕ вăл.

— Мĕн вара? — ыйтрăм эпĕ.

— Ялта миçе çын пуррине шутлатăп. Мана тĕптĕрĕс сведени кирлĕ, çавăнпа.

— Эпĕ хăнана çеç килнĕ, мана ан çыр,— терĕ Соня.

— Эппин нумай ан пурăн кунта. Юрамасть халь ялсем тăрăх сулланса çӳреме. Эсир вара... (вăл Верăпа иксĕмĕр çине тĕллесе кăтартрĕ) ниçта та ан кайăр. Тепĕр сехетрен ялта клуб вырăнне каллех чиркӳ уçăлать. Ăна уçнă çĕре пурин те пырас пулать,— приказ çапла. Ак çак списока лекнисенчен кам та пулин пымасан — вăл влаçсене хирĕç тăнине пĕлтерет... Анланма тăрăшăр çавна, эсир вĕреннĕ çынсем!

— Турра ёненесси вăл ирĕклĕ ялала-çке,— сăмах хушрĕ ман Вера.

— Эсир, мадама, «ирĕк» сăмаха манма тăрăшăр! Сирĕн диктатура мар халь, законсене эпир тăватпăр,— чалăшшăн пăхрĕ те ун çине Кузька, йĕрĕнчĕклĕн кулса илчĕ.— Халĕ сирĕн пăхăнмалли çеç юлать. Амба! Тепĕр сехетрен — шăп вуниккĕре—чиркĕве пынă пултăр. Паллах ĕнтĕ, лайăхрах тумланса пырас пулать, мĕншĕн тесен чиркӳ уçни вăл — халăхшăн пысăк праçник. Эп ăнланатăп-ха сире, эсир пирĕн пек тĕттĕм çынсем мар, турра ĕненместĕр, анчах та — закон, ним тума та çук. Тата... комендантăн алли йывăр, теççĕ...

Хирĕç нимĕн те калаймарăмăр. Кузька шăрт пек уссийĕсене шăлкаларĕ те, пирĕн çине тата тепĕр хут çав тери мăшкăллăн пăхса илсе, алăка шăлт-шалт уçса хупса тухса кайрĕ.

— Йытă... сутăнчăк... ирсĕр! Çакăн пек çĕлен-калтасен аллинче ĕнтĕ халĕ пирĕн пурнăç! — терĕ те Соня çилĕпе, тӳсеймесĕр макăрса ячĕ.

— Мана çав йыттăн помощникĕ тăвасшăнччĕ,— ассăн сывласа пĕлтертĕм эп ăна.

Соня тата хытăрах макăрма пуçларĕ. Унăн çамрăк чунĕ ытла та кӳтсе çитнĕ пулас çав.

— Пĕтĕмпех пĕтрĕ... Пур ĕмĕтсем те татăлчĕç! — терĕ вăл куççулĕ витĕр.— Халь ĕнтĕ эпир чĕлхесĕр выльăхсем çеç пулатпăр, чурасем...

Эп ăна хам пĕлнĕ пек лăплантарма тăрăшрăм:

— Ĕмĕрлĕхех мар-çке ку, пирĕннисем таврăнаççĕ, хăтараççех пире! Тӳссе ирттерĕпĕр епле те пулсан. Шанчăка çухатас пулмасть кăна...

Унтан эпир малашне мĕн тăвасси пирки канашлама пуçларăмăр.

Паллах, чиркĕве пирĕн ниепле те каяс килмен. Çирĕм çул ытла чиркӳ крыльци çине ура ярса пусман хыççăн паян сасартăк такам шуйттанĕ хушнипе кайса тăрас пулать!

...Вуниккĕ çите пуçларĕ. Пĕртен-пĕр пĕчĕк чан сасси илтĕнчĕ. (Вăл пирĕн пушар дружининче çакăнса тăратчĕ.) Вера урамалла пăхрĕ те:

— Халăх чăнах чиркӳ еннелле утать,— тесе пĕлтерчĕ. Ун хыççăнах пӳрте хайхи Кузька Битыйпа пĕр нимĕç салтакĕ кĕрсе тăчĕç.

— На церков,— терӗ нимӗç.— Марш! Гот! Ваш бох...

Ним тумалли те юлмарӗ пирӗн. Конвойпах кайрӑмӑр чиркӗве! Соньӑна çапах та хӑваркаларӑмӑр — кил пӑхма текелесе ӗнтӗ. Ӑна та илсе каясшӑнччӗ фашист.

Эпир пынӑ çӗре халӑх самаях пухӑннӑччӗ. Пурте кӗтсе тӑраççӗ — ватти, вӗтти. Чиркӗвӗнче вунӑ çул ытла клуб пулнӑччӗ пирӗн, питӗ аванччӗ унта, анчах халь çара стенасем çеç тӑрса юлнӑ — сарай манерлех пулса тӑнӑ. Пӑхас та килмест!

Çур сехет иртрӗ, пӗр сехет... Никам та нимӗн те пӗлмерӗ-ха. Ни пуп тавраш çук, ни турӑш. Шӑнса кайнӑ çынсем килӗсене каясси пирки çеç калаçкалама тытӑнчӗç. Анчах çав вӑхӑтрах урамран чиркӗве пӗр çирӗм нимӗç салтакӗ кӗрсе тӑчӗ. Хура каскӑсемпе, автоматсемпе, халь тесен халь çапӑçма каяс пек. Алӑкран кӗрсенех, вӗсем халӑха йӗри-тавра çавӑрса илчӗç те клубран никам тухса каймалла мар туса лартрӗç.

— Итлӗр, турра ӗненекенсем! — кӑшкӑрчӗ пӗр фашисчӗ вырӑсла, сцена çине хӑпарса тӑрса.— Эсир кунта турра кӗлтума килнӗ. Çапла-и?

— Нимӗн те пӗлместпӗр-ха...— илтӗнчӗ такамӑн сасси.

— Пире салтаксем хӑвалаcard килчӗç...

— Чиркӗве килнипе тӗрӗс тунӑ эсир,— терӗ нимӗç малалла.— Сирӗн халӗ турӑ ячӗпе Германи çарне пулӑшас пулать. Ӑна ӑшӑ япаласем кирлӗ. Çавӑнпа та, ним тытӑнса тӑмасӑрах, çири тумтирсене, урари çӑматӑсене, алӑсенчи алсишсене халех çакӑнта хывса хурӑр. Хирӗçсе тӑнинчен усси пулмасть, ӑна малтанах асӑрхаттаратпӑр. Тумтирне Германи çарӗ валли парнелемесӗр пӗр çын та тухса кайма пултараймасть кунтан. Халех хывӑр! Турӑ манмӗ сире уншӑн!

Çынсем пӗр хушӑ юпа пек хытса тӑчӗç... Никам та хускалмарӗ. Ытла та ӑнран кӑларса ячӗ вӗсене ку тискер приказ! Нимӗншӗн те мар, куçкӗретӗн, кӑнтӑр кунӗнче çаратмашкӑн пухнӑ иккен ял халӑхне!..

— Ну, мӗн кӗтсе тӑратӑр? Хывӑнӑр! — тата хаяртараххӑн кӑшкӑрчӗ çав нимӗçех.— Хамӑр хывма пуçласассӑн вуçех çарамас юлатӑр акӑ! — Вӑл тӳсме çук мӑшкӑлламалла калаçрӗ...

Халӑх халь те хускалмарӗ. Вара фашистсем çынсене чӑнах та хӑйсем çарамаслантарма тытӑнчӗç. Кӗ-

рёксем, пальтосем, атӑсем, чосӑнкӑсем, ҫӗлӗксем, ӑшӑ тутӑрсем пӗр кӗтеселле ывтӑнчӗҫ кӑна. Мӗн хывса илме май пуррине пӗтӗмпех тӑпӑлтарса илсен, ҫынсене алӑкран тулалла вӑркӑнтарчӗҫ. Хӗрарӑмсем макӑрчӗҫ, ҫуйӑхрӗҫ, ылханчӗҫ, ачасем вилсе каясла кӑшкӑрчӗҫ, анчах усси пулмарӗ — ытлашши шавлакансене салтаксем пӑшал кӗпҫисемпе ҫапа-ҫапа ӑсатрӗҫ...

Черет ман пата ҫитрӗ. Пулӑ куҫлӑ нимӗҫ пӗрре туртсах ман ҫири кӗрӗклӗ пиншака сӗвсе илчӗ, тепри ҫав хушӑрах ураран тытса ӳкерчӗ те атта хыврӗ. Чӑлхана та пулин хӑвармарӗ, бандит! Пӗрре ура ҫине тӑнӑскере ҫав чӑлхашӑн тепӗр хут ӳкерсе тӑпӑлтарчӗ вӗт! Верӑнне, пальттипе пӗрле, ӑшӑ кофтипе юбкине те хывса илчӗҫ, аялти кӗпепе ҫеҫ тӑрса юлчӗ вӑл. Вара пире пурне те ҫаплипех хӑваласа ячӗҫ. Тулта ун чухне пиˈтӗ сивӗччӗ ӗнтӗ — ноябрь вӗҫӗ...

Анчах та ку пуҫламӑшӗ кӑна пулнӑ-ха.

Халӑха турӑ ячӗпе ҫаратнӑ хыҫҫӑн тата хӑрушӑрах ӗҫсем тапранса кайрӗҫ. Ҫынсен пӗтӗм тырпулне, выльӑх-чӗрлӗхне, кайӑк-кӗшӗкне ним юлмиччен туртса илни ҫинчен каламастӑп та ӗнтӗ. Ку пӗтӗмпех хӑй йӗркипе пулса пычӗ. Вӗсем — нимрен ытла — пирӗн ҫынсене чӗлхесӗр выльӑхпа танлаштарса хучӗҫ!

Пӗррехинче, тул ҫутӑлнӑ-ҫутӑлманах, ҫынсене килӗсенчен хӑваласа тухса, пӗтӗм халӑха ял варрине пухрӗҫ те темиҫе сехет тытса тӑчӗҫ. Сивӗ — тӳсмелле мар, ҫав тери витӗр ҫапакан ҫил вӗретчӗ вӑл кун. Шӑнсах хытаттӑмӑр. Киле те ямаҫҫӗ. Кӑнтӑрла ҫитеспе тин пирӗн пата комендантпа унӑн ӳсӗр помощникӗсем тухрӗҫ. Тӑлмачӑ сӑмах каларӗ:

— Паянтан пуҫласа кашни ҫыннӑн хӑйӗн номерӗ пулать. Паспорт вырӑнне. Ҫав номерсӗр урама та тухма юрамасть.

Список тӑрӑх чӗне-чӗне, вӗсем ҫынсен мӑйӗсенчен пӗр аллаппи пысӑкӑш фанер татки ҫакса ячӗҫ. Хӑми ҫине хамӑрӑн ял ятне ҫырнӑ та цифра лартнӑ. Ҫавӑнтан вара эпӗ ятлӑ-хушаматлӑ ҫын мар, вӑтӑр виҫҫӗмӗш номерлӗ чура пулса тӑтӑм. Арестант... Ӗмӗрне те манас ҫук ҫав мӑшкӑла! Халь те усратӑп ҫав фанер таткине— ҫынсене кӑтартма усратӑп! Пурте пӗлччӗр фашистсем пирӗнтен выльӑхсем тӑвасшӑн пулнине, нихҫан та ан манччӑр ун ҫинчен!..

Яков Иванович сӗтел айӗнчи ещӗкрен сарӑрах фа-

нер татăкĕ туртса кăларчĕ. Ун çине хура сăрпа нимĕçле саспаллисемпе çырнăччĕ:

Wischni — 33

— Тăвата уйăх ытла çакса çӳрерĕм çак йытă номерне! — терĕ Яков Иванович çилĕпе.— Майра пĕрмай майкăç çакăнса тăнă пекех туйăнатчĕ вăл мана...

Çакăнпа пĕрлех, ытти енчен те хĕстерсе çитерчĕç вĕсем пире. Аçта ан пыр — пур çĕрте те вывеска та пĕлтерӳ çакăнса тăрать. Пирĕн шкул умĕнчи пысăк çăл çине: «Германи салтакĕсем валли кăна, вырăссен çывăха пыма юрамасть», тесе çырнă. Часах ялти чи лайăх çуртсенчен хуçисене хăваласа кăларчĕç те кашнин çинех «нимĕçсен çурчĕ» тесе çырчĕç. Кайран кунпа та çитмерĕ: ял халăхне пĕтĕмпех хыçалти урама хăваласа кăларчĕç, кашни пӳрте 4—5-шер çемье тултарчĕç, мăн урама йĕплĕ пралукпа картларĕç. Урам вĕçне таçтанах курăнмалла çырса çапнăччĕ: «Германи урамĕ. Вырăссен кĕме юрамасть. 50 метра çывхарнисене асăрхаттармасăрах переççĕ». Чăнах та, урамăн икĕ вĕçне те вышкăсем туса лартрĕç, тĕрме картинчи пекех. Вĕсем çинче кунĕн-çĕрĕнех пулеметлă часовойсем тăчĕç.

...Гитлеровецсем мĕн пирки сакăн пек хăтланнине каярахпа тин тавçăрса илтĕм эпĕ. Питĕ хăранă иккен вĕсем. Хăйсен урисем айĕнче çĕр çунса тănине сиснĕ. Кашни утăмрах пуç çине тавăру чукмарĕ ӳкессе кĕтнĕ. Пирĕн халăх хăйсене мĕн тери курайманнине, ăна вĕсем тем пулсан та парăнтарас çуккине туйнă.

Халăхра «партизан» сăмах сарăлма пуçларĕ. Фашистсем пирĕн таврана килсе кĕрсенех, районти коммунистсемпе ытти активистсем вăрмансене партизана кайнă иккен. Вĕсене райĕçтăвком председателĕ Уваров юлташ ертсе пынă. Малтан партизансем йышлăнах пулман, анчах темиçе эрнерен унта пилĕкçĕр çын ытла пухăннă. Вара тăшман эшелонĕсем çырманалла вăркăнма, станцисенчи складсем çунма тытăннă, постсенчи часовойсем çухалнă, обозсем çитес вырăна çитеймен. Çакă нимĕçсене калама та çук пăлхатса янă. Вĕсем чăн-чăнах урса кайрĕç. Совет влаçĕ вăхăтĕнче кам активлăрах çын пулнă, çавсене пурне те тытса хупма тапратрĕç. Кĕçĕр пĕри çухалать, ыран — тепри. Урăх никам та курмасть вара вĕсене, йĕп пекех çухалаççĕ ыр çынсем.

Часах эпĕ те лекрĕм...

Ĕçĕ çапла пуçланчĕ. Çĕнĕ çул ыран тенĕ чух, гитлеровецсем килтен киле çӳресе, ялти мĕнпур хĕрсемпе çамрăк хĕрарăмсене комендатура умне пухрĕç. Вăл шутрах манăн кĕçĕн хĕре — Соньăна та тытса кайрĕç. Кун пек ĕç ахальтен пулас çуккине сиссе, хĕрĕсем хыççăн ашшĕ-амăшĕсем те пычĕç. Эпĕ те килте лараймарăм, мĕншĕн тесен ытти ялсенчен çамрăксене Германие хăваласа кайнă сас пурччĕ.

Пĕтĕмпе пĕр аллă хĕрпе хĕрарăма пухнăччĕ. Вĕсене салтаксем пĕр рет туса тăратсан, комендатурăран икĕ офицер тухрĕç те кашни умĕнчех чарăна-чарăна пăхкалама тытăнчĕç. Пасарта выльăх илнĕ чухне пăхнă пекех — питне-куçне, кĕлеткине, станне пăхаççĕ... Хĕр самаях илемлĕ пулсан, ăна çавăнтах стройран кăларса, аяккарах тăратаççĕ. Çавăн пек йĕркипе пăхса пырса, ман Соньăна та уйăрса тăратрĕç. Çапла шăп çирĕм хĕр суйласа илчĕç вĕсем.

— Мĕн пулать-ши, мĕне пĕлтерет ку? — тесе, эпир ним ăнланмасăр, вилес пек хăраса тăтăмăр.

Тĕреклĕ самăр офицер, çăварĕнчи хулăн сигарне чăмласа, уйăрса илнĕ хĕрсене тата тепĕр хут пăхса тухрĕ. Ним намăса пĕлмесĕрех, вăл хĕрсене кăкрисенчен, хулпуççисенчен, çурăмĕсенчен тĕрткеле-тĕрткеле илчĕ. Хĕрĕсем ни чĕрĕ, ни вилĕ тăчĕç, хăйсен хутне кĕрекенсем пуласса шаннă пек, унăн-кунăн пăхкалама пуçларĕç. Анчах эпир вĕсенчен чылай аякра пултăмăр (çывăха ямарĕç), вĕсем тавра чул сăнлă фашист салтакĕсем çеç тăчĕç...

Унтан офицер малтанхи вырăнтах тăрса юлнă хĕрсем еннелле çаврăнчĕ те аллипе сулчĕ:

— Шлехт! Пльохо! Нах хауз... Домой уходить!

Çавăнтах хăйсем суйласа илнисем патнерех пычĕ те:

— Ну, красавиц, ми з вами поехать! — терĕ.

Хĕрсем пурте пĕр харăс шавлама тапратрĕç:

— Ăçта илсе каясшăн эсир пире?

— Ниçта та каймастпăр эпир!

— Пире те киле ярăр!..

Вĕсем умне тăлмачă пырса тăчĕ те, хĕсĕк куçне выляткаласа, пурне те илтĕнмелле ответ пачĕ:

— Халех хулана каятпăр, çĕнĕ çул каç аслă Германи офицерĕсене савăнтарма... Хăрамалли нимĕн те

çук: çĕр каçатăр та ирхине таврăнатăр. Питĕ хаваслă пулать унта сире: эрех, музыка, ташă...

Вăл çав тери усаллăн кулса ячĕ. Хĕрсем хăйсене мĕншĕн пухнине тавçăрса илчĕç те, ниçта кайса кĕрейми хăраса, малтанхинчен темиçе хут хытăрах шавлама, кăшкăрса макăрма тытăнчĕç...

Унччен те пулмарĕ, комендатура умне хура брезентпа витнĕ грузовик пырса тăчĕ.

— Ляден! Садись! — кăшкăрчĕ офицер. — Скоро! Бистро!

Салтаксем хĕрсене машина çине лартма тытăнчĕç. Эпир, ашшĕ-амăшĕсем, тĕркĕлтипех офицер патне чупса пытăмăр.

— Тархасшăн илсе ан кайăр!

— Хĕрхенĕр!

— Çамрăк вĕт-ха вĕсем...

Итлеççĕ-им? Пăшал кӳпчекĕсемпе, чышкисемпе çапса, урисемпе тапа-тапа хăвалама тытăнчĕç пире. Çав вăхăтрах хамăн Соня хыттăн кăшкăрнине илтрĕм:

— Ан çулăх, йытă! Яр!..

Пăхатăп — пĕр нимĕçĕ ăна пилĕкĕнчен ыталаса тытнă та вăйпах машина çине хăпартса пăрахасшăн. Соня пур вăйĕпе талкаланать, ун аллинчен вĕçерĕнесшĕн — тĕртет ăна, чышать. Тутри салтăннă, çӳçĕ-пуçĕ арпашса кайнă, куççулĕсем чарусăр юхаççĕ. Тахăш самантра чупса пытăм ун патне — астумастăп. Темскер хаярррăн кăшкăрса ярса, Соньăна фашист аллинчен вĕçертме пикентĕм. Анчах мана çавăнтах тĕксе ячĕç те — ластах ӳкрĕм. Унтан Соня хыттăн: «Сыв пул, атте! Пĕтрĕм эпĕ!» — тесе кăшкăрнине çеç илтсе юлтăм. Самантранах хĕрсене тиенĕ грузовик вырăнтан хускалса кайрĕ...

Çав тери хурланса, тарăхса, хам ним тума та пултарайманшăн кӳренсе, вата пуçпах макăрса ятăм çавăнта. Куççульсемпе пĕрле, вĕçĕмсĕр ылхавлă сăмахсем каларăм:

— Чуниллисем, урнă йытăсем! Тавăрĕç-ха сире пирĕн куççульсемшĕн, питĕ хытă тавăрĕç!

Чышкăпа юнаса, машина хыççăн чупрăм...

Темле-çке чĕре çурăлса каймарĕ çавăн чух.

...Аслă хĕрпе иксĕмĕр çĕрĕпех çывăраймарăмăр. Вăл пĕрмай макăрчĕ, эпĕ пӳлĕм тăрăх таттисĕр калле-

малле утрăм. Хăлхара çаплах Соня юлашки хут кăшкăрни янăраса тăчĕ: «Сыв пул, атте, пĕтрĕм эпĕ!»

— Аçта-ши вăл халь? Мĕнле урнă йытă асаплантарать-ши ăна?..

Чĕре тўсмелле мар ыратрĕ, тăнлавсенчи юн тымарĕсем мăлатукпа шакканă пек тапса тăчĕç, ал-урасем чĕтрерĕç. Паллах ĕнтĕ, хытă пăлханнă. Кун пек хуйхăна никам та лăпкăн тўссе ирттерме пултарас çук çав. Хăйĕн тăван ачине камăн кашкăр аллине парас килтĕр-ха?

Çур çĕр иртсен пĕр-ик сехетре, сасартăк, пĕтĕм яла çав тери вăйлă взрыв кисрентерчĕ. Унтан уйрăм-уйрăм пăшал сассисем илтĕнчĕç, ял варринче такамсем кăшкăрма пуçларĕç, пулемет шатăртатма тапратрĕ. Темскер пулса иртрĕ, нимĕн те ăнланаймастпăр. Эпир Верăпа иксĕмĕр те, сиксе тăрса, урамри шава итлерĕмĕр.

Унччен те пулмарĕ, хамăрăн урам енчи хўме çине такам питĕ хăвăрттăн чакаланса хăпарни, унтан картишнелле этем кĕлетки ўкни илтĕнчĕ. Кĕçех çенĕк алăкне хăвăрт-хăвăрт шаккарĕç.

Хытă хăранă пулин те, эпĕ çенĕке тухрăм.

— Кам унта? Мĕн кирлĕ?

— Уçăр-ха, Яков Иванович,— илтĕнчĕ тулти сасă.

— Кам эсĕ?

— Ăна кайран калăп, эсир алăкне часрах уçăр!

— Палламан çынна епле кĕртес-ха манăн?

— Эп сире питĕ лайăх паллатăп, сирĕн Соньăна та паллатăп, вăл та пĕлет мана... Тархасшăн, уçăр! Ан хăрăр, эп тăшман мар...

Соня ятне асăннине илтсен, ку чăнах та ытла ют çынах мар пулĕ-ха тесе, уçса кĕртрĕм çавна.

— Лампа пур-и сирĕн? — нимрен малтан ыйтрĕ хайхискер.— Çутасчĕ часрах...

— Мĕн тума?

— Юн юхать манăн, аманнă эпĕ... Çыхасчĕ!

Чĕре сиксе тухас пек тапрĕ. Шутлăр-ха, вăрçă ман пўртех пырса кĕчĕ вĕт! Юн, перевязка... Ман пек мирлĕ çын хăçан шухăшлама пултарнă ун çинчен?.. Васкасах пĕчĕкçеç «чĕпкуçне» çуткаларăм та, хам умра çамрăк кăна типшĕмрех каччă тăнине куртăм. Çара пуçăн, çăмăл фуфайкăпа, сылтăм аллипе сулахайне тытнă, унăн пўрнисем тăрăх юн сăрхăнать... Вера часрах шурă катанпир татăкĕ тупса çыхма пуçларĕ. Пуля чавсаран

аяларахран шăтарса кайнă курăнать. Çыхнă чух каччă шăлĕсене çыртса тăчĕ, питĕ хытă ыратнă ĕнтĕ унăн, анчах пĕрре йăнăшса илесчĕ хуть! Сас та кăлармарĕ.

— Шыв парăр-ха, тархасшăн,— терĕ вăл, аллине çыхса пĕтернĕ хыççăн пукан çине ларса.— Аш хыпса тухать...

Вера ăна куркапа шыв пырса пачĕ. Вăл шыва пĕрре сывлăш çавăрмасăрах ĕçсе ячĕ.

— Тата...

Вера ăна тепĕр курка пачĕ. Каччă ăна та çавăн пекех çăтрĕ.

— Палламастăр эппин? — тесе ыйтрĕ унтан.

— Таçта курнă пек туйăнать...— терĕ Вера, ун çине пит те тинкерсе пăхса.— Комсомол райкомĕнче ĕçлемен-и эсир?

— Çавăнта ĕçленĕ çав. Сирĕн Соня питĕ лайăх пĕлет мана, мĕншĕн тесен вăрçă умĕн вăл комсомола кĕчĕ, эп ăна рекомендаци патăм. Ăна паян гестапо илсе кайнă вĕт?

— Эсир кун çинчен ăçтан пĕлетĕр?

— Пурне те пĕлетпĕр эпир, мĕншĕн тесен хуть те ăçта та хамăрăн çынсем пур пирĕн, пĕлтерсех тăраççĕ... Паллах, сирĕн çинчен лайăх пĕлмен пулсан, килсе те кĕрес çукчĕ эпĕ.

— Сире мĕн пулчĕ вара? Ăçта амантăр?

— Взрыв илтрĕр пулĕ? Нимĕçсен комендатури турпас пулса тăчĕ. Çунать халь. Кайран вĕсем те пеме тапратрĕç. Анчах партизансене тытма аллисем кĕскерех-ха вĕсен.

— Эсир партизан эппин? — тĕлĕнсех кайрăмăр Верăпа иксĕмĕр те.

— Хальхи вăхăтра тăшман тытса илнĕ вырăнсенче пурăнакан кашни совет çынни — партизан,— терĕ вăл лăпкăнах.— Сире те партизан теме пулать, мĕншĕн тесен эсир партизанăн суранне çыхса ятăр, ăна пулăшрăр...

Пĕр вăхăт шăпланнă пек пулнă пăшал сассисем тепĕр хут илтĕнме пуçларĕç. Çывăхран çывăха килсе пычĕç вĕсем, уçăран уçăрах янăрарĕç. Пирĕн тĕлпе темиçе çын юланутсемпе тĕпĕртеттерсе иртсе кайрĕç. Автомат черечĕсем шатăртатрĕç, таçта каллех взрыв кĕрĕслетрĕ.

Партизан йăпăртах ура çине сиксе тăчĕ.



— Çавсем пире шыраççĕ ĕнтĕ. Эп пытансан, лайăхрах пулать пулĕ, тетĕп... Ир енне тухса кайăп, анчах халлĕхе тăхтас пулать. Вĕсем ĕнтĕ пур çĕрте те саварттараççĕ...

Ăçта пытарас? Этем йĕп мар-çке, ăна йăпăр-япăрах ним палăрмиї туса хума çук. Апла та, капла та шухăшласа пăхрăмăр. Çав хушăра урамри шав татах вăйланчĕ. Пирĕн васкамалла пулчĕ. Çавăнпа та партизана сивĕ чăлан урайне уçса пытартăмăр та çиелтен питĕрсе хутăмăр. Хамăр каллех пÿрте кĕрсен, Вера урайне тумланă юна шăлса тасатрĕ. Опытлă конспираторсем пекех ĕçлерĕмĕр çав...

Çаксене туса çитертĕмĕр çеç — хапхаран шанлаттарма тапратрĕç.

— Уç! Уç халех!

Çĕмĕреççĕ кăна... Хамăр пата кам тата мĕншĕн килнине чухласа, эп васкамасăр, кăштăртатса тухрăм.

— Мĕн кирлĕ сире? Тĕттĕм-çке, нимĕн те курмастăп,— текелесе пытăм урам хапхи патнелле.

— Эпир сана халех çутă кăтартатпăр акă! Уç часрах, ват сысна! — кăшкăрса пăрахрĕç мана.

Хапхана уçсанах, пĕрисем мана çавăрса тытрĕç, теприсем пÿрте кĕмсĕртеттерсе чупса кĕрсе кайрĕç.

— Кам пур сан патăнта?

— Ăçта пытартăн, кала халех! Асту, пуçна çапса салататпăр, ватă анчăк!

«Кусем нимĕн те пĕлмеççĕ, юри «на пушку» илесшĕн», терĕм те хама хам, мĕн вăй çитнĕ таран лăпкăн калаçма тăрăшрăм:

— Никам та çук ман патра, никама та курман эпĕ, нимĕн те пĕлместĕп...

Кăкăртан тытса силлерĕç мана, пăшалпа тĕллесе те пăхрĕç, анчах эпĕ пурпĕр хамăнне петĕм:

— Шырăр, ара, ухтарăр, никам та çук...

Вĕсем, чăнах та, унта та кунта — чăлана, тĕпсакайне, мачча çине пăхрĕç, анчах эпĕ хама хам çирĕппĕн тытни вĕсене ĕнентерчĕ пулас. Епле пырса кĕнĕ, çавăн пекех шавласа, кĕмсĕртеттерсе тухса кайрĕç.

— Сана эпир пурпĕрех лектеретпĕр-ха!

— Ăна валли сăлтавĕ кирлĕ,— терĕм эпĕ.— Айăпсăр çынна ăçтан тивен?

— Кирлĕ пулсан, сăлтавне хамăрах тупăпăр эпир, санран ыйтса тăмăпăр!

Ёненетĕр-и, çакăн хыççăн чĕре темле уйрăмах çирĕп кăмăлпа тулса ларчĕ, хамра çителĕклĕ вăй пуррине туйрăм эпĕ! Улттăн-çиччĕн пырса та нимĕн те тăваймарĕç вĕт — партизана чиперех хăтарса хăвартăм! Тепрер сехетрен вара эпир ăна чăлан айĕнчен кăларса пӳрте кĕртрĕмĕр те кăмака çинчех ăшăтса сывăратрăмăр. Ир енне тин, пире тав туса, хăй çулĕпе тухса кайрĕ вăл. Юлашкинчен питĕ лайăх сăмахсем каласа хăварчĕ:

— Нихçан та парăнтарас çук пире юрган килнĕ хурахсем. Хамăрăн ирĕке эпир каллех тавăратпăр! Ёненĕр, çирĕп шанса пурăнăр!..

Ирхине вăраннă-вăранманах Соня ăша кĕрсе кайрĕ. Мĕн пулнă-ши ăна? Чĕрĕ-ши вăл? Таврăнать-ши хăçан та пулин?

Çук, таврăнмарĕ ман хĕрĕм. Ялтан машинăпа тиесе тухса кайнă хĕрсенчен нихăшĕ те каялла килмерĕ. Пĕр кун иртрĕ, виççĕ, пиллĕк, унтан вуннă та иртсе кайрĕ... Никам та, нимĕн те пĕлмерĕ вĕсем çинчен. Чĕрери хуйхă йывăр чул пек пусса тăчĕ.

...Çĕнĕ çул кас партизансем нимĕçсен комендатурине йывăр гранатăсемпе пере-пере сиктерни иккен. Нумай фашистсене вĕлернĕ. Коменданта, хайхи пирĕн Соньăна вăйпах хулана ăсатаканнине, питĕ хытă амантнă, вара ăна пирĕн патран самолетпах илсе кайнă. Анчах çавăн хыççăн ял çине тата ытларах хурлăх йăтăнса анчĕ. Çур ял тӳрех пушанса юлчĕ — пĕр кун хушшинчех пухса кайрĕç. Кĕçех мана та тытса хупрĕç...

Верăпа сывпуллашсах тухрăм эпĕ. Темшĕн эпир пĕрпĕрине текех курас çук пек туйăнчĕ мана. Чĕре ултала-ман-мĕн, эп ăна чăнах та урăх кураймарăм. Анчах ун çинчен каярахпа калăп-ха...

Вăрçăччен колхоз вити пулнă темĕн пысăкăш сарайĕнче эпир икçĕр çын ытла лартăмăр. Пирĕн ялтан çеç мар, ытти ялсенчен те сĕтĕрсе пырса тултарнă иккен унта.

Шартлама сивĕ... Вут хутса ăшăтма мар, чӳрече шăтăкĕсене те питĕрмен, çил шăхăрать кăна. Пырать, кунта кивĕ улăм юлкаланă-мĕн те, çавăн ăшне сыснасем пек чакаланса кĕрсе выртаттăмăр. Ни çăкăр, ни шыв памаççĕ. Паллах, тытса хупнисен тăванĕсем кашниех çимелллисем илсе пынă унта, анчах вăл апат-çимĕç пи-

рĕн пата çитмен, хуралти нимĕç салтакĕсем ăна хăйсемех хыпса янă.

Допроса икшер-виçшер çынна пĕрле чĕнтеретчĕç. Вĕсем вара яланах палламалла мар пулса таврăнатчĕç: е чĕп-чĕр юн, е куçĕ-пуçĕ шыçса ларнă, е аллине пăрса хуçнă. Нимĕçсем допрос тăвакан пӳлĕме пурте «вилĕм пӳлĕмĕ» тетчĕç, унтан сыввăн тухасси çинчен никам та шутлама пултарайман.

Сивĕ сарайсенче икĕ талăк ытла пĕр тĕпренчĕк çăкăр та ăша ямасăр ларса вилес патнех çитнĕ хыççăн алăкран ман хушамата та кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Просветов! Тух!

Тăрса утрăм... Тĕлĕнсе каймалла: те пачах та нимĕн туйми пулса çитнĕ эпĕ, те урăх сăлтавпа, анчах ним хăрани те пулмарĕ манăн çав самантра! Лăпкăнах пырса кĕтĕм «вилĕм пӳлĕмне». Чĕркуççисем çеç чĕтрерĕç кăштах...

— Вĕлерччĕр, анчах эпĕ пурпĕрех никама та сутас çук, ман чĕрене те, кăмăла та вĕсем улăштарма пултарас çук! — терĕм хама хам.

Пӳлĕме кĕтĕм те, сĕтел хушшинче хайхи пĕркун мана писарь тума тăрăшнă гестапо пуçлăхĕ ларнине курах кайрăм. Вăл мана тӳрех палласа илчĕ, йытă.

— Аха-а, эсĕ те лекрĕн эппин! Питĕ аван, питĕ аван,— сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ вăл.— Каллех тĕл пултăмăр иккен? Хальхинче ĕнтĕ пĕркунхи пек мăнкăмăллă пулмастăн пулĕ, тетĕп...

Унăн куçĕ çав тери усаллăн йăлтăртатса илчĕ.

— Пĕтерет ку мана,— шухăш вĕçрĕ пуçăмра.— Çăлăнăç кĕтмелли çук...

Çав вăхăтра коридорта, алăк хыçĕнче, темиçе çын кĕрешни, такама çапни илтĕнчĕ. Тахăшĕ хăлхана çурса ямалла кăшкăрчĕ:

— Айăплă мар эпĕ, мĕншĕн хупса усратăр мана? Çав-çавах нимĕн те калама пултараймастăп сире! Пĕлместĕп эпĕ нимĕн те!..

Унтан алăк петлĕрен тухса вăркăнас пек уçăлса кайрĕ те, «вилĕм пӳлĕмне» хура сухаллă пĕр лутака çынна кĕртсе ывăтрĕç. Çын стена çумне пырса çапăнчĕ, унтан урайне ӳкрĕ.

— Чуниллисем эсир! Мĕншĕн асаплантаратăр? Вĕлерĕр часрах пĕреххут! — йынăшса макăрса ячĕ вăл.

Ун хыççăн пӳлĕме сиксе кĕнĕ офицер ăна тимĕрленĕ

аттипе янахӗнчен тапрӗ. Ҫыннӑн ҫӑварӗнчен юн юхса анчӗ.

— Мӗн? — хаяррӑн пӑхса илчӗ ун ҫине гестапо начальникӗ.

— Эп айӑплӑ мар, господин...— урмӑшса кайнӑ куҫне ҫавӑркаласа, ҫӑварӗнчен юхсах тӑракан юнне сура-сура калама пуҫларӗ сухаллӑ ҫын.— Ма ҫыпӑҫаҫҫӗ вӗсем ман ҫумма? Кунне виҫшер хут допроса сӗтӗреҫҫӗ, кашнинчех хӗнеҫҫӗ, пуҫа ҫапа-ҫапа шӑтарса пӗтерчӗҫ... Анчах эпӗ нимӗн те пӗлместӗп, курман эпӗ нимӗн те, партизансемпе нихҫан та тӗл пулман! Халь персе вӗлерӗр хуть, пурпӗр, асапланса пурӑннинчен ҫӑмӑлтарах пулӗ...

— Пӑлхавҫӑ вӑл, господин гауптман! — йӑрстах тӑсӑлса тӑчӗ халь ҫеҫ кӗнӗ офицер.— Большевиксен агитаторӗ! Хам хӑлхапа илтрӗм: фюрера урнӑ йытӑ, терӗ, ытти арестованнӑйсене Хӗрлӗ Ҫар часах каялла килессипе илӗртет...

— Каламан, нимӗн те каламан,— чӗтрекен пуҫне пӑркаласа илчӗ сухаллӑ ҫын.

Гестапо пуҫлӑхӗ нимӗн те каламарӗ. Кобурӗнчи револьверне кӑларчӗ те тӳрех ӑна пуҫӗнчен печӗ. Ҫын аллисемпе хӑлаҫланса ӳкрӗ, анчах вилмерӗ. Нимӗҫ ӑна тепре печӗ — каллех пуҫӗнчен. Ҫын ҫаплах тапаланчӗ. Унӑн пичӗ тӑрӑх темиҫе йӗрпе юн юхрӗ, вӑл хӑрӑлтатма тапратрӗ. Ҫапах та, ҫын вилсе ҫитмерӗ-ха. Кашни хашкамассеренех унӑн ҫӑварӗнчен юнлӑ кӑпӑк тухрӗ. Урайӗнче ун тавра юн кӳлли ӳснӗҫемӗн ӳсе пычӗ. Анчах вӑл ҫаплах хускалчӗ-ха. Вара фашист, ун патне сиксе пырса, ӑна ҫӑварӗнчен печӗ, пуля ҫыннӑн ӗнси витӗр тухса кайрӗ пулас: юн фонтан пек тапма пуҫларӗ кунтан. Халь ӗнтӗ ҫыннӑн пӗтӗм кӗлетки юн ӑшӗнче выртрӗ. Текех хускалмарӗ вара вӑл.

— Кӑларса ывӑтӑр! — кӑшкӑрчӗ гестапо пуҫлӑхӗ.

Икӗ салтак сухаллӑ ҫынна аллисенчен тытса сӗтӗрсе тухса кайрӗҫ. Ун хыҫҫӑн аршӑн сарлакӑш юнлӑ йӗр хуралса юлчӗ.

— Халь ӗнтӗ мана...— шухӑшларӑм эпӗ.— Мана та ҫавӑн пекех...

Анчах темле телей ҫаврӑнса тухрӗ ман тӗле. Допрос тумарӗҫ. Гестапо пуҫлӑхне васкавлӑн таҫта чӗнсе кайрӗҫ те, «вилӗм пӳлӗмӗнче» манпа пӗрле салтак ҫеҫ юлчӗ. Ҫур сехет пек вӑхӑт иртсен, ним каламасӑрах каял-

ла, сарайне илсе кайса хупрĕç. Тепĕр кунне ирхине вара пире пурне те урама илсе тухса, мăн çул тăрăх хула еннелле хăваласа кайрĕç.

Хăрушла çулçÿрев пулчĕ вăл! Выçăпа, пĕрмай асаплантарнипе вăйсăрланса çитнĕ çынсем ĕретлĕн утаймарĕç, аран сулланса пычĕç. Юланутлă нимĕçсем вĕсене пĕрмаях хыçалтан хÿтерчĕç, кам та пулин çултан пăрăнсан е кая юлма пуçласан, вĕсене çавăнтах саламатсемпе турта-турта çапрĕç, лашасемпе таптатрĕç. Пачах та халран кайнипе урисене шутарайми пулнисене — пĕр вунă çынна пулĕ — çул çинчех пере-пере пăрахса хăварчĕç. Эпĕ те лекеттĕм ĕнтĕ çак шута, анчах мана икĕ çамрăкрах çын çул тăршшипех ик енчен тытса пулăшса пычĕç те çавăнпа çеç хăтăлса юлтăм, атту халиччен ман шăмăсене те йытăсем кăшласа янă пулĕччĕç...

Каç пуласпа пире хулари тĕрмене илсе кайса хупрĕç.

Уйăха яхăн арестант пулса пурăнтăм вара эпĕ. Мĕн кăна тÿссе ирттермерĕм пулĕ çав хушăра! Анчах этемĕн чунĕ час тухмасть иккен, вилме патне çитнĕскерех чĕррĕн юлтăм вĕт!

Пĕр пĕчĕк камерăра эпир утмăлăн ытла пултăмăр. Выртма мар, ларма та вырăн çукчĕ. Вуçех лараймитăрайми пулнисем çеç выртрĕç, ыттисем, пĕр-пĕрин çине тĕренсе е ура вĕççĕнех, стена çумне тайăнса çывăрчĕç. Апат вырăнне — ирпе каç пăтранчăк шыв, пĕр воçмушка пек тăм еверлĕ çăкăр татăкĕ. Шыв та хĕрхенетчĕç вĕт, ăна та кунне пĕр кружкăран ытла памастчĕç, çăхансем! Мĕн чухлĕ ырă халăх пĕтрĕ пуль унта!

Кашни ир камерăсенчен темиçешер виле сĕтĕрсе тухатчĕç. Кашни каç коридор вĕçĕнчи «асап каменринчен» çынсем чуна çурса ямалла йынăшса кăшкăрни илтĕнетчĕ. Пĕр каçхине арçынсен сасси илтĕнет, теприне — хĕрарăмсен...

«Асап каменринче» сасăсем илтĕнсенех тĕрме шăп пулатчĕ, пурте паян кама асаплантарнине, кама черет çитнине тавçăрса илме тăрăшатчĕç. Нумайăшĕсем хăйсен çывăх çыннисене палласа илетчĕç вара. Ирсерен вĕсене тимĕрлесе пĕтернĕ хура хупă грузовикпа (ăна «душегубка» тетчĕç) хула хыçне илсе кайса тăкатчĕç, вăл машинăра совет çыннисене газпа антăхтарса вĕлернĕ...

Пĕр каçхине, çавăн пек асаплăн кăшкăрни пайтах-

чен таттисӗр хӑлхана хупласа тӑнӑ хыҫҫӑн, коридорта ура сассисем илтӗнчӗҫ. Тӗрмере шӑп пулса тӑчӗ. Сасартӑк ҫав хӑрушла шӑплӑхра ҫӑлкуҫ пек таса ҫамрӑк сасӑ янӑраса кайрӗ:

— Юлташсем! Пире вӗлерме илсе каяҫҫӗ... Сывӑ пулӑр! Ан парӑнӑр! Пурне те вӗлерсе пӗтерейměҫ! Ěненӗр, юлташсем: тӑван халӑх манман пире! Хӗрлӗ Ҫар килет, вӑл совет ҫӗрне фашистсенчен тасататех! Ěненӗр...

Урӑх кӑшкӑрма памарӗҫ ӑна. Тӑрукак кӗрешни, ҫапни илтӗнчӗ, ура сассисем хӑвӑртланчӗҫ — конвоирсем хӑйсем илсе каякансене часрах хӑвалама тытӑнчӗҫ курӑнать. Ҫапах та, темиҫе самантран, коридорӑн тепӗр вӗҫӗнчен юлашки хут янраса илчӗ ҫамрӑк сасӑ:

— Сывӑ пултӑр пирӗн Ҫӗршыв! Сывӑ пултӑр пирӗн халӑх!..

Ҫавӑнтах пӑшал сасси кӗрӗслетсе илчӗ. Паллах ӗнтӗ, ҫав вӗри чӗреллӗ, вилес умӗн те парӑнман совет ҫыннине тӗрмерен илсе кӑларичченех персе пӑрахрӗҫ...

Тахӑш камерӑра темиҫе ҫын пӗр харӑс юрласа ячӗҫ:

> Вы жертвою пали в борьбе роковой,
> Любви беззаветной к народу...

Кӗҫех вӗсен сассисем ҫумне юнашар камерӑри сасӑсем хутшӑнчӗҫ. Юрӑ вӑйланчӗ:

> Вы отдали все, что могли, за него,
> За жизнь его, честь и свободу...

Унтан пур камерӑсем те—пӗтӗм тӗрме юрлама тапратрӗ. Надзирательсем ухмаха ернӗ пек чупкалама тытӑнчӗҫ коридор тӑрӑх.

— Молчать! Халех чарӑнӑр! Пурне те карцера лартатпӑр!..

Вӗсем камерӑсен алӑкӗсенчен шаккарӗҫ, пырӗсене ҫурса кӑларас пек кӑшкӑрчӗҫ, темле те хӑратма тӑрӑшрӗҫ — ним те пулӑшмарӗ. Юрӑ пур камерӑсенче те янӑрарӗ... Халӗ ӗнтӗ хупса лартнӑ ҫынсем ҫеҫ мар, тӗрме ҫурчӗ хӑй, стенари кашни кирпӗч юрланӑн туйӑнчӗ.

Нимӗн те тӑваймарӗҫ фашистсем ҫавӑн хыҫҫӑн, мӗншӗн тесен уйрӑммӑн никама та айӑплама май пулмарӗ вӗсен. Икӗ кун апат памасӑр, уҫӑлма кӑлармасӑр усрарӗҫ кӑна.

...Талăк хыççăн талăк иртрĕ, эпĕ хама мĕн пуласси не пачах та пĕлмесĕр пурăнтăм. Вăй пĕтрĕ, ĕнтĕ аран сывлакан пулса çитрĕм.

— Çак тамăкрах вилмелле пулĕ-ши? — хурлăхлăн пăчăртанчĕ чĕре.

Çирĕм виççĕмĕш кун çитсен тин допроса чĕнчĕç мана. Камерăра çывăхрах паллашнă çынсемпе алă парсах сывпуллашса тухрăм.

— Асаплантараççех пулсан, тўсеймест ман чĕре,— терĕм.

Шăп кăнтăрлаччĕ. Тахăш камерăри хĕрарăмсене уçăлма кăларнă-мĕн те, вĕсем аллисене каялла тытса тĕрме картишĕнче ункă пек сукмак тăрăх утатчĕç. Манăн конвоир хăйĕн тусне курчĕ пулас та мана тăратсах унпа калаçма пикенчĕ. Ман тĕлпе, пĕрин хыççăн тепри, хĕрарăмсем утса иртрĕç... Халь çеç хурăмланма пуçланă çамрăк хĕрсем те, 50—60 çула çитнĕ карчăксем те пурччĕ вĕсем хушшинче. Анчах пĕрин те чĕрĕ этем сăнĕ çукчĕ, пурте начарланса, сарăхса, тăпра тĕслĕ пулса ларнă.

— Мĕншĕн асапланаççĕ çак мĕскĕнсем? — тесе тăтăм эпĕ, вĕсем çине хурлăхлăн пăхса.— Кама мĕн тунă вĕсем? Ырă кăмăлпа ĕçлесе, хăйсен телейĕшĕн çеç тăрăшнă... Нихçан та айăпа кĕмен...

Унтан сасартăк куçа чарсах пăрахрăм... Темиçе самант хушши сывлăш та тухмарĕ пулас манăн... Ансăр сукмак тăрăх умлăн-хыçлăн утакан хĕрарăмсем хушшинче эпĕ хамăн хĕре—Соньăна куртăм! Малтанах ĕненес те килмерĕ, улшу куратăп пуль, терĕм, çавăнпа та шывланакан куçа часрах шăлкаласа илтĕм. Çук, чăнах иккен, хамăн хĕрĕмех курнă эпĕ...

Çĕрелле пăхса, тарăн шухăша кайса утаканскер, вăл мана курмарĕ. Хам тĕле çитсен вара эпĕ ăна хуллен кăна ятпа чĕнтĕм:

— Соня...

Вăл пуçне çĕклесе мана курчĕ те тап! чарăнса тăчĕ.

— Атте! Епле ку? Эсĕ те кунта-и?! — тесе ячĕ те, çавăнтах аллисене тăсса ман паталла чупса пычĕ, мана хыттăн ыталаса илсе, макăра-макăра, ниçта кайса кĕрейми пăлханса чуптума тапратрĕ...

Анчах темиçе секунд хушши çеç тăсăлчĕ çав пирĕн телей. Пĕр харăсах ик-виç салтак чупса пычĕç те пире ик еннелле туртса уйăрчĕç. Соньăна пуçĕ урлă резина

патак лекрĕ, мана хамăн конвоир темиçе хут чышса сывлайми туса пăрахрĕ. Вара эпир пĕр-пĕрин çинчен нимĕн те пĕлеймерĕмĕр.

Допроса илсе çитерсен, конвоир офицера тӳрех картишĕнче пулса иртнĕ ĕç çинчен каласа пачĕ пулмалла, мĕншĕн тесен офицер нимрен малтан çавăн пирки ыйтма тапратрĕ.

— Кам вăл? Мĕнле хĕрарăма тĕл пултăн?

— Манăн ученица пулнăскер,—тесе тыттартăм эпĕ, вĕсем Соня ман хĕр иккенне пĕлсен ăна тата йывăртарах пулса тухасран шикленсе.

— Суятăн!

— Тĕп-тĕрĕс калатăп. Суйма — вăтă эпĕ.

— Тен, тăвану вăл санăн?

— Çук...

— Е хĕрӳ пулĕ?

— Ман хĕр килтех пурăнать...

Офицер кĕтесре ларакан чĕрĕ какай пек хĕрлĕ питлĕ салтака темскер каларĕ. Вара мана, çавăнтах тумтире хывтарса, сак çине хучĕç те шалавара туртса антарчĕç.

— Вĕрентер-ха эпир сана... учитель! — терĕ те офицер йĕрĕнчĕклĕн, хăй пӳлĕмрен тухса кайрĕ.

Шомполпа пĕр вунă хут çапнине астăватăп, унтан вара тăна çухатнă. Темĕн чухлĕ выртнă — ăна пĕлместĕп, анчах тăна кĕрсен хам йĕп-йĕпе пулнине туйрăм. Мана тăна кĕртме çиелтен шывпа сапнă иккен. Эп куçа уçсанах, мана çĕклесе тăратрĕç.

— Ну, ăс кĕчĕ-и пăртак? — куçхарши айĕн пăхса илчĕ тахăш вăхăтра таврăннă офицер.— Малашне тĕп-тĕрĕс ответсем парасса шанатăп. Кала, партизансене епле пулăшса тăтăн?

— Никама та пытарман...

— Çĕнĕ çул каçхине кама пытартăн хăвăн патăнта?

— Никама та пытарман эпĕ...

— Ан тун, сысна! Çаплах каламастăн пулать? Чунна кăларатăп эп санăнне! Халех персе пăрахатăп, итлетĕн-и?

— Вăл сирĕн ĕç ĕнтĕ, эсир ăна ăста пултаратăр!— тӳссе тăраймарăм тек.— Çăмăл ĕç... Тата эсир хăнăхнă ăна...

— А-а, эс калаçса тăратăн-и тата?! — офицер сиксе тăчĕ те, сĕтел урлă кармашсах, янахран чышрĕ. Унпа

пĕр вăхăтрах хыçалтан салтак чупса пырса хăлхаран çапрĕ. Эп сулăнса кайса ÿкрĕм. Çавăнтан зара нимĕн те астумастăп, тĕпсĕр тĕттĕм шăтăка путнă пекех пулнă.

...Ир енне темле çырмара тăна кĕтĕм. Пурпĕрех вилет тесе, тĕрмерен кăларса пăрахнă пулмалла мана. Тăруках хам ăçтине те тавçăрса илеймерĕм, ниçталла кайма та пĕлмерĕм. Тул çутăлса çитесce кĕтме шутларăм. Çутăлсан вара сăртра тĕрмен кăвакрах стенисене куртăм та, хама тем пекех хĕн пулнă пулсан та, кунтан аяккарах кайма тăрăшрăм. Пĕтĕм шăмшак, ал-ура, пуç — тӳсме çук ыратаççĕ, пĕр тумлам вăй та çук хамăн, анчах шалти сасă çаплах хăваларĕ мана:

— Ут, çапах та ут... Çăлăн... çăлăнатăн!

Çырма тăрăх хула хĕррине тухсан, малалла тек ниçта та кайма пултарас çуккине туйса, пĕр пĕчĕкçеç пӳрт патнелле пырса, алăкран хуллен шаккарăм. Кăшт тăхтасан, мана хирĕç хам пекех ватă хĕрарăм тухрĕ.

— Мĕн кирлĕ сана? — тесе ыйтрĕ вăл, чарăлса кайнă куçĕпе ман çине шиклĕн пăхса.

— Кăштах ăшăнасчĕ те канасчĕ...— терĕм эпĕ.

— Эсĕ тĕрмерен мар пулĕ-çке?

— Ма апла ыйтан?

— Сăну çавăн пек...

— Ан та ыйт эппин,— алăпа султăм вара эпĕ.

Карчăк пит аванскер пулчĕ. Эпĕ ăна хам кам пулнине, мĕн-мĕн тӳссе ирттернине кĕскен кăна каласа патăм та, вăл мана макăра-макăрах пăхма тытăнчĕ.

— Манăн ывăла та çавăн пекех тытса кайрĕç,— терĕ вăл,— çĕр варринче, хурахсем пек килсе кĕрсе... Анчах та вăл тарса хăтăлнă хыпар тухрĕ-ха... Вĕсене кунтан урăх вырăна хăваласа кайнă чух вăрмантан темле пăшаллă çынсем тăрук сиксе тухса хăтарнă, тет. Тĕрĕс пултăрах çав сăмах!

Хама çав тери йывăр пулнă пулин те, эпĕ ăна çĕнĕ çул кас пирĕн патра пулнă партизан сăмахĕсемпе лăплантарма тăрăшрăм:

— Нумаях пымасть ку хурлăх, хăваласа яраççех усал тăшмана! Эпир каллех ирĕклĕ çынсем пулатпăр... Шанчăка çухатма кирлĕ мар!

Çавăн пек калаçкаласа ларсан, карчăк татах ыра кăмăлланса кайрĕ. Ывăлĕ çинчен калама пуçларĕ. Районта комсомол енĕпе ĕçленĕ, тет. Хăш районта ĕçлени

ҫинчен ыйтсан, вӑл шӑпах пирӗн район ятне асӑнчӗ. Вара эпӗ унӑн ывӑлӗн сӑн-сӑпачӗ пирки ыйтса пӗлме пуҫларӑм.

— Ҫӳлӗ, сар ҫӳҫлӗ, типшӗмрех, кӑвак куҫлӑ,—терӗ карчӑк.

Эпӗ унӑн сӑнӳкерчӗкне кӑтартма ыйтрӑм:

— Курам-ха, тен, эпӗ ун ҫинчен мӗн те пулин пӗлетӗп пулӗ...

Карчӑк ман ҫине пит те тӗлӗнсе пӑхрӗ, ҫапах та урайӗнчи пӗр хӑмана ҫӗклесе, кивӗрех альбом кӑларса пачӗ. Эпӗ темиҫе страница уҫсанах пӗр ӳкерчӗк ҫине тӗллесе кӑтартрӑм:

— Ҫакӑ-и? Ҫав вӗт?

— Ҫавӑ...— Карчӑк тата ытларах пӑлханма пуҫларӗ.— Аҫтан пӗлетӗн эс ӑна?..

— Санӑн ывӑлу сывах, ҫӗнӗ ҫул каҫ ман патӑмра вырт са кайрӗ,— терӗм вара эп ӑна.— Чӑн та, питӗ маттур вара, ун пекки ниҫта та, нихҫан та аптрас ҫук! Питӗ лайӑх астӑватӑп ӑна...

Карчӑк малтанах ман сӑмахсене ниепле те ӗненесшӗн пулмарӗ, ҫӗнӗ ҫул каҫ хамӑр патра мӗнле ӗҫ пулса иртнине йӗркипе каласа парсан тин вара, савӑннипе, макӑрса ячӗ.

— Ыр ҫынсем пурах иккен пирӗн... Спаҫҫипӑ сире, тӑванӑм, ӗмӗрне те, виличчен те манмӑп куншӑн!

Виҫӗ талӑк пурӑнтӑм ун патӗнче. Эпӗ хӑйӗн ывӑлне тӑшмансенчен хӑтарнине пӗлсен, хӑй тӑванӗ пекех пӑхса усрарӗ. Самаях вӑй илтӗм, ыратнисем те майӗпе иртме пуҫларӗҫ. Тӑваттӑмӗш кунӗнче ирхине вара киле тухса утрӑм, мӗншӗн тесен, хулара ниҫта ҫырӑнмасӑр пурӑннӑ май, мана каллех тытса хупма пултарнӑ. Тата килти хыпарсене те часрах пӗлес килетчӗ. Соня тӗрмерех-ха, ӑна пӗлетӗп, анчах Вера мӗнле пурӑнать-ши?

Хуйхӑ ҫине суйхӑ... Килте мана тата пысӑкрах хурлӑх кӗтсе тӑнӑ. Эпӗ тӗрмере пулнӑ чух пирӗн кил пуш-пушах тӑрса юлнӑ. Хама тытса кайнӑ хыҫҫӑн ик эрнерен фашистсем манӑн аслӑ хӗре ҫакса вӗлернӗ, кил таврашӗнчи пӗтӗм япаласене ҫаратса тухса кайнӑ...

Кун ҫинчен кӳршӗсем ҫапла каласа пачӗҫ мана. Кунӗн-ҫӗрӗн хуйхӑрса пурӑнса, Вера питӗ хытӑ чирленӗ. Пӗрмай хавшаса пынӑ вӑл. Кӑшт та пулин вӑй кӗтӗр тесе, вӑл кӳршӗ хӗрарӑмне хамӑрӑн виҫӗ чӑхран пӗрине пустарнӑ. Ҫав чӑх пирки ҫакнӑ та вара ӑна.

Комендантпа староста, ялта юлнă пĕтĕм выльăха, кайăк-кĕшĕке шута илсе, çакăн пек приказ кăларнă пулнă:

«Кам пĕр путек те пулин, пĕр чăх та пулин пытарать е пусса çиет, çавсене, Германи командованине хирĕç тăракан вырăнне шутласа, судсăрах çакса вĕлерессĕ».

Вера, чирлĕ пирки ниçта та тухса çӳременскер, çав приказ çинчен нимĕн те пĕлмен. Шăпах вăл апат çисе ларнă çĕре староста — леш ирсĕр Кузька Битый, пырса кĕнĕ... Тĕрмене хупнă çынсен çемйисене вăл кашни кунах тĕрĕслесе çӳретчĕ, тет.

— Мĕн çиен? — тӳрех тăраннă вăл Вера çине.

— Çимелли нимĕн те çук та, чăх пусрăм,— тенĕ Вера.

— Кам ирĕк пачĕ?

— Хамăн чăх пирки камран ыйтса тăратăп вара?

— Приказ çинчен пĕлетĕн-и?

— Мĕнле приказ çинчен?

— Нимĕн те пусма юраманни çинчен!

— Пуçласа илтетĕп...

Староста куна ĕненмен.

— Эс вĕреннĕ çын, пур приказсене те никамран малтан пĕлме тивĕç, куна эсĕ юри, закона пăхăнас мар тесе тунă! — Темтепĕр каласа пĕтернĕ Верăна. Çавăнтах акт пекки çырса коменданта панă. Паллах ĕнтĕ, кун çумне ытти сăлтавсене те хушнă: ашшĕне партизансене пулăшнăшăн хупнă, вĕсен пĕтĕм çемйи шанчăксăр, тенĕ. Ун пек чух çынна пĕтерсе лартма ансат-çке!

Коменданчĕ те тахçанах хăйĕн приказне «çирĕплетмелли» май шыранă-мĕн. Вăл Верăна çав кунах хăй патне сĕтĕрсе пыртарнă, допрос тăванçи пулса, ăна темĕн тĕрлĕ асаплантарса пĕтернĕ, унтан вара, тепĕр ирхине, çакса вĕлернĕ. Хăй мĕн тери тискер чунилли пулма пултарнине питĕ чаплăн кăтартса пама тăрăшнă вăл: çакса вĕлермелли такан патне ялта юлнă пĕтĕм халăха хăваласа пынă, гарнизонти салтаксене парадри пек тăратса тухнă, тет.

Пилĕк кун çакăнса тăнă Вера кĕлетки. Кайран таçта кайса пăрахнă, ăна никам та пĕлмест.

...Тăр-пĕччен юлса, эпĕ юмахри отшельниксем пек пурăнма пуçларăм. Ниçта та тухмарăм, никампа та тĕл пулса калаçмарăм. Хуйхă мана пĕтĕмпех халтан ячĕ.

Кунне пĕрре вут хуткалаттăм та, выртаттăм вара кăмака ҫинче. Анчах шухăшсене чарма ҫук вĕт, пуҫ чиперех ĕҫлерĕ-ха манăн. Хама тытса кайнă чух Верăпа сывпуллашни, вăл мана вилсе каяс пек макăрса ăсатни, унтан Соньăна тĕрме картишĕнче тĕл пулни — пĕтĕмпех куҫ умĕнче тăчĕҫ. Тĕлĕкре те пĕрмай кураттăм вĕсене...

Унтан, майĕпе, шухăшсем сарăлса пырса ыттисем ҫине куҫатчĕҫ.

— Неушлĕ пирĕн пурнăҫ ҫакăн пекех вĕҫленет вара? Чурасем пулсах вилетпĕр-ши? — теттĕм. Анчах кун пек пулас шухăш пуҫра ниепле те шăнăҫмастчĕ.

— Ҫук-ҫук, ун пек пулма пултараймасть! — тетчĕ чĕре,— вырăс халăхĕ, Россия нихҫан та, никам умĕнче те чĕркуҫҫи ҫине тăман, халĕ пушшех те тăрас ҫук!..

Кун пек вăхăтсенче мана яланах тĕрмере пĕр каҫхине пулса иртни — пĕрисем хăйсене вĕлерме илсе тухса кайнă чух та: «Тăван халăх манман пире! Хĕрлĕ Ҫар килет, вăл совет ҫĕршывне фашистсенчен тасатать! Ĕненĕр!» — тесе кăшкăрни аса килетчĕ.

Тĕнчере мĕн пулса иртнине пĕлмен эпĕ, фронт ăҫтине те пĕлмен, нимĕҫсем пирĕн ял ҫыннисене хытăран хытă хĕстернине, пĕрин хыҫҫăн теприне тытса вĕлернине ҫеҫ илтеттĕм, анчах ҫапах та чĕрере шанчăк сӳнмерĕ.

— Эпир тăшман чури пулман, пулас та ҫук...

Уйăх ытла пурăнтăм ҫапла, упа пек. Пĕрмаях темле телейлĕ самант килсе ҫитессе кĕтеттĕм...

Ҫитрĕ ҫав самант!

Пĕр питĕ тĕттĕм каҫ пулчĕ вăл. Эпĕ, алăксене питĕрсе, кăмака ҫине хăпарса, мăрйере ҫил выҫă кашкăр пек ӳленĕ май тахҫанччен хамăн шухăшсемпе пăтрашса выртрăм. Унтан тĕлĕрсе кайсаттăм ҫеҫ, сад енчи чӳречерен хуллен шăкăртаттарни илтĕнчĕ. Малтан эпĕ ҫилпе темскер чĕтрет пулĕ, тесеттĕм, анчах шаккани сас вăйланнăҫемĕн вăйланчĕ. Вара, ерипен ҫĕре анса, «чĕпкуҫне» ҫутрăм та чӳрече патне пытăм.

— Кам унта?

— Эпĕ ку...— илтĕнчĕ хĕрарăм сасси.

Ку мана тата ытларах тĕлĕнтерчĕ. Епле хĕрарăм пыма пултарнă-ха ман патá ҫав вăхăтра?

— Кам эсĕ?

— Эпĕ ку, атте, Соня, Соня!

Хам умма çав вăхăтра пĕр-пĕр калаçакан кайăк вĕçсе пынă пулсан, эпĕ çав териех тĕлĕнместĕмччĕ пулĕ!

— Хĕрĕм, чунăм!..— асăрханмалли çинчен мансах кăшкăрса ятăм та эпĕ, çенĕкелле чупса тухрăм.

Соня алăкран кĕрсенех эпир ыталанса илтĕмĕр. Иксĕмĕр те макăртăмăр, пĕр-пĕрне чуптурăмăр... Хăвăрах ăнланатăр ĕнтĕ: Соня çавăн пек киле пырса кĕни маншăн вăл масар шăтăкĕнчен тухса килнĕ пекех пулчĕçке! Вăл сыввăн таврăнасса шанма та пăрахнăччĕ ĕнтĕ эпĕ...

— Епле хăтăлтăн, ачам? Хăйсемех кăларса ячĕç-и? — тĕпчеме тытăнтăм эпĕ унран.

— Асту, хăйсем кăларса ярĕç вĕсем!—терĕ Соня.— Пире ĕнтĕ Германие илсе кайма тапратнăччĕ, ак çаксем çăлчĕç! — Вăл алăк еннелле кăтартрĕ. Пăлханни-сабăннипе эпĕ асăрхаман та, Соньăпа пĕрле темле арçын килнĕ-мĕн.

— Камсем — вĕсем?

— Партизансем...

— Ой, тавах вĕсене! Спаççипă сире, юлташ! — Эпĕ алăк патĕнчи çын аллине татах чăмăртарăм, ăна малалла ирттерсе пукан çине лартрăм.

— Эсир мана паллаймастăр пулас? — куларах ыйтрĕ вăл манран.

— Палласах çитерейместĕп çав... Курасси курнă пек те...

— Çĕнĕ çул каçне астăватăр-и?

— Астăватăп-ха ăна...

— Мана çăлтăр вĕт эсир ун чухне!

— Чăнах-и? Эсир пулнă-и вăл?

— Çавă, çавă, атте! — пуçĕпе сулса илчĕ Соня.

— Юмахри пекех пулса тухать ку! — терĕм вара эпĕ.— Пурнăç мар, темле приключениллĕ повесть, тупата! Çын каласа парсан — ĕненес те çук...

— Мĕншĕн? Ма апла калатăн? — ыйтрĕ Соня.

Эпĕ ăна фашистсем хама тĕрмерен йытă вилли пек кăларса ывăтнă хыççăн мĕн-мĕн пулнисене, мана çав Соня тусĕн — çамрăк партизанăн — амăшĕ епле пăхса усранине каласа патăм. Ман калав вĕсене тĕлĕнтерчĕ те, савăнтарчĕ те.

— Пĕр сăмахпа каласан, çăкăр-тăвар хире-хирĕç,— çемçен кулса илчĕ партизан.

Соня хăй пирки çапла каласа пачĕ: иксĕмĕр тĕрме картишĕнче тĕл пулнă хыççăн темиçе кунтанах вĕсене — икçĕр çамрăка — тĕрмерен кăларса чугун çул станцинелле хăваласа кайнă. Кун çинчен партизансем пĕлнĕ те, вăрманта засада туса, фашист-конвоирсене пурне те вĕлерсе тăкнă, заключеннăйсене тĕрлĕ çĕрелле тартнă. Анчах вĕсен пысăк пайĕ ниçта та кайман, партизансен отрядĕнчех юлнă. Вăл шутра манăн Соня та пулнă. Часах ăна леш çĕнĕ çул каç хамăр патăмра пулнă «хăна» палласа илнĕ, эпир ăна Верăпа иксĕмĕр мĕнле çăлни çинчен каласа кăтартнă, вара вĕсем питĕ туслăн пурăнма пуçланă. Отряд пирĕн енчи вăрмансене пырса кĕрсен, вĕсем иккĕшĕ пирĕн пата килсе курма шут тытнă.

...Питĕ телейлĕ каç пулчĕ вăл пирĕншĕн. Чăн та ĕнтĕ, Вера пирки темиçе хут та асăнса хуйхăртăмăр, анчах халь тин ăна пурпĕр тавăрас çук та, хамăра хамăр çирĕпрех тытма тăрăшрăмăр. Ун пирки çамрăк партизан пит аван каларĕ:

— Вилнисемшĕн тавăрăпăр, чĕррисемшĕн — кĕрешĕпĕр! — терĕ.

Ку сăмах мана çав тери килĕшрĕ. Эпĕ халыхи вăхăтра тĕнчере мĕн пулса иртнисем çинчен ыйтса пĕлме тытăнтăм. Тата ытларах савăнтарчĕç мана çамрăксем: фронт пирĕнтен пурĕ те аллă-утмăл километртра çеç иккен. Хĕрлĕ Çар фашистсене Мускав патĕнче аркатса тăкнă та халĕ кунталла, хĕвеланăçнелле хăваласа килет-мĕн.

— Темиçе кунтан Хĕрлĕ Çар пирĕн патра пулать, кĕтсех тăр,— терĕ Соня.— Çавăн пирки пирĕн отряд та кунталла тухрĕ. Тăшман чакса каймалли çулсене пӳлсе лартмалла пирĕн. Вара ик енчен те лекет ăна: çар — ларен çапать, эпир — кунтан. Ниçта кайса кĕмелли те пулмасть унăн!

— Анчах сирĕн сыхланас пулать,— хушса хучĕ унăн юлташĕ.— Чакса кайнă чух фашистсем питĕ ураççĕ. Аякккалларах пăрăнни кансĕрлемест...

— Тĕрĕс, тĕрĕс, атте, тархасшăн, сыхлан,— ӳкĕтлерĕ Соня та.— Çăлăнăç çывăх ĕнтĕ, чăн юлашкинчен тем туса ан хăварчăр!

Эпĕ епле пулсан та сыхланма сăмах патăм.

Ир енне вĕсем тухса кайрĕç.

Çавăнтан вара эпĕ пачах урăхланса тăтăм! Каллех

вăй кĕчĕ мана, çĕр çинче вĕçĕмсĕр пурăнас килекен пулчĕ. Кунĕн-çĕрĕн хамăрăн çăлăнăç — Хĕрлĕ Çар килессе кĕтме тытăнтăм. Тӳссе ирттернĕ асапсем те манăç пулчĕç пĕр хушă.

Кĕтни сая каймарĕ! Фронт пирĕн паталлах çывхарса килни уççăнах сисĕнчĕ. Нимĕçсен вĕçĕ-хĕррисĕр обозĕсем хĕвеланăçнелле туртăнма пуçларĕç — пĕтĕмпех пирĕн çынсенчен çаратнă япаласене, темĕн чухлĕ пуянлăх турттарса кайрĕç. Анчах вĕсенчен нумайăшне партизансем тыта-тыта илни çинчен калаçатчĕç те, ку питĕ савăнтаратчĕ.

Сывлăшра халь нимĕç самолечĕсем мар, пирĕн самолетсем ытларах вĕçрĕç. Тупăсем кĕмсĕртетни çывăхран çывăха илтĕнме пуçларĕ. Тата хаваслăрах тапма пуçларĕ чĕре!

Хĕвелтухăç енчи ялсем тăтăшах çунни, пушар çутисем кашни каçах хамăр паталла çывхарни çеç хărata пуçларĕ пире.

— Пирĕн яла та хыптарĕç-ши? Хăтăлса юлаймăпăр-ши мĕнле те пулин?

Çук, хăтăласси пулмарĕ. Пĕр каçхине, тупăсем ытла та пит çывăхра кĕмсĕртетме тапратсан, урамра тахăшĕ калама çук хыттăн, хăрушла кăшкăрни янăраса кайрĕ:

— Пуша-ар!.. Çунатпăр-ăр!..

Эпĕ хăпăл-хапăл пуçтарăнкаласа урама чупса тухрăм. Унталла пăхрăм, кунталла... Турăçăм! Ял пĕр вăхăтрах темиçе çĕртен çунма тытăннă. Кĕçех урамра кăнтăрлахи пек çутă пулса тăчĕ. Ăçта кайса кĕрес?

Хамăн киле епле те пулин çăлса хăварас шухăш мар, фашистсем пирĕн шкула та хыптарса яма пултарас шухăш пырса çапрĕ ман пуçа.

— Вĕсемшĕн пурпĕр... Вĕсем пирĕнне нимĕн те хĕрхенсе тăрас çук... Ах, хăтарса хăвараочĕ-çке!..

Хам тем тума пултарас пекех, часрах шкул еннелле утрăм. Ялта çав вăхăтра тата темиçе кил пĕр харăс хыпса илчĕç — фашистсем ятарласах килтен киле вут тĕксе çӳрени никам каламасăрах паллă пулчĕ.

Утта татах хăвăртлатрăм. Пур çĕрте те çынсем кăшкăрашрĕç, çунакан йывăç шатăртатрĕ, унта та кунта çуртсем ишĕлсе анни илтĕнчĕ, урамсене ĕнĕк шăрши тулчĕ.

Эпĕ çав тамăк варрипе çаплах малалла васкарăм...

Ҫасартăк каласа памалла мар вăйлă взрыв пулчĕ. Пĕтĕм тĕнче чĕтренсе илнĕн туйăнчĕ, сывлăш хумĕ мана пĕр хапха ҫумне пырса ҫапрĕ. Пуҫ ҫийĕпе йывăр чулсем шăхăрса иртсе кайрĕҫ, унтан пĕр хушă пĕтĕмпех тĕтĕм хупласа илчĕ. Мĕн пулнине тăруках ниепле те ăнланаймарăм. Тепĕр урама тухсан тин куртăм мĕн пулса иртнине: нимĕҫсем пирĕн ялти чиркĕве сывлăшалла сиктернĕ иккен. Питĕ чаплăччĕ вăл чиркӳ — вăрҫăччен ăна Мускавран ятарласа янă комисси килсе пăхса кайнăччĕ, тивме юрамасть, архитектура искусстви енĕпе хаклă, тенĕччĕ. Халĕ ман умра йăсăрланакан чул купи ҫеҫ выртрĕ.

Чĕре тата хытăрах пăчăртанчĕ, кăкăр пӳлĕнсе ларчĕ.

— Шкула та пĕтереҫҫĕ! Шкулсăр тăрса юлатпăр!..

Чăнах та ҫапла пулчĕ ҫав. Шкул картишне пырса кĕтĕм ҫеҫ, ун умĕнче аллине пысăк факел тытнă этем мĕлки иртнине курах кайрăм. Хама хам та астăвайми пулнă вара эпĕ ҫавăнта. Кайран-малтан мĕн пулассине шутламасăрах, факельщик патнелле чупрăм. Вăл ĕнтĕ шкул кĕтессине бензин сапса, ăна факелпа хыптарма пуҫăннă. Хăйсен тискер ĕҫне ҫав тери тăрăшса тăвакансккер, мана асăрхамарĕ пулас вăл. Ҫитменнине, эпĕ ун патне хыҫалтан, тĕттĕм ҫĕртен пытăм-ҫке!

Шкул кĕтесси кăштах хыпса илчĕ те ҫавăнтах сӳнчĕ. Фашист каллех тивертме тытăнчĕ. Эпĕ тек тӳссе тăраймарăм. Ал айне лум евĕрлĕ темле тимĕр кĕрсе кайрĕ. Пур вăя пухса сулса ятăм та факельщике пуҫ урлă ҫапрăм. Ы-ых! — терĕ кăна вăл, унтан ҫавăнтах ӳпĕн тăсăлса выртрĕ... Унăн ҫунакан факелне эпĕ часрах таптаса сӳнтертĕм... Анчах шкул ҫуртне пурпĕрех ҫăлса хăварма пулмарĕ. Нимĕҫ ăна малтан шал енчен хыптарса тухнă иккен. Пур чӳречисенчен те ҫулăм чĕлхисем шуса тухрĕҫ. Тумтире хывса ҫапкаларăм, юрпа сапрăм—усси пулмарĕ. Куҫ умĕнчех хыпса кайрĕ вара вăл... Шăпăртатсах куҫҫулĕ юхрĕ манăн ун ҫине пăхса тăрса... Хамăн пурнăҫри нимрен хаклă япала пĕтрĕ вĕт! Мĕн чухлĕ вăй хунă пулĕ эпĕ ҫав шкула таврари чи лайăх шкул тума, анчах халĕ вăл ĕнтĕ кĕл кăна пулса выртать...

Ялти пушар сарăлнăҫемĕн сарăлчĕ. Пур урамсем те ҫунчĕҫ. Эп таврăниччен хамăн киле те вут хыпса илнĕччĕ...

Тепӗр кунне, кӑнтӑрла ҫитеспе, пирӗн яла Хӗрлӗ Ҫар пырса кӗчӗ. Анчах ун чухне ялӗ ҫукчӗ ӗнтӗ, кӗлпе кӑмрӑк ҫеҫ хуралса выртатчӗ.

Ниепле сӑмахсемпе те каласа памалла мар, ҫав тери пысӑк хавасланӑхпа кӗтсе илтӗмӗр эпир хамӑра ирӗке кӑларакансене. Халӑх ун пек савӑннине эпӗ нихҫан та курман. Паллах, урӑхла пулма та пултарайман ҫав, мӗншӗн тесен халӗ эпир ҫӗнӗрен ҫуралнӑ пекех пултӑмӑр вӗт!..

Хамӑн чи пысӑк хуйхӑ пирки — шкул ҫунса кайни, ачасене ниҫта вӗрентме ҫукки ҫинчен эпӗ ҫав кунах пӗр командира каласа патӑм.

— Ытлах ан кулян,— терӗ вӑл мана.— Тӑшмана ҫӗнтерсе пынӑ май пурте пулса пырӗ пирӗн — шкулӗ те, колхоз ҫурчӗсем те, ыттисем те. Малтанхинчен те лайӑхрах пулӗҫ вӗсем, курӑр акӑ! Унччен мӗнле те пулин майлашкаласа пырас пулать...

Шутсӑр савӑнтарчӗҫ мана унӑн сӑмахӗсем!

Ик кунтан яла йӑпӑртлӑха кӗрсе тухнӑ Соньӑпа унӑн юлташӗ те ҫавнах каларӗҫ мана.

— Хамӑрӑн телее тавӑратпӑрах!

Вӗсем иккӗшӗ те хӑйсен ирӗкӗпех Хӗрлӗ Ҫара кайрӗҫ, эпӗ, ҫынсем пулӑшнипе, ҫак ҫӗрпӳрте туса кӗтӗм те — хамӑн ӗҫе тытӑнас, вӑрҫӑ пӗтессе кӗтес мар, терӗм. Мӗнле условисенче ӗҫлеме тивнине хӑвӑрах куратӑр, анчах халь ун ҫине пӑхса тӑма юрать-и? Ачасем вӗренмесӗр ан юлччӑр кӑна, вӗсене этемлӗх историнче пулман ҫутӑ тӗнче тума хатӗрлемелле вӗт, ку ӗҫе ниепле те вӑраха яма юрамасть...

...Ирхине эпир Яков Ивановичпа уйрӑлтӑмӑр. Ҫул тӑршшипех аса илсе пытӑмӑр ун ҫинчен. Нихҫан манмалла мар асра юлчӗ ҫав «вӑтӑр виҫҫӗмӗш старик». Темӗн тӗрлӗ асап, хурлӑх, мӑшкӑл витӗр тухнӑ ку ҫын, анчах хӑйӗн таса чӗрине, ырӑ кӑмӑлне нихӑш енчен те вараламан, ҫутӑ ӗмӗчӗсене ҫухатман, ыранхи куна ӗненсе хӑюллӑн малалла пӑхнӑ...



# Куккук

## 1

Чӑн малтанхи хут эпӗ вӑл тӗлӗнмелле хӗре Мускав облаҫӗнчи Уварово станцийӗ таврашӗнче куртӑм. Госпиталь хыҫҫӑн эпӗ запасла полка лекнӗччӗ, унтан вара, пополненипе пӗрле, мана ҫав Уварово патӗнче ҫапӑҫакан стрелковӑй дивизие ячӗҫ. Шӑтӑк-путӑкла, лакӑмлӑ-сулнӑкла ҫул тӑрӑх ҫӗр каҫа грузовик ҫинче силленсе

пынă хыççăн эпир ир енне пĕр вăрман çумне йăпшăннă пысăках мар яла çитсе кĕтĕмĕр.

— Анăр, тек каймастпăр,— тесе кăшкăрчĕ пире кабинăран сиксе тухнă çамрăк офицер.—Малалла ĕнтĕ машинăпа мар, хырăмпа шуса каймалла пулать,— шӳт туса илчĕ вăл.

Фронт линийĕ çывăххине эпир хамăр та аванах чухларăмăр. Кунта артиллери пени çеç мар, малти позицисенче пулеметсем тăкăртатни те уççăнах илтĕнетчĕ ĕнтĕ. Салху сăнлă хура вăрман тăрри тек-текех нимĕç ракетисен сивĕ çутипе çутăла-çутăла илетчĕ. Кунсăр пуçне çул çинче аманнă салтаксене лартнă машинăсем чылай тĕл пула-пула иртсе кайрĕç. Самаях тĕттĕм пулин те, эпир çав салтаксем нумаях та пулмасть аманнине асăрхаса илтĕмĕр: пуçĕсене çыхнă, аллисене мăйран çакса янă бинчĕсем ытла та шурă, тасаччĕ. Паллах ĕнтĕ, çапăçу хирĕнчен халь çеç илсе тухнă вĕсене...

— Мĕнех вара, пирĕншĕн пулсан — хуткупăс, хушаççĕ-тĕк — анăпăр,— терĕ манпа юнашар ларса килнĕ Ямуткин хушаматлă Хĕрлĕ Чутай йĕкĕчĕ, связистсен шкулĕнчен халĕ çеç вĕренсе тухнăскер.— Кунта çити билетсĕр илсе килнĕшĕн те тавтапуç!

Çак сăмахсемпе вăл машина çинчен никамран малтан, çав тери çăмăллăн сиксе анчĕ. Ун хыççăн эпĕ, унтан вара ытти салтаксем те сике-сике анса тăчĕç. Унччен те пулмарĕ, шофер газ пачĕ те, пире илсе килнĕ машина малалла кайса тĕттĕм урамра куçран çухалчĕ.

Çав самантрах хыттăн команда пани илтĕнчĕ:

— По-четыре стройся!

Эпир хăпăл-хапăл йĕркеленсе тăтăмăр та командир хыççăн утрăмăр. Пĕр вунпилĕк минутран пире ял вĕçĕнчи вăрман хĕрринчех ларакан самай пысăк чул çурта илсе пычĕç. Кунта вăрçăччен шкул пулнă пулмалла: снаряд гильзинчен тунă тĕксĕм лампа çутинче эпĕ стена çинче çĕрчăмăрĕн çĕтĕк картти çакăнса тăнине асăрхарăм.

Çĕрле пулин те, пире вĕри апат çитерчĕç, апат умĕн эрех те лекрĕ ăшăнмалăх, унтан вара канма хушрĕç. Çав вăхăтра тул та çутăлма пуçларĕ. Пĕртен-пĕр чӳрече витĕр (ытти тăваттăшне фанера таткисемпе, улăмпа питĕркелесе лартнăччĕ) ирхи кĕрентерех çутă шуса кĕчĕ. Сарлака урайне хамăрăн плащ-палаткăсене сар-

тăмăр, пуçсем айне кугамккасене хутăмăр та, йĕркипех выртса тухрăмăр.

— А-ах, лайăх-çке,— тутлăн карăнса илчĕ манпа юнашар вырнаçнă Ямуткин.— Курорт. Минеральные воды... Вăл та начартарах пулĕ кунтан. Салтакăн та телей пурах иккен!

Тем вăхăт çывăрнă эпир—ăна пĕлместĕп. Вăратман пулсан, татах та çывăраттăмăр-и, тен, анчах «подъём!» команда пулчĕ те, хăвăрт кăна сике-сике тăтăмăр.

— Малти линие каятпăр пулас,— терĕ Ямуткин, çипуçневаскавлăн тирпейлесе.

— Пулма та пултарать, хăяккăн выртса пурăнма килмен вĕт эпир кунта,— терĕм эпĕ.

Анчах эпир шухăшлани тĕрĕсех пулмарĕ. Пире каллех вĕри апат çитерчĕç, унтан политинформаци пулчĕ. Юлашки эрне хушшинче эпир, пĕрмай çул çинче пулнипе, ни радио итлемен, ни ретлĕн хаçат вуламанччĕ те — политрук сăмахне каçса кайсах итлесе лартăмăр. Питех те хăпартса ячĕ вăл пирĕн кăмăла. Мускав патĕнче аркатса тăкнă хыççăн фашистсем тăтăшах чакаççĕ-мĕн, ниçта та тытăнса тăма вăй çитерейменççĕ.

— Илтрĕн-и? Кĕскен каласан, не так страшен чорт, как его малюют! — терĕ Ямуткин, политинформаци хыççăн чĕлĕм туртма тула тухсан. (Хĕрлĕ Чутай чăвашĕсем вырăссен çунатлă сăмахĕсене питĕ пĕлеççĕ вара...) — Пур фронтсенче те çавăн пекех хӳтерме тытăнсан, хыçран пăс тухса кăна пырать акă вĕсен! Мĕнле шухăшлатăн эс?

— Сан пекех шутлатăп...

Пирĕнпе пĕрле килнĕ ытти «пополненецсем» те, ушкăнăн-ушкăнăн чĕлĕм туртса тăрса, çавăн майлах хавассăн калаçаççĕ. Пурин те кăмăлĕсем çĕкленни, вĕсем пурте çапăçăва пĕр шиксĕр, чĕрисенчи çирĕп ĕненӳпе кĕрсе каясси уççăнах палăрса тăрать. Вăрман хыçĕнчен пĕрмай орудисем ухлатни, инçетре пулеметсем таттисĕр тăкăртатни илтĕнет, пуç тăрĕнче фашистсен самолечĕсем вĕçеççĕ, анчах вĕсем çине халĕ никам та çаврăнса пăхмасть. Этем чĕринче çирĕп ĕненӳ пулсан, вăл нимрен те хăрамасть çав...

— Юлташсем, кĕрĕр, халех концерт пуçланать! — тесе кăшкăрни илтĕнчĕ сасартăк крыльца çинчен.

Маншăн ку пĕртте тĕлĕнмелле пулмарĕ, эпĕ артистсем малти линиех, блиндажсенех пынине те курнă,

анчах фронта пуçласа килнĕ салтаксем хăйсене концерта йыхăрнине илтсен, пĕр-пĕрин çине иккĕленерех, тăй-тай пăхкаласа илчĕç.

— Мĕн терĕ вăл?

— Концерт? Мĕнле концерт?

Ямуткин мана куçран шăтарасла пăхсах ыйтрĕ:

— Шӳт пулчĕ-и ку е... чăнах?

— Чăнах пулма кирлĕ,— терĕм эпĕ.— Атя, кĕрер!

Шкулăн чи пысăк пӳлĕмĕнче эстрада пекки тунă иккен. Тенкел-пукан çуккипе салтаксем урайнех ларнă. Эпир кĕнĕ чухне чĕлĕм тĕтĕмĕ çăра пĕлĕт пек йăсăрланатчĕ, анчах алăка уçса яма хушрĕç те, пĕр пилĕк минутран сывлăш кăштах уçăлчĕ. Унтан эстрада çине кăпăрах пĕр 10—12 музыкант тухса тăчĕç.

— Охо,— терĕ ман Ямуткин, лайăххрах вырнаçса ларса,— ара, ку чăн-чăн джаз вĕт! Кур-ха, пирĕн асатте чĕлĕмĕ пек кукăр трубасем те пур! Ĕмĕрне те шутламан фронтра кун пекки пуласса...

— «Пурте фронт валли», тенине пĕлместĕн-им?

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ...

Çав концертра мĕн-мĕн пулнине халь лайăххăн астусах çитерейместĕп ĕнтĕ. Малтан питĕ хаваслă марш каларĕç, унтан пурте пĕлекен юрăсем — «Катюша», «Моя любимая» тата ыттисем те пулчĕç, вырăс хирĕсенче шăнса хытнă, пыйтланса кайнă фрицсем çинчен пĕчĕк пьеса выляса пачĕç, унтан вара...

Унтан вара пире Ямуткинпа иксĕмĕре пуçĕпех тĕлĕнтерсе яни пулчĕ. Паçăр пире политинформаци туса панă политрук конферансье вырăнне пулнăччĕ те, çавă, черетлĕ номер пĕтнĕ хыççăн, эстрада çине тухса темле «красноармеец Мурзаева» юрласси çинчен пĕлтерчĕ. Ун хыççăнах пĕчĕкрех пӳллĕ, сарлакарах питлĕ, кăштах хуратутлă хĕр-салтак тухса тăчĕ. Сăнран ытлашши илемлĕ темелле те марччĕ ăна, анчах питĕ кăмăллă пек курăнчĕ.

Баянист темиçе вăрăм аккорд турĕ, хĕр-салтак кăкăрĕ тулли сывласа илчĕ те юрласа ячĕ...

Тĕлĕнмелле уçă, янравлă, çепĕç, хăлхана ачашлакан ырă сасă пулнă иккен унăн! Çăлкуçĕнчен шăнкăртатса тухакан тăп-тăрă шыв пекех туйăнса кайрĕ вăл пире. Çав тери ăста, çăмăллăн, пысăк туйăмпа юрласа, вăл пĕр минутранах пӳлĕмри пĕтĕм халăха хăйне парăнтарчĕ. Пуринчен ытла, вăл:

Если ранили друга —
Перевяжет подруга
Горячие раны его...—

тесе юрласа ярсан, пĕтĕм çанçурăм темле сăрăлтатса илчĕ. Куç умне çавăнтах вăрçă хирĕ, унта та кунта çĕрне çулăм, тĕтĕмпе хăрăм çӳлелле сирпĕнни, атакăна ыткăнакан салтаксем тухса тăчĕç. Акă, пĕр салтакĕ чупнă çĕртех аллипе кăкрине тытса каялла ӳкет, унăн пӳрнисем хушшипе вĕри те çăра юн юхса анать. Çав самантрах, вут-çулăмран хăрамасăр, шăхăрсах тăракан пульăсем айĕн, ун патне çамрăк хĕр чупса пырать, салтакăн суранĕсене çыхать, унăн хаклă пурнăçне çăлма тăрăшать...

Тем териех алă çупрăмăр эпир çав хуратутлă сар хĕр юрласа пĕтерсен, «бис, браво, би-ис!» — тесе кăшкăрчĕç салтаксем. Политрук çитес номер çинчен пĕлтерме тухрĕ — ăна калама памарĕç, вăйлăн алă çупнипе унăн сасси илтĕнмерĕ те. Хĕрĕн ирĕксĕрех иккĕмĕш хут юрласа памалла пулчĕ çав юрра. Каллех каçса кайсах алă çупрăмăр. Юлашкинчен политрук, аллине çĕкле-çĕкле, салтаксене аран шăплантаркаларĕ те:

— Чăваш халăх юрри,— терĕ.

Куна эпир пачах та кĕтменччĕ вара! Кĕтме мар, шутлама та пултарайман ун çинчен... Чăваш халăх юрри!.. Чăваш çĕршывĕнчен пин çухрăмра, фронт çывăхĕнчи темле вăрманти пĕчĕк ялта, çак çурри ишĕлнĕ çуртра, тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан çынсем умĕнче, вĕсем çапăçăва кĕме хатĕрленнĕ чух...

Пирĕн чĕресем, чăн та, сиксе тухас пекех тапма тытăнчĕç. Туйăмсем тăруках пăтрашса кайрĕç: çав тери хĕпĕртесе, савăнса та илтĕмĕр эпир, çав вăхăтрах шиклентĕмĕр те... Хăш юрра юрлĕ-ши ку хĕр? Лайăх юрлама пултарĕ-ши?

Çак шухăшсем пĕр кĕске самантрах çиçĕм пек вĕçсе илчĕç.

Анчах та эпир ахалех пăшăрханнă иккен...

Малтанхинчен те темиçе хут лайăхрах юрласа пачĕ çак хĕр чăваш юррине. Пĕтĕм чĕрипе, пĕтĕм чун хавалĕпе, хăйĕн сассин пĕтĕм пуянлăхĕпе юрларĕ вăл.

Кукку! Кукку!
Авăтать куккук,
Янăрать вăрман...

Унăн юррине итленĕ чух эпир пурне те манса кайрăмăр. Эпир вăл самантра çак ишĕлчĕк çуртра, пăчă пӳлĕм урайĕнче хĕсĕнсе ларман, çук. Эпир хамăр çуралнă çĕршывра, таçта Атăл леш енче, пĕр-пĕр хурăн ращинче, çемçе курăк çинче, таса сенкер пĕлĕт айĕнче ларнă. Пирĕн тавра — çĕр тĕслĕ чечек, çывăхарах çăл-куçĕ лăпкăн кăна, пĕр çемĕпе шăнкăртатса выртать, вăрмантан куккук сасси илтĕнет:

Кукку! Кукку!

Ой, мĕнешкел тăвăл пуçланса кайрĕ çав хĕр юлашки хут «кукку!» тесе илсе пуç тайсассăн! Салтаксем юрăçа саламласа кăшкăрчĕç, алă çупрĕç, татах тепре юрласа пама ыйтрĕç. Хĕр, именнипе ним тума пĕлмесĕр, пуçне тая-тая тăчĕ, унăн питçăмартийĕсем пиçсе çитнĕ хăмла çырли пек хĕрелсе кайрĕç.

— Епле пулсан та паллашас пулать ку хĕрпе,— тесе кăшкăртăм эпĕ çав хушăра Ямуткин хăлхинчен.— Пĕлес: кам вăл, ăçтискер, мĕн тăвать кунта...

— Тĕрĕс, тĕрĕс,— пуçĕпе сулчĕ Ямуткин, çаплах алă çупма чарăнмасăр.— Хамăр ялсем вĕт, мур çименскер! Епле кăна пулма пĕлнĕ... Акă, концерт пĕтсессĕнех паллашатпăр!

Анчах çавăн чухне паллашасси пулмарĕ пирĕн.

Халăх лăпланса пынă май хĕр-салтак, баянист çине пăхса илсе, çĕнĕрен юрлама хатĕрленсе тăнăччĕ кăна — тулта сасартăк хăрушла вăйлă взрыв кĕмсĕртетрĕ, пӳлĕмри юлашки чӳрече чăнкăртатса сирпĕнчĕ, пĕтĕм çурт сивчир тытнă пек чĕтренсе илчĕ. Самантран татах умлă-хыçлăн икĕ взрыв пулчĕ.

Пире фашистсен самолечĕсем бомбăлама тытăннă. Концерт татăлчĕ, пире халех вăрман тăрăх сапаланма хушрĕç. Пĕлеймерĕмĕр вара çав тĕлĕнмелле юрăçă камне. Вăл чăваш хĕрĕ икkенĕ çеç паллă пулчĕ пирĕншĕн...

## 2

...Кун хыççăн кун, эрне хыççăн эрне иртсе пычĕ. Эпир тăтăшах çапăçусенче пултăмăр. Ним çинчен те шухăшлама вăхăт çукчĕ,— пĕрмай вут айĕнче, пĕрмай лини çинче. (Эпĕ те, Ямуткин пекех, ун чух связист пулнă.) Хĕр-юрăçă çинчен мансах кайнăччĕ эпĕ вăл хушăра.

Пĕр каçхине Ямуткин аса илтерчĕ çавна.

— Паян эпĕ политотделта пултăм,— терĕ вăл мана тарăн çырмара, кухня патĕнче тĕл пулсан.— Кандидат карточкине илтĕм...

— Чунтанах саламлатăп куншăн,— тесе, ун аллине хыттăн чăмăртарăм эпĕ.— Чыслăн илсе çӳреме сунатăп ăна...

— Тавтапуç, юлташăм, ырă сăмахушăн! — Ямуткин кăкăрĕ умĕнчи кĕсйине мăнкăмăллăн пăхса илчĕ. Унтан сасартăк:

— Э! Астуман та калама! Лешне куртăм,— терĕ.

— Кама — лешне? — ăнланаймарăм эпĕ.

— Куккука ара...

— Мĕнле куккука тата?

— Мантăн-им, хамăр фронта килнĕ кун концертра куккук юррине юрласа пачĕ пĕри.

— Э-э-э! — аса илтĕм те эпĕ сар çӳçлĕ чăваш хĕрне, васкасах ыйтса пĕлме тытăнтăм.— Ăçта куртăн? Паллашрăн-и? Калаçрăн-и?

— Çук çав, паллашаймарăм та, калаçаймарăм та,— терĕ Ямуткин, темшĕн сасартăк именнĕ пек пулса.— Май килмерĕ, аякран çеç курса юлтăм. Пирĕн пекех связист пулмалла вăл, пĕр сержантпа катушкăсем çĕклесе иртсе кайрĕ. Хăй çав тери савăнăçлă, тем пирки ахăлтатса çеç пырать...

— Э-эхх, эсĕ те çав! Ахаль чух: эпĕ, эпĕ, тетĕн, анчах хĕрпе паллашма хăюлăх çитерейместĕн!—юриех намăслантарнă пек турăм юлташа.— Хăвалаcа çитмеллеччĕ сан ăна... çапла та çапла, эпĕ Ямуткин, санăн земляку, Хĕрлĕ Чутайсем, санпа çывăхарах паллашма кăмăлăм пур манăн, темеллеччĕ... Çапах та, тен, паллашрăн пулĕ, мана юри каламастăн? Ан хăра, эп туртса илес çук, ман валли ытла çамрăк вăл...

Çакăнпа хĕр çинчен сăмах-юмах каллех татăлчĕ пирĕн. Пĕр хуша ун пирки эпĕ те, Ямуткин та пачах асăнмасăр пурăнтăмăр. Вăхăчĕ хĕрсем çинчен калаçмалли вăхăт марччĕ çав...

...Май уявĕ умĕн пире малти линирен тыла илсе тухрĕç те, эпир самаях лăпкă пурнăçпа пурăнма пуçларăмăр. Анчах связистсем валли ĕç тупăнать вăл.

Бомбежка вăхăтĕнче штабри радиотехника амантнă пирки политотделпа дивизи хаçачĕн редакцийĕ çĕнĕ вырăнта темиçе кун радиосăр ларнă, çавăнпа та пирĕн

рота командирне радио ĕçне лайăх пĕлекен çын тупса яма хушнă пулнă.

Çак ĕç шăпах мана лекрĕ.

Политотдел пирĕн подразделенирен пĕр виçĕ километрта, шултра юманлăхра вырнаçнă-мĕн. Кăнтăрла иртсен эпĕ вĕсен çĕрпӳртне шыраса тупрăм та ĕçе тытăнтăм. Пĕли-пĕлми çынсем чавалянса, приемнике пăссах пăрахнă иккен. Каçченех тăрмашрăм, аран-аран йĕркене кĕрткелерĕм.

Малтанах çĕрпӳртре çынсем чылайччĕ, анчах каçалапа пурте таçта саланса пĕтрĕç те, вара пĕр кĕтессе вырнаçса ларнă дежурнăй телефониспа иксĕмĕр çеç тăрса юлтăмăр. Приемник ĕçлеме тытăнсан, ăна лайăххах тĕрĕслес шутпа, эпĕ хум çинчен хум çине куçса пытăм. Акă Мускав, акă Тбилиси, ак Куйбышев, Хусан... Пурте лайăх, уççăн илтĕнеççĕ. Унтан регулятора тата кăштах пăртăм та, ман приемник сасартăк... чăвашла калаçма тапратрĕ!

Ак тĕлĕнтермĕш! Шупашкар!..

— Çакăнпа çĕнĕ хыпарсене парса пĕтеретпĕр. Тепĕр минутран концерт итлĕр,— терĕ диктор.

Эпĕ малтанах хытнă пек пулса, сывламасăр лартăм. Çав тери савăнмалла-çке-ха! Ак халех, тепĕр самантранах, хамăрăн тăван хуларан, тăван чĕлхепе, тăван юрăсем илтетĕп!..

Минут мана сехет пек туйăнчĕ.

Шăп çав вăхăтра ман çурăм хыçĕнче çĕрпӳрт алăкĕ уçăлса хупăнни илтĕнчĕ. Анчах эпĕ çаврăнса та пăхмарăм, мĕншĕн тесен приемник çинчен куç илсенех Шупашкар хумне çухатассăн туйăнчĕ.

— Радио ĕçлеме пуçларĕ-и? — ыйтрĕ халь çеç кĕрсе тăнă çын. Вăл хĕрарăм пулнă иккен.

— Пуçларĕ,— терĕм эпĕ, ун çине пăхмасăрах.

— Ма калаçмасть эппин?

— Перерыв.

Унтан хĕрарăм кĕтесри телефониспа тем çинчен калаçса илчĕ. Каллех алăк уçăлса хупăнчĕ, тахăшĕ тухса кайрĕ пулмалла.

— Концерт пуçлатпăр,— терĕ Шупашкар дикторе тинех.— Чăваш халăх юррисене итлĕр...

— Мĕн? Мĕн? Мĕнле станци? — сасартăк çав тери тĕлĕнсе ыйтрĕ хĕрарăм сасси телефонист ларнă кĕтесрен.

— Чăвашсен станцийĕ, Шупашкар,— часрах ответ патăм эпĕ, хама итлеме кансĕрлесрен хăраса.

— Пулма пултараймасть! Çакăнта çити илтĕнет-и вара вăл?

— А мĕн? Илтĕнет çав...— Эпĕ тинех каялла çаврăнса пăхрăм та, паçăрхи телефонист вырăнĕнче хайхи «куккук» — концертра чăвашла юрланă хуратутлă хĕрларнине курах кайрăм! Куçĕ хăйĕн ялкăшать кăна, тутине çыртса лартнă, тӳсме çук пăлханать пулас...

Приемникрен вăйлă хор юрлани илтĕнме пуçларĕ:

Анатран хăпарать шурă пăрахут,
Шупашкар тĕлне çитсессĕн...

— Пирĕн! Пирĕн юрă вĕт ку! — пĕтĕм чĕререн савăнса кăшкăрса ячĕ те хĕр, ман патăма чупса пычĕ.— Чăваш юрри! Ăнланатăр-и эсир çавна!

— Питĕ лайăх ăнланатăп,— терĕм эпĕ ăна хирĕç чăвашла, кăшт куларах.

— Эсир чăваш-и? — тата ытларах тĕлĕнчĕ хĕр.

— Кам пулам-ха тата? Тĕп чăваш.

— Ну... эпĕ те чăваш! — Вăл çавăнтах мана хăй аллине тăсса пачĕ.

— Пит лайăх пĕлетĕп эсĕ чăвашне.

— Мĕнле майпа?

— Кайран калăп. Халь итлер-ха. Хамăрăн юрăсене итлеменни пит нумай пулать, тунсăхласа çитрĕм.

— А эпĕ... Эпĕ! Вилетĕп вĕт...

Каç пулнă май çĕрпӳртре тĕттĕмленчĕ. Приемникпе юнашарах лампа ларатчĕ, анчах ăна çутасси пирĕн пуçа та пырса кĕмерĕ. Пире çак самантра нимĕн те кирлĕ пулман, эпир нимĕн çинчен те шухăшламан, чĕресем тăван халăхăн юррисемпе тулнă, вĕсем пирĕн пĕтĕм туйăмсене çавăрса илнĕ. Куç умĕнче — çутă Атăл, вата Шупашкар, унăн илемлĕ урамĕсем, ешĕрекен сачĕсем, хула таврашĕнчи анлă хирсем, сип-симĕс вăрмансем... Тахăш самантра хĕр çине пăхса илтĕм те, вăл куçне хупнă пекех ларнине асăрхарăм. Паллах, унăн чунĕ те лере, инçетре, çак юрăсене юрланă çĕрте пулнă.

Юрă хыççăн юрă шăранчĕ: «Туй», «Олту», «Кĕреке»... Эпир вĕсене килте чух вуншар, тен, çĕршер хут та илтнĕ пулĕ, анчах вĕсем нихçан та пирĕншĕн паянхи пек хаклă, çывăх пулман-тăр...

— Куккук юрри,— тесе пĕлтерчĕ диктор.

— Ак хайхи, сирӗн юрӑ,— терӗм хӗре, хулӗнчен хуллен тӗртсе илсе.

Вӑл сасартӑк ыйхӑран вӑраннӑ пек картах сиксе, куҫне хӑвӑрт-хӑвӑрт мӑчлаттарса илчӗ.

— Мӗншӗн манӑн?

— Эсир юрларӑр пӗркунне...

— А-а... Юрататӑп ҫав эп ӑна. Экзамен панӑ чух та ҫавнах юрласаттӑм...

Инҫетри солистка пӗр ҫаврӑм юрласа илсен, хӗр тӳсеймерӗ, унпа пӗрле юрла пуҫларӗ.

Кукку! Кукку!
Авӑтать куккук,
Янӑрать вӑрман...

Ҫав самантра манӑн та унпа пӗрле юрлас килчӗ, анчах шӑпчӑк сассипе сӗрмен урапа сассине хутӑштарсан дуэт пулас ҫуккине пӗлсе, ҫӑварӑма уҫмарӑм. Ҫапах та, чӗрем пурпӗр юрларӗ. Чӗремре эпӗ те ҫав вӑхӑтра хамран пин ҫухрӑмри хорпа, унӑн юррисене итлекен тӑван халӑхпа пӗрле пултӑм.

Концерт пӗтрӗ. Шупашкар станцийӗ ӗҫлеме чарӑнчӗ, анчах тӑван юрӑсем ҫаплах-ха илтӗнсе тӑнӑ пек туйӑнчӗ. Эпир ним чӗнмесӗр, хамӑра такам ырӑ кӑмӑлпа тухатса хӑварнӑ пек лартӑмӑр. Ытла та вӑйлӑ пырса тиврӗҫ пирӗн чӗресене тӑван юрӑсем!

— Епле шутлатӑр эсир...— сӑмах пуҫларӗ хӗр чылай вӑхӑтран.— Пире фашистсем ҫӗнтерне пулсан, пирӗн юрӑсем пӗтетчӗҫ вӗт?

— Паллах, пӗтетчӗҫ,— терӗм эпӗ, хӗрӗн шухӑшне ӑнланма тӑрӑшса.

— Ой, епле хӑрушӑ пулнӑ пулӗччӗ вӑл! — хаштах сывласа ячӗ хӗр.— Тавҫӑрса илме те ҫук ӑна... Юрӑ — чӗре сасси, халӑх кӑмӑлӗ, унӑн туйӑмӗ... Халӑхран унӑн юррисене туртса илни вӑл вӗлерне пекех пулать...— Хӗр пӗр хушӑ чӗнмесӗр ларчӗ те унтан ерипен кӑна хушса хучӗ: — Тӗрӗссипе, эпӗ фронта та ҫавӑн пиркиех килтӗм...

— Мӗн пирки? — ӑнлансах ҫитеймерӗм эпӗ.

— Хамӑрӑн юрра хӳтӗлеме. Пирӗн юрӑ ӗмӗр-ӗмӗр ирӗклӗн янӑратӑр, ӑна никам та, нихҫан та хупласа лартма ан пултартӑр, тесе. Юрӑ — манӑн пурнӑҫ...

— Эсӗ фронта хӑвӑн ирӗкӳпех килнӗ-и вара?

— Тата. Директор тем тусан та фронта ярасшӑн

марччĕ мана, эпĕ военкомата кайса заявлени панине пĕлсен темиçе хутчен те хăйĕн кабинетне чĕнтерсе ӳкĕтлерĕ. «Тăван çĕршыва хӳтĕлеме пирĕн сансăр та вăй çителĕклĕ... Пăрах вăл шухăша, ан кай, вĕренес пулать санăн, унта тата эсĕ сассуна та çухатма пултаратăн»,— тет.

— Ăçта вĕреннĕ эсĕ?

— Музыка училищинче. Тăваттăмĕш курсраччĕ ĕнтĕ, кăçал пĕтерсе тухмаллаччĕ... Директор манăн сасă çухаласси çинчен калаçсан, тӳссе тăраймарăм, тӳрех татса хутăм: тăшмансем валли усрамалла-и хамăн сассăма? — терĕм.— Хĕр çемçен кăна кулса илчĕ.— Эпĕ хам пĕчĕккĕ пулсан та, характер самаях пысăк манăн! Анчах та директор мана ăнланаймарĕ: мĕншĕн тăшмансем валли? — тет.— Хамăр халăх валли упрамалла, сан пек сасăллă çынсем кашни кунах çуралмаççĕ, тет. Ăнлантартăм вара хамăн шухăша: енчен те пире фашистсем çĕнтерес пулсан, эпир пачах та юрлаймастпăр, темĕнле ылтăн пек сасă та кирлĕ пулмасть, эпĕ хамăрăн юрăшăн, юрламалли тивĕçшĕн çапăçма каятăп, терĕм. Эпĕ комсомолка, сывлăхăм пур, тылра юлма пултараймастăп, ан та ӳкĕтлĕр, терĕм. Калаçу-тавлашу çавăнпа пĕтрĕ те вара пирĕн. Эпĕ çав кунах тухса кайрăм... Музыкăна вĕренме тытăниччен эпĕ пĕр пилĕк уйăх телефонисткăра ĕçленĕччĕ те, çав питĕ вырăнлă пулчĕ. Тӳрех связе лекрĕм...

— Фронтра нумайранпа-и вара?

— Пĕлтĕрхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа. Малтан эпир Мускав патĕнче оборонăра тăтăмăр, унтан наступлени пуçланчĕ...

— Малти линирех пулман пулĕ те?

Хĕре ку ыйту кăмăла каймарĕ пулас. Вăл кăштах тытăнса тăчĕ те, ответ парас вырăнне, хамран ыйтрĕ:

— Сире мĕнле пек туйăнать?

— Ăçтан пĕлес-ха ман ăна...— мăкăртатса илтĕм эпĕ, хамăн ыйту вырăнсăр пулнине туйса.

— Эсир, арçынсем, яланах çапла: вăрçăра хăвăра çеç пултарулла тесе шутлатăр,— кӳренерех каларĕ хĕр.

— Çук, уншăн мар... — тӳрре тухма тăрăшрăм эпĕ.

— Ан калăр ĕнтĕ, ним те ан калăр,— аллипе сулчĕ вăл.— Хĕрсем вăрçăра ним туса та пултараймаççĕ, тесе шутлатăр эсир. Анчах та йăнăшатăр...

Çак вăхăтра кĕтесре зуммер нăйлатни илтĕнчĕ те, хĕр часрах аппарат патне ыткăнчĕ. Çĕрпӳрте васкасах политотдел секретарĕ пырса кĕчĕ. Приемнике йĕркене кĕртни çинчен ăна пĕлтерсе, эпĕ хамăрăн подразделение тавăрăнма ирĕк ыйтса илтĕм.

Алăк патне çитсен каялла çаврăнса тăтăм та, кĕтессе вырнаçнă хĕре честь парса:

— Сыв пулăр, юлашки сăмахшăн ан çиленĕр...— терĕм.

Вăл ман çине пăхса кăмăллăн, куçне хĕсерех, типтикĕс шурă шăлĕсене кăтартса кулса ячĕ:

— Ман характертан хăрарăр-им? Çук, эп ун пекех хаяр мар. Тепре куриччен!

— Пирĕн паталла пырса тухăр...

— Хăвăр килĕр. Тен, унта сирĕн чăвашсем татах пур?

— Пур тепре, манăн çывăх юлташах, питĕ хастарлă каччă...

— Ăна та ертсе килĕр. Земляксем пĕр-пĕринпе тĕл пулни — аван вăл. Хамăр енчи çынсене курсан, тăвансене курнă пекех туйăнать мана. Ыттисемшĕн те çавăн пекех пулĕ, тетĕп.

— Тĕрĕс калатăр...

## 3

Ротăна таврăнсан, эпĕ тӳрех Ямуткина шыраса тупрăм та ăна çак паянхи тĕлпулу çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа патăм. Ниçта кайса кĕрейми вĕтеленсе илчĕ вара вăл.

— Ара, ку санăн хамăрăн чăваш çĕршывне кайса килнĕ пекех пулнă вĕт, мур пуçĕ! Ну, ăнать те иккен сан тĕллĕн!

— Ничево, Прокоша, ытлашши ан кӳрен, тепринче акă иксĕмĕр те кайăпăр ун патне,— терĕм эпĕ ăна хирĕç.— Куккук сана та илсе пыма хушрĕ хăнана...

— Ан палка кирлĕ мара! Мана палламасть те вĕт вăл...— кĕвĕçнĕ пек пулчĕ Ямуткин.— А эсĕ çулне тупнă ĕнтĕ...

— Çук, чăнах та иксĕмĕре те чĕнчĕ! — çине тăрсах каларăм эпĕ.

— Хăçан?

— Срокĕ паллă мар вара.

— Ну, эппин, пулас çук япала ку. Ăна раштавра аслати авăтасса кĕтнĕ пекех кĕтес пулать...

Пĕр сăмахпа каласан, манăн тусăн кăмăлĕ хуçăлчĕ. Хайĕн Шупашкар сассине илтмелле пуласса та, «куккукпа» курса калаçасса та шанмарĕ вăл. Анчах ĕçсем сасартăк урăх майлă çаврăнса тăчĕç, пирĕн ĕмĕт тепĕр темиçе кунтанах çитрĕ.

Майăн пĕрремĕшĕнче пирĕн çав тери пысăк праçник пулчĕ. Вăл кун пирĕн дивизие Мускав патĕнчи çапăçусемшĕн Хĕрлĕ Ялав орденĕ пачĕç те, çапăçусенче уйрăмах палăрнă воинсене те нумайăшне наградăларĕç. Çав майпа кашни подразделенирех темиçешер çын (паллах, чи лайăххисене) уйăрса дивизи штабĕ патне митинга ячĕç. Çавăнта эпир Ямуткинпа иксĕмĕр те пултăмăр.

Сарлака уçланкă хĕррине, çĕр çулхи юмансем айне, хăмасем сарса вăхăтлăх сцена тунăччĕ. Салтаксем, кĕçĕн командирсем, офицерсем, пĕрин хыççăн тепри, хăйсене чĕннĕ тăрăх сцена çине хăпарса, хĕрлĕ пуставпа витнĕ сĕтел пуçĕнче тăракан çӳлĕ те яштака кĕлеткеллĕ генерал аллинчен наградăсем илчĕç. Аялта тăракансем таттисĕр алă çупрĕç, оркестр туш каларĕ. Унччен пирĕн дивизире наградăсене никам та алла илмен пулнă-ха, паян пуçласа панă вĕсене, çавăнпа та уйрăмах чаплă пулчĕ ку уяв, яланлăхах асра юлчĕ вăл.

Тарас Бульба евĕрлĕ украинец-артиллериста Хĕрлĕ Çăлтăр тыттарнă хыççăн наградăланисен списокне вуласа пыракан офицер:

— Медалью «За отвагу» награждены... Красноармеец Мурзаева, Анастасия Ивановна,— терĕ.

Сцена çине лутрарах хĕр-салтак чупса хăпарса генерал умне çирĕппĕн утса пырса тăчĕ.

— Пĕтрĕ пуç! Акă хайхи! Пăхсам! — мана чавсипе аякран чышса илчĕ Ямуткин.— Лешĕ, пирĕн!

— Тĕрĕс, çавă... Куккук! — терĕм эпĕ те.

Тупата, ним хушмасăрах калатăп: кайранхи вăхăтсенче эпĕ хам та темиçе награда илсе курнă, анчах Настя медаль илнĕ чухнехи пек нихçан та пăлханман, ун пек нихçан та савăнман!.. Мана çав медале çак хуратутлă хĕр мар, пĕтĕм чăваш çĕршывĕ, унта пурăнакан пур çамрăксем илнĕн туйăнса кайрĕ. Епле чыс! Епле хисеп!..

Йăпăрт кăна Ямуткин çине пăхса илтĕм те, вăл та

манран кая мар пăлханса тăнине асăрхарăм. Куçĕ çав тери савăнăçлăн ялкăшать, тутисем кула-кула илеççĕ.

— Служу Советскому Союзу! — тесе честь пачĕ те пирĕн хĕр хăйĕн аллине генерал чăмăртанă хыççăн, малтанхи пекех строевой утăмпа утса анса, халăх хушшинче çухалчĕ.

— Ну, куна паян тытасах пулать,— терĕ Ямуткин, пилоткине чалăштарса лартса.— Аллине лайăх кăна чăмăртамасăр май килмест... Ах, каçăр сăмса! Пăхма — нимех те мар хăй, анчах чĕри питĕ вĕри курăнать!

— Фронта хăй ирĕкĕпе ахальтен килмен ĕнтĕ вăл,— терĕм эпĕ,— кашниех пултараймасть ун пек тума!

Наградăсем парса пĕтерсен, генерал паттăрсене саламласа питĕ хĕрӳллĕ сăмах каларĕ, Тăван çĕршыв телейĕшĕн çĕнĕрен çĕнĕ паттăрла ĕçсем тума чĕнчĕ. Нумай хушă таврари вăрман эпир хăватлăн «урра» кăшкăрнипе янăраса тăчĕ, унтан концерт пуçланчĕ. Ыттисем хушшинче пирĕн Настя та тухса юрларĕ. Сассипе çеç мар, пĕтĕм чĕрипе, чунĕпе юрларĕ вăл... Ăна алă çупса пирĕн алтупанĕсем те ыратакан пулчĕç — çав тери лайăх юрларĕ, итленĕçемĕн итлес килчĕ ăна!

Пĕр улт-çичĕ юрă та юрлаттарчĕç пирĕн хĕре, ывăнтарсах çитерчĕç. Юлашкинчен вăл, пиçнĕ çырла пек хĕрелсе, темиçе хут пуç тайрĕ те сцена çинчен чупсах анса кайрĕ.

— Атя! — терĕ Ямуткин, мана тĕртсе.

— Ăçта? — ыйтрăм эпĕ.

— Ун патне! Шăп халь тытма лайăх та ĕнтĕ ăна, атту кайран вăл каллех куçран çухалма пултарать...

Эп килĕшрĕм. Çавăнтах эпир халăх хушшинчен тĕрткелешсе тухса сцена хыçне пытăмăр та хамăр хĕре тĕл пултăмăр.

— Ырă кун, Мурзаева юлташ...

— Кунĕ ырă та-ха, питĕ ывăнтăм,— терĕ вăл, аллине ман паталла тăсса.

— Хăвăр айăплă унщăн,— терĕ Ямуткин, ун çинелле именӳллĕн, çав вăхăтрах шăтарас пек пăхса.

— Епле — хам айăплă?

— Ытлашши лайăх юрлатăр, çавăнпа...

— Ай, ан кулăр-ха куçăнах! Лайăх юрлама нумай вĕренес пулать-ха ман пеккисен...

Эпĕ ăна Ямуткинпа паллаштартăм.



— Награда илнӗ ятпа юриех сире саламлама килтӗмӗр. Йышӑнсамӑрччӗ пирӗн чӗрери ӑшӑ салама,— терӗ Ямуткин.

— Ҫав тери савӑнтартӑр эсир паян пире,— хушса хутӑм эпӗ.

— Тавтапуҫ... — тата ытларах хӗрелсе кайрӗ Настя.— Сире те часах ҫавӑн пек саламламалла пуласса шанатӑп...

— Ҫаплах пултӑрччӗ, эсир шанни харама ан кайтӑрччӗ,— кулса илчӗ Ямуткин, хӗр ҫинчен ҫаплах куҫне илмесӗр.

— Пулатех вӑл...

Калаҫу пӗр вӑхӑтлӑха татӑлчӗ. Настя пилоткине хывса ҫӳҫне тӳрлетме тытӑнчӗ, эпир унӑн кӑкри ҫинче йӑлтӑртатакан ҫап-ҫутӑ пысӑк медаль ҫине пӑхса тӑтӑмӑр...

— Юлташсем,— терӗ Настя сасартӑк,— эсир халӗ пӗр ҫур сехет пек пушӑ пулма пултаратӑр-и?

— Мӗн тума?

— Эп мӗнле пурӑннине пырса курма... Килӗшетӗр-и?

— Эпир хавасланса килӗшӗпӗр те-ха... Командиртан кайса ыйтас пулать малтан.

— Халех кайса ыйтатӑп, кунтахчӗ-ха вӑл! — тӳрех персе ячӗ манӑн Ямуткин.

— Вӗҫтерӗр эппин,— терӗ Настя.— Уяв паян, неушлӗ пӑртак чуна уҫӑлтарма юрамасть? Ҫитменнине, эпир ӑнсӑртран тӗл пулнӑ землякӗсем, хамӑр ялсем, темелле...

Ямуткин пӗр виҫӗ минутранах таврӑнчӗ.

— Пӗтӗмпех йӗркеллӗ,— терӗ вӑл хаваслӑн.— Ҫур сехет мар, виҫӗ сехет ҫӳреме ирӗк пачӗ. Ӳсӗр пулма ҫеҫ хушмарӗ...

— Питӗ аван! — аллисене ҫупса илчӗ Настя.— Атьӑр эппин, тӑрар мар кунта...— Вӑл пире алӑсенчен тытрӗ те чупнӑ пекех туртса кайрӗ хӑй хыҫҫӑн.

Чӑнкӑ сӑрт ҫумне, ҫӑра ҫулҫӑллӑ ҫӳлӗ юмансем айне алтса тунӑ ҫӗрпӳрт умне пырса тӑрсан, вӑл пире тӑрук куҫсенчен пӑхса ыйтрӗ:

— Ҫакӑн пек ырӑ ҫанталӑкра ҫӗр айӗнче пӑчӑхса ларни килӗшӳсӗр пулӗ вӑл, э? Вӑрманта, уҫӑ сывлӑшра, авантарах пулӗ?

— Пирӗншӗн пурӗпӗр,—терӗм ӑна хирӗҫ,—хӑвӑран ирӗк. Эсир хуҫа паян, эпир мар...

— Эп пулсан — эпех пулам. Эппин, эсир пӗр минут тӑрӑр ха ҫаканта, эп халех тухатӑп...

Настя ҫӗрпӳрте чупса анса кайрӗ. Эпӗ Ямуткин ҫине пӑхса илтӗм те Настя кӗрсе кайнӑ алӑк еннелле пуҫпа султӑм:

— Епле, кӑмӑла каять-и?

— Ан та кала, ача..., — хаштах сывласа илчӗ манӑн тус.— Хӗр мар, ҫулӑм иккен. Епле кӑна пулма пӗлнӗ...

Эпир тек калаҫаймарӑмӑр — Настя хулхушшине хаҫатпа чӗркенӗ япала хӗстерсе ҫӗрпӳртрен сиксе те тухрӗ.

— Кайрӑмӑр! Ав ҫавӑнта питӗ илемлӗ вырӑн пур...

Вӑл сӑрт ҫинелле кӑтартрӗ те йываҫсем хушшипе авкаланакан ансӑр сукмак тӑрӑх чупса хӑпарса кайрӗ. Эпир аран ӗлкӗрсе пытӑмӑр ун хыҫҫӑн. Кайсан-кайсан, вӑл, чӑнах та, ҫав тери илемлӗ пӗр пӗчӗк уҫланкӑра чарӑнса тӑрса юрласа ячӗ:

Кукку! Кукку!
Янӑрать вӑрман...

— Мӗнле, килӗшет-и сире кунта? — ыйтрӗ вӑл пирӗнтен ҫавӑнтах.

— Питӗ аван-ҫке.

— Апла пулсан — ларӑр. Уяв ячӗпе, хамӑрӑн малашнехи телее йыхӑрса, эпир ҫаканта кӑштах хӑналанса илӗпӗр...

Настя хулхушшинчи хаҫатне сӳтрӗ те пирӗн ума ҫур литр кӗленчи, пӗр банка консерва, ҫӑкӑр, виҫӗ кашӑк тата виҫӗ снаряд пуҫӗ кӑларса хучӗ.

— Бокалсем вырӑнне пулаҫҫӗ кусем...

Манӑн Ямуткин, ҫаксене курсан, куҫне чарсах пӑрахрӗ.

— Гениальнӑй ҫын иккен эсир,— кулса илчӗ вӑл.— Кун пеккине шухӑшласа кӑларма чӑнах та уйрӑм йышши ӑс кирлӗ!

— Юрӗ, юрӗ, комплиментсене кайран калӑпӑр, малтан хӑналанар. Тытӑр эппин бокалсене, унсӑрӑн тултарма май килмест,— хуҫалла хушрӗ пире Настя.

Эпир снаряд пуҫӗсене тытрӑмӑр, вӑл тултарса пачӗ.

— Мĕншĕн ĕçĕпĕр ĕнтĕ? — ыйтрăм эпĕ, ун çине пăхса.

— Паллах, пулас çĕнтерÿшĕн,— терĕ Настя.

— Тата çĕнтерÿшĕн çапăçса награда илме тивĕçлĕ пулнисемшĕн,— хушса хучĕ Ямуткин.

— Хирĕçместĕп...

Иккĕмĕш черккине эпир ятарласах Настя ячĕпе ĕçрĕмĕр. Паллах ĕнтĕ, кăштах хĕртĕмĕр, чĕлхесем çыпăçуллăрах çаврăнма пуçларĕç, сăмах-юмах тупăнсах пычĕ. Пĕр-пĕринпе питĕ лайăх паллашса çитрĕмĕр: вăрçăччен кам мĕнле пурăннă, мĕн ĕçленĕ... Анчах та манăн пуринчен ытла Настя паянхи наградăна мĕншĕн илнине пĕлес килчĕ. Кун çинчен тÿрех ыйтма аван мар пек туйăнчĕ, сăмахĕ ниепле те вăл еннелле çаврăнса пымарĕ. Çакăнта мана Ямуткин пулăшрĕ вара, вăл та çавăн çинченех шухăшласа ларнă иккен.

— Кăмăлсăр ан пулăр, тархасшăн, Настя,— аякран пуçларĕ вăл хăйĕн сăмахне,— анчах та манăн пĕр ыйту пур... пĕлес килет...

— Мĕнле ыйту? Калăр...

— Мĕншĕн пачĕç сире çак хаклă наградăна? Мĕнле паттăр ĕçшĕн?

Настя темшĕн тутине çыртса ларчĕ.

— Питĕ пĕлес килет, кăмăл тăвăр, тархасшăн,— терĕ Ямуткин каллех, хĕр çинчен куç илмесĕр.

Настя чĕнмерĕ. Ăна çакăн пек ыйтни кăмăла каймарĕ курăнать. Пĕр хушă нихăшĕ те пĕр сăмах та шарламарăмăр. Темле аван мар пулса тăчĕ. Вара эпĕ сăмах хушрăм:

— Чăнах, Настя, манăн хамăн та ун çинчен ыйтассăм килетчĕ...

Пирĕн хĕр хаштах сывласа илчĕ те аяккалла пăхрĕ.

— Ой, юратмастăп-çке эпĕ хам çинчен калаçма...

— Эсир кĕскен кăна...

— Аса та илес килмест манăн ăна. Йывăр.

— Эпир, паллах, ирĕксĕрлеместпĕр, çапах та...

— Паян хамăр туслашнă ятпа каласан анчах ĕнтĕ...

— Ну, çав ятпа пултăр...

## 4

...Акă мĕн каласа пачĕ вара вăл пире.

Фашистсене Мускав патĕнче аркатма тытăннă кунсенче вĕсен полкĕ пĕррехинче питĕ пысăк салашăн ça-

пăçнă. Çав салана шăп варринчен пысăках мар юханшыв икке уйăрса тăнă. Шывăн пĕр енче — пирĕннисем, тепĕр енче — гитлеровецсем пулнă. Икĕ связистпа, пĕр çамрăк лейтенант-минометчикпа пĕрле, Настя шыв урлă çĕрле провод туртса каçнă та пĕр çӳлĕ чул çурт тăррине вырнаçса ларнă. Тул çутăлма пуçласанах вĕсем телефон тăрăх хамăрăннисене минометсенчен хăш тĕле пемеллине пĕлтерме тытăннă. Сасартăк çыхăну татăлнă. Лейтенант пĕр связистне линири татăлнă вырăна тупса тӳрлетме хушнă. Вунă минут, унтан çирĕм минут та иртнĕ — связист таврăнайман. Лейтенант ун хыççăн иккĕмĕш связистне янă, анчах ку та çухалнă. Пирĕн минометсем ним йĕркесĕр пеме пуçланă, минăсем пачах та кирлĕ мар вырăнсене ӳке-ӳке çурăлнă. Аптраса çитнĕ лейтенант вара Настя çине пăхса илнĕ... Паллах, унăн Настьăна лини çинчи татăлнă вырăна шырама хушма шухăш пулнă, анчах çав вăхăтрах вăл ăна шанса та кайман. Икĕ вăйпитти арçын нимĕн те тăваймарĕç пулсан, çав ача пӳллĕ хĕр мĕн тума пултартăр-ха?..

Лейтенант çавăн пек шутланине Настя унăн куçĕнчен пăхсах ăнланнă.

— Кăлăхах шанмастăр, лейтенант юлташ,— тенĕ вăл.

— Усăсăр пĕтме пултаратăр,— тенĕ лейтенант.— Хамăн каяс пулĕ...

Капла калани вара Настьăна кӳрентерсех пăрахнă.

— Сирĕн ĕç мар ку,— татса хунă вăл.— Эсир командир, сирĕн кунтах юлса тăшмана сăнас пулать. Эпĕ — боец, линие манăн кайса тӳрлетмелле.

Çак сăмахсемпе вăл чул çурт маччи çинчен аннă та, провод тăрăх, тарăн юра сирсе, хырăмпа шуса кайнă. Çав вăхăтра, пирĕн минометсем йĕркеллĕн перейменнипе, фашистсем хăюлланса хăйсен шăтăкĕсенчен туха пуçланă. Пур енчен те пульăсем шăхăрнă, минăсем çурăлнă, осколоксем сирпĕннĕ. Чул çурт патĕнчен пĕр 100—150 метр шуса кайсан, Настя пĕрремĕш связист вилĕ выртнине курнă. Ун патĕнче чарăнса тăмасăрах, малалла шуса кайнă. Çырма хĕррине çитсен, Настя тепĕр связисчĕ пуçĕпе юр ăшне тăрăннине асăрханă. Вăл провод çинех выртнă. Настя ун патне упаленсе çитнĕ те, вăл йывăррăн сывласа йынăшнине илтсе, ăна çăлма шут тытнă. Анчах та салтакăн чăн малтан боевой задание пурнăçа кĕртес пулать. Çавăнпа та Настя вăл боеца

çывăхри мунча хыçне — хăрушсăртарах вырăна сĕтĕрсе кайса хунă та каллех провод тăрăх кайнă. Сăрт çамкине çитсен вăл пульăсем пăр пек çуса тăракан вырăна лекнĕ. Пĕлме çук, тен, пĕр-пĕр нимĕç салтакĕ ăна курса тĕллесех пенĕ-и... Кашни самантрах вилĕм кĕтнине пĕлсе, вăл çырма тĕпнелле çăмха пек йăваланса анса кайнă. Ун телейне, телефон провочĕ шăпах çакăнта, хӳтĕ çĕрте татăлнă пулнă, пĕр-пĕр осколок лекнĕ ĕнтĕ ăна. Настя провода йăпăртах сыпăнтарнă та, хăй çумĕнчи аппаратне хута ярса, трубкăна темиçе хутчен: «Роза! Роза! Мана илтетĕр-и? Мана илтетĕр-и?» — тесе кăшкăрнă.

— Пĕр те пĕр урăх çĕрте те татăлнă пулсан — капут,— тесе шикленнĕ хăй çав вăхăтрах.— Ăна шыраса вăхăт татах вăраха каять те, вара...

Анчах ĕçсем йĕркеллех пулнă. Трубкăра лейтенант сасси илтĕннĕ:

— Маттур, йăмăкăм! Итлетĕп! Тавтапуç!..

Настя часрах каялла, сăрт çинелле чаваланса хăпарнă... Сăрт çамкинче вăл каллех пульăсен çумăрĕ витĕр тухнă, унтан аманнă связист патне — ăна илсе каяс тесе шуса пынă, анчах та связист унччен вилнĕ пулнă ĕнтĕ. Настя вара часрах лейтенант патне чупнă. Вăл чул çурт маччи çине хăпарнă тĕле лейтенант телефон тăрăх хамăрăн миномет батарейине даннăйсем пама пуçланă та-мĕн...

Çапăçу татах вăйланса кайнă. Таврари сывлăш чĕтресе тăнă, взрыв çине взрыв пулнипе хăлхасем ним илтми пулса ларнă. Чылай вăхăт иртнĕ çапла... Унтан сасартăк пуç тăрринче темскер çав тери вăйлăн шартлатнă, шатăртатнă та, пĕр-икĕ минут хушши Настьăпа лейтенант нимĕн те курман, илтмен... Тĕтĕм-хăрăм сирĕлсен, çурт тăррине снаряд тивсе çурри гаран сӳсе кайни палăрнă, вĕсем хăйсем уçă çĕртех пулнă. Настьăпа лейтенант уналла-кунталла пăхса çаврăнма та ĕлкĕреймен, çывăхрах автомат шатăртатни илтĕннĕ, вара лейтенант тăрукках хăйне сулахай аякĕнчен тытса тайăлса кайнă. Настя ун патне çитиччен унăн чĕри тапма та чарăннă...

Настя халь пĕччене юлнă. Ăна асăрханă фашистсем çине-çине пеме тытăннă. Малтанах вăл çухалса кайнă пек пулнă, анчах часах автоматне тытса карниз хыçне выртнă та майлăрах самант кĕтме тытăннă. Ик-

виçӗ минут иртсен, фашистсем ӑна вилнӗ тенӗ пулмалла. Хирӗç ларакан çурт кӗтесси хыçӗнчен харӑсах ултӑн-çиччӗн сиксе тухса ун патнелле ыткӑннӑ. Настя вӗсене курсанах сывлами пулса тӗлленӗ те спусковой крючок çине пуснӑ... Виççӗшӗ çавӑнтах тӗшӗрӗлсе аннӑ, ыттисем каялла хӳтлӗхелле тапса сикнӗ.

Çакӑн хыççӑн вара фашист салтакӗсемпе Настя хушшинче çав тери хӑрушӑ дуэль пуçланса кайнӑ. Вӗсем йышлӑн пулнӑ, Настя — пӗччен. Анчах хӑй пӗччен пулнине палӑртас мар тесе, вӑл вырӑнтан вырӑна куçакуçа пенӗ. Пӗр çур сехет ытла пынӑ çак тан мар тытӑçу... Настьӑн патронӗсем те пӗтме пуçланӑ, вӑл ӗнтӗ сайра хутра çеç кӗске-кӗске черетсем кӑларса янӑ, тӗл тивертме шанчӑк пулсан кӑна пенӗ. Юлашки самант валли гранатӑсем хатӗрлесе хунӑ. Çав вӑхӑтра нимӗçсем урам варрине хӑвӑрт кӑна противотанковӑй тупӑ кустарса кӑларнӑ та чул çурт çинелле умлӑн-хыçлӑн виçӗ хутчен персе янӑ.

Настя ним пӗлми пулса выртнӑ. Унӑн кӗлеткине темиçе вӗтӗ осколок кӗрсе ларнӑ. Мӗн чухлӗ вӑхӑт выртнӑ вӑл çавӑн пек — ӑна пӗлме пултарайман, анчах куçне уçсанах, ун хӑлхине тахӑш тӗлте васкавлӑн нимӗçле мӑкӑртатни илтӗнсе кайнӑ. Вӑл часрах тӑрса ларса пӗр гранатине çавӑрса тытнӑ. Татах итленӗ. Нимӗçсем калаçни çурт хыçӗнче, çенӗкре илтӗннӗ.

— Ман пата килеççӗ кусем, мана тытасшӑн...— тенӗ те Настя, труба çуммипе çенӗк еннелле шуса кайнӑ. Унччен те пулман — карниз хыçӗнчен нимӗç автомачӗн кӗпçи курӑннӑ. Çав самантрах Настя хӑй аллинчи гранатӑна ывӑтса янӑ...

— Хам та тепӗр хут ним пӗлми пулса выртнӑ вара çавӑнта,— тесе вӗçлерӗ Настя хӑйӗн калавне.— Унтан, тӗлӗкри пек, «урра» кӑшкӑрни илтӗнсе кайрӗ. Пирӗннисем çырма урлӑ каçса яла пӗтӗмпех ирӗке кӑларнӑ иккен...

...Настя калавне эпир çев тери тимлесе, хӑй çинчен куç илмесӗр итлесе лартӑмӑр. Тӗрӗссипе каласан, ку истори пулма та пултарайман пек, ӑна юри шухӑшласа кӑларнӑ пек туйӑнчӗ мана. Ăçтан-ха çакӑн пек иксӗлми вӑй, хӑюлӑх, нимрен хӑрами паттӑрлӑх шӑнӑçма пултартӑр çак пӗчӗк хӗр чӗринче? Хӑçан, ăçта, хӑш сӗршывра пулнӑ-ши кун пекки?..

Тата ытларах хисеплес, ӑшшӑн савас килсе кайрӗ

ман ăна. Чи çывăх çын, тăван, пĕр аннерен çуралнă йăмăк выранне шутлас килчĕ.

— Епле маттур эс... Епле маттур, йăмăкăм! — терĕм хам ăшăмра.

Çав хушăрах эпĕ хулпуççи урлă Ямуткин çине пăхса илтĕм. «Тĕрĕс калатăп-и эп, çук-и?» — тесе ыйтнă пек пулчĕ ĕнтĕ ку.

Манăн тус куçĕ калама çук ăшă çутăпа çутăлса тăратчĕ. Чĕре тĕпĕнченех тухса тăракан юратупа тулнăччĕ... Кунтан ним тĕлĕнмелли те пулман: Ямуткин çамрăк çынччĕ, тен, унччен вăл чăнласа юратса та курман пулĕ...

— Ма нимĕн те чĕнместĕр? Е хам сӳпĕлтетнипе йăлăхтарса çитертĕм-и? — терĕ Настя, пĕрре ман çине, тепре Ямуткин çине пăхса илсе.— Кăмăлсăр ан пулăр ĕнтĕ...

— Ой, çук, çук, мĕн эсир?

— Питĕ тĕлĕнтертĕр-ха пире...— терĕмĕр ăна хирĕç, тӳрре тухма тăрăшнă пек.

— Мĕн тĕлĕнмелли пур-ха унта питех? Ун пек йывăрлăха лексен, хуть те кам та çавăн пек тумалла ĕнтĕ.

— Вăл апла та-ха, çапах та тепри хăраса ӳкме, çухалса кайма пултарать...

— Ну, хăракан салтак — салтак мар вара вăл. Тăшмана хирĕç çапăçнă чух хărани — тивĕççĕр япала... — Настя сасартăк темшĕн айăпа кĕнĕ çын евĕр пăхса илчĕ.— Анчах юлашки вăхăтра эпĕ вăрçăри пек мар, килти пекех пурăнатăп-ха... Малти линие яма ыйтса темиçе рапорт та çырса патăм — ямаççĕ. Политотдел начальникĕ чарса тăрать: эпĕ дивизи клубĕ çумĕнчи ансамбльвалли кирлĕ имĕш...

— Тĕрĕс калать,— терĕ Ямуткин.— Сирĕн пек юрлаканни кам пур тата унта? Эсир — солистка...

— Э-э, ан калăр, тархасшăн,— ал сулчĕ Настя.— Юрлама килмен эпĕ кунта... Халлĕхе пурăнкалам таха, наступлени пуçлансан, турпĕрех тылра лармастăп. Генерал патне çитетĕп!

Çак сăмахсемпе вăл снаряд пуçĕсене тепĕр хут тултарса пачĕ.

— Еçсе ярăр... Юлашки тутлă пулать, теççĕ-и-ха çав? — кулса илчĕ вăл.

— Мĕншĕн пĕтĕмпех пире? Хăвăра валли ма ямастăн?

— О-о, çук, çук, мана çитет...— кула-кула пуçне ӗаркаларӗ пирӗн хӗр.— Куна та ӗçместӗмччӗ те, пӗр сӑлтав пулчӗ. Анчах та эсир ман çинчен: награда илнӗ ятпа ӗçрӗ, тесе ан шутлӑр... Тепӗр сӑлтав пур...

— Мӗнле сӑлтав-ши тата?

— Паян эпӗ... çирӗм çул тултартӑм...

— Мӗншӗн маларах каламарӑр вара кун çинчен?— хыпӑнса ӳкрӗмӗр эпир.

Настя иментнӗ пек пулчӗ.

— Каларӑм вӗт сире... Хам çинчен палкама юратмастӑп эпӗ.

— Ну, апла пулсан, сире нумай-нумай çул пурӑнма, чӑваш ятне чапа кӑларакан артистка пулма сунатпӑр! — терӗм те эпӗ, Ямуткинпа иксӗмӗр снаряд пуçӗсене шаклаттартӑмӑр.

— Тавтапуç,— терӗ Настя, пирӗн çине ӑшшӑн пӑхса.— Тӑшмана çӗнтернӗ хыççӑн, вӑрçӑ пӗтсен, тен, чӑнах та артистка пулӑп... Пурӑнасчӗ çав телейлӗ самантчен...

— Пурӑнатпӑр, Настя! Эсир Мускаври Пысӑк театрта юрланине те илтӗпӗр-ха!..

Эпир Настьӑна тата тепӗр хут пуç тайса ӗçрӗмӗр. Çав вӑхӑтра çырмаран сасартӑк горнист вылянни илтӗнсе кайрӗ.

— Мӗн ку? — пӗр-пӗрин çине тӗлӗнерех пӑхса илтӗмӗр эпир.

— Мӗне пӗлтерет?

— Боевая тревога,— терӗ Настя, ура çине сиксе тӑрса.

Чӑн та, ку боевая тревога пулнӑ-мӗн. Ана илтсен салтакӑн пӗр минут та тытӑнса тӑма юрамасть, часрах хӑй вырӑнне васкамалла, стройра пулмалла.

— Тепре куриччен сывӑ пулӑр эппин!

Эпир Настя аллине хыттӑн чӑмӑртарӑмӑр та аналла чупрӑмӑр...



# Вырăс хĕрарăмĕ

Асмонь ятлă яла эпир март уйăхĕн вĕçĕнче, пĕр пĕлĕтлĕ тĕксĕм кун каçалапа пырса кĕтĕмĕр. Малти часем кунтан тухса кайнăччĕ ĕнтĕ, анчах вăрçăн вĕри йĕрĕсем сивĕнменччĕ-ха. Унта та кунта çунса пĕтнĕ çуртсен никĕсĕсем йăсăрланаççĕ: пĕр çĕрте ванчăк тупă кĕпçипе юр ăшнелле тирĕннĕ, ун патĕнчех фашист салтакĕсем — туптăн пĕтĕм расчечĕ — урлă та пирлĕ саркаланса выртаççĕ, урам варрине сăра пички пек хулăн

хырӑмлӑ, кӗске хӳреллӗ икӗ першерон * тӗшӗрӗлсе анна. Ӑҫта ан пӑх — пур ҫӗрте те снарядсемпе минӑсем алтнӑ лакӑмсем палӑраҫҫӗ, шурӑ юр хуп-хура хӑрӑмпа витӗннӗ...

Дивизи хаҫачӗ валли майлӑрах ҫурт тупса йышӑнма урам тӑрӑх тӑвалла хӑпарнӑ чух эпӗ хамӑн туса, ҫирӗм икӗ ҫулхи Палюков капитана, йӑрӑс пӳллӗ, кӑвак куҫлӑ, кӑштах чӗкеҫ шатриллӗ, ҫапӑҫусенче пӗрре кӑна мар чапа тухнӑ Шӑмӑршӑ каччине тӗл пултӑм. Вӑл пӗр аллине бинтпа ҫыхса мӑйӗнчен ҫакнине курсан, эпӗ унтан тӳрех:

— Амантрӗҫ-им? Хӑҫан? Хытах-и? — тесе ыйтрӑм.

— Ытлашши хытах мар та... питӗ тарӑхмалла пулчӗ,— терӗ вӑл.

— Мӗнле апла тата?

— Фрицсене ялтан хӑваласа кӑларсаттӑмӑр ӗнтӗ эпир, вӗсем мулкачсем пекех тапса сикнӗччӗ, ҫав вӑхӑтра тарҫтан мурӗнчен ухмах снаряд килсе ӳкрӗ те, пӗр осколокӗ мана аларан пырса сӑхрӗ...

— Халь вара медсанбата каятӑн-и?

— Ҫук-ха, пӗр ҫӗре кӗрсе тухмалли пур.

— Ӑҫта?

— Каламастӑп. Вӑхӑту пулсан, атя манпа пӗрле... Эс ӑҫталла утгараттӑнччӗ?

Эпӗ каласа патӑм.

— Чӑнах, атя манпа. Инҫе мар, ав ҫавӑнта, ял вӗҫне,— чӗнчӗ Палюков татах.

— Мӗн тума?

— Курӑн унта. Сӑмах майӑн каласан, хӑвна валли питӗ тухӑҫлӑ материал тупма пултаратӑн.

— Хаҫата ҫырма-и?

— Хаҫат валли кӑна мар, повесть валли те пулӗ, тен...

Вӑл ҫапла калани мана питех те интереслентерчӗ. Дивизи хаҫачӗ валли вӑл мана яланах лайӑх фактсем паратчӗ те, халь те иртнӗ каҫхи ҫапӑҫу ҫинчен пӗлтересшӗн пуль тесе шухӑшларӑм.

— Ҫапах та, мӗн пулнӑ?

Вӑл мана пурӗпӗр уҫҫӑн каласа памарӗ. Темиҫе хут ыйтсан та: «Пырсан курӑн»,— терӗ кӑна.

Вара манӑн ирӗксӗрех килӗшмелле пулчӗ, Палю-

---

* Бельги лаши.

ковпа пĕрле анаталла, ял вĕçнелле анса кайрăм. Утнă май эп унтан хамăр ăçта кайни çинчен татах ыйтрăм, анчах вăл мана çав-çавах ответ памарĕ, кула-кула илчĕ çеç:

— Лайăхрах кăсăклантарам-ха сана... Эсир, писательсем, вăл ĕçе юрататăр вĕт. Вулакана хăвăрăн чăн шухăшăра каламасăр сăмсаран çавăтса пыратăр-пыратăр та кайран сасартăк шарт! тĕлĕнтерсе пăрахатăр.

Манăн куна хирĕç калама сăмах тупăнмарĕ, вара эпĕ текех ыйтмарăм та, чĕнмерĕм те. Часах эпир ял вĕçĕнчи пĕр çĕр çулхи хурама айне йăпшăнса ларнă, тул енчен тăмпа сĕрсе, пурпа шуратнă пĕчĕкçеç пÿрт тĕлне çитсе тăтăмăр.

— Ак çакăнта пулма кирлĕ,— терĕ Палюков.— Çыннисем сывах пулсан...

Вăл çенĕке кĕрсе пÿрт алăкĕнчен хуллен кăна шаккарĕ.

— Кĕрĕрех, кĕрĕр,— илтĕнчĕ шалтан хĕрарăм сасси. Палюков ăна илтсен темшĕн ассăн сывласа ячĕ те ман çине темле трукках улшăнса кайнă куçĕпе пăхрĕ. Эпĕ вăл хытă пăлханнине сисрĕм.

— Сывах пулас, çавăн сассиех...

Эпĕ ун çине малтанхинчен те ытларах тĕлĕнсе пăхса илтĕм:

«Мĕне пĕлтерет ку? Кама шыраса тупрĕ манăн тус?»

Палюков çав хушăра алăка картах туртса уçса шалалла кĕчĕ. Эпĕ ун хыççăн кĕрсе тăтăм.

— Сывă-и... анне? Пурăнатăн-и? — терĕ Палюков, малти кукăрта тăракан пĕр 45—50 çулсенчи хĕрарăм патнелле аллине тăсса пырса.

— Сывах-ха, ывăлăмсем, сывах, пурăнкалатăп,— терĕ хĕрарăм, Палюков аллине тытса.— Ку таранччен вилменнине малашне пушшех те пурăнма шутлатăп ĕнтĕ... Эпир халь çĕнĕрен çуралнă çынсем пекех вĕт! — Вăл çемçен кулса илчĕ.

Палюков хыççăн ăна эпĕ те ал патăм. Хам çав хушăрах ун çинчен куç илмесĕр пăхрăм. Унăн сенкертерех тĕслĕ йăваш куçĕ мана тÿрех кăмăла кайрĕ. Çамки çинчи тарăн йĕрсем тата унăн çÿçĕ йăлтах шуралса кайни вара вăл питĕ нумай хура-шур тÿссе иртнине систерчĕ.

«Мĕншĕн-ха Палюков ăна «анне», терĕ? Мĕншĕн

вăл ăçта та пулин урăх çĕре мар, шăп çак пӳрте, çак хĕрарăм патне илсе кĕчĕ мана? Паллать-шим ăна вăл? Епле майпа? Инçетри Атăл çинче çуралса ӳснĕ чăваш ачипе çак Орел облаçĕнчи вата хĕрарăм хушшинче мĕнле çыхăну пулма пултарать?..»

Çавăн пек нумай ыйтусем çуралчĕç ман пуçра, анчах пĕрин пирки те ответ тупаймарăм.

— Ларсамăр, ларсамăр, ара, ма ура çинче тăратăр,— терĕ хĕрарăм, тенкел çине кăтартса.— Ывăннă вĕт эсир, пĕлсех тăрататăп, сирĕн ĕç вăл... ай-ай, çăмăл мар! Çиес те килет пулĕ-ха сирĕн, кăштах вăхăтăр пулсан — халех мĕн те пулин пĕçерсе çитеретĕп... Нимех те çук та ĕнтĕ, нимĕçсем тĕппипех шăлса тухса кайрĕç, анчах, сирĕншĕн пулсан, юлашки татăк та шел мар...

Эпир стена çумĕнчи тăрăхла сак çине лартăмăр. Хĕрарăм васкасах чăлаланалла кĕме тăчĕ, анчах Палюков ăна:

— Ан чăрман, пире нимĕн те кирлĕ мар, Варвара Васильевна... Эс кил-ха кунта, пирĕнпе пĕрле лар,— терĕ.

Ку мана тата ытларах тĕлĕнтерчĕ: «Ăçтан пĕлет Палюков унăн ятне?!»

Анчах хĕрарăм та, çак палламан çамрăк офицер хăйне ятпа чĕннине илтсен, манран кая мар тĕлĕнчĕ курăнать. Вăл чăлан алăкĕнче чарăнса тăчĕ те Палюковпа иксĕмĕр çине пит хытă тинкерсе пăхрĕ.

— Ман ята сире... кам каларĕ? Кӳршĕсем-и?

— Никам та каламан, Варвара Васильевна,— пуçне пăркаласа илчĕ Палюков. Темшĕн, ун сасси кăштах чĕтрерĕ. Вăл, паçăрхи майлах, пӳрте кĕрес умĕнхи пекех, тарăннăн сывласа илчĕ те тепĕр хут:

— Никам та каламан, хамăрах пĕлетпĕр,—терĕ.

— Епле майпа? — ыйтрĕ хĕрарăм, пирĕн патарах пырса.

— Çаплах,— терĕ Палюков. Унăн пичĕ çинче халь çемçе кăна кулă палăрчĕ.

— Епле-ха апла? Тĕлĕнтеретĕр эсир мана...

Пĕр хушă шăпах пулчĕ. Хĕрарăм Палюкова паллама тăрăшнă пек сăнаса пăхса тăчĕ, эпĕ ĕнтĕ пачах та ăнланмасăр пĕрре пĕрин çине, тепре теприн çине пăхкаласа лартăм.

— Эс мана астумастăн-и вара, Варвара Васильевна? — ыйтрĕ Палюков хуллен.

— Çук, астумастăп...— пуçне ерипен пăркаларĕ хĕрарăм.

— Мана... хăçан та курман пек-и?

— Темле-çке... Тен, курнă та пулĕ те — маннă... Эпир пурăнса ирттернĕ пурнăçра ăстăна çухатма та май пулнă та...

— Апла, эппин...— Палюков пичĕ çинче кулă тата ытларах палăрчĕ халь.— Хам аса илтерем-ха сана... 1941 çулта, кĕркунне, Гитлер хурахĕсем кунталла çĕмĕрсе килнĕ чух...

Хĕрарăмăн куçĕ мăч-мăч туса илчĕ. Палюков хăй сăмахне малалла каларĕ:

— Пĕрре, сĕм-тĕттĕм каç, сирĕн алăка сасартăк такам килсе шаккаманччĕ-и?

Хĕрарăм çăвар тулли шыв сыпнă пекех пулчĕ. Палюков çине вăл шăтарас пек пăхрĕ...

— Çав, шаккаканни, йывăр аманнă совет салтакĕ пулнăччĕ. Эсир, Петя ятлă ывăлăрпа, ăна çĕклесе кĕртсе эмеллеме тытăннăччĕ... Çапла-и? Астăвăр-ха...

— Çапла...— хуллен кăна пăшăлтатса илчĕç хĕрарăмăн çӳхе тутисем.

— Çавăн сăнне астуса юлаймарăр-и вара эсир?

Хĕрарăм:

— Турăçăм! — тесе кăшкăрсах илчĕ те аллисене хире-хирĕç шарт! çапрĕ. Сасартăк çав тери тĕлĕннипе унăн сăнĕ те улшăнса кайрĕ, аллисем те чĕтреме тапратрĕç.

— Миша! Миша-и вара эс?

— Çавă пек туйăнать хама! — кулса ячĕ Палюков.

— Турăçăм, епле телей ку! — Хĕрарăм ман юлташа мăйĕнчен ыталаса чуптума тытăнчĕ — питĕнчен, çамкинчен. Çӳллĕ Палюков та ăна, сывă аллипе ыталаса тытса, хушшăн-хушшăн пуçĕнчен чуптăва-чуптăва илчĕ.

— Миша! Ывăлăм, чунăм!.. Чĕрĕ эсĕ, сывă! Сывă!..

Варвара Васильевна макăрса ярса Палюков ытамĕнчен вĕçерĕнчĕ те пукан çине ларчĕ.

— Кай... Кам шутлама пултарнă кун пек пуласса...—пăшăлтатса илчĕ вăл унтан, куçне тутри вĕçĕпе ерипен шăлса.

— Татах тĕл пуласса-и? — хуллен ыйтрĕ Палюков.

— Ара, çав...

— Мĕн тăвас тетĕн, пурнăç — кăткăс япала. Сăрт-

па сăрт тĕл пулмасть, анчах çынпа çын яланах гĕл пулма пултарать, тенĕччĕ эс мана ун чух. Анчах хальхи вăхăтра эпир пĕрмай вырăнтан вырăна куçатпăр та, кунтан питех тĕлĕнмелли те çук пуль...

— Вăл çаплах ĕнтĕ, çаплах,— пуçĕпе сулсах килĕшрĕ хĕрарăм, халь те Палюков çине тĕлĕннĕ куçĕпе пăхса.— Пулаççĕ вĕт çакăн пек телейлĕ тĕлпулусем, тавçăрса илме те, ĕненме те хĕн... Юмахри пек, тупата!

— Юмахри пекех çав,— килĕшрĕ Палюков.— Пуринчен ытла çавăн чухнехине, хĕрĕх пĕрремĕш çулхине, аса илсен...

— И-и, ывăлăм, эсĕ кайран, сана ăсатса янă хыççăн мĕн-мĕн пулнисене пĕлместĕн-ха, вĕсем çинчен пĕлсен — пушшех те тĕлĕнсе каяс пулать...

Вăл тата тем каласшăнччĕ, анчах сасартăк хăйĕн пуçне икĕ аллипе пĕр харăс çавăрса тытрĕ те тем пулнă пекех хыпăнса ӳкрĕ.

— Ой, ватсупнă, мĕн-ха эпĕ çăвара карса ларатăп?! Ара, сире епле те пулин хăна тăвасах пулать-иç! Çитерес-ĕçтерес... Тĕлĕннипе, савăннипе çухалсах кайрăм пулас...

Эпир ăна татах ӳкĕтлерĕмĕр, пире ним те кирлĕ мар, ан чăрман, анчах вăл пирĕн сăмаха хăлхана та чикесшĕн пулмарĕ. Йăпăр-япăр шыв ăсса килсе апат çакса ячĕ, чей вĕретме тапратрĕ, таçта тухса пĕр çур литр эрех тупрĕ. Вăл çавăн пек ăшталанса, унта-кунта чупкаласа çӳренĕ хушăра эпĕ Палюкова çыпăçмаллипех çыпăçрăм.

— Кун çинчен эс мана мĕншĕн ку таранччен нимĕн те каласа паман вара? Хăвна эпĕ тус тесе пурăнатăп, анчах эс манран пĕтĕмпех пытаратăн иккен?

— Мĕн пытарнă вара эп санран? — терĕ Палюков мана хирĕç ләпкăн кăна.— Окруженинче пулнине те, партизансемпе çӳренине те — пурне те каланă-çке? Мĕн тата?

— Анчах çак хĕрарăм хăвна епле çăлни çинчен каламан-çке?

— Ну, тусăм, каçар, пур вак япаласене те аса илсе каласа пама эпĕ писатель мар,— тесе кулса ячĕ Палюков.— Детальсене шĕкĕлчесси вăл — сирĕн професси. Тата, тепĕр тесен, пурнăçра тӳссе ирттернĕ хăшпĕр япаласене аса та илес килмест тепĕр чух. Йывăр. Чуна ыраттарать.

— Çапах та, хальхинче эс манран пурпĕр хăтăлаймастăн, каласа паратăнах,— çинех тăтăм эпĕ.— Çитменнине, эс мана кунта «материал пулать» тесе илсе килтĕн. Ăçта вăл материал?

Палюков кăштах тытăнкаласа тăчĕ те — парăнчĕ.

Акă мĕн пĕлтĕм вара эпĕ.

* * *

...1941 çулхи октябрь уйăхĕнче Хĕрлĕ Çарăн ывăнса çитнĕ чаçĕсем, тăшманпа кунĕн-çĕрĕн çапăçса, Орел хули еннелле чакса килнĕ. Паттăррăн çапăçнă пирĕн боецсем, кашни рубежра чарăнса тăмассеренех фашистсене çĕршерĕн-çĕршерĕн пĕтернĕ, вĕсен техникине çĕмĕрнĕ, çунтарнă, анчах, вăйсем тан пулманнипе, хĕвелтухăçнелле чакса килме тивнĕ.

Пĕр чугун çул станцийĕ патĕнче Н-ски полк тăватă кун çапăçнă. Тăватă кун хушши чарса тăнă вăл фашистсен «СС» дивизине. Çĕр татти-сыпписĕр чĕтреннĕ. Бомбăсем, снарядсемпе минăсем çурăлнипе сывлăш вĕриленсе çитнĕ, таврана йӳçĕ тĕтĕм шăрши çапнă. Çынсем çак хушăра пĕрре те куç хупман, ăша пĕр тĕпренчĕк яман, окопсен тĕпне пухăннă лапраллă шыва ывăçла-ывăçла ĕçнĕ кăна. Тăваттăмĕш кун вĕçнелле ротăсенче 10—12-шер çын çеç юлнă, вĕсем те нумайăшĕ аманнăскерсем пулнă, çапах та чакасси çинчен никам та шутламан.

Вилĕмлĕ çапăçу пулнă вăл...

Пулеметчик Михаил Палюков, икĕ хут аманнăскер, пĕтĕм расчетран пĕччен кăна тăрса юлнă пулин те, тăшман салтакĕсене утă çулнă пекех çулнă, ура çине тăрса пирĕн окопсем еннелле чупма пуçласанах вĕсене каллех те каллех çĕре выртарнă. Каç пуличченех çавăн пек çапăçнă вăл, анчах сасартăк ун çывăхнех йывăр снаряд ӳкнĕ те ăна ним пĕлми туса пăрахнă. Тем вăхăт выртнă вăл — ку паллă мар, анчах та майĕпе тăна кĕрсе куçне аран-аран уçсан таврара нимĕн те курăнман, пăч-тĕттĕм пулнă. Хура пĕлĕтре кăна, унтакунта, çутă куçсем пек, çăлтăрсем ялкăшса тăнă. Пулеметчикăн пĕтĕм шăмми-шакки ыратнă, ĕçесси килнипе çăвар ăшчиккине çилĕм сĕрнĕ пек туйăннă. Вăл ерипен чавса çине çĕкленсе йĕри-тавралла пăхнă, анчах çăра тикĕт пек тĕттĕмлĕхсĕр пуçне нимĕн те курайман. Çывăхра нимле сас-чӳ те пулман. Çапăçу шавĕ таçта ин-

çетре, сылтăм енче илтĕннӗ. Çав енчех, ик-виç çĕрте, пушар çутисем ялкăшнă.

— Мĕн пулнă капла? — хăйĕнчен хăй ыйтнă Палюков.— Мĕншĕн эпĕ тăр-пĕччен, мĕншĕн таврара никам та çук?..

Пĕр хушă çапла шухăшласа выртнă хыççăн вăл майĕпен тавçăрса илнĕ:

— Пирĕннисем чакса кайнă. Мана пăрахса хăварнă... Вилнĕ тесе шутланă пулмалла ĕнтĕ...

Вăл нимĕн тума пĕлмен.

Çĕрле. Сивĕ. Темиçе çĕртен аманнă, çанçурăм хускатмалла мар. Таврара пĕр чун та çук. Ăçта хамăрăннисем, ăçта нимĕçсем — нимĕн те паллă мар. Каяс пулсан, хăш еннелле каймалла? Тен, темиçе çĕр метртанах тăшман аллине лекмелле? Вара? Вара, паллах, вилĕм... Анчах кунта выртсан та нумаях пурăнас çук. Кунта выртсан та — вилĕм. Мĕн те пулин тăвасах пулать. Кам пĕлет, тен, çăлăнма май килĕ? Тен, хамăрăннисем тĕлнех çитсе тухăп?

Вилес килмен Палюковăн. Унăн пурăнас килнĕ. Вăл пĕтĕмпе те вунтăххăр кăна тултарнă-ха, унăн малашне нумай пурăнмалла пулнă, вăл паян та, ĕнер те, унччен малтан та çав малашнехи пурнăçшăн çапăçнă, çавăншăн рубежран пĕр утăм та чакман!

Пурăнас кăмăл çĕнтернĕ. Суранĕсем тем пекех ыратсан та, унтан та кунтан юн сăрхăннă пулин те, малта мĕн пулассине пĕлмесен те, вăл окопран ерипен шуса тухнă та, ăнсăртран алла лекнĕ винтовка çине тайăнса, тĕттĕмелле утнă. Малтанах хăш еннелле кайнине те чухламан, пĕлĕтри пĕр пысăкрах çăлтăра суйласа илнĕ те, çавăн çине пăха-пăха утнă. Унăн вăйĕ чаксах пынă, вăхăчĕ-вăхăчĕпе пуçĕ çаврăннă, ун пек чух пĕр хушă тăрса канма тивнĕ, çапах та шалти сасă ăна пĕрмай: «Ут, ут, малаллах шăвăн, çăлăнăç пулмаллах»,— тенĕ те, вăл юлашки вăйне пухса, шăлĕсене çыртса лартса, каллех утнă.

Нумай кайнă-и вăл çапла, сахал-и — ăна хăй те тавçăрса илме пултарайман, анчах сасартăк ун умне çӳллĕ те парка йывăç мĕлкисем тухса тăнă.

— Мĕн ку? Вăрман-и? Ял-и? — тесе ыйтнă Палюков хăйĕнчен хăй.

Вăрман пулсан, унта кĕрсе кайса çухаласран хăрамалла, ял пулсан... тен, унта халь фашистсем тăраççĕ?

Хăй пачах халтан кайма тытăннине, тек ура çинче тăма пултарайманнине туйса, Палюков çав йывăççем патнерех пынă. Ял иккен. Кăшт тăрсан, вăл çав ял вĕçĕнчи пӳрте çитсе пăхма шут тытнă.

— Мĕн пулать те, мĕн килет....

Пырса шакканă вара пĕр пĕчĕк пӳрт алăкĕнчен.

— Тархасшăн, çĕр каçма кĕртĕр....

Алăка ватăрах хĕрарăм уçнă. Унăн хăрах аллинче пĕчĕк лампа пулнă. Хăй умĕнче вилĕм сăнĕ çапнă, юнланса пĕтнĕ совет салтакĕ тăнине курсанах вăл ăна шăппăн кăна:

— Кĕр, ывăлăм, кĕр, çĕр каçмалăх вырăнĕ тупăнĕ,— тенĕ.

Палюков хăрах урипе алăк урлă ярса пуснă та çав самантрах урайне ӳкнĕ. Урăх вăй пулман унăн. Куçĕ хуралса килнĕ, пуçĕ ним майсăр шавлама тытăннă та — ăнран кайнă.

Тепĕр кунне, кăнтăрла çитеспе, куçне уçсан, вăл хăй пĕчĕкçеç пӳртре, çемçе минтерсем çинче выртнине курнă. Унăн пур суранĕсене те такамăн çепĕç алли тап-таса шур пирпе çыхса янă. Хăй ăçта выртнине вăл тăруках тавçăрса та илеймен.

— Госпитале лекнĕ-ши эп капла?

Анчах хăй умне пĕр вунвиç çулхи арçын ача пырса тăрсан, ăнланнă вара:

— Каç килсе кĕнĕ çĕртех пулас...

Арçын ача ун çине кăштах ютшăнса, кăштах тĕлĕнсе пăхнă.

— Эс мĕн ятлă? — тесе ыйтнă Палюков хуллен.

— Петя,— тенĕ лешĕ ăна хирĕç.

— Шыв ĕçтер-ха мана, Петя. Ăш хыпсах тухать...

Петя витререн шыв ăснă та, Палюкова тăрса ларма йывăррине кура, хăрах аллипе унăн пуçне çĕклесе, тепĕр аллипе куркана ун çăварĕ патне илсе пырса ĕçтернĕ. Ĕçнĕ хыççăн Палюков куçне хупса каллех тĕлĕрсе кайнă пек пулнă. Çапах та вăл пӳрт алăкĕ уçăлса хупăнине, хĕрарăм сасси: «Вăранмарĕ-и халь те?» — тесе ыйтнине, Петя ăна хирĕç: «Эп ăна шыв патăм»,—тенине, хĕрарăм: «Шыв памалла марччĕ, эпĕ ăна валли сĕт илсе килтĕм»,— тесе чăланалла утса кĕрсе кайнине те илтнĕ. Палюков куçне уçса: «Ан чăрманăр, тархасшăн»,— тесшĕн пулнă, анчах калас сăмах пыртан тухайман.

Куçне тепре уçсан — ун умĕнче кил хуçи хĕрарăм аллине пысăк кружка тытса тăнă.

— Сĕт вĕретрĕм сан валли, ĕç-ха,— тенĕ вăл йăвашшăн,— ĕç, вăй кĕтĕр пăртак...

Йывăррăн сывлакан Палюков ăна калама çук ырă кăмăлпа сăнаса выртнă.

— Мана тăван анне пекех пăхатăр-çке эсир...

— Епле пăхас-ха тата ман сана? — тĕлĕннĕ хĕрарăм.— Эс пире тăшмансенчен хӳтĕлесе аманнă вĕт-ха, пирĕншĕн юн тăкнă. Ме-ха, ĕç, сĕчĕ сивĕнсе кайиччен.

Вăл, Петя пекех, хăрах аллипе пуçне çĕклесе, тепринпе кружка тытса, Палюкова ăшă сĕт ĕçтернĕ. Юлашки тумламсене ĕçсе ярсан, Палюков тăраннăн сывласа илнĕ те:

— Мĕнпе тав тума пĕлĕп-ши эпĕ сире? — тенĕ.

— И-и, тав тăвасси пулĕ-ха вăл,— ал сулнă хĕрарăм.— Сăртпа сăрт тĕл пулмасть, çынпа çын яланах тĕл пулма пултарать. Пуçăмăрсем сывă пулччăр кăна. Тата тискер тăшмана хăваласа ярасчĕ...

Хĕрарăм Палюков пуçĕ вĕçне ларнă та, вĕсем хушшинче чунран тухакан ăшă калаçу пуçланса кайнă. Хĕрарăм ун çинчен ыйтса пĕлнĕ: ăçти çын, тăвансеммĕнсем пур-и, вăрçăччен кам пулнă — йĕркипех. Хăй çинчен те каласа панă: унăн упăшки Советра ĕçленĕ те, колхозсем тунă вăхăтра ăна кулаксем вĕлернĕ, кайран халăх ун вырăнне Совета Варвара Васильевнăна хăйне суйланă, вара вăл тăватă çул хушши ял Совет членĕ пулнă, партине кĕнĕ, каярахпа сĕт фермин заведующийĕ пулса ĕçленĕ. Анчах ĕнесене хĕвелтухăçнелле, вăрçă çук вырăнсене ăсатнă та, вăл ĕçсĕрех тăрса юлнă. Нимĕçсем килсен, хăйне ырă пулас çуккине пĕлсе, вăл тем пекех кунтан тухса каясшăн пулнă, анчах ывăлĕ чирлĕ выртнă пирки каяйман.

— Çапах та, хама тем тусан та, тăшмана парăнас шухăшăм çук,— тенĕ вăл.— Мана халь тин никам та чура тума пултараймĕ... Икĕ ывăлăм Хĕрлĕ Çарта çапăçççĕ пулать те — эпĕ тăшман умне чĕркуçленетĕп-и? Ан тив, хуть те пуçăма касса татчăр...

Çĕрле Палюков каллех вĕриленсе кайнă, ăнран тухсах аташма тапратнă, вырăн çинчен сике-сике тăрса хăлаçланнă, темскер кăшкăрнă... Варвара Васильевна çĕрĕпех чăлăм куç хупмасăр пăхнă ăна, пуçĕ çине тутăр йĕпетсе хурса лăплантарнă, çывăратса яма тăрăш-

нă. Ир енне тин Палюков, шăпланса, вилнĕ пекех çыварса кайнă.

Çав каçах яла фашистсем пырса кĕнĕ...

Ун çинчен Варвара Васильевна ирхине шыв ăсма кайсан пĕлнĕ. Çăл патне пĕр хĕрарăм темле хутланса, такам курасран хăранă пек, унталла-кунталла пăхкаласа чупса пынă та Варвара Васильевнăран шăппăн кăна:

— Сан патна пымарĕç-и-ха? — тесе ыйтнă.

— Камсем? — тĕлĕннĕ ку.

— Ай пĕлместĕн-им? Илтмен-им вара?

— Ним те пĕлместĕп.

— Ара, ял тулли нимĕç вĕт!

Варвара Васильевна аллинчи витри шăнкăрах тухса ӳкнĕ. Хăй вăл çавăнтах хут пек шуралса кайнă.

— Хăçан çитнĕ вĕсем?

— Кĕçĕр, кĕçĕр! Килтен киле çĕрĕпе тĕрĕслесе çӳрерĕç вĕт. Эсĕ ытла ял вĕçĕнче пурăннă пирки çеç пыман пуль сан патна.... Асту, куçа курăнакан ытлашши япала пур пулсан — пытар, пĕтĕмпех тасатса тухаççĕ.

Варвара Васильевна урăх калаçса та тăман. Чĕтрекен аллисемпе витресене картлă кĕвентерен çакнă та часрах килнелле утнă. Утнă темелле те мар, чупсах кайнă вăл. Урисем айĕнче çĕр пуррине те туйман. Витресенчи шывĕ сирпĕнсе кăна пынă.

«Куçа курăнакан ытлашши япаласем пур пулсан — пытар...». Çак сăмахсем Варвара Васильевнăн хăлхинчех янăраса тăнă.

«Пытар...»

Çук, ун пуçĕнче япала пытарас шухăш пулман халь. Унăн пӳртĕнче темĕнле япаларан та хаклăраххи выртнă: аманнă çамрăк салтак. Япаласене мар, часрах ăна пытарма тивнĕ Варвара Васильевнăн. Инçетерех, тĕплĕрех, тăшман шыраса тупмалла мар çĕре пытармалла. Анчах — ăçта? Хăш вырăна? Çулла пулсан — татах та вырăн тупма пулатчĕ, анчах халь кĕркунне, сивĕ, çынни — чирлĕ, суранĕсем тӳрленме те пуçламан.

Амăшĕ çав тери пăлханнине Петя вăл пӳрте кĕрсенех сиснĕ.

— Мĕн пулнă сана? — ыйтнă ача.

— Ан шарла,— тенĕ ăна амăшĕ.

Витрисене чăлана лартнă та васкаса каллех тулалла тухнă. Вăл Палюкова пытармалли май шыраса кил-

карти тавра темиçе хут та çаврăннă, анчах юрăхлă вырăн тупăнман: ни витере, ни нӳхрепре, ни аслăк çинче... Тăшмансем килсе ухтарас пулсан, кунта ăна çăмăллăнах тупнă пулĕччĕç... Тупсан вара... о, тупсан, мĕн пулассине Варвара Васильевна пит лайăх пĕлнĕ! Вăрçă пуçланнăранпа фашистсем пирĕн çĕр çинче мĕн чухлĕ айăпсăр çынсене вĕлерни çинчен вăл çителĕклех илтнĕ.

Тăхтаса тăма юраман. Яла каçах килсе кĕнĕскерсем, нумай килсенче ухтарса çӳренĕскерсем, вĕсем кунта та кашни самантрах килсе кĕме пултарнă. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе Варвара Васильевнăна урамра такам ури сассисем илтĕннĕ пек туйăнса кайнă. Пăлханнă чĕри тата хытăрах тапма пуçланă вара унăн.

— Пытарас, ăçта та пулин, епле те пулин пытарас, хамăр çынна урнă кашкăрсен аллине парас мар... Çăлас!.. — Çак шухăш пĕр канлĕх памасăр вĕресе тăнă унăн пуçĕнче.

Ним тума аптранă енне вăл анкартинелле тухнă. Кунта та аманнă салтака пытармалли майлă вырăнах пулман çав. Арпалăх — шанчăксăр, тата хальхи çанталăкра унта чирлĕ çын мар, сывви те тӳсес çук. Çĕрулми пусси... Çук, унта та ĕç тухмасть. Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, ăçта пытарса хăтарас ку йĕкĕте?

Сасартăк Варвара Васильевнăн пуçне телейлĕ шухăш пырса кĕнĕ: ялтан пĕр çухрăм çурăра, сăрт çамкинче, пĕркунне халăха чылай блиндажсем алттарнăччĕ. «Вăхăтлăха ăна çавăнта кайса хурсан, мĕнлеши? Невушлĕ нимĕçсем çав шăтăксене те ухтарса çӳрĕç? Мĕн шыраччăр вĕсем унта? Тем тесен те, ку шанчăклă пулать... Тĕттĕмлентĕр кăна, тӳрех çавăнта илсе каятпăр. Улăм сарас, витĕнме тумтирсем парас, каç-каç хамăр кайса пăхăпăр...»

Çапла шухăшласа, Варвара Васильевна часрах пӳрте кĕнĕ. Палюков тĕлĕрсе кайнă пулнă, хăш чух кăна йывăррăн йынăшкаланă.

— Асапланать мăнтарăн...— хĕрхеннĕ ăна хĕрарăм.

— Такамсем килеççĕ пирĕн пата! — тенĕ сасартăк чӳрече умĕнче ларакан Петя.— Виççĕн...

Варвара Васильевна, халь çеç чăлана кĕрсе апат хатĕрлеме тытăннăскер, тутине çыртса лартнă та куçĕ хуралса килнипе кăшт çеç ӳкмен. Вăл урам алăкĕ уçăлса хупăннине, унтан пусма картлашкисем тăрăх теми-

çе çын таканлă атăсемпе кěмсěртеттерсе хăпарнине уççăнах илтнě.

— Пулчě... Тытрěç... Вěлереççě... — çиçěм пек çиçсе илнě шухăш унăн пуçěнче.

Çав самантрах вăл Палюков выртакан вырăн патне чупса пырса ăна хăй кěлеткипе картласа тăнă.

«Ăна вěлериччен малтан хама вěлерччěр...»

Пўрте виçě нимěç кěрсе тăнă. Вěсем Варвара Васильевнăна пěчěккě чух асламăшěн юмахěсенче илтнě усалсем, чуниллисем пекех туйăнса кайнă. Хăйсем хушшинче темскер мăкăртатса илсен, вěсенчен пěри, çурхи кашкăр пек ырханни, Варвара Васильевнăна çисе ярас пек пăхса, халь те вăранман Палюков çине пўрнипе тěллесе ыйтнă:

— Кто... кто есть этот мужчин?

— Ман ывăл... ывăл..— тенě Варвара Васильевна чěтрекен сасăпа, Палюкова тăшман куçěнчен тата лайăхрах картлама тăрăшса.— Чирлě выртать, ним пěлми...

— Нумайранпа чирлет-и? — тесе ыйтнă çав нимěçех, вырăс сăмахěсене хуçкаласа.

— Чылайранпа ěнтě... Икě эрне ытла.

— Мěнле чир унăн?

— Пěлместěп... Тиф пулмалла.

— Тиф?

— Тифах пуль, тетěп çав. Пирěн патра халь вăл чир питě сарăлнă та...

Нимěç салтакěсем пěр-пěрин çине кăн-кан пăхкаласа илнě те тек ыйтса-калаçса тăмасăрах кăптăртатса тухса кайнă. Каялла çаврăнса та пăхман.

— А-а, çапах та хăрама пěлетěр-и, çěленсем? Сире эп тиф мар, халерпа чума ертсе чыхăнтарăттăм,— чышкипе юнаса илнě Варвара Васильевна, нимěçсем васкасах тăвалла хăпарса кайнине чўрече витěр пăхса тăрса.

Варвара Васильевна хăй тăшмансене улталама пултарнăшăн хěпěртесе сассăр кулса илнě, тиф çинчен вăл нимěçсене юри, хăратас шутпа каланă-çке-ха. Пырать, çак чир ăнсăртран аса килнě ăна, унсăрăн тем пулмаллаччě-ха, темле тасалмаллаччě вěсенчен!

Çапах та, лăпланса ларас пулмасть. Пěринче ěç майлашрě, анчах тепринче майлашăнмасан та пултарать.

— Епле пулсан та, ку йěкěте улахрах вырăна ăса-

тас, вара уншăн та шанчăклăрах, хама та лайăхрах пулĕ...

Вăл хăйĕн шухăшне Петьăна ăнлантарса панă, ăна сăртри дзотсене кайса пăхтарнă («хăшĕ лайăхрах, типĕрех, хăшĕнче, тен, çĕрле вут хурса ăшăнма та пулать...»), хăй Палюков валли çимеллисем хатĕрленĕ. Петя таврăнсан вара, тулта ним курăнми тĕттĕм пулса çитсен, вĕсем Палюкова кив кĕрĕк тăхăнтартса, иккĕш икĕ енчен çавăтса, хирелле илсе тухса кайнă. Варвара Васильевна çул тăршшĕпех йăпатса пынă ăна:

— Эс ан пăшăрхан, ывăлăм... Ан кулян... Хăвăншăнах аван пулать ку. Ак кăштах сывалатăн та, унтан вара мĕн тăвасси курăнĕ... Эпир сана пăрахас çук. Кашни каçах пырса тăрăпăр сан патна, мĕн кирлине пĕтĕмпех илсе пырăпăр, ним хуйхи-суйхи те пулмĕ санăн. Енчен, нимĕçсем хамăр ялтан тухса кайсан, сана каллех киле илсе пырăпăр... Лăпкă пул...

— Ма калатăр эсир ку сăмахсене? Эпĕ хам та ăнланатăп вĕт... — тесе пынă Палюков хуллен.

Тепĕр сехетрен Варвара Васильевнăпа Петя, Палюкова вăрттăн дзота вырнаçтарса хăварса, киле таврăннă. Крыльца умне çитсен, Варвара Васильевна сасартăк чарăнса шухăша кайнă пек пулнă.

— Эс кĕр,— тенĕ вăл ывăлне,— манăн пĕр ĕç пур-ха...

— Таçта каятăн-им? — ыйтнă Петя.— Ан кай, эп пĕччен юлма хăратăп...

— Çук, ниçта та каймастăп... Йăпăрт кăна эпĕ...

Петя кĕрсе кайсанах вăл çенĕкрен хупăлчаллă салтак котелокĕ илсе тухнă. Унтан, хĕвĕнчен темле пĕчĕк çеç япала кăларса, ăна кипкепе пит тĕплĕ чĕркенĕ те çав котелок ăшне хунă, вара лупас айĕнчи пĕр кĕтесе кайса, çĕр айне чавса пытарнă.

— Шыраччăрах халь, пурĕпĕр тупаймаççĕ.

Вĕсем çутă çутмасăрах саланкаласа, çывăрма выртнă, анчах нихăшĕ те çывăрса каяйман. Иккĕшне те йывăр шухăшсем çавăрса илнĕ: мĕн пулать-ши малалла? Ыранхи кун тата мĕнле инкек йăтăнса килĕ-ши?

Анчах инкеке ыранччен те кĕтмелле пулман. Хурлăхпа асап бĕсен пӳртне çав каçах çĕмĕрсе çитсе кĕнĕ...

Çурçĕр тĕлĕнче (Варвара Васильевнăпа Петя кăшт тĕлĕрсе кайма пуçланă-мĕн ун чух) сасартăк такамсем

ҫенӗк алӑкне чышкӑсемпе ҫапса, урисемпе тапса кисрентерме тытӑннӑ. Шаккана май ӑнран тухса кайнӑ пекех кӑшкӑрнӑ хӑйсем...

— Уҫ часрах! Уҫ, большевик сысни!.. Уҫмасан, халех вут тӗртсе хыптарса яратпӑр!

Шаккакансем урӑ марриие Варвара Васильевна тӳрех сиснӗ.

— Эппин, тата ытларах урнӑ кусем... Хӑтӑлса юлассине шанма ҫук ӗнтӗ...

Петя, хӑранипе, сиксе чӗтренӗ.

— Ан уҫ, анне, ан кӗрт... — тенӗ вӑл, амӑшне аллинчен тытса.

— Юрамасть, ывӑлӑм, уҫмасан хамӑра тата йывӑртарах пулма пултарать... Эс ан хӑра, ан макӑр... Хӑвӑнтан ыйтма пуҫласан, ним те ан кала, ҫирӗппрех пул...— васкаса ӑс панӑ ӑна Варвара Васильевна. Хӑй вара ҫавӑнтах ҫенӗк алӑкне тухса уҫнӑ.

Самантрах пӳрт ӑшчиккине кӗсъере чиксе ҫӳремелли электричество хунарӗ ҫутатнӑ. Ҫутӑ пайӑрки, пӳртре йӗри-тавра ҫаврӑнса, Петя ҫине пырса ӳкнӗ, унтан Варвара Васильевна ҫине куҫнӑ. Куҫран хытӑ ҫутатнипе вӗсем хӑйсем патне камсем килсе кӗнине те уйӑрса илеймен.

— Ҫут-ха лампуна, йӗксӗк, пирӗн санпа таса чӗререн калаҫмаллисем пур,— тенӗ килнисенчен пӗри.— Ӗлӗкхине те асӑнӑпӑр, халыхине те манмӑпӑр, ҫӑкӑртӑвара хире-хирӗҫ тӑвӑпӑр...

Темшӗн, Петьӑна ку сӑмахсене калаканни хӗрарӑм пулнӑ пек туйӑннӑ.

— Невушлӗ вара нимӗҫсен вырӑсла калаҫакан хӗрарӑмсем пулма пултараҫҫӗ? Ҫук, йӑнӑшрӑм пулӗ. Тепӗр чух ҫинҫе сасӑпа калаҫакан арҫынсем те пулаҫҫӗ вӗт-ха,— шухӑшланӑ хӑй ҫавӑнтах.

Анчах та вӑл йӑнӑшман. Пӳрте ҫӗмӗрсе кӗнӗ виҫӗ нимӗҫпе пӗрле нимӗҫле тумланнӑ пӗр ҫамрӑках мар хӗрарӑм пулнӑ. Каҫӑртарах сӑмсаллӑ, темле ҫап-ҫаврака мӑн куҫлӑ, тутине хӗп-хӗрлӗ хӗретсе лартнӑ хӗрарӑм. Патя палламан ӑна, анчах Варвара Васильевна хӑй лампа ҫутса ярсанах уйӑрса илнӗ: ку — 1930 ҫулта кулаксене пӗтернӗ чух ссылкӑна янӑ Евстрат Пудов ятлӑ усламҫӑн кӗҫӗн хӗрӗ иккен...

— Ӑҫтан килсе тухма пӗлнӗ вӑл ҫавӑн чухлӗ ҫул иртнӗ хыҫҫӑн? — тӗлӗнсе кайнӑ Варвара Васильевна.—



Ун чух ачисене хӗрхентӗмӗр эпир, анчах халь вӗсем пире хӗрхенсе тӑрас ҫук ӗнтӗ...

...Йӑм-хура автоматсем тытнӑ икӗ нимӗҫ алӑк патне вырнаҫнӑ, тепӗр нимӗҫӗпе ҫав хӗрарӑм сӗтелӗн икӗ пуҫне ларнӑ. Петя ҫатлах лӑпланаймасӑр, пӗрре пӗрисем ҫине, тепре теприсем ҫине пӑха-пӑха илнӗ.

— Мӗн тӑваҫҫӗ-ши ӗнтӗ? Хӗнеҫҫӗ-ши? Персе вӗлереҫҫӗ-ши?

Тутине сӑрланӑ хӗрарӑм пирус чӗртсе янӑ та, пуҫне хӑяккӑнтарах тытса, Варвара Васильевна ҫине хӑрах куҫне хӗсерех пӑхса, сӑмахӗсене шӑл витӗр сӑрхӑнтарса ыйтнӑ:

— Н-но, мӗнле пурӑнкалатӑн, ват кӗсре?

— Чун тухиччен пурӑнас пулать... — хуллен кӑна ответ панӑ Варвара Васильевна, чӑлан ҫумӗнче аллисене хӗреслӗ тытса тӑрса.

— Чунӗ пирки ан кулян, кирлӗ пулсан, эпир ӑна хамӑрах кӑларса ывӑтӑпӑр,— тенӗ хӗрарӑм, пирусне ӗме-ӗме.— Ывӑлусем ӑҫта санӑн?

— Ҫынсен ӑҫта — манӑн та ҫавӑнтах ӗнтӗ,— каллех лӑпкӑн ответ панӑ Варвара Васильевна, хӗрарӑм ҫине пӑхмасӑрах.— Ун ҫинчен мӗн ыйтмалли пур...

— Ҫапах та, тен, каласа парӑн? — тутисене ҫилӗпе пӑркаласа илнӗ лешӗ.

— Вӗсем халь ӑҫтине, чӗрри-виллине хама кам та пулин каласа паринччӗ... Тем пекех тав тӑвӑттӑм эпӗ вӑл ҫынна...

Хӗрлӗ туталлӑ хӗрарӑм сӗтел ҫине чышкипе чант! тутарнӑ та сасартӑк ялт! сиксе тӑнӑ.

— Эсӗ! Йытӑ ами! Эпир кунта санпа юмах ярса ларма килмен! — кӑшкӑрса пӑрахнӑ вӑл.— Кала тӳррипе!

— Эпӗ нихҫан та кукӑр-макӑр калаҫман.

— Ну-ка, начальниксем умӗнче чипертерех тӑрса калаҫ. Кил кунтарах! Каласа пар, ӑҫта сан ывӑлусем! Хӑш тӗлте пытанса пурӑнаҫҫӗ? — шӑртланса ӳкнӗ тӑсланкӑ нимӗҫӗ.

— Каларӑм-ҫке...

— Ним те каламарӑн эс! Суятӑн! Хӑш ывӑлу килте пулнӑ санӑн паян ирхине?

— Ак ҫак кӑна пулнӑ... — Варвара Васильевна вырӑн ҫинче ни вилӗ, ни чӗрӗ ларакан Петя ҫине кӑтартнӑ.— Урӑх никам та пулман...

Хĕрарăм нимĕçпе темскер калаçса илнĕ.

Лешĕ алăк патĕнчи салтаксенчен пĕрине сăмах хушнă. Салтак: «Найн, найн!» — тенĕ те пуçне пăркаланă. Хĕрлĕ туталлă хĕрарăмĕ вара сĕтел хушшинчен тухса, чышкисене чăмăртаса, Варвара Васильевна патне утса пыма пуçланă...

— Чăннипе калатăн-и эс, каламастăн-и, ватă стервă... Ăçта тартрăн ывăлна? Ирхине вăл кунтах пулнă, ак, салтак килсе курнă!

— Курнă пулсан, ма тытман? — кăштах хăюланнă Варвара Васильевна...

— А-а, эс çапла калаçатăн пулать тата?!

Тăсланкă нимĕç куçран тӳррĕн, çав тери кураймасăр пăхса, шăлне çыртса тăракан Варвара Васильевнăна çупса янă.

— Вĕлеретĕп! Кала!

Ответ вырăнне вырăс хĕрарăмĕ пуçне пăркаланă çеç. Вара хĕрлĕ çӳçлĕ тăсланкă фашист пушшех урса кайнă, ăна вăл кăкринчен чышса каллех чăлан çумнелле тăратнă та, кĕсйинчен пистолет кăларса, унăн пичĕ патнех илсе пынă.

— Вилессӳ килмест пулсан — кала, пурнăçу йăлăхтарчĕ пулсан — хăвăн ирĕк! Ак çакăнта — сакăр пуля, сана пĕрре кăна кирлĕ. Ăнлантăн-и мана, ват сысна?

— Ăнлантăм,— тенĕ Варвара Васильевна шăппăн.

— Кала, эппин, часрах мĕн ыйтнине! — кăшкăрса янă тутине хĕретнĕ хĕрарăм.

— Эп... Эп нимĕн те пĕлместĕп... Никама та курман эпĕ... Ĕненместĕр пулсан — ухтарăр, никам та çук ман патра.

Варвара Васильевнăн тутисем чĕтренĕ, сăнĕ шурса кайнă, чĕри сиксе тухас пек тапнă. Нимĕçсемпе çак кулак хĕрĕ ăна хăйне те, Петьăна та ним тытăнса тăмасăрах вĕлерме пултарасса пит лайăх пĕлнĕ вăл, анчах унăн шухăшĕсем çав вăхăтрах урăххи çине куçса кайнă. Вăл Хĕрлĕ Çарти икĕ ывăлне, вĕсем халь çак урнă йытăсене хирĕç çапăçнине аса илнĕ. Ун куçĕ умне ĕнер каçхине аманса юнланса пĕтнĕ йĕкĕт епле килсе кĕни тухса тăнă... Çак самантра ак вăл тĕттĕм те нӳрĕ шăтăкра выртать, çамрăк, хĕрӳ чĕреллĕ, кунти çĕршыва хӳтĕлеме инçетри Атăл çинчен килнĕскер. Епле каласа пама май пултăр вара ун çинчен? Çук, çук, нихçан та, ним тусан та...

Хыткан та тăсланкă салтак икĕ утăм каялла чакса тăнă та ăна пистолетпа тепĕр хут тĕллеме тытăннă. Ерипен, васкамасăр тĕлленĕ вăл. Шăлĕсене çыртса, тутисене йĕрĕнчĕклĕн чалăштарса...

— Юлашки хут ыйтатăп... Ăçта пытартăн ывăлна? Ăçта тартрăн? Камсемпе çыхлантарса ятăн? Ну?

Варвара Васильевна урăх нимĕн те чĕнмен. Вăл пистолет кĕпçи хăйĕн çамки тĕлнелле çĕкленнине, тискер этем сулахай аллипе хăйне пилĕкĕнчен тытса, сулахай куçне хĕссе тĕлленине, сутăнчăк хĕрарăмăн ирсĕр сăнне курнă. Пĕр самантлăха Петьăн хăрушла чарăлса кайнă куçĕ, вăл кăшкăрма хатĕрленсе çăварне карни курăнса кайнă, унтан пĕтĕмпех хупланнă.

Пӳртре пăшал сасси кĕрĕслетнĕ...

Варвара Васильевна урайне ӳкнĕ. Урăх вăл нимĕн те туйман, нимĕн те илтмен, нимĕн те курман.

Майĕпе тăна кĕрсе, ерипен куçне уçнă чух чӳречесем витĕр кăвак çутă çапнă пулнă ĕнтĕ. Вăл урай варринче, йăпăлкка çăра юн çинче выртнă. Пуç вĕçĕнче вăйсăрланса çитнĕ Петя макăрса ларнă...

Леш нимĕç ăна тивертмелле пемен иккен, ăна епле пулсан та парăнтарас тесе, хăратмалла çеç персе янă. Анчах та Варвара Васильевна тăнсăр пулса ӳкнине, паян вăл текех калаçма пултарас çуккине курсан, тарăхнипе урса çитнĕскер, ăна калама çук тискеррĕн хĕнесе тăкнă. Пистолет аврипе çапа-çапа ун пуçне шăтарнă, таканлă аттипе тапа-тапа питне-куçне çĕмĕрсе пĕтернĕ. Çаксене курса, Петя амăшĕ хутне кĕме пиккеннĕ, анчах тепĕр нимĕçĕ ăна тытса кĕтеселле çавăрса çапнă та, вара вăл та тем вăхăтченех пĕлми пулса выртнă...

Петя пулăшнипе, тăна кĕнĕ Варвара Васильевна аран-аран вырăн çине хăпаркаланă. Вăл халь йынăшмасăр алли-урине те хускатайман. Ăна пĕçертсе пăрахнă, вăл кăштах тĕлĕрсе кайнă пек пулнă хыççăн куçне уçсан, ывăлĕнчен пĕрмай шыв ыйтнă. Çапах та, хăй çав тери асапланса аран сывласа выртнă пулин те, каçалла сулăнсан Петьăна хăй çывăхнерех чĕнсе илсе, ăна хуллен кăна:

— Лере кайса килетĕн пуль, ывăлăм,— тенĕ.

Петя тăруках ăнланайман.

— Ăçта, анне?

— Блиндажа, ара, салтак патне... Епле вăл унта... чĕрĕ-и, сывă-и? Килсе пăрахрĕç те мансах кайрĕç, тейĕ

тата... Хамăр çын вĕт, темле пулсан та пулăшас пулать... Чăланта, сунтăх ăшĕнче, икĕ пашалу пурччĕ, пĕрине леçсе пар. Хамăр патра мĕн пулшине ан пĕлтер— чирлĕ çынна пăлхантарни сиенлĕ вăл... Кун çинчен пĕлсен, тухса кайма шут тытĕ тата... Кала: май килсенех шанчăклă вырăна ăсатăпăр... Шансах тăтăр...

— Юрĕ, анне,— тенĕ те Петя, тумланма тытăннă. Варвара Васильевна малалла хăй тĕллĕн калаçнă пек каласса выртнă.

— Пире вĕсем хĕненипе парăнтарма пулать, теççĕ пуль... Айвансем! Хăйсене хирĕç тата вăйлăрах кĕрешме вĕрентеççĕ кăна вĕт!

Ывăлĕ тухса кайсан та, çавăн çинченех шухăшласа выртнă.

— Кăкăртан юлашки сывлăш тухиччен те парăнассăм çук, ураран ура иртми пуличчен те таврăма пăрахассăм çук халь эп вĕсене!..

* * *

...Ку хăрушă повеçĕн юлашки пайне Варвара Васильевна пире хăй каласа пачĕ. Чун çӳçенчĕ, çурăм çине сив тар тухрĕ ăна итлесе ларнă чухне.

— Темиçе талăк выртрăм эпĕ вырăн çинчен тăраймасăр,— терĕ вăл,— вуçех те сывалаймастăп пулĕ тесеттĕм. Кашни ӳсĕрмессеренех пыртан юн чăмăрккисем тухса ӳкетчĕç. Ӳпкене хускатнă пулмалла вĕсем манăнне... Анчах çав хушăрах ак ку пĕрре те асран тухмарĕ... (Вăл пуçĕпе Палюков еннелле сулчĕ). Ман Петя кашни каçах кайса тăчĕ ун патне, çимеллисем леçрĕ. Кӳршĕсенчен ман валли тесе сĕт тупкаласа килетчĕ те ăна та кайса паратчĕ... Çапах та, пĕрмаях кун пек пулса пыма пултарайман-çке-ха. Çанталăк ытларах сивĕтме пуçларĕ. Вара эпĕ Петьăна çапла хушрăм: Лукинкăри аппусем патне кай та тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пар, вĕсем ăна — Мишăна ĕнтĕ — хăйсем патне илсе ăшăрах çĕре пытарччăр, терĕм. Ачи ман, итлекенскер, сăмахсăрах килĕшсе тухса кайрĕ. Анчах кайрĕ те — çухалчĕ. Икĕ талăк кĕтрĕм эп ăна. Тем тĕрлĕ те шухăшласа пăхрăм, чĕре çурăлсах тухатчĕ. Хăвăрах ăнланмалла... Юлашкинчен çапах та таврăнчĕ те савăнтарсах ячĕ: Мишăна илсе кайрăмăр, терĕ, аппасем ăна шанчăклă

çынсем патне ăсатма пулчĕç, терĕ. Кайран, чылай вăхăт иртсен тин пĕлтĕм: ăна вĕсем партизансемпе явăçтарса янă иккен...

— Тавах вĕсене уншăн,— пуçĕпе сулса илчĕ Палюков,— питĕ лайăх пулчĕ вăл. Каллех алла пăшал тытса çапăçма май килчĕ...

— Ăна пĕтĕмпех Петя турĕ ĕнтĕ, унсăр нимĕн те тăваймастăмччĕ...— Варвара Васильевна темшĕн хаштах сывласа ячĕ.— Питĕ маттур ачаччĕ вĕт...

— Чим-ха, ма ун пек калатăр?.. Халь çук-им вара вăл? — хăраса ыйтрĕ Палюков.

Варвара Васильевнăн куçĕ тăруках шывланса кайрĕ, унтан пĕркеленнĕ питçăмарти тăрăх шултра куççулĕсем шăпăртатса юхса анчĕç.

— Çук çав ман Петя... Чунне илчĕç унăнне шуйттан йăхĕсем! — терĕ вăл.— Пĕтерчĕç ачана!

— Епле пулчĕ вăл? Каласа пар, тархасшăн,— ыйтрĕ Палюков, çав тери пăлханса кайса.— Петя маншăн тăван шăллăмран та хаклăрах пулнă вĕт, вăл ман пурнăçа çăлнă! Неушлĕ ниепле те упраса хăварма пулмарĕ?..

Варвара Васильевна пĕр вăхăт шарламасăр ларчĕ. Ытла та йывăр пулчĕ ĕнтĕ ăна иртнĕ асаплă кунсене тата хăйĕн юратнă ачине çухатнине аса илме. Хăй вăйлă чĕреллĕ, хуçăлми çирĕп кăмăллă çын пулнипе кăна тепĕр хут макăрса ямарĕ пулас вăл. Кăмăлне хытарчĕ те — лăпкă, тикĕс сасăпа каласа пама пуçларĕ...

— Малтанах эпир Петьăпа иксĕмĕр таçта тĕпсакайĕнче пурăннă пекех пурăнтăмăр... Ниçта тухса çӳремен, никампа хутшăнман. Хамăр пата та никам та килместчĕ. Ун чух ялти çынсем, нимĕçсен куçĕ тĕлне пулас мар тесе, шыв патне кайма та хăратчĕç. Эпĕ тата хама хĕнесе тăкнă хыççăн сывалса та çитейменччĕ-ха, аран çӳрекелеттĕм. Пĕтĕм ĕçсене Петя туса пыратчĕ: вут тататчĕ, шыв кӳретчĕ... Нихçан лампа çутса курман эпир, тĕттĕмленме пуçласанах алăксене питĕрсе кăмака çине хăпараттăмăр та выртаттăмăр шăппăн калаçса. Кашнинчех аслă ывăлсене аса илеттĕмĕр: ăçта-ши халь вĕсем, чĕрĕ-ши, сывă-ши, хăçан киле çаврăнса килĕç-ши? Ютран килнĕ хурахсене хăçан хăваласа ярĕç-ши? Хăçан пире ирĕке кăларĕç-ши?.. Ку Мишăна та час-часах асăнаттăмăр... (Варвара Васильевна Палюков çине çав тери кăмăллăн пăхса илчĕ.) Пăшăрханаттăмăр ун пир-

ки: епле-ши, ҫăлăнайрĕ-ши, суранĕсем тӳрленчĕҫ-ши? — теттĕмĕр.

— Анчах эпĕ ун чухне фашистсене кисретнĕ ĕнтĕ... — йăл кулса илчĕ Палюков.

— Ун ҫинчен эпир кайран тин пĕлнĕ-ҫке... Хамăр пата ҫитекен хыпарсем пĕринчен тепри хăрушăрахчĕ. Вĕсене Петя, йăпăрт шыв ăсма тухсан, ăнсăртран хăйĕн юлташĕсене тĕл пулсан, пĕлсе килетчĕ. Мĕн кăна хăтланмастчĕҫ пуль вăл ҫынҫиенсем, мĕн тĕрлĕ ашкăнмасчĕҫ пуль!.. Ну, эсир ăна хăвăрах аван пĕлетĕр, сахал мар куртăр пулĕ икĕ ҫул хушшинче. Анчах пĕр япалана ниепле те манса каяймастăп эпĕ...— Варвара Васильевна татах йывăррăн сывласа илчĕ.— Пĕр агроном ҫемйи пурăнатчĕ пирĕн ялта. Хăй вăл коммунист пулнă. Такам усалĕ тăшмансене ҫав агроном партизанра ҫӳрет тесе каласа панă. Вара кусем унăн арăмне комендатурăна сĕтĕрсе кайса кунĕн-ҫĕрĕн допрос тума тапратнă. Ну, вĕсем допроссене епле мeслетсемпе тунине пурте пĕлеҫҫĕ ĕнтĕ... Асаплантара-асаплантара ҫын йĕркинчен кăларсан, лешĕ калаҫайми-утайми пулса ҫитсен, кăларса янă. Анчах темиҫе кунтанах, ҫĕрле, ун патне ҫич-сакăр ӳсĕр фашист каллех пырса кĕнĕ те ăна хăйне те, ачисене те ҫĕрĕпех ҫухăртнă. Ирхине кӳршĕсем кусен алăкĕ ярах уҫҫине асăрхаса шала кĕрсе пăхнă та, вĕсем мĕн туса хăварнине курнă вара... Агроном арăмĕн икĕ кăкрине те касса илнĕ вĕсем, ачисен хырăмĕсене унтан та кунтан ҫĕҫĕсемпе чиксе пĕтернĕ пулнă. Сăпкари ачине те пулин вĕлерсе хăварнă вĕт, чуниллисем!..

— Ҫакна пĕлнĕ хыҫҫăн эпĕ темиҫе каҫ ҫывăраймарăм, ăнран тухса кайнă ҫын пек пурăнтăм,— терĕ малалла Варвара Васильевна.— Пĕр енчен, агрономăн ҫемйине хĕрхеннипе, тепĕр енчен — хамăра та ҫавăн пек туса каясран хăраса... Халăх хушшинче сăмах ҫӳреме пуҫларĕ: леш Пудов кулакăн хĕрĕ нимĕҫсене колхозра, Советра активлă пулнă ҫынсен спискисене туса панă, тет те, ҫитес темиҫе кун хушшинче вĕсен ҫемйисене пурне те вĕлерсе пĕтермелле, тет... Паллах, ун пек сăмаха илтсен эпĕ лăпкăн пурăнма пултарайман, кашни кунах кĕтеттĕм хамăн пуҫ ҫине тепĕр хут инкек йăтăнса анасса... Пĕр ҫил-тăманлă каҫхине вара, ҫур ҫĕр иртсен, чĕре те тапма чарăнчĕ: ак ҫак картиш енчи чӳречерен такам тăкăр-тăкăр! тутарчĕ.

«Килчӗç хайхискерсем, тинех пӗтрӗмӗр»,— терӗм...

Шакканине лайӑхах илтнӗ пулин те, сас памарӑм. Кӑшт тӑхтасан, кантӑка каллех хуллен кӑна тӑкӑртаттарчӗç. Тӗлӗнтӗм: мӗншӗн-ха кун пек кӑна шаккаççӗ? Нимӗçсем пулсан, вӑтанса тӑрас çук-çке, тӳрех çӗмӗрме тытӑнмалла. Е пӑштӑн кӗрсе пусса тухса каясшӑнши кусем пире?.. Татах чӗнмерӗм. Виççӗмӗш хут шаккасан тин кӑмака çинчен анса чӳрече патне пытӑм та кантӑк витӗр пӑхрӑм. Тулта çӑмлӑ çӗлӗк тӑхӑннӑ çын пуçӗ вӗлтлетни курӑнчӗ.

— Кам эсӗ? — тесе ыйтрӑм хуллен.

— Варвари инке, кӗрт-ха, ют çын мар ку, эпӗ,— терӗ вӑл. Сассине уйӑрса илеймерӗм пулин те, хама ятпа чӗннине пула, уçса кӗртрӗм. «Ют çын пулсан та, нимӗçех мар-ха ку», терӗм ӗнтӗ.

— Эпӗ ку, Сашка,— терӗ хайхискер, пӳрте кӗрсе тӑрсан.

Тӗлӗнсе хытсах кайрӑм. Ку — ман упӑшка пиччӗшӗн ывӑлӗ пулнӑ-мӗн. Вӑрçӑччен вӑл хамӑр станцири депора маçтӑр пулса ӗçлетчӗ, вӑрçӑ пуçлансан та ӑна çавӑн пиркиех салтака илменччӗ. Халь вӑл ман пата пӗлӗт çинчен ӳкнӗ пекех килсе кӗчӗ.

— Эсӗ ӑçтан йӑтӑнса антӑн? Епле майпа? — тӗпчеме тытӑнтӑм çакӑнтан.

— Ыйтиччен малтан эс ӑшӑт-ха мана,— терӗ вӑл,— патрульсем иртсе кайиччен карта çумӗнче пӗр сехет выртрӑм пулӗ, малтан хытӑ килсе тарланӑскер, шӑнсах кайрӑм,— терӗ.

Чӑнах та, вӑл сиксех чӗтрет иккен. Эпӗ ӑна часрах кӑмака çине хӑпарма хушрӑм. Унтан, хам та унпа юнашар хӑпарса ларсан, вӑл хӑйӗн пӗтӗм историне каласа пачӗ. Хамӑрӑн çарсем станцирен хӗвелтухӑçнелле чаксанах, депори рабочисем, пуринчен ытла çамрӑккисем, партизана кайнӑ. Малтан отряд пысӑк пулман, анчах икӗ уйӑх хушшинче питӗ йышланнӑ. Кулленех çӗнӗрен çӗнӗ çынсем пынӑ вӗсем патне: рабочисем, служащисем, колхозниксем — арçынӗсем те, хӗрарӑмӗсем те, ваттисем те, çамрӑккисем те — тӗрлӗренех. Кам фашистсен «ырлӑхне» лайӑхрах тутанса пӑхнӑ — пурте партизансем патнелле туртӑннӑ.

— Тӗрӗс çав,— сӑмах хушрӗ кунта Палюков,— отряд тӗлӗнмелле хӑвӑрт ӳссе пынӑ ун чух...

— Эсӗ те ҫав отрядра пулнӑ-и вара? — тӗлӗнсе ыйтрӑм эпӗ.

— Чим-ха, чим,— терӗ Варвара Васильевна,— ун ҫинчен те калӑп. Саша хӑйсем епле пурӑнни ҫинчен, мӗн-мӗн тунисем ҫинчен каласа пӗтерсен, манран сасартӑк: пӗр-ик уйӑх каялла эсӗ пӗр аманнӑ ҫамрӑк салтака, чӑваш ачине пытарса усранӑ-и? тесе ыйтрӗ.

— Ма вара? — терӗм эпӗ.

— Эсӗ кала... Пулнӑ-и ун пек ӗҫ? — ҫаплах ыйтрӗ Саша.

— Ну, пулнӑ... Эсӗ ӑна ӑҫтан пӗлетӗн?

— Салам калама хушрӗ вӑл сана.

Унччен, Саша килсе кӗнӗ пирки тӗлӗннинчен те ытларах тӗлӗнсе кайрӑм куна илтсен.

— Ӑҫта тӗл пултӑн эс ӑна?

— Пӗрмаях пирӗн отрядра пулчӗ вӑл, питӗ маттур партизанччӗ, анчах пӗр задание кайсан каллех аманчӗ те, ӑна эпир самолетпа «Пысӑк Ҫӗр» ҫине ӑсатрӑмӑр,— терӗ Саша.— Сана пӗрмай асӑнатчӗ, пуҫӗ сывӑ пулсан, хӑҫан та пулин килсе тав тӑватӑпах, тетчӗ.

— Тӗрӗс, каланӑччӗ эп ӑна...— пуҫӗпе сулса илчӗ Палюков, хӗрарӑм ҫине кӑмӑллӑн пӑхса.

— Ку вара мана калама та ҫук савӑнтарса ячӗ,— терӗ те Варвара Васильевна, унӑн сӑнӗ те ҫутӑлса кайрӗ пӗр вӑхӑтлӑха.

— Сашшӑн хӑй нумай вӑхӑт пулчӗ-и сирӗн патра?

— Ҫук, ир енне тухса кайрӗ. Вӑл ман пата ӗҫпе килнӗ пулнӑ... Партизансен кӗпи-йӗмӗсем хуралса ҫитнӗ, анчах вӑрманта ҫума май килмен. Вара вӗсем тавраri ялсенчи ман йышши хӗрарӑмсемпе каласа татӑлма шут тытнӑ. Паллах, эпӗ пӗр сӑмахсӑрах килӗшрӗм. Кайрантарахпа ҫӑкӑр та пӗҫерттерме пуҫларӗҫ. Пӗр-пӗр тӗттӗм каҫ ҫӑнӑх килсе параҫҫӗ те пӗр-икӗ кунран килсе ҫӑкрине илсе каяҫҫӗ. Ӗҫӗ пысӑках мар ӗнтӗ ку, ҫапах та хама пысӑк ӗҫ тунӑ пекех туйӑнатчӗ. «Тӑшмана аркатма эпӗ те пулӑшатӑп»,—теттӗм. Пуринчен ытла, партизансем унта капла тунӑ, кунта капла тунӑ тенине илтсен пит савӑнаттӑм вара...

Ҫапла чылай вӑхӑт иртрӗ. Пӗринче Саша тепӗр партизанпа пӗрле ҫӑкӑр илме килчӗ те темшӗн ман сывлӑх ҫинчен, вӑй-хал ҫинчен ыйтма пуҫларӗ. Аптрамасӑп-ха, терӗм. Вара вӑл мана хулари вӑрттӑн ӗҫлекен коммунистсене тӗрлӗ «хаклӑ йышши ҫимӗҫ» леҫсе тӑма

сӗнчӗ. Ҫаплах каларӗ: «Фашистсене тӑрантармалли хаклӑ йышши ҫимӗҫ»,— терӗ. Эпӗ вӑл мӗн ҫинчен каланине малтанах ӑнланса та илеймерӗм.

— Таварне ҫунашкапа туртса каймалла пулать,— терӗ Саша.— Халь ҫулсем тӑрӑх ҫунашка туртса ҫӳрекенсем нумай. Кӑштах ҫӑнӑх, кӑштах ҫӗрулми, сухан хураҫҫӗ те унта та кунта тӑварпа, краҫҫынпа, йӗп-ҫиппе улӑштарма каяҫҫӗ. Санӑн та ҫавӑн пекех ҫӳремелле пулать. Анчах сан ҫӑнӑху ӑшӗнче тимӗртен тунӑ «хуплусем» пулаҫҫӗ. Еҫӗ ытла канлех мар ӗнтӗ, анчах, асӑрханарах ӗҫлесен, хӑрамаллиех ҫук. Тумланасса чухӑнтарах тумланӑн...

Эпӗ килӗшрӗм. Саша мана ӗҫне мӗнле тумаллине, ӑҫта ҫитсен мӗн каламаллисене питӗ тӗплӗн ӑнлантарса пачӗ, Ик кунтан вара эпӗ ҫунашка туртса хулана кайрӑм. Ҫул ҫинче «мешочниксем» чӑнах та нумай иккен. Кӑшт кайсанах пӗр старикпе пӗрлешрӗм те унпа пӗрле хулана чиперех ҫитрӗм.

Каҫ пулнӑччӗ. Унта та кунта мӑшӑрӑн-мӑшӑрӑн нимӗҫ салтакӗсем ҫӳретчӗҫ. Тӳрех вӗсен куҫӗ тӗлне пулас мар тесе, эпӗ, хӳмесем ҫумӗперех йӑпшӑна-йӑпшӑна кайса, тепӗр ҫур сехетрен Саша каласа янӑ ҫурта шыраса тупрӑм. Вӑл хушнӑ пекех, сулахай енчи чӳречерен туя вӗҫӗпе тӑватӑ хутчен шаккаса илтӗм. Кӗҫех мана хирӗҫ урама пӗр ватӑ хӗрарӑм тухрӗ.

— Мӗн кирлӗ сана?

— Тӑлӑх карчӑка ҫӗр выртма ямӑр-ши? — терӗм эп ӑна.

Вара вӑл мана килхушшине илсе кӗртрӗ те пуҫӗпе ман ҫунашка еннелле сулса: «Мӗнле тавар илсе килтӗн?» — тесе ыйтрӗ.

— Алламан ҫӑнӑх,— терӗм.

Текех вӑл манран ыйтса тӑмарӗ, мӗншӗн тесен Саша хушнисене эпӗ йӗркипех каласа пытӑм. (Кайран вӑл сӑмахсене манӑн темиҫе хут та каламалла пулчӗ, хулана кашни пымассеренех ҫавнашкал «алламан ҫӑнӑх илсе килтӗм», теттӗм. Ку сӑмах — партизансемпе хулари коммунистсен вӑрттӑн сӑмахӗ пулнӑ.)

— Ҫапах та, мӗн турттарнӑ вара эсир унта, Варвара Васильевна? — тесе ыйтрӑм эпӗ, унӑн ӗҫӗ ҫинчен тӗплӗнрех пӗлес килнипе.

Вӑл ҫемҫен кӑна кулса илчӗ.

— Каларӑм вӗт: «тимӗр хуплусем»... минӑсем. Ни-

мĕçсен машинисем сахал мар сывлăшалла сикнĕ вăл «хуплусене» пула. Саша каласа паратчĕ мана кайран. Саван, Варвара инке, хуларисем ĕнер фашистсене каллех сан кучченеçĕсемпе чыхăнтарнă, тетчĕ... Хулана эпĕ пурĕ сакăр хут кайса килтĕм. Ĕç аванах пыратчĕ. Анчах çур енне, партизансем питĕ йышланса нимĕçсене пур çĕрте те сиен тума тапратсан, вĕсем çул çинчи кашни çыннах тыта-тыта тĕрĕслеме пуçларĕç. Çавăн чух тытрĕç те вара мана вĕсем... Хулана çитесси нумай та юлманччĕ. Аякранах куртăм: кĕпер патĕнче иккĕн тăраççĕ... Тем ырă мар пуласса сисрĕ пулас ман чĕре, темле хăвăрт-хăвăрт тапма тытăнчĕ. Кĕпер патнерех çитсен, уççăнах уйăрса илтĕм: иккĕшĕ те — нимĕç, кĕске пăшалĕсене мăйĕсенчен çакса янă. Çапах та хама хам лăплантарма тăтăнтăм: «Ан хăра, нимĕн те пулмасть», тетĕп.

— Погодить, стоять! — терĕ пĕр салтакĕ, эпĕ вĕсемпе танлашсан.— Показайт аусвайс... паспорт!

Эпĕ тӳрех хĕврен нимĕçсем хăйсем панă выльăх паспортне кăларса патăм.

— Номьер! Бистра!

Сăхман çухавине вĕçертсе мăй çинче çакăнса тăракан хăма таткине кăтартрăм.

— Асмонь... — тесе вуларĕ пĕр нимĕçĕ хăма çинчи ял ятне. Тепри паспорт çине пăхса илчĕ те, пуçĕпе сулса:

— Я, я,— терĕ. Ку ĕнтĕ «çапла, çапла», тенине пĕлтерчĕ. Ну, хăтăлтăм, хăрушлăх иртсе кайрĕ, терĕм хам ăшăмра, анчах та савăнма ытлашши васканă-мĕн эпĕ. Пĕр нимĕçĕ çунашка патне пырса миххе урипе тапрĕ.

— Что везьет? Зачем?

— Çăнăх илсе каятăп, ăçта та пулин тăварпа улăштарас, тетĕп...

Нимĕç йăпăр-япăр алсишне шăлĕпе çыртса хывре те миххе çара аллăн хыпашлама тапратрĕ. Вăл михĕре темле хытă япала пуррине сисрĕ пулмалла: юлташне темскер каларĕ, çавăнтах михĕ çыххине çĕçĕпе татрĕ, вара шинель çаннине çĕклесе, аллине çăнăх ăшне чиксе ячĕ. Манăн куç хуралса килчĕ, ура çинче аран тытăнса тăтăм... Нимĕç михĕрен мина туртса кăларчĕ... Иккĕшĕ те пĕр харăс кăшкăрса ячĕç... Пĕри мана автомачĕпе тĕллерĕ, çав самантрах тепри чукмар пек сулăмлă чышкипе пуçран çапса ӳкерчĕ.

— Зобак! Партизан! Смерть! — тенине çеç илтрĕм эпĕ.

...Унтан вĕсем мана васкасах хулана илсе кайрĕç. Эпĕ темле çăра тĕтре ăшĕнче пынă пек утса пытăм. Вăхăтран вăхăта хама çурăмран пăшал кĕпçисемпе чышнисене тата чĕре сиксе тухас пек тапнине çеç туйрăм. Маншăн халь пурпĕр пулнă ĕнтĕ: хĕнеççĕ-и, вĕлереççĕ-и... Каçару пулас çук, мана вĕсем минăсемпех тытрĕç, ăна хирĕç нимĕн те тупса калама май çук. Пуçра пĕр шухăш кăна вĕресе тăчĕ: епле пулсан та парăнас марччĕ, вĕçне çитиччен çирĕп пуласчĕ, пĕр сăмах та калас марччĕ тăшмансене, ним те пĕлтерес марччĕ вĕсене... Вăй çиттĕрех, чĕре çирĕп пултăрах!

...Малтанах вĕсем мана тĕттĕм те сивĕ подвала чышса кĕртсе ячĕç. Эпĕ, ыванса çитнĕскер, кăшт та пулин ларса канас шутпа, сак тавраш çук-ши тесе, хыпашлама пикентĕм. Анчах малалла пĕр-икĕ утăм ярса пуссанах темле çемçе япаларан такăнтăм. Мĕн ку? Кукленсе хыпаласа пăхрăм та, манăн пĕтĕм шăмшак сăрлатса илчĕ. Урайĕнче, тĕттĕм çĕрте, этем кĕлетки выртать иккен. «Кам кунта? Кам эс?» — тесе темиçе хутчен те ыйтрăм. Чылай хушă сывламасăр тăтăм. Ответ пулма мар, çав çын сывлани те илтĕнмерĕ. Вăл вилĕ иккен!.. Эпĕ часах тепĕр еннелле сиксе ӳкрĕм, анчах каллех тепĕр вилĕ çине пырса тăрăнтăм. Каялла чакма тăрсан татах такăнăн алли е ури çине пусрăм... Подвал тулли вилĕ выртать-мĕн. Мана вилĕсем патне килсе чикнĕ... Аран-аран стена патне çитсе тайăнтăм та куçа хупрăм.

— Чĕрĕллех пытарчĕç пулать... Ку чул шăтăкран тек тухас çук ĕнтĕ эпĕ... Хĕвел çутине курас çук,— терĕм. Аш пăтранма пуçларĕ манăн, пуç кашлама тапратрĕ... Тем вăхăт тăнă эп çавăн пек — пĕлместĕп, те тăна çухатнă, те пăртаках тĕлĕрсе кайнă. Сасартăк куçран вăйлă çутă пырса çапрĕ. Картах сиксе куça уçрăм та хама электричество хунарĕпе çутатнине куртăм. «Тух!» — терĕ хулăн сасă. Тахăшĕ аларан тытса туртрĕ, унтан ĕнсерен чышрĕ. Эпĕ ним туймасăр, ним çинчен те шухăшлама пултараймасăр утрăм...

Таçтан-таçтан, темле кукăр-макăр пусмасем, тĕттĕм коридорсем тăрăх çавăтса çӳресе, мана пĕр пысăках мар пӳлĕме илсе пычĕç. Пӳлĕмĕнче çап-çутă электричество çунать; тĕттĕмрен пынăскер, эпĕ пĕр вăхăт пăхма

та пултараймарӑм. Куç кӑштах хӑнӑхсан тин куртӑм: симĕс пуставпа витнĕ мӑн сĕтел хушшинче икĕ «тимĕр хĕреслĕ», сарӑ уссисене çӳлелле пĕтĕрсе хӑпартнӑ самӑр нимĕç офицерĕ ларать, сĕтел пуçĕнче хайхи хамӑр ялти Пудов кулак хĕрĕ, мана иртнĕ кĕркунне хам килтех ним пĕлми пуличчен хĕнесе хӑварни, вырнаçнӑ. Иккĕшĕ те ман çине шуйттан çине пӑхнӑ пек пӑхаççĕ.

Салтак мана çурӑмран тĕксе сĕтел умнех илсе пычĕ. Эпĕ чул пек хытса тӑтӑм.

— А-а! Хамӑр ял!..— терĕ те Парашка (Пудов хĕрĕ çапла ятлӑччĕ вӑл), пĕветнĕ тутисене чалӑштарса кулса илчĕ.— Каллех тĕл пултӑмӑр эппин? Э?

Эпĕ ним те чĕнмерĕм.

— Ну, хальхинче тĕпĕ-йĕрĕпех каласа паратӑн пуль тетĕп, мĕншĕн тесен тунма та, кутӑн чакма та май çук. Сана минӑсемпех тытнӑ ав...

Хӑй вӑл манран та ытларах пӑлханчĕ пулас. Сӑмахне каласа пĕтерне-пĕтерменех çӑварне пирус хыпса чĕртсе ячĕ.

— Ну, пуçла... Ним пӑркаланмасӑр, йĕркипе кала!

Эп малтанхи пекех ним чĕнмесĕр тӑтӑм. Пĕр минут иртрĕ, иккĕ иртрĕ. Вĕсем ман çине пӑхрĕç, эп — вĕсем çине. Пĕрне-пĕри çисе ярас пекех ĕнтĕ. Унтан Парашкӑпа нимĕç пĕр-пĕрин çине пӑхса илчĕç. Нимĕç пуçĕпе сулчĕ. Вара Парашка сасартӑк пирусне сĕтел çине пусса сӳнтерчĕ те аяккарахра тӑракан пукана илсе мана лартса пачĕ.

— Лар! Чипер, йĕркеллĕн калаçар-ха,— терĕ.

Ывӑнса çитнĕскер, эп тиркесех тӑмарӑм, лартӑм. «Хӑтланӑрах, хуть те мĕнле чееленĕр, çапах нимĕн те пĕлес çук эсир манран...» — терĕм хам ӑшӑмра.

Парашка каллех пĕр минут пек мана куçран тӳррĕн пӑхса ларчĕ, ман чĕрере мĕн пуррине курма тӑрӑшнӑ пекех пӑхрĕ, унтан кулса иленçи турĕ те темиçе хутчен пуçне пӑркаласа илчĕ.

— Тĕлĕнетĕп эпĕ санран...— терĕ вӑл.— Мĕн хӑтланатӑн эсĕ, мĕн ухмахланатӑн? Камсем хыççӑн каятӑн?.. Неушлĕ вара эс халĕ те нимĕçсене çĕнтерме май пур тетĕн? Ӑнлан, вӑл нихçан та пулас çук, аслӑ Германи çарне кунтан халь тин никам та каялла хӑваласа яраймасть! Çавӑнпа та вĕсене хирĕç тӑни — пĕр усӑсӑр япала, харпӑр хӑйĕн пурнӑçне пĕтерни çеç пулса тухать. Ак, эсĕ лекрĕн ĕнтĕ, темле хӑтӑлас тесен те, хӑтӑлма

пултарас çук, сана хăвăн тусусем те çăлас çук... Анчах та санăн ывăлу пур-çке, санăн ăна пăхса ӳстерес пулать. Ывăлушăн тăрăшас вырăнне эс ăна тăлăха хăваратăн халь...

Парашка самантлăха калаçма чарăнчĕ, хулпуççи урлă нимĕç çине пăхса илчĕ. Лешĕ малтанхи пекех, чул евĕр хытса, нимĕн те чĕнмерĕ, пуçĕпе хуллен сулчĕ çеç. «Анлантар малалла»,— терĕ пулас.

«Лăпăртататăрах, мана ухмах вырăнне хуратăр пулсан»,— терĕм хам ăшăмра.

— Ну, мĕн тума шутлатăн ĕнтĕ?—ыйтрĕ Парашка.

— Эп шутланинчен мĕн усси? — терĕм эпĕ.— Пурпĕрех вĕлеретĕр вĕт.

Вăл йĕрĕнчĕклĕн кулса ячĕ.

— Пурнăçна çăлас килмест-и вара санăн?

— Сиртен çăлăнăç кĕтместĕп эпĕ...

Каласа пĕтерме памарĕ вăл мана:

— Каçарма та пултаратпăр эпир,— терĕ.— Хăвна çăлассине те, ачуна çăлассине те хăвăнтан килет.

«Ачуна» тесен, чĕре пушшех йĕпленсе ыратса кайрĕ манăн: «Неушлĕ Петьăна та мĕн те пулин тума шутлаççĕ ку урнă кашкăрсем?»

— Ăна валли санăн çаксене çеç каласа памалла,— терĕ Парашка малалла, питне ман патарах илсе пырса.— Кам парса ячĕ сана çав минăсене? Камсем валли илсе килеттĕн вĕсене хулана? Урăх эпир санран нимĕн те ыйтмастпăр. Çавсене каласанах кăларса яратпăр.

Вăл, пукан хыçĕ çине таянса, тутине çыртса лартрĕ. Хытă пăлханчĕ курăнать. Эпĕ çав ыйтусене хирĕç тĕрĕссипе каласа парсанах, вĕсен пысăк çĕнтерӳ пулмалла-çке!

Анчах эпĕ нимĕн те каламарăм, мĕншĕн тесен эпĕ кайран мĕн пулассине пит аван чухланă: эпĕ хама çеç мар, хамăн чи çывăх та чи хаклă тусăмсене те пĕтернĕ пулăттăм.

Манăн Парашкăна темĕн тĕрлĕ хаяр та усал сăмахсем каласа тăкас кăмăл çĕкленме пуçларĕ. Нимĕç суччи, сутăнчăк, çĕлен-калта... Кама çавăрма хăтланатăн эсĕ тăшман енне, йытă пуçĕ?

— Илтрĕн-и эсĕ ман сăмахсене? — сассине тăруках хытарчĕ хайхискер, эп нимĕн те чĕнменнине пула.

— Илтрĕм,— терĕм эпĕ.

— Ма нимĕн те каламастăн эппин? Ытларах шар-

ламасăр ларсан, хăвна çăмăлтарах пулĕ, тетĕн-и? Асту, пачах урăхла пулса тухма пултарать!

Сисрĕм: ку юхха каллех тарăхма пуçларĕ...

— Ну, калатăн-и, каламастăн-и? — сасартăк кăшкăрса ячĕ вăл.— Пурăнас килет-и санăн е халех йытă вилли пулса выртас килет?

Эпĕ ĕнтĕ: «Халь пуçланать... Халь пуçланать...» — тесе лартăм.

Йăнăшмарăм иккен. Парашка сиксе тăрса ман паталла чупса пычĕ те пĕрех айăкран тапрĕ. Эпĕ ӳкрĕм. Çав самантрах икĕ нимĕç салтакĕ мана тăрăхла сак çине тăсса хучĕç те тимĕр хулăсемпе хĕнеме тапратрĕç. Пĕр вунă-вуникĕ хут çапсанах, эпĕ ăнран кая пуçларăм. Хăлхара тимĕр хулăсем шăхăрни тата Парашкăн ирсĕр сасси кăна янраса тăрать.

— Калатăн-и, каламастăн-и? Кам ячĕ? Кам патне илсе килтĕн?..

Унтан сасартăк мана тăратса лартса, питрен сивĕ шыв па сапрĕç.

— Туятăн-и эпир мĕн тума пултарнине? — хăлха патне пырсах кăшкăрчĕ Парашка.— Асту, ку пуçламăш анчах-ха, малашне эпир сан чунна йыт чӳпĕкĕ туса тăкăпăр! Ну, кала хăвăнтан мĕн ыйтнине! Кала, ват йытă!

Эпĕ çаплах нимĕн те чĕнмерĕм.

Мана вăл темле йывăр япалапа пуçран çапрĕ. Урăх нимĕн те астумастăп. Тăна кĕрсен, хама каллех леш вилесем тултарнă подвала пырса чикнине тавçăрса илтĕм. Мĕн чухлĕ выртнă эпĕ унта — пĕлместĕп... Те пĕр талăк, те иккĕ, те виççĕ... Подвала ниçтан та çутă кĕмен пирки халь кăнтăрла е каç пулнине те чухласа илме май килмерĕ. Тăрса ларас тесеттĕм, анчах пĕр вăй та юлманнипе тата пĕтĕм шăмшак тӳсмелле мар ыратнипе вырăнтан та хускалаймарăм.

— Вилетĕп пулмалла ĕнтĕ...— тесе шухăшларăм та çавăнтах Петьăна аса илтĕм...— Вăл мĕнле-ши? Кам та пулин хĕрхенсе, хăй патне илĕ-ши ăна? Пĕр татăк çăкăр парĕ-ши?

Питĕ йывăр, тӳсмелле мар йывăр пулса кайрĕ мана. Ку таранччен чăтнăччĕ эпĕ, хама темле асаплантарсан та, тăшмансем умĕнче пĕр тумлам куççуль те кăларманччĕ, анчах кунта мана никам та курмасть. Эпĕ кӳтсе çитнĕ чун çемçеличченех макăртăм вара... Хам

ҫинчен шухăш та пулмарĕ, мĕншĕн тесен мана пурпĕрех никам та килсе ҫăлас ҫукчĕ. Анчах Петя... ПĕччеНех тăлăха тăрса юлать, мĕскĕнĕм... Мирлĕ вăхăтра пулсан, колхозĕ те пулăшмалла, патшалăх та пăрахас ҫук, хысна шучĕпе вĕрентме те ямалла. Анчах халь... халь ăна вĕҫĕмсĕр асап ҫеҫ тӳсме тивет... Ҫавăншăн хурланчĕ ман чун, ҫавăн пирки тӳсе тăраймарăм... Тепĕр тесен, тен, чĕре те сиснĕ-и ҫав кунах ырă мар пуласса...

Вăхăт вĕҫĕмсĕр вăраххăн тăсăлчĕ. Куҫҫуль типрĕ манăн, кăшт лăпланнă пек те пултăм. Халь ĕнтĕ эпĕ фашистсене хирĕҫ хам ҫав тери сахал ĕҫленĕшĕн кӳреннипе ăшчик ҫунма пуҫларĕ. Саша ҫине те тарăхса илтĕм: мĕншĕн вăл мана партизансен ĕҫне маларахран хутшăнтармарĕ?

Сасартăк подвал алăкĕ чăнкăртатса уҫăлчĕ те, тĕттĕмре электричество ҫути ялкăшса илчĕ.

— Каллех мана илме килчĕҫ пулĕ ĕнтĕ,— шухăшларăм эпĕ, анчах хускалмарăм, куҫа хупсах выртрăм.

Нимĕҫсем, чăнах та, мана шыраҫҫĕ-мĕн. Вĕсем пĕр виле патĕнчен тепĕр виле патне пырса хунарĕпе ҫутатса пăхрĕҫ, вĕсене урисемпе тĕрте-тĕрте чĕрри-виллине тĕрĕслерĕҫ, хăйсен чĕлхипе темскер пакăлтатса калаҫрĕҫ. Унтан ман пата та ҫитрĕҫ. Пĕри кукленсе ман ал тымарне тытса пăхрĕ, вара, эпĕ вилменнине туйрĕ пулмалла та, ҫав алранах карт! туртса тăратса лартрĕ.

— Подьем, скотт!

Эпĕ сулăнса кайса каллех ӳкме пуҫларăм, анчах тепри мана ик хул айĕнчен ярса тытса ура ҫине тăратрĕ те хыҫалтан тапа-тапа уттарса кайрĕ. Каллех ҫав тĕттĕм коридорсем, кукăр-макăр пусмасем тăрăх ҫаврăнса хайхи пӳлĕме ҫитсе кĕтĕмĕр. Эпĕ ура ҫинче тăрайманнине кура пулас, тӳрех стена ҫумĕнчи пукан ҫине лартрĕҫ мана.

— Паян мĕнле асаплантараҫҫĕ-ши тата?... Хăвăртрах персе пăрахсан авантарах пулĕччĕ...

Пуҫăм ҫурăлса тухас пек ыратса кашлать, пĕтĕм шăмшак вутпа хĕртнĕ пек чашкăрса тăрать, халăм пĕтсе ҫитрĕ...

Анчах вĕсем мана ытла васкасах вĕлерме шутламан иккен. Мана вĕлернинчен усă ҫук-ҫке-ха вĕсене, вĕсем вара нимĕн пĕлмесĕрех юлма пултараҫҫĕ. Хăйсем пĕлес тенине епле майпа та пулсан пăчăртаса кăларас-

шăн манран, çавăнпа та чи пысăк та хăрушă асап шухăшласа кăларнă ман валли...

Малтан сулахайри пӳлĕмрен икĕ фашист тухса сĕтел хушшине пырса ларчĕç, ман çине пăха-пăха илеççĕ. Пĕрине палларăм — вăл мана Парашка малтанхи хут допрос тунă чухне сăнаса ларнă икĕ «тимĕр хĕреслĕ» офицерах иккен. Çур минут та иртмерĕ пулĕ,— вăл сĕтел çинчи шăнкăрав çине пусрĕ. Вара сылтăм енчи алăк ярах уçăлчĕ те, хайхи йытă — Парашка — çак пӳлĕме... манăн ывăла, Петьăна, аллинчен туртса тухрĕ! Манăн чĕрем тапма пăрахрĕ, куç нимĕн курми хуралса килчĕ...

Пĕр хушă сывлайми те пултăм...

— Акă мĕншĕн... ав мĕншĕн ачана асăнчĕ вăл ун чухне!..— шухăшларăм эпĕ, иртнĕ допроса аса илсе. Ун чухне мана Парашка «ачуна та çăлма пултаратăн» терĕ-çке?.. Эппин, вĕсем мана хама çеç мар, манăн ачана та пĕтерсе хурасшăн. Мĕскĕн Петя! Епле майпа илсе килнĕ-ши ăна кунта? Тен, тем тĕрлĕ те асаплантарса пĕтернĕ? Тен, асапсене тӳсеймесĕр, вăл мĕн те пулин каласа та панă вĕсене?.. Хытă асăрхаттарнăччĕ эпĕ ăна, темле пулсан та, ют çынсене нимĕн те калама юрамасть, тесе вĕрентнĕччĕ. Тӳсеймерĕ пулсан анчах...

Тем тĕрлĕ шухăш çаврăнса илчĕ ман пуçра кĕске вăхăтрах.

Парашка çав хушăра Петьăна сĕтел умĕнчи пукан çине пырса лартрĕ. Эпĕ ĕнтĕ халь Петьăн шурса кайнă сăнĕсĕр, унăн хăранипе сиксе тухас пек чарăлнă куçĕсĕр пуçне пӳлĕмре ним те курмарăм. Хам çинчен те шухăшлайми пулса çитрĕм, пĕтĕм шухăш ывăлăм çинче кăна пулчĕ. Ку таранччен мĕн пулнă-ши ăна, малашне мĕн пулать-ши?

Парашка нимĕçсемпе темскер калаçса илчĕ. Унтан вăл Петя çумне тăрса ăна хулпуççинчен тĕртрĕ.

— Ну, ачам... Çак кам-ха вăл? — ман çинелле кăтартса ыйтрĕ вăл Петьăран.— Сан аннӳ мар-и?

— Анне...— пăшăлтатрĕ Петя.

— Эс юрататăн-и ăна?

— Юрататăп.

— Хĕрхенетĕн-и?

Петя чĕнмерĕ, унăн куçĕ тата ытларах чарăлчĕ.

— Хĕрхенместĕн-и эппин? — Парашка темиçе самант кĕтсе тăчĕ, унтан каллех ыйтрĕ: — Акă халь

санӑн аннӳ тӗрмере ларать... Шел мар-и вара ӑна? Сан ӑна тӗрмерен кӑларассу килмест-и?

— Килет...— малтанхинчен те шӑппӑнтарах ответ пачӗ Петя.

— Эпир ӑна паянах, ак халех кӑларса яма пулта-ратпӑр, вара эсир иксӗр чип-чиперех киле каятӑр.

Петя ун ҫине тӗлӗнсе, ӗненмесӗртерех, хӑраса пӑхрӗ. Парашка малалла илӗртме тытӑнчӗ.

— Ӗненместӗн-и? Чӑнласах калатӑп. Ма улталас-ха сана?

— Кӑларӑр...— терӗ Петя. Унӑн сӑнӗ кӑшт ҫеҫ ҫутӑлнӑ пек пулчӗ.

— Кӑларатпӑр,— терӗ те Парашка, тата тепӗр хут пӳлӗмри нимӗҫсем ҫине пӑхса илчӗ.— Анчах эс пире сирӗн пата камсем пырса ҫӳренине тата аннӳне хулана кайма кам хушнине каласа пар. Ним пытармасăр каласа пар, вара сире иксӗре те ҫак самантрах кӑларса ярaтпӑр. Юрать-и?

Ман чӗре тата хытӑрах пӗҫерсе кайрӗ...

— Петя... Ывӑлӑм! — хам сисмесӗрех пӑчӑртанса тухрӗ ман пыртан. Ҫав самантрах Парашкӑпа пӗр нимӗҫӗ ман еннелле ҫаврӑнса харӑс кӑшкӑрса пӑрахрӗҫ:

— Молчать!

— Ну, кала часрах,— васкаса хистеме тапратрӗ Парашка манӑн ывӑла.— Кала та, аннӳне ҫӑлатӑп вара... Камсем пыратчӗҫ сирӗн пата? Хулана аннӳне кам ӑсататчӗ? Мӗн калаҫатчӗҫ вӗсем?

Петя ни вилӗ, ни чӗрӗ пулса ларчӗ, анчах... нимӗн те каласа памарӗ тӑшмансене.

— Пӗлместӗп, курман эпӗ никама та! — терӗ ҫеҫ.

— Суятӑн, йытӑ ҫури! — сассине тӑруках хытарчӗ Парашка.— Епле ӑнланаймастӑн эсӗ: тунса тӑнипе эсӗ аннӳне пӗтеретӗн!

— Эп сире килтех каларӑм вӗт нимӗн те пӗлместӗп тесе...— макӑрса ячӗ Петя.— Мӗн тата эсир... Никам та пыман пирӗн пата, эпир аннепе иксӗмӗр кӑна пурӑннӑ...

Ман хамӑн та, чӗрене тем пек хытарсан та, куҫҫуль шӑпӑртах юхса анчӗ. Ку ӗнтӗ, пӗр енчен, хамӑн ача ҫав тери ҫирӗп пулма пултарнӑшӑн, тепӗр енчен ӑна хӗрхеннипе ҫапла пулса тухрӗ.

— Каламастӑнах пулсан, эс хвӑвӑн аннӳне юрат-мастӑн та, хӗрхенместӗн те эппин,— пӗветнӗ тутисене

чалăштарса илчĕ Парашка.— Ну... Эпир те хĕрхенсе тăмăпăр ăна! Сана хăвна та хытă лекме пултарать, мĕншĕн тесен эсĕ путсĕр ача иккен!

Тахăшĕ систернипе ман çине сасартăк тĕреклĕ нимĕç салтакĕ сиксе ӳкрĕ те манăн алăсене хыçалалла пăрса асаплантарма тапратрĕ. Тӳсме çуккипе эпĕ йынăшса ятăм.

— Юлашки хут ыйтатăп санран! — каллех чупса пычĕ хайхи Парашка ура çине сиксе тăнă Петя патне.— Вĕлеретпĕр аннӳне! Ăна эсĕ çеç çăлма пултаратăн, йытă çури! Кала мĕн ыйтнине!..

Пуç çӳлелле çĕкленсен куртăм: Петя сиксе чĕтрет, Парашка ăна револьверпа юнаса тăрать.

— Ан тивĕр аннене, вăл айăплă мар!—тесе калама çук хыттăн кăшкăрса макăрса ячĕ Петя, ман паталла ыткăнчĕ. Анчах ăна сĕтел хушшинчи нимĕçсенчен пĕри хăваласа çитсе каялла тĕртсе ячĕ. Малтанхи допрос вăхăтĕнчи пекех, мана сак çине тăсса хурса, тимĕр хулăсемпе хĕнеме тапратрĕç. Эпĕ хамăн ывăл ниçта кайса кĕрейми хăрушла кăшкăрнине илтрĕм, унтан часах ăнран тухнă пулмалла — малалла мĕн пулнине пĕлместĕп...

...Анчах та пирĕн асапсем çакăнпа та вĕçленсе çитмерĕç-ха.

Тепĕр кунне мана подвалтан каллех сĕтĕрсе тухрĕç. Хам мĕн тери вăйсăрланса çитни çинчен каламастăп та ĕнтĕ. Кашласа тăракан пуçри шухăшсем пĕр Петя çинчен çеç пулчĕç. Персе пăрахман-ши ăна? Юлашки хут та пулин курса юлмăп-ши?

Допрос вăрăма пымарĕ. Эпир ывăлпа иксĕмĕр те фашистсене нимĕн те каласа паманни вĕсене çав тери тарăхтарса çитерни ĕнтĕ, çавăнпа та вĕсем хăйсен ĕçне татăклăн туса хума шут тытнă курăнать.

Мана пӳлĕме пырса лартнă хыççăн кăшт тăхтасанах, вĕсем Петьăна та илсе пычĕç. Чĕре çурăлсах каятчĕ... Ăна та хĕнесе пĕтернĕ иккен, тискерсем, ачан пичĕ-куçĕ шыçса тухнă, çамки çинче юн хытса ларнă, хăй аран сывлать...

— Текех сана ачашласа тăмастпăр ĕнтĕ, йăлăхтарчĕ пире ку вăйă,— терĕ Парашка, пирусне чăмла-чăмла.— Çитет! Халĕ юлашки калаçу пулать. Нумай ыйтмастпăр санран, çакна кăна ответ пар: кам патĕнчен, ăçтан илсе килтĕн эс вăл минăсене, кама памаллаччĕ

вёсене санăн? Срок сана — икĕ минут, унтан вара...— Вăл пĕрре аллинчи сехет çине, тепре сĕтел хушшинчи чул сăнлă нимĕçсем çине пăхса илчĕ те вĕсене темскер каларĕ.

— Я, я,— терĕç нимĕçсем.— Гут.

Вăхăт шурĕ. Эпĕ чĕнмерĕм. Йывăррăн сывласа, шăлсене çыртса ывăл çине пăхса лартăм. Парашка чăнласах каланине ĕнентĕм эпĕ, мĕншĕн тесен ку историн вĕçĕ хăçан та пулин çитмелле пулнă-çке-ха.

«Паллах, мана вĕлерессĕ вĕсем. Е персе пăрахаççĕ, е çакаççĕ. Петьăна чĕррĕн хăварсассăнччĕ хуть!..»

Анчах эпĕ йăнăшнă иккен. Вĕсен пачах урăхла шухăш пулнă. Вĕсем ман валли вилĕмрен те хăрушăрах асап шухăшласа тупнă.

— Вăхăт иртрĕ,— терĕ Парашка.

Эпĕ сасартăк ыйхăран вăраннă пек пултăм. Сĕтел хушшинчи нимĕç сехет çине пăхса пуçĕпе сулчĕ. Хураллакан салтаксенчен пĕри мана сĕтел пуçне илсе пырса тăратрĕ те аллăмсене хыçалалла тытрĕ. Тепри Петьăна сĕтелĕн тепĕр пуçне илсе пычĕ. Унăн сулахай аллине сĕтел хĕррине хучĕ.

— Мĕн тăвасшăн кусем? Мĕн шут тытнă? — тесе шухăшлама ĕлкĕртĕм кăна эпĕ, Петя çумне тепĕр хĕрлĕ çӳçлĕ самăр нимĕç — чăн-чăн мясник ĕнтĕ! — пырса тăчĕ.

— Юлашки хут...— терĕ Парашка, ман çине куç харшисем айĕн çав тери тискеррĕн пăхса.— Кам ячĕ? Кам патне?

Эпĕ чĕнмерĕм. Пыра тем тулнă пек пулчĕ, куç каллех хуралса килчĕ. Самант иртрĕ, иккĕ...

— Говорить! — кăшкăрчĕ тимĕр хĕреслĕ фашист. Çав вăхăтрах Петьăпа юнашар тăракан самăр нимĕç хĕç пек сарлака, çап-çутă штык çĕклерĕ.

— Говорить! — каллех кăшкăрчĕ тимĕр хĕресли.— Кому ходиль, зобак?

Ответ вырăнне манăн пыртан темле тискеррĕн йынăшнă сасă çеç тухса кайрĕ. Сывлăшра хурçă штык ялтăртатса илчĕ. Унтан Петя «а-а-а!..» тесе кăшкăрни илтĕнчĕ. Эпĕ кĕçех çĕре тĕшĕрĕлсе анаттăм, анчах хама хыçалтан тытса тăраканни ӳкме памарĕ, çитменнине тата, Петя çывăхнерех тĕксе пычĕ. Анран тухса каяттăм: ман ачан сулахай аллин пуç пӳрнине патах касса татнă, юн палкать кăна, хăй çав тери кăшкăрать, ал-

лине сётел ҫинчен илме хӑтланать, урисемпе ниҫта та кайса кӗреймесӗр тӑпӑртатать, анчах та нимӗн те тӑваймасть — фашист ӑна хӗскӗчпе хӗстернӗ пекех хытӑ тытса ларгнӑ...

Кинжал каллех сывлӑша ҫӗкленчӗ.

— Кала! — ҫухӑрчӗҫ темиҫен пӗр харӑс.

— Каламастӑп! Вӗлерӗр! Ӑна та, мана та вӗлерӗр, татӑкӑн-татӑкӑн ваклӑр — нимӗн те каламастӑп! — кӑшкӑрса ятӑм эпӗ вӗсене хирӗҫ, юлашки вӑя пухса.

Мана тахӑшӗ ҫупса ячӗ, ҫав вӑхӑтра каллех штык ялтӑртатрӗ, татах Петя шари-и! кӑшкӑрса яни илтӗнчӗ... Тахӑш самантра курчӗ куҫӑм: унӑн аллине ывӑҫ тупанӗ таранах касса татнӑ...

Эпӗ ӗнтӗ ӑнран тухса урнӑ пекех пулса кайрӑм пулмалла.

— Чунилисем, ниушлӗ эсир пире ҫапла парӑнтарма шутларӑр? Кӑлӑхах ӗмӗтленетӗр! Нихҫан та пулас ҫук вӑл! — тесе кӑшкӑртӑм.

Кинжал татах ялтӑртатрӗ...

* * *

Варвара Васильевна калама чарӑнчӗ.

— Ҫакӑн хыҫҫӑн гестапора хама мӗн тунине нимӗн те астумастӑп, тӗрмене пырса пӑрахсан тин тӑна кӗнӗ эпӗ,— терӗ те вӑл кӑшт ларсан, ассӑн сывласа илчӗ. Ҫак пур асаилӳсем унӑн нумай хӗн-хур курнӑ, нимӗнпе виҫме ҫук асап тӳснӗ чӗрине мӗн тери ыраттарнине туйса, эпир тек нимӗн те ыйтасшӑн марччӗ унран, анчах вӑл хӑйӗн калавне вӗҫне ҫитиччен каласа парас терӗ курӑнать. Хӑвӑн хуйху-суйху ҫинчен сывӑх ҫынна каласа парсан, чӗрене ҫӑмӑлтарах пулать-ҫке.

— Тӑвата уйӑх хупса усрарӗҫ мана тӗрмере...— терӗ вӑл малалла.— Ырӑ ҫынсем пулӑшнипе кӑштах ура ҫине тӑракан пулсан, мана каллех допроссене сӗтӗрме тапратрӗҫ. Кама та пулин партизан вырӑнне шутласа хупаҫҫӗ-тӗк — мана туртса тухаҫҫӗ: «Ҫак ҫынна ӑҫта курнӑ эс? Кам вӑл? Мӗн ятлӑ?» — анчах эпӗ нимӗн те пӗлместӗп. Кашнинчех патак лекетчӗ вара. Чӗррӗн тухассӑн шутламан ӗнтӗ... Допроссенче пулман вӑхӑтра хамӑн хуйхӑм асаплантаратчӗ: Петя ҫинчен ҫав гестапора пулнӑ юлашки каҫ хыҫҫӑн эпӗ нимӗн те пӗлмен-ҫке...

Хĕрарăм йыварран сывласа илчĕ.

— Тĕрминчен эпĕ пачах кĕтмен çĕртен тухрăм. Тĕрĕссипе, тухрăм темелле те мар, тухса ÿкрĕм, темелле.— Варвара Васильевна ку тĕлте кăштах кулнă пек пулчĕ.— Асапланса, вăйсăрланса, ырханланса çитнĕ çынсем пирĕн камерăра кунсеренех вуншарăн вилетчĕç. Вĕсене вара надзирательсем кашни ир алли-урисенчен сĕтĕрсе тухса каятчĕç. Вилнисемпе пĕрле вилсе çитейменнисем те час-часах лекетчĕç. Калăпăр, çын тăраймасть, калаçайми те пулса çитнĕ, паян вилмесен — ыран вилетех вăл... Мĕн тума ыранччен кĕтес, чĕррисене те, çула май тенĕ пек, хула хыçне кайса пăрахма пулать-тĕк? Юлашкинчен вилесене турттарса та йăлăхрĕç курăнать фашистсем. Пĕр ирхине пире, «доходягăсене» — паян-ыранах вилес патне çитнисене — пухса тĕрме картишне кăларчĕç. «Персе пăрахма илсе тухрĕç...— хăрушă шухăш вĕçрĕ пуçра.— Акă, халех пурсăмăра та стена çумне тăратаççĕ те... пăшал сасси кĕрслетет...» Пуç çаврăнса кайрĕ, чутах ÿкеттĕм, анчах тахăшĕ мана хулран тытса ÿкме памарĕ.

Тĕлĕнтĕмĕр: персе пăрахмарĕç пире. Çурăмсенчен чыша-чыша тĕрме картишĕнчен урамалла кăларса ячĕç...

...Киле эпĕ тепĕр икĕ кунтан, урaран урана аран ирттерсе, çиткелерĕм. Полицайсем манăнне пĕр япала та хăварман, мĕн пуррине пĕтĕмпех илсе тухса кайнă, катăк тăм куршак та пулин юлман хăть, анчах эпĕ, тупата, ун пирки пĕртте хуйхăрмарăм. Эпĕ урăххи çухаласран хытă хăранăччĕ. Ак çакăн пирки...— Варвара Васильевна хĕвĕнчен сăран хуплашка хушшине хĕстернĕ пĕчĕкçеç кĕнеке кăларса тыттарчĕ. Эпĕ ăна уçрăм та:

— Партийный билет № 0512253,— тесе çырнине вуларăм.

— Нимĕçсем манăн пĕтĕм пурлăха, юратнă ачама, сывлăха туртса илчĕç, анчах кăна — чи хаклине — эпĕ çапах та упраса хăварма пултартăм... Эпĕ ăна çак Мишăна 1941 çулта çырмари блиндажа вырнаçтарнă каç çĕр айне алтса пытарсаттăм, тĕрмерен таврăнсан вара тÿрех чавса кăлартăм та текех хамран пĕртте уйăрмарăм... Эсир таврăнасса кĕтрĕм...

— Халь ĕнтĕ кĕтсе илтĕн,— терĕ те Палюков, çак нихçан сивĕнме пултарайман хĕрÿ чĕреллĕ ватă совет хĕрарăмĕшĕн савăнса кулса илчĕ.

— Кӗтсе илтӗм ҫав...— Варвара Васильевна пӗр хушӑ пирӗн ҫине ҫав тери ӑшӑ куҫӗпе пӑхса ларчӗ, унтан:

— Анчах эпӗ эсир килессе ним тумасӑр, алӑсене усса кӗтсе ларнӑ пек ан шутлӑр,— терӗ.— Эп тӗрмерен таврӑнсан ик-виҫ кунранах ман пата партизансем ҫӳреме тытӑнчӗҫ. Вӗсенчен пур хыпарсене те пӗлсе тӑраттӑм. Чӑн малтан, вӗсем мана хамӑр хулари гестапо ҫуртне пирӗн самолетсем вӗҫсе килсе бомбӑпа тӗпренех аркатни ҫинчен пӗлтерсе савӑнтарчӗҫ. Гестапо пуҫлӑхӗ — хайхи икӗ тимӗр хӗреслӗ нимӗҫ те, мана асаплантаракан сутӑнчӑк Парашка та, ыттисем те нумайӑшӗ хупланнӑ тет унта... Бомбӑсене хӑш ҫӗре пӑрахмаллине тӗллеттерекенӗ пирӗн тӑван, хайхи Саша пулнӑ. Хӑех килсе каласа пачӗ мана ун ҫинчен. Ыталасах чуптурӑм вара эпӗ ӑна! Унтан Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӗвӗсем ҫинчен пӗлтерме тытӑнчӗҫ. Кавказри, Сталинградри, Ростов хули патӗнчи ҫапӑҫусем ҫинчен каларӗҫ. Вӗсем мана калаҫҫӗ — эпӗ вӑл сӑмаха пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн хамӑр хӗрарӑмсем хушшинче саратӑп...

Варвара Васильевна тӑрук ӑшталанса илчӗ:

— Ай-уй, сӑмах-юмахпа эпир кусем ҫинчен манса кайнӑ-ҫке! — терӗ вӑл, тулли черккесем ҫине кӑтартса.— Ӗҫсе ярар-ха эсир килнӗ ятпа!

* * *

Ун патӗнчен эпир тулта пӑч-тӗттӗм пулса ларсан тин тухрӑмӑр. Ҫапӑҫу шавӗ халь паҫӑрхинчен те инҫетерехре кӗрлетчӗ. Пирӗн чаҫсем нимӗҫсене тата малалла хӑваласа кайнӑ. Малти линирен тупӑсем кӗрӗслеттернӗ сасӑсем кӑна илтӗнкелеҫҫӗ, пӑшал-пулемет сассисем илтӗнмиех пулнӑ ӗнтӗ.

Эпир урам тӑрӑх ним чӗнмесӗр утрӑмӑр, иксӗмӗр те Варвара Васильевна каласа панисем ҫинчен шухӑшласа пытӑмӑр. Ытла та чӗре патне кӗрсе ларчӗ унӑн калавӗ, ӗмӗр манмалла мар асра юлчӗ.

— Тӗрӗс калаҫҫӗ,— сӑмах хушрӗ Палюков чылай хушӑ калаҫмасӑр пынӑ хыҫҫӑн,— пирӗн халӑх пурнӑҫа, ирӗке, хӑйӗн тивӗҫне юратни — вилӗмрен те вӑйлӑрах ҫав...

— Паян иксӗмӗр илтни ӑна нимрен те лайӑхрах кӑтартса парать ӗнтӗ,— килӗшрӗм эпӗ.



# Юрă пурĕпĕр янранă...

А жизнь ее вся песнею была
С. Щипачев.

Эпир Днепр шывĕн сылтăм енче, çӳлĕ сăрт çинче лараттăмăр. Каç пулатчĕ ĕнтĕ, леш енчи кӳлĕсемпе шурлăхлă вырăнсенче, ерипен пăс пек тĕтре çĕкленсе хăпарма пуçланăччĕ, çапах та Днепр пирĕн умра темĕн пысăкăш тăрăхла тĕкĕр пекех çутăлса выртатчĕ.

Сулахай çырантан паром килессе кĕтсе, эпир — виçĕ офицер, хамăрăн аслă çĕршывăн тĕрлĕ вырăнĕсенче çуралса ӳснĕскерсем — чаплă та хăватлă Днепрăн илемĕ çине пăхса лартăмăр. Икĕ çул ытла кунта фашистсем пулнă, хăйсен ирсĕр карланкисене Днепр таса шывĕпе килентернĕ, анчах икĕ кун каялла эпир вĕсене кунтан ĕмĕрлĕхех хăваласа ятăмăр. Днепр каллех совет шывĕ пулса тăчĕ, хăйĕн чăн-чăн хуçисен аллине куçрĕ, каллех ирĕккĕн сывлама пуçларĕ.

Днепр çине уяр çанталăкра çӳлĕрех вырăнтан пăхса тăнă чух нимрен малтан Гоголĕн вилĕмсĕр произведенийĕсем аса килеççĕ: ун çинчен никам та Гоголь пек çырайман вĕт-ха...

— Чуден Днепр при тихой погоде... Ытарма çук Днепр тӳлек çанталăкра, вăрмансем витĕр те тусем хушшипе ирĕккĕн те меллĕн, туп-туллин юхса выртнă чухне кăшт та хускалмасть, сас-чӳсĕр юхать. Пăхатăн та, ху та пĕлместĕн, те юхать унăн анлă шывĕ, те юхмасть, кантăкран шăратса тунă пек вăл, ешĕл тĕнче çийĕпе тĕкĕр пек йăлкăшакан кăвак çул авкаланса выртнă пек туйăнса каять, вĕçĕ те, хĕрри те курăнмасть вăл çулăн...

Епле аван ӳкерсе кăтартнă!

Çак касхине те, сăртран аялалла, Днепрăн илемне таçта çитиех, пĕтĕмпех курса ларнă май мана çав ача чухнех вуласа вĕреннĕ сăмахсем аса килчĕç. Хăйсем тĕллĕнех çăвартан тухса кайрĕç вăл сăмахсем:

— Чуден Днепр при тихой погоде...

Юлташсенчен нихăшĕ те шарламарĕ, пурте малтанхи пекех Днепр çинчен куç илмесĕр пăхса ларчĕç. Чылайран тин пĕри, хăй ĕмĕр тăршшĕпех цифрăсем шутласа кăна пурăннă пулин те, поэзие питĕ юратаканскер, пуçне ман еннелле çавăрчĕ те:

— Урăхла калас пулать халь,— терĕ.

— Мĕншĕн? Гоголь çапла çырнă-çке? — ыйтрĕ унтан виççĕмĕш юлташ.

— Çырнă пулин... Эпĕ халь: чуден Днепр при всякой погоде, когда он... советский, тейĕттĕм.

— А-а, ку питĕ тĕрĕс вара! — кăмăллăн кулкаласа илтĕмĕр эпир.

Çак вăхăтра, сасартăк, улăхра, шурлăхлă вырăнсенче ӳсекен çӳçе тĕмĕсем хушшинче, такамăн илемлĕ, уçă сасси янраса кайрĕ. Çивĕч çунатлă кайăк пек вĕçсе хă-

парчĕ юрă айлăмран, таса шыв юххи пек уçăн янкăртатма тапратрĕ.

> Ай-хай вăйлă шыв — аслă Днепр-шыв!
> Килсе çитрĕмĕр, кĕтсе ил пире...

— Ак япала! — терĕ çак сăмахсене уйăрса илсенех иккĕмĕш юлташ.— Готово!

— Мĕн «готово»?

— Юрра улăштарма та ĕлкĕрнĕ! Унăн сăмахĕсем пачах урăхлаччĕ. Ăна пирĕн дивизири ансамбль хĕлĕпех юрласа пурăнчĕ. Унта «сан пата пыратпăр», тенĕ...

— А халь килсе тухрăмăр та, улăштармаллах çав,— терĕм эпĕ.— Ху та ав Гоголе улăштарма тытăннă та!

— Тĕрĕс те пулĕ çав...

Юрă çаплах янрарĕ. Эпир ăна калама çук тимлесе, ăшăпа пиçнĕ çын сивĕ шыв ĕçнĕ пекех итлесе лартăмăр. Вăл пирĕн пĕтĕм шухăшсене, кăмăла, туйăмсене çавăрса илчĕ. Юррăн юлашки сăмахĕсем каçхи шăплăхра таçта инçете-инçете кайса çухалсан тин сăмах хушма хал çитрĕ пирĕн.

— Аван юрă...— терĕ иккĕмĕш юлташ.— Анчах сăмахĕсем, тупата, урăх, малтанхи мар!

— Творчество, мĕн тăвассу пур...— ответ патăм ăна.

— Тĕрĕс, творчество... Халăх творчестви, халăх пултарулăхĕ,— килĕшрĕ вăл.

Калаçăва виççĕмĕш юлташ хутшăнчĕ.

— Халăх творчествине, ман шутпа, çĕр айĕнчен тапса тухакан çăлкуçĕпе танлаштарма пулать,— терĕ вăл.— Çăлкуçне пĕр çĕртен питĕр — вăл тепĕр вырăнтан тапса тухать... Ку та çавнашкалах. Темиçе кун каялла пĕр ялта мана питĕ тĕлĕнмелле, чĕрене пырса тивекен истори каласа пачĕç. Эпĕ çырма пултаракан çын пулнă пулсан, кун çинчен, тупата, çав тери хăватлă поэма çырăттăм. Кам пĕлет, тен, кайран нумайăшĕсем çырĕç-ха...

— Мĕнле пит чаплă истори вара вăл? Мĕн çинчен? Тен, каласа парăн пире? — ыйтрăмăр эпир.

Çак офицер сапер-разведчиксен взвочĕн командирĕ пулнă. Хамăр ирĕке кăларакан ялсене вăл час-часах никамран малтан, пехотăран та малтан пырса кĕнĕ, çул-йĕрсене тĕрлĕ минăсемпе «сюрпризсенчен» тасатнă.

Ялсенче юлнӑ хамӑр ҫынсемпе калаҫса, тӗрлӗ хыпарсене вӑл пуринчен малтан пӗлнӗ. Ҫавӑнпа та халь, вӑл пӗр «истори» тесенех, эпир, ун ҫине пысӑк интереспе пӑхса, калавне кӗтрӗмӗр...

— Хура виселицӑллӑ яла астӑватӑр-и эсир? — тесе ыйтрӗ вӑл пирӗнтен, хӑй калавне пуҫласа яриччен.— Кунтан пӗр вунпилӗк километрта, питех те илемлӗ шыв хӗрринче, айлӑмра вырнаҫнӑ вӑл ял, ячӗ те илемлӗ — Цветники... Чӑнах та, ялӗ ҫук ӗнтӗ, ӑна гитлеровецсем ҫӗрпе танлаштарса хӑварнӑ, пӗр ҫакса вӗлермелли такан кӑна—фашистсен тискерлӗхӗн символӗ пек — тӑрса юлнӑччӗ...

— Астӑватпӑр-ҫке...

— Вӑт, шӑпах ҫав ялта пулнӑ ку тӗлӗнмелле истори. Ӑна мана халь ҫеҫ вӑрмантан таврӑннӑ хӗр-партизансем каласа пачӗҫ. Калаҫӑвӗ те ҫав ҫакмалли таканран тапранса кайрӗ... Нимӗҫсем ҫак яла пырса кӗрсен, ытти ҫӗрти пекех, кунта та пӗтӗм пурнӑҫа вилӗм сывлӑшӗ пусса илнӗ. Ҫынсем—чӗрчунсем пек мар, мӗлкесем пек ҫеҫ ҫӳренӗ, килӗсенчен тухма та, сасӑпа калаҫма та хӑранӑ, мӗншӗн тесен кашни хӳме ҫинчех нимӗҫ коменданчӗн хура свастикӑпа — ҫав шуйттан паллипе — ҫирӗплетнӗ приказӗсем ҫакӑнса тӑнӑ. Вӗсенче пуринче те икӗ сӑмах: «юрамасть»... тата «персе пӑрахатпӑр» тени уйрӑммӑнах курӑннӑ. Этемӗн чун хавалӗ ҫӗкленнине кӑтартакан паллӑсем — кулӑпа юрӑ кунта пуҫӗпех манӑҫ пулнӑ, таҫта ҫӗр тӗпне анса кайнӑ пекех ҫухалнӑ, ҫынсен кӑмӑлӗсем кӗрхи тӗттӗм каҫ пек пулса тӑнӑ. Вӗсем кашни утӑмрах хӑраса, кашни самантрах пуҫ ҫине ҫӗнӗрен ҫӗнӗ хурлӑх йӑтӑнса анасса кӗтнӗ...

Ял варринче, вӑрҫӑччен колхоз правленийӗ пулнӑ пысӑк ҫуртра, нимӗҫсен комендачӗ пурӑннӑ. Унӑн кашкӑр тӗслӗ виҫӗ йытӑ-овчарка пулнӑ, вӗсемсӗр вӑл пӗр утӑм та ярса пусман. Кашни йытӑ пуҫнех тата виҫшер полицейски пулнӑ. Каҫ-каҫ вара масар шӑплӑхӗпе тулнӑ ялта ҫав комендант ҫуртӗнчен тухакан музыка сасси пытару кӗвви пек янӑранӑ. Музыкӑна пит те юратнӑ тет вӑл комендант! Хӑй таҫти консерваторие ылтӑн медальпе пӗтерсе тухнипе мухтаннӑ, тет... Кашни каҫах пӳрт умӗнчи пахчана хӑйӗн хаклӑ йышши аккордеонӗпе тухса ларса, вӗҫӗ-хӗррисӗр епришке вальссем вылянӑ... Каҫхине музыкӑпа киленнӗ, ирхине вара пирӗн колхозниксене, ватти-вӗттипех, йытӑсемпе ӗҫе

хăваласа тухнă, кам та пулин кăшт айăпа кĕрсенех вилсе кайиччен хĕненĕ, аллисене каялла çыхса нӳрĕ подвала пăрахнă, стариксен сухалĕсене çунтарнă, çамрăк хĕрарăмсене темиçешер куна чĕчĕ ачисенчен уйăрнă — темтепĕр, пурне каласа та пĕтерес çук!

Чылай вăхăт çапла пурăннă вăл. Ĕнтĕ, ку вырăнсенче ĕмĕрлĕхех тымар яма та шут тунă пулмалла — хăйне валли чи лайăх çĕрсене суйлама тытăннă. Анчах тăруках унăн ĕмĕчĕсем кутăн-пуçăн çаврăнса ишĕлсе аннă, юлашкинчен хăйĕн те кунтан тухса тарма кирли паллă пулса тăнă...

Пĕтĕм ĕç юрăран пуçланса кайнă.

Çуллахи пĕр лăпкă каçхине çак сысна аçи пек самăр нимĕç-комендант пӳрт умĕнчи пахчара хăйĕн вальсĕсене выляса пĕтернĕ хыççăн çывăрма кĕме хатĕрленнĕ-мĕн. Çав вăхăтра, пачах та кĕтмен çĕртен, яла икке уйăракан çырман тепĕр енчи урамра хĕр юрласа яни вăйлăн та уççăн илтĕннĕ:

И-эх! Аслă шывăн çийĕпе
Акăшсем ишеççĕ.
Тарăр, йытă-фашистсем,
Хĕрлисем килеççĕ!..

Комендант сасартăк юман юпа пек хытса тăнă. Мĕн пулса иртнине ниепле те ăнланайман вăл, ăнран тухса кайнă качака таки пек унăн-кунăн пăхма пултарнă çеç... Епле-ха капла?! Ăна пăхăнса тăракан ялта тахăшĕ юрă юрлама хăюлăх çитернĕ! Нихçан шутламан, кĕтмен япала! Бунт вĕт ку, пăлхав! Мĕнле пулма пултарнă-ха кун пек хăрушă ĕç?!

Комендант пĕрре кăвакарса, тепре хĕрелсе кайнă, унăн çамки çине шултра тар тапса тухнă. Леш енчи юрă çаплах янăранă:

Ту çинче тăрать машина,
Улăхра — пĕр танкĕ.
Ман савнийĕм партизан,
Хам та партизанка!

Ман савнийĕм паттăр яш,
Хам та паттăр хĕр эп,
Иккĕн иккĕ тыттарсан —
Юлмĕ фашист чĕррĕн...

Комендант ку юрра ăнланман, анчах юрăра çинеçинех «партизан» сăмаха асăнни ун хăлхине аванах

пырса кӗнӗ. Шӑнтакан чир ернӗ пек сиксе чӗтреме тытанса, вӑл часрах пӳрте чупса кӗнӗ. Пӳртре никам та пулман. Ку ӑна пушшех хӑратса пӑрахнӑ. Вара вӑл стена ҫинчи пӑтаран автомат вӗҫертсе илсе каллех урама сиксе тухнӑ та ним тӗлсӗр-мӗнсӗрех юрӑ илтӗннӗ еннелле черет хыҫҫӑн черет кӑларса яма тытӑннӑ...

Автомат сассине илтсе, ун патне хӑйне сыхласа пурӑнакан полицейскисенчен пӗри ыткӑнса пынӑ.

— Мӗн пулнӑ? Кама перетӗр?

— Илтместӗн-и-мӗн, пӑхӑр ҫамка! — кӑшкӑрса пӑрахнӑ ӑна комендант.— Ав, итле!..

Комендант автомачӗпе тӗллесе кӑтартнӑ еннелле пӑхса, полицейски те унпа пӗрлех итлеме тытӑннӑ. Вӑйлӑ та уҫӑ хӗрарӑм сасси халь те чарӑнман, ҫаплах юрланӑ...

И-эх! Шӑнкӑр-шӑнкӑр шывӗнче
Тутӑра ҫӑватӑп.
Партизан пулсан — каятӑп,
Полицай ҫине — суратӑп!

Хамӑн партизанӑмпа
Ҫур ҫӗрччен ҫӳреттӗм.
Халӗ пире уйӑрчӗҫ —
Полицайсем-йытӑсем.

— Мӗн ҫинчен юрлать вӑл сысна? — хаяррӑн ыйтнӑ урса кайнӑ комендант полицейскинчен.— Партизансем ҫинчен пулас? Вӗсене мухтать?

— Мухтать, господин комендант...—тенӗ ӑна хирӗҫ полицейски, тутисене аран хускатса.— Тӗрӗс...

— Мӗн тӗрӗс?

— Мухтать, тетӗп...

— А пире хурлать ӗнтӗ?

— Пуринчен те ытла пирӗн йышшисене...

— Агитаци эппин? Бунт!

— Ҫапла пулса тухать...

Ҫав вӑхӑтра тата ик-виҫ полицейски чупса пынӑ.

Комендант, хаяр бомбежкӑран тарма хатӗрленнӗ пек, унталла-кунталла пӑхса, хашка-хашка чупкаланӑ. Унтан тӑрук полицейскисем ҫине сиксе ӳкнӗ:

— Мӗн пӑхса тӑратӑр? Мӗн кӗтетӗр? Сире ҫавӑншӑн ҫӑкӑр ҫитерсе усратӑп-и эпӗ? Халех кайса тытса килӗр вӑл партизан юрӑҫине — мунча кӗртем эп ӑна! Юрлаттарам!.. Кӗҫӗрех ҫакатӑп! Марш!

Полицейскисем комендантӑн йыттисене ертнӗ те

юрлакан хĕрарăма шырама чупнă. Унталла ыткăннă, кунталла, ăнсăртран тĕл пулакан çынсенчен ыйтнă ун çинчен, юрăçă камне тата вăл ăçтине каласа памасан хăйсене тытса хупассипе, çаптарассипе хăратнă, анчах нимĕн те пулăшман вĕсене. Юрăçă çĕр тĕпне путнă пекех çухалнă... Ир енне сулăнсан вара йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ полицейскисем хăйсен хуçине салхуллăн пырса пĕлтернĕ:

— Тупаймарăмăр... Ялтан тухса кайнă пулмалла...

— Тухса кайнă пулсан аванччĕ,— тенĕ комендант, кăштах лăпланса.— Анчах астăвăр: эпĕ вăл хĕрарăм сассине тепре илтсен, никамран малтан сире лекет!

— Çук ĕнтĕ, урăх юрлаттармăпăр,— сăмах панă ăна полицейскисем.

Ытлашши васкана-çке вĕçкĕнсем çавăн пек шантарма...

Çак кунтан пуçласа, кашни каç тенĕ пекех, çĕр çине хура шăналăк пек тĕттĕмлĕх шуса ансанах, çав хĕрарăм сасси янранă. Паян — пĕр çĕрте, ыран — тепĕр вырăнта. Юррисем унăн пурте тăшмансенчен мăшкăллакан юрăсем пулнă, фашистсене пăхăнмасăр пурăнма, вĕсене хирĕç кĕрешме чĕннĕ...

Çак кунтан пуçласа комендант ыйхине çухатнă, хĕрарăмăн сасси илтĕнсенех вăл ниçта кайса кĕрейми ăшаланнă, полицейскисене ял тăрăх хăйĕн йыттисемпе пĕрле чĕлхисене кăларса яриччен чуптарнă.

— Тупăр! Тытăр! Илсе килĕр!..

Усси пулман. Темле шырасан та, хĕрарăм-юрăçă тупăнман. Полицейскисем ял тăрăх ыткăнма тытăнсанах юрă чарăннă, анчах çитес каçхине хĕрарăм сасси каллех илтĕннĕ.

Комендант приказ кăларнă:

«Юлашки вăхăтра ялта каç-каç киревсĕр юрăсем илтĕнеççĕ. Германи влаçĕсен ячĕпе — юрлама чаратăп! Кашни юрлакан çынна партизан вырăнне шутласа, тытсанах çакатпăр».

Ку та пулăшман. Юрă пурĕпĕр янранă...

Çакăнпа пĕрлех, таврара партизансем пирки сас-хура ытларах илтĕнме пуçланă. Кунта — поезда çырана сиктернĕ, лере — нимĕçсен обозне тапăннă, тепĕр çĕрте полицейскине çапса пăрахнă. Халăх партизансем çинчен çав тери хавасланса калаçнă, куншăн чĕререн савăннă.

Комендант кунран-кун хытăрах хăракан пулса пынă. Партизансем сасартăк пырса тапăнасран, вăл хăй пурăнакан çурт тавра этем ытамне кĕми юман пĕренесенчен икĕ ĕретлĕ хӳме — чăн-чăн крепость тутарнă. Ялти пĕтĕм халăха пĕр чарăнмасăр пилĕк кун та пилĕк каç ĕçлеттернĕ вăл. Темиçе полицейски выранне ун патĕнче вуникĕ жандарм пурăнма тытăннă.

Анчах çапах та малтанхи лăпкăлăх каялла таврăнман...

Нимрен ытла, каçхи тĕттĕмлĕхре пĕтĕм халăх сасси пек янăракан юрă ăнран кăларнă ăна. Вăл юрă уншăн чĕререн çивĕч çĕçĕпе чикнĕ пекех пулнă!

Облава хыççăн облава тунă комендант. Епле пулсан та, вăл çав юрра путлантарма тăрăшнă.

Ĕнтĕ темиçе хĕрарăма та сĕтĕрсе пынă ун патне жандармсем. Вĕсене кашнинех хĕненĕ, темĕн тĕрлĕ асаплантарнă — анчах юлашкинчен вĕсем айăплă марри палăрнă, мĕншĕн тесен хĕрарăмсем комендатурăра ларнă вăхăтра юрă каллех çуралса тухнă.

Ялта мĕн пулса иртнĕ, çавăн çинчен янăранă вăл...

Пĕррехинче, полицейскисем таврари ялсенче тĕрлĕ пурлăх, апат-çимĕç çаратса таврăннă чух вĕсене партизансем тапăннă. Лавĕсене туртса илнĕ, хăйсене питĕ хытă тӳпелесе янă. Çав каçах юрăçă çакăн пирки тăрăхласа юрланă:

Полицайсем чыс тăвасшăн
Коменданта — нимĕçе,
Партизансем тытрĕç те, —
Хăлха чикки пачĕçĕ.

Партизансем — паттăрсем
Ялсене пыраççĕ,
Полицайсене тытса
Шаккаса хураççĕ!

Сасартăк гитлеровецсем ялти çамрăксене Германие чуралăха ăсатма тапратнă. Калама çук пысăк хурлăх пулнă ку. Кашни килтех куççулĕ тăкăннă, кашни çемьерех хăйсен ачисене хăтармалли меслет шыранă. Çав шиклĕ вăхăтра ял çыннисем çапла юрăсем илтнĕ:

Çывăх мар Берлинăн çулĕ,
Тух, аннем, ăсат хĕрне...
Сывпуллашăпăр эпир куççуллĕн,
Кам пĕлет, тен, ĕмĕрлĕх...

Ку юрăсем халăх хушшинче тата ытларах чуна ыраттаракан кичемлĕх сарнă, хăрушлăх мĕн тери пысăккине тавçăрса илме пулăшса пынă. Вара Германие ăсатма палăртнă çамрăксем ăçта кирлĕ унталла тарма тапратнă. Çынсем хăйсем каланă тăрăх, вĕсем пурте партизансен отрячĕсене кая-кая кĕнĕ иккен.

Комендант халь тем тума та хатĕр пулнă. Вăл пурне те персе вĕлеретĕп, яла тĕппипех, ним юлми çунтарса ятарăп, тесе юнама тытăннă.

— Тупса парăр мана çав юрлакана!

Ку та усă кӳмен ăна. Пĕр сăмахпа çеç ответ панă ăна çынсем:

— Пĕлместпĕр...

Вара комендант чееленме шут тытнă. Вăл кашни каçах ялăн пур кĕтессисене те засадăсем лартма тытăннă. Кашни 2—3 кил хыçĕнчех автоматлă кашкăр сыхласа ларнă. Çапла майпа пĕр тĕттĕм каçхине юрăça тытнă-тытнах. Пысăк садри йывăçсем хушшине пытаннă хĕр пĕр çаврăм çеç юрлама ĕлкĕрнĕ-мĕн, сасартăк ун умне тĕттĕмлĕхрен виççĕн-тăваттăн сиксе тухнă. Ниçталла та тарайман вăл. Ăна çавăнтах çапса ӳкерсе хĕнесе тăкнă, таканлă атăсемпе таптанă, унтан, юнланса пĕтнĕскере, аллисене каялла çыхса, комендант патне сĕтĕрсе пынă. Лешин вара ĕненес те килмен, тĕлĕнсе шак! хытнă вăл... Ун умĕнче тĕлĕнмелле илемлĕ, сапсар çӳçлĕ, çутă сенкер куçлă çамрăк хĕр тăнă. Çаврака пичĕ тăрăх унтан та, кунтан та юн сăрханнă... Çавăнтан хăраса пурăнма тивнĕ иккен ăна!

Тем вăхăтченех пăхса тăнă ун çине ăнран тухса кайнă комендант. Унтан сасартăк, урнă кашкăр пек пулса кайса, вăл хĕре кăкринчен чышса ӳкернĕ, мамăк евĕр çемçе çӳçĕнчен çавăрса тытса урай тăрăх сĕтĕрме тапратнă, тапнă, çапнă... Ывăнсан, пĕлми пулса çите пуçланă хĕре вăйпах стена çумне тăратса, тимĕр пек сивĕ пӳрнисемпе ăна пырĕнчен пăчăртаса лартнă:

— Юрла ĕнтĕ! Хăвна епле çакасси çинчен юрла!..

Хĕр, юлашки вăйне пухса, ун çине вĕри курайманлăхпа тулнă куçĕпе пăхса илнĕ. Ним те шарламан. Унтан комендант питĕнчен лач! сурнă...

— Хăрамастăп санран, урнă йытă!..

Кун хыççăн ăна мĕнле асаплантарнине никам пĕлмест, мĕншĕн тесен комендант хăй патĕнчен жандармсене те хăваласа кăларса янă. Анчах кайран халăх

хушшинче: вăл çак хĕре тискеррĕн пусмăрланă, текен хыпар сарăлнă.

Тепĕр кунне ăна валли ятарласах виселица тунă та çакса вĕлернĕ. Çакнине пăхса тăма пĕтĕм халăха хăваласа пухнă. Хĕрарăмсем, куççулĕсене çăтса, ĕсĕклесе тăнă, арçынсем шăлĕсене çыртнă, вĕсен чышкисем хăйсем тĕллĕнех чăмăртаннă...

Комендант питĕ хаяр сăмах каланă, халăха вĕçĕмсĕр юнанă, темĕн тĕрлĕ хурлăхпа асап кăтартассипе хăратнă.

— Юрлама мар, пĕр сăмах калайми тăватăп эп сире! Чĕррĕн çĕре чикетĕп, пĕрерĕн-пĕрерĕн çакса пĕтеретĕп!

Хулăн вĕренпе пăвса çакнă хĕр-юрăçăн ылтăн çӳçĕ каç пуличченех хĕвел çутинче ялтăртатса тănă. Каç пулсан, ял çыннисем хĕр виллине вăрласа каясран, ăна сыхлама комендант виçĕ жандарм кăларса тăратнă. Каçĕ ăшă, лăпкă пулнă, тӳпере çăлтăрсем ялкăшнă, кĕçех тулли уйăх ярăнса тухнă... Хурлăх пусса илнĕ ял хăрушла шăплăха путнă...

Сехет хыççăн сехет шунă çапла. Унтан сасартăк, ытла инçетрех те мар, юрă çуралса тухса, калама çук вăйлăн янраса кайнă. Каллех хĕр сасси юрланă:

Ялпа сывпуллашрăмăр, хирпе сывпуллашрăмăр,
Тухрăмăр та кайрăмăр çилĕ пытарса.
Кĕтĕр, тăвансем, пире, кĕтĕр, савнисем, пире,
Таврăнăпăр тăвăл пек — тăшмана шăлса!

Çĕрле ял çине таçтан бомба пырса ӳкнĕ пекех пулнă вара ку. Çакса вĕлермелли такан патĕнчен часовойсем пĕр-пĕрин патне пырса йăпшăннă. Тĕлĕкре аташса вырткан комендант, юрра илтсе, хăйне такам пуçран çапнă пек сиксе тăнă. Пур нимĕçсем пекех тĕшмĕш пулнăскер, вăл ку юрра такан çинчи хĕр юрлать пуль тесе шутланă.

— Жандармсем! Ганс, Эрих, Фридрих! — çухăрса янă вăл.— Кам юрлать? Ăçта юрлать? Илтетĕр-и эсир мĕн те пулин?!

— Илтетпĕр, анчах камне пĕлме пултараймастпăр,— ответ панă лешсем.

— Кайса пăхăр—çакни юрламасть-и? Коммунистсенчен тем те кĕтме пулать... Вĕсем вилсен те хăрушă пирĕншĕн!

— Унта виçĕ часовой тăраççĕ, господин комендант...

— Кайса калăр, чарччăр ăна! Юрлать пулсан, тепĕр хут персе вĕлерччĕр!

— Ун пек пулма пултараймасть, господин...

— Ан вĕрентĕр мана, эпĕ сирĕнтен лайăхрах пĕлетĕп! Кайса пăхăр, тетĕп!..

Юрă çаплах илтĕннĕ, вăл чарăна пĕлмесĕр янранă. Комендант хушнипе çав самантрах пĕтĕм гарнизона ура çине тăратнă, жандармсем ниçта кайса кĕрейми чупкаланă, автомачĕсенчен унталла-кунталла ним йĕркесĕр перкелешме тытăннă. Юрă пĕр вăхăтлăха чарăннă, анчах тепĕр çур сехетрен каллех çуралса тухнă.

Çутăличченех шавланă фашистсем — ирччен те лăпланайман. Ирхине вара комендант вилнĕ хĕрĕн кĕлеткине часрах такан çинчен антарса, çырма тĕпне кайса чикме хушнă.

— Çĕр айĕнчен кăшкăраймĕ!..

Хĕре выльăх пекех, тупăксăр-мĕнсĕрех пытарнă, çитменнине — вăрттăн, ял çыннисем сисиччен.

— Халь тин сасси илтĕнеймĕ ĕнтĕ, мана кансĕрлеймĕ,— тенĕ комендант.

Хăраса пурăннине сирсе ярас, пăлхануллă самантсене манас тесе, вăл шнапс * ĕçсе лартнă. Каçалла сулăнсан, иртнĕ вăхăтсенчи пекех аккордеонне çĕклесе, пӳрчĕ умĕнчи пахчана тухнă та хăйĕн епрешке вальсĕсене калама тытăннă. Унăн пуçĕнче каллех çав пуян вырăнсенче помещик пулса пурăнас шухăшсем çуралса ӳсе пуçланă.

— Темиçе пин гектар çĕр... Çирĕм-вăтăр ял ман алăра пулать... Миллионлă доходсем!

Унăн пӳрнисем, хăйсем тĕллĕнех урăх клавишсем çине куçса, темле ташă кĕвви калама пикеннĕ. Икĕ жандарм, комендантпа пĕрлех ĕçсе кăркка аçисем пек хĕрелсе кайнăскерсем, пӳртрен чупса тухнă та ташлама тытăннă.

Анчах нумай ташлайман вĕсем.

Ял хыçĕнчен, вăрман енчен, вĕсем патне хăватлă, никам пусарса лартма пултарайман юрă янăраса çитнĕ. Иртнĕ кунсенчи пек пĕччен хĕрарăм сасси мар — пысăк, вăйлă хор юрланă ăна!

---

* Эрех (нимĕçле).

Уйăх та хĕвел пекех пурччĕ пирĕн пĕр пике,
Халĕ те асрах-ха вăл, халь те чĕререх.
Çӳçĕ — сар кăлканччĕ ун, шăпчăк пек юрлатчĕ...
Куçĕ çунтаратчĕ ун витĕр-витĕрех...

Комендант аллинчи аккордеон сасартăк тискер улшу сасăсем кăларнă та çĕре ӳкнĕ. Ташлакан жандармсем пат! чарăнса тăнă. Комендант пĕр хушă нимĕн те калама пултарайман. Юрă вăйлăран вăйлă илтĕннĕ:

Халь ăçта-ши çав хĕлхемлĕ çăлтăр пек çут куç,
Халь ăçта-ши çав хĕрĕн ӳт-пĕвĕ выртать?

— Партизансем вĕт ку! — кăшкăрса янă комендант, мĕн пулса иртнине тинех тавçăрса илсе.— Пурне те тăратăр! Халех, çак самантрах! Çавăрса илĕр, пурне те тытса килĕр!.. Хăвăртрах, сыснасем! Е хăвăра малтан вĕлерсе пĕтерессе кĕтетĕр-и?

Юрă халь аслати сасси пекех кĕрленĕ ун хăлхинче:

Хĕршĕн тавăрмашкăн тытрăмăр пăшал...

Жандармсемпе полицейскисем, автомачĕсенчен пеме хатĕрленсе, вăрман еннелле чупнă. Хăйсене унта мĕн кĕтсе тăнине пачах та пĕлмен вĕсем. Вăрман патне çитесси пĕр çĕр-çĕраллă метр юлсан вара вĕсене хирĕç пĕр харăс виçĕ пулемет шатăртатма тапратнă. Партизансем кунта тăшмансене паçăрах кĕтсе ларнă, хăйсен юратнă юрăçине çакса вĕлернĕшĕн фашистсене хаяррăн тавăрма тупа тунă вĕсем. Çавăнпа та халь вĕсен пулемечĕсемпе автомачĕсем чарусăр ĕçленĕ...

Малти жандармсем çавăнтах тек нихçан та тăраймиичулса ӳкнĕ, каяраххисем пур çĕрелле тарма тапратнă, анчах партизансен пулисем вĕсене пур çĕрте те хăваласа çитнĕ. Çав вăхăтрах масар хĕррине вырнаçтарса лартнă икĕ миномет ĕçлеме тытăннă. Йывăр минăсем, пĕрин хыççăн тепри, урам тăрăх ӳлесе иртсе, шăпах комендантăн «крепоçĕ» çине пыра-пыра ӳкнĕ. Темиçе самантран çак çăхан йăви таланкишпех хыпса илнĕ.

Ял хыçĕнче, пулемет сассисемпе хутăш, «урра» кăшкăрни янăраса кайнă. Партизансем яла пырса кĕнĕ...

Фашист шăрши те юлман вара кунта. Хĕрарăм тумне тăхăнса тарма тăнă коменданта ял çыннисем

хăйсемех хуса çитсе тытнă та хăй тутарнă такан çинех туртса çакнă. Унăн «крепоçне» çĕрпе танлаштарнă — йĕрне те хăварман.

...Хĕр-юрăçăн масар тăпри çине партизансем тепĕр куннех пĕчĕк палăк туса лартнă. Эпĕ юриех кайса куртăм ăна. Питĕ типтерлĕ, хитре тунă. Чул юпа çумне çыпăçтарнă пăхăр листи çине çапла çырса хунă:

«Партизанка Маша. Пуçне Тăван çĕршывшăн хунă. Унăн ятне те, унăн юррисене те халăх нихçан та манмĕ».



# паттӑрсем пирӗнпе юнашар...



# Ăмăрткайăк

...Иртнĕ вăрçăн малтанхи тапхăрне кăтартакан чылай романсемпе кинофильмсем пĕр евĕрлех пуçланаççĕ: пĕр-пĕр командира отпуск панă, унăн ыран канма тухса каймалла, вăл чăматанĕсене те хатĕрлесе хунă, анчах ир енне вăрçă тапранать. Ниçта та каяймасть командир, тӳрех вут-çулăм ăшне кĕрет...

Пĕр авиаци чаçĕнчи отряд командирĕн, Федот Никитич Орлов аслă лейтенантăн та çавăн пекех пулса тухнă. Тĕрлĕ сăлтавсене пула вăл темиçе çул хушши отпуска тухман, киле те кайса курайман. Хăйĕн те тăванĕсене питĕ курас килнĕ, тăванĕсем те хытă кĕтнĕ ăна. Чăн та, хăйне отпуска яма ыйтса темиçе хут та рапорт çырнă вăл, анчах командовани ăна «майлă самант» çитессе кĕтме хушнă. Юлашкинчен, çапах та, ирĕк панă. 1941 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнче, шăматкун, вăл пур документсене те алла илнĕ, Ростовран Шупашкара çитмелли чугун çул билечĕ те планшетра выртнă унăн. Ак ĕнтĕ, тепĕр ик-виç кунтан вăл Чăваш республикине, хăй çуралса ӳснĕ Кĕçĕн Ямаша çитет, тахçантанпах курман тăванĕсемпе, тус-тантăшĕсемпе пĕрле пулать!

Тĕрĕссипе, Федот Орлов шăматкунах, документсене

илсенех тухса кайма пултарнă, анчах çав кун вĕсен чаçĕ вырнаçнă çĕре Саратоври музкомеди театрĕ пынăмĕн, ытармалла мар хитре афишăсем каçхине «Сильва» опереттăна пырса курма йыхăрнă. Аслă лейтенант хаваслă, юрăллă-ташăллă спектакльсене курма юратнă, çавăнпа та кĕçĕрлĕхе юлас, тенĕ.

— Малта — пĕр уйăх, канмалăх пур. Тата театрта пулни те — канниех-çке вăл!

Каç пуличчен вăхăта епле те пулин ирттерес тесе, Орлов пăшал çакса инçетри мар вăрманта çӳрет, анчах нимĕнле кайăк та курмасть, ун вырăнне питĕ вăйлă çумăр айне лексе лачкам пулать те киле çав тери тарăхса таврăнать. Çапах та «Сильва» ун кăмăлне тӳрлетет, спектакль хыççăн вăл клубра ташлама та юлать, киле çур çĕр иртсен чылайран тин таврăнать те вилнĕ пекех çывăрса каять.

Ирхине ирех Орлов сасартăк сирена питĕ пăлхавлăн ӳленине илтсе вăранать. Тӳрех сиксе тăрса чӳрече витĕр пăхать. Тулта çанталăк ăмăр, тӳпене тĕксĕм кăвак пĕлĕтсем карса илнĕ, вĕтĕ-вĕтĕ çумăр пĕрĕхет. Сирена çаплах ӳлет...

— Мĕн эсремечĕ вара ку,— мăкăртатса илет аслă лейтенант,— вырсарникун тревога тăвас шухăш кам ухмахĕн пуçне пырса кĕнĕ-ши? Капла эпĕ паян та каяймăп! Эх, ĕнерех тухса таппмаллаччĕ манăн!..

Нимĕн тума та çук — чаçре тревога тунă пулсан, самолетсем патне васкас, вĕсене халех вĕçме хатĕрлес пулать. Орлов хăвăрт кăна тумланать, тревога сигналĕпе кайнă чух илмелли чăматана тытать те аэродрома чупать. Çул çинче вăл ытти летчиксем те, çавăн пек чăматансене тытса, аэродром еннелле чупнине курать.

Никам та нимĕн те пĕлмен-ха. Пурте: вĕренӳ йĕркипе тăвакан тревога ку, тесе шутланă. Ун пеккисем нумая пымаççĕ — пĕр икĕ сехетренех «отбой» пулать. Анчах хальхинче отбой пулман, пулма та пултарайман çав. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче, ирхине ирех тунă тревога питĕ вăрăма тăсăлнă. Çав тери вăрăм пулнă вăл тревога, тăватă çула яхăн тăсăлнă...

Сирена ӳлеме тытăнсан тепĕр вунпилĕк-çирĕм минутранах пур экипажсен, отрядсемпе эскадрильйăсен командирĕсене те командăй пункта пухнă.

— Юлташсем, вăрçă пуçланнă! — тенĕ полк командирĕ, ассăн сывласа ярса.— Вăрçă...

Çак хăрушă сăмахсем летчиксен пуçне ниепле те шăнăçасшăн пулман. Вăрçă? Мĕнле вăрçă? Кампа? Мĕншĕн? Пулма пултараймасть!..

Анчах полк командирĕ малалла каланă:

— Паян ирхине тăватă сехетре фашистла Германи чăн-чăн хурахла, вăрçă пуçласси çинчен пĕлтермесĕр, пирĕн Совет Союзне тапăннă. Паянах нимĕç самолечĕсем пирĕн мирлĕ хуласем çине бомбăсем тăкнă, фашистсен танковăй тата механизированнăй чаçĕсем пирĕн çĕр çине талпăнса кĕнĕ. Пире боевой вĕçеве хатĕрленсе тăма хушакан приказ килчĕ. Халлĕхе эп пĕлни çак кăна. Пурте хăвăрăн карапсем патне кайăр! Вĕçме хатĕрленсе çитни çинчен хăвăрт пĕлтерĕр!

...Федот Орлов командлăй пунктран самолетсем тăнă çĕре таврăнсан, ăна хăйĕн отрядĕнчи юлташĕсем хупăрласа илнĕ, вĕсем нимĕн те пĕлмен-ха, çавăнпа та самолетсене ахаль вĕçев валли çеç хатĕрленĕ. Анчах отряд командирĕ хăй тин кăна полк командирĕнчен мĕн илтни çинчен каласа парсан, летчиксен сăнĕсем те, кăмăлĕсем те тăруках улшăннă.

— Мĕнех, эппин... Тӳпелĕпĕр фашистсене! Эпир парăнас çук! — тенĕ çеç хăшĕсем.

Орлов хушнипе, летчиксем кашни самолет çумне икçĕр аллă килограмм таякан сакăршар бомба çакнă, пулеметсем валли тулли боекомплектсем илсе пынă, çумри хĕçпăшала, противогазсене, кашни хăйпе пĕрле илмелли япаласене тĕрĕсленĕ. Çак пĕтĕм ĕç хăвăрт, анчах йĕркеллĕ, тĕплĕ пулса пынă.

Часах пур экипажсем те, çапăçăва кайма хатĕрленсе çитсе, аэродромăн анлă хирĕнче пĕр строй пулса тăнă. Полк командирĕпе комиссарĕ кĕске, анчах питĕ хĕрӳллĕ сăмахсем каланă:

— Çапăçу Хура тинĕсрен Балтика таран сарăлса пырать. Партипе правительство пирĕн Çарпа пĕтĕм совет халăхне нимĕç фашисчĕсене, ку чухнехи çынçиенсене хирĕç Отечественнăй вăрçа чĕнеççĕ. Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç! Тăшмана çапса аркататпăрах!

— Çак хăрушă сехетре, Тăван çĕршыв умне пысăк хăрушлăх тухса тăнă самантра, Ленин ĕçĕшĕн, тăван парти ĕçĕшĕн, хамăр халăхшăн юлашки сывлăш тухиччен, тумлам юн юлмиччен çапăçма тупа тăвар!

— Тупа тăватпăр! — кĕрлесе кайнă аэродромра летчиксен хăватлă сасси...

Карапсем патне пурте шăппăн, шăв-шавсăр таврăннă. Кĕçех сывлăшалла симĕс ракета чашкăрса хăпарнă. Чăн малтан сывлăша полк командирĕ çĕкленнĕ те хĕвеланăçнелле çул тытнă. Ун хыççăн — ыттисем, эскадрилья хыççăн эскадрилья, отряд хыççăн отряд.

Аслă лейтенант Федот Орлов та вĕçнĕ, вăл хăйĕн отрячĕ умĕн пынă. Вăл питĕ хăватлă, ТБ-3 йышши каçхи бомбардировщик çинче вĕçнĕ, ку карапа пурте «сенкер двойка» тенĕ, мĕншĕн тесен унăн хӳри çинче пысăк цифра — «2» курăнса тăнă, ăна хитре сенкер сăрпа ӳкерсе хунă. Ку карап Орлов аллине Николай Гастелло — вăрçă пуçламăшĕнчех пĕтĕм тĕнчипе чапа тухнă Гастелло капитанран куçнă. Вăрçăччен чылай малтан Гастелло çак «сенкер двойка» командирĕ пулнă, Орлов Гастелло экипажĕнче «сылтăмри летчик», унăн пĕрремĕш помощникĕ пулса тăнă. Вĕсем питĕ туслă пурăннă, канмалли вăхăтсене те пĕрле ирттернĕ, анчах службăра Николай Францевич Гастелло хăйне пăхăнакан летчиксене пурне те, вăл шутра Орлова та, çирĕп тытнă, «сĕврĕлме» паман, куллен çине тăрса вĕрентнĕ. Шăп та Гастелло вĕрентнипе Федот Орлов ăста летчик пулса çитнĕ. Гастеллăна урăх çĕре куçарсан, Орлов «сенкер двойка» командирĕ пулса тăнă.

...Самолетсем Хĕвеланăçнелле, вăрçă вут-çулăмĕ хăрушла кĕрленĕ çĕрелле вĕçнĕ. Аялта, çĕр çинче, ялсем, хуласем темĕн пысăкăш кăвайтсем пек ялкăшса çуннă. Çӳлтен пăхсан, уйрăм ял-хуласем мар, пĕтĕм çĕр çуннăн туйăннă. Летчиксен чĕрисем тарăхнипе, кӳреннипе кăкăртан сиксе тухас пек тапнă. Тăшман пирĕн çĕр çинче! Фашист пирĕн тулăх уй-хирсене таптать, хуласемпе ялсене çунтарать! Гитлер çарĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр хĕвелтухăçнелле шăваççĕ...

— Аркатас пулать вĕсене, çунтарас, тĕп тăвас! Пурне те, пĕр çын юлмиччен! — Çапла шухăшланă кашни летчик. Вĕсен аллисем самолет штурвалĕсене тата хытăрах, çирĕпрех тытнă...

Федот Орловăн çапăçу опычĕ пулнă ĕнтĕ. Сахалах та пулман унăн опычĕ. Вăл Хĕвелтухăçĕнче çапăçнă, Бессарабие ирĕке кăларнă çĕрте пулнă, Карельски перешеекра шурă финсене тӳпеленĕ. Ку вăрçăра вăл тăшмана тата хытăрах пыра-пыра çапать ĕнтĕ. Ăна пуçĕпех аркатиччен! Çĕнтериччен!

* * *

Сăр шывне юхса кĕрекен Выл хĕрринчи пĕчĕкçеç ялта, Кĕçĕн Ямашра, питĕ чухăн çемьере çуралса ӳснĕ вăл. Ашшĕ, пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен инвалид пулса таврăннăскер, вăрахчен чирлесе пурăннă та вилнĕ. Амăшĕ тăвата ачапа юлнă. Мĕнле пăхса ӳстермелле, мĕнле çын тумалла вĕсене тăлăх арăмăн?

Аслă ачине усрава панă, анчах пурнăç çăмăлланман. Хĕрарăмăн ирĕксĕрех пĕр ват урçана качча тухма тивнĕ. Капла та ырриех пулман — усал старик кашни ĕçмессеренех «ют ачасене» хĕнеме тытăннă. Пуринчен ытла Федота, аслăраххине, лекнĕ. Çавăнпа та вăл çак килтен мĕнле тухса тарас-ши, тесе çеç пурăннă.

1921 çулхи выçлăха эпир, ваттисем, пит лайăх астăватпăр. Пуринчен ытла ачасем асап курчĕç ун чух. Совет правительстви, Коммунистсен партийĕ, унăн çулпуçĕ В. И. Ленин выçăпа аптранисене пулăшма мĕн тума май пуррине пĕтĕмпех турĕç. Пин-пин ачана çăлса хăварчĕç, кайран халăхшăн усăллă çынсем пулма май туса пачĕç вĕсем. Пин-пин ачана выçă вилесрен тĕрлĕ çĕрелле илсе кайса усрарĕç. Ыттисемпе пĕрле, Кĕçĕн Ямаш ачи Хветут та Мускав çывăхĕнчи Томилино станцинчи ачасен çуртне лекнĕ. Лайăх пăхнă вĕсене унта. Тăрантарнă, тумлантарнă, вĕрентнĕ. Пушă вăхăтсенче çывăхри вăрманта уçăлса çӳренĕ...

Пĕррехинче, таптăшĕсемпе пĕрле вăрмана шаларах кĕрсен, Хветут пĕр пысăк уçланкăра йĕркипе çӳллĕ те сарлака брезент палаткăсем тăнине, вĕсем тавра сăран пиншаксем, сăран шлемсем тăхăннă çынсем çӳренине курнă. Çав «сăран çынсем» палаткăсенчен темĕн пысăкăш кайăксем евĕрлĕ, çунатлă машинсене тĕртсе кăларнă.

— Мĕнле машинсем кусем? — тĕлĕнсе ыйтнă Хветут.

— Ероплансем, — тенĕ тахăшĕ, — сывлăшра вĕçекен машинсем...

Унччен те пулман, çав тĕлĕнтермĕш машинсем кĕрлеме тытăннă, сиккелесе малалла ыткăннă та пĕрин хыççăн тепри майĕпе сывлăшалла çĕкленме тытăннă. Хветут чĕлхесĕр пулнă пек, пĕр сăмах та калаймасăр пăхса тăнă. Çавăн чухнехи пек нихçан та тĕлĕнменччĕ вăл...

— Ну, пулаççĕ те çынсем! Пĕлĕтелле хăпарма хăрамаççĕ! — тенĕ.

Кам пĕлет, тен, шăп çавăн чух çуралнă пуль Хветут пуçĕнче летчик пулас ĕмĕт! Çаплах пуль çав. Çакăн хыççăн вăл самолетсем çинчен шухăшламан кун та пулман. Тĕлĕкре те — хăй калана тăрăх — самолетпа питĕ çӳлте вĕçсе çӳренине курнă.

...Выçлăх çул хыççăн киле таврăнсан, каллех нумай хура-шур, нуша курмалла пулнă-ха Хветутăн. Хăй шкулта вĕреннĕ пулин те, час-часах ыйткаласа çӳренĕ. Çулла пиччĕшĕпе пĕрле кĕтӳ кĕтнĕ. Ун чухне кĕтӳçĕ чи хисепсĕр çын пулнă. Пуян ачисем кĕтӳçрен кулнă, унран мăшкăлланă. Каччă шутне кĕме пуçласан та, хĕрсем кĕтӳçĕпе сăмах хушасшăн пулман...

Пĕрре, çуркунне, Кĕçĕн Ямаш çийĕпе пĕчĕк кăна самолет вĕçсе иртнĕ. Унччен ку ял çыннисем самолет таврашĕ курман. Пĕтĕм ял сиксе тухнă ăна курма, вăл куçран çухаличченех ун хыççăн чупнă. Ват карчăксем «шуйттан вĕçсе килчĕ, тĕнче пĕтесси çитрĕ», тесе, каçса кайса сăхсăхнă... Хветут чĕринче çав «Р-1» самолет вĕçевçĕ пулас кăмăла çĕнĕрен хускатса чĕртсе янă. Вăл шкулта самолет моделĕсем тума тытăннă. Малтан ĕç тухсах кайман, юлашкинчен унăн моделĕ алран вĕçерĕнсе сывлăшалла хăпарсан вара калама та çук хĕпěртенĕ. Çав модель çинче хăй ларса пынă пекех туйăннă ăна!

...Вăхăт шунă, Хветут ӳснĕ, ШКМра вĕренсе тухнă, комсомола та кĕнĕ, Чулхулари ФЗОна кайса вырнаçнă. Унта... супăнь пĕçерекен ăстасем хатĕрленĕ. Ку специальность кăмăла кайман ачана, анчах вĕренмех тивнĕ — ФЗОра апат та çитернĕ, тумтир те панă, общежити те пулнă. Пĕр пус та тӳлес çук. Вĕренсе тухса заводра ĕçлеме тытăнсан, Майăн пĕрремĕшĕнче Федот завод коллективĕпе пĕрле демонстрацие кайнă. Сасартăк демонстрантсен пуçĕ çийĕпе, аялтанах, самолет вирхĕнсе иртнĕ, çӳлтен аялалла листовкăсем сапнă. Çакна курсан, каччăн летчик пулас кăмăлĕ тепĕр хут çĕкленнĕ.

Вăхăт нумай та иртмен — вăл Чулхула урамĕнче леш Томилино станцинчи летчиксем пек тумланнă çынна курнă,— хăй сăран шлемпа, «молниллĕ» сăран пиншакпа пулнă, уринче — краги. Сиксе тухас пек тапма тытăннă чăваш ачин чĕри. Унăн çак палламан çынпа калаçасси килнĕ. Çывăха пыма хăяймасăр, ун

хыççăн утнă. Урăх ниçталла та пăхман, хирĕç пулакансене чавсипе тĕрткелесе сирнĕ.

— Куçран вĕçертес марччĕ ăна!..

Çавăн пек темиçе квартал кайсан, леш летчик тăрук чарăнса тăнă та Федота куçран шăтарасла пăхса ыйтнă:

— Эс мĕншĕн пĕрмай ан хыççăн чупатăн, йĕкĕт? Мĕн кирлĕ сана?

Çухалса кайнă Федот ним шухăшласа тăмасăр перса янă:

— Манăн летчик пулас килет! Сан пек!

Летчик ун çине питĕ тĕлĕнсе пăхнă, унтан йăл кулса илнĕ.

— Ыран Культура çуртне пыр эппин,—тенĕ вăл,— унта çар ĕçĕн кабинечĕ пур. Эпĕ унта пулатăп, иксĕмĕр калаçса татăлăпăр. Килĕшетĕн-и? Юрать апла пулсан. Халь ĕнтĕ ман хыççăн сыщик пек ан чуп...

Тепĕр кунне вĕсем чăнах та тĕл пулнă. Орлов, çав тери пăлханса, хăй мĕн ачаранпах летчик пуласси çинчен ĕмĕтленсе пурăнни çинчен каласа панă.

— Мухтатăп сан ĕмĕтне,— тенĕ летчик,— аван ĕмĕт. Пирĕн çĕршыва летчиксем нумай кирлĕ. Паянтан пуçласа пирĕн занятисене çӳре, майĕпе вĕренĕпĕр...

Авиакружокра Орлов пуринчен те ытларах тăрăшса вĕренекенни пулнă. Занятие никамран малтан пырса ларнă. Пушă вăхăтра пĕрмай авиаци çинчен, паллă летчиксем çинчен çырнă кĕнекесене вуланă. Авиаторсен пурнăçне кăтартакан кинофильмсене темиçешер хут пăхнă.

Культура çурчĕн картишне ниме юрăхсăр кивĕ самолет фюзеляжне илсе пырса лартнă-мĕн. Заняти хыççăн кружок членĕсем киле кайнă, Федот вара пĕчченех юлнă та, самолет ăшне кĕрсе ларса, унта мĕн пуррине тыта-тыта пăхнă, педальсем çине пуснă, штурвалне çавăркаланă. Хăй вĕçсе пынă пекех туйăннă ăна!

Осоавиахимра планеристсен кружокĕ те пулнă. Федот çав кружока та çырăнса вĕренме тытăннă. Унта шăпах леш Суханов летчик, Федот пĕлтĕр Чулхула урамĕнче «сыщик пек» йĕрлесе пынă çын вĕрентнĕ.

Планерпа хăй тĕллĕн ик-виç хут вĕçсенех, Федота хăй чăн-чăн летчик пулса çитнĕ пекех туйăннă çав.

Юлашки укçине пухса сăран шлем, портупейлă чĕн пиçиххи, краги туяннă. Мĕн тăвас тетĕн — çамрăклăх! Каярахпа чи лайăх вĕреннĕ кружок членĕсенчен летчиксен шкулне яма тивĕçлĕ кандидатсене суйласа илнĕ. Вĕсем хушшинче Федот Орлов та пулнă. 1932 çулхи май уйăхĕнче вăл Ейск хулине, тинĕс-çар летчикĕсен шкулне кайнă.

Çамрăк çыннăн çутă ĕмĕчĕ майĕпе тулса пынă...

Вĕренӳ çулĕсем хăвăрт, сисĕнмесĕрех иртнĕ. Кĕçĕн Ямаш кĕтӳçи, чухăн чăваш ачи Совет Çĕршывĕн сывлăшри çарĕн воинĕ пулса тăнă...

* * *

...Халь ĕнтĕ çав çĕршыва, Федот Орлова чи телейлĕ çын тунă Тăван çĕршыва хаяр та тискер, пире хурахла килсе тапăннă тăшманран, фашистсенчен хӳтĕлемелле пулнă. Анчах çав тăшманран, фашистсенчен хӳтĕленмелле çеç мар, ăна хăйне ним хĕрхенмесĕр, хаяррăн пыра-пыра çапмалла, çапмалла çеç те мар — аркатмалла, тĕп тумалла. Ан пултăр вăл пирĕн çĕр çинче! Тăшмана пĕтерме вăя та, кирлĕ пулсан — пурнăçа та хĕрхенмелле мар!..

Малтанхи кунсенче Ф. Н. Орлов отрядĕнчи экипажсем тăшман çине бомбăсем пăрахма Осиповичи хулинчи аэродромран вĕçнĕ. Вĕсем Барановичи таврашĕнчи шоссе тăрăх шăвакан тăшман пехотине, танк колоннисене аркатнă. Унтан Минскран сылтăмарахри шоссе çине вĕçнĕ. Ун чух Белорусси столици вут-çулăмра пулнă ĕнтĕ. Çавна курсан, чĕре çурăлас пек ыратнă...

Çав кунсенче Орлова питĕ пысăк хуйхă пырса çапнă: унăн чи çывăх тусĕ, учителĕ, наставникĕ Гастелло капитан вилнĕ иккен. Ку вăл вăрçăн пиллĕкмĕш кунĕнче пулнă. Гастелло хăйне пăхăнакан звенона нимĕç танкĕсем йышлăн пухăннă тĕле илсе кайнă,— хăй, паллах, малта пынă. Тăшман зениткисем урнă пекех персе тăнă пулин те, экипажсем бомбăсене тĕп-тĕрĕс, кирлĕ тĕле пăрахнă. Задание пурнăçа кĕртсен вĕсем каялла килме тухнă, анчах çав самантра Гастелло самолечĕн бензобакне тăшман снарячĕ пырса тивнĕ, самолет çунма тытăннă... Экипаж парашютсемпе сикме пултарнă, анчах ун пек тусан вăл нимĕçсен тыткăнне

лекнĕ пулĕччĕ. Ку вара вилĕмрен те хăрушăрах! Совет летчикĕсем тыткăна каймаççĕ!.. Çунакан самолет звенопаран уйрăлнă та пĕр çĕре пухăннă танксем, автомашинсем, бензин цистернисем çинелле чăмнă. Темиçе самантранах çав вырăнта калама та çук хăватлă пушар тапраннă...

Ниепле те ĕненес килмен Орловăн хăйĕн хаклă тусĕ Гастелло вилнине. «Пулма пултараймасть! Тĕрĕс мар пуль ку!» — тенĕ вăл. Анчах хыпарĕ тĕрĕсех пулнă çав.

Çав кунах, тăшман çине бомбăсем пăрахма тухса каяс умĕн, Орлов хăйĕн отрядĕнчи экипажсене строя тăратса хĕрӳллĕ сăмах каланă:

— Çак кунсенче, фашистла çĕлен-калтасемпе çапăçса, пирĕн командир пулнă Гастелло капитан паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Пирĕн командирпа унăн тусĕсем çунса кайнă çулăм малашне пирĕншĕн кашни вĕçеврех çул кăтартса пыракан çут çăлтăр вырăнне пултăр! Гастелло сăнарĕ яланах пирĕн чĕрере пултăр!..

Темиçе минутран экипажсем фронт еннелле вĕçсе кайнă. Вĕсене паян тăшман аэродромĕсенчен пĕрине аркатма хушнă. Вĕçев ăнăçлă иртнĕ — фашист самолечĕсем тăватă çĕрте çуннă... Тата ик-виç кунтан Орлов отрячĕ нимĕçсен Бобруйскри аэродромне кайса тапăннă, унта нумай самолетсене пĕтернĕ, бензин складне сывлăшалла сиктернĕ. Каялла килнĕ чух, тул çутăлнă вăхăтра, Орлов стрелокĕсем нимĕçсен ăнсăртран тĕл пулнă пĕр çăханне пулеметсенчен персе çапса антарнă.

Тепĕр каçхине икĕ тонна бомба çакнă «сенкер двойка», тăшман тылĕнчи чугун çул станцине пит ăнăçлă тапăнса, унта тăнă темиçе состава аркатнă — вĕсем çинче танксем, боеприпас, бензин пулнă. Станцире çав тери вăйлă пушар тапраннă, вăл вуншар километр аякка вĕçсе кайсан та курăннă. Çав каçхине экипаж ултă сехет ытла сывлăшра пулнă. Хамăрăн аэродрома чиперех çитсе ларсан, карапа снаряд осколокĕсем вунă-вуникĕ çĕртен шăтарнине асăрханă, пĕр шăтăкĕ çын кĕлетки кĕмеллех пысăк пулнă.

Çавăн пек хаяррăн тавăрма тытăннă «сенкер двойка» хăйĕн командирĕ пулнă Гастелло капитан вилĕмĕшĕн, тăшман çунтарса янă хамăрăн хуласемпе ялсемшĕн, пирĕн çынсен куççулĕшĕн.

Тăшман çине бомбăсем пăрахма кашни каçах вĕçнĕ...

Çав кунсенченех Орлов тăшманăн инçетри тылне кайса десант антарса хăварнă. Питĕ йывăр пулнă вăл вĕçев, çапах та ăста летчикăн экипажĕ командовани хушнине тĕп-тĕрĕс туса тăван аэродрома йĕркеллех çитсе ларнă.

...Авиаци чаçне çапла пĕлтернĕ: Смоленскри аэродромра нимĕç самолечĕсем нумай, ирхине вĕсем пирĕн çарсене тапăнма палăртнă. Епле пулсан та, ку аэродрома стройран кăлармалла!

Çак ĕçе тума виçĕ экипажа хушнă, вĕсенчен пĕри — Федот Орлов экипажĕ пулнă. Вăхăт нумай та иртмен, виçĕ йывăр бомбардировщик сĕм-тĕттĕмре сывлăша çĕкленнĕ. Нимĕçсем вĕсене хăрушла вăйлă вут-çулăмпа кĕтсе илнĕ, анчах чарайман, карапсем тĕл (цель) çине тĕп-тĕрĕс пырса тухса бомбăсем тăкнă. Кайран, фронт штабĕнчен аэрофотосъемка даннăйĕсем пырсан, çак паллă пулнă: 1941 çулхи августăн 14-мĕшĕнче, çĕрле, Смоленск аэродромĕнче тăшманăн 50 самолечĕ ытла çунса кайнă...

Вăрçă пуçланнăранпа икĕ уйăх çитнĕ кун (каллех çĕрле) Орлов экипажĕ Могилев тăрăхĕнчи партизансем валли боеприпассем антарса хăварнă. Каялла таврăннă чух, тĕтре пирки хăйсен аэродромĕ йышăнманнипе, ахаль уя анса ларма тивнĕ. Тĕтре сирĕлсен базăна таврăннă та çĕнĕ задани илнĕ:

— Халех Сухиничи аэродромне каятăр та, унта десант лартса тăшман тылне вĕçетĕр...

* * *

Вĕçев хыççăн вĕçев, задани хыççăн задани: кĕçĕр тăшман аэродромне аркатмалла, ыран каç пĕр-пĕр станцире пухăннă тăшман эшелонĕсене çунтармалла. Орловăн «сенкер двойки» кашни каçах сывлăшра темиçешер сехет «çакăнса тăнă»...

Кивелнĕ моторсем вырăнне çĕннисене лартнă хушăра çеç темиçе кун çĕр çинче пулнă Орлов, унтан каллех хăватлă ăмăрткайăк пек вĕçсе хăпарнă, тăшмана куллен сиен кӳнĕ.

Çавăн пек ырми-канми вĕçнĕ, фашистсем çине тăтăшах бомбăсем тăкнă кунсенчех, Орлов пурнăçĕнче пы-

сăк событи пулнă. Çанталăк питĕ начар пирки вĕçме май килмен каçхине, фронтри артистсен концерчĕ хыççăн, авиачаçре парти пухăвĕ пулса иртнĕ.

— Вăл пухăва эпĕ нихçан та манас çук,— аса илсе çырать Орлов хăйĕн «Месть голубой двойки» ятлă кĕнекинче,— унта мана тата ытти чылай летчиксене, механиксене, штурмансене Коммунистсен партине илчĕç. Эпир пурте фашистсене хирĕç вĕсене пуçĕпех аркатиччен, тĕп тăвиччен, хамăрăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма сăмах парса тупа турăмăр...

Аслă Ленин партине кĕнĕ чух çавăн пек тупа туса панă сăмаха Орлов та, ытти летчиксем те кайран пиг çирĕп тытса пынă.

...«Сенкер двойкăн» кашни вĕçевĕ çинчен уйрăм очерк çырма пулать. Федот Никитич вĕсем çинчен хăй кĕнекинче самаях тĕплĕ каласа кăтартнă. Пурĕ унăн 144 «боевой вылет» пулнă — пурте çĕрле, сĕм-тĕттĕмре. Çавăн чухлĕ вĕçсе вăл тăшман çине 250 тонна таран бомба пăрахнă, аэродромсенче нимĕçсенне 60 самолет ытла çунтарса янă, 100 таран танкпа автомашина, 17 эшелон, боеприпассемпе бензин упранакан темиçе склад аркатнă. «Сенкер двойка» пăрахнă бомбăсенчен, унăн пулемечĕсенчен тăшман салтакĕсемпе офицерĕсем мĕн чухлĕ пĕтнине, паллах, шута илме çук.

Çапах та манăн Орловпа унăн юлташĕсен хăшпĕр вĕçевĕсем çинчен каласа парассăм килет.

...Пĕррехинче, Орлов отрячĕ Ярцево хули патĕнче пухăннă фашист çарĕсене бомбăлама кайсан, тăшман вĕсене зениткăсенчен калама та çук хытă персе кĕтсе илнĕ. Çĕр çинчи вăйлă прожекторсем самолетсене хăйсен «хыпкăчисенчен» кăлармаи. Анчах пирĕн летчиксем малтан палăртнă боевой курспах пынă. Кирлĕ тĕле çитсе бомбăсем пăрахнă. Çавăн чух вара, сасартăк, «сенкер двойкăн» сылтăмри моторĕсенчен пĕрин оборочĕсем чакма тытăннă — снаряд лекнĕ пулмалла. Самолет кашни самантрах сиксе арканса кайма пултарнă, вара... вара мĕн пуласси паллă ĕнтĕ!

Çапах та чи хăрушши пулман. Каялла виçĕ моторпа таврăннă. Иккĕмĕш летчик пичĕ чĕп-чĕр юн пулнă — ăна снаряд осколокĕ тивнĕ, анчах та летчик пит тăрăх юн мар, тар юхать тесе шутланă иккен...

Орлов экипажĕ час-часах тăшман тылне вĕçсе партизансем валли боеприпассем, тумтир, медикаментсем,

листовкăсем пăрахса панă. Пĕррехинче, партизансем малтан кăтартнă вырăнтан куçса кайнă пирки (вĕсене фашистсем хĕссе кăларнă), «сенкер двойка» тăшман йышăннă вырăна пырса тухнă. Хурлăхлă вĕçленме пултарнă çак вĕçев, анчах опытлă летчик, çĕр çинче ырă марри сиссе, аяккалла пăрăнма ĕлкĕрнĕ, пĕр сехете яхăн вĕçсе çӳренĕ хыççăн çапах та партизансене шыраса тупнă та вĕсем валли илсе килнĕ груза тĕп-тĕрĕс антарнă...

1941 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче Сольцы хулинчи аэродрома бомбăсемпе çĕмĕрме кайсан, питĕ йывăр пулнă. Нимĕçсем, пирĕн самолетсем килнине сиссе, пĕтĕм пĕлĕте прожекторсемпе кăнтăрлахи пек çутатса, зениткăсенчен калама çук хаяррăн пеме тытăннă.

— Самолет тавра снарядсем çурăлнă пек те мар, таврари сывлăш хăй çурăлса çуннă пек туйăнчĕ,— аса илет Орлов.— Çав тамăкран çăлăнса тухассăн туйăнманччĕ...

Çапах та бомбăсене кирлĕ çĕре пăрахса, чиперех таврăннă. Аэродромра ăна сывлăшри 6-мĕш армин командующийĕ кĕтсе илнĕ. Вĕçев мĕнлерех иртни çинчен ыйтса пĕлсенех, Орлова çапла каланă:

— Халь ĕнтĕ ытла ун пекех хăрушă мар, лăпкăрах вырăна бомбăлама каятăр. Унта зениткăсем те сахалтарах. Ку тĕл малтанхи пек инçе те мар, анчах бомбисене ытларах илĕр, осколочнăйсем нумайтарах пулччăр. Тата патронсене те ан хĕрхенĕр... Халь кăна партизансем пĕлтерчĕç: Ситно ятлă пункта Испанирен «сенкер дивизи» килсе çитнĕ. Вырăс çĕрĕ çинче пурăнма парас пулмасть вĕсене, тĕп тума пĕтĕм вăя хурса тăрăшас пулать!

Кăшт тăхтасан, икĕ экипаж Испани фашисчĕсене, вĕсен тискер кайăкла пуçлăхĕ Франко гитлеровецсене пулăшма янă салтаксене «хăналама» тухса кайнă. Вĕсенчен пĕри — Орлов экипажĕ пулнă. Патне çитсен вара Франко «паттăрĕсен» пуçĕ çине пĕр бомба юлмиччен тăкнă, пулемет лентисенче пĕр патрон юлмиччен пенĕ. Тепĕр кунне авиачаçе летчиксен ĕçĕ пирки çапла пĕлтернĕ: пирĕн çĕрлехи бомбардировщиксем тăрук пырса тапăннипе испанецсем хушшинче ним йĕркесĕр паника пуçланнă, «сенкер дивизи» салтакĕсем нумайăшĕ çавăнтах пĕтнĕ, нумайăшне пирĕн çав каçхине наступлени туса пыракан подразделенисем тыткăна илнĕ, тыт-

кăна лекнисем хушшинче чылайăшĕ аялти кĕпе-йĕмпе кăна пулнă...

Çакăншăн икĕ экипаж членĕсене пурне те правительство наградисем пама тăратнă.

Тепĕр кaçхине, ноябрĕн 5-мĕшĕнче, Орлов тăвату «боевой вылет» тунă, тăшман йышăннă чугун çул станцине бомбăланă, боеприпассем тиенĕ икĕ состава, бензин цистернисене сирпĕтнĕ. «Ĕç каçĕ» ăнăçлă иртнĕ. Анчах тул çутăлас умĕн Орлов арми командующин КПне * хăй задание мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен пĕлтерме кайсан, генерал ăна, карттă çине кăтартса, лăпкăн каланă:

— Ак çакăнта, кĕпертен инçе те мар, нимĕçсен пит пысăк бензохранилище пур, тесе пĕлтерчĕç. Çавна халех çунтарса ярас пулать... Эп пĕлетĕп, эс паян питĕ ывăннă, тăватă хут вĕçнĕ, çавăнпа та приказ памастăп, ыйтатăп кăна: вĕçсе кил тепре!

— Есть! — тенĕ Орлов, ывăнни çинчен манса.

Ир енне нимĕçсен бензохранилищинчен нимĕн те юлман...

Тепринче Орлов экипажĕ гитлеровецсен çар пурлăхĕ нумай пухăннă чугун çул станцине бомбăласа таврăннă та, халех тата вĕçес тесе çĕнĕ бомбăсем çакма тытăннă. Çав вăхăтра самолет патне çăмăл автомобиль пырса тăнă, машинăран ахаль çĕлĕксем мар, папахăсем тăхăннă çынсем тухнă.

— Пысăк начальниксем килчĕç... Мĕн тума-ши? — шухăшланă та Орлов, çарти йĕрке тăрăх вĕсем патнелле хăвăрт пырса экипаж вĕçсе кайма хатĕрленни, бомбăсем çакни çинчен рапортланă.

— Мĕнле бомбăсем çакатăр? Ăçта каятăр? — ыйтнă арми командующийĕ.— Отставить! Соткăсене каялла илсе хурăр, вĕсен вырăнне шултрарах калибрлисене, фугаслисене çакăр. Эсир, Орлов юлташ, халех урăх çĕре вĕçсе каятăр. Партизансем пĕлтернĕ тăрăх, кĕçĕр нимĕçсен командованийĕ пĕр çĕрте раштав ячĕпе пысăк банкет тăвать. Аслă командирсем те нумай пулаççĕ. Хăнисем пуçтарăна пуçланă ĕнтĕ. Эсир пынă тĕле шăпах пухăнса çитеççĕ. Вĕсен сĕтелĕсем çинче ĕçмелли-çимеллисенчен тем те пур, вырăссен «тăварланă хăярĕ» çеç çитмест, тет. Çав хăярсене леçсе парас пулать сирĕн вĕсене...— шӳтлесе илнĕ юлашкинчен генерал.

---

* КП — командный пункт.

Орлов экипажӗ малтан ҫакнӑ вӗтӗрех бомбӑсене хӑвӑрт кӑна вӗҫертсе илнӗ те вӗсен вырӑнне 250-шар килограмм таякан фугаслӑ вунӑ бомба ҫакнӑ, унсӑр пуҫне тата вакрах бомбӑсем илнӗ. Вӗҫев йывӑр пулнӑ, ҫанталӑкӗ усал, ҫитменнине тата, палӑртнӑ пункт патне ҫывхарнӑ чух ҫӗр ҫинчен тӑшман зениткисем пит хытӑ пеме тытӑннӑ. Ҫапах та Орлов кирлӗ ҫӗре ҫитнӗ те бомбӑсене шӑп та шай «банкет ҫурчӗ» ҫине пӑрахнӑ. Экипажпа пӗрле, ун ӗҫне тӗрӗслекен вырӑнне пулса, арми штурманӗ Соколов полковник ларса пынӑ-мӗн, вӑл, бомбӑсем тӗп-тӗрӗс лекнӗшӗн хӗпӗртесе, калаҫмалли аппарат урлӑ кӑшкӑрнӑ:

— Маттур, Орлов, маттур! Лайӑх лектертӗн!..

Иккӗмӗш заход тусан, юлашки бомбӑсене, кӗҫӗнрех калибрлӑ фугассене пӑрахнӑ. Аялтан вӑйлӑ прожекторсем ҫутатнӑ, самолет тавра вӗҫӗмсӗр снаряд ҫурӑлнӑ, ҫапах та Орлов хӑрушлӑхран аяккалла пӑрӑнма ӗлкӗрсе, хамӑр еннелле вӗҫнӗ.

Ҫав каҫах, тул ҫутӑличчен, экипаж Лычково станцине кайса, тӑшманӑн тин ҫеҫ пырса тӑнӑ таварлӑ эшелонне бомбӑланӑ.

Ик кунтан Орлов отрячӗн самолечӗсем тӑракан аэродрома каллех сывлӑшри армин командующийӗ вӗҫсе пынӑ. Вӑл хушнипе, пӗтӗм эскадрильйӑри летчиксене вӑрманти уҫланкӑна илсе тухса строя тӑратнӑ.

— Капитан Орлов, стройран тухӑр! — хушнӑ генерал.

Орлов питӗ тӗлӗннӗ: мӗншӗн-ха генерал ӑна «капитан» тет? Вӑл аслӑ лейтенант кӑна-ҫке? Йӑнӑшрӗ-ши?

Унтан генерал ҫапла каланӑ:

— Капитан Орлов хӑйӗн виҫӗмкунхи ӗҫӗн результачӗсем ҫинчен нимӗн те пӗлмест пулӗ-ха. Акӑ мӗн пӗлтереҫҫӗ партизансем: «Декабрӗн 17-мӗшӗнче ҫӗрле эсир бомбӑсем пӑрахнӑ хыҫҫӑн нимӗҫсем банкет тунӑ ҫуртӑн ишӗлчӗкӗсем айӗнче 132 офицер хӑйсен вилӗмне тупнӑ».— Генерал темиҫе самант чӗнмесӗр тӑнӑ та малалла каланӑ: Задание питӗ лайӑх пурнӑҫа кӗртнӗшӗн аслӑ лейтенант Орлова капитан званине панӑ тата командовани ячӗпе тав тунӑ...

— Служу Советскому Союзу! — тенӗ те Орлов, строя кайса тӑнӑ.

Савӑннипе, пӑлханнипе унӑн чӗри сиксе тухас пек тапнӑ...

* * *

Ун хыççăн вĕçевсем тата нумай пулнă. Питĕ нумай! Орлов тăшман эшелонĕсене аркатнă, аэродромĕсене юрăхсăра кăларнă, самолечĕсене çунтарнă, малти позицийĕсем çине бомбăсем тăкнă, нумай хутчен партизансем патне вĕçнĕ, вĕсене мĕн кирлине кайса панă, вĕсем патĕнчен Пысăк Çĕр çине аманнисемпе чирлисене илсе килнĕ, тăшман йышăннă вырăнсене десантниксен ушкăнĕсене илсе кайса антарнă.

— Кулленхи ĕç пулнă ку пирĕн, вăрçăри летчиксен, хăнăхнă ĕç! — тет Федот Никитич. Йывăрлăхсем çинчен шарласах каймасть. Анчах вĕсен ĕçĕнче йывăрлăхсем те, нимĕнле те хăтăлма май çук пек туйăнакан хăрушлăхсем те сахал мар пулнă çав! Хăш чухне сывлăш карапне базăна икĕ моторпа илсе çитернĕ — тепĕр иккĕшне зенитка снарячĕсен осколокĕсем лексе ĕçлеми тунă. Хăш чух самолет «кĕлетки» çинче аллă шăтăк таран пулнă — осколоксем шăтарнă. Пĕррехинче, заданирен базăна таврăнсан, Орлова кабинăран аран туртса кăларнă — вăл урисене шăнтса янă, унăн ик эрне госпитальте выртма тӳр килнĕ.

Ик-виçĕ хутчен Орлова хамăрăн тыла, чылай инçете янă — çапăçусенче çĕмрĕлнĕ самолетсене юсаттарма, фронта çĕнĕ машинăсем илсе пыма. Пĕррехинче çапла та пулнă: заводра капитальнăй ремонтран тухнă машинăна илсен (халь вăл ĕнтĕ çĕп-çĕнĕ пекех пулнă), фронт еннелле вĕçекенскер, Орлов Чăваш çĕршывĕ çийĕпе пынă. Малта хăйĕн тăван ялĕ, Кĕçĕн Ямаш курăнса кайнă. Вăхăт каçалла сулăннă, паян пурпĕр Горький хулинчен малалла вĕçеес çук, çавăнпа та Орлов тăванĕсене курса кайма шут тытнă та, самолета хăй ача чух кĕтӳ çӳретнĕ уй варрине лартнă. Ямаш çыннисем ăна курсан мĕн тери хĕпĕртени çинчен каласа пама та пĕлес çук çав! Тахçан çĕтĕк-çатăк тумпа çӳренĕ кĕтӳç ачи халь сывлăш карапĕн командирĕ, темиçе орденлă офицер пулса тăнă-çке!.. Темле хăй тĕллĕнех, уй варринчех митинг пуçланнă. Орлов совет летчикĕсем фашистсене епле кисретни çинчен, эпир тăшмана пурпĕрех çĕнтересси çинчен каланă, колхозниксем хăйсем ырми-канми ĕçлесе фронт валли, çĕнтерӳ валли мĕн кирлине туса пама тупа тунă.

Ирпе ирех Орлов сывлăша çĕкленсе хăйсен ялĕ çийĕн пĕрре çаврăнса илнĕ те хĕвеланăçнелле вĕçнĕ...

* * *

...1942 çулхи июльте, пĕр каçхине, Орлова сасартăк полк КПне чĕнтернĕ. Арми командующийĕ телеграмма панă иккен: Орловăн кĕçĕр Ленинград фронтне вĕçсе унта нимĕçсен пысăк бензохранилищине сывлăша сиктермелле. Çак ответлă задание пурнăçа кĕртме командующи никама та мар — Орлова яма хушнă.

Командующи хушнине Орлов тĕп-тĕрĕс тунă, бензохранилищене шыраса тупса аркатнă. Анчах çĕр çинчен урнă пек персе тăнă зениткăсем унăн самолечĕн пĕр енчи моторне çĕмĕрнĕ, радиатора шăтарнă, Орлова хăйне сулахай уринчен амантнă, çапах та вăл самолетне хăйсен аэродромне илсе çитернĕ, анчах ăна çĕре лартса моторĕсене ĕçлеме чарсанах ним пĕлми пулнă, санчаçре тин тăна кĕнĕ. Самолет фюзеляжĕ çинче хĕрĕх сакăр шăтăк пулнă...

Виçĕ кунтан арми командующинчен çакăн пек телеграмма пынă:

«Эсир бомбăсем пырса пăрахнă хыççăн тăшманăн бензин склачĕ икĕ кун çуннă. Çавна пула тăшман Тихвин станцийĕ патĕнче наступлени тума палăртнă план путланнă. Пирĕн çарсем тăшманăн горючисĕр ларакан танкĕсене 60 ытла тытса илнĕ. Сирĕн экипажа тав тăватпăр, унăн пур членĕсене те правительство наградисем пама тăратнă...»

Çав июль уйăхĕнчех, пĕррехинче, комсомол пухăвĕнче доклад тунă хыççăн, Орлов, кăштах канас тесе, вăрахчен вăрманта уçăлса çӳренĕ. Хăйсем пурăннă çĕре таврăннă чух вара вăл сасартăк хăйĕн юлташĕсем васкасах ăна хирĕç чупнине асăрханă.

Мĕн пулнă? Ма чупаççĕ? Ним шухăшласа илме те ĕлкĕреймен Орлов, юлташĕсем ун патне чупса çитнĕ те, «урра» кăшкăра-кăшкăра, ăна çӳлелле ывăтма тытăннă.

...Акă мĕн пулнă иккен: юлташĕсем халь кăна радиопа СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указне итленĕ — çав Указра ăна, Орлова, Совет Союзĕн Геройĕ ятне пани çинчен каланă. Тепĕр темиçе кунтан Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн командующийĕ, Курочкин генерал-лейтенант Федот Никитич Орлов кăкăрĕ çине Ленин орденĕпе Ылтăн Çăлтăр çакнă.

...Герой ятне илнĕ хыççăн Ф. Н. Орлов тата нумай

вӗҫнӗ. Тӑшмана сахал мар сиен кӳнӗ — унӑн эшелонӗсене, танк колоннисене ҫунтарнӑ, складсене сывлӑша сиктернӗ. Анчах каярахпа унӑн пурнӑҫӗнче пысӑк улшӑну пулнӑ: ӑна Сывлӑшри Ҫар Вӑйӗсенчи командирсен ӑсталӑхне ӳстерекен курса янӑ, унтан вӗренсе тухсан уйрӑм заданисемпе ӗҫлекен дивизири аслӑ летчик тунӑ. Тепӗр ҫур ҫултан ҫав дивизирех эскадрилья командирӗн ӗҫне шанса панӑ, унта вара вал фашистла Германие пуҫӗпе аркатса ҫӗнтеричченех ӗҫленӗ.

1945 ҫулта Ф. Н. Орлова Инҫетри Хӗвелтухӑҫне яраҫҫӗ. Кунта вӑл империалистла Японин Квантун ҫарне аркатнӑ ҫӗре хутшӑнать, транспорт самолечӗсен эскадрильйин командирӗ пулса тӑшман территорийӗ ҫине десантсем антарать, хамӑрӑн ҫарсем валли боеприпас, апат-ҫимӗҫ турттарать. 1948 ҫулта ӑна каллех вӗренме яраҫҫӗ — ҫӗрле вӗҫекен летчиксем хатӗрлеме вӗрентекен аслӑ курса. Кун хыҫҫӑн вӑл Кавказ леш енче тӑракан авиаполксенчен пӗринче ӗҫлеме тытӑнать, малтан эскадрилья командирӗ, унтан полк командирӗн заместителӗ пулать, юлашкинчен — полк командирӗ. Ку ӗҫре ҫичӗ ҫул ӗҫленӗ хыҫҫӑн запаса тухать.

1960 ҫултанпа Совет Союзӗн Геройӗ Федот Никитич Орлов — чӑваш халӑхӗн чаплӑ ывӑлӗ, паттӑр ӑмӑрткайӑк — Шупашкарта пурӑнать. Халь вӑл электроаппаратсем тӑвакан заводра ӗҫлет, техникӑлла контроль бюровӗн начальникӗ. Ку завод продукцийӗ хамӑр ҫӗршыва ҫеҫ мар, урӑх нумай ҫӗршывсене те каять, Орлов ҫав продукцин пахалӑхне тӗрӗслет — заводран чи паха, чи лайӑх продукци ҫеҫ тухмалла!

Заводри ӗҫ хыҫҫӑн та унӑн пушӑ вӑхӑт пулмасть, вӑл обществӑлла ӗҫсем нумай тӑвать. Уйрӑмах ҫамрӑксене патриотла воспитани парас тӗлӗшпе ҫав тери хастар ӗҫлет пирӗн Герой. Ӑна пӗрмаях шкул ачисем, пионерсем, комсомолецсем, допризывниксем хушшинче курма пулать, вӗсемпе вӑл хӗрӳллӗ, чӗре патне пыракан калаҫусем ирттерет. Хулара ҫеҫ пулмасть вӑл, ялсене те час-часах тухса ҫӳрет. Ӑна пур ҫӗрте те ҫав тери хапӑл туса йышӑнаҫҫӗ...

Хулари ӗҫҫыннисем, Федот Никитича чӗререн шанса, темиҫе хут та хула Совечӗн депутатне суйланӑ, вӑл

халь те депутат. Пĕр созывра вăл Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ те пулнă. Халăх шаннине Герой яланах чыслăн тӳрре кăларса пырать.

Ылтăн Çăлтăрсăр пуçне, унăн кăкăрĕ çинче тата вунпилĕк награда ялкăшать. Аслă çулпуçăмăр В. И. Ленин çуралнăранпа çĕр çул çитнĕ кунсенче ăна Ленин медальне панă.

Вăрçă вăхăтĕнче тăшмана хирĕç пурнăçне шеллемесĕр çапăçса Совет Союзĕн Геройĕ ятне илме тивĕçлĕ пулнă çын, вăл халь те стройра, хăйĕн пĕтĕм вăйне, иксĕлми хастарлăхне халăха, Ленин партине парать.



# Парăнман, çĕнтернӗ!

Партызаны, партызаны,
Белорускія сыны!
Бейце гітлерцаў паганых,
Каб не ўскреслі век яны!
Я н к а К у п а л а.

Отчизна-мать! Мы все полны стремленья
Громить врага как ночью, так и днем.
Скорей умрем, чем встанем на колени,
Но победим скорее, чем умрем!
(П а р т и з а н с е н ю р р и).

Кĕтмен-туман çĕртен, 1960 çулхи август пуçламăшĕнче Çĕмĕрлери ОРС начальникĕ Андрей Григорьевич Тарасов питĕ тĕлĕнтерекен çыру илнĕ. Кăвак конверт ăшĕнче повестка выртнă — Тарасова Белоруссi Çар округĕн çар трибуналне чĕннĕ:

— В качестве свидетеля по делу Илясова, Елишевича, Бурака и Тябуса. Явка Ваша обязательна...

Пăлхатсах янă Андрей Григорьевича ку повестка. Темиçе хут вуласа тухнă ăна. Типографире пичетленĕ бланк çине алăпа çырса хунă тăватă хушаматран виç-

Очерка çырнă чух «Советские партизаны», «Люди легенд», «Партизанскими тропами», «Орлиное племя» тата А. Г. Тарасовăн «Дороги эти позабыть нельзя» ятлă кĕнекесемпе усă курнă.

çĕшне — кайрисене — пуçласа илтнĕ вăл, анчах пĕр хушаматне, малтине, пит лайăх пĕлнĕ.

— Илясов... Илясов... Леш шуйттанĕ ĕнтĕ ку, Степан Илясов...— пăшăлтатса илнĕ Тарасов.— Лекнĕ-ха эппин... Çапах та, ăçта пытанса пурăнма пултарнă вăл çак таранччен?! Унтанпа вăхăчĕ нумай иртрĕ-çке. Вунсакăр çул!...

Кун пек хушаматлă этеме пит лайăх астунă çав вăл. Нихçан та манас çук ăна. Аçтан-ха манатăн? Никам та мар, шăп çав Илясов ĕнтĕ 1942 çулхи мартăн 3-мĕшĕнче Белоруссири Кошели ятлă ялта Тарасова нимĕçсен кинжал евĕрлĕ штыкĕпе вунпĕр çĕртен чикнĕ! Хăрушла аманса пĕтнĕ, юн юхнипе халран кая пуçланă пулин те, Тарасов ун чухне çав фашистсен ирсĕр тарçи, этем сăн-сăпатне çухатнă сутăнчăк аллинчен вĕçерĕнсе тарма пултарнă, унтан вара совет партизанĕсен ретне кăрса ютран килнĕ тăшмансене тавăрма, вĕсене хирĕç хастаррăн çапăçма тытăннă.

Анчах Андрей Григорьевич Тарасовăн Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи кунçулĕ, унăн «одиссейи» çинчен каласа кăтартма аякран пуçлас пулать...

...Иккĕмĕш рангри техник-интендант Андрей Тарасов, Вăрмар районĕнчи Çитмĕш ятлă ялта çуралса ӳснĕ чăваш каччи, вăрçă умĕнхи çулсенче районри Осоавиахим организацине ертсе пынă. Лайăх ĕçленĕ вăл. Çамрăксене Тăван çĕршыва сыхлама хатĕрленĕ — çар ĕçне вĕрентнĕ, çар вăййисем, тĕрлĕ ăмăртусем йĕркелесе иртернĕ. 1941 çулхи çуркунне Тарасова хăйне те запасри командирсен кĕске вăхăтлăх курсĕнче вĕренме чĕнсе илнĕ. Вĕренӳ ăнăçлă пулса пынă — «запасниксене» пысăк опытлă çар специалисчĕсем, аслă командирсем вĕрентнĕ. Тĕнчери лару-тăру ун чухне питĕ хĕрсе çитнĕ, Германи фашизмĕ çур Европăна çавăрса илнĕ,— Чехословаки, Польша, Франци, Югослави, Голланди, Бельги çĕрĕсене гитлеровецсен тимĕрленĕ аттисем таптанă. Пĕтĕм тĕнчене хăйсене пăхăнтарас ĕмĕтпе пурăнакан нимĕç фашисчĕсем хуть хăш самантра та пирĕн çĕршыва та килсе тапăнма пултарнă, çапах та эпир, Германипе хамăр çĕршыв хушшинче мирлĕ договор пуррине асра тытса, ун пек тискер ĕç ытла тăруках пулмĕ, тенĕ...

Анчах хамăрăн çарпа флотăн вăй-хăватне ӳстерсе пымаллине пĕр самантлăха та манман. Кадрти çарсен ăсталăхне туптанипе пĕр вăхăтрах запасри командирсемпе салтаксене те пуха-пуха вĕрентнĕ.

...Курсри вĕренӳ вĕçленсе пынă, ĕнтĕ тепрер эрнерен пурин те киле таврăнса яланхи ĕçе тытăнмалла. Июнĕн 22-мĕшĕнче, вырсарникун, курсантсенчен нумайăшĕ хулана тухса çӳреме палăртнă, пĕрисем театр-музейсене, теприсем — килйышсем валли ăна-кăна туянма. Пурин пекех, Андрей Тарасов курсант та киле кайма хатĕрленнĕ, килте ăна икĕ ывăлĕ кĕтнĕ — пилĕк çулхи Юрикпе виççĕри Борис. Унччен пĕр çул малтан Тарасовăн килйышĕнче питĕ пысăк хурлăх пулнă,— йывăр чирленипе унăн арăмĕ вилсе кайнă, çавăнпа та ачисем халь ватă асламăшĕпе асламăшĕ патĕнче пурăннă. Часрах, хăвăртрах çитес пулать вĕсем патне, тăхăнмалли çĕнĕ кĕпе-тумтир, атă-пушмак, вылямалли теттесем илсе кайса савăнтарас юратнă ачасене!

Çавăн пекех ырă ĕмĕт пулнă Тарасов чĕринче.

Анчах ку ĕмĕт сасартăк татăлнă.

Вăрçă пуçланнă...

Курсантсен халь ĕнтĕ тăван килĕсене, юратнă килйышĕсем патне мар, тӳрех çапăçури çара каймалла.

Андрей Тарасова вăрçă пуçланнă кунах 61-мĕш стрелковăй корпусăн штабне кайма хушакан хут тыттарнă. Тепĕр кунне вăл çав корпус штабĕ вырнаçнă хулана çитнĕ те, ăна унта пĕр отдел начальникĕн помощникĕ тунă. Корпус чаçĕсем эшелонсене тиеннĕ, вĕсем Хĕвеланăçнелле, хаяр çапăçусем кĕрленĕ çĕрелле ыткăннă...

Питĕ васкамалла пулнă çав. Часрах фронта çитсе çапăçăва кĕмелле, пирĕн таса çĕршыв ăшнелле шалтан шала ăнтăлакан сĕмсĕр тăшмана чарса лартмалла, çапса аркатмалла, каялла хăваласа ямалла!

Анчах эшелонсен кашни станцирех чаранса тăма тивнĕ — хĕвеланăç енчен, вăрçă кĕрленĕ, вут-çулăм ахăрнă вырăнсенчен çăлăнăç шыраса тапранса тухнă çынсем лăк-тулли тиеннĕ пуйăссем вĕçĕмсĕр килнĕ. Çав пуйăссем çинчи çынсем ĕненмелле мар хăрушă хыпарсем пĕлтернĕ: вĕсем тарса тухнă вырăнсенче хуласемпе ялсем кăвайт пек çунаççĕ, фашист самолечĕсем пур çулсем тăрăх та çăхансем пек вĕçсе çӳресе бомбăсем

тăкаççĕ, пулеметсенчен вилĕм сапаççĕ, ишĕлтереççĕ, çунтараççĕ...

...Тăваттăмĕш кунĕнче, Могилев хули патнелле çывхарнă чух, эшелонсенче сасартăк тревога тунă. Корпус çарĕсем тиеннĕ составсене нимĕçсен «юнкерсĕсем» вĕççе пырса тапăннă иккен, вĕсем çине бомбăсем ывăтма тытăннă.

Ирĕксĕрех эшелонсене чарса, çынсене тĕрлĕ çĕрелле саланма хушма тивнĕ. Юрать-ха, çухатусем нумаях пулман...

Çакăн хыççăн, арми штабĕнчен пынă приказ тăрăх, Тарасовсен корпусĕ Днепр хĕррине тухса, Шклов—Могилев—Быхов рубежĕнче оборона йышăннă.

— Тăшман пирĕнтен вуншар километр аякра пулнă-ха, анчах эпир кашни кунах вăл пирĕнпе юнашаррине туяттăмăр,— тесе çырать Андрей Тарасов хăйĕн асаилĕвĕсенче.— Гитлеровецсен авиацийĕ пирĕн пата час-часах вĕççе пырса бомбăсем тăкнăшăн кăна мар пулнă ку. Фашистсем пирĕн тыла тĕрлĕ диверсантсене, шпионсене, автоматчиксен ушкăнĕсене пыра-пыра яратчĕç... Вĕсем пирĕн тыл ĕçне пăсса кансĕрлеме, çул-йĕрсене çĕмĕрме, Хĕрлĕ Çар валли боеприпассем турттарса пырассине чăрмантарма тăрăшнă. Диверсантсем пирĕн çар çыннисене, уйрăмах командирсемпе политработниксене тапăнатчĕç. Парашютистсене нимĕçсем пирĕн тыла кашни каç тенĕ пекех пырса пăрахатчĕç. Пĕрмаях вĕсемпе кĕрешме, облавăсем туса тытма тиветчĕ...

...Пирĕн фронтри ĕçсем йывăрлансах пынă. Фашистсем Могилев хулине çĕмĕрсе кĕнĕ. Совет боецĕсемпе командирĕсем калама та çук паттăррăн çапăçнă пулин те, йыш енĕпе те, хĕçпăшал енĕпе те нумай вăйлăрах пулнă тăшмана чарса лартма май килмен. Йывăр çапăçусенче сайраланса юлнă корпус дивизийĕсем тăшман ункине лекнĕ. Çитменнине, вĕсен ĕнтĕ боеприпассем те пĕтсе пынă. Çынсем ывăнса халтан кайнă. Вара аслă командирсем корпус чаçĕсене уйрăм-уйрăмăн хĕвелтухăçнелле куçса пырса тăшман ункинчен тухма хушнă. Сахал мар пулнă ун пекки вăрçăн пирвайхи тапхăрĕнче.

Питĕ тумхахлă, çав тери йывăр пулнă тимĕр ункăран хăтăлса тухмалли çул. Нумай салтаксемпе командирсен юнĕпе пĕвеннĕ вăл. Хăйсем çавăрса илме ĕлкĕр-

нĕ совет воинĕсене фашистсем ҫавăнтах, патĕнчех пĕтерсе тăкма тăрăшнă.

Уҫă вырăнпа, ҫулсем тăрăх каясси ҫинчен сăмах та пулма пултарайман. Тăшман ункинчен тухма тăрăшакансем вăрмансемпе, шурлăхлă вырăнсемпе шунă. Анчах ун пек пыма та ансат пулман. Вăрмансем ҫийĕпе пĕрмай фашист самолечĕсем вĕҫнĕ. Вăрман хĕррисенче тăшман засадисем сыхласа ларнă. Питĕ вăрттăн, никам асăрхамалла мар пырсан ҫеҫ ҫăлăнма май килнĕ, ҫавăнпа та пирĕн салтаксемпе командирсем пĕчĕк ушкăнсене пайланнă. Кашни ушкăн хăй тĕллĕн, хăйĕн ҫулĕпе каймалла, епле пулсан та фронт урлă каҫса хамăраннисем патне ҫитмелле!

Андрей Тарасов ҫичĕ ҫынлă ушкăна лекнĕ. Ушкăна ертсе пыраканĕ — Тарасов пекех штабра ĕҫленĕ аслă лейтенант, питĕ хăюллă, ҫирĕп кăмăллă, шанчăклă ҫын. Темле йывăрлăха лексен те ҫухалса каяс ҫук, юлташĕсене пăрахас ҫук вăл.

Ытти ушкăнсенчи ҫывăх юлташсемпе сывпуллашнă хыҫҫăн Тарасовсен ушкăнĕ Проня ятлă юханшывăн сылтăм ҫыранĕпе Пропойск хули еннелле ҫул тытнă. Темиҫе хутчен те ҫав юханшывăн хĕвелтухăҫ енчи ҫыранне каҫма пикеннĕ, анчах та кашнинчех нимĕҫсен засадисем ҫине пыра-пыра тăраннă. Унта та кунта пăшал-пулемет сасси кĕрленĕ, окруженирен тухма тăрăшакан совет воинĕсем хăйсен ҫулĕ ҫинчи фашистсемпе ҫапăҫнă...

Тарасовсен ушкăнĕнчи ҫынсем начар хĕҫпăшалланнă, вĕсен ҫумри пистолетсемсĕр пуҫне урăх нимĕн те пулман. Тата ҫавăн пек сахал йышпа ҫапăҫăва мĕнле кĕретĕн-ха?

Пĕр кун, ик кун, виҫ кун... Пĕчĕк ушкăн вĕтĕ вăрмансем витĕр, шурлăхсем урлă каҫа-каҫа малалла шунă. Ҫынсен тумĕсем ҫĕтĕлсе-вараланса пĕтнĕ. Ҫимелли нимĕн те юлман. Тĕл пулакан ялсене йăпăртлăха кĕме те хăрушă — кам пĕлет, тен, унта фашистсем? Малалла, хĕвелтухăҫнеллех каяс пулать. Вăрттăн, асăрханса, никама курăнмасăр.

Пиллĕкмĕш кунĕнче Сож хĕррине ҫитсе тухнă.

Эпĕ, ҫак очерк авторĕ, пĕлетĕп ку юханшыва: самаях сарлака вăл, пирĕн Сăр шывĕ пек. Ун урлă эпир 1943 ҫулхи кĕркунне, фашистсене Белоруссирен хăваласа кăларма тытăннă чух каҫнăччĕ.

Анчах халь 1941 çул пулнă çав. Нимĕçсем ун чух хăйсем Сожăн хĕвелтухăç енчи çыранне каçма хатĕрленнĕ. Унта пирĕн çарсем тăнă-ха. Тарасовсен ушкăнĕ çав шыв урлă каçсанах хамăрăннисемпе пĕрлешнĕ пулĕччĕ. Çывăхрах пулнă салтаксен телейĕ, анчах çигеймен вĕсем ун патне. Май килмен...

Çыранри вĕт вăрмантан тухса шыв хĕрринелле пыма тытăннă-тытăнман вĕсене гитлеровецсем асăрханă та урса кайнă пек пеме пуçланă. Ирĕксĕрех хăйăр çине хырăмпа выртса каялла, вăрманалла шума тивнĕ. Юрать-ха, нихăшĕ те аманман. Чăн та, салтаксенчен пĕрин фуфайки темиçе çĕртен çурăлнă, пульăсем шăтарнă вырăнсенчен ватка тăпăлса тухнă, анчах — тĕлĕнмелле! — хăйне тивсе амантман.

Йывăçсен хӳттинче кăшт канса сывлăш çавăрсан, вĕсем каллех юханшыв еннелле упаленнĕ. Питĕ хăрушă пулнă — унта та кунта минăсем çурăлнă, тăпра-хăйăр çӳлелле сирпĕннĕ, тĕтĕм-сĕрĕм йăсăрланнă. Нимĕçсем пирĕн салтаксене асăрханă пулас çав, минăсем вĕсен çывăхĕнчех шартлатма тытăннă — сылтăмра, сулахайра, малта, кайра... Çапах та салтаксем малаллах шунă...

Сасартăк пĕр мина Тарасовпа юнашарах ӳксе шартлатнă. Вут-çулăм ялкăшса илнĕ. Урăх вăл нимĕн те курман, илтмен. Тăнран кайнă...

Мĕн вăхăт выртнă вăл çапла, ăна пĕлмест.

Каç пулса килнĕ чух тин куçĕсене уçнă. Анчах куçĕсем курман. Вĕсене хытса ларнă юн хупланă. Хăлхисем те пит начар илтнĕ.

«Ăçта выртатăп эпĕ? Мĕн пулнă мана?..»

Пуçĕ çурăлса тухас пек ыратать. Куçĕсене пӳрнисемпе сăтăркаласа уçсан — курать: темле йывăç тĕми айĕнче выртать иккен вăл. Тăма пикенет—тăраймасть, пĕр вăй та çук. Таврара никам та курăнмасть, пăшалпулемет сасси те илтĕнмест, халь ĕнтĕ снаряд-минăсем те çурăлмаççĕ. Çапах та улахрах, çын курма пултарайман вырăн тупса пытанас пулать-çке! Вăрмана, шаларах...

Анчах упаленеймест те иккен вăл.

Çав вăхăтра, сасартăк, юханшыв енчен темиçе çын килни курăнса каять. Ют чĕлхепе калаçаççĕ, ахăлтатаççĕ.

«Фашистсем!..» — çиçĕм пек вĕçсе илет шухăш Тарасов пуçĕнче.

Мĕнле çăлăнмалла?

Пĕртен-пĕр меслет пур: перĕнсе вилмелле! Вăл васкасах наганне кăларма аллине кĕсйине чикет. Анчах наган çук иккен унта. Пиçиххи хыçĕнче те çук. Аса илет: юханшыв еннелле упаленнĕ чух вăл наганне алла тытнăччĕ. Эппин, мина çурăлсан, взрыв хумĕ ăна алран çапса кăларса аякkалла ывтăнтарнă.

Фашистсем çывăхрах ĕнтĕ. Тарасов куçĕсене хупать те вилнĕ пек пулса выртать. Тен, тăшмансем ун тĕлĕпе ахалех иртсе кайĕç? Асту, иртсе каяççĕ сана! Чарăнса тăраççĕ!

— О, русс! — кăшкăрсах ярать пĕри.

Тепри Тарасова тимĕрленĕ аттипе аякĕнчен питĕ хытă тапать. Контузи пулнă Тарасов, ахаль те асаплanакансkер, вăраммăн йынăшса ярать.

— Русс, капут! — ахăрса илет те пĕр фашисчĕ, Тарасова автомачĕпе тĕллет.— Встайт! Пошель!

Аран-аран, пĕтĕм кĕлетки тӳсме çук ыратнине чăтса, Тарасов ура çине тăркалать, сулăнса каять, анчах ăна ӳкме памаççĕ.

— Форвертс! Шагать! — тахăшĕ ăна автомат кĕпçипе çурăмĕнчен чышать. Пĕрре, тепре...

...Ытла инçетрех те мар, вăрманти уçланкăра нимĕçсен темле чаçĕ вырнаçнă иккен. Конвоир Тарасова пĕр йывăç тĕми айне лартнă. Çав самантрах Тарасов хăйĕнпе пĕр ушкăнра пулнă виçĕ çынна илсе килнине курнă. Вĕсене пурне те пĕр çĕре вырттарнă та хытă асăрхаттарнă: çĕкленме, тăма юрамасть, тӳрех персе пăрахатпăр!

Тĕттĕмленнĕ, каç пулнă.

— Ыттисем, виççĕшĕ, ăçта пирĕн? — шăппăн ыйтнă Тарасов хăйĕн юлташĕсенчен.

— Вĕлерчĕç вĕсене,— тенĕ ăна хирĕç боецсенчен пĕри.

Çĕрĕпех çывăрман тыткăна лекнисем. Ăçтан çывăратăн-ха? Пуçа çĕр тĕрлĕ шухăш çĕмĕрет. Мĕн пулать ĕнтĕ малашне? Ăçта илсе каяççĕ пире? Мĕн тăваççĕ? Тен, акă, ирхинех персе пăрахаççĕ? Тем те кĕтме пулать фашистсенчен...

Тарасов хăйĕн наганĕ çухалнăшăн тарăхнă. Алăра наган пулнă пулсанах тыткăна лекес çукчĕ — перĕнме

пулатчĕ. Халь ĕнтĕ ним тума та çук. Нимĕç автоматчикĕ пуç вĕçĕнчех тăрать.

...Ирхине вĕсене, тылалла хăваласа, пысăк яла илсе пынă. Тыткăна лекнисем нумай пулнă унта. Пуринчен ытла — аманнисем. Вĕсене нимĕнле пулăшу та паман — ан тив, суранĕсем юхчăр, çĕрччĕр. Тăшман хĕрхенмест. Тыткăна лекнисене вăл выльăх вырăнне те хумасть.

Кун каçа пĕрер татăк хытă çăкăр параççĕ те, каç пуласпа пурне те темĕн пысăкăш сарайне хуса кĕртсе хупаççĕ. Çара çĕр çинчех çывăраççĕ халран кайса çитнĕ çынсем. Тĕрĕссипе — çывăрни те мар ĕнтĕ вăл, асапланса выртни çеç. Шыçнă, пўрленнĕ, нимĕнле эмел те сĕрмен сурансем ыратнипе нумайăшĕ чуна пырса тивмелле йынăшаççĕ, тем кăшкăраççĕ...

Пĕр талăкран пурне те грузовиксемпе Бобруйск хулинчи чугун çул станцине çитернĕ, унта вара, уçă платформăсем çине хăпартса, пĕр-пĕринпе çурăмпа тĕкĕштерсе лартнă та приказ панă: никамăн та кăшт та хускалмалла мар! Кам хускалать, ăна персе пăрахатпăр!

Кашни платформа çинче — пĕр вĕçĕнче — пеме хатĕрленсе патрон лентисем кĕртсе лартнă пулемет тăнă, ун кутĕнче пулеметчиксем. Тарма пикен-ха!

Питĕ хăвăрт ыткăннă пуйăс. Тыткăна лекнисене фронт линийĕнчен аякран аякка, хĕвеланăçнелле илсе кайнă. Тепĕр чух пысăк станцисенче те чарăнса тăман. Анчах пĕр полустанокра пуйăс чарăннă, мĕншĕн тесен ăна хирĕç леш енчен состав килнĕ. Çавăнта, сасартăк, юнашар платформа çинче пынă пĕр хĕрлĕармеец — çăлăнатăп, тенĕ пуль ĕнтĕ, мăнтарăн! — çĕре сиксе аннă та тарма тытăннă. Самантрах шăв-шав пуçланнă, нимĕçсен темиçе конвоирĕ таркăна хăвалама тапратнă. Хĕрлĕармеец, вăйсăрскер, нумай та каяйман, ăна гитлеровецсем хуса çитсе çапса ўкернĕ те хăрушла хĕнеме тытăннă. Чĕп-чĕр юн пулнă, тăнне те çухатнă хĕрлĕармееца вара йытă вилли пек сĕтĕрсе пырса платформа çине хăпартса пăрахнă...

Çак тискер ĕçе ытти платформăсем çинче лараккансем пурте курнă. Ниçта кайса кĕрейми тарăхнă вĕсем. Чĕрисем курайманлăхпа тулнă. Анчах та — мĕн тăвăн? Шăла çыртма çеç тивет халлĕхе.

...Минск. Белоросси столици. Нимĕçсем пирĕн çĕршыва тапăннă кунах çак чечекленекен хула çине тем

чухлĕ бомба тăкнă. Хытă çуннă вăл. Нумай çуртсем ишĕлсе аннă. Кашни утăмра тенĕ пекех — вăрçă йĕрĕ.

Тыткăна лекнисене хулари «Хĕрлĕ казармăсене» хăваласа пынă. Вăрçăччен кунта пирĕн çар чаçĕсем тăнă, нимĕçсем пырса кĕрсен унта тыткăна лекнĕ совет воинĕсене хупса усрамалли темĕн пысăкăш лагерь туса хунă. Вилĕм лагерĕ.

Ку тĕлте авторăн çакна калас килет. Кăçал, 1974 çулхи май уйăхĕнче, Белоруссие нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнăранпа вăтăр çул çитес умĕн, телевиденипе «Руины стреляют» ятлă художествăллăдокументлă нумай сериллĕ фильм кăтартрĕç. Çав фильмра шăпах Минскри лагере курма тӳр килчĕ пире. Мĕн тери хăрушă пулнă унта! Экран çинче курнипех чĕре ыратса каять...

Чăваш каччи Андрей Тарасов çав лагере лекнĕ.

Выçлă-тутлă, сурансене эмелсемпе сиплемесĕр, çара çĕрте вутă пуленкисем пек выртарса усрани çитмест, тыткăна лекнисене оккупантсем суя сăмахсемпе асаплантарнă: вĕсем Хĕрлĕ Çара пуçĕпех аркатнă имĕш, паян-ыранах Мускава пырса кĕреççĕ!

Ку ирсĕр элеке нимĕçсем хăйсене сутăннă провокаторсене сартарнă.

Анчах ĕненмен вĕсене совет патриочĕсем.

— Ун пекки нихçан та пулма пултараймасть! Росси аслă, ăна хальччен никам та çĕнтереймен, халĕ те çĕнтерес çук. Совет халăхĕ тăшмана парăнмастех! — тенĕ вĕсем.

...Тарасовăн пĕртен-пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт кăна пулнă ку лагерьте пурăннă виç эрне хушшинче: тармалла! Епле пулсан та çакăнтан тухса тарса хăтăлмалла!

Çурри выçă, кунне пĕрре мăшкăлтăк шывĕ евĕр пăтрангчăк, ним тутисĕр яшка пекки çеç çинипе вăл начарланса, вăйсăрлансах пынă. Татах кун пек пурăнсан, тарса хăтăлма та вăй пулас çук... Кунсăр пуçне, тыткăнрисене чуралăха хăваласа каясси çинчен сăмах сарăлма пуçланă. Нимĕçсем Европăри хăйсем парăнтарнă çĕршывсенчи шахтăсенче, рудниксенче ĕçлеме яраççĕ иккен тыткăнри совет çыннисене. Тĕрĕсех пулнă ку сăмах. Лагерьте чăнах та йывăр ĕçе юрăхлă сывăрах, тĕреклĕрех çынсене суйласа илсе темле уйрăм отрядсем тума тытăннă.

— Таçта ют çĕршыва илсе кайсан — пулмасть вара

хăтăласси, пĕтмелли çеç юлать,— тенĕ Тарасов хăйне хăй.— Эппин, васкас пулать. Халех, хăвăртрах тармалла!..

Анчах мĕнле тармалла-ха? Епле майпа хăтălмалла?

Лагерь тавра — йĕплĕ пралук карти. Пур çĕрте те хурал — автоматчиксем çӳреççĕ. Йытăсем нумай. Вышкăсем çинче — пулеметсем. Тыткăнрисен кашни утăмне сăнаççĕ.

Кăштах вăхăт иртсен, çынсене ушкăнăн-ушкăнăн лагерь тулашне ĕçе илсе кайма тытăннă. Паллах, сывăраххисене. Ку тĕлелле Тарасовăн пуçĕ çинчи суранĕсем тӳрлене пуçланă, тарса хăтăлас ĕмĕт те вăй хупнă. Вăл лагерь тулашне илсе каякан пĕр-пĕр командăна лекме тăрăшнă. Лагерьтен тухасчĕ, унта мĕн тумалли курăнĕ!

Пĕррехинче вара — август уйăхĕн юлашки кунĕсенче пулнă ку — Тарасов хула тулашне чус илме каякан командăпа пĕрлешнĕ. Пысăк пулман вăл команда, пурĕ те çирĕм çын кăна. Вĕсене иккĕн конвойласа пынă: пĕри — нимĕç салтакĕ, тепри — тăшмана сутăнма ĕлкĕрнĕ вырăс çынниех. Иккĕшĕ те хĕçпăшаллă. Тарайман! Пуля темле хытă чупакана та хуса çитет...

Командăна хула хĕррине ертсе тухса пĕр пысăк çурт фундаменчĕ патне илсе пынă. Кунта тĕрлĕ строй-материал нумай выртнă. Конвоирсем пĕр чус купинчен чи лайăх хăмасене суйлама хушнă. Кирлĕ чухлĕ уйăрса илсен, çынсем çывăхри пахчасенчен çимĕçсем пуç тарса килме ирĕк пама ыйтнă. Нимĕçпе вырăс охранникĕ пакăлтатса илнĕ хыççăн командăна икке пайланă та, пĕр ушкăнне нимĕç охранникĕ илсе кайнă. Тарасов вырăс çынни сыхлакан ушкăнра юлнă.

— Акă вăл, эп çĕрĕн-кунĕн ĕмĕтленсе пурăннă самант... — çиçĕм пек шухăш вĕçсе илнĕ унăн пуçĕнче.

Çавăнтах, конвоира ӳкĕтленĕ пек каланă:

— Варпа пит аптăратăп эпĕ, тӳсме çук... Ларасчĕ манăн...

— Ав, çав шăтăка сик! — аллипе сулнă охранник, ним шутламасăрах.

Тарасов вĕлтĕренпе, мăянпа хупланнă тарăн котлована анса пĕшкĕнсе ларнă. Çӳлтен пăхсан, ăна курас та çук.

Хытă пăлханнă вăл, чĕри кăкăртан сиксе тухасла

тапнă. Май килĕ-ши хăтăлма, çук-ши? Мĕн пулĕ-ши ĕнтĕ?

Вăхăт шунă. Кам пĕлет — тем чухлĕ? Вунă минут-и, çур сехет-и? Тарасов чул пек хытса ларнă, сывлама та хăранă.

Акă, çывăхрах, çӳлте, çын сассисем илтĕннĕ — лахчана кайнисем таврăннă ĕнтĕ. Шавлама тытăннă, çимĕçсене валеçнĕ пулмалла. Унтан хаяррăн нимĕçле вăрçни, вырăсла усал сăмахсем кăшкăрни илтĕннĕ. Ахăртнех, командăра пĕр çын çитменни палăрнă пулĕ.

— Эй, ăçта шуйттанĕнче эсĕ! Тух халех! — çухăрнă вырăс-охранник.— Эсĕ мĕн, пытанмалла вылятăн-и? Асту, лектеретĕп!

Тарасов халь сывлама та чарăннă. Тата хытăрах лăпчăннă.

Котлован хĕрринчи чул фундамент тăрăх охранник кĕпсĕртетсе утнă.

— Тух, теççĕ сана, вашу мать! Халех персе пăрахатăп! — хăйĕн пуçĕ тĕлĕнчех вăрçнине илтнĕ Тарасов. Курчĕ пуль ăна сутăнчăк! Пĕтрĕ пурнăç, пулмарĕ нимĕн те!..

Тарасов ĕнтĕ тăрса тухмах пикеннĕ, анчах, охранник аяккалла утса кайнине туйса, ку шухăша пăрахнă. Унтан вăл нимĕçле хаяррăн кăшкăрнине, леш вырăсĕ çухăрнине илтнĕ:

— Тарнă вĕт, подлец! Улталанă мана! Эсир те çав шухăшпах тăратăр пулĕ-ха! Кăтартăпăр эпи́р сире! Çĕклĕр хăмасене, анчăксем!

Конвоирсем ниçта кайса кĕрейми тарăхса кăшкăрнă май, тыткăнрисен ушкăнĕ аяккалла кайнă. Часах вара шăп пулнă. Тарасов котлованрах, çӳллĕ вĕлтренпе мăян хушшинче пĕшкĕнсе юлнă.

Анчах кунта тек вăхăт ирттерсе ларма юраман. Енчен те нимĕçсем ăна шырама таврăнчĕç-тĕк? Ахаль те мар, йытăсемпе? Вара... Пуля! Çавăнтах вăл тахăш полустанокра пĕр хĕрлĕармеец тарма пикеннине, нимĕçсем ăна хуса çитсе йыт вилли пек туса хунине аса илнĕ.

Çук, шăвăнас пулать кунтан! Халех, пĕр тăхтамасăр.

Таврара нимĕнле шăв-шав та, сас-чĕв те илтĕнмест. Янкăр уяр тӳперен хĕртсе хĕвел пăхать. Вăл пĕччен. Çак самантра ăна никам та пăшалпа тĕллесе сыхласа тăмасть. Нивушлĕ ирĕкре вăл? Чăнах ирĕкре-и?

Ирĕк!.. Мĕн тери хаклă сăмах!..

Ирĕклĕ çын...

Çук-ха çав, ирĕклĕ çын мар вăл халлĕхе. Ăна кашни самантрах тытса стена çумне тăратма пултараççĕ. Пăшал сасси кĕрĕслетет. Е унăн пуçне мăйкăç тăхăнтартаççĕ...

...Андрей Тарасов ерипен, çав тери асăрханса, котлованран тухнă та, пĕшкĕне-пĕшкĕне, çывăхри пахчасем еннелле утнă. Унăн çав самантра питĕ хытă чупса каяс, сывлăш çавăрмасăр ыткăнас килнĕ — часрах маларра! — анчах чупма юраман çав. Чупакан çынна çийĕнчех асăрхама пултараççĕ: кам вăл, мĕншĕн чупать? Таркăн! Оккупантсен куçĕ çивĕч, пур çĕртине те курать. Асăрханмалла. Питĕ асăрханмалла!

Пахчасем хыçĕнче уйрăм-уйрăм ларакан пĕчĕк йывăç çуртсем курăннă.

— Мĕн пулать, мĕн килет — çавсем патнелле каяс. Нимĕçсемех мар пулĕ-ха унта. Тен, ырă çынсене тĕл пулăп... — шухăшланă та Тарасов, пĕр начартарах киле ерипен пырса кĕнĕ.

Пÿртре çич-сакăр çулхи хĕрача кăна пулнă. Çĕтĕлсе-вараланса пĕтнĕ çар тумĕ тăхăннă, сухалне нумайранпа хырман ырхантарах çын çине вăл шикленерех пăхнă.

— Аçу килте-и? — ыйтнă Тарасов.

— Çук пирĕн атте,— пуçне пăркаласа илнĕ хĕрача.

— Аннÿ ăçта?

— Вăл халех килет...

— Эп ăна кĕтем-ха, юрать-и?

— Кĕт ара...

Алăк патĕнчи сак çине ларнă Тарасовăн нумай кĕтме тивмен. Часах хĕрача амăшĕ — вăтам çулсенчи сăпайлă хĕрарăм пырса кĕнĕ. Тарасов çине пĕрре пăхсанах, вăл çак этем кам пулнине тавçăрса илнĕ те хуллен ыйтнă:

— Эс... эс лерен пуль?

— Çавăнтан...

Хĕрарăм Тарасова хĕрхенсе ассăн сывласа илнĕ, унтан ăна çиме сĕнсе пĕр чашăк вĕри яшка ярса панă. Çавăнтах канаш пама тытăннă:

— Кунта сана тытма пултараççĕ. Кашни каçах облавăсем пулаççĕ вĕт. Эсĕ хуларан аяккарах, ялалла кайма тăрăш, тăванăм...

— Пĕлетĕп,— тенĕ Тарасов ăна хирĕç,— анчах ăçталла кайсан лайăхрах пулассине чухламастăп-çке...

Ырă кăмăллă хĕрарăм ăна Минскран темиçе километрти ял ятне тата унта çĕр выртма кам патне кĕмеллине каланă: «Хăрамалли çук, ман тăвансем вĕсем...»

Чĕререн тав тунă ăна Тарасов:

— Ĕмĕрте те манмăп сана!..

Вăл каланă çĕре Тарасов чиперех çитнĕ. Чăн та, çул çинче нимĕçсене тĕл пулкаланă, анчах çĕтĕк-çатăк тумланнă, сухалĕ ÿссе кайнă пĕччен çын çине лешсем çаврăнса та пăхман. Пĕлме пултарайман çав вĕсем çак «çапкаланчăк» кайран алла пăшал тытса хăйсене хирĕç епле паттăррăн çапăçасса!

Ку ялта та питĕ лайăх çынсем йышăннă Тарасова. Тăраниччен çитернĕ, шыв ăшăтса çăвăнтарнă, таса кĕпе-йĕм панă. Юлашки темиçе уйăх хушшинче пĕрремĕш хут канлĕ çывăрнă вăл. Тепĕр кунне, ирхи апат хыççăн, кил хуçисемпе — икĕ ватăрах хĕрарăмпа — сывпуллашнă та хĕвелтухăçнелле утнă. Фронт еннелле. Хамăрăннисем патне çитме ĕмĕтленсе...

Вăрçă хыççăн çирĕм çул ытла иртсен çырса кăларнă хăйĕн «Дороги эти позабыть нельзя» ятлă кĕнекинче Андрей Григорьевич çав кунсене аса илсе çапла каланă: «Вăрçăччен эпĕ... Белоруссире пулса курман. Ку халăхăн чĕлхине те, йăлисене те пĕлмен. Анчах халĕ, çав тери йывăр та хурлăхлă условисенче çак ырă кăмăллă çынсем хушшине лексе паллашрăм. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех оккупацие лекнĕ пулсан та, белоруссем Совет влаçĕн вăйне ĕненсе шанма пăрахман, ирĕклĕхе юратассине çухатман, нумай нациллĕ Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕ-хĕрĕсем пулса юлнă. Куна эпĕ кайран, алла хĕçпăшал тытса çак паттăр та пиллĕтивлетлĕ çĕр çинче гитлеровецсене хирĕç çапăçнă чух та пиншер хут курнă...»

...Белорус халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç мĕн тери хастаррăн та хăватлăн çапăçни çинчен историксем те, писательсем те нумай кĕнеке çырнă, кино ăстисем документлă тата художествăллă фильмсем сахал мар ÿкернĕ, артистсем театрсенче чаплă спектакльсем лартнă. Вĕсене совет çыннисем юратса вулаççĕ, тулли кăмăлпа пăхаççĕ.

Ман умра «Советские партизаны» ятлă питĕ хулăн кĕнеке выртать. Çак кĕнекен 510-мĕш страницинче çапла çырнă:

— Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Белоруссире 370 пин ытла партизан çапăçнă, вĕсем 1108 партизан отрячĕсенче пĕрлешсе тăнă... Виçĕ çул тăсăлнă кĕрешӳре Гитлер салтакĕсемпе офицерĕсене, полицейскисемпе вĕсене пулăшакансене (сутăнчăксене ĕнтĕ.— *Л. А.)* 500 пин çынна яхăн вĕлернĕ тата амантнă, нимĕç çарĕн 47 генералне тата ытти пысăк чинсене пĕтернĕ, тăшманăн 948 гарнизонĕсемпе штабĕсене аркатнă, 21 радионстанцие, 7300 километр тăршшĕ телеграфпа телефон линийĕсене çĕмĕрнĕ. Партизансем 300 пин километр ытла рельс сывлăша сирпĕтнĕ, 11.128 çар эшелонне çырманалла сиктернĕ. Вĕсем 939 çар склачĕ, 305 самолет, 1355 танкпа бронемашина, 20 пин ытла автомашинăпа мотоцикл тĕп тунă, тăшманăнне 13.455 тонна бензин çунтарса янă, шоссесем тата ахаль çулсем çинче 5529 кĕпер çĕмĕрсе тăкнă...

Питĕ нумай сиен кӳнĕ тăшмансене «халăхшăн тавăракансем», вăрмансенчи паттăрсем, вăрттăн ĕçлекен подпольщиксем. Вĕсем белорус халăхĕн хăрушă та тискер палачне, Гитлерăн чи çывăх помощникĕсенчен пĕрине, Белоруссин «генеральнăй комиссарне», Вильгельм Кубе ятлă çынçиене хăйĕн вырăнĕ çинчех вĕлерме май тупнă!

Çав кĕнекерех партизансен отрячĕсенче белоруссемпе, вырăссемпе, украинецсемпе пĕрле тăшмана хирĕç «грузинсем, армянсем, казахсем тата ытти совет халăхĕсен представителĕсем» хăюллăн та хастаррăн çапăçни çинчен каланă.

Халĕ эпир Белоруссири партизансем хушшинче чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем те сахал мар пулни çинчен пĕлетпĕр. Вĕсенчен пĕри — Андрей Григорьевич Тарасов. Ахаль рядовой партизан та мар,— командир, çамрăк партизансен политикăллă руководителĕ, комсомолăн вăрттăн ĕçлекен райкомĕн секретарĕ пулнă вăл!

Анчах фашистсен тыткăнĕнчен тарса хăтăлнă хыççăн партизансем патне çитиччен нумай хура-шур курма тивнĕ-ха унăн...

...Минск çывăхĕнчи пĕчĕк ялта ырă çынсем патĕнче çĕр выртса тухнă хыççăн Андрей пĕрмай хĕвелтухăç-

нелле утнӑ. Ориентир вырӑнне — чугун ҫул: вӑл фронт еннелле кайнине пӗлнӗ Тарасов. Паллах ӗнтӗ, шпалсем тӑрах мар, аякран, вӑрманпа, час-часах шурлӑхсем урлӑ каҫса пынӑ. Питӗ асӑрханмалла пулнӑ-ҫке унӑн! Каллех нимӗҫсен аллине лексен ҫут тӗнчере пурӑнасси ҫинчен ан шутла вара!

Хӑш чух ҫул ҫинче тӗл пулакан ялсене кӗрсе тухнӑ. Тӳрех мар, унта нимӗҫсем ҫуккине пӗлсен кӑна.

Заозерье ятлӑ ялта вӑл хӑйӗн пекех лагерьсенчен тарнӑ «окруженецсемпе» паллашнӑ.

— Фронт патне ҫитейместӗн,— тенӗ ӑна вӗсем.— Тытаҫҫӗ те каллех йӗплӗ пралук хыҫне пӑрахаҫҫӗ. Кунтах вырнаҫса ҫӑкӑрлӑх ӗҫлесе тупас пулать, пирӗн пек...

Ку ялта совхоз пекки пур-мӗн. Рабочисем кирлӗ имӗш. Анчах унта нимӗҫсемех хурал тӑраҫҫӗ иккен.

— Ара, лагерех вӗт вӑл! — тенӗ Тарасов.— Каллех тӑшман аллине лекетӗп-иҫ! Ҫук, кун пек «ырлӑх» кирлӗ мар мана!

Ҫав кунах Рыбцы ятлӑ тепӗр яла кайнӑ. Урамра пӗр старике тӗл пулсан, унпа пӗрле чӗлӗм туртма ларнӑ. Сӑмах хыҫҫӑн сӑмах. Кӑмӑллӑ старик ӑна кун пек курӑнса ҫӳреме те хушман: пур ҫӗрте те нимӗҫсем!

— Вӑрманалла ҫул тыт эсӗ, ывӑлӑм. Сан пеккисем пурте унталла туртӑнаҫҫӗ. Ав ҫав вӗтӗ вӑрман урлӑ Боровая Слобода еннелле кай. Унта нимӗҫсем ҫук...

Лайӑх канаш панӑ ӑна старик. Вӑл кӑтартса янӑ ялта Тарасов чӑн-чӑн патриотсем патне лекнӗ.

— Халлӗхе ман патӑмра пурӑн-ха, вӑй ил пӑртак, унтан мӗн тӑвасси курӑнӗ,— тенӗ ӑна Иван Солодуха ятлӑ колхозник.

Пӗррехинче, октябрь пуҫламӑшӗнче, Солодуха Тарасова хире ҫӗрулми кӑларма илсе кайнӑ. Сасартӑк вӗсем хӑйсенчен ытла инҫетре те мар автоматсем шатӑртатнине илтнӗ. Кам перет, кама переҫҫӗ? Ҫакна пӗлме вӗсем ҫывӑхри сӑртлӑрах вырӑна чупса хӑпарнӑ. Акӑ мӗн курнӑ вара: пӗр километр пек аякkарахра, Узлян тенӗ местечко таврашӗнче, нимӗҫсем уйра унталла та кунталла чупакан ҫынсене мотоциклсемпе хӑваласа, хыҫалтан автоматсенчен пере-пере ӳкернӗ.

Каҫхине Узлянран калама ҫук хӑрушӑ хыпар ҫитнӗ: фашистсем ҫав местечкӑри еврейсене — ваттисене,

хĕрарăмсене, ачасене, пурне те! — уя хăваласа тухса хăйсене валли масар шăтăкĕ алттарнă та персе вĕлернĕ. Тарса хăтăлма пикенни́сене мотоциклсемпе хуса çитсе пенĕ...

Тахçанччен лăпланайман Андрей çакăн хыççăн. Ним айăпсăр, хӳтлĕхсĕр çынсене хыçалтан хăваласа тискер кайăксене вĕлернĕ пек вĕлерни куç умĕнчех тăнă. Тавăрмалла тăшмансене, хаяррăн тавăрмалла куншăн! Вĕсене хăйсене урнă йытăсене вĕлернĕ пек вĕлермелле!..

— Неушлĕ çакăн пеккине курсан та тӳссе лармалла пирĕн?! — тенĕ пăлханса кайнă Тарасов.

— Тăшмана çара алăпа нимĕн те тăваймастăн,— мăкăртатса илнĕ ăна хирĕç Солодуха.— Тăхта, вăхăт çитĕ...

Унтан вăлах такамсем нимĕçсен ултă вагонне çырана ярса икçĕр нимĕç салтакне вĕлерни-амантни, шоссе çинче вуникĕ гитлеровец ларса лынă грузовика сывлăшалла сиктерни, тепĕр çĕрте çăмăл машинăна пăшалсемпе персе икĕ нимĕç офицерне вĕлерни çинчен каласа панă.

Эппин, оккупацири халăх кĕрешме тытăннă!..

...Солодуха Тарасова Малашонок хушаматлă çынпа паллаштарнă. Вăл район центрĕнче — Руденскра ĕçленĕ, пахчаçимĕç базинче. Парти райкомĕ хушнипе, вăл нимĕçсемшĕн «шанчăклă çын» пулса тăнă. Çав «шанчăклă çын» пирĕн подпольщиксен ушкăнне ертсе пынине оккупантсем пĕлмен. Малашонок ăшăрах тумтир туянса тăхăнма, хăйĕн валли хĕçпăшал тупма канаш панă. Тарасов партизансем патне кайма хатĕрленнĕ.

Нимĕçсем вăл вăхăтра пирĕн çынсен кăмăлне хуçас, вĕсен ирĕке тухас ĕмĕтне пуçĕпех путарса лартас шутпа çине тăрсах суя сăмах сарнă: Хĕрлĕ Çар пĕтнĕ, Мускав пирĕн алăра! Анчах Тарасовпа çав ялта пурăнакан «окруженецсем» Малашонок урлă тĕрĕссине пĕлсе тăнă: Мускав парăнман, Хĕрлĕ Çар фашистсен наступленине чарса лартнă! Кăшт каярахпа вĕсем нимĕçсене Мускав патĕнче аркатса тăкни çинчен те пĕлнĕ...

Ку ырă хыпара Тарасовпа унăн юлташĕсем халăх хушшинче сарнă. Çынсен кăмăлĕ çĕкленнĕ, вĕсем çăмăлтараххăн сывла пуçланă.

Гитлеровецсем хăйсем лартнă вулăс старшинисемпе ялсенчи старостăсем урлă халăхран ăшă япаласем

пухасси ҫинчен пӗлтернӗ — вӗсем Россия хирӗсенче сивӗпе шӑнса хытакан нимӗҫсен «никам ҫӗнейми» ҫарӗ валли кирлӗ пулнӑ-ҫке. Тарасовпа унӑн юлташӗсем ялти ҫынсене ҫине тӑрсах ӑнлантарма тытӑннӑ: нимӗҫсене ӑшӑ япаласем пӗртте памалла мар, мӗн пуррине йӑлт пытармалла! Ҫавӑн пекех, тӑшман ҫарӗ валли тырӑ та, аш-какай та, сӗт те, нимӗн те памалла мар! Халӑх вӗсен сӑмахне итленӗ...

Сасартӑк Боровая Слободара шиклентерекен хыпар сарӑлнӑ: яла полицайсем килнӗ, вӗсем старостӑпа пӗрле кашни киле кӗрсе тӗрӗслеҫҫӗ...

«Окруженецсен» вӗсен куҫне курӑнма юраман. Хваттер хуҫи Солодуха Тарасова анкартисем хыҫӗпе илсе кайса, улӑм тултарнӑ пысӑк арпалӑха пытарнӑ. «Тен, кирлӗ пулӗ», тесе, ӑна сысна пусмалли вӑрӑм ҫӗҫӗ тыттарнӑ. Пӗртен-пӗр хӗҫпӑшал! Тарасовран малтан унта ытти «окруженецсем» те пырса пытаннӑ иккен.

— Енчен те пире кам та пулин сутнипе полицайсем килсе кӗрсен — чӗррӗн парӑнмастпӑр! — тенӗ вӗсем, пӗр шухӑшлӑ пулса.

Юрать-ха, никам та сутман. Ахалӗн полицайсем пынах пулӗччӗҫ. Вара тем пулса тухатчӗ-ха кунта!

Полицайсемпе староста ялтан нимӗнсӗрех тухса кайнӑ. «Ют ҫынсене» те тупайман, нимӗҫсем валли ӑшӑ япаласем те пухайман,— ял ҫыннисем пӗтӗмпех пытарнӑ...

Ҫӗнӗ — 1942-мӗш — ҫул умӗн, Тарасовпа унӑн юлташӗсем хушнипе, ялти комсомолка Соня Юркевич ҫамрӑксене пӗр пӳрте пухнӑ. Кӳршӗри икӗ ялтан та пынӑ каччӑсемпе хӗрсем. «Улах» питӗ хаваслӑ иртнӗ — кулӑс калаканӗ те тупӑннӑ, ҫамрӑксем ташланӑ, совет юррисене юрланӑ. Уйрӑмах, вӗсем Хӗрлӗ Ҫар Мускав патӗнче фашистсене аркатса тӑкни ҫинчен илтсен хавасланса кайнӑ. Тарасов пӗлтернӗ ҫак хыпар ҫамрӑксен чӗрисенчи шанчӑка ҫирӗплетнӗ.

Ҫак «улах» ҫинчен нимӗҫсем пӗлмесӗр юлман. Чухланӑ вӗсем — кун пеккине ҫакӑнта пытанса пурӑнакан совет воинӗсем ҫеҫ туса ирттерме пултарнӑ, урӑх никам та мар!

Кӗҫех яла приказ ҫитнӗ: ҫар ҫыннисем пулнӑ «ютсен» пурин те вулӑс управинче регистрацире пулмалла. Боровая Слободана кӳршӗри ялтан староста пынӑ

та, «окруженецсене» халех лашасем кӳлсе Руденска кайма хушнӑ.

— Астӑвӑр, пӑрӑнма ан шутлӑр, эсир каймасан нимӗҫсем кунта карательнӑй отряд яраҫҫӗ те пӗтӗм ял ҫыннисене вӗлерсе пӗтереҫҫӗ! — юнаса илнӗ вӑл.

Тарасовпа унӑн юлташӗсен хӑйсене тӑвансем пек йышӑнса, ӑшӑ пӳртсенче ҫитерсе-ӗҫтерсе усранӑ, кирлӗ самантсенче тӑшмансенчен пытарнӑ ял ҫыннисене хурлӑх кӑтартас килмен. Старостӑпа пӗрле регистрацие кайма килӗшнӗ вӗсем. Анчах вулӑса ҫитсенех комисси витӗр тухнӑ ҫынсене Германие, каторгӑна илсе каясси ҫинчен пӗлнӗ те, каялла тухса шӑвӑннӑ. Ҫулпа мар, тӳрӗрен тӳрӗ, вӑрман витӗр таврӑннӑ вӗсем Боровая Слободана.

Тепӗр кунне пӗлнӗ: регистрацире пулнисене нимӗҫсем пурне те Германие янӑ. Тарасовсене илсе кайнӑ старостӑна, вӑл ҫынсене тартнӑшӑн, нухалясемпе ӑшаланӑ. Ҫавӑ кирлӗ те сутӑнчӑка!

Ҫапах та вӗсен ку Слободара тек пурӑнма юраман. Хуть те хӑш самантра та тӑшмансем пырса тухма пултарнӑ — «ютсен» списокӗ староста аллинче юлнӑ вӗт-ха! Ҫавӑнпа та Тарасовсем ир-ирех вӑрмана тухса кайнӑ та тӗттӗм пулсан тин таврӑннӑ. Анчах ку та ҫӑлӑнса юлмалли меслет мар-ҫке: кам та пулин систерсен (сутӑнчӑксем пурах!) вӗсене ҫӗрле те ярса тытаҫҫӗ...

— Партизансене шыраса тупас пулать,— тенӗ Тарасов,— ӑҫта-ши вӗсем? Пӗлместӗн-и? — хваттер хуҫи куҫӗнчен пӑхнӑ вӑл.

— Вӗсене Птичь шывӗн леш енче шырамалла,— ответ панӑ Солодуха,— анчах хӑш вырӑнтине тӗп-тӗрӗссипе пӗлместӗп ҫав...

Ҫакӑн хыҫҫӑн Андрей Тарасовпа унӑн икӗ юлташӗ — Николай Алексеенкӑпа Яков Савченко — Боровая Слободаран сӗм-ҫӗрле тухса Русаковичи енчи вӑрманалла ҫул тытнӑ.

Уйрӑлас умӗн Солодуха Тарасова тӑватӑ патронлӑ «ТТ» пистолет тата виҫӗ обойма винтовка патронӗ панӑ. Пулас партизансен пӗтӗм «боезапасӗ» те ҫав кӑна пулнӑ...

...Вунӑ куна яхӑн утнӑ вӗсем вӑрмансем тӑрӑх, тарӑн юр ӑшшӗн. Никама та курман. Ывӑнса халран кай-

са ҫитнӗ — ҫывӑрасса та ура ҫинче тӑрсах ҫывӑрнӑ. Ҫимелли пӗтнӗ. Кӑштах ӑшӑнса илме кӑвайт чӗртме те шикленнӗ. Пӗр-пӗр яла кӗрсе вӗри апат ҫиесси, ӑшӑ ҫӗрте ҫӗр выртса тухасси ҫинчен шухӑшлама та хӑрушӑ. Анчах этемӗн тӳсӗмӗ вӗҫӗмсӗр мар ҫав, унӑн та виҫи пур.

1942 ҫулхи мартӑн 3-мӗшӗнче, каҫалапа, вӗсем сасартӑк пӗр пысӑкках мар ял патне пырса тухнӑ. Питӗ лӑпкӑ вырӑн пек курӑннӑ вӑл. Мӑръесенчен тӗтӗм йӑсӑрланать, урамӗсем пуш-пушах.

Кӑштах канашласа тӑнӑ хыҫҫӑн, иккӗлене-шикленех, туссем ҫак яла кӗме килӗшнӗ.

— Вӗри шыв ӗҫсе ӑшӑнса тухни те теме тӑрать...

Ҫакӑ вара вӗсен калама ҫук пысӑк, нимӗнпе тӳрлетмелле мар йӑнӑшӗ пулнӑ. Хӑрушла йӑнӑш!

Вӗсем ял хӗрринчи пӳрте пырса кӗнӗ. Чирлӗ выртакан кил хуҫи кӗтмен хӑнасем ҫине сиввӗн кӑна пӑхнӑ.

— Камсем вара эсир? Ӑҫтан килсе кӗтӗр капла? — ыйтнӑ вӑл.

— Куратӑн пуль, вӑрмантан,— тенӗ Тарасов.— Пирӗн пӑртак ӑшӑнасчӗ те вӗри апат ҫисе пӑхасчӗ. Шӑмшакри юн та шӑнса хытрӗ ӗнтӗ. Нумаях чӑрмантармӑпӑр сире, юлташ...

Кил хуҫи ассӑн сывласа янӑ.

— Пӗрине йышӑнӑп, анчах иккӗшӗ кӳршӗсем патне кайӑр, унсӑр мана партизансене хӳтлӗх паратӑн тесе пӗччене айӑплама пултараҫҫӗ.

Ним тума та ҫук. Мӗн калатӑн ӑна хирӗҫ? Ахӑртнех, партизансене киле кӗртекенсене айӑплаҫҫӗ пуль.

Тарасов кунтах юлнӑ, Алексеенкопа Савченко урӑх хваттер шырама тухса кайнӑ.

Ӑшӑ пулнӑ пӳртре, лайӑх. Кил хуҫи арӑмӗ Тарасова вӗри яшка ҫитернӗ. Анчах вӑл сӗтел хушшинчен тухма та ӗлкӗреймен — Савченко таврӑнса пынӑ. Питӗ кӳреннӗ сӑнлӑ.

— Аптрарӑм, никам та кӗртмест,— тенӗ вӑл.

— Ӑна та ҫӗр выртма ирӗк парӑр ӗнтӗ, тархасшӑн, ир-ирех тухса каятпӑр эпир, никам та сисмест,— хуҫана ӳкӗтленӗ Тарасов.

Хуҫа, кӑмӑлсӑр пулин те, килӗшнӗ.

Вӗри апат ҫинӗ хыҫҫӑн, ӑшӑ пӳртре вӗсене тӳрех ыйхӑ пусма тытӑннӑ. Вырткӑ-выртман ҫывӑрса кайнӑ.

Нумай та çывăрайман...

Такам питĕ хытă çапнипе Тарасов сак çинчен ӳкнĕ. Мĕн пулнине тавçăрса иличченех аллине пистолет патнелле тăснă, анчах çав самантрах ăна пуçĕнчен çапса анратнă. Пӳрт тулли темле ӳсĕр çынсем тăнине çеç уйăрса илме ĕлкĕрнĕ вăл.

— Аха-а, лекрĕн-и, большевик?! — кăшкăрнă пĕри.

Тарасова тапа-тапа ура çине тăратнă та аллисене каялла пăрса çыхса лартнă. Вăл ун-кун пăхса тусне шыранă. Савченко чӳрече патĕнче сулăнкаласа тăрать иккен. Унăн аллисене те çыхнă.

Пĕтрĕ пурнăç! Çăлăнас çук халь тин. Питĕ тарăхмалла-çке, ытла та ухмахла лекрĕç вĕсем тăшмансен аллине! Мĕн тума кĕнĕ пуль çак яла!..

Лекесси ак мĕнле пулнă.

Вĕсенчен пĕри, Николай Алексеенко, çĕр выртмалли шыраса, çутă курăнакан пĕр пӳрте пырса кĕнĕ. Сĕтел хушшинче темиçе çын картла выляса ларнă. Алексеенко кĕрсенех, пурте ун çине çаврăнса пăхнă.

Кил хуçи ют çынна питĕ хапăл туса йышăннă пек кăтартнă — ирт, ларса кан, ăшăн, сан пеккисене пулăшма яланах хатĕр эпир, тенĕ, унтан апат çиме те сĕннĕ...

Анчах та çав Варивончик ятлă этем — хăрушă тăшман, чунне фашистсене сутнă тискер кайăк пулнă-мĕн! Халтан кайса çитнĕ Алексеенкăна «ыр кăмăлпа йышăннă» вăхăтрах хăйĕн ывăлне полицайсем патне чуптарнă вăл!

Вăхăт нумай та иртмен, пӳрте сăмакун хыпса тултарнипе «паттăрланнă», хĕп-хĕрлĕ питлĕ полицайсем тĕпĕртетсе пырса кĕнĕ. Алексеенкăна тӳрех хĕнеме тапратнă, аллисене каялла çыхса хунă. Ку яла вăл пĕччен килменнине, юлташĕсем Соболевский хушаматлă çын патĕнче пулнине пĕлнĕ те часрах вĕсене те тытма васканă...

...Тарасов умне темле лапчăк сăмсаллă, тулли питлĕ, пĕвĕпе çӳллĕ, кашкăр пек пăхакан Степан Илясов ятлă полицай сиксе пынă. Кăкринчен ярса тытнă.

— Эсĕ асли пулмалла-ха, кала! Ăçтан килтĕр? Хăш тĕлте сирĕн банда? Кала, çакăнтах вилсе выртас килмест пулсан! — ĕçкĕпе çĕтсе ларнă сасăпа кăшкăрнă вăл.— Кала, хĕрлĕ шпион!..

— Ирсĕр, сутăнчăк! — тенĕ те Тарасов, лач! сурнă.

— Вĕлере-еп!..— чышкипе питĕ хытă çапнă ăна Илясов.

Арестленисене тула илсе тухса урам тăрăх уттарнă.

«Акă, халех, çак самантрах персе пăрахаççĕ...» — шухăшланă Тарасов. Анчах темшĕн хăй хăранине пĕрт-те туйман. Тен, çын туйăмĕсем те пĕтнĕ-и унăн тыткăна лекнĕренпе темтепĕр тӳснипе?

Полицайсем вĕсене персе пăрахма васкаман-ха. Аллисене салтмасăрах çунасем çине лартнă та чылай инçетри Кошели ятлă яла, полици участокне илсе кайнă.

Кунта вара полици начальникĕпе хайхи Илясов «допрос» тума тытăннă. Тĕрĕссипе каласан — асаплантарма, чи усал сăмахсемпе кӳрентерсе хĕнеме тапратнă. Малтан аялти кĕпе-йĕм таранах хывăнтарнă — çапсан хытăрах ыраттарма.

— Кам янă сире кунта? Кам сирĕн командир? Ăçта сирĕн банда? Калăр, атту вĕлеретпĕр!..

Уйрăмах Илясов тени «тăрăшнă». Кашни ыйту хыççăнах арестленисене аллинчи чĕн нухаляпа турта-турта çапнă.

— Никам та яман пире, хамăр çӳретпĕр, окруженецсем эпир...— тенĕ Тарасовпа унăн юлташĕсем.

— Суятăр, большевиксен йыттисем!..

Ӳсĕр полицайсем хытăран хытă урса пынă. Çапса ӳкерсе, чышкăсемпе, чĕн пиçиххисемпе, нухаляпа хĕненĕ, винтовка приклачĕпе чышнă, урай тăрăх каллĕ-маллĕ сĕтĕрнĕ.

— Персе пăрахатпăр! Судсăр-мĕнсĕрех! — çухăрнă Илясов.

Чĕп-чĕр юн пулнă, антраса çитнĕ ним айăпсăр виççĕ çын стена çумĕнче, икĕ чӳрече хушшинче тăнă. Вĕсене çапах та тумтирсене тăхăнма ирĕк панă, анчах аллисене каллех çыхса хунă.

Акă, пĕр самант иртет-и, иккĕ-и, вĕсене тула илсе тухаççĕ те — переççĕ... Ĕçĕ те пĕтет вара тискер кайăксен...

Кашни самантрах вилĕм çывхарать...

Анчах пурăнас килет-çке, çав тери пурăнас килет!..

Тарасов шăлĕсене çыртса пĕтĕм шăнăрĕсене хытарнă. Каялла çыхнă аллисене пăркаланă. Çыхни пушаннă пек туйăнать. Тата, тата... Алăсем кантраран хăтăлаççĕ!

— Мӗн пулать, мӗн килет, пурпӗр вилӗм... Анчах, тен... телей пулӗ?

Урӑх нимӗн те шухӑшламасть вӑл, аллисем пушансанах юнашар тӑракан Алексеенкӑна чавсипе тӗртсе илет те чӳрече патнелле ыткӑнать, самантранах ӑна пуҫӗпе аркатса тулалла сикет. Тарӑн юр ӑшне кӗрсе ӳкет. Секундранах ура ҫине тӑрса аяккалла, сӗм-тӗттӗм ҫӗрелле чупать... Хыҫалта пӑшал сассисем кӗрслетеҫҫӗ. Андрей чупать. Ӳкет. Тӑрать те татах малалла ыткӑнать... Чӗри сиксе тухасла тапать. Йӑпӑрт каялла ҫаврӑнса пӑхать те хӑйӗн хыҫҫӑн тахӑшӗ чупнине курать. «Алексеенко ку...» — шухӑшлать Тарасов. Анчах йӑнӑшнӑ вӑл — хыҫҫӑн чупаканни полицай пулнӑ-мӗн.

— Стой, комиссар!..

Акӑ, вӑл Тарасова хуса ҫитмех пуҫлать. Вӑйлӑ-ҫке, сывӑ этем, самӑртма хупнӑ сысна пекех ҫисе, эрех кӳпсе пурӑннӑскер. Тарса хӑтӑл-ха унран!

Тарасов сасартӑк чарӑнса тӑрать те ун ҫинелле ыткӑнать. Лешех иккен ку, Илясов! Шухӑшласа тӑмалли ҫук, Тарасов ун аллинчи винтовкӑна туртса илсе аяккалла ывӑтать. Ҫав самантрах вӗсем тытӑҫса юр ҫине ӳкеҫҫӗ. Хӑрушла кӗрешӳ пуҫланса каять. Пурнӑҫпа вилӗм хушшинчи кӗрешӳ. Сутӑнчӑк ҫийӗнче выртакан Тарасов ӑна пырӗнчен ярса тытма тӑрӑшать, анчах ҫав вӑхӑтра Илясов кинжал туртса кӑларать те Тарасова сылтӑм тӑнлавӗнчен чикет, унтан ҫине-ҫине, ӑҫтан май килнӗ унтан тирме тытӑнать.

Тарасов суранӗсенчен юн юхать, юн унӑн куҫне хуплать, ҫапах та вӑл тӑшмана тӑма памасть, питӗнчен хытӑ ҫапать. «Хура-ах!» — кӑшкӑрса ярать полицай.

Паллах, ун патне тусӗсем чупса пыма пултараҫҫӗ. Вара чӑнах та пӗтмелли ҫитет. Тарасов сутӑнчӑка тата темиҫе ҫапать те, унран уйрӑлса тарать, кӑшт кайсан темле подвал пекки хыҫне пӗшкӗнсе пытанать. Унччен те пулмасть, Илясов патне полицайсем чупса ҫитеҫҫӗ.

— Тарчӗ! Хуса ҫитӗр ӑна! — ҫухӑрать Илясов.

...Полицайсем, темшӗн, вырӑнтан хускалман, тӗттӗмелле винтовкӑсенчен кӗрслеттернӗ ҫеҫ. Кӑшт тӑхтасан каялла кайнӑ. Тарасов та хӳтлӗхрен тухса шӑвӑннӑ. Хыҫалта каллех пӑшал сассисем илтӗннӗ — полицайсем Тарасовӑн икӗ юлташне те персе пӑрахнӑ...

Уйри ҫуна ҫулӗ ҫине тухсан Тарасов, юлашки вӑйне пухса, пӗр хушӑ сывлӑш ҫавӑрмасӑр чупнӑ — аяккарах

каяс пулать полицайсенчен, вĕсем каллех хăвалама пултараççĕ. Тытсан — калаçса тăрас çук. Тӳрех вĕлереççĕ. Суранĕсенчен юн юхнипе Тарасов халран кая пуçланă. Миçе çĕртен чикнĕ-ши ăна бандит? Анчах кун çинчен шухăшламалли вăхăт пулман-ха халь. Унăн епле пулсан та пĕр-пĕр яла çитсе ӳкмелле. Ырă çынсем пурах пулĕ-ха!

...Ир енне вăл Ветеревичи ятлă яла çитнĕ.

Ырă çынсем пулнă çав! Малтан пырса кĕнĕ пӳртрех унăн суранĕсене çуса çыхса янă, анчах вăл тӳссе тăрайман, тăнне çухатса урайне ӳкнĕ. Вăранса тăна кĕрсен, хăй урайĕнче мар, вырăн çинче выртнине курнă — асапланса пĕтнĕ сынна хĕрхенсе кил хуçисем çĕклесе вырттарнă ĕнтĕ.

Тăшмансем пырса кĕресрен хăраса, кил хуçисем Тарасова хăйсем патĕнче нумай тытайман. Вăл, аран тăрса тухса, тепĕр киле кайса кĕнĕ. Кунта та пулăшнă ăна, урине чĕркеме ăшă пуртенкке панă, анчах çĕр вырттарман — партизансене пулăшакансене нимĕçсем персе вĕлерессипе хăратса пĕтернĕ. Виççĕмĕш килте вара вĕри апат çитернĕ те аслăк çине хăпартнă, витĕнсе выртма икĕ ăшă утиял панă. Тепĕр кунне кил хуçи арăмĕ икĕ хутчен çимелли илсе пырса панă. Каç пулсан ун патне кил хуçи хăй хăпарнă та акă мĕн каласа кăтартнă: Тарасов вĕçерĕнсе тарнă хыççăн ирхине Кошелири полицайсем ăна йĕрлесе шырама тытăннă иккен, кӳршĕри ялсенче те ăна тытас тесе облавăсем тунă, килсерен ухтарса тухнă. Полицайсем текех хурахсем пек тапăнса ухтарса çӳресрен, тахăшĕсем юри сăмах сарнă: аманнă партизан Веркалы ялĕнче вилнĕ, унти çынсем ăна çĕре чикнĕ те ĕнтĕ, тенĕ.

Тарасов çĕр çинче текех çуккине ĕненсе, Илясовпа унăн шайки каялла таврăнса кайнă.

Тен, çав ирсĕр сутăнчăк Илясов çакăн хыççăн Тарасов çинчен пĕрре те аса илмен-и? Сахал пулнă-им унăн юнлă биографийĕнче кун пекки! Сахал сутнă-им вăл совет çыннисене, сахал асаплантарнă-и, вĕлернĕ-и! Пурне те ăçтан астăватăн? Тата мĕнех кирлĕ ăна астуни?

Çапах та аса илме тивнĕ вĕт...

Аса илме çеç мар, куçпах курма тӳр килнĕ хăй кинжалпа вуншĕр çĕртен чиксе те вĕлереймен Тарасова.

Вунсакăр çултан пулнă ку. Минск облаçĕнчи Гресск ятлă местечкăра, Çар трибуналĕн ларăвĕнче.

Вунсакăр çултан тытса суд умне тăратнă çынçиене.

Питĕ нумай преступленисемшĕн айăпланă ăна. Ытла та хăрушă ĕçсем тунă вăл халăха хирĕç. Никама та, ним чухлĕ те хĕрхенсе тăман.

Вăрçăччен уголовник пулнăскер, вăл фашистсем пырса кĕрсенех хăйне полицие йышăнма заявлени çырса панă. Лешсем ăна ытла тӳрех шанман. Илясов çак «шанчăка» юнпа сапласа илнĕ. Паллах, хăй юнĕпе мар: вăл хăйĕн юлташĕсем пулнă çынсенех гестапона тыттарнă. Çавăн хыççăн вара хура мундир тăхăннă, нимĕçсен аллинчен хĕçпăшал илнĕ — совет çыннисене пеме. Кун пек сутăнчăк хăйсемшĕн питĕ усăллă пуласси не курса, фашистсем ăна специальнăй шкула ярса партизансемпе кăна мар, мирлĕ çынсемпе те кĕрешмелли меслетсене вĕрентнĕ. Парăнман ялсене çунтарма, оккупантсене пăхăнасшăн пулман совет çыннисене асаплантарма, хăрушларах вĕлерме вĕрентнĕ ăна. «Курсра» вĕренсе тухсан, Илясов яланах фашистсем майлă «ĕçлетĕп» тесе тупа тунă та, ăна вице-фельдфебель званине панă. Вара вăл Селицери полици начальникĕн заместителĕ пулса тăнă...

Унăн тискер те хăрушла «ĕçĕсем» çинчен каласа та пĕтерес çук.

Вĕсенчен пĕрине çеç илсе кăтартăпăр.

Пĕррехинче Илясовсем çакăн пек хыпар илтнĕ: Степково ялĕнчи нумай çынсем килĕсене пăрахсах партизансем патне куçса кайма хатĕрленеççĕ имĕш. Çакна пĕлсен, Илясовпа унăн тусĕсем ахаль тумтир тăхăннă, çĕлĕкĕсем çумне партизансем пек хĕрлĕ хăюсем çĕлесе хунă та сĕм-çĕрле çав яла пырса кĕнĕ. Хăйсене партизансем пек кăтартса, ял çыннисене вĕсемпе пĕрле вăрмана пыма чĕннĕ: кĕçĕрех, тул çутăличчен тухса кайма ĕлкĕрмелле! Çынсем хĕпĕртесе хăйсен япалисене пухнă, ачисене вăратнă, лавсем çине тиенсе, ирччен партизансем патне çитес ĕмĕтпе вырăнтан хускалнă...

Улталаннă çынсене ялтан илсе тухсан, Илясовпа унăн бандичĕсем вĕсене персе пăрахнă. Ăнсăртран виçĕ çын çеç çăлăннă—Ольга Бенеш ятлă çамрăк хĕрарăмпа унăн тăвату çулхи ывăлĕ тата вуникĕ çулхи Саша Кудинович ятлă арçын ача. Вĕсем те йывăр аманнă...

Этем чĕриллĕ çынсем çавăн пек хăтланма пултараймаççĕ ĕнтĕ!

Халь — вунсакӑр ҫултан—Илясов совет сучӗ умӗнче тӑнӑ. Унпа пӗрле тата виҫӗ бандит-полицай.

Нимӗн те манман ҫынсем, йӑлтах аса илтернӗ.

Свидетельсем нумай пулнӑ — утмӑл ҫын ытла. Вӗсем хушшинче — Илясов вунпӗр хут амантнӑ Андрей Григорьевич Тарасов та, Степково ялӗнчен улталаса вӗлерме илсе тухнӑ, анчах вӗлерейменн Ольга Бенеш та, Саша Кудинович та...

Тарасовӑн калаҫмалли вӑхӑт ҫитсен, трибунал председателӗ Илясовран ыйтнӑ:

— Паллатӑн-и ҫак ҫынна? Астӑватӑн-и эс ӑна мӗн тунине?

— Паллатӑп. Астӑватӑп,— тенӗ бандит хӑйӑлтатакан сасӑпа.

Ольга Бенеш полицайсем ҫурӑлакан пульӑпа лектерсе ҫӗмӗрсе тӑкнӑ аллине кӑтартнӑ.

— Ҫак ҫӗлен печӗ мана, ҫакӑ, эп хам куҫпа куртӑм! — кӑшкӑрнӑ Саша Кудинович, кӑкри ҫине кӑтартса.

Суд Илясова персе пӑрахмалла тунӑ.

Суда пынӑ ҫынсем ку приговора пите ырланӑ...

...Халь ӗнтӗ каллех 1942 ҫулхи ӗҫсем ҫинчен калас пулать.

Чылай ялсене ҫитсе чылай ырӑ ҫынсем патӗнче пулнӑ хыҫҫӑн, вӗсем пулӑшнипе, Андрей Тарасов юлашкинчен партизансен отрядне лекнӗ. Ку вӑл Русаковичи ятлӑ ялта пулнӑ. Отряда «Артеменко» хушаматлӑ ҫын ертсе пынӑ. Анчах ку отряд пӗр вырӑнта тӑман, пӗрехмай вырӑнтан вырӑна куҫнӑ; суранӗсем тӳрленсе ҫитеймен пирки Тарасов ун пек ҫӳреме пултарайман-ха, ҫавӑнпа та ӑна халлӗхе, ҫирӗплениччен, пытанса пурӑнма хушнӑ, кунпа пӗрлех тата партизансемпе ҫыхӑннӑ врач — шанчӑклӑ ҫын — килне кӑтартнӑ: суранӗсене сиплеме ун патне ҫӳреме пултаратӑн!

Ялӑн пӗр вӗҫӗнче вырьӑх карти пулнӑ. Тарасов ҫавӑнти кормокухньӑра пытанса пурӑннӑ. Кӑнтӑрла ӑслак ҫинчи улӑм ӑшӗнче выртнӑ, каҫхине аяла, вырьӑхсем валли темӗн пысӑкӑш хуранра ҫӗрулми пӗҫернӗ ҫӗре аннӑ. Тӑраничченн ҫинӗ те ӑшӑ хуран ҫумӗнче тӗлӗрнӗ. Сӗм-ҫӗрле вара, ниҫта та пӗр сас-чӗв те илтӗнмен чух, анкартисем хыҫӗпе йӑпшӑнса, шӑппӑн, ялӑн тепӗр вӗҫӗнче пурӑнакан Павел Антонович Шелег патне кай-

нă. Унăн йăмăкĕ Люся, Минскран тарса килнĕ врач, Тарасов суранĕсене тасатса ҫыха-ҫыха янă...

Анчах вĕсем патне час-час ҫӳреме Андрей шикленнĕ — хăйĕншĕн те мар, лешсемшĕн: вăл унта чух сартăк карательсем пырса кĕрсен вĕсене партизансене пулăшнăшăн айăпласа тӳрех ҫакаҫҫĕ-ҫке!

Майĕпе Андрей ҫапах та сывалса, ҫирĕпленсе пынă.

Ăна отряда йышăннă. Отряд командирне пурте «Артеменко» тенĕ, анчах та ку вăрттăн ят ҫеҫ иккен, унăн чăн ячĕпе хушамачĕ Владимир Столков пулнă.

— Сывалса ҫитрĕм, тетĕн эппин? — ыйтнă вăл Тарасовран.

— Хуть те мĕнле задание те кайма пултаратăп,— тенĕ Тарасов.

— Асту, пирĕн пурнăҫ пыл та ҫу мар.

— Пĕлетĕп...

«Артеменко» отрячĕ йышлах пулман-ха, хăй тĕллĕн тăшмана хирĕҫ пысăк операцисем туса ирттерме пултарайман. Минскри вăрттăн ĕҫлекен парти обкомĕпе те, Пысăк Ҫĕрпе те ҫыхăнайман, хĕҫпăшал енĕпе те чухăнтарах пулнă.

Ҫапах та пĕр кун та ахаль ларман. Таврари шоссесем ҫинче пĕрмай засадăсем туса тăшман машинисене тапăннă, нимĕҫсем туса хунă вулăс управисене аркатнă, пирĕн ҫарсем чакса кайнă чух пытарса хăварнă хĕҫпăшала пухнă — вăл малашнехи кĕрешӳ валли кирлĕ пулнă, халăха ăнлантармалли калаҫусем ирттернĕ, оккупантсен суя сăмахĕсене тăра шыв ҫине кăларнă.

Уйрăмах тăшмана сутăннă ирсĕрсемпе — ялсенчи старостăсемпе, вулăс старшинисемпе, писарьсемпе ҫине тăрсах кĕрешнĕ. Хĕрхенсе тăман ун пеккисене! Анчах вĕсем хушшинче чăн-чăн совет ҫыннисем, фашистсемпе ҫине тăрсах кĕрешекенсем те пулнă — партизансем вĕсемпе ҫыхăннă, вĕсем урлă нимĕҫсем совет ҫыннисене хирĕҫ ăҫта тата мĕнле тискер ĕҫ тума хатĕрленнине малтанах пĕлсе, ҫав хăрушă ĕмĕтсене пурнăҫа кĕртме паман.

Отрядăн яланхи тĕп вырăн (база) пулман-ха, вăл тăтăшах куҫса ҫӳренĕ, ăҫта та пулин оккупантсене тапăнса сиен кӳнĕ хыҫҫăн урăх ҫĕре, ку вырăнтан вуншар километр аяккарах кайнă. Йĕпе тумтирсене кăвайтсем умĕнче типĕтнĕ, мунчара пит сайра ҫăваннă. Йывăр пулнă, кансĕр...

Андрей Тарасов кунта питĕ хаюллă çынсемпе паллашса туслашнă. Вĕсем — тăшман тылĕнче парти организацисем хушнипе юлнă чăн-чăн паттăрсем — пур чух та, темле йывăрлăха лексен те, ыттисене хавхалантаракан пример кăтартнă.

Тарасовсен отрячĕсĕр пуçне ку тăрăхра тата темиçе пысăк мар отряд пурри палăрнă — нимĕçсене хирĕç кашни хăй тĕллĕн, никампа çыхăнмасăр кĕрешнĕ. Кĕрешӳ ăнăçлăрах пулса пытăр тесе, çав отрядсене пĕрлештермелле-мĕн, анчах ун пек тума тăруках май килмен-ха.

Çак питех те кирлĕ ĕçе 1942 çулхи сентябрьте, Руденск районне фронт леш енчен лайăх хĕçпăшалланнă «Сокол» ятлă отряд пырса тухсан тин тунă. Ку отрядăн раци те пур-мĕн, вăл Пысăк Çĕрпе çыхăннă, ăна çар ĕçне лайăх пĕлекен çынсем ертсе пынă.

Çавăн чух вара Минск тăрăхĕнчи партизансен иккĕмĕш бригади чăмăртаннă,— унта ултă отряд кĕнĕ.

Тăшмана кисретекен пысăк вăй пулнă вăл бригада. Малтанхи кунсенчех нимĕçсемпе полицайсен темиçе гарнизонне аркатса тăкнă. Унăн халăх хушшинчи авторитечĕ хăвăрт ӳснĕ. Отрядсене кашни кун тенĕ пекех çĕнĕ çынсем хутшăннă — çамрăксем çеç мар, ватăраххисем те. Арçынсем çеç мар, хĕрарăмсем те.

Андрей Тарасова Чапаев ячĕпе хисепленекен отрядăн пĕрремĕш ротинчи взвод командирĕ тунă. Взводра çĕнĕрен пынă çамрăксем чылайӑипе, малтан вĕсене пăшал пеме çеç мар, партизансен пĕтĕм «наукине» вĕрентме тивнĕ.

Тăшман вăйлă, хаяр, чее, унăн партизансемпе кĕрешмелли тем тĕрлĕ меслет те пур. Çавсене пĕтĕмпех пĕлес пулать. Хирĕç çапма çеç мар, тăшмана пуçĕпех пĕтерсе хума вĕренмелле!..

1942 çулхи кĕркунне Тарасовсен бригади таврари чугун çулсем çинче диверсисем тума — фронт еннелле каякан эшелонсене сиктерсе йăвантарма тытăннă. Сентябрьпе октябрьте Тарасов, ыттисемпе пĕрле, çавăн пек йывăр та кăткăс заданисене темиçе хут та кайнă. Нимĕçсем ку тăрăхри чугун çулсене уйрăмах тимлĕ, кăнтăрла та, çĕрле те, хуть те мĕнле çанталăкра та хытă сыхланă пирки вĕсем патне çитсе рельсăсем айне взрывчатка хума питĕ хĕн пулнă. Анчах, темле кансĕр пулсан та, Тарасов ертсе пынă партизансем хăйсене хушнă

ĕçе чыслăн туса таврăннă — эшелонсем вăркăннă чугун çул çĕмрĕлнĕ пирки пуйăссем пĕр вăхăтлăха çӳреме чарăннă.

Сарăлсах, вăйлансах пынă партизансен бригадин паттăр ĕçĕсем.

Кашни кун пыра-пыра çапнă оккупантсене. Шоссесем хĕрринче засадăсем туса, иртсе пыракан тăшман машинисене тапăннă, салтакĕсене вĕлернĕ, машинĕсем çине мĕн тиенине (боеприпассем, апат-çимĕç т. ыт. те) хăйсем валли илнĕ, машинисене çунтарса янă.

Хăш чух пачах кĕтмен япаласем те пулса иртнĕ. Пĕррехинче партизансем Омельно ялĕ патĕнчен иртекен шоссе çинче нимĕç салтакĕсем ларса пыракан грузовике тапăннă. Партизансем сасартăк пеме тытăнсан, чĕре юлнă гитлеровецсем сиксе анса канава кĕрсе выртнă та хирĕç пеме тапратнă, çав вăхăтрах кабина алăкĕ уçăлнă та, шофер шурă тутăрпа сулкаланă — ан тивĕр парăнатăп, тенĕ ĕнтĕ. Партизансем нимĕçсемпе полицайсен командине аркатса тăкнă, анчах шофера тивмен. Вăл нимĕç те мар, австриец пулнă-мĕн, Франц ятлăскер. Унпа пĕрле тыткăна лекнĕ ултă полицайпа нумай калаçса тăман — вĕсене бригадăн особăй отделĕн приговорĕ тăрăх персе пăрахнă,— Франц чăн-чăнах антифашист пулнине ĕненсе, ăна отрядра хăварнă. Йăнăш пулман ку. Франц кайран паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ...

Хăйсен вăйĕ çителĕклĕ пулнине туйса, партизансем çав кĕркуннех Узлян ятлă местечкăра тăракан нимĕçсемпе полицайсен пысăк гарнизонне тĕппипех, ним юлми аркатса тăкнă.

Тарасов халь ĕнтĕ взвод мар, рота командирĕ пулнă.

Ноябрĕн пĕрремĕшĕнче унăн роти Гарбиэловка совхозĕнче вырнаçнă нимĕçсен продовольстви базине аркатнă. Çав каçах икĕ кĕпере сывлăша сирпĕтнĕ те полицайсен икĕ участокне тапăнса тĕп тунă.

Анăçлă иртнĕ кашни операци партизансене хăйсене çеç мар, таврари ялсенчи çынсене те питĕ хĕпĕртеттернĕ, вĕсен кăмăлне çĕкленĕ, тăшмана пуçĕпех аркатса çĕнтерес шанчăка çирĕплетнĕ.

Уйрăмах партизансем Аслă Октябрь революцийĕ 25 çул тултарнă кун Горелец ятлă ялта парад тата митинг туса иртterни хавхалантарнă çынсене. Митингра бригада командирĕ, партин вăрттăн ĕçлекен райко-

мӗн секретарӗ тата ыттисем тухса каланӑ сӑмахсем пурне те ҫунатлантарнӑ:

— Эпир тискер тӑшмана ҫӗнтеретпӗрех! Телейлӗ кун ҫитетех! Анчах ҫав телейлӗ куна ҫывхартма пирӗн ҫӗрӗн-кунӗн, хамӑрӑн пурнӑҫа та шеллемесӗр, паттӑррӑн ҫапӑҫмалла!..

...1972 ҫулта Минскра «Орлиное племя» ятлӑ пысӑк кӗнеке тухнӑ. Унӑн авторӗ — А. Денисевич, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Белорусси комсомолӗн Центральнӑй комитечӗн инструкторӗ пулса партизансем хушшинче ӗҫленӗ ҫын. Кӗнекере Белоруссии комсомолӗ, коммунистсем ертсе пынипе, нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ епле хастаррӑн кӗрешни ҫинчен питӗ тӗплӗн, вулакансене хумхантармалла каласа кӑтартнӑ.

Хӑйӗн кӗнекинче А. Денисевич темиҫе ҫӗрте те Андрей Тарасов пирки ҫырать. Малтан ӑна епле майпа комсомолӑн Руденскри вӑрттӑн ӗҫлекен райкомӗн пӗрремӗш секретарӗ туни ҫинчен калать. Бригада командирӗ Тарасова парасшӑн пулман—килӗшместӗп, Тарасов кунта та хӑй выранӗнче, пире хамӑра кирлӗ, ниҫта та ямастӑп ӑна, тенӗ. Анчах парти райкомӗн бюровӗ йышӑннӑ хыҫҫӑн комбригӑн ирӗксӗрех килӗшме тивнӗ.

Ҫавӑнтах автор Тарасовӑн биографине ҫырса кӑтартать те, комсомол райкомӗн секретарӗ тума «унран лайӑх кандидатура тупма та ҫукчӗ пуль ҫав», тет...

Кӗнеке авторӗ Тарасова тӑтӑшах ырлать.

1943 ҫулхи февраль уйӑхӗнче тӑшман оккупациленӗ ҫӗр ҫинче комсомолецсен Минск тӑрӑхӗнчи пӗрремӗш слетне ирттерме хатӗрленнӗ. Ӑна Червенски районӗнчи Усохи ятлӑ ялта тума палӑртнӑ. Анчах хӑшпӗр районсен делегачӗсем пырайман — вӑл кунсенче партизансене карательсем питӗ хытӑ тапӑннӑ. Руденск райкомӗн секретарӗ Тарасов связной урлӑ кӗске кӑна ҫыру ҫеҫ ярса панӑ: «Я не могу покинуть район, пока наши бригады ведут бои с врагом. Прошу, передайте межрайкому, что не явился по уважительной причине...»

Кӗнекере Андрей Тарасов вӑрттӑн ӗҫлекен комсомол райкомӗн ларӑвӗсене, актив канашлӑвӗсене мӗнле ирттерни, унта мӗн тери кирлӗ ыйтусем сӳтсе явни ҫинчен те ырласа каласа кӑтартнӑ.

Калама çăмăл! Вăрттăн ĕçлекен райком...

Пĕтĕм тавралăха фашистсем çавăрса илнĕ. Пур çĕрте те — ăçта ан пыр — сана хăрушлăх кĕтет, вилĕм сыхласа тăрать. Кашни пысăкрах ялта — нимĕçсемпе полицайсен гарнизонĕ. Вулăс центрĕсенче — управăсенче — старшинасем, ялсенче — старостăсем. Вĕсен çумĕнче — полицайсем. Тата «штатра тăман» сутăнчăксем, предательсем пур, вĕсене тӳрех уйăрса та илейместĕн. Пăхма — çын пекех, ăшĕнче — çĕлен, хураюн.

Райком секретарĕн тĕрлĕ çĕрте тăракан отрядсенчи комсомолецсене кăна мар, ялсенче юлнисене те шута илмелле, вĕсемпе çыхăхрах паллашмалла, çамрăксем тăшмана хирĕç тăрассине вăйлатмалла, ялсенче, тăшман гарнизонĕсенче вăрттăн ĕçлекен группăсем тумалла. Кĕскен каласан, пур каччăсемпе хĕрсене те нимĕç захватчикĕсене хирĕç куллен-кун хастаррăн, пĕр хăрамасăр кĕрешме çĕклемелле.

— Ан ман, Андрей, эс ертсе пыракан Руденск райкомĕн ку районра çеç мар, Пуховичи районĕн кăнтăр енче те ĕçлемелле пулать,— тесе хăварнă Тарасова Белоруссии комсомолĕн Центральнăй комитетĕнчен пынă инструкторсем, вăл вăрттăн ĕçлекен райком секретарĕ пулма килĕшсен.

Андрей Тарасов бригада штабĕнчен хăйсен отрядне таврăннă,— унăн ĕнтĕ хăйĕн ротине урăх çын аллине памалла.

Сасартăк — хăрушă хыпар;

— Карательсем бригадăна пур енчен те çăварса илме тытăннă! Комбриг приказ панă — тăшманпа çапăça-çапăça вăрманалла, Осовец еннелле чакса каймалла!

Кун пек пулассине партизансем кĕтсех тăнă çав. Хăйсен тылĕнче партизансем хуçаланнине фашистсем ниепле те тӳсме пултарайман. Партизансем вĕсен гарнизонĕсене, продовольстви базисене аркатаççĕ, кашни кун тенĕ пекех засадăсем туса сиен кӳреççĕ, эшелонсене сирпĕтеççĕ,— çавăнпа та гитлеровецсен аслă командованийĕ приказ хыççăн приказ панă: пĕтерĕр, тĕп тăвăр партизансене!

Уйрăмах, вĕсене партизансем Аслă Октябрь уявĕ кун парадпа митинг туни, ку районта «В бой за Родину» ятлă вăрттăн хаçат та кăларма тытăнни уртарса янă...

Эппин, халь вӗсем партизансене пӗтӗмпех пӗтерсе хума шут тытнӑ.

Чапаев ячӗпе хисепленекен отряд вырнаҫнӑ Песчанка ятлӑ яла малтан ҫунтаракан пульӑсемпе персе чылай ҫурт тӑррисене тивертнӗ, ялта пушар пуҫланнӑ, унтан минометсенчен пенӗ, вара пур енчен те атакӑлама тытӑннӑ. Аркататпӑр, пӗтеретпӗр, тенӗ пуль ӗнтӗ фашистсем. Анчах партизансем парӑнма мар — хӑйсене ҫӗнтернӗ. Тапӑнса килекен гитлеровецсене вӗлерсе-амантса пӗтернӗ те вӑрмана кӗрсе кайнӑ. Ҫитсе тыт-ха вӗсене!

Ҫак ҫапӑҫу хыҫҫӑнах Тарасов лаша ҫине утланса бригада штабӗ вырнаҫнӑ Горелец ятлӑ яла ыткӑннӑ. Анчах унта ҫитичченех, ҫул юппинче, вӑл бригада командирне, штаб начальникне тата вӑрттӑн ӗҫлекен парти райкомӗн секретарьне тӗл пулнӑ.

— Сывӑ-ха эппин эсӗ! — хӗпӗртенӗ райком секретарӗ.

— Куратӑн пуль... Вилме мар — аманман та! — тенӗ Тарасов.

Райком секретарӗ ӑна полевой сумка тыттарнӑ:

— Кунта парти документчӗсем. Халех вӑрмана кайса пытар та пире хуса ҫит, эпир Осовецра пулатпӑр...

Тарасов тек нимӗн те ыйтса тӑман, вӑрманалла тӗпӗртеттернӗ. Чӑтлӑха шаларах кӗрсе меллӗ вырӑн тупнӑ, партипе комсомол документчӗсене питӗ тӗплӗ пытарнӑ. Анчах та вӑхӑт самай иртнӗ пулмалла — нимӗҫсем сывхарнӑ. Ҫул ҫине ыткӑнса тухсанах фашистсен вут-ҫулӑмӗ айне лекнӗ. Пур енчен те пулемет-автомат шатӑртатни илтӗннӗ, лашине хытӑран хытӑ чуптаракан Тарасов тавра пульӑсем сӑпса кӗтӗвӗ пек сӗрлесе вӗҫнӗ...

Ҫапах та пӗри те тивмен ӑна.

— Телейлӗ этем иккен эсӗ,— тенӗ те райком секретарӗ, документсене пытарнӑшӑн тав тунӑ.

...Виҫӗ талӑк пӗрре сывлӑш ҫавӑрмасӑр ҫапӑҫнӑ партизансем карательсене хирӗҫ.

Ҫав йывӑр кунсенче бригада штабне сасартӑк тепӗр ырӑ мар хыпар ҫитнӗ: Бытень ялӗ еннелле янӑ аманнисемпе чирлисен обозӗ тӑшман аллине лекме пултарать! Пит лайӑх пӗлнӗ-ҫке партизансем: фашист ҫынҫиенӗсем аманнисене те хӗрхенсе тӑмаҫҫӗ — тем

тёрлё те асаплантараççё, персе вёлереççё, чёрёллех вутта пăрахса çунтараççё...

— Çăлас пулать обоза! Халех хуса çитсе, урăх çёрелле кайма хушас! — тенё комбриг.

Кам кайса пёлтерет? Çывăхра пёр связной та, пёр разведчик та пулман — пурте ёçпе кайнă.

— Ирёк парăр, эп çитсе систеретёп врача! — комбриг умне тырса тăнă Тарасов.

Ана ирёк панă...

Çёр тёрлё вилём кётсе тăнă Тарасова — пур енче те пăшал-пулемет сасси кёрленё, вăрманта засадăсем ларма, хуть те хăш йывăç хыçёнчен те тăшман сиксе тухма пултарнă. Анчах Тарасов хăйён çинчен шухăшламан. Вăл аманнисене тăшман аллине лектерес марри çинчен çеç шухăшланă. Обоза хуса çитнё вăл, бригада врачне комбриг приказне шăппăн кăна каласа панă — аманнисене пăлхатас темен. Врач хăйён обозёпе хăрушлăх çук çёрелле кайсан, Тарасов малтанхи пекех вутçулăм витёр штаба таврăннă...

Гитлеровецсен партизансене пётерсе хумалли «операцийё» путланса ларнă. Таврари халăха ку питё савăнтарнă. Анчах фашистсем хăйсем пур çёрте те «вăрманти бандитсене пуçёпех аркатрăмăр!» тесе çухăрнă. Вёсен халăха улталамалла, партизансем çине тек шанмалли çук ёнтё сирён, тесе ёнентермелле-çке!

Йăнăшнă фашистсем! Партизансен авторитечё тата ытларах ўснё. Тăшманăн блокада ункине татса тухнă хыççăн темиçе кунтанах Тарасовсен бригади Теребут ялёнчи полици гарнизонне тёп тунă. Ку ăнăçлă операци вăхăтёнче комсомол райкомён секретарё Тарасов Чапаев ячёпе хисепленекен отрядри партизансемпе пёрле çапăçнă.

Халь ёнтё унăн комсомол енёпе çине тăрсах ёçлеме тивнё. Çапăçусенче пулнипе пёр вăхăтрах, вăл отрядсенче тата таврари ялсенче комсомолецсене палăртса шута илнё. Отрядран отряда — вёсен хушши 15—20 километртан кая мар, тепёр чух унтан та ытларах! — çўресе, нумай ялсенче пулса, Тарасов комсомолецсемпе çамрăксен вăрттăн пухăвёсене ирттернё, фронтри ёçсем çинчен каласа панă, оккупантсене хирёç тата вăйлăрах çапăçма чённё. Çав пухусенчех комсомолта тăман çамрăксене комсомола илнё.

Анчах вăрттăн ёçлекен комсомол райкомён секре-

тарӗ ҫаван пек ҫӳренине хальхи «командировкӑсемпе» ан танлаштарӑр эсир, хисеплӗ вулакансем! Кашни утӑмрах хӑрушлӑх сиксе тухма пултарнӑ, кашни самантрах асӑрханма тивнӗ. Пӗрре кӑна мар, ҫӗр хут та пурнӑҫпа вилӗм хушшинче тӑнӑ Тарасов. Сисӗмлӗ пулни ҫеҫ хӑтарса пынӑ ӑна.

Комсомол райкомӗ ӗҫлеме тытӑннӑранпа таврари ялсенчи ҫамрӑксен хастарлӑхӗ, тӑшмана хирӗҫ кӗрешес кӑмӑлӗ палӑрмаллах вӑйланса, ҫирӗпленсе пынӑ. Комсомолецсем халӑх хушшинче машинкӑпа пичетленӗ листовкӑсем сарнӑ, ятарласа тунӑ пропагандистсен группи ялтан яла ҫӳресе Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӗвӗсем, партизансен кӗрешӗвӗ ҫинчен каласа кӑтартнӑ, фашистсен юнлӑ ӗҫӗсемпе вӗсен тискер кайӑкла ӗмӗчӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. Ҫав вӑхӑтрах танк колоннисем тума укҫа пухнӑ, вӑл укҫана каярахпа Пысӑк Ҫӗр ҫине ӑсатнӑ...

1943 ҫул пуҫламӑшӗнче фашист карателӗсем партизансене каллех питӗ вӑйлӑн тапӑнма тытӑннӑ. Вӗсене «миххе» хупӑрласа илме тӑрӑшса, пур енчен те хӗссе пынӑ. Лару-тӑру кунсерен йывӑрланнӑ. Тӑшман — йышлӑ, лайӑх хӗҫпӑшалланнӑ, ҫаванпа та унпа тӳрремӗн ҫапӑҫава кӗме май килмен. Партизансем, засадӑсем тӑва-тӑва, карательсене кӗтмен ҫӗртен тапӑнса пысӑк сиен кӳнӗ те... куҫран ҫухалнӑ.

Ниепле те хупӑрласа илеймен вӗсене тӑшман!

Хӑйсен ӗҫӗсем ӑнманшӑн, партизансене «миххе хупса» тӗп тӑвайманшӑн урса кайнӑ карательсем таврари халӑха, ним айӑпсӑр ҫынсене вӗлерме, ялсене ҫунтарма тапратнӑ.

Андрей Тарасов дневникӗнче ҫапла ҫырни пур:

«Рыбцы ялӗ. Кунта 75 хуҫалӑх пулнӑ. 64-шне ҫунтарса янӑ. 150 ҫынна персе пӑрахнӑ. Вӗсем хушшинче 95 ача, 50 хӗрарӑм, 5 старик. Нимӗҫсем пӳртсене пырса кӗнӗ те унта кам пулнине пӑхса тӑмасӑрах пурне те вӗлернӗ. Кайран пӳртсемпе сарайсене тивертсе янӑ. Хӗрлӗ Ҫарти лейтенантӑн пилӗк ҫулхи ывӑлне нимӗҫ урайне илсе ывӑтнӑ та тӳрех персе пӑрахнӑ. Оккупантсем пур выльӑхсене те вӗлерсе пӗтернӗ: 60 ӗне, 15 лаша, 200 сурӑх...»

Ытти ялсенче те ҫаван пек тискеррӗн хӑтланнӑ фашистсем.

Кӗрешӳ вӑйлансах пынӑ. Паллах, партизансем па-

ранман. Вырӑнтан-вырӑна куҫса, сасартӑк сиксе тухса, тӑшмана тем чухлех пӗтернӗ.

Партизансен аллине чыса-намӑса ҫухатнӑ сутӑнчӑксем, фашистсен ура тупанне ҫуллакан, вӗсене пулӑшакан ирсӗрсем те лекнӗ. Пӗррехинче, отряда тытса пынӑ сутӑнчӑксем хушшинче, Тарасов хӑйне 1942 ҫулхи хӗлле Кошели ятлӑ ялта асаплантаракансен ушкӑнӗнче пулнӑ сутӑнчӑка палласа илнӗ... Фашистсене сутӑннӑ ҫӗлен-калтасемпе партизансем нумай каласса тӑман. Вӗсем пирки йышӑннӑ приговор та кӗске пулнӑ.

...Хӗлӗпех отрядран отряда ҫӳренӗ Тарасов, ҫамрӑксемпе нумай ӗҫленӗ, каччӑсемпе хӗрсене комсомола илнӗ, комсомолецсен мӗнле пулмалли, тӑшмансемпе мӗнле кӗрешмелли ҫинчен ӑнлантарма тӑрӑшнӑ.

Час-часах вӗсемпе пӗрле ҫапӑҫава кӗме те тивнӗ унӑн.

Ҫуркунне вӑрттӑн ӗҫлекен партипе комсомол райкомӗсем умне тепӗр ҫӗнӗ задача тухса тӑнӑ: епле пулсан та, ҫураки туса ирттермелле, тырӑ акмалла! «Тырӑшӑн кӗрешни — оккупантсене ҫӗнтерессишӗн кӗрешни!» — ҫавӑн пек лозунгпа ӗҫлеме тытӑннӑ вӗсем.

Ака, эпӗ Руденскри вӑрттӑн ӗҫлекен комсомол райкомӗ ирттернӗ ларӑвӑн протоколне вулатӑп. Кун йӗркинче пӗр ыйту: «Беларусь» бригадӑри «Беларусь» тата «За Родину» отрядсен районӗнче ҫураки мӗнле пынине пӑхса тухасси.

Ҫав протокола вуласа, ҫакна пӗлетпӗр: комсомол организацийӗсем ҫуракине активлӑн хутшӑнаҫҫӗ, «Беларусь» отрядра 8 комсомолец ҫуракине ӑнӑҫлӑ ирттерес тӗлӗшпе уполномоченнӑй пулса ӗҫлеҫҫӗ. Агитаторсем ҫураки пирки халӑх хушшинче 16 пуху ирттернӗ, уйра ӗҫлекенсене оккупантсем пырса тапӑнасран пур ҫӗрте те хурал тӑратнӑ. «За Родину» отряд пулӑшнипе 5 тимӗрҫ лаҫҫи уҫнӑ, унта ӗҫлеме отрядсенчен тимӗрҫӗсем янӑ, вӗсем хресченсем валли плугсем, сӳресем т. ыт. юсаҫҫӗ. Ҫураки валли (вӑхӑтлӑха) ял ҫыннисене отрядри лашасене панӑ.

Райком бюровӗ отрядсенчи комсомол организацийӗсене ҫирӗп кӑтартусем парать: ҫуракине ӑнӑҫлӑ ирттерме хресченсене пур майсемпе те пулӑшмалла, ниҫта та акман ҫӗр хӑвармалла мар, ӗҫлекенсене тӑшманран сыхламалла, политикӑллӑ ӗҫе ҫамрӑксен конкретлӑ задачисемпе ҫыхӑнтармалла (ҫураки ирттересси, ҫын-

сене вăрмансене, шурлăхсем хушшине куçарасси, шпионсене палăртса тăрă шыв çине кăларасси т. ыт. те).

Протокол айне комсомолăн Руденск райкомĕн секретарĕ Андрей Тарасов алă пуснă...

— Çав çуркунне питĕ тĕлĕнмелле картинăсем курма пулатчĕ,— аса илсе çырнă А. Денисевич «Орлиное племя» ятлă кĕнекере.— Çĕлĕкĕсем çине хĕрлĕ хăюсем çĕлесе хунă, çурăмĕсем хыçне автоматсем çакнă маттур та хаваслă каччăсем плуг хыççăн утаççĕ е кунтăкран вăрлăх ывăçласа илсе сапса пыраççĕ. Çав вăхăтра уй вĕççĕнче партизансен засади суха тăвакансемпе тырă акакансен мирлĕ ĕçне сыхласа выртать.

Гитлеровецсем пирĕн çынсене тырă актарасшăн пулман. Тырă ан пултăр, выçса вилччĕр! тенĕ ĕнтĕ вĕсем. Час-часах çураки тăвакансене пырса тапăннă. Пехота та, танксем те янă вĕсене хирĕç, унтан самолетсем те яма пуçланă. Кăнтăрла суха тума та, тырă акма та паман. Вара хресченсем çĕрле ĕçлеме тытăннă, партизансем вĕсене сыхласа тăнă.

Çапла иртнĕ çураки. Партизансем пулăшнипе, хресченсем тырă акман çĕр хăварман...

Çав вăхăтрах партизансем оккупантсене хăйсене те пĕр канăç та паман, çуркуннепе çулла чугун çулсем, шоссесем çинче диверсисем тума, тăшман гарнизонĕсене тапăнса аркатма хĕллехинчен ансатрах пулнă.

Çĕр тĕрлĕ ĕç тума тивнĕ вăрттăн ĕçлекен комсомол райкомĕн.

Нимĕçсем, çине тăрсах, çамрăксене полицире «ĕçлеме» йыхăрнă, полицайсене тем тĕрлĕ ырлăх — çĕр, выльăх-чĕрлĕх, укçа пама пулса, чĕнӳсем çапса тултарнă. Райком секретарĕ васкасах фашистсен чĕнĕвĕн ирсĕрлĕхне тăрă шыв çине кăларакан листовка çырнă, ăна вăрттăн типографире пичетленĕ те — партизансем фашистсен хучĕсене сĕвсе пăрахса вĕсен вырăнне çав листовкăсене çыпăçтарнă.

Нимĕçсем, пирĕн çамрăксене ултавлă майсемпе хăйсен еннелле сулăнтарас тесе, «Союз белорусской молодежи» текен националистла организаци тума тапратнă. Çакна хирĕç те питĕ вăйлă агитацилеме, çамрăксене фашистсен танатине лекесрен хытă асăрхаттарма, ăнлантарма тивнĕ. Ураланайман вара çав ирсĕр «союз»...

Нимĕçсем çамрăксене Германие чуралăха яма, пур-

не те регистрацире пулма хушнă. Каллех асăрхаттармалла, регистрацие кайма чармалла пулнă. Çамрăксем вăрмана тарнă. Андрей Тарасов ĕçлекен районри отрядсене кĕске вăхăтрах 600 каччăпа хĕр хутшăннă!

...Çав кунсенчех кунти партизансем патне Пысăк Çĕр çинчен пĕрремĕш самолет вĕççе пынă. Нимĕнпе те танлаштарма çук пысăк савăнăç пулнă партизансемшĕн хăйсен аэродромĕ çине хĕрлĕ çăлтăрлă самолет анса ларни!

Андрей Тарасов çав самолетпа тăван килне пĕрремĕш çыру янă. Ашшĕпе амăшĕ ăна тахçанах вилнĕ тесе шутланă — икĕ çул ытла ывăлĕнчен нимĕнле хыпар та пулман-çке! Халь акă вĕсен хăйсен юратнă ывăлĕ сывви, вăл тискер тăшманпа çапăçни çинчен пĕлеççĕ. Мĕн тери пысăк телей ку ват çынсемшĕн!

Пĕрремĕш самолет хыççăн тепрер уйăхран Руденск тăрăхĕнчи партизансем патне тепĕр самолет çитнĕ. Вăл взрывчатка, амтоматсем, çĕнĕ хаçатсем, И. В. Сталинăн «Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине илсе пынă. Каллех пит пысăк праçник пулнă ку. Çав кун каялла вĕççе каяйман летчик «вăрманти салтаксене» совет тылĕ мĕнле пурăнни, мĕнле паттăр ĕçлесе, фронта мĕн кирлине ытлă-çитлĕ туса пани, Совет Çарĕ фашистсене Курск хысакĕнче епле хăватлăн аркатса тăкни, халь пĕр чарăнмасăр хĕвеланăçнелле хăвалани çинчен каласа парса çав тери хавхалантарнă...

Çапăçусем вăйланнăçемĕн вăйланнă...

Районри партизансем умлăн-хыçлăнах нимĕçсемпе полицайсен темиçе гарнизонне атакăласа аркатнă. Уйрăмах Шацкри пысăк гарнизона сасартăк пырса тапăнни ăнăçлă пулнă.

Чугун çулсем çинче партизансем «концертсем» тума тытăннă. «Концерт» тесе вĕсем чугун çулсене пĕр вăхăтрах темиçе çĕрте сирпĕтнине, эшелонсене сиктернине каланă.

Çав вăхăтрах тата уйрăм «сунарçăсем»—оккупантсене, полицайсене, тĕрлĕ сутăнчăксемпе шпионсене йĕрлесе тупса тĕп тăвакансем — лайăх ĕçленĕ. Паян халăха хирĕç уйрăмах тискер ĕçсем тунă полицая, старостăна персе пăрахаççĕ, ыран хăрушă шпион-предателе тытса отряда сĕтĕрсе пыраççĕ...

Оккупантсен ури айӗнче ҫӗр ҫунса тӑнӑ. Кашни утӑмрах вилӗм кӗтнӗ фашист хурахӗсене.

Партизансене пӗтерсе хума приказ хыҫҫӑн приказ панӑ нимӗҫсен аслӑ командованийӗ. Карательсем, урса кайса, унталла та кунталла ыткӑннӑ. Ялсене тӗппипе ҫунтарнӑ. Ним айӑпсӑр мирлӗ ҫынсене — ватти-вӗттипех — персе вӗлернӗ, ҫакнӑ, вута пӑрахнӑ. Партизансем пытаннӑ вӑрмансем ҫине бомбӑсем тӑкнӑ, тупӑсемпе минометсенчен пенӗ.

Партизансем пӗтмен...

Пӗтме мар, вӑйлансах пынӑ вӗсем. Хытӑран хыта тӑнӑ тӑшмансене хирӗҫ. Сасартӑк сиксе тухса карательсен ушкӑнӗсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та куҫран ҫухалнӑ.

Вӑрттӑн ӗҫлекен комсомол райкомӗн секретарӗ пӗрре лайӑххӑн выртса ҫывӑрма та, ларса апат ҫиме те вӑхӑт тупайман ҫав! Отрядран отряда, ялтан яла ҫӳренӗ вӑл. Комсомолецсемпе ҫамрӑксен пухӑвӗсене ирттернӗ, докладсем тунӑ, листовкӑсем салатнӑ, связнойсене заданисем панӑ...

Ку ҫеҫ те мар! Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерсе Белоруссие патнелле ҫывхарса пынӑ май, Тарасов тӑшман тылӗнче районти комсомолӑн конференцине ирттерме шут тытнӑ. Калама та ҫук хӑюллӑ шухӑш пулнӑ ку! Йӗри-таври — тӑшмансем, гитлеровецсемпе полицайсен гарнизонӗсем, предательсем, шпионсем. Ирӗклӗн, асӑрханмасӑр-шикленмесӗр виҫ утӑм тума та ҫук. Ҫавӑнтах — комсомол конференцийӗ!

Белоруссие комсомолӗн Центральнӑй комитетӗнчен пынӑ инструктор «Валерий» («Орлиное племя» кӗнеке авторӗ А. Денисевич) ку шухӑша питӗ ырланӑ.

— Тӑшман тылӗнче комсомол конференцийӗ ирттерни ҫамрӑк боецсен халӑх хушшинчи авторитетне ӳстерет. Фашистсене вара хӑйсем йышӑнса тӑракан территоринче кун пек ӗҫ пулса иртни тӑнран кӑларсах ярать!

Конференцие комсомолти пур йӗркесене те ҫирӗп пӑхӑнса хатӗрленнӗ. Отрядсенчи комсомол организацисенче отчетлӑ пухусем ирттернӗ, ку таранччен тунӑ ӗҫсене сӳтсе явнӑ, ҫитменлӗхсене палӑртнӑ, малашнехи ӗҫсем ҫинчен калаҫнӑ. Делегатсем суйланӑ.

Паллах, питӗ вӑрттӑн, никам сисмелле мар пулса пынӑ ку ӗҫсем. Конференцие те вӑрттӑн ҫӗрте, вӑрман хӗрринчи Травищи ятлӑ пӗчӗк ҫеҫ ялта ирттернӗ. Ан-

сартран тăшмансем пырса тапăнасран ял тавра хурал тăратнă. Январĕн 9-мĕшĕнче унта 50 делегат ытла пухăннă — нимрен хăраман, тăшмансене сахал мар пĕтернĕ маттур каччăсемпе хĕрсем: отрядсенчи комиссарсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсем, комсомол организацисен секретарĕсем, ырми-канми активистсем. Хăшĕ-пĕрисен, кунта çитме, ялсенчи нимĕç гарнизонĕсен, тĕрлĕ полицай-старостăсен куçĕ тĕлне пуласран сыхланса-пытанса 30—40 километр таран килме тивнĕ.

— Чун савăнчĕ, кăмăл тата ытларах çĕкленчĕ манăн çак хастар та хавасла халăх çине пăхса! Пĕр-пĕринпе шӳтлесе калаçаççĕ, кулаççĕ, ытармалла мар! — аса илет Андрей Григорьевич хăйĕн кĕнекинче.

Конференцире тĕп доклада вăл, Тарасов, тунă. Каласа памалли нумай пулнă унăн çамрăк паттăрсем çинчен. 1943 çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче кăна отрядсенчи комсомолецсемпе çамрăксем тăшманăн чугун çул çинчи 235 эшелонĕ айне фугассем хунă, çав эшелонсем сирпĕннĕ чух 3424 гитлеровец вилнĕ тата аманнă. Партизансен икĕ бригадинче йĕркеленĕ 105 диверси групписенчен 81-шĕ комсомолецсемпе çамрăксен групписем пулнă. Гитлеровецсене «тытма» 155 комсомолец-истребитель «ухутана» çӳренĕ...

Вăрттăн ĕçлекен райком туса хунă хыççăн комсомол организацийĕ пилĕк хут ытларах ӳснĕ, çĕр комсомолеца ятăн партие кĕнĕ, чи хăюллă та паттăр комсомолецсенчен 90 çынна отрядсенчи командирсем, политработниксем тунă.

Оккупантсене хирĕç паттăррăн çапăçнăшăн 230 çамрăк партизана Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене панă...

Конференцие отрядсенчен пынă çамрăксем хăйсем тăшмана хирĕç мĕнле кĕрешни çинчен каласа кăтартнă. Ку вăл пĕр-пĕрин опычĕпе паллашни пулнă. Юлашкинчен делегатсем постановлени йышăннă: нимĕç захватчикĕсене хирĕç тата вирлĕрех кĕрешмелле, совет çыннисене Германие чуралăха хуса каясран хăтармалла, комсомолецсемпе çамрăксенчен йĕркеленĕ диверси групписен, уйрăм «сунарçăсен», истребительсен боевой ĕçĕсене вăйлатмалла, çамрăксене хамăр çĕршывра тунă тата трофейлă хĕçпăшалпа лайăхрах усă курма вĕрентмелле, политикăллă ĕçе ӳстермелле т. ыт. те.

Постановлени вӗҫӗнче вара унччен пулман ҫӗнӗ пункт ҫырса хунӑ:

— Хӗрлӗ Ҫара кӗтсе илме тӗплӗн хатӗрленмелле...

Хӗрлӗ Ҫар, фашистсене хӑватлӑн аркатса, пӗрмай хӗвеланӑҫнелле куҫса пынӑ ҫав ун чух. Хамӑрӑн таса ҫӗре Гитлер хурахӗсенчен тасатас самант ҫывхарнӑҫемӗн ҫывхарнӑ. Анчах ҫав телейлӗ самантшӑн сахал мар ҫапӑҫмалла пулнӑ-ха. Нумай кӗрешмелле, нумай ҫапӑҫмалла...

Хӑйсен пуҫӗпех пӗтмелли вӑхӑт ҫитсе килнине туйса, гитлеровецсем нихӑҫанхинчен те ытларах урнӑ. «Вӑрман салтакӗсене» — партизансене — тӗп тума пӗтӗм вӑйне хунӑ. Хӑйсен ҫарӗ сайраланса пынипе, вӗсем белорус ҫамрӑкӗсене вӑйпах, ирӗксӗрлесех, вӗлерессипе хӑратсах мобилизацилеме тытӑннӑ — «вермахт» салтакӗсем тума.

Питӗ хытӑ кӗрешме тивнӗ вӑрттӑн ӗҫлекен партипе комсомол организацийӗсен ҫак ирсӗр те хӑрушӑ мобилизацие хирӗҫ. Агитаторсем ялтан яла ҫӳресе ӑнлантарнӑ: фашистсен ҫарӗн ретне тӑни вӑл — тӑван халӑха хирӗҫ тӑни, Тӑван Ҫӗршыва сутни! Вӑрманти типографире листовкӑсем пичетлесе пур ҫӗре те салатнӑ, ҫамрӑксене унта ҫапла каланӑ: «Сирӗн ырӑн пиншер каччӑсемпе хӗрсем нимӗҫ хурахӗсене пирӗн аннесемпе йӑмӑксен куҫҫулӗшӗн тавӑрма ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулмалла! Вилӗм те ылхану нимӗҫ захватчикӗсене!»

Совет ҫамрӑкӗсене фашист ҫарне мобилизацилесси путланса ларнӑ. Тӑшмансене ку тата ытларах тарӑхтарнӑ, вӗсем каллех ял хыҫҫӑн ял ҫунтарма тытӑннӑ. Ҫӗршер совет ҫыннисем — хӗрарӑмсем, ачасем, старик-сем пӗтнӗ вут-ҫулӑмра. Кунпа пӗрлех, фашистсем партизансене хирӗҫ пехота, танксем, артиллери, авиаци нумай ярса вӗсене хупӑрласа илме, унтан ҫавӑнтах, патӗнчех, пӗр ҫын юлми пӗтерме палӑртнӑ.

Икӗ эрне хушши пӗр чарӑнмасӑр кӗрленӗ вӑрмансенчи ҫапӑҫу. Вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе партизансене питӗ йывӑр килнӗ. Хӑш чух тӑшман ункинчен вӗҫерӗнсе тухма та май ҫук пек туйӑннӑ. Анчах партизансем майне тупнӑ-тупнах — командирсемпе комиссарсен ӑсталӑхне, партизансен хӑйсен паттӑрлӑхне пула, карательсене нумай пӗтерсе ункӑран вӗҫерӗнсе тухнӑ. Паллах, ҫак

хаяр çапăçусенче партизансен те çухатусем сахал мар пулнă. Вĕсен ячĕсем кайран мрамор çине ылтăн саспаллисемпе çырăннă. Паттăрсене манмасть пирĕн халăх...

1944 çулхи июнь вĕçĕнче партизансем хĕвелтухăç енче тупă сассисем аслати пек кĕрленине илтнĕ. Çывхарсах, çывхарсах килнĕ çав хăватлăран та хăватлă кĕрлев.

Хĕрлĕ Çар тупписен сасси пулнă вăл...

Июль пуçламăшĕнче «вăрман салтакĕсем» Хĕрлĕ Çар салтакĕсемпе тĕл пулнă. Нумай-нумай кĕтнĕ телейлĕ самант тинех çитнĕ!

Анчах çапăçусем чарăнман-ха. Партизансем, Хĕрлĕ Çар воинĕсемпе пĕрле, «Минск хуранне» лекнĕ фашистсен пысăк группировкине аркатнă. Калама та çук вăйлă çапăçма тивнĕ унта, мĕншĕн тесен çав «хурантан» тухма тăрăшса, нимĕçсем пĕр вĕçĕм хăрушла контратакăсене ыткăннă.

Усси пулман. Аркатса тăкнă вĕсене. Тĕппипех!

Районцентра — Руденск хулине — тăшмансенчен тасатнă хыççăн партизансен колоннисем унта çĕнтерӳçĕсен уттипе утса кĕнĕ. Малта, юланутсемпе, вăрттăн ĕçленĕ партипе комсомол райкомĕсен секретарĕсем, отрядсен командирĕсемпе комиссарĕсем пынă. Кăкăрĕсем çинче орденсемпе медальсем йăлтăртатнă.

Вĕсем хушшинче, малти ретре, чăваш каччи Андрей Тарасов пулнă...

...Партизансем, халь ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар салтакĕсем пулса, малалла, хĕвеланăçнелле кайнă. Фашистсен тĕп йăви — рейхстаг çинче пирĕн Аслă Çĕнтерӳ ялавĕ ялкăшиччен тата тепĕр çулталăка ярăн çапăçмалла пулнă-ха. Нумай вăй хумалла...

Нимĕçсен оккупацийĕ вăхăтĕнче вăрттăн ĕçленĕ партипе комсомол райкомĕсен секретарĕсене, партизансен бригадисемпе отрячĕсен командирĕсемпе комиссарĕсене районра ĕçлеме хăварнă — тăшман ишĕлтернĕ пурнăçа, хуçалăха юсаса ура çине тăратма.

Андрей Тарасов та — парти хушнипе — Руденскра ĕçлеме юлнă. Темиçе уйăх хушши хатĕрлев комиссариачĕн уполномоченнăйĕ пулса ĕçленĕ хыççăн ăна çав ĕç енĕпех вĕренме Мускава янă. Çавăн чух вара, курсри

занятисем пуçланиччен, вăл çуралнă çĕршыва çитсе курма пултарнă.

Виçĕ çул ытла килте пулман Андрей, икĕ çул ытла ун çинчен ашшĕ-амăшĕ те, ачисем те ним͐ĕн те пĕлмен, вилнĕ пуль, тенĕ. Калама та çук пысăк савăнăç кӳнĕ ку тĕлпулу пурне те!..

Курсра вĕренсе тухнă хыççăн Тарасов каллех Белоруссие таврăнса Минскра ĕçлеме тытăннă. Çав кунсенчех ун пурнăçĕнче тата питĕ хытă хĕпĕртемелли тупăннă — вăл хăйĕн Александр ятлă шăллĕпе тĕл пулнă! Тăватă çул курман вĕсем пĕрне-пĕри. Шăллĕ аслă лейтенант иккен, Виççĕмĕш Белорусси фронтĕнче пулса çапăçнă.

Анчах Андрей чунĕ çуралнă çĕршыв еннеллех туртăннă. Килте ӳссех пыракан ачисем пулнă — вĕсене вĕрентмелле, ватă ашшĕпе амăшне те пăхмалла. Сахал хуйхăрнă-и вĕсем Андрей хыпарсăр çухалсан, сахал куççуль тăкнă-и? Темле йывăр пулсан та, Андрей ачисене пăхса ӳстернĕ. Халь ĕнтĕ лăпкă пурăнччăр!

Тăван республикăна таврăнсан Андрей Григорьевич суту-илӳ енĕпе, малтан Çĕмĕрлере, унтан Шупашкарта ĕçленĕ, суту-илӳ аслă шкулĕнче заочно вĕренсе тухнă. Анчах Белоруссипе тăтăшах çыхăннă. Вуншар хаяр çапăçусенче пĕрле пулнă тус-юлташсем пурăннă-çке унта. Епле манатăн вĕсене? Вăрçăра çуралнă туслăх — ĕмĕрлĕхе пырать!

Белоруссем хăйсем те манмаççĕ ăна. Уявсене, тĕлпулусене чĕнеççĕ, вĕсемшĕн вăл яланах кĕтнĕ хăна. Акă, эп çак очерка çырнă чух, Белоруссире питĕ пысăк праçник—белорусс халăхĕ хăйсен республикине нимĕç оккупанчĕсенчен тасатнăранпа вăтăр çул çитнине уявларĕ. Андрей Григорьевичпа унăн мăшăрĕ Надежда Сергеевна — упăшки пекех партизансен ретĕнче пулса паттăррăн çапăçнăшăн наградăсем илнĕскер — çав чаплă уява кайса, нумай çапăçусенче пĕрле пулнă тусĕсемпе курнăçса килчĕç...



# Нумайăшĕнчен пĕри

Çуркунне. Уйсенче юр ирĕлсе пĕтнĕ ĕнтĕ, сăртлăрах вырăнсенче çĕр типме те пуçланă, анчах çырмасатрасенче, шырлансенче унта та кунта шурă юр лаптăкĕсем курăнаççĕ-ха. Çанталăк ăшă, уяр, сенкер тӳпе çуса тасатнă пек таса, ниçта пĕр пĕлĕт татки те çук; кун пекех пулсан, тепрер эрнерен çуракине те тухмалла пулĕ...

Вăхăт — шăп кăнтăрла. Сарлака уй урлă тăсăлса выртакан лаша çулĕ хĕррипе, такăрлатнă сукмак тăрăх, умлăн-хыçлăн икĕ çын пыраççĕ. Малта пĕр вунikĕ çулхи арçын ача утать; вăл саплăк çине саплăк лартнă кĕске пиншак, хура сурăх тирĕнчен çĕлетнĕ çĕлĕк тăхăннă, уринче — кивĕ çăпата, çурăмĕ хыçне кушил çакнă. Ун хыççăн, сылтăм аллипе туя çине тайăнса, пусмассерен уксахласа, сайрарах сухаллă, шуранка сăнлă, хĕрĕхсенчен иртнĕ арçын пырать. Ку ĕнтĕ ачан ашшĕ пулас. Вăл та çурăмĕ хыçне михĕ кутамккала çакса янă.

Инçетрен килеççĕ пулмалла вĕсем, питĕ ывăннă курăнать, урисенчен чул çыхса янă пекех аран-аран ярса пусаççĕ...

— Шыв ĕçес килет манăн, пĕтĕм çăвар маччи типсе ларчĕ,— кушăрханă тутине çуласа илет ача, ашшĕ çине салхуллăн пăхса.

— Тӳс ёнтӗ, Мишша, часах яла ҫитетпӗр. Унта ларса канӑпӑр, ҫырткалӑпӑр, шывне те тӑраничченех ӗҫӗпӗр...

Татах ним чӗнмесӗр утаҫҫӗ ашшӗпе ывӑлӗ. Ҫухрӑм, иккӗ, виҫҫӗ... Тепрер сехетрен тин вӗсем пӗр яла пырса кӗреҫҫӗ те, ик-виҫ кил тӗлӗпе иртсенех, япалисене хӳме ҫумӗнче выртакан пӗрене ҫине хывса хураҫҫӗ. Ачи часрах кил хушшине кӗрсе шыв ыйтса ӗҫет,— пӗр курка, иккӗ, унтан каллех урама тухса ашшӗпе юнашар ларать те вӑл хуҫса панӑ тип ҫӑкӑра кӑшлама тытӑнать. Хырӑм выҫсан, тип ҫӑкӑр та питӗ тутлӑ-ҫке ҫав!

Анат енчен вӗсем патне пӗр ватӑрах ҫын ҫывхарса пычӗ. Вӑл та, Мишша ашшӗ пекех, туяпа, уксахлать.

— Ара, Степан Ефимч, эсӗ тем ку! — аллине ҫӗклесе чылай аякранах саламларӗ вӑл.— Ай, курманни нумай пулать-ҫке сана... Аҫталла ҫул тытрӑн капла?

Вӑл пӗренесем ҫинче ларакан ашшӗпе ывӑлне алӑ пачӗ те, вӗсемпе юнашар ларса, чӗлӗм чӗртнӗ май, ыйтса пӗлме тытӑнчӗ:

— Ну, мӗнле пурӑнкалатӑн кутӑруҫӑн, тусӑм? Килӳ-йышу еплерех? Ку — сан ывӑлу пуль? Ачусем татах та пур-и?

— Мухтанмаллах мар, тӑванӑм,— терӗ ӑна хирӗҫ Мишша ашшӗ, ассӑн сывласа илсе.— Сывлӑхӑм начартарах, аманнӑ ура пӗрмай ыраткалать, час-часах кӑкӑрсӑр пулса ларатӑп, сывлӑш ҫитмест... Ачисем — улттӑ тан, пӗринчен тепри пӗчӗккӗ, ак ҫак чӑн асли те вуниккӗ ҫине тин пусрӗ-ха. Кӑшт та пулин укҫа ӗҫлесе тупас тесе, кӑмакасем купаласа ҫӳретӗп мар-и... Хама пулӑшма ывӑла та шкула пӑрахтарсах илсе тухрӑм ак, мӗн тӑвас тетӗн? Анчах ӗҫӗ те питех тупӑнса каймасть-ха. Ёнертенпе ултӑ ял витӗр тухрӑмӑр — кӑмака тутаракансем тупӑнмарӗҫ, пӗтӗм ӗҫӗ те пӗр ҫынна мӑрье юсаса пани ҫеҫ пулчӗ. Сирӗн ялта та илтӗнмест пуль кӑмака купалаттарас текенсем?

Ҫын шухӑша кайнӑ пек пулчӗ, унтан аллинчи туйипе ҫӗре так! чышса илчӗ.

— Пур, Степан Ефимч! Ӗҫ тупатпӑр! Халь кӑна колхоз правленинче калаҫса ларчӗҫ: кӗнчелерти кӑмакасене иккӗшне те юсас пулать, иртнӗ хӗлле те хӗлӗпех шӑнса лартӑмӑр, теҫҫӗ. Кирпӗчӗ пур вӗсен, тӑмне-хӑйӑрне тупса параҫҫӗ. Атя, халех председатель патне каятпӑр...

— Ой, тем пекехчĕ-çке, тем пекехчĕ ĕç тупăнсан! Усăсăр утса йăлăхрăмăр ĕнтĕ...— каллех йыхăррăн сывласа илчĕ ача ашшĕ.

— Пулать, пулать ĕç! — хавхалантарчĕ ăна юлташĕ.

Пĕр эрне ытла ĕçлерĕç вара ашшĕпе ывăлĕ çак ялти колхоз правленинче. Степан Ефимч кăмакисене сӳтсе тăкрĕ, кив кирпĕчĕсене тасатрĕ, унтан çĕнĕрен купалама тытăнчĕ; Мишша картишĕнчен çĕнĕ кирпĕч çĕклерĕ, тăм çăрчĕ, ăна витре ăшне тултарса кĕртсе пачĕ. Хытă ĕçлерĕ вăл, ашшĕн ĕçне епле те пулсан çăмăллатас тесех тăрăшрĕ. Правлени таврашне хутран-ситрен пырса тухакан хĕрарăмсем, вăл мĕнлерех ĕçленине курса, пĕр-пĕрин хушшинче питех те хĕрхенсе калаçрĕç ун пирки:

— Ай-уй, мăнтарăн, шăмшаккине пĕчĕклех çĕмĕрет вĕт! Çавăн чухлĕ кирпĕч йăт-ха эсĕ!

— Тăмне çăрасси те çăмăл мар, мĕн каласси пур.

Анчах, темле йывăр пулсан та, Мишша хăй ывăннине кăтартасшăн пулмарĕ. Юратман вăл хăйне хĕрхеннине, кӳрентернĕ пекех туйăннă ку ăна, мĕскĕн вырăнне хунăн туйăннă.

Пурăнасса вĕсем хайхи леш уксах çын патĕнче, хăйсене ĕç тупса паракан килĕнче пурăнчĕç. Вăл — эпир ăна Иван пичче, тейĕпĕр,— пĕрремĕш тĕнче вăрçинче Мишша ашшĕпе пĕрле пулнă иккен, вунултăмĕш çулта вырăс çарĕсем Австрие çĕмĕрсе кĕрсе кайнă чух иккĕшĕ те пĕр снарядран аманнă, кайран госпитальре те пĕрле выртнă, киле те пĕрлех таврăннă. Фронтра çуралнă туслăх — питĕ çирĕп, ĕмĕре пыракан туслăх вăл. Çавăнпа та Иван пичче халĕ Степан Ефимчăпа унăн ывăлне чи çывăх тăвансене пăхнă пекех пăхса усрарĕ. Ерçнĕ хушăра вĕсем ĕçленĕ çĕре те чĕлĕм туртма пĕрре кăна мар пырса ларчĕ.

— Маттур санăн ывăлу, ĕçчен çын пулать,— терĕ вăл пĕррехинче Мишша ашшĕне, вĕсем ĕçрен таврăнса апат çиме ларсан.— Ӳссен хăвăнтан та иртterет акă, тупата! Паян пăхса тăтăм та, мăн çын пекех тĕрмешет вĕт, шĕпĕн...

— Ĕçлемесен çăкăр çиме çук-çке,— терĕ ăна хирĕç Степан Ефимч.— Анчах «çăкăр хурчĕсем» пирĕн — пӳрт тулли, çăварĕсене курак чĕпписем пекех карăççĕ: «пар, пар, пар...»

— Вăл çавăн пек ёнтĕ,— килĕшрĕ Иван пичче.— Анчах куна, Мишшине, эсĕ çак ĕçпе ĕçлеме çине тăрсах вĕрент, тулкки пулать унран. Кам пĕлет, тен, кайран чăн-чăн каменщик пулса тăрĕ! Халĕ, ав, пур çĕрте те епле пысăк стройкăсем пуçланса кайрĕç. Пиншер, вуншар пин каменщик, бетонщик, штукатур кирлĕ унта: ĕç — мăй таран!

— Малтан ӳсес пулать-ха...

— Уншăн ан хăра, ӳсет! Пĕрре хăйĕн çулĕ çине тухсан, хăех каять малалла. Халь ĕлĕкхи мар — пур çулсем уçă вĕсемшĕн. Хуть те мĕне вĕрен, хуть те мĕнле ĕç суйласа ил хăвна валли, ан ӳркен кăна! Ĕлĕкхипе танлаштарсан, мĕн каламалли пур...

Вĕсем калаçнине пĕчĕк Мишша тимлесех итлерĕ, тавçăрса илчĕ: пур çĕрте те халĕ пысăк çуртсем, заводсемпе фабрикăсем тăваççĕ, вĕсене тунă çĕрте ĕçлекенсем нумай кирлĕ... Кун çинчен шкулта та вĕрентеççĕ вĕт. Днепрострой, Магнитострой, Автострой тата ытти «стройсем» çинчен учебниксенче те çырнă, журналсенче те ӳкерчĕксем те нумай, сăвăсем те тухаççĕ.

Анчах вĕсене Мишша хăй куçĕпе курĕ-ши хăçан та пулин? Курасси пулмасть пулĕ çав... Акă, вĕсем кунти кăмакасене туса пĕтереççĕ те каллех ялсем тăрăх каяççĕ. Каллех кирпĕч йăтмалла, тăм çăрмалла... Ашшĕ, чирлĕскер, ĕçлеме инçете çӳреймест, пĕччен тухса кайма Мишша ытла та пĕчĕккĕ-ха, ăна ĕçе никам та илес çук. Тата, вăл кайсан, ашшĕне пулăшакан та пулмасть. Кампа ĕçлетĕр вăл? Ĕмĕрех хальхи пек çӳремелле пулать пуль çав Мишшан...

— Хитекушкăнĕнчи Уксах Çталпан тунă кăмака лайăх туртса çунать, пӳрте тĕтĕм тухнине ĕмĕрне те кураймастăн, сахал вутăпах вĕри пулать, кукăльсем наччас пиçсе тухаççĕ,— тенĕ Степан Ефимч ĕçĕ пирки Элĕк тăрăхĕнче.— Ытарайми кăмакасем тăвать вăл!..

Анчах вăрçăра йывăр аманса килнĕ çын хытах ĕçлеймен, шав сывмарланнă. Çавăнпа та вăл çак ĕçе хăйĕн аслă ывăлне вĕрентме васканă: çемье сасартăк ашшĕсĕр тăрса юлас пулсан, кам тăрантарĕ ăна? Пĕтĕм йывăрлăх Мишша çине тиенет ун чух... Çав шутпа ĕнтĕ ашшĕ хăйĕн ывăлне çурхи шыв-шур вăхăтĕнчен пуçласа хура кĕркуннеччченех хăйпе пĕрле илсе çӳренĕ.

Хăвăрт хăнăхса пынă Мишша кăмака тăвас ĕçе. Ашшĕпе иккĕшĕ пĕрле ĕçлесе, халĕ вĕсем тыткаламалăх укçа та тупкаланă. Анчах çав вăхăтрах вĕсен çемйинче сасартăк пысăк хурлăх пулса тăнă: чирлекелесе пуранна амăш кĕтмен çĕртен вилсе кайнă. Унтан ашшĕ те пĕрмай чирлеме пуçланă, пачах ĕçлейми пулнă.

Степан Ефимч çемйи ун чухне колхозра ĕçлесе хăйсене çителĕклĕ тырă тăвайман, унăн чăн аслă ачи Мишша та вунтăваттăра çеç пулнă-ха! Питĕ йывăр вăхăтсем çитсе килнĕ вĕсемшĕн...

Пĕррехинче Степан Ефимч патне кӳршĕ ял çынни пырса кĕнĕ.

— Манăн малти пӳртре пĕчĕк кăмака — подтопкă йăтăнса анать, пăсса купаласа параймăн-ши? — тенĕ вăл хуçине.

— Тем пекех пырăттăм та, чирлетĕп-çке, халăм çук,— ассăн сывласа илнĕ Степан Ефимч. Хăй çавăнтах çĕтĕк кĕпине сапласа ларакан аслă ывăлĕ çине пăхса илнĕ.

— Мишша, тен, эсĕ кайса туса парăн?

— Кайма пултаратăп, ма каяс мар? — тенĕ ывăлĕ, ним тытăнса тăмасăрах.

Кӳршĕ ял çынни ашшĕпе ывăлĕ шӳтлесе калаçаççĕ пулĕ, тесе шутланă та тухса каяс шутпа ура çине тăнă.

— Урăх çĕрте шырас пулать эппин пĕр-пĕр маçтăр,— тенĕ вăл.— Санах тутарас тесеттĕм те — май килмерĕ...

Вăл аллине тăсса сывпуллашма тăнă, анчах Степан Ефимч ăна çавăнтах чарнă:

— Эс тăхта-ха, тăхта! Эп сана кулса мар, чăнласах калатăп. Ман Мишша пултарать вăл...

— Çавăн пек пĕчĕкскер кăмака тума пĕлет-и? — иккĕленсе илнĕ ют çын.— Ан çиллен те эсĕ, анчах шанаймастăп эп ăна... Тем тесен те, кăмака вăл вăхăтлăх япала мар-çке, ăна кашни çул тумастăн.

— А эсĕ ан хăра, шанчăклах пулать! — ĕнентернĕ Степан Ефимч.— Ытах шанмастăн пулсан, пĕр-икĕ хут хам пырса пăхăп, япăх пулмĕ.

— Апла татах хуть...

Тепĕр кунне, ашшĕ хатĕрĕсене илсе, Мишша çав çын патне кайса ĕçе тытăннă. Вăл мĕнле ĕçленине ашшĕ чăнах та кая-кая сăнанă, анчах хăй пĕр кирпĕч те тытса хуман, сăмахпа калакаланă çеç.

— Хăй тĕллĕн ĕçлесен, çын хăвăртрах вĕренет...

Мишшан пĕрремĕш кăмаки çав тери лайăх пулса тухнă, хутса ярсанах вăл пăравус пек кĕрлесе çунма тытăннă.

— Чăн та маттур иккен эс, Мишша! — çурăмĕнчен лăпкаса илнĕ ăна кил хуçи тулли кăмăлпа...

Çавăн хыççăн, кĕркуннеччен, Мишша тата темиçе çынна кăмака туса панă. Ун çинчен халăх хушшинче ырă ят сарăлнă:

— Пĕчĕклех маçтăр пулса тăчĕ вĕт çав ача!

Анчах кăмака тăвасси — ялан тупăнакан ĕç мар-çке, пĕр ун çине çеç шанса пурăнма йывăр. Çавăнпа та Мишша тимĕрçе вĕренме шут тытнă: тимĕрçĕ валли ĕç çулла та, хĕлле те туллиех. Вара вăл ялти ватă тимĕрçĕ патне лаççа çӳреме тытăннă, ăна пулăшнă, лешĕ мĕнле ĕçленине сăнанă.

...Пĕрре, кĕтмен çĕртен, ăна колхоз правленине чĕнтернĕ. Хытă тĕлĕннĕ кун пирки Мишша: мĕн тума чĕнеççĕ-ши? Пĕр-пĕр ĕç хушасшăн-ши? Ятлама сăлтавĕ çук пек... Хăра-хăрах кĕнĕ председатель патне. Анчах кăлăхах пăшăрханнă иккен вăл.

— Акă мĕн, Мишша,— тенĕ ăна председатель,—эсĕ тимĕрçĕ ĕçне юратать тенине илтрĕм эпĕ. Тĕрĕс-и ку сăмах?

— Тĕрĕс... Кăмăла каfive мана ку ĕç.

— Чăн-чăн тимĕрçех пулас килет-и вара санăн?

— Килет.

— Апла пулсан, эпир сана вĕренме ярăпăр. МТСра тăхăр уйăхлăх курс уçăлать. Вĕренсе тухатăн та хамăр патах таврăнатăн. Пире тимĕрçĕ ак çапла таранах кирлĕ! — Председатель хăйне шĕвĕр пӳрнипе мăйĕнчен сĕрсе илнĕ.— Мĕн калăн ĕнтĕ çакăн пирки?

— Ярăр! — хавасланса килĕшнĕ Мишша.— Атте те чарас çук мана унта кайма!

— Аçупа калаçрăм ĕнтĕ, вăл хирĕç мар, анчах хăвăнпа калаçма хушрĕ, ывăл халь хăйне хăй хуçа, терĕ...— ăшшăн кулса илнĕ колхоз председателĕ.

— Питĕ аван апла!

Вара вунпиллĕкри Мишша тата тепĕр ĕçе вĕреннĕ. Курсран таврăнсан, колхоз тимĕрçи пулса тăнă та вăл, пĕтĕм çамрăк хастарлăхпа ĕçе тытăннă. Ялхуçалăх машинисене юсанă, урапа кустăрмисене шинланă, колхоз-

ри ҫӗнӗ ҫуртсем валли кирлӗ тимӗр япаласем тунӑ. Ырми-канми ӗҫленӗ...

— Ылтӑн алӑ пирӗн Мишшан,— тенӗ ун ҫинчен колхозниксем,— ҫамрӑк пулин те, тем тума та пултарать!

...Унтан вӑрҫӑ пуҫланнӑ. 1941 ҫулта Мишшан ҫара кайма ҫул ҫитмен пулнӑ-ха, вӑл халлӗхе килтех пурӑннӑ. Пӗр-ик уйӑх хушшинчех ялта пӗр вӑйпитти арҫын та юлман, пурте фронта кайнӑ, ҫавӑнпа та колхозри пӗтӗм ӗҫ хӗрарӑмсемпе стариксем, ӳссе ҫитмен ҫамрӑксем ҫине тиеннӗ. Пурне те тумалла пулнӑ вӗсен: кӑҫалхи тырпулне пуҫтарса кӗртмелле, килес ҫул валли акса хӑвармалла, выльӑх апатне те хатӗрлемелле, вутти-шанкине те касмалла, ҫулӗсене те юсамалла, тем те... Йӑлтах фронт валли! Тыл фронта мӗн кирлине ҫителӗклӗ парса тӑмасан, ирсӗр тӑшмана ҫӗнме ҫук. Комсомолец Михаил Степанов ҫакна питӗ лайӑх пӗлнӗ, ҫавӑнпа та вӑл ырми-канми ӗҫленӗ, ыттисене те ӗҫлеме хавхалантарнӑ.

— Эпир фронт валли панӑ кашни пӗр пӑт тырӑ, кашни килограмм аш-какай ҫӗнтерӳ кунне ҫывхартма пулӑшать!

1943 ҫул пуҫламӑшӗнче унӑн хӑйӗн те «ят тухнӑ». Тӗрӗссипе каласан, вӑл ҫак кун ҫинчен тахҫанах ӗмӗтленсе пурӑннӑ, районти ҫар комиссариатне заявлени ҫырса та пӑхнӑ, анчах лерисем ӑна: «Вӑхӑт ҫитсен хамӑрах чӗнӗпӗр»,— тенӗ. Халӗ вара чӑн та чӗнсе илнӗ. Малтан Мишша пӗр хулари автомотополка лексе шофера вӗреннӗ, икӗ уйӑхранах малти позицие боеприпассем — снарядсем, минӑсем, патронсем — турттарма тытӑннӑ, ҫӗр тӗрлӗ хӑрушлӑх витӗр тухнӑ... Дивизи командирӗн бронемашинине илсе ҫӳрекен шофера бомбежка вӑхӑтӗнче вӗлерсен, кӗҫӗн сержант Степанова ун вырӑнне лартнӑ, анчах нумай ҫӳреме тӳр килмен. Машина каллех бомбежка айне лексе арканнӑ, Степанова контузи пулнӑ, вӑл пӗр уйӑх хушши ним илтмесӗр госпитальте выртнӑ...

Унтан тухсан, авиаполка янӑ. Михаил Степанов аэродромра самолетсем патне бомбӑсем илсе пырса тӑракан моторист ӗҫне тума тытӑннӑ. Ҫӑмӑл ӗҫ пулман ку — фашист ҫӑханӗсем пирӗн аэродромсене сӑнасах тӑнӑ, вӗсене аркатма тӑрӑшнӑ. Вилӗм ялан пуҫ ҫийӗн-

чех явӑннӑ... Пӗррехинче (ку ӗнтӗ Румынире пулнӑ) фашист çăхаиӗсем, питӗ йышлӑн вӗçсе пырса, калама çук нумай бомба тӑкса хӑварнӑ. Кашниех тӗл пырса лекнӗ пулсан, таврара нимӗн те юлман пулӗччӗ. Çавӑн чух вара Степанова тепӗр хут контузи пулнӑ. Хирти госпитальрен ӑна инçетри тыла ӑсатма палӑртнӑ, анчах Степанов, кун çинчен пӗлсен, сестра урлӑ аслӑ врача чӗнтернӗ те унпа ятлаçнӑ пекех калаçма тытӑннӑ:

— Эпӗ нимӗнле тыла та каймастӑп! Çӗнтерў çывхарса килнӗ вӑхӑтра таçта мур шӑтӑкне, фронтран аякка кая̆тӑп-и вара? Çук, çук, эсир мана халӗ çыхса пӑрахса ӑсатсан та, эпӗ пурпӗр тарса килетӗп. Пӗр кун та пурӑнмастӑп тылра!

Ӑна вара чӑнах та ниçта та ӑсатман.

Вӑрçӑ пӗтсен пӗр çулталăкран Михаил Степановсен авиачаçӗ Румынирен хамӑрӑн çӗршыва таврăннӑ. Вӑл чарӑнса тӑнӑ вырӑнта вӑрçӑ вӑхӑтӗнче пӗр хушӑ нимӗçсен аэродромӗ пулнӑ. Çак таврари халӑха, тыткӑна лекнӗ совет салтакӗсене ирӗксӗрлесе, ним хӗрхенмесӗр ӗçлеттерсе, аэродромӑн темӗн пысӑкӑш лаптӑкне пӗтӗмпех асфальт сарнӑ вӗсем. Совет Çарӗ хӑватлӑн хӗссе килнипе васкасах тухса тармалла пулсан, вӗсем ӑна çӗмӗрме те ӗлкӗреймен. Пирӗн командовани халӗ çав чип-чипер аэродрома сая ярас темен, унпа усӑ курма шут тунӑ.

Анчах çав аэродром çывӑхӗнче пӗр çурт таврӑшӗ те пулман, пур еннелле те çеçенхир кӑна сарӑлса выртнӑ...

— Палаткӑсенчех пурӑнӑпӑр-ши вара кунта? — шухӑшланӑ салтаксем.— Çулла аван та-ха, анчах хӗл çитсен мӗн курмалла пулӗ?

Пӗр-ик кунтан, ирхи тӗрӗслев вӑхӑтӗнче, Степановсен роти умне вӗсен командирӗпе пӗрле темле палламан çар инженерӗ тухса тӑрать.

— Юлташсем, сирӗн хушӑра строительсем пур-и? — тесе ыйтать вӑл.

Салтаксемнихӑшӗ те чӗнмеççӗ, пӗр-пӗрин çине пӑхкаласа илеççӗ çеç.

— Строительсем пур-и, тетӗп! — каллех ыйтать инженер, строй умӗн утса пырса.— Каменщиксем, бетонщиксем, штукатурсем...

— Неушлӗ сирӗнтен нихӑшӗ те çара киличчен стройкӑсенче ӗçлемен? — Халӗ ӗнтӗ рота командирӗ ыйтать.— Тен, килте чухне кӑмака та пулин купаланӑ?

Темиçе самант хушши каллех шăп пулать, унтан сулахай флангра тăракан пĕр аслă сержант аллине çĕклет.

— Эп купаласа курнă. Кăмака тума пултаратăп...

Пурте карах ун еннелле çаврăнса пăхаççĕ. Ку — пĕр взводри командир помощникĕ, боецсене дисциплина тĕлĕшпе яланах çирĕп тыткалакан Михаил Степанов иккен. Вăл, «вольно» команда пулнă пулин те, «смирно» тăрса, ют командир çине шăтарас пек пăхать.

— Мĕн тумалла пулать, инженер-майор юлташ?

— Пирĕн хамăр валли çуртсем тума тытăнмалла. Нумай çуртсем тумалла: штаб, казармăсем, столовăй, гараж тата темтепĕр... Материалсене ыранах кӳрсе килме пултараççĕ, строительсем кăна çук.

— Эпĕ çуртсем тусах курман та ĕнтĕ...— иккĕленсе илет аслă сержант.

— Вĕрентĕпĕр! Ну, тата кам ĕçлес тет стройкăра? Хамăр валли тăватпăр вĕт, астăвăр!

...Килĕшекенсем чылай тупăннă. Тепĕр темиçе кунран çеçенхирте строительство пуçланса та кайнă. Çурт стенисене купалама тытăнсан, инженер стройкăра ĕçлеме пуринчен те малтан килĕшнĕ аслă сержант Степанов самаях ăста ĕçленине кура, ăна начальник пекки туса хунă, хăй мĕн пĕлнĕ таран ыттисене вĕрентме хушнă, вара салтаксем, юлташла кулкаласа, ăна «пирĕн прораб» тесе чĕнме пуçланă. Вăл ертсе пынипе строительсен команди кĕркуннеччен темиçе çурт купаласа лартнă. Ĕçсем ăннăçемĕн ăнса пынă.

— Атьсемĕр! Салтак тени вăл ишĕлтерме кăна мар, хăй те темтепĕр туса хума пултарать иккен!..— шӳтлекелесе илнĕ салтак-строительсем хăйсем хушшинче.

Хăрушă вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнă салтаксем, çĕнтерӳçĕ-воинсем час-часах хăйсен тăван килĕсене таврăнсан мĕн тăвасси, мĕн ĕçлесси çинчен калаçнă. Кашнин хăйĕн шухăшĕ, хăйĕн ĕмĕчĕ, хăйĕн планĕ пулнă.

— Мĕн хуйхăрмалли пур ĕç пирки! — тенĕ пĕрисем, çурт стени çине кирпĕч хыççăн кирпĕч хурса.— Эпир рекорд лартакан каменщиксем пулсах таврăнăпăр килсене!

— А мĕн? Япăх мар ку! Халĕ, вăрçă хыççăн, юсамалли те, çĕнĕрен тумалли те темĕн чухлех...

— Тен, ытла пурте ун пекех пулаймăпăр, анчах пи-

рён Степанов — пурне те тёлёнтерекен каменщик пулатех, уншăн иккёленмелли çук!

Кун пирки Михаил Степанов хăй та çавăн пекрех шухăшланă-мĕн. Кăмăла кайнă ăна каменщик ĕçĕ. Питĕ ырă-çке вăл: ним çук çĕрте çĕр алтса çурт никĕсне хыватăн та купалама тытăнатăн. Кирпĕч хыççăн кирпĕч, кирпĕч хыççăн кирпĕч... Кĕçех стенасем çĕртен уйрăлса çӳлелле хăпарма тытăнаççĕ — метр хыççăн метр. Унтан акă пĕр этаж пулса çитет, иккĕмĕшĕ ӳсме тытăнать, виççĕмĕшĕ, тăваттăмĕшĕ... Куран — ик-виç уйăхран çурт кӳлепи пулса та çитет. Шалта урăххисем ĕçлеççĕ — штукатурсем, платниксем, столярсем, çав вăхăтрах çурт тăррине те витсе лартнă ĕнтĕ. Çурт пулчĕ те. Хамăр валли, пирĕн сынсем валли, хăйĕн телейĕшĕн кĕрешсе темĕн тĕрлĕ нуша курнă, пур йывăрлăхсене те çĕнтернĕ халăх валли. Пĕр çуллăха мар, вуншар, çĕршер çуллăха пулаççĕ вĕсем. Хамăрăн ачасем валли. Мĕн пур-ха ĕнтĕ çакăнтан пархатарли?..

...1950 çулхи çуркунне, шыв-шур вăхăтĕнче, Михаил Степанов тăван Хитекушкăнне таврăнать. Вăл килнине пĕлсен, вĕсем патне кӳршĕ-аршăсем пухăнаççĕ, колхоз председателĕ те пырать. Пурте саламлаççĕ ăна, киле чипер таврăннă ятпа ырă сунаççĕ. Унтан сăмах пулас пурнăç çинчен тапранса каять.

— Ну, Мишша, мĕн тума шутлатăн ĕнтĕ килте? Ялтах пурăнатăн-и е ăçта та пулин хуланалла çул тытатăн?

— Тен, каллех тимĕрç лаççинчи сунтал патне таврăнăн?

— Шофер та кирлĕ пире, колхоза кĕçех иккĕмĕш машина килет.

— Шоферĕ тупăнĕ-ха вăл, бригадир тăвас ăна!

Погонĕсене вĕçертсе хума та ĕлкĕреймен аслă сержант çак ыйтусене хирĕç нимех те калайман.

— Пĕлместĕп-ха, шухăшласа пăхас пулать.

Курма пынă çынсем салансан, каçхине, вăл халĕ ĕнтĕ татах ватăлса кайнă ашшĕне хăйĕн шухăшне пĕлтернĕ:

— Санпа пĕрле кăмака туса çӳрени усăллă пулчĕ лере... Çуртсем турăм. Каменщик ĕçне самаях чухланă пек туйăнать... Шупашкарта пир-авăр комбиначĕ тăвас-

çĕ тет-и çав? Кайса пăхас тетĕп çавăнта. Хам хулара пурăнсан, шăллăмсене вĕрентме те ансатрах пулĕ вара. Мĕнле шухăшлатăн эсĕ, атте?

— Юрать те пулĕ, ывăлăм, хăвăн чуну унталлах туртать пулсан,— тенĕ ашшĕ.

Тĕлне-мĕнне пĕлмесĕр тухса каяс мар тесе, тин çеç çартан таврăннă аслă сержант-коммунист парти обкомĕн секретарĕ патне çыру янă:

— Манăн строитель пулас ĕмĕт пысăк. Ĕçленĕ вăхăтрах вĕренес те килет. Шупашкарта çавăн пек вырнаçма май пулĕ-ши?

Эрнеренех обкомран ответ килнĕ:

— Кил, Шупашкарта строительство куллен-кун сарăлса пырать, специалистсем питĕ кирлĕ. Вĕренме те пултарăн...

Темиçе кунтан Михаил Шупашкарти пир-авăр комбинатне тунă çĕре пырса та çитнĕ.

— Каменщик пулма кăмăл пур,—тенĕ вăл, кадрсен пайĕн начальникĕ умне докуменчĕсене кăларса хурса.

— Ку ĕçпе ĕçленĕ-и эсĕ хăçан та пулин? — ыйтнă лешĕ.

— Ытла ĕçлесех кайман та... пултарассăн туйăнать. Вĕренĕп!

— Тен, пĕр-пĕр урăх çĕре вырнаçтарас сана? Ĕç нумай кунта, çынсем çитмеççĕ,— тесе пăхнă начальник.

— Çук, манăн стройкăра кăна пулас килет. Ытти ĕçе эпĕ районра та вырнаçма пултарнă. Çуртсем тăвас килет, урăх ним те мар.

Çамрăк салтак çавăн пек çине тăрсах ыйтнине кура, начальник килĕшнĕ.

— Юрĕ эппин, стройкăна-тăк стройкăна пултăр... Вĕренме эпир сана Парамонов бригадине ярăпăр. «Ваня пичче» теççĕ ăна пирĕн. Хаяртарах ĕнтĕ старикки, анчах ĕçе питĕ лайăх пĕлет, опычĕ пысăк. Ну, лайăх вĕренесси, маçтăр пуласси вăл хăвăнтан килет, ху тăрăшнинчен.

— Эпĕ салтак, начальник юлташ, ăна-кăна чухлакалатăп,— çарти пек честь парса тухнă Михаил Степанов ун патĕнчен.

Анчах пĕтĕм стройкипе чапа тухнă бригадăра ĕçлесе вĕренесси пулайман унăн.

— Сан пек ĕçе пĕлмен шĕвĕрсем ахаль те туллиех манăн, илместĕп! — тенĕ «Ваня пичче», кадрсен пайĕн-

чен илсе пынӑ хута каялла таварса парса.— Ман бригада пӗр-пӗр университет мар! Ярӑҫҫӗ те ярӑҫҫӗ — вӗрент тавай! Эпир лӑпӑр-лӑпӑр ҫурт мар, промышленность корпусӗ купалатпӑр, кунта лайӑх маҫтӑрсем кирлӗ!..

— Мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ манӑн? Сирӗн пата килме хушрӗҫ те...

— Яччӑр ав пурӑнмалли ҫуртсем тунӑ ҫӗре, унта тӗрлӗрен шӑкӑр-макӑр ӗҫ туллиех. Кунта ӗҫлесси ҫинчен ан та шутла,— аллине сулнӑ бригадир.

Ҫакӑн пек калани Михаила хытах кӳрентернӗ, анчах, ватӑ бригадирпа калаҫса татӑлас ҫуккине кура, ирӗксӗрех тепӗр хут кадрсен пайнелле утма тивнӗ унӑн.

— Йышӑнмасть мана Ваня пичче. Тиркесе тӑкрӗ. Пурӑнмалли ҫуртсем тунӑ ҫӗре кайма хушать...

— Ҫавӑн пек-ҫке вӑл старик пирӗн, хӑй мӗн шутланӑ, ҫавна тӑвать, кӑмӑлӗ пулмасан ниепле те итлеттерейместӗн ӑна,— пуҫне пӑркаласа илнӗ те кадрсен начальникӗ, Степанова ҫӗнӗ хут ҫырса панӑ.

Пурӑнмалли ҫуртсем тӑвакан участокра ҫамрӑк техник-строитель Аркадий Иванович Никитин, хӑй те салтак пулнӑскер, Степанова питӗ ӑшшӑн йышӑннӑ.

— Каменщиксем ҫав тери кирлӗ пире! Ҫарта ҫуртсем тунӑ пулсан, тен, сана вӗрентме те кирлӗ мар? Малтанлӑха эп сана канализаци «ҫӑлӗсем» тунӑ ҫӗре тӑратӑп. Кайран мӗн тумалли курӑнӗ...

Степанова пулӑшма прораб пӗр ҫын уйӑрса панӑ. Тепӗр кунне вӑл ӗҫе тытӑннӑ.

Хытӑ тӑрӑшнӑ Михаил. Вырӑнтан хускалмасӑр, йӗри-тавра пӗрре ҫаврӑнса пӑхмасӑр тенӗ пек ӗҫленӗ. Унӑн сылтӑм аллинчи кельма * выляса кӑна тӑнӑ, сулахайӗпе вӑл кирпӗч хыҫҫӑн кирпӗч хунӑ, кирпӗч ҫине кирпӗч!

— Тавай, тавай, хӑвӑртрах ҫаврӑнкала,— васкатнӑ Михаил хӑйне пулӑшакана, лешӗ пӗр минут та ӗҫсӗр тӑман пулин те.— Эпир паян санпа иксӗмӗр экзамен тытатпӑр вӗт-ха! Намӑс курас марччӗ!

Акӑ, пӗр «ҫӑлӗ» пулса ҫитнӗ. Унтан тепри те ҫӗр ӑшӗнчен кӑмпа пек шӑтса тухнӑ. Ҫынсем кӑнтӑрлахи апат тунӑ, хӑшӗ столовӑйне кайнӑ, хӑшӗ ӗҫ патӗнчех ларса ҫинӗ,— Степанов ҫаплах ӗҫленӗ, хырӑм выҫнине

* Кирпӗчсем хушшине раствор ӑсса хумалли калак.

те сисмен вăл. Хĕвел йăлăмри вăрман еннелле сулăннă, ĕç кунĕ пĕтнĕ, Степанов ăна та асăрхаман. Тахăшĕ ун патне çывăхах пырса, кăмăллăн:

— Ну, ĕçсем мĕнле пыраççĕ, маçтăр? — тесе ыйтсан тин вăл, кельмăна хурса, йĕп-йĕпе çамкине çанни вĕçĕпе шăлса илнĕ.

— Ĕçлетпĕр-ха...

— Паянлăха çитет те пулĕ, юлташ.

Ун патне прорабпа тепĕр çын пынă иккен. Вĕсем Степанов кун каçа тунă ĕçе шутлама тытăннă. Çамрăк каменщик иккĕленсе, çав тери пăшăрханса тăнă:

— Норма тулман пуль ĕнтĕ, намăс куратăп...

Кăлăхах пулнă ку! Прораб, хăйĕн блокночĕ çине темскер çырса хурса, малтан ассăн сывласа илнĕ пек тунă, унтан кăмăллăн кулса каланă:

— Виççĕр процент пулнă санăн паян, тусăм!

— Кулатăр эсир,— тенĕ Михаил, ун çине шанмасăртарах пăхса.— Пулма пултараймасть...

— Пултарнă çав!

— Ак сана... ученик! — тенĕ тепри.— Кун пеккисене курманччĕ-ха эпир. Маттур!

Вĕсем пурте чĕлĕм туртма ларнă. Халь тин вара Михаил хăй питĕ ывăннине, аллисем чĕтренине туйнă. Чĕри савăнăçлăн тапнă унăн: вăл намăс курман паян, хăйĕн пултарулăхне аванах кăтартнă!

Тепĕр кунне те çавăн пекех ĕçленĕ Михаил, виççĕмĕшĕнче те, эрнипех. Канализаци «çăлĕсене» туса пĕтерсен, ăна рабочисен поселокĕ тавра тимĕр карта тума чул юпасем купалаттарнă. Ку ĕç малтанхинчен чылай кăткăсрах пулнă, анчах Михаил кунта та аптраман. Уйăх иртсен вара унăн пĕтĕм ĕçне хисеплесе пăхнă та, нормăна вăл 350 процент тултарни палăрнă.

— Тĕрĕслев срокĕ иртсе кайрĕ санăн,— тенĕ ăна участок начальникĕ, хăй патне чĕнсе илсе.— Тин ĕнтĕ эсĕ ученик мар, чăн-чăн каменщик пулса тăтăн, Степанов юлташ!

Квалификаци комиссийĕ ăна пиллĕкмĕш разряд панă. Анчах вăл стройкăра пĕтĕмпе те пĕр уйăх кăна ĕçленĕ вĕт-ха! Тепĕр уйăх ĕçлесен ăна 6-мĕш разряд, тата тепĕр уйăхран 7-мĕш, чи пысăк разряд панă. Стройкăра çавăн пек çӳлелле хăвăрт «сикни» сайра пулать...

Виçĕ уйăхран, Михаил Степанов ĕçре хăйне çав тери лайăх палăртсан, унăн ятне стройкăри хисеп хăми çине

те кёртсен, ăна, çамрăк та хастар коммуниста, комсомолецсемпе çамрăксен бригадин бригадирĕ туса хунă. Анчах ытлашши савăнмаллиех пулман куншăн: бригадăна пуринчен ытла ялтан тинтерех килнĕ çамрăксем пухăннă. Вĕсене пурне те вĕрентмелле. Çапах та хăйне шанса панă ĕçрен Михаил хăраса ӳкмен, юлташĕсене вăл çине тăрсах вĕрентнĕ.

Шупашкар варринче, Карл Маркс урамĕнче, госбанкпа тĕлме-тĕл, ялхуçалăх институчĕн общежитийĕ пур. Питĕ илемлĕ, тăватă хутлă çурт. Степанов бригади чăн малтан çав çурта купаланă. Унтан бригадăна комбинатри ТЭЦа (теплоэлектроцентраль) тунă çĕре куçарнă. Анчах бригада членĕсем халь чылайăшĕ улшăннă, çĕнĕ çынсем хутшăннă, çавăнпа та вĕсене каллех вĕрентме тивнĕ.

— Асăнмалăх шута илсе пытăм эпĕ,— терĕ пире Михаил Степанович, эпир унпа стройкăра тĕл пулса калаçнă чух,— хама чăн малтан бригадир тунăранпа эпĕ пурĕ çĕр те ултă çынна каменщика вĕрентнĕ. Вĕсемпе пĕрле эпĕ чылай çуртсем купаларăм...

Эпир вăл кунта хăш-хăш çуртсем туни çинчен ыйтрăмăр. Иккĕмĕш этажа çити хăпартнă пĕр çĕнĕ çурт тăрринчен Михаил Степанович пире унталла та кунталла кăтартма пуçларĕ.

— Çак поселокри тăватă хутлă çуртсенчен эпир 22, 24, 25, 30-мĕш çуртсене тунă çĕрте ĕçленĕ... Акă вĕсем. Декабристсен урамĕнче тăватă çурт тунă. Общежити, больница. Ятарласа пир-авăр комбиначĕ валли уçнă вунпĕрмĕш номерлĕ вăтам шкула, çăкăр заводне, ТЭЦ тĕп мастерскойĕсене купаланă. Комбинатăн пир-авăра шуратса сăрлакан фабрикине, ФЗО шкулĕн çуртне тунă...

— «Чылай» мар, питĕ нумай çурт тунă эсĕ, Михаил Степанович! — терĕмĕр эпир.— Аçталла пăхсан та, эс тунă корпуссем курăнаççĕ вĕт-ха. Мĕн чухлĕ вăй хунă эс кунта!

— Эп пĕччен-им? — кулса илет Михаил Степанович.— Халăхпа пĕрле. Анчах халăх тени вăл, хăвăрах пĕлетĕр, тем тума та пултаракан вăй!

Мĕн каламалли пур ĕнтĕ — кашни ĕçрех ăсталăх кирлĕ. Анчах ăста пулма — вĕренес пулать, унсăрăн

малалла каяймастăн. Куллен вĕренес пулать, çине тăрса, тăрăшса.

Михаил Степанович вĕреннĕ. Стройкăри техминимум кружокне çӳренисĕр пуçне, вăл çурт-йĕр тăвасси çинчен, уйрăмах малта пыракан каменщик-новаторсен опычĕ çинчен çырнă кĕнекесене тупса вулама тăрăшнă. Çавăн пек кĕнекесем унăн тем териех пухăннă.

Пĕррехинче Степанов Мускаври паллă каменщик Шавлюгин кĕнекине вуласа тухнă. Вăл каменщиксене пилĕкшер çынлă звеносем туса ĕçлеме сĕннĕ. Звенори кашни çыннăн хăйĕн уйрăм ĕç пулмалла, çав вăхăтрах вĕсем пĕр-пĕрине тăтăшах пулăшса, ĕçе ăнăçлăрах, хăвăртрах туса пыма май памалла.

Ку таранччен Степанов бригадинче икшерĕн ĕçленĕ — пĕри кирпĕч хурать, тепри ăна пулăшса пырать. Çак майпа темле тăрăшса ĕçлесен те, сменăра пĕр пин — пин çурă кирпĕчрен ытла хурăнман.

— Шавлюгин пек «пиллĕкĕн» ĕçлесе пăхсан мĕнлерех пулĕ-ши? — вăрахчен шухăшласа çӳренĕ Михаил Степанович. Унтан прорабпа калаçса пăхнă. Лешĕ ку шухăша ырланă:

— Санăн кун пек ĕç ăнсан, ыттисене те çапла ĕçлеме хăнăхтаратпăр вара...

— Вăл паллах. Анчах материалсем пирки чăрмавсем ан пулччăр, кирпĕчпе раствор вăхăтра та çителĕклĕ парса тăрăр.

— Ун пирки ан пăшăрхан!

Тепĕр ирхине Степанов çĕнĕлле, «пиллĕкĕн» ĕçлеме тытăннă. Кашни хăй выранĕнче, хăçан мĕн тумаллине тата мĕнле тумаллине пĕлет.

Стройкăра чăн малтан ĕçлеме пуçланă чухнехи пекех пăлханнă бригадир. Мĕнле пулĕ-ши ĕнтĕ? Ырă тĕслĕх кăтартас выранне, намăс курас марччĕ!

Ĕç ăннă. Рет хыççăн рет хушăннă, çурт стенисем хăпарсах пынă. Смена вăхăчĕ иртсен шутласа пăхнă та, Степановăн «пятерки» çичĕ пин кирпĕч хуни палăрнă. Анчах ку вăл пуçламăш кăна пулнă-ха. Тепĕр кунне вĕсем вунпĕр пин кирпĕч хунă, виççĕмĕшĕнче — 12 пин, унтан 14 пин, 15 пин!

Ку рекорд пурне те тĕлĕнтерсе янă. Кун пекки унччен малтан çак стройкăра пĕрре те пулман. Пилĕк çын пĕр сменăра 15 пин кирпĕч купаланă... Хăшĕсем ĕненмен, иккĕленнĕ.

— Пахалӑхӗ мӗнле-ха вӗсен? Лӑп та лап, чалӑш та чӗлӗш купаласа кайни кама кирлӗ вӑл?!

Ятарласа тунӑ комисси «пятерка» ӗçне тӗплӗн тӗрӗслесе тухнӑ. Чиперех пулнӑ иккен! Стенасем тип-тикӗс, яка, нимӗнле шӑйрӑк та çук.

Çакӑн хыççӑн ытти бригадӑсенче те чылайӑшӗ çавӑн пек «пиллӗкпе» ӗçлеме пуçланӑ, хӑшӗсем тата Мускаври тепӗр паллӑ каменщик Максименко меслечӗпе — «улттӑпа», виçӗ мӑшӑррӑн ӗçлеме тытӑннӑ. Михаил Степанов пуçарӑвӗ стройкӑра ӗçри чи тухӑçлӑ, çӗнӗ йышши меслетпе усӑ курас юхӑма вӑйлатнӑ.

— Ӗçе хӑвӑрт туни çителӗклӗ мар-ха вӑл, ӗçӗ те паха пулмалла! — тет Михаил Степанович.

Çав шутпа вӑл хӑйӗн бригадинчи çынсен ӗçне лӗрмай сӑнаса, тӗрӗслесе тӑрать, никама та технологи йӗркисене пӑсма памасть. Кирпӗч тикӗс вырттӑр, вӗсем хушшинчи раствор хулӑнӑшӗ те виçеллӗ пултӑр, материал та перекетленсе пытӑр. Кам кирлӗ пек тӗрӗс ӗçлеместь, технологие пӑсать, бригадир ӑна çийӗнчех тӳрлетет...

Стройкӑри каменщиксен бригадисем хушшинче социализмла ӑмӑрту сарӑлса пынӑ. Степанов бригади хайхи Парамонов бригадипе — Мишшана стройкӑна пырсанах тиркесе тӑкса ӗçе илмен «Ваня пичче» бригадипе — ӑмӑртнӑ. Ӑмӑртма пуçласан пирвайхи кунсенчех Степанов бригади нумай маларах кайнӑ. Эрне вӗçӗнче, результатсене тӗрӗсленӗ чух, Михаил Степанович шӳтлесе илнӗ:

— Ну, мӗнле, Ваня пичче, хӑвӑн латна ученика йышӑнатӑн-и ӗнтӗ халь мана?

Старик именнӗ пек пулнӑ:

— Кам шутланӑ ун чух эсӗ çакӑн пек çивӗч пуласса?.. Тепӗр тесен, эсир, çамрӑксем, малаллах каятӑр ӗнтӗ, эпир, стариксем, тин сире хуса çитес çук! Халӗ, ав, техники епле хӑватлӑ та...— Вӑл таврари башеннӑй крансем, шахтоподъемниксем çине кӑтартнӑ.— Эпир çамрӑк чух кашни кирпӗче хамӑр çурӑм çине хурса йӑтнӑ, халӗ пӗрре кнопкӑна пусаççӗ те — темиçе çӗр кирпӗч пӗр самантранах тӑваттӑмӗш этажа хӑпарса выртать...

1952 çулта Михаил Степанов Иваново хулине кайса виçӗ уйӑх хушши каменщик-maçтӑрсен курсӗнче вӗреннӗ. Кунта пысӑк опытлӑ çынсем, стройкӑсенче нумай-

рантта ӗҫленӗ квалификациллӗ маҫтӑрсем пухӑннӑ. Степанов маҫтӑр вырӑнче шутланман, вӑл бригадир, ҫитменнине ҫамрӑк бригадир ҫеҫ пулнӑ, ҫапах та вӗренӳре ыттисенчен кая юлман, лайӑх вӗренсе тухнӑ. Киле таврӑнсан ӑна ҫӗнӗ каменщиксем вӗрентсе хатӗрлекен инструктор тунӑ.

— Пуринчен ытла мана Мускавра ялан ӗҫлекен строительство выставкине кайса курни пысӑк усӑ пачӗ,— тет Михаил Степанович.— Унта мана 1956 ҫулта ячӗҫ. Мӗн кӑна курмарӑм пулӗ эпӗ ҫав выставкӑра! Темӗн тӗрлӗ строительство техники, темӗн тӗслӗ материал... Ҫӗнӗ йышши ӗҫ меслечӗсемпе паллашрӑм. Чӑнчӑн университет пулчӗ ку маншӑн!

Ҫавӑн чух Мускавра Михаил Степанович ҫӗршыври чи ӑста каменщикпа, Шавлюгинпа, тӗл пулса калаҫнӑ. Унччен темиҫе ҫул малтан вӑл, ҫав маҫтӑрӑн кӗнекине вуласа, унӑн меслечӗпе («пиллӗкпе») ӗҫлеме пуҫланӑҫке. Халӗ ӗнтӗ вӑл унпа хӑйӗнпе паллашса, лешӗ мӗнле ӗҫленине курнӑ. Питӗ кӑмӑллӑ йышӑннӑ Мускав маҫтӑрӗ инҫетри Чӑваш ҫӗршывӗнчен пынӑ ҫамрӑк каменщике, хӑйӗн ӗҫ меслечӗсем ҫинчен каласа кӑтартнӑ, ырӑ канашсем панӑ.

— Ӗҫ вырӑнне малтанах тӗплӗ хатӗрлесе янтӑла, санӑн пурте ал айӗнче пултӑр, хӑвна пулӑшакансем те хӑйсен ӗҫне ӑста пӗлччӗр!

Ҫак сӑмахсене Михаил Степанов яланах асра тытнӑ, лайӑхран-лайӑх ӗҫлесе пыма тӑрӑшнӑ...

Ку ҫеҫ те мар. Вӑл, строительствӑна пӗтӗм чунӗпе парӑннӑскер, ӑна хӑй хастарлӑ ӗҫленипе кӑна мар, ыттисенпе те пулӑшасшӑн ҫуннӑ, ӑҫта та пулин йӗркесӗрлӗх курсан, тӳссе тӑрайман.

Ӗҫленӗ чух вӑл час-часах асӑрханӑ: шоферсем стройкӑна кирпӗч тиесе пыраҫҫӗ те, самосвалсен кузовӗсене хӑвӑрт кӑна ҫӗклесе, кӗмсӗр-р! тӑкса хӑвараҫҫӗ. Вӗсене каллӗ-маллӗ ытларах хутлани пултӑр! Анчах ҫавӑн пек ним хӗрхенмесӗр тӑкнӑ кирпӗчӗн виҫӗ пайӗнчен пӗри юрӑхсӑра тухать, ванса пӗтет.

— Кирпӗчӗ ахаль те ҫитмест пирӗн, эпир пур, ӑна перекетлес вырӑнне, ним шеллемесӗр вататпӑр,— тенӗ Михаил Степанович, кӳренсе. Кун пирки вӑл прорабпа та, участок инженерӗпе те сӑмахласа пӑхнӑ, производство канашлӑвӗсенче те калаҫнӑ.

— Пирӗн куҫ умӗнчех вуншар лин тенкӗлӗх строй-материал пӗтет, эпир ҫавна курмиш пулатпӑр!

— Мӗн тума сӗнетӗн эсӗ? — ыйтнӑ унран.

— Мускавра кирпӗче контейнерсемпе турттараҫҫӗ. Ун пек тусан кирпӗчӗ те ванмасть, ҫӗр ҫинчен ҫӳле хӑпартма та ансатрах.

Ку вӑл литӗ выранлӑ сӗнӳ пулнӑ, ӑна йышӑннӑ, контейнерсемпе турттарма тытӑнсан, кирпӗч ванса сая кайми пулнӑ.

Производствӑна усӑ кӳрекен сӗнӳсем татах та панӑ Михаил Степанович. Ҫавӑн пек паха сӗнӳсенчен пӗри вӑл — стройкӑра комплекслӑ бригадӑсем тӑвасси. Унӑн хӑйӗн бригадинче халь каменщиксем кӑна мар, платниксем, разнорабочисем (ҫӗр чавакансем, грузчиксем) те пулнӑ. Штукатуркӑсӑр пуҫне, ҫавӑн пек бригада пур ӗҫсене те хӑех, никам пулӑшмасӑрах тума пултарать, унӑн ӗҫӗ нихҫан та чарӑнса лармасть.

— Унччен, бригадӑра каменщиксем кӑна пулнӑ чух, ӗҫсӗр те ларкаланӑ эпир,— каласа парать Михаил Степанович.— Кирпӗч пӗтет — ларатпӑр, раствор пулмасть — чарӑнатпӑр, хамӑр тӑрса ӗҫлекен хӑмасене ҫӳлерех хӑпартмалла пулать — каллех ӗҫлейместпӗр. Халӗ ун пекки ҫук. Пӗр ӗҫне тума май килмест пулсан, теприне тытӑнатпӑр. Тепӗр чух чӑрмавсем пулсан та, бригада сменӑри нормӑна 130—150 процентран кая нихҫан та тултарман.

Лайӑх ӗҫленӗшӗн, ӗҫре пултаруллӑ пулнӑшӑн, хӑйпе пӗрле юлташӗсене те малалла илсе пынӑшӑн Михаил Степанович Степанова Хисеп грамотисем те, премисем те нумай хутчен панӑ. 1957 ҫулта, строительсен кунӗнче, ӑна калама та ҫук пысӑк чыс тунӑ — СССР строительство министерствӑн приказӗ тӑрӑх Хисеплӗ строитель ятне панӑ.

1958 ҫулта хӑйӗн ӗҫӗпе чапа тухнӑ строителе Совет правительстви Ленин орденӗпе наградӑланӑ.

Ҫав ҫултах, март уйӑхӗнче, Михаил Степанов пурнӑҫӗнче тата пысӑкрах событи пулнӑ. Шупашкарти пир-авӑр комбинатӗнчи, трактор пайӗсем тӑвакан заводри тата стройтрестри рабочисемпе служащисем кандидата тӑратнипе, ӗҫҫыннисем ӑна СССР Верховнӑй Совечӗн депутатне суйланӑ.

Унччен малтан Михаил Степанов виҫӗ хутчен Шупашкар хула Совечӗн депутачӗ пулнӑ. Хула Совечӗн

исполкомĕ хушнипе, суйлавçăсем ыйтнипе вăл ун чухне те ĕççыннисемшĕн нумай усăллă ĕç тунă. Халăх хăйне мĕн тери шаннине, чыс тунине ялан асра тытса, вăл хăйĕн суйлавçисемшĕн ырми-канми ĕçленĕ, вĕсем хушни-ыйтнисене пурне те туса пыма пĕтĕм чунтан тăрăшнă.

Вулакансене тӳрех калас пулать: республикăри хисеплĕ строитель, хăйĕн ырми-канми ĕçĕпе чапа тухнă Михаил Степанович Степанов çинчен калакан çак очерка эпĕ 1958 çулта çырнăччĕ. Унтанпа нумай та мар, сахал та мар — вунпилĕк çул иртрĕ.

Мĕнле улшăнусем пулнă-ха çак хушăра Степанов пурнăçĕнче? Мĕн ĕçленĕ вăл çав вăхăтра, тата мĕнле çитĕнӳсем тунă?

Çаксене пĕлес тесе, эпĕ унпа ятарласа çĕнĕрен тĕл пулса калаçрăм.

— Малтанхи пекех пĕр вĕçĕм ĕçленĕ, çĕнĕрен-çĕнĕ заводсемпе фабрикăсен корпусĕсене тунă, пурăнмалли çуртсем купаланă, чипер сывă чух пĕр кун та ĕçсĕр ларман,— терĕ вăл эп ыйтнине хирĕç çав тери сăпайлăн.

— Уйрăммăн илсен?

— Чăн малтан, Ивановăри кирпĕч заводне тĕпренех реконструкци туни çинчен каламалла. Кирпĕч нумай кирлĕ пире—строительство çултан çул сарăлса пырать, кирпĕч çитмест, çавăнпа та кирпĕч туса кăларакан заводсене вăйлатмалла. Хамăн бригадăпа эпĕ Ивановăри завода аслăлатнă çĕрте çулталăк çурă ĕçлерĕм. Унтах рабочисем валли пурăнмалли çуртсем те купаларăмăр. Унти ĕçсене пĕтерсе Шупашкара таврăнма хатĕрленеттĕмĕр кăна — пире Çĕнĕ Шупашкар (ун чухне ăна «Спутник» тетчĕç-ха) хулине тума чĕнчĕç. Строительство пуçлăхĕ хăй пычĕ ман пата. «Атьăр, çĕнĕ хула никĕсне хыватпăр. Материалсем хатĕр — строительсем çук»,— тет. Эпĕ малтанах килĕшмерĕм. Килтен аякра çулталăк çурă ĕçлесе пурăнни те йăлăхтарнăччĕ пире. Анчах вăхăт нумай та иртмерĕ — парти хула комитетне чĕнчĕç...

— Çав ыйтупах-и? — ыйтрăм эпĕ.

— Çавăн пиркиех çав. Кайса пулăшас пулать, чăн малтан строительсем валли общежити евĕрлĕ икĕ çурт

тумалла, терӗҫ. Эпӗ — коммунист, хула комитечӗ ыйтнине хирӗҫ пулма пултараймарӑм, килӗшрӗм. Анчах ман бригадӑрисем унта пыма ытла пурте кӑмӑл тумарӗҫ. Манӑн ҫӗнӗ бригада пулчӗ халь, малтан 80 ҫын, унтан 100 ытла пухӑнчӗ. Вӗсем хушшинче квалификациллӗ каменщиксем ҫукпа пӗрехчӗ. Каллех вӗрентес пулать. Сӑмах майӗн каласан, хам бригадир пулнӑранпа эпӗ каменщик ӗҫне вӗрентнӗ ҫынсен шучӗ халь 500-тен те иртсе кайнӑ... Ҫӑмӑл мар! Никама шанма ҫуккипе, хамӑн пӗрмай икшер смена ӗҫлеме тиврӗ... Икӗ уйӑх ҫурӑ хушшинче тӑватӑ хутлӑ, 132 пӳлӗмлӗ ҫурт туса ҫитертӗмӗр вара. Унтан иккӗмӗш ҫуртне тума тытӑнтӑмӑр...

— Эппин, Ҫӗнӗ Шупашкар никӗсне хываканни эсӗ пулнӑ?

— Ҫапла пулса тухать. Халь ку иртнӗ япала та — калама юрать: нумай терт курма тиврӗ. Материалӗсене Шупашкартан турттаратчӗҫ, ҫулӗ ҫукчӗ ун чухне, час-часах вӑхӑтра илсе ҫитерейместчӗҫ, хӗлле раствор чул пек хытса ларатчӗ... Пӗррехинче, шыв-шур вӑхӑтӗнче, киле таврӑннӑ чух май таран пӑрлӑ шыва кӗрсе ӳкрӗм те, ӳпке икӗ енчен те шыҫнипе икӗ уйӑх больницӑра выртрӑм, чутах асаттесем патне ӑсанаттӑм...

— Нумай ӗҫлерӗн-и вара эс унта?

— Пурӑнмалли икӗ ҫурт тунӑ хыҫҫӑн трест Шупашкара куҫарчӗ. Анчах малтан ӗҫленӗ ҫӗре, пир-авӑр комбинатне мар, трактор пайӗсен заводне тунӑ ҫӗре. Унта ӗҫсем начар пыраҫҫӗ-мӗн, ҫӗнӗ корпуссем тӑвасси кая юлнӑ. Вара эпир кузнечно-штамповочнӑй, термообрубной, хурҫӑ шӑратакан цехсене турӑмӑр. Ҫавӑн хыҫҫӑн тин пир-авӑр комбинатне куҫрӑмӑр. Кунта эпир ҫип арлакан иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш фабрикӑсене, пир тӗртекен иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш фабрикӑсене турӑмӑр, ҫав хушӑрах хӑю тӗртекен фабрикӑна тӗпренех ҫӗнетрӗмӗр...

— Хӑвӑн пурнӑҫунта мӗнле улшӑнусем, паллӑрах ӗҫсем пулса иртрӗҫ тата?

— 1960 ҫулхи январь уйӑхӗнче мана Чӑваш республикин тава тивӗҫлӗ строителӗн ятне пачӗҫ. Унччен те пӗтӗм вӑя парса ӗҫленӗ те-ха эпӗ, анчах ҫав хисеплӗ ята пани манӑн ответлӑха тата ытларах ӳстерчӗ ӗнтӗ. Эп тахҫанах, комбинат стройкине килсе кӗнӗренпех, вӗренесси ҫинчен ӗмӗтленсе пурӑннӑ, анчах ниепле те вӑхӑт ҫитмерӗ. Халь вара епле пулсан та вӗренесех, те-

рём. 1963 çулта пир-авăр комбиначĕ çумĕнчи строительство техникумĕн каçхи уйрăмне кĕтĕм те 1968 çулта йĕркеллех вĕренсе тухрăм. Техникумра вĕреннĕ чухне — 1965 çулта — мана бригадиртан мастера куçарчĕç, вĕренсе тухсан вара прораб турĕç...

— Сан кăкру çинче, Михаил Степанович, Социализмла Ĕç Геройĕн Ылтăн Çăлтăрĕ йăлтăртатать. Хăçан панă сана ку хисеплĕ ята, çак чи пысăк наградăна?

— 1966 çулхи август уйăхĕнче. Эп ун чухне больницăра выртаттăм. Ялан цемент, известь тыткаланипе манăн алăсем ыратакан пулнăччĕ. Пĕр ирхине эп выртакан палатăна хама эмеллекен врач питĕ хавассăн чупса кĕчĕ те алăк патĕнченех кăшкăрчĕ: «Саламлатăп, Михаил Степанович!» «Мĕн пирки?» — тесе ыйтатăп. «Эс нимĕн те пĕлместĕн-и?» «Çук, пĕлместĕп...» «Сана Социализмла Ĕç Геройĕн ятне панă! Ак, халь кăна радиопа каларĕç...» Çухалсах кайрăм эпĕ. Пĕлмен те-ха нимĕн те... Кĕçех парти хула комитетĕнчен, обкомран, хамăр комбинатран пычĕç. Чечексемпе, парнесемпе. Саламлаççĕ, ырă сунаççĕ, анчах хам алă та параймастăп вĕсене — ман алăсене марльăпа çыхса тукмак пекех туса хунă та... Çапла пулчĕ вăл. Паллах, питĕ хытă савăнтăм, анчах çав вăхăтрах малашне хамăн тата лайăхрах ĕçлемелли çинчен шухăшларăм...

...Çавăн пек ĕнтĕ Михаил Степановăн кунçулĕ. Тĕлĕнмелле кунçул. Чухăн чăваш ачи, нумай хура-шур курса ӳснĕ çамрăк, тискер тăшмана хирĕç алла хĕçпăшал тытса çапăçнă салтак — хисеплĕ те тава тивĕçлĕ строитель. Мирлĕ, телейлĕ пурнăç строителĕ. Унăн кăкри çинче икĕ Ленин орденĕ, Социализмла Ĕç Геройĕн Ылтăн Çăлтăрĕ.

Яланхи пекех, халь те ырми-канми ĕçлет вăл. Строительсене чи çĕнĕ меслетсемпе, хăвăрт та тухăçлă ĕçлеме вĕрентет.

...Хăй ӳстернĕ паттăр ывăлсем нумай чăваш халăхĕн. Тăвата çулталăк пĕр чарăнмасăр кĕрленĕ вăрçăри хаяр çапăçусенче те, вăрçă хыççăнхи мирлĕ ĕçре те чапа тухрĕç вĕсем.

Михаил Степанов — çавсенчен пĕри.



# Салтаксем кулма та юрататчӗҫ...



# Салтаксем кулма та юрататчĕç...

*(Фронтри фельетонист аса илнисенчен)*

Кулăш — вăйлисен хĕçпăшалĕ. Мĕскĕн çын, хавшак чунлă та халсăр çын кулаймасть те вăл, ун йышши этем сăмсине шалалла туртса нăшăклама çеç пултарать. Çынсем унтан хăйĕнчен кулаççĕ.

Кам вăйлă та хастарлă, кам кĕрешӳре çĕнтерет — çавă çеç тулли кăмăлпа, тепĕр чух каçса кайса, варé ыратакан пуличчен кулать. Хăй çĕнтернĕшĕн те савăнса кулать вăл, хăй месерле çавăрса çапнă тăшманĕнчен те кулать: «Куртăн-и халь, анра-сухра, манпа çыхлансан епле камит пулса тухать, э? Тата тепре çулăхса пăхма шуту пур-и? Кил ара, çавăрса çапам, анчах кайран ан макăр вара! Ха-ха-ха!..»

Иртнĕ вăрçăра пирĕн салтаксем çаван пекчĕ. Çапăçура çав тери хаярччĕ вĕсем, арăслансем пекехчĕ, ним умĕнче те чарăнса тăмастчĕç. Çавăнпа çĕнтеретчĕç те вĕсем хамăра вăрă-хурахла килсе тапăннă тискер тăшмана. Анчах çапăçусем хушшинчи пушă вăхăтра (вăрçăра ун пек вăхăтсем те пулкалаççĕ) пирĕн салтаксем пит те хаваслăччĕ вара. Юрлатчĕç те вĕсем, ташлатчĕç те. Кулă вĕсен чи çывăх тусĕччĕ. Вут-çулăмран тухнă-

тухман халь çеç иртнĕ çапăçури уйрăм самантсене аса илсе кулатчĕç...

«Пăхатăп — траншейăри кукрашка хыçĕнче пĕр фриц Ивана тĕллет... Пĕррех прикладпа патăм çакна пуçĕнчен! Фриц качака пек «ме-ек!» терĕ те, пăлтăрт! кутăн çаврăнса ӳкрĕ. Пуçĕ аялта, урисем çӳлелле, çăлăнас тесе çĕр тĕпнелле чăмасшăн пулнă пек...»

«Ав çав пӳрте халь çеç нимĕç чупса кĕрсе кайрĕ,— терĕ мана пĕр карчăк.— Тӳрех сикрĕм çавăн хыççăн. Анчах пӳртре никам та çук. Унталла пăхатăп, кунталла. Саксем айне, кăмака хыçнелле... Çук! Суйрĕ мана карчăк, тетĕп ĕнтĕ. Çавăнтах шухăш пырса кĕчĕ: кăмакана пытанман-ши ку? Питлĕхе илсе пăхрăм та — апайтурух! Пĕр фриц вырта парать! Кушак пек хутланнă хăй... А ну, тух кунта, атту-тăк халех улăм чиксе чĕртсе яратăп та, санран окорок тăватăп, тетĕп. Тухрĕ... Шуйттан тĕслĕ! Çара хăрăм, пичĕ-куçĕ те палăрмасть. Кулса вилеттĕм вĕт!..»

«Сĕтĕрсе тухрăмăр хайхи «чĕлхене» хăйсен траншейинчен. Утмасть, халера. Те юри хăтланать, те Ванькка ăна пуçĕнчен кăшт ытлашширех шакканă. Ирĕксĕрех çакна михĕ çĕкленĕ пек çĕклемелле пулчĕ. Унччен те пулмарĕ — шăрш тапса тухрĕ. Тӳсмелле мар, хайхи арийски шăршă... Пĕр çырмана çитсен вара тăна кĕрткелерĕмĕр те çакна, часрах йĕмне хывтарса çутартăмăр, атту пăрахса хăварас патнех çитрĕмĕр вĕт!»

Çавăн пек кулăшла историсем вĕçĕмсĕр каласа паратчĕç пĕрне-пĕри.

Анчах салтаксем каласа пама кăна мар, тĕрлĕ кулăшсене итлеме те, курма та, вулама та çав тери юрататчĕç. Пирĕн дивизири художествăллă пултарулăх ансамблĕ тĕрлĕрен пĕчĕк комедисем, сценкăсем, скетчсем лартатчĕ, кулăшла юрăсемпе такмаксем юрлатчĕ. Мĕн тери тулли кăмăлпа йышăнатчĕç вĕсене салтаксем! Сцена пекки çине (пуринчен ытларах — грузовик кузовĕ çине) Гитлер, Геббельс тата ытти «Г»-сем (Геринг, Гиммлер) пек тумланнă «окоп артисчĕсем» тухса ун пек-кун пек хăтланкаласа кăтартсан, ал тупанĕсем ыратакан пуличченех çупса кулатчĕç, ăнăçлăрах пулнă номерсене икшер-виçшер хут та кăтарттаратчĕç.

Кулăшла япаласене вулама та питĕ юрататчĕç пирĕн паттăр салтаксем. Траншейăсене, блиндажсене фронт, арми е дивизи хаçачĕсене илсе пырсан, чăн мал-

тан Информбюро сводкине пăхса тухатчĕç, унтан тӳрех фельетон шырама тытăнатчĕç. Номерте фельетон е кулăшла сăвă-калав пулсан, ăна каçса кайсах вулатчĕç. Сасăпа, пурте илтмелле вулатчĕç. Астăватăп, чылай хушă пирĕн фронт хаçатĕнче «Новые похождения бравого солдата Швейка» ятлă пародилле повесть пичетленсе пычĕ. Ну, ахăратчĕç те вара ăна вуласа! А. Твардовскин «Василий Теркин» поэми те питĕ хаваслă, салтак чунне çĕклекен япала та, ăна та салтаксем питĕ кăмăллатчĕç (вăл та пирĕн фронт хаçатĕнче сыпăкăн-сыпăкăн пичетленсе пычĕ).

Эпĕ дивизи хаçатĕнче ĕçлеттĕм. Салтаксем кулма юратнине шута илсе, эпир те хамăр хаçатра тăшмана питлекен, хаяррăн тăрăхласа кулакан калавсемпе фельетонсем пичетлеме тăрăшаттăмăр. Эп хам та çыраттăм.

Тăшман çинчен хаяр фельетонсем çырма материал тупăнсах пыратчĕ. Сăмахран, эпĕ пĕррехинче «Йĕм тăхăннă пуç» («Голова в штанах») ятлă фельетон çырса кăлартăм. Пачах кĕтмен çĕртен çуралчĕ çав фельетон. Пĕр ирхине ирех (1942 çулта, Ржев тăрахĕнче пулчĕ ку) эпĕ малти линие хамăр хаçатăн çĕнĕ номерĕ валли материал пухма кайрăм. Пирĕн ĕç йĕрки çавăн пекчĕ: пĕр кун малти линире — траншейăсенче, блиндажсенче материал пухса çӳретĕн, тепĕр кун хаçат тăвататăн, унтан каллех малти линие каятăн.

Пĕр çунса кайнă ял витĕр утса пыраттăм та — хама хирĕç тыткăна лекнĕ гитлеровецсен чылай пысăк ушкăнне илсе килнине курах кайрăм. Ял варрине çитсен, колонна темшĕн чарăнса тăчĕ. Эпĕ те чарăнтăм ĕнтĕ, «тĕнчене çĕнтерекенсем» çине пăхатăп. Çĕр çăттăрах! Мĕн тĕслиоем çукчĕ пуль унта! Мĕнле тумланман пуль вĕсем пирĕн «Сив мучи-генералтан» хӳтĕленме тăрăшса! Шăши тĕслĕ çӳхе шинелĕсем çĕтĕк-çатăк, лутăрканса, вараланса пĕтнĕ, хăшĕсен урисенче — улăмран тунă «эрзац-çăматăсем», пуçĕсем çийĕнчи пилоткисен хĕррисене тавăрса хăлха çине антарса лартнă, çиелтен хĕрарăм тутрисем, алшăллисем çыхнă, пĕри вара, çӳллĕ те хытканскер, сухалне нумайранпа хырман, питне тахçантанпах çуман ефрейтор, ним тупайманнипе пулас, пилотки çийĕнчен... хĕрлĕ армеец йĕмне çыхса лартнă. Кулса вилес пулать! Йĕм тĕпĕ — пуç тăрринче, пĕççисем — янах айĕнче... Пĕр-пĕччен кунĕпе кулса çӳрерĕм

çавна аса илсе. Редакцие таврӑнсан вара тӳсеймерӗм, фельетон çыртӑм. Салтаксене кӑмӑла кайнӑччӗ вӑл.

Теприне тата çакӑн пек пулчӗ. Иртнӗ каç пирӗннисем нимӗçсен разведчикне тытса килнӗ, терӗç. Вӑл ӳсӗр пулнӑ та çӗрле çухалса кайнӑ пулмалла.

— Унӑн документчӗсем питӗ чаплӑ, килсе кур,— терӗ мана телефонпа дивизи штабӗнчи тӑлмачӑ.

Чӑнах иккен. Çав разведчик çумӗнче, ытти хутсем, вуншар фотоӳкерчӗксем хушшинче... хуть те мӗнле хӗре те (хӑйне кӑмӑла кайнӑ тӑрӑх ӗнтӗ) чуптума право паракан документ тупнӑ. Тытсах пӑхрӑм эп вӑл документа. Пӗр-пӗр организацин член билечӗ евӗрлех. Хуплашки çине «Чуптумалли право» тесе çырнӑ, унтах шуйттан палли — эрешменле свастика. Шалта вара çак «право» хуçи Германин «никам çӗнейми çарӗн» паттӑрӗ пулни, ӑна хисеплеме тивӗçли, вӑл хуть те хӑш нимӗç хӗрне те тытса чуптума пултарни çинчен (куна урӑхларах та ӑнланма пулать ӗнтӗ...), хӗрӗ килӗшмест, хирӗç тӑрать пулсан, ӑна çак фашист ирӗксӗрлесех хӑй майлӑ çавӑрма пултарни çинчен çырнӑччӗ.

Епле тӳсетӗн-ха хамӑр салтаксене çакӑн çинчен каласа кӑтартмасӑр? Епле каласа памастӑн фашистсен çавӑн пек тискер, выльӑхла йӑлисем çинчен? Тепӗр куннех дивизи хаçатӗнче манӑн «Право на поцелуй» ятлӑ хаяр фельетон тухрӗ.

Çавӑн пек фельетонсем чылай çырса кӑларнӑ эпӗ фронтра чухне. Сатирӑлла калавсем те сахалах мар çырнӑ. Сатира мелӗпе усӑ курса, салтаксене тӑшманӑн тискерлӗхне кӑтартса пама тӑрӑшнӑ.

Çав хушӑрах тата хамӑрӑн салтаксен кулленхи ӗçӗсем çинчен, вӗсен пурнӑçӗнче ӑнсӑртран сиксе тухакан тӗрлӗ мыскарасем çинчен ӑшӑ кӑмӑлпа кулӑшла калавсем çырнӑ. Ун пеккисене те салтаксем пит юратса вулатчӗç.

1943 çулта, çур енне, эпир «Курск хысакӗнче» тӑнӑ чух, пирӗн дивизири пӗр повар, салтаксене вӗри апат çитерме малти позицие кайсан, ахаль карабинпа персех фашистсен «мессершмитне» çапса антарнӑччӗ. Çавӑншӑн ӑна темиçе кунтанах Отечественнӑй вӑрçӑн иккӗмӗш степеньлӗ орденне пачӗç. Кун çинчен хамӑрӑн дивизи хаçатӗнче çеç мар, арми хаçатӗнче те çырчӗç. Çавӑн хыççӑн ман пуçра Çӑпала Иванӗн сӑнарӗ çуралчӗ те, эпӗ ӑна тӗп герой туса темиçе кӗске калав çыр-

тăм. Калавĕсенче кăтартса панă ĕҫсене пĕрне те шутласа кăларман, вĕсем пурте пурнăҫра пулнăскерсем.

Ку калавсене ҫырнăранпа вăхăт нумай иртрĕ пулин те, вĕсем вулакансемшĕн (уйрăмах — ҫамрăксемшĕн) халь те интереслĕ пулас пек туйăнать. Хăй вăхăтĕнче вĕсене професситлĕ артистсем те, художествăллă пултарулăх кружокĕсен членĕсем те эстрада ҫинчен нумай вуларĕҫ. Тен, халĕ те ҫавăн пек вулакансем пулĕҫ, тесе шанатăп...



# Сахвинепе «мессершмитт»

...Хӑвӑрах пӗлетӗр, тӑвансем, юптарас йӑла пирӗн йӑхра ҫук вӑл. Эпӗ хам та ни суякан, ни мухтанакан ҫын мар, ҫавӑнпа та сире пӗтӗмпех тӗп-тӗрӗссине каласа паратӑп...

Мӗнех мухтанас ӗнтӗ — манӑн ҫарти служба ытла ӑнӑҫлах пуҫланмарӗ. Акӑ, халь эсир манӑн кӑкӑрӑм ҫинче икӗ орден куратӑр, медальсем те шӑкӑриех авӑ. Анчах та малтанхи вӑхӑтра эпӗ орден илмелле пуласса пачах та шанманччӗ ҫав. Шутламан та ун пирки, мӗншӗн тесен шутлама майӗ те пулман манӑн. Аҫтан шутлатӑн-ха? Ордена ӑна пӗр-пӗр паттӑр ӗҫ тунӑшӑн параҫҫӗ-ҫке-ха! Ну, калӑпӑр, эсӗ атака вӑхӑтӗнче тӑшман траншейине никамран малтан сиксе кӗрсе темиҫе фашиста леш тӗнчене ӑсатнӑ, е хӑвӑн ҫинелле ӗрӗхсе пыракан «тигра» ПТР пӑшалӗпе ҫамкинчен шаплаттарса, ӑна спичка коробки пекех ҫунтарса янӑ, е тата ҫавӑн пекки мӗн те пулин тунӑ... Анчах эпӗ малтанхи вӑхӑтра ни ӑна, ни кӑна туман, тата... тума та пултарайман, мӗншӗн тесен эпӗ стрелок та, противотанкист та, никам та пулман, манӑн специальноҫ — повар пулнӑ...

Ҫапла ҫав, повар! Пин те ҫичҫӗр ҫитмӗл ҫиччӗмӗш полкри иккӗмӗш стрелковӑй рота поварӗ! Хама та мана

Çăпала Иванĕ, теççĕ вĕт-ха, мĕншĕн тесен эпĕ мĕн ачаранпах кухньăра çапăçса пурăннă: паранкă шуратнă та купăста туранă, аш вакланă та лапшу çăрнă. Эпĕ вăрçăччен районти чайнăйра повар пулса пурăннине пĕлсен, фронтра та мана çав кичем ĕçех хушрĕç...

Эпир — çĕнĕ пополнени ĕнтĕ — фронтра çапăçакан полка çитсессĕнех, старшина ман юлташсене пурне те вĕр-çĕнĕ автоматсем туянтарчĕ, гранатăсем, патронсем пачĕ, а мана... мана вара темĕн пысăкăш çăпала тыттарчĕ — яп-яка авăрлă пăхăр çăпала! Ме сана, терĕ, эс çакăнпа çапăç, терĕ. Паллах, стройра тăракан пĕтĕм рота ахăлтатса кулса ячĕ, хам эпĕ кĕрхи помидор пекех хĕрелсе кайрăм, çамка çине пăрça пек тар тапса тухрĕ, чĕлхе çăвар маччи çумнех çыпăçса ларчĕ... Шутласаттăм çав эсрел япалине пĕтĕм строй умĕнчех çырманалла вăрас тесе, анчах юрать-ха, çарти дисциплинăна пăсма юраманнине вăхăтра аса илтĕм те, тивес мар, терĕм. Атя, мĕн хушаççĕ, çавна тăвас!

Ну, юрĕ... Тытăнтăм ĕçлеме. Тепĕр тесен, фронтра яшка пĕçерни те боевой ĕçех вĕт-ха, çавăнпа та чунтанах тăрăшрăм: епле пулсан та, юлташсене лайăхрах тăрантарас, фашистсене тӳпелеме вĕсен вăй ытларах пултăр, терĕм. Тен, вăхăчĕ çитсен, мана та тав тăвĕç, манăн та савăнмалли кун çитĕ-ха, тесе шутлакалаттăм хам ăспа, кăштах ерçнĕ вăхăтсенче.

Çук вĕт! Савăнмалли вырăнне манăн тăтăшах тарăхмалли те кӳренмелли çеç тупăнса пыратчĕ. Ну... пĕррехинче манăн чип-чипер пиçсе çитнĕ, çулласа лартнă хура тул пăттине — пăтти хуран тулли ччĕ! — таçтан мурĕнчен пĕр ухмах снаряд пырса лексе сывлăшалла сирпĕтни çинчен каламастăп та ĕнтĕ. Тепринче тата, вăрман хушшипе малти позици еннелле кайнă чух, асар-писер бомбежка тапранчĕ те манăн кухньăна туртса пыракан ула кĕсрене вĕлерсе пăрахрĕ. Кĕсри çав тери ăслăччĕ, апат юлашкисене пăру пекех çиетчĕ... Питĕ шутсăр хĕрхентĕм. Шӳрпене боецсем патне вăхăтра çитерейменрĕм те, капитан мана уншăн çур сехет хушши тăн кĕртрĕ...

Анчах ку тата нимех те мар-ха.

Пуринчен ытла эпĕ виççĕмĕш рота поварне, Вася Котлеткина, медаль пани çинчен илтсен хуйха ӳкрĕм. Ман пек телейсĕр çын тĕнчере урăх çук та пулĕ, терĕм хама хам... Малти позицире çапăçакансем медаль мар—

темиҫешер орден илсен те тӗлӗнмелли ҫук, ӑна тивӗҫлӗ вӗсем, анчах та ку... ку ман пекех повар вӗт! Ман пекех паранкӑ шуратса, концентрат пӑтти пӗҫерсе пурӑнать! Хӑшпӗр енчен илсен, вӑл манран каярах та тӑрать, темелле. Сӑмахран, вӑл тӗрлӗ йышши «тефтелисене», «отбивнойсене», «бефстрогановсене» кутӑн ҫаксан та пӗҫерме пултараймасть, шашлык ҫинчен ан та асӑн. Анчах хӑй ҫапах та медаль илнӗ — «За боевые заслуги». А мӗн заслуги пулнӑ тетӗр унӑн? Пӗррехинче передовойӗнчен ҫурӑм хыҫне пушӑ термос ҫакса таврӑнать-мӗн те, вӗт вӑрманлӑ ҫырма урлӑ каҫнӑ чух пӗр тӗмӗ айӗнче икӗ фриц лӑпчӑнса ларнине курах кайнӑ ҫак. Ну... тепӗр тыловик хӑраса ӳкме пултарнӑ ӗнтӗ, мӗншӗн тесен фрицӗсем иккӗн, ку — пӗччен пулнӑ, анчах та Вася ҫухалса кайман. Карабинне йӑпӑр-япӑр «наперевес» тытнӑ та, ҫав фрицсем патнерех шуса пырса, ухмаха ернӗ пекех кӑшкӑрса янӑ:

— Руки вверх! Хенде хох!..

Лешсем вара, ниҫталла та тарса ӳкме ҫуккине кура, кӗрхи вӗрене ҫулҫисем пек чӗтресе, аллисене ҫӗкленӗ те: «Гитлер капут, Гитлер капут... плен, плен...» — тесе мӑкӑртатма тытӑннӑ.

Нимӗҫсем хӑйне нимех те тӑвас ҫуккине туйса, пирӗн Вася татах паттӑрланса кайнӑ:

— Вставай! Снимай штаны! — тесе кӑшкӑрнӑ вӑл.

Паллах, фрицсем вӑл мӗн хушнине ӑнланман, вара Вася вӗсенчен пӗрине ӗнсинчен тытса ура ҫине тӑратнӑ та, унӑн йӗмне вӗҫертсе чӗркуҫҫи таранах антарса лартнӑ. Ана кура тепри хӑех ҫавӑн лек тунӑ.

Ӑсне ҫитернӗ вара хӑй, шельмӑскер! Фрицӗсем ҫул ҫинче тарасран тунӑ вӑл ҫавӑн пек, хӑйсен йӗмӗсемпех тӑлласа лартнӑ вӗсене. Ну, унтан иккӗшне те батальон штабне хӑваласа пынӑ та, тепӗр эрнерен полк командирӗ ӑна шӑнкӑрт кӑна медаль тыттарнӑ! Леш фрицӗсем пирӗн командованине пит те кирлӗ сведенисем пӗлтернӗ, тет те, ҫавӑншӑн ӗнтӗ...

Мӗн тӑвас тетӗн — телей!

Ҫакӑн ҫинчен пӗлсен, тупата туршӑн, темиҫе кун хушши темле тӗтре ӑшӗнче ҫӳренӗ пек ҫӳрерӗм эпӗ. Маха ҫав телейӗн ман тӗле пулмалла пулман? Эпӗ те передовойне каятӑп-ҫке, эпӗ те ҫав ҫулпах ҫӳретӗп! Тӗме айӗнче ҫавнашкал тӑнсӑр фрицсем ларнине курнӑ пулсан, эп вӗсене хӳтерсе килме пӗлместӗмччӗ-и? Йӗмӗсе-

не антарса кăна мар, эп вĕсен аллисене каялла çыхса, майĕсенчен вĕренпе кăкарса сĕтĕрсе килнĕ пулăттăм! Çук çав, телей çуках манăн, терĕм кăна вара.

Çакăн хыççăн вăхăт нумаях та иртмерĕ — ман пуç çине тепĕр хурлăх татăлса анчĕ. Пачах та кĕтмен çĕртен, çуллахи уяр кун юр çума тытăннă пекех пулчĕ вăл. Темĕн чухлĕ асап кӳчĕ мана...

Çуллахи наступлени пуçланас умĕн пĕр виçĕ эрне малтан пирĕн ротăна çĕнĕ санинструктор ячĕç. Тĕлĕнсе хытсах каймалла, çав тери хитре тутар хĕрĕччĕ вăл — Сахвине ятлăскер. Пĕвĕпе хăй пысăках та мар, анчах калама çук илемлĕ, тăп-тăп станлăскер. Ун пек хĕр эпĕ, тупата, нихçан та курман! Питçăмартисем панулми пек, тутисем пиçнĕ хăмла çырли тĕслĕ, куçĕ — шăп та шай хура çĕмĕрт, çунса кăна тăрать: çын çине пĕрре пăхсанах çунтарса, кĕллентерсе яма пултарать. Малтанхи хут курсанах мана та çавăн пек çунтарса ячĕ...

Ахальтен мар çав тепĕр чух: чĕрене приказ пама çук, теççĕ. Чăнах иккен! Ну, хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха эсир: таврара кунĕн-çĕрĕн вăрçă кĕрлет, унта та кунта минăсемпе снарядсем çурăлаççĕ, тул çутăлнă вăхăтран пуçласа тĕттĕм пулса ларичченех пĕлĕтре çăханла «юнкерссем» явăнса çӳреççĕ — пуç çине пĕр-пĕр йывăр бомба татăлса анасса кĕтсех тăр, пĕр сăмахпа — вилĕм сан хыççăн йĕрлесех çӳрет, анчах сан чĕрӳ çав вăхăтрах кама та пулин ăстăна пăтратса ямалла, чуна вырăнтан хускатмалла юратса лартать!.. Мĕн тăвас тетĕн? Мĕнпе чаратăн ăна, мĕнле взыскани хуратăн ун çине? Тӳррипех калатăп: нимĕн те тăваймастăн! Хамăн хурлăхлă опыта шута илсе калатăп эп сире куна, мĕншĕн тесен манăн чĕре çавăн пек туса хучĕ те — нимĕнпе те чараймарăм эп ăна.

Кĕскен каласан, ман чĕре çав Сахвине пирки вутçулăмпах çунма тапратрĕ. Ниçта кайса кĕрейместĕп: унăн сăнĕ кăнтăрла та, каç та, хуран çунă чух та, боецсем валли передовойне апат леçме хырăмпа шуса кайнă чух та куç умĕнчех тăрать. Унăн шăпчăк юрри евĕрлĕ сасси те хăлхаран тухма пĕлмест. Ĕмĕрте те пулманччĕ манăн ун пекки! Хайхи, пирвайхи юрату тени, тапранчĕ пулмалла ĕнтĕ...

Хăрушă япала иккен çав пирвайхи юрату!

Ĕçре те кансĕрлеме пуçларĕ мана вăл: пĕринче, ытлашши шухăша кайнипе, пĕр хуран пăтта çунтарса

ятăм, тепринче купăста яшкине çăвара сыпмалла мар тăварласа лартрăм. Иккĕшĕнче те, паллах, старшинаран пите вирлĕ лекрĕ мана...

Пĕр кун иртет çапла, эрне те иртет... Манăн юрату вăйланнăçемĕн вăйланса, хĕрнĕçемĕн хĕрсе пырать, ăна ĕнтĕ халь тин нимĕнле вăй та чарма пултарас çук, пушар насусĕнчен шывпа сапсан та сивĕтес çукчĕ...

Анчах хам никама та нимĕн те шарламастăп-ха. Кама калатăн? Çынсем кулма тытăнасран та хăрамалла... Мĕн калĕç вĕсем кун çинчен пĕлсен?

— Ха! Повар хĕре юратса пăрахнă! Поварăн чĕри яшка пек вĕрет! Ха-ха-ха!..

Сахвинене хăйне те каламастăп, шикленетĕп: эп ăна юратни çинчен каланине хирĕç вăл хăр-хар! кăшкăрса пăрахсан, мĕн тăвас? Çĕр тĕпнех анса каяс пулать вара!.. Тӳсес ĕнтĕ майлăрах самант çаврăнса çитиччен, тетĕп. Çав вăхăтрах чĕре иккĕленсе те илет: ман çине вăл нихçан та çаврăнса пăхас çук пуль çав, ун пек хитре хĕр валли лейтенантсем те, темиçешер орденлисем те темĕн чухлех тупăнма пултараççĕ... А эпĕ кам? Эпĕ пĕтĕмпе те ротнăй повар кăна, Çăпала Иванĕ, çитменнине манăн кăкăрăм та çап-çара, орден мар — пĕр-пĕр значок та пулин çук вĕт...

Çапах та шанчăка çухатас килмест: кам пĕлет, тен, унăн кăмăлĕ ытлашши хаярах та мар пулĕ, тен, ăна чиперех çавăрма пулĕ? Майне, меслетне пĕлес пулать кăна... Анчах наступление мĕнрен, еплерех пуçлас-ши?

Шухăшларăм-шухăшларăм та, тавай-ха, куна туглăрах çитерме тытăнас, эп хăйне юратни çавăнтан палăрма пуçлатăр, терĕм. Ухмах мар пулсан — ăнланатех вăл ăна!

Тытăнтăм вара!

Кашнинчех, Сахвине ман кухньăна котелок çĕклесе пырсанах, эп ăна йăпăр-япăр, черетсĕр-мĕнсĕр ярса паратăп. Ыттисене панă пек-и тата? Асту! Çăпалана хуран тĕпнелле аври курăнми пуличчен чиксе яратăп та чи çăрине ăсса кăларатăп, çара какай! Ăна котелок ăшнелле тӳнтерсен, çăпала хĕррипе шӳрпе çинче çиелтен ярăнса тăракан çăва ăсса илсе ярса паратăп. Ме, çи, çи те — эпĕ хăвна епле савнине сис, тетĕп хамăн ăшăмра.

Анчах... ой, çав «анчах» сăмаха нихçан та каламăттăм!

Тăрăшни кăлăхах пулчĕ вĕт, ахалех сая кайрĕ!

Пĕрре ярса патăм çавăн пек, тепре ярса патăм, чиперех çирĕ манăн савнă хĕр, анчах виççĕмĕшĕнче скандал турĕ хучĕ çав! Хăйне котелок тулли какай, çиелтен сап-сар çу ярса парсаттăм кăна, çав самантрах вăл сасартăк: «Эсĕ, прохвост, мĕн хăтланатăн, кам хушрĕ сана кун пек тума?» — терĕ. Малтанах ăнланаймарăм эпĕ, вăл мана мар, кама та пулин урăххине вăрçнă пек туйăнчĕ, анчах та котелокне ман сăмса патне илсе пырса хаяррăн силлесен, чухларăм вара...

— Эсĕ мĕншĕн мана ыттисенчен раснах çитерме тăрăшатăн? Ытти боецсенчен мĕнрен уйрăм эпĕ? Мĕншĕн эсĕ мана боецсен тӳпине катса паратăн? — тесе кăшкăрса тăкрĕ çак мана. Хĕрсе кайсах, çилленсех кăшкăрать!— Асту, рота командирне пĕлтеретĕп те акă кун çинчен, тыткалĕ вăл сана... Эккей, тупăннă фокусник! — тет.

Алăри пăхăр çăпала шăнкăрт! тухса ӳкрĕ манăн...

Пыр та калаç эс унпа, э? Эпĕ ăна хăйне савнипе пĕтĕм чунтан ыр тăвасшăнччĕ, анчах вăл уншăн... пăскăртма тытăнчĕ мана, рота командирне калассипе хăратма тапратрĕ. Вот тамаша! Пулать те этем çĕр çинче...

Ну ĕнтĕ, хăвăрах чухламалла, кун хыççăн манăн чĕрери пĕтĕм шанчăк пĕрхĕнсе тухса кайрĕ. Мĕн юратăвĕ пулма пултартăр ĕнтĕ çавăн хыççăн?

Шăла çыртрăм та нимĕн те чĕнмерĕм урăх.

— Çил-тăманлă кун çуратнă пуль мана анне, çавăнпа телей çук пуль манăн,— терĕм кăна.

...Анчах йăнăшнă иккен эпĕ. Çавăн пек хурлăхлă вывод тума ытлашши васканă. Пĕтмеллех телейсĕр çын пулман-мĕн эпĕ.

Телей куçа курăнса килмест, теççĕ-çке. Тĕрĕс каланă çавна. Манăн телей те ăнсăртран, пачах та кĕтмен çĕртен йăтăнса тухрĕ. Тĕлĕнсе каймалла!

Акă епле пулчĕ вăл...

Пĕрре, август уйăхĕн вĕçĕнче, пирĕн участокра наступленилле çапăçусем пуçлансан виççĕмĕш кунĕнче, эпĕ, яланхи пекех, малти линири салтаксене апат çитерме кайсаттăм. Ну, окопсене чиперех çитрĕм ĕнтĕ, пурне те пĕрер черкке эрех ĕçтертĕм, какай яшки çитертĕм, унтан термоса çурăм çине майласа çакрăм та каялла кайма тухрăм. Пульăсем ман тавра сăпсасем пек сăрлатаççĕ, утма мар — пуçа çĕклемелли те çук.

Пĕр километр пек хырăмпа шуса кайсан, эп обстрел айĕнчен тухрăм та чиперех тăрса утрăм. Хăрамалли нимĕн те çукчĕ халь, унта-кунта снарядсемпе минăсем çеç ӳккелетчĕç...

Пыратăп ĕнтĕ утса, унталла-кунталла пăхкалатăп. Тип-тикĕс хире снарядсемпе бомбăсем сыснасем пекех чавса пĕтернĕ, кашни темиçе утăмрах воронка, шăтăк та путăк тĕл пулать... Çапăçăвĕсем пит вăйлă пулнăччĕ çав ун чух, пирĕннисем фашистсене калама çук хытă тӳнккерĕç!

Сасартăк çав уй варринче такам хама хушаматпа чĕннине илтех кайрăм:

— Черпаков! Черпаков!

Тĕлĕннипе тăпах чарăнса тăтăм та йĕри-тавралла пăха-пăха илтĕм... Никамах та курăнмарĕ. Мĕн ку, туйăнчĕ-ши мана? — тетĕп. Унччен те пулмарĕ, хайхи сасă каллех илтĕнчĕ:

— Черпаков!..

— Ива-ан! Повар!..

Халĕ уççăнах уйăрса илтĕм: хĕрарăм сасси. Анчах та кам, хăш енчен чĕнет — ăнланаймастăп...

— Кунта! Кунта кил! Часрах!.. — тата тепĕр хут кăшкăрчĕ мана курăнман сын. Эпĕ ăна шырама тытăнтăм, куçа чарса пăрахсах тавралăха ухтаратăп.

Ак тамаша! Пĕр воронкăран Сахвине пуçĕ курăнах кайрĕ. Чунтанах мана кăчăк туртать — кил, кил, тет...

Чĕререн вĕри шывпа сапнă пекех туйăнса кайрĕ. Пит-куç та пĕçерсе илчĕ, çурăм тирĕ те темшĕн сăр-сăр-сăр... турĕ. Шуткă-и-мĕн: Сахвине мана хăй чĕнет! Эп ăна тинех кирлĕ пулнă!

Тăруках çунатсем шăтрĕç пулас манăн: вăшт кăна ыткăнса çитрĕм ун патне. Пăхатăп — тарăн воронка тĕпĕнче икĕ аманнă салтак выртать, вĕсем патĕнче Сахвине тăрмашать...

— Ах, сана курни питĕ аван пулчĕ-ха ку! — терĕ вăл, ман çине шăтарас пек пăхса.— Вĕсем иккĕн, пĕри те утаймаççĕ, эп — пĕччен,ниепле те илсе çитерес çук вĕсене. Пĕрине санăн çĕклесе пымалла пулать. Ăнланатăн-и?

— Ăнланатăп,— терĕм ăна хирĕç,— саншăн пулсан, эпĕ тем тума та хатĕр, эсĕ çеç мана ним выранне те хумастăн, калаçасшăн та мар манпа...

— Ухмах! — лаплаттарса хучĕ çак мана, ырă сă

мах калас выранне.— Маншăн мар куна, аманнисен пурнăçне çăласшăн тăвас пулать!

Каллех выранлă пулмарĕ манăн сăмах. Чип-чиперех, ним сăлтавсăрах ухмах ятне илтрĕм. Хăй çавăнтах мана çине-çине командăсем пама тытăнчĕ:

— Çак плащ-палаткăна часрах сарса хур! Лайăхрах сар! Ку салтакне пуçĕнчен тыт! Хуллентерех! Купăста пуçĕ мар-иç вăл, этем пуçĕ! Вăрт-вартрах çаврăнкала, упа пек ан пул! Кай, ăнăçсăр, санăн аллусене йывăçран тунă пуль!

Пĕтерет!..

Хама çакăн пек хăтăрнă пирки аптрасах ӳкрĕм, ниепле те вăл хушнă пек тăваймастăп. Уншăн вăл мана тата хытăрах хăтăрать...

Мĕн пулса çитетчĕ — пĕлместĕп, анчах çав вăхăтра пирĕн пуç çийĕпе сасартăк фашистсен «мессершмичĕ» çил пек ыткăнса иртсе кайрĕ. Аялтанах вĕçсе иртрĕ — пĕр çĕр метртан та ытла мар пулĕ. Ку çав тери кĕтмен çĕртен пулнипе эпир, хамăра такам пуçран çапнă пек, воронка тĕпне лăпчăнса лартăмăр...

Çапах та «мессер» пире асăрхама ĕлкĕрчĕ пулмалла. Ик минут та иртмерĕ-и тен, вăл калама çук хăвăрт вĕçсе каялла çаврăнса пычĕ. Пирĕн тĕле çитсен, чĕпĕ тытакан хурчкалла пикировать турĕ те пулеметран шатăртаттарчĕ. Пульăсем воронка таврашĕнче пăрçа пекех тăкăнчĕç. Эпир ку вăхăтра каллех çĕр çумне лăпчăнтăмăр...

Анчах та ĕç кунпа пĕтмерĕ-ха. Темиçе минутран фашист çăханĕ каллех таврăнчĕ, татах пикировать турĕ, татах пулеметран сапрĕ. Кăшт тăрсан, виççĕмĕш хут атакăларĕ пире!

Анлантăмăр — ку «мессер», епле пулсан та, пуçĕпех «хупласа хурасшăн» пире. Лектерессе лектерейместех хăй, мĕншĕн тесен эпир кашнинчех воронкăра вăл вĕçсе килнĕ еннелле йăпшăнатпăр, пульăсем тепĕр енне пырса çапăнаççĕ, анчах шăтăкран тухса каясси çинчен шухăшламалли те çук — çавăнтах çапса антарма пултарать.

...Вăхăт иртет, манăн ĕнтĕ часрах ротăна таврăнса каçхи апат хатĕрлемелле, Сахвине те пăлханать, унăн аманнă салтаксене хăвăртрах медпункта илсе çитерсе тыла ăсатас пулать, анчах шуйттан «мессерĕ» пирĕнтен çаплах хăпмасть, çаплах пыра-пыра тапăнать!

Мĕн тăвас? Ниçта кайса кĕрейми тарăхса çитрĕм ĕнтĕ. Май пулнă пулсан, тем туса тăкăттăм эсреле!

Аптранă енне, тавай куна персе пăхас, терĕм... Карабин пур вĕт-ха манăн! Пирĕн дивизире ун пеккисем пулкаланăччĕ, ахаль винтовкăранах ик-виç самолета çапса антарнăччĕ. Ман карабин ыттисенчен каяим? Е эп хам пеме пĕлместĕп-и? Хай, вырăссем калашле, попыткă — не пыткă! Часрах пăшала çавăрса тытрăм та тытăнтăм çакна пеме... Пĕтĕм чĕререн тарăхса, шăла çыртса перетĕп! Пирĕн çине пикировать тума тытăнсанах, тĕллетĕп те — перетĕп, тĕллетĕп те — перетĕп. Пĕрре петĕм, иккĕ петĕм, виççĕ...

Аманнă салтаксенчен пĕри мана: ан пер пустуй, патронсене сая ан яр, пурĕпĕр нимĕн те тăваймастăн, сан карабину — зенитка мар вĕт, тет. Анчах вăл çапла каларĕ кăна, эп тăваттăмĕш хут персе ятăм та, сасартăк ним ăнланмалла мар япала пулса тăчĕ... Пиккене кĕнĕ «мессер» пирĕн пуçсем çийĕпе ши-и-и! шăхăрса иртсе кайрĕ те, эпир пытаннă воронкăран пĕр çĕр аллă-икçĕр метр иртсен, сăмсипе çĕре жач! пырса тăрăнчĕ. Хĕрри çӳлелле çĕкленчĕ, унтан хăрах çунатти çине тайăнса мук-мукăлчак туса илчĕ те çунма тапратрĕ. Çак пĕтĕм ĕç ик-виçĕ çеккунт хушшинчех пулса иртрĕ...

Манăн куç-пуç чарăлса кайрĕ.

Ĕненес те килмест: чăнах-ши ку? Е эпĕ кăнтăр кунĕнчех тĕлĕк куратăп?

— Ваня! Мĕн турăн эсĕ! — кăшкăрса ячĕ çав самантрах Сахвине.

— Курмастăн-им, персе антартăм-çке,— терĕм эп ăна хирĕç мăнкăмăллăн.— Кур, ав епле çунать...

— Ӳкрĕ-им? Ӳкрĕ-им? — хыпăнса ыйтрĕç аманнă салтаксем, воронка тулашĕнче мĕн пулса иртнине курма пултарайманнипе.

— Ӳкрĕ çав! Чул пекех татăлса анчĕ! Ваня персе антарчĕ ăна! — хавассăн кăшкăрса ячĕ Сахвине.

Чухлăр-ха эсир: вăл мана «Ваня» терĕ!..

Тинех эпĕ Черпаков мар, Ваня пулса тăтăм!

Эпир воронкăран сиксе тухса çунакан самолет патнелле чупрăмăр. Анчах ытла çывăхах пыма шиклентĕмĕр: патронсем шатăртатса çурăлма тапратрĕç, хăй те кăвайт пекехчĕ. Ну, кăштах пăхса тăркаларăмăр Сахвинепе иксĕмĕр, унтан: «Мĕн шыранине тупрăн-и? Çав

кирлĕ сана, çăхана!» тесе, хамăрăн аманнă салтаксем патне таврăнтăмăр та вĕсене батальона çĕклесе кайрăмăр.

Чĕре çул тăршшĕпех кăкăртан сиксе тухас пек тапса пычĕ. Пĕлетĕп-çке халь мĕн пуласси́не! Тинех ĕнтĕ мана орден лекет!... Пĕр-пĕр медаль те мар — орден!

Такам систернĕ — ăна пĕлместĕп, анчах та çав касçхинех ман патăма дивизи хаçачĕн корреспонденчĕсем хашкаса чупса çитрĕç.

— Каласа пар, Черпаков юлташ, епле турăн эсĕ ку паттăр ĕçе? — теççĕ.— Пи́тĕ тĕлĕнмелле вĕт-ха ку...

— А мĕн пит тĕлĕнмелли пур унта,— терĕм эп вĕсене хирĕç,— петĕм те — ӳкертĕм! Ӳкрĕ те — çунса кайрĕ, пĕтĕм ĕçĕ те çавă çеç...

Унччен те пулмарĕ, хаçатра ман сăн йăтăнса тухрĕ. «Мессершмита» çапса антарнă гварди рядовойĕ Черпаков Иван», тесе çырнă аяла. Çавăн хыççăн вара... эрне те иртрĕ, те иртмерĕ — мана дивизи штабне чĕнсе илчĕç те орден тыттарчĕç: «Отечественной войны II степени». Генерал хăй тытса чăмăртарĕ ман алла:

— Маттур, Черпаков юлташ, малашне те çавăн пек паттăр пул,— терĕ.

— Служу Советскому Союзу! — терĕм эп ăна хирĕç тулли кăмăлпа.

Эпĕ дивизи штабĕнчен ротăна таврăннă тĕле ман кухня патне пĕр çирĕм çын ытла пухăнса тăнăччĕ: ездовойсем, сапожниксем, çĕвĕçсем, шорниксем, темиçе повар — пурте мана саламлаççĕ, алла тытса чăмăртаççĕ... Вася Котлеткин, хайхи «За боевые заслуги» илни, кăштах сыпса пынă пулмалла та, мана кӳпшек аллисемпе ыталаса илсе чуптумах тапратрĕ:

— Молодец, Ванька! Спаççипах сана, поварсен ятне манран та ытларах чапа кăлартăн, ĕмĕр манмăп куншăн! — тет хăй.

Ыттисем пирĕн çине калама çук ăмсанса пăхса тăчĕç...

Çав хушăра Сахвине те пырса çитрĕ. Ăна асăрхасан, эпĕ хам пата пухăннă тыловиксене юриех ăс панă пек пултăм:

— Ан кӳренĕр, тусăмсем, эсир те кашниех орденлă пулма пултаратăр, паттăр пулăр кăна! Пирĕн Тăван çĕршыв хăйĕн паттăрĕсене нихçан та манмасть...

Сахвине ман çине çав тери ăшшăн пăхрĕ. Иксĕмĕ-

рӗн куҫӑмӑрсем ӑнсӑртран тӗл пулсан, вӑл ҫемҫен кӑна йӑл-л... кулса илчӗ.

Манӑн питҫӑмартисем кӑвар пек пӗҫерсе кайрӗҫ, чӗрем кӑрт-кӑрт-кӑрт тапма тытӑнчӗ.

— Юрататъ! Юрататъ халь вӑл мана! Ахаль пулсан мӗншӗн ҫавӑн пек пӑхтӑр-ха ҫын? Эх, чунӑмҫӑм!..

Эп ҫавӑнтах ун патне чупса пырса, никамран именсе тӑмасӑрах, ӑна ыталаса чуптӑвасси патне ҫитрӗм. Юрать-ха, ухмахланман. Сахвине вӑрҫӑ пуҫланиччен пӗр эрне малтан качча кайнӑ пулнӑ. Фронта вӑл упӑшкипе пӗрлех килнӗ-мӗн.



# Тигр чӗлхи

Стрелковӑй ротӑра пӗр ҫулталӑк ытла пурӑнтӑм эпӗ. Унтан пӗррехинче, кӗр енне, ман пата сасартӑк хамӑрӑн писарь хашкаса чупса пычӗ те:

— Сана батальон командирӗ чӗнет!—терӗ. Тӗлӗнсех кайрӑм... Мӗн тума кирлӗ пулнӑ-ши эп ӑна? Эпӗ... командир та мар, строевик та мар, манӑн пӗтӗм ӗҫ — ҫынсене тӑрантарасси кӑна... Мӗн хӑямачӗ! Шикленнӗ пек те пултӑм: мӗншӗн те пулин ӗнсе хыҫса ярасшӑн мар-и мана? Аплах пулмалла мар пек... Хамӑн ӗҫсене эпӗ яланах йӗркеллӗ туса пынӑ, орден илнӗ хыҫҫӑн пушшех примерлӑ пулма тӑрӑшнӑ...

Нимӗнле ответ та тупайманнипе, тӳсеймесӗр, писарьтен ыйтрӑм:

— Ма чӗннине пӗлместӗн-и, тусӑм?

Анчах та вӑл, мана лӑплантарас вырӑнне, хӑрах куҫне хӗсрӗ те, аяккалла пӑхса, хаштах сывласа ячӗ:

— Паллах ӗнтӗ, ырӑшӑн мар! Штаба унта пирӗн пеккисене мунча кӗртме кӑна чӗнеҫҫӗ... Жалоба панӑ пуль кам та пулсан.

— Ман ҫинчен нимӗнле жалоба та пулма пултараймасть,— пуҫа пӑркаласа илтӗм эпӗ.— Апат-ҫимӗҫ енчен ку таранччен никама та кӳрентермен!

— Кӳрентернӗшӗн кӑна мар, тепӗр чух хӑшпӗрисене ытлашши тутлӑ ҫитерме тӑрӑшнӑшӑн те лектерме

пултараççĕ,— каллех куçне хĕссе илчĕ çак.— Илтнĕччĕ эпир кăштах...

Вăл мĕн пирки сăмах тĕкнине ăнланса, эп унпа урăх калаçса та тăмарăм. Пĕрре çăтăр-р! пăхса илтĕм те, саппуна хывса хурса, çипуçа тӳрлеткелесе, батальон штабĕ вырнаçнă çырма еннелле уттартăм. Хам вара çул тăршшĕпех пуçа çĕмĕрсе пытăм:

— Мĕншĕн чĕннĕ? Мĕн пирки? Нихçан та чĕнменччĕ-çке! Тен, чăнах та кам та пулин элеклесе панă ман çинчен?

Пĕр вунă минутран батальон штабĕн çĕрпӳртне кĕтĕм те, замкомбат умне пырса тăрса, хăюсăртараххăн рапортларăм:

— Капитан юлташ, эсир хушнипе гварди рядовойĕ...

Анчах вăл мана каласа пĕтерме памарĕ, урайĕнчи каска-пукан çине кăтартрĕ те:

— Лар,— терĕ.

Чĕре тинех кăшт лăпланчĕ... Эппин, нимĕн те хăрамалли çук! Начальник тӳрех ларма сĕнет пулсан, ятлама чĕнмен вăл, ырă ĕçпе чĕннĕ.

— Эсĕ, Черпаков юлташ, чаплă повар,— терĕ унтан замкомбат, мана нимĕçсен сигаретне сĕнсе,— ротнăй кухньăра кăна мар, ресторансенче те ĕçленĕ, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ апат пĕçерме пĕлетĕн, теççĕ, хăвăн паттăрлăхна та çителĕклĕ кăтартрăн...

— Служу...— теме пуçланăччĕ эпĕ, анчах вăл мана пӳлчĕ:

— Эпир сана разведчиксем патне куçарасшăн, килĕшетĕн-и?

— Так точнă, килĕшетĕп! — терĕм эпĕ ăна хирĕç, ним шухăшласа тăмасăрах. Ара, хăвна çавăн пек мухтанă хыççăн епле хирĕçсе тăратăн-ха!

— Анчах та асту, вĕсене юрама пĕлес пулать вара, ун пек-кун пулсан, калăпăр, вĕсем заданирен таврăннă çĕре санăн апат сивĕнсе кайнă пулсан е ывăнса килнĕ çынсем валли лĕрер черкке хатĕрлесе лартмасан, вĕсем санăн сывлăхна пăсса хума пултараççĕ. Çакна яланах асра тытас пулать,— калаçăва хутшăнса асăрхаттарма тытăнчĕ штабри писарь.— Питĕ вĕри йĕкĕтсем вĕсем, разведчиксем...

Чухларăм: ку мана кăштах хăратма хăтланать, тăрăхласшăн манран, урăхла каласан, «на пушку» илесшĕн. Çавăнпа та тӳрех татса хутăм ăна хирĕç:

— Ничево, куркаланă хамăн пурнăçра,— терĕм.— Ытлашши хăравçă йăхранах мар, таçта ярсан та, тем хушсан та, аптрассăмах çук.

Йăпăрт кăна замкомбат çине пăхса илтĕм те, вăл кулкаласа ларнине курса, каллех писаре каларăм:

— Астăватăн пулĕ, пĕлтĕр «мессершмита» карабинпран...

— Вăл санăн ăнсăртран çеç пулнă,— парăнмарĕ писарь.

Ку вара мана тарăхтармаллипех тарăхтарса ячĕ! Хăй паттăр çын пулнă пулсан, татах калаçтăрччĕ хуть, атту хăй вĕт шĕпĕн пек кăна, çитменнине суккăр тата, куçлăхсăр тĕмĕ хыçне те тухса лараймасть, çапах та шăлне йĕрет...

— Эсĕ ху çавăн пек «ăнсăртран» пĕр-пĕр самолета персе антар та — кайран калаç! — терĕм çавна, çилĕ килнипе.— Эсĕ мĕн мана разведчиксем патĕнче ĕçлеме йывăр пуласспе хăрататăн?

Тавлашсах каяттăм пулĕ те, замкомбат чарчĕ.

— Шанатпăр сана, шанатпăр, çавăнпа чĕнтĕмĕр...

Анчах эпĕ, хĕрсе кайнăскер, татах персе ятăм:

— Кирлĕ пулсан, эп хам та разведкăна кайса «чĕлхе» сĕтĕрсе килме пултаратăп!

Штабрисем ахăлтатсах кулса ячĕç.

— Ну, куна эс ытлашширех çавăрса хутăн вара, Черпаков юлташ... Загнул пăртак,— терĕ тахăшĕ.

Чăнах та, ку сăмахсем ман çăвартан ытла тăрук тухса кайрĕç ĕнтĕ, кăшт мухтаннă пекрех пулчĕ, анчах та манăн пĕрре каланă сăмахран каялла чакассăм килмерĕ.

— А мĕн? Пултараймастăп, тетĕр-и? Нипоччом та пултаратăп!

— Курăпăр ара, курăпăр, малтанах тавлашмăпăр, туман тиха пилĕкне ан хуç, тенĕ пек,— каллех сăмах тĕкрĕ писарь.

— Кайран, тен, разведчик та пулăн, анчах халь эс вĕсене лайăххрах апат пĕçерсе çитер-ха,— терĕ замкомбат.

— Есть!

...Çак калаçу хыççăн манăн чăнах та разведчик пулас, хама шанманнисене хăçан та пулин чăннипех кăтартса парассăм килсе кайрĕ.

«Эккей,— терĕм ăшăмра,— эпĕ повар пулса служить тунă пирки мана чăн-чăн боец вырăнне те хурасшăн мар... Чимĕр акă, кăтартăп-ха сире хамăн пултарулăха!»

Çынни çавăн пек эпĕ: лăпкă чухне — питĕ лăпкă, анчах хама чĕререн пырса тивертеççĕ-тĕк — нихçан та манмастăп ăна. Çавăн чух батальон штабĕнче хамран тăрăхларах калаçнине те манмарăм вара, асра тытсах пурăнтăм...

...Разведчиксем патне куççан, эпĕ чăн малтан вĕсем мĕнлерех çынсем иккенне сăнама тытăнтăм. Вĕсем кухньăна апат илме пырсан, кашнин çинех витĕр шăтарас пек пăхаттăм. Вĕсем хăйсем хушшинче калаçнисене пĕр сăмах сиктермесĕр итлеттĕм. Мана вĕсем пачах расна йышши çынсем, герой пулса çуралнăскерсем пек туйăннă-çке-ха!

Анчах пурне те паллаcа çитрĕм те, тĕлĕнмелли нимех те çук иккен... Ман пек йĕкĕтсемех, темелле: вăрçăччен пĕрисем заводра ĕçленĕ, теприсем колхозра — хăшĕ конюх, хăшĕ бригадир пулнă, пĕри тата темиçе çул хушши парикмахерскинче майрасен çӳçĕсене кăтралатса пурăннă-мĕн. Халь вара кашниннех кăкăр тулли орден та медаль, шăлкеме пек чăнкăртатаççĕ. Чăн та, задание тухса кайнă чух вĕсене пурне те старшинана парса хăваратчĕç, анчах ахаль чухне вара йăлтăртаттарса кăна çӳретчĕç çав...

Хăйсем çав тери чапа тухнă çынсем пулнă пулин те, пĕртте мăнаçланмастчĕç, пурте калама çук уçă кăмăллăччĕ. Разведкăран таврăнса çывăрса тăнă хыççăн пĕри купăс калать, теприсем хавассăн юрă шăрантараççĕ:

Была бы только ночка,
Да ночка потемней...

Ку юрра вĕсем пуринчен ытла юрататчĕç: каçĕ тĕттĕм пултăрах! Е тата хăйсем каçхине постра тăракан фрица сухари миххипе хупласа, сысна тушкине сĕтĕрсе килнĕ пек сĕтĕрсе килнине аса илсе кулаççĕ. Пĕтĕм тавралăх янăратчĕ çав вĕсем кулма тапратсан!

Пĕр уйăх хушшинче вĕсене икĕ хутчен наградăсем пачĕç. «Чĕлхе» сĕтĕрсе килеççĕ—медаль туянаççĕ, тепре тупса пыраççĕ — орден. Тĕлĕнсе кăна пурăнатăп. Хăйсем те пит чарусăр хăтланатчĕç те ĕнтĕ... Пĕррехинче чип-чипер кăнтăр кунĕнче, çитменнине янкăр уяр, хĕ-

веллĕ кун, тытса килчĕç фашистсен пулеметчикне. Хăйне кăна мар, пулеметне те çĕклесе килнĕ. Ытти нимĕçсем сиссе те ӳлайман çавна, пирĕннисем хамăрăн траншейăсене ыткăнса çитсен тин пеме тытăннă...

Анчах та эпĕ кăшт аяккалла сулăнтăм-ха. Манăн сире хам çинчен каласа памалла-çке. Разведчиксемпе пĕрле пĕр тĕлĕнмелли ĕç туса хуни, «тигр чĕлхи» тытса килни çинчен каласа памалла.

...Çапла, пĕрре пирĕн йĕкĕтсем çавнашкал «ухутана» кайма хатĕрленнине сисрĕм. Сисрĕм те çав тери пăлханма тытăнтăм. Мĕншĕн, тетĕр-и? Мĕншĕн тесен эпĕ вĕсемпе пĕрле разведкăна кайма шутласа хунăччĕ. Пĕр енчен, манăн хайхи пĕркун штабра хама шанманнисене «сăмса шăлса» ямалла, тепĕр енчен, манăн пĕрпĕр боевой ĕç тăвас килекен пулса çитрĕ. Пĕрмай пăсланакан хуран кутĕнче тăни, тĕрĕссипе каласан, йăлăхтарса çитерет вăл...

Кăнтăрлахи апат валеçнĕ чухне эпĕ пĕринчен шăппăн кăна ыйтса пĕлтĕм:

— Кĕçĕр каятăр-и?

— Каятпăр,— терĕ вăл.

— «Чĕлхе» тытма-и?

— Точнă.

— Нумаййăн каятăр-и?

— Пĕр çиччĕн-саккăрăн...

Эпĕ пĕтĕм кăкăрпа хаштах сывласа ятăм.

— Сана мĕн тума кирлĕ ку? — ыйтрĕ разведчик.

— Так, ахалех...

Хăрарăм мар-и хамăн чăн-чăн шухăшсене каласа пама!Ăçтан-ха тӳрех: «Эпĕ те сирĕнпе разведкăна пыма шутлатăп»,—тесе калатăн? Хăвăрах пĕлетĕр, манăн должноçĕ çавăн пекрех-çке... Повар вĕт-ха эпĕ. Ĕне чĕлхи тĕлĕшпе пултаратăп ĕнтĕ, ăна тем тĕрлĕ те пĕçерсе пама пĕлетĕп: пăрçапа та, улма нимĕрĕпе те, çупа та, горчицăпа та, анчах тăшман «чĕлхи» тĕлĕшпе хамăн пултарулăха ку таранччен пĕрре те кăтартайман...

Çапах та, хăюлăх çитертĕм-çитертĕмех: апат валеçсе пĕтерсен, хурана часрах çуса тасатса лартрăм та тӳрех командир çĕрпӳртне чупрăм. Задание тухса каяс умĕн вăл тимлесех карттăна вĕренсе ларать-мĕн, ман çине çаврăнса та пăхмарĕ. Чăнах та çав, ăна çак вăхăтра мĕн тума кирлĕ пулнă повар?

Пĕр минут тăтăм алăк патĕнче, ик минут тăтăм,

унтан пиллěк те иртрě пулмалла... Чěрем хамăн тăнк-тăнк-тăнк! тăвать. А вăл ман çине куç хěррипе те пăхмасть. Вара эпě пěтěм строевой формăпа юсанса тăтăм та:

— Лейтенант юлташ, ыйтма ирěк парсамăрччě,— терěм.

Тинех пуçне ман еннелле çавăрчě çакă.

— Мěн сана?

— Тěрěссипе каласан...

— Тěрěссипе кала çав!

— Тěрěссипе каласан, лейтенант юлташ, эпě кěçěр сирěнпе пěрле разведкăна пыма шутлатăп,— терěм хайхи. Хамăн чěркуççисем çав самантрах сăр-сăр-сăр! туса кайрěç. Акă ěнтě, хăйне çак ответлă вăхăтра килсе кансěрленěшěн ку мана халех пăскăртса кăларса ярать, çиелтен тата пěр виçě черетсěр наряд шаплаттарса хурать, тетěп. Пыр та типсе ларчě.

Анчах лейтенанчě пирěн лайăх кăмăллă çынччě те — ун пек тумарě. Ман çине чăр-р пăхрě... Унтан, пěр-ик минут хушши пулě чěнмесěр ларнă хыççăн:

— Эсě мěн, паян нормăран ытлашширех сыпмарăн пулě те? — терě.

— Никак нет, лейтенант юлташ, ытлашши мар, хамăн нормăна та çынна патăм. Ěненместěр пулсан, хуть те шăршласа пăхăр. Кěрсен те, манран ыхра шăрши кăна кěме пултарать, мěншěн тесен эп ăна мěн пěчěкренпех юрататăп та ялан кěсъере чиксе çӳретěп...

— Апла пулсан, епле-ха эсě кун пек шухăш тытрăн? — каллех ыйтрě лейтенант.

— Мěншěн тесен манăн боевой ěç тăвас килет! — персе ятăм эпě.

— А-а...— лейтенант ман çине пăхса сассăр кулса илчě. Куна курсан, мана чун кěрсех кайрě. Пулчě хайхискер, ман ыйтăва ахаль хăвармасть ку, тесе шухăшларăм савăнăçлăн.

Анчах та савăнма васканă иккен-ха эпě.

Лейтенант тата тепěр хушă ним чěнмесěр пăхса ларчě те çапсах хуçрě мана...

— Шухăшу аван, çапах та вăл шухăша пуçăнтан кăларса пăрах эсě,— терě.— Разведкăна çӳресси — повар ěçě мар. Эсě луччă эпир «чěлхе» тытса таврăннă çěре пěркунхи пек ěне чěлхи шаритлесе хатěрле, пěркун мана вăл питě кăмăла кайнăччě...

Ку сăмахсем мана йĕп-йĕпе тара ӳкерчĕç. Халь çеç вĕри мунчаран тухнă пекех пулса кайрăм. Пĕтĕм ĕмĕт татăлчĕ вĕт манăн! Хапха юпи пек кăнт хытса тăтăм та нимĕн те калаймастăп.

— Ăнлантăн-и? — тесе ыйтрĕ лейтенант кăшт тăрсан, малтанхи пекех мана куçран лăхса.— Ăнлансах çитеймерĕн пулсан, тепĕр хут каласа пама пултаратăп, эп мăн кăмăллă çынах мар...

Сасартăк сисрĕм: манпа вăл хаяррăн калаçнă пек курăнасшăн, анчах хăйĕн куçĕсем пурĕпĕр кулса тăраççĕ. Çавна пула вара эпĕ тепĕр хут хăюланса кайрăм та хам ăшра мĕн пуррине çăтăр-çатăр каласа тăкрăм:

— Лейтенант юлташ, тархасшăн ман ыйтăва хирĕç ан пулăр, ан хуçăр ман кăмăла! Нивушлĕ вара манăн фронтри пĕтĕм пурнăç паранкă шуратсах иртсе каймалла? Эпĕ, мĕн, воин мар-и? Алла пăшал тытма пĕлместĕп-и? Акă, сăмахран, пĕр виçĕ уйăх каялла эпĕ «мессершмита» персе антартăм... Кирлĕ пулсан, эп хуть те мĕнле вут ăшне те кĕрсе кайма пултаратăп! Илсе кайăр мана разведкăна, тархасласа ыйтатăп. Кайран, тен, хăвăрах тав тăвăр мана!

Питĕ витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ каларăм пулмалла...

Лейтенант мана куçран тепĕр хут шăтарас пек пăхса илчĕ те килĕшрĕ.

— Ну, юрĕ эппин,— терĕ,— илсе кайăп сана разведкăна, анчах асту, ун пек-кун пек пулсан...

Вăл мĕн каласшăн пулнине ăнланоа, эпĕ ăна сăмахне пĕтерме те памарăм, пӳлсе хутăм:

— Çук, çук, Черпаков çине эсир чул стена çине шаннă пекех шанма пултаратăр. Анне ячĕпе тупа туса калатăп!

— Курăпăр, тенĕ суккăр çын... — кулса илчĕ лейтенант.

— Курăпăр çав! — кăкăра каçăртсах чеç патăм эпĕ.

Тепрер икĕ сехетрен эпир, маскировочнăй халатсем тăхăнса, гранатăсем илсе, автоматсем валли запаслăх дисксем чиксе, разведкăна кайрăмăр.

Вăрмантан тухса, малти окопсенчен нумай мала шуса иртрĕмĕр те юр çине ним палăрми пулса выртрăмăр. Сăнатпăр. Тĕттĕм пуличчен пирĕн тăшманăн ăçта мĕн пуррине пĕлмелле-çке-ха.

Чылай вăхăт иртрĕ. Унтан сасартăк, пачах кĕтмен çĕртен, нимĕçсен артиллерийĕ ухлаттарма тапратрĕ.

Малтан эпир ку вăхăтлăх артналет çеç пулĕ, тесе шутланăччĕ, анчах та вĕсем, çĕр çăтманскерсем, чăн-чăн артподготовка пуçласа ячĕç. Малти лини таврашĕнче снаряд хыççăн снаряд çурăлать, осколоксем шăхăраççĕ кăна, малалла кайма мар, пуçа çĕклемелли те çук.

— Ырра мар ку, ахăртнех, наступлени тăвасшăн пулмалла,— терĕ манпа юнашар выртакан боец.— Пулмарĕ кĕçĕр разведка!

— Черпаков айăплă,— хушса хучĕ тепри,— урăх никам та мар.

— Мĕншĕн эп айăплă пултăм? — тĕлĕнтерчĕ ку мана.

— Илтмен-им, тухман çын тухсан, яланах тăман тухать, теççĕ.

Ăна хирĕç лайăх кăна тавăрса хурасшăнччĕ те эпĕ, вăхăт пулмарĕ, ĕçсем вĕриленсе кайрĕç. Сулахай енчен пирĕн çинелле икĕ танкпа виçĕ самоходка килни курăнчĕ. Çĕр çĕмĕрсе, тупписенчен пере-пере ыткăнса килеççĕ. Унччен те пулмарĕ, вĕсем хыççăн шур юр çине кăткă пек пехота тапса тухрĕ.

— А ну, ребята, держись! — тесе кăшкăрчĕ пирĕнтен маларах выртакан лейтенант.

Халь ку иртнĕ япала ĕнтĕ... Çавăнпа та пытармасăрах калама пулать: малтанхи самантсенчех çамка çине ай-вай сив тар тапса тухрĕ. Хăрушă пулса кайрĕ. Епле пулсан та, хăнăхман-çке эпĕ. Танкĕсем те ыткăнса килеççĕ, самоходкисем те килеççĕ, пехоти те чупать... Пурте сан çинелле переççĕ, сана таптаса лапчăтасшăн, сан кĕлеткӳне пульăсемпе шăтарса ала пек туса хурасшăн! Акă эс çак самантра чип-чипер пăхса, сывласа выртатăн, анчах самантранах санăн кĕлеткӳ пĕçермен отбивной катлет пек пулса выртма пултарать.

Анчах нумая пымарĕ ку. Юлташсем тăшман еннелле ним хускалмасăр пăхса выртнине куртăм та лăпланнă пек пултăм. Çумри гранатăсене, унтан автоматăн затворне тĕрĕслесе илтĕм, леме лайăхрах пултăр тесе майлланса выртрăм.

Фашистсем çывхарсах килеççĕ. Инçе те мар ĕнтĕ вĕсем, пулсан пулĕ пĕр тăватçĕр метр. Асăрхарăмăр: ӳсĕр вĕсем! Уçăлса çӳреме тухнă пекех килеççĕ, пĕшкĕнмеççĕ те! Пăлхатса янă йытă кĕтĕвĕ пекех шавлаççĕ тата — тем шуйттанĕ кăшкăраççĕ...

— Психически тăваççĕ! — кăшкăрчĕ лейтенант.—

Эп команда париччен никам та ан перӗр! Çывӑхарах килччӗр!

Эпир ӗнтӗ пӳрнесене спусковой крючоксем çинчех тытатпӑр, хуть те хӑш самантра та пеме пуçлама хатӗр... Анчах пересси пулмарӗ. Сасартӑк пирӗн хыçри вӑрманта «катюша» юрласа ячӗ: кӗмсӗр-р... кӗмсӗр-р... Тупӑсем ухлатрӗç. Пӗри, тепри, вуннӑ, çирӗм! Ах, тапранчӗ, ах, тапранчӗ! Пӗр хушӑ хамӑр умра эпир вутпа çулӑм çеç куртӑмӑр. «Катюша» снарячӗсем айне пулнӑ фашистсем вӗри çатма çине хунӑ чӗрӗ кӑртӑшсем пекех ӑшаланма тытӑнчӗç.

Хыçалтан тата темиçе залп пани илтӗнчӗ.

— Çунать! Çунать проклятый! — кӑшкӑрса ячӗ манпа юнашар выртакан боец, сулахаялла кӑтартса.

Пӑхрӑм та курах кайрӑм: пирӗн еннелле килекен пӗр танк çурта пек çунать, тепри хӑяккӑн, ним хускалмасӑр ларать... Иккӗшӗ те пиçнӗ! Самоходкисем каялла тараççӗ, вӗсем тавра унта та кунта пирӗн снарядсем çурӑлаççӗ. Акӑ, малти чарӑнчӗ, лекрӗ пулмалла ӑна, иккӗшӗ вара, гусеницисемпе юра сирпӗнтерсе, курӑнми пулчӗç...

— За мной! — хыттӑн команда пачӗ те лейтенант, юр ӑшӗнчен сиксе тӑрса, танксем патнелле чупрӗ. Эпир паллах, ун хыççӑн...

— Пулать пирӗн «чӗлхе!» — чупнӑ çӗртех кӑшкӑрчӗ лейтенант.

— Пула-ать! — кӑшкӑрчӗ ун хыççӑн тахӑшӗ.

Пӗр çӗр метр пек юлсан, çунман танкран пирӗн çинелле пулеметран сапрӗç. Пирӗн икӗ юлташ çавӑнтах ӳкрӗç. Вӗсене иккӗшне те урисенчен тивнӗ иккен.

— А-а, эсир капла-и? — тарӑхса кайрӑмӑр эпир.— Ну, тӑхтӑр!

Пирӗн телее, çывӑхрах пысӑк лупашка пулнӑ-мӗн, танкран тем чухлӗ персен те, пӗр пуля та лекес çук унта. Аманнисене часрах çавӑнта вырнаçтартӑмӑр та çунса кайнӑ танк хӳттипе малалла шума тытӑнтӑмӑр. Перкелерӗç-перкелерӗç фрицсем, анчах нимӗн те тӑваймарӗç пире.

— Ну, халь пӗтӗмпех пулчӗ,— терӗ лейтенант, çунӑк танк çумне пырса тӑрсан.— «Тигр» йӗри-тавра 9 метр хушши — «мертвое пространство», унта нимӗнле хӑрушлӑх та çук. Шалта ларакансене туртса кӑла-

расси çеç юлчĕ. Вĕсене çунтарса янинчен усси çук, пире «чĕлхе» кирлĕ!

Пурте шухăша кайрăмăр... Мĕн тăвас? Ахаль чĕннипе танкран тухас çук-çке-ха вĕсем, çывăха пыма та кансĕртерех — пулемечĕ ĕçлет вĕсен...

— Ничево, çиччас! — терĕ пĕр боец.

Çавăнтах калпак пысăкăш юр чăмăркки туса хўтлĕхрен сиксе тухрĕ те леш танкăн пăхмалли шăтăкĕнчен пĕррех шаплаттарчĕ.

— Килĕр кунта-а!..

Темиçе самантран эпир танка йĕри-тавра сырса илтĕмĕр. Автоматсем, гранатăсем хатĕр. Ним те чĕнместпĕр. Минут иртет, иккĕ, виççĕ. Унтан танкăн çўлти люкĕ е-ерипен çĕкленме пуçларĕ. Пирĕн лейтенант вăшт танк çине хăпарса тăчĕ... Люк пĕр чышкă кĕмелĕх уçăлсанах вăл унта йăпăрт çеç «Ф-1» граната чиксе хучĕ.

— Кĕмсĕ-ёрт! турĕ те шалта, тĕтĕм палкаса тухса кайрĕ...

Халĕ эпир пурте танк çине хăпарса тăтăмăр. Лейтенант люка кăшт кăна уçса: «Выходи!» тесе кăшкăрчĕ. Анчах ответ пулмарĕ. Вара эпир люка пĕтĕмпех уçса, çўлте ларакан фрица тулалла туртса кăлартăмăр. «Чĕлхе» пулма юрăхсăр иккен вăл — чунĕ тухнă. Иккĕмĕшне сĕтĕрсе кăлартăмăр — вăл та сывламасть. Пăхатпăр — аялта виççĕмĕшĕ, водитель, тĕтĕмпе чыхăнса, авкаланса ларать. Тумтирĕ те çунма тытăннă унăн. Йăпăр-япăр юр çине туртса кăларса пăрахрăмăр та çакна — тытăнтăмăр йăвалантарма, пăс кăна тухса тăрать. Шуйттан! Хăрăлтатрĕ-хăрăлтатрĕ те лăпах шăпланса выртрĕ, ним пĕлми пулчĕ. Ак инкек! Мĕнле тăна кĕртес куна?

Аса илех кайрăм: ман кĕсъере нашатырнăй спирт пурччĕ, кухньăра сĕрĕм тивес-тăвасран эп ăна яланах хам çумра тытнă.

— Халех! — терĕм,— калаçакан пулать вăл манăн!

Пĕрре шăршлаттартăм çак фрица, иккĕ шăршлаттартăм, пуçне юрпа сăтăркаларăм та, куçне уçрĕ хайхискер. Чĕрĕлчĕ пирĕн «чĕлхе»!..

Эпĕ çавăн пек тăрăшнă вăхăтра ыттисем танка пур енчен те пăхса, тĕрĕслесе тухнă иккен.

— Ку каретăпа хамăр пата кайсан аванччĕ те ёнтĕ...— терĕ тахăшĕ.— Пит чаплă пулĕччĕ те...

— А мӗн? Кайма та пултаратпӑр,— терӗ лейтенант, ку шухӑша ҫийӗнчех ырласа.

Нумай та шухӑшласа тӑмарӗ вӑл. Эп чӗртнӗ нимӗҫе хӑйӗн вырӑнне кӗрсе ларма хушрӗ, хӑй те унпа пӗрле кӗчӗ. Унта вӑл тапӑлнӑ темле пралуксене сыптаркаланӑ та — танк хускалчӗ кайрӗ. Эпир савӑннипе «урра» кӑшкӑрса ярсах хӑпарса лартӑмӑр танк ҫине.

Анчах ытла савӑнмаллах пулман-ха. Пирӗн вӗт хамӑрӑн батарейӑсем ҫинеллех пыма тӳр килнӗ-ҫке. А вӗсем пӗр залп парсанах пире танкӗ-мӗнӗпех сывлӑшалла сирпӗнтерме пултарнӑ. Ҫавӑнпа та эпир тутӑрсене кӑларса сулма тытӑнтӑмӑр.

— Парӑнатпӑр! — тетпӗр ӗнтӗ...

Унччен те пулмарӗ, ҫакна хыҫалтан нимӗҫсем асӑрхарӗҫ пулмалла та вӗсем те тупӑсенчен пеме тапратрӗҫ. Хамӑрӑннисем ҫине те шансах каймастпӑр, кӗҫ-вӗҫ тӳнклеттерме тытӑнма пултараҫҫӗ. Лару-тӑру, хай каларӑш, пит те кӑсӑкланмалла пулса тӑчӗ пирӗн!

Юрать, лейтенант ӑс ҫитерчӗ.

Малти люка уҫрӗ те вӑл:

— Кузькин, Черпаков, Миронов! Халех сиксе анса танк умӗн чупӑр!

Сиксе антӑмӑр та, вӑл хушнӑ пек, танк умӗн ыткӑнса пыма тытӑнтӑмӑр: ҫӗлӗксемпе суллатпӑр, кӑшкӑратпӑр. Танк пирӗн хыҫҫӑн чӑнкӑртаттарса пырать...

Мӗн тетӗр эсир? Чип-чиперех ҫитрӗмӗр хамӑр пата! «Чӗлхе» те пулчӗ пирӗн, «тигр» та тытса пытӑмӑр. Таврара кам пулнӑ — пурте чупса тухрӗҫ пире хирӗҫ. Ҫав тери шӑв-шав тапранса кайрӗ. Мӗнле кӑна ырламарӗҫ пуль пире!

Халӑх хушшинче леш батальон писарьне асӑрхарӑм та, вӑл пӗркунне хамран тӑрӑхласа калаҫни аса килсе кайрӗ. Тӳрех утса пытӑм та ҫавӑн патне:

— Куртӑн-и? — терӗм мӑнкӑмӑллӑн, пӗрре танк ҫине, тепре вилнӗ ҫын тӗслӗ пулса кайнӑ фриц ҫине кӑтартса.

— Куратӑп-ҫке,— терӗ вӑл именерех.— Маттур, маттур эсир... Ним каламалли те ҫук урӑх...

— Тоттӑ ҫав! А эс мана: разведчика пултараймастӑн, терӗн пӗркун. Ҫапала Иванӗ тем тума та пултарӗ вӑл, хӑшпӗрисем пек мар!

Писарь тек нимӗн те калаймарӗ...



# Мыскараллă кун

Пулаççĕ тепĕр чух этем пурнăçĕнче çавăн пек мыскараллă кунсем...

Ирхине чип-чиперех, ырă кăмăлпах вăранатăн, мĕншĕн тесен кĕçĕр питĕ лайăх çывăрнă эсĕ: ни усал тĕлĕксем курман, ни пăрçа-хăнкăла тавраш çырта-çырта тарăхтарса пĕтермен сана çĕр каçа, анчах çапах та, тăнă-тăманах кўренмелли сиксе тухать те, вара каç пуличченех тупăнса лырать мĕн те пулин. Инкек çине синкек, йĕпе çине сапа!

Хĕрĕх виççĕмĕш çулхи сентябрь уйăхĕнче, Днепр патнелле çывхарса пынă чух, эпир кашни кунах çирĕмвăтăр километр малалла каяттăмăр. Кăшт, темиçе сехетлĕхе, чарăнса тăратпăр, лашасене кантаратпăр, хамăр çерçи ыйхине çывăрса илетпĕр те каллех — атя! пошол! Малалла, хĕвеланăçнелле! Ĕретлĕн апат пĕçерсе илме те май килместчĕ час-часах. Пĕçерни те нумай хутчен харама кайрĕ: çиекен çук, пурте таçта малта, тăшмана хăвалаççĕ. Хуса çит-ха вĕсене! Хамăр пĕрмай вăрманпа пыратпăр тата, çулĕсем ним латти çук...

Пĕррехинче çанталăк ним майсăр пăсăлса кайрĕ. Каçалапа кăвак тўпене кивĕ салтак шинелĕ тĕслĕ пĕлĕтсем хупласа илчĕç, çил тухрĕ, çумăр кастарма тытăнчĕ. Часах вăрманта пăч-тĕттĕм пулса ларчĕ,

çамкаран тукмакпа пырса çапсан та — çапаканне паллаcа юлас çук. Пирĕн обоз чарăнса ларчĕ. Çакăнтах çĕр выртатпăр, терĕç.

Ну, мĕнех ĕнтĕ, выртмалла-тăк — выртмалла, пĕччен мар, халăхпа. Эпĕ хамăн кĕсрене тăвартăм та кухня урапинчен кăкарса утă патăм. Хам плащ-палаткăпа пĕркенсе хуран çумне тайăнтăм... Паллах ĕнтĕ, тĕлĕрсе кайнă. Тул çутăлма пуçланă чух вăранатăп та — манăн кухня патĕнче... кĕсре çук! Ак тамаша! Унталла пăхрăм, кунталла — ниçта та курăнмасть. Часрах сиксе тăр та — шырама. Обоз тăрăх чупса тухрăм (ман кĕсре камăнне те пулин утă вăрлама кайман-ши, тесе)—çук! Çынсенчен ыйткаласа пăхрăм — никам та курман. Апайтурах! Пĕтетĕп вĕт капла, пĕр-пĕччĕнех тăрса юлма пултаратăп, тетĕп, мĕншĕн тесен ыттисем лашисене кӳлме те пуçларĕç ĕнтĕ. Пĕтĕм пит-куç пĕçерсе кайрĕ. Шуткă-им çак сĕм вăрманта пĕччен юлма? Çынни эпĕ хăраканскерех мар, çапах та шикленмелле: ку таврара нимĕçсен сапаланчăк ушкăнĕсем нумай çӳреççĕ, текен хыпар пурччĕ. Аçталла та пулин тарса тухмалли май шыраççĕ, тет. Сасартăк çакăн пеккисене тĕл пулсан? Çук, çук, халăхран ним тусан та уйрăлма юрамасть...

Хашкакан пуличченех чупса шыраса çӳрерĕм кĕсрене. Хамран хама тар шăрши кĕрекен пулса çитрĕ. Сахалтан та пĕр пилĕк километр чупрăм йĕри-тавралла. Çук!.. Йĕп пекех пулнă ман кĕсре!

Обоз патне каялла пырса тухрăм та юлташсене ӳкĕтлеме тытăнтăм:

— Тархасшăн, хăшĕ те пулин ман кухньăна çаклатса кайăр!

Ӳкĕте кĕрекен никамах та пулмарĕ. Хамăрăн та йывăр, лашасем ывăннă, теççĕ. Хăвăн лашунах шыраса туп, ниçтах та кайман-тăр вăл, тăрать пулĕ-ха пĕр-пĕр тĕм хыçĕнче...

Шалт аптраса ӳкрĕм. Хай каларăш — ни туди, ни сюди. Ывăнса çитнĕскер, пĕр тунката çине лартăм та шухăша кайрăм. Мĕн те пулин шухăшласа тупасах пулать-çке!

Çав вăхăтра обоз патне хамăрăн полк почтальонĕ, шĕвĕр сăмсаллă, хĕп-хĕрлĕ сăн-питлĕ, яланах хаваслă Вакула, юланутпа çитсе тăчĕ.

— Аçтан килетĕн, тусăм? — тесе ыйтрăм çакăнтан.

— Тылран килетĕп,— тет.

— Çул çинче, ăçта та пулин, лаша курмарăн-и?

— Лаша нумай курнă эпĕ, ак халь те обозĕпех куратăп,— кулса илчĕ Вакула.

— Çук, эпĕ хамăн лаша çинчен ыйтатăп. Çĕрле вĕçерĕнсе кайнă, эсрелĕ, хăмăчĕ-йĕнерчĕкĕпех... Аптрал халĕ...

Вакула самантлăха шухăша кайнă пек пулчĕ, сăмси вĕçне кăтăрт-кăтăрт хыçса илчĕ те, манран:

— Çÿренскер, хушка çамкаллăскер-и? Хăмăчĕ çĕнĕ, сар сăрапа витнĕскер... Çапла-и? — тесе ыйтрĕ.

— Тĕп-тĕрĕс! Çапла! — савăнса кайрăм эпĕ.— Хăш тĕлте куртăн эсĕ ăна? Инçе-и?

— Ытла инçех мар, пулсан пулĕ пĕр километр. Çырмара, тăрăхла уçланкăра, курăк çисе çÿрет...

Чун кĕрсех кайрĕ мана. Вакулăран тек ыйтса та, унпа каласса та тăмарăм. Тавтапуç, тусăм, çăлтăн эс мана, ĕмĕрне те манмăп куншăн, терĕм те, тÿрех çул тăрăх тыл еннелле ярăнтартăм. Теприсем кросра та ун пек чупмаççĕ пулĕ. Хирĕç пулакансем, тĕлĕннипе, каяллла çаврăна-çаврăна пăхаççĕ ман çине.

— Ухмаха ернĕ-им ку? — тенине темиçе хут та илтрĕм эпĕ.

— Дезертир мар-и, фронтран тармасть-и? — терĕ тата пĕри.

Анчах вăл маншăн халĕ пурĕпĕр мар-и? Хуть те мĕн калаччăр ман çинчен, çăва патне, манăн пĕр ĕмĕт: часрах хамăн кĕсрене тупса кÿлесчĕ те юлташсенчен юлас марччĕ!

Акă, çул сулахаялла пăрăнчĕ, акă вăл çырманалла анать. Акă тăрăхла уçланкă... Ăçтарах çÿрет-ши ман кĕсре? Ну, тытсассăн пĕрре паратăп ĕнтĕ эп ăна, вĕрентетĕп çĕрле хуçана пăрахса тарма! Нумайччен астăвĕ паянхи куна.

— Машка! Машка!..

Унталла чупса кайрăм, кунталла, лерелле... Чĕнетĕп, шăхăратăп, кăшкăратăп. Ман сасса илтсен, вăл яланах кĕçенсе яраканччĕ. Анчах та халь нимĕнле ответ та пулмарĕ. Ниçта та çук ман лаша. Пĕр сехет пуль ухтартăм çырмара — усси пулмарĕ, тата ытларах ывăнса çитрĕм кăна. Те такам тытнă ăна, те хăй таçталла кĕрсе кайнă. Мур пĕлет-и...

Çуранах танккарăм обоз тăнă çĕрелле. Çул тăршшĕ-

пех кухньăна камран та пулин кăкарса малалла илсе каяссн çинчен шухăшласа пуçа çĕмĕрсе пытăм, анчах патне çитрĕм те — пат! — юпа пек хытса тăтăм. Обоз çук та иккен, тапранса тухса кайнă, пĕр ман кухня çеç тăрать сĕм вăрманти шăтăк-путăк çул çинче.

Мĕн тумалла халь?.. Тарăхса, кӳренсе, пĕтĕм чĕрепе вĕчĕхсе, макăрса ярас патнех çитрĕм.

— Кĕтес пулать ĕнтĕ тылран пĕр-пĕр машина килессе. Унсăрăн ниçта та хусканаяс çук...

Кухня çине хăпарса лартăм та, ним тума аптранă енне, чĕлĕм мăкăрлантарма тытăнтăм. Чыхăна-чыхăна, пирус хыççăн пирус туртатăп. Паллах, эпĕ кухня çине те, пур продуктăсем çине те ал сулса, обоза çуранах хăваласа çитме пултарнă, анчах та боевой пурлăха пăрахни салтакшăн каçармалла мар çылăх, чăн-чăн преступлени пулать-çке, юрамасть ун пек тума.

— Салам, Çăпала! — тени хăлхана кĕрсе кайрĕ сасартăк. Пуçа çĕклесе пăхрăм та, хам умах юланутсемпе икĕ боец çитсе тăнине куртăм. Пĕрин пуçне бинтласа лартнă, тепри сулахай аллине çыхса мăйĕнчен çакса янă. Малти линирен таврăнаççĕ курăнать. Лашисем вара калама та çук тĕреклĕ, слонсем пекех, хӳрисем кăна мулкачăнни евĕр кĕске. Тӳрех тавçăрса илтĕм: вырăс лашисем мар кусем, леш «брабансон» тенисем, Бельгири йăх.

— Мĕн пуçна усса ларатăн? — ыйтрĕ манран вĕсенчен пĕри.

— Хурлăха лекрĕм-ха, — терĕм ăна хирĕç. — Хуть те, аптранă кăвакал пек, кутăн кайса чăм.

— А мĕн пулчĕ вара ун пекех?

— Ларса юлтăм çак вăрманта пĕр-пĕччен, никам пурăнман утрав çинчи пек...

Эпĕ вĕсене хамăн инкек çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа патăм. Ман калава итлесе пĕтерсен, вĕсем пĕрре ман çине, тепре пĕр-пĕрине куçран пăхса илчĕç. Пĕр хушă нимĕн те чĕнмерĕç, унтан:

— Юлташа пулăшас пулать пулĕ? — терĕ пĕри теприне.

— Эпĕ те çавăн пекех шутлатăп, — ответ пачĕ лешĕ. — Парас ăна çак фриц лашисене, кӳлсе кайтăр...

Ой, çак сăмахсене илтсен, манăн чĕре мĕнле тапма тытăннипе итлесчĕ сирĕн! Савăннипе ним тума пĕлеймерĕм, ниçта кайса кĕрейместĕм çав!

— Ӑнах-и? Ӑнласах калатӑр-и, юлташсем?!

— А мӗн, ӑн пулмасӑр тата!— терӗ аллине мӑйӗнчен ҫакнӑ боец.— Эпир вӗсене ҫул ҫинче тытса утлантӑмӑр, пирӗн мар вӗсем. Хамӑрӑннисем нимӗҫсен пӗрпӗр обозне аркатсан тарнӑскерсем пулмалла. Куран, хӑмӑтсемпех... Тыт та — кӳл! Медсанбата эпир кунтан ҫуран та ҫитме пултаратпӑр, пирӗн урасем сывах вӗт.

Вӗсем пӗр харӑсах лашисем ҫинчен сиксе анчӗҫ.

— Ну, тем пысӑкӑш спаҫҫипӑ сире, тӑвансем!

Ҫав тери тав тӑвас килсе кайрӗ манӑн вӗсене. Тем кӑларса парӑттӑм!

— Хырӑмсем выҫӑ мар-и сирӗн? Манӑн кӑлпасси те, консерва та пур, пыра чӳхемелли те тупӑп,— тесе сӗнтӗм ҫаксене.

— Кӑшт ҫырткаласан кансӗрлесех каймасть пулӗ,— килӗшрӗҫ вӗсем.

— Халех хӑналатӑп!

Лашасене йӑпӑрт-япӑрт кӳлсе тӑратрӑм та кухня ҫумне ҫыхнӑ ещӗкрен мӗн пуррине пурне те туртса кӑлартӑм.

— Ҫийӗр, юлташсем, ӗҫӗр, сирӗншӗн пулсан нимӗн те шел мар! Эсир мана ҫав тери пысӑк хурлӑхран хӑтартӑр вӗт...

Тепӗр ҫур сехетрен боецсем ерипен тылалла уттарчӗҫ, эпӗ кухня ҫине хӑпарса лартӑм та тилхепене тытса карт! туртрӑм.

— Нно! пошол! — терӗм. Ши-и! шӑхӑртӑм тата.

Лашасем... вырӑнтан та хускалмарӗҫ. Хӑлхисене епле урлӑ ярса тӑнӑ — ҫаплипех тӑраҫҫӗ, хӑнк та тумаҫҫӗ.

— А ну, трогай! — тесе кӑшкӑртӑм та тепӗр хут, каллех тилхепене кӑрт-карт турткаласа илтӗм.

Пурӗпӗр хускалмаҫҫӗ! Мӗн хӑямачӗ! Мӗнле саботаж ку? Нивушлӗ гитлеровецсем хӑйсен лашисене те фашистла воспитани панӑ — совет ҫыннисене хирӗҫ пымалла? Апла пулсан, эп сире халех ак урӑхла воспитани паратӑп!

Ҫавӑнтах пӗр лайӑх кӑна хурама туратти хуҫса илтӗм те ҫурӑмӗсем тӑрӑх темиҫешер хут сӗвӗнтертӗм. Тӑпӑрт! анчах тапса сикрӗҫ хайхискерсем. Вырӑсла пӗлмен пирки вырӑнтан хускалман иккен вӗсем. Анчах патака часах ӑнланса илчӗҫ.

Ну, пыратӑп ӗнтӗ вӑрманпа... Пӗчченех. Ни малта,

ни кайра никам та çук. Шăп. Çапăçу кĕрлевĕ таçта малта, питĕ инçетре илтĕнет. Тен, вунă çухрăм та пулĕ. Фрицпа Ганса хăвалатăп та хăвалатăп. (Лашасене çавăн пек ятсем патăм эпĕ.) Кайсан-кайсан пĕр уçланка тухрăм та сасартăк хамран сылтăм енче çав тери тĕлĕнмелле япала курах кайрăм...

Ман еннелле пĕр аллипе хутаç çĕкленĕ, тепĕр аллипе мăкла пуçлă ĕне çавăтнă старик утса килет, ун хыççăн виçĕ нимĕç утаççĕ... Чăн кайри—винтовкăпа, анчах вăл ăна хулпуççинчен çакман, кĕпçинчен тытса сĕтĕрсе пырать.

Мĕн мурне пĕлтерет ку япала? Виççĕн пĕр старике конвойласа пыраççĕ-и? Ахăртнех, вăл партизан пулĕ?.. Сăмах майĕн каласан, вĕсем мана та тытас, тейĕç?

— Ну, çук, шалиш... Чĕрĕнех паранассăм çук-ха, çитменнине кунта тăшман йышăннă территори те мар! — шухăшларăм эпĕ.

Çав вăхăтрах хайхи старик, мана асăрхаса, мĕн вăйĕ çитнĕ таран кăшкăрса ячĕ:

— Боец, боец! Ан кай-ха, тăхта! Пĕр сăмах кăна...

Эп лашасене чарса тăратрăм та часрах карабина тытса нимĕçсем çинелле тĕллерĕм.

— Ха-альт! Хенде хо-ох!..

Нимĕçсем тăпах чарăнса аллисене çĕклерĕç, кайри хăйĕн винтовкине те пăрахрĕ. Старик ĕнине вĕренĕпе сĕтĕре-сĕтĕре чупрĕ ман патăмалла.

— Хăтар мана, тархасшăн, çак наянсенчен! — тесе кăшкăрать хăй.

— Ăçта илсе каяççĕ вĕсем сана?—хаяррăн ыйтрăм эпĕ, карабинна нимĕçсем çине тĕллесех тăрса.— Тыткăна-и?

— Çук, мана мар,— терĕ старик хашка-хашка.— Вĕсем хăйсем тыткăна лекесшĕн... Гитлер капут, где плен та где плен, теççĕ! Виçĕ кун çӳретĕп ĕнтĕ вĕсемпе вăрманта, шалт йăлăхса çитрĕм... Ниепле те хăпмаççĕ манран. Пĕр хутаç сухари пурччĕ, веç çитерсе ятăм, виçĕ хут ĕне суса сĕт патăм. Çисен уйрăлса кайĕç-ха, тесеттĕм, анчах та çук вĕт — çаплах ман хыççăн сĕтĕрĕнсе пыраççĕ...

— Эсĕ ху кам пулатăн вара? Ăçта тĕл пултăн вĕсене?

— Кам пулам-ха эпĕ? Вырăс çынни, колхозник... Эсир кунталла çитсен, хамăра фашистсем вĕлерсе пĕте-

ресран пурте вăрмана тухса тартăмăр. Ӳплесем туса пурăнтăмăр. Унтан ман ĕне çухалчĕ. Ĕне шырама кайрăм та, çаксем тĕл пулчĕç... Плен... плен, теççĕ...

Маншăн халь ĕнтĕ пĕтĕмпех паллă пулчĕ. Ку нимĕç салтакĕсем — пирĕннисем çапса аркатнă пĕр-пĕр полк е дивизи юлашки. Тăнсăр сурăхсем пекех çухалса кайнă, выçса çитнĕ, тыткăна парăнса вилĕмрен çăлăнасшăн...

— Илсе кай вĕсене хăвăнпа,— ӳкĕтлерĕ мана старик каллех.—Мĕн тăвас ман вĕсемпе, хăвах шухăшласа пăх-ха...

— Юрĕ,— терĕм старике,— çак самантран вĕсем манăн пленнăйсем пулаççĕ. Штаба кайса леçетĕп.

Эп çапла каласанах старик сăхха ячĕ.

— Тав турра, тинех çăлăнтăм явăлсенчен!

Эп алăпа султăм та, шăнса кӳтнĕ, ыйту палли пек кукăрălса ларнă нимĕçсем ман кухня патне пычĕç.

— Форвертс! Малта пырăр! — хушрăм çаксене.— Каялла çаврăнса пăхмасăр пырăр!

Те ăнланчĕç вĕсем мана, те ăнланмарĕç, ăна пĕлместĕп, анчах та эп хушнине тĕп-тĕрĕс туса пычĕç, сăмах та чĕнмерĕç.

Пыратăп ĕнтĕ малалла. Уçланкă пĕтрĕ, каллех вăрмана кĕрсе кайрăм. Çулĕ кунта аван, сарлакаччĕ. Кайсан-кайсан, çырма хĕррине пырса тухрăм. Çакăнта вара манпа тата тепĕр мыскараллă япала пулса тăчĕ.

Сăртран анса çитесси инçе те юлманччĕ — сасартăк хамран пĕр çĕр метрта, çул хĕрринче, темиçе нимĕç салтакĕ тăнине курах кайрăм. Полнăй формăпа, мăйĕсенчен автоматсем çакнă. Ман çине шăтарас пек пăхаççĕ.

— Ак хайхи... Тинех лекрĕм пулас! — шухăш вĕçсе илчĕ те пуçра, хам сисмесĕрех тилхепене кăрт-карт! турткаласа илтĕм. Ман лашасем тăпăрт! тапса сикрĕç те малалла — анаталла ĕнтĕ — ыткăнтарчĕç кăна. Те хăйсен халăхне палларĕç, мур пуçĕсем, тем пек чарма хăтлансан та чарăнмарĕç, нимĕçсем çинеллех илсе кайрĕç мана. Тепри пулсан, паллах, кухня çинчен сиксе анса вăрманалла пĕрĕхмелле, анчах эпĕ хăракан çын мар çав. Нимĕçсем патне çите пуçласанах пĕтĕм вăйран çухăрса ятăм:

— Сдава-айсь! Бросай оружие! Хенде хо-ох!

Пĕри, малти, çул варрине тухрĕ те хăрах аллине

çĕклерĕ, ыттисем вырăнтах тăчĕç. Вĕсем тĕлне çитсен, лашасем те тăпах чарăнчĕç манăн.

— В чем дело? Мĕн кирлĕ сире? — тесе кăшкăртăм çакăн çине хаяррăн. Анчах, тĕрĕссипе каласан, хамăн çав вăхăтра пĕтĕм çанçурăм пĕрре сивĕнсе, тепре тарласа кайрĕ... Хăвăрах ăнланмалла: эп — пĕччен, вĕсем — пĕр кĕтӳ. Пурте хĕçпăшаллă тата.

— Ми плен... Германьски зольдат плен... Кушайт нет... Колотно,— мăкăртатса илчĕ нимĕç.

— Аха-а, эсир те çавăн йышшисемех иккен,— шухăшларăм та вара эпĕ, хăрасси-тăвасси тӳрех иртсе кайрĕ.

Çав вăхăтра манăн паçăрхи нимĕçсем те, лашасем ĕрĕхсе кайсан татăлса юлнăскерсем, çитсе тăчĕç. Тытăнчĕç кусемпе палкама, хур аçисен кĕтĕвĕ какăлтатнă пекех туйăнса кайрĕ, ним ăнланма та çук. Палкарĕç-палкарĕç те, иккĕш-виççĕшĕ вăрманалла кĕрсе кайрĕç.

— Кусем плена пыма килĕшмеççĕ эппин,— терĕм вĕсем çине пăхса. Унтан, малалла каяс тесе, тилхепене тытсаттăм, анчах çул çине малтан тухса тăраканни каллех аллине çĕклерĕ те:

— Не ходи, Иван... Зейчас много зольдат плен...— терĕ.

Чăнах та, вăрмантан кĕçех пĕр хĕрĕхĕн тухрĕç. Апайтурах, мĕнлисем кăна çукчĕ вĕсем хушшинче! Шăлсăррисем те, сухалĕ шăтманни те, хăрах куçли те, шакла пуçли те — веçех хайхи «тотальнăйсем», сыввичирли, ватти-вĕтти çине пăхмасăрах мобилизациленисем. Тата ĕмĕрне те пичĕсене çуман пулмалла, хуп-хура çав, çĕр айĕнчен сиксе тухнă шуйттансем тĕслĕ!..

Мĕн тăвас кусемпе?

Пăхса тăтăм-тăтăм та:

— Сдавай оружие! — тесе кăшкăртăм.

Вĕсем каллех пĕр-пĕринпе пакăлтатса илчĕç те автомачĕсене ман кухня çине пыра-пыра хучĕç. Пĕр лав автомат тиерĕм вĕт! Çухатса пĕтересрен вĕренпе çыхсах лартрăм.

— А ну, теперь стройся! — команда патăм кун хыççăн.— Юлашки хут салтаксем пек пулăр хуть! Атту сирĕн çине пăхма та йĕрĕнмелле!

Командир пекки те тупăнчĕ, йĕркелесе тăратрĕ çак сурăх кĕтĕвне.

— Форвертс! Малалла! — каллех команда патăм эпĕ, кухня çине хăпарса тăрса.

Тапранчĕ хай манăн «войско». Ӳсĕреççĕ, сунасласççĕ, уксахлаççĕ, хыçкаланаççĕ... А эпĕ пур — тек кăшкăркалатăп:

— Йĕркеллĕрех утăр! Хăвăртрах! Марш!

Тепĕр сехетрен çаксене чип-чиперех хамăрăн дивизи штабне илсе çитертĕм. Самăй штаб патне çитеспе юриех ик-виçĕ хутчен «хенде хох!» тесе кăшкăрса, пурне те аллисене çĕклеттертĕм — интереслĕрех тума.

Ну, кулчĕç те вара штаб таврашĕнчисем! Хырăмĕсене тыта-тыта, антăхса кайса кулаççĕ.

— Ак сана Çăпала Иванĕ! Пултарнă, шельмă, пăх-ха ăна!..

— Яланах мĕнле те пулин номер туса кăтартать вăл, — теççĕ хăйсем.

Вĕсемпе пĕрле эпĕ хам та култăм.

Сире вара кун çинчен мухтанас-тăвас шутпа мар, ахальтен çеç каласа патăм. Хам енчен нимĕнле паттăрлăх та пулмарĕ вăл кун, анчах мыскарисене çителĕклех куртăм çав...



# Мунча

Тепринче тата манпа ака мёнле истори пулса иртрё. Пёр енчен — тарахмалла, тепёр енчен — кулмалла истори, тес пулать. Çав вахатрах тата саванмалли те пулчё.

Днепр урла каçсан, эпир белоруссен пёр пысак ялёнче чаранса таттамар. Октябрь уйахё пуçланна пулин те, çанталак питё лайахчё, пёрмай хёвел пахать, аша, çил-мён çук... Пёр хуша кунта ытла вайла çапаçусемех пулмарёç те, самаях лапкан пурантамар. Анчах пирён йёкётсен — разведчиксен — çав-çавах ерçӳ çукчё, вёсем пёрмаях заданисене каятчёç те тепёр чух ик-виç кунтан тин тавранатчёç.

Пёррехинче, темлерен, пурте килте пулчёç çавсем.

— Паян, атьсемёр, мунча хутса кёретпёр! — терё старшина ирхи апат хыççан.— Пёр анкартинче тёрёстёкел мунча тупрам эпё.

— Ашши пама та пулать-и? — ыйтрё тахашё.

— Хуть те антахса кайиччен çапан!

— О! Апла пулсан, тавай, хутас!

— Хутас!..

Разведчиксем вёсем çав тери тусла халах вёт. Мён те пулин тума шут тытсан, карр! пуханаççё те çав ёçе

наччасра туса хураççĕ. Халь те çавăн пекех пулчĕ: пĕрисем вутă тупса татса çурчĕç, теприсем шыв çĕклеме тапратрĕç, иккĕшĕ вăрмана милĕк çыхма кайрĕç.

Ман хурансенче кăнтăрлахи апат пиçиччен мунча пулса та çитнĕ.

— Эс те кĕретĕн пуль? — ыйтрĕ манран старшина, кухньăна пырса тухсан.— Çапăнма юрататăн вĕт-ха?

— Епле пултăр-ха тата? Паллах, юрататăп! — терĕм.— Анчах та манăн чăн юлашкинчен каймалла пулать пулĕ ĕнтĕ, ма тесессĕн каçхи апат хатĕрлемелле...

— Ничево,— терĕ вăл,— ĕлкĕретĕн, ăшши те, шывĕ те нумай, пурне те çитмелле. Таса кĕпе-йĕм хăваратăп эп кунта сан валли.

— Тавтапуç!

Унтан эпĕ пурне те апат çитерсе ятăм, шыв ăсса пырса хурансене çуса тасатрăм, каçхи апат пĕçерме вутă хатĕрлерĕм... Вăхăт самаях иртрĕ. Кайран вара хамăн трофейлă автомата хулпуççинчен çакрăм та (хĕçпăшалсăр эпир пĕр утăм та тумастпăр) мунча еннелле уттартăм.

Мунчи хамăр чарăнса тăнă килтен чылай инçетре, ял хĕрринчи пĕр анкарти вĕçĕнче, çурта пек тӳрĕ ӳсекен çамрăк шурă хурăнсем хушшинче ларать-мĕн. Хурăн çулçисем саралнăччĕ ĕнтĕ, хĕвел çутинче вĕсем ылтăн пек йăлтăртатаççĕ. Анкарти хыçĕнчи тӳрем улăхра пысăках мар кĕтӳ çӳрет. Çав улăх варрипе пĕчĕк кăна юханшыв лăпкăн шăнкăртатса выртать, ун леш енче— пĕр çур километрта — вăрман, вăл та ылтăн тум тăхăннă ĕнтĕ, шухăша кайнă пек, ним хускалмасăр тăрать. Аçталла ан пăх — пур çĕрте те чуна çав тери йăпатакан кĕрхи илем...

Мана тăван кил, хам çуралса ӳснĕ çĕршыв аса килсе кайрĕ.

— Эх, хăçан таврăнмалла пулĕ-ши унта? Хăçан çакăн пек хамăр мунчара çапăнмалли вăхăт çитĕ? Нумаях юлмарĕ те-ха ĕнтĕ...

Çакнашкал шухăшсемпе эпĕ мунчана кĕрсе кайрăм. Унта никам та çук иккен, пурте çăвăнса тухса кайма ĕлкĕрнĕ.

— Çурăм çуса яракан кирлĕччĕ те... юрĕ-çке, уншăн хама ирĕк! — терĕм.

Салантăм та, чăн малтан çине-çине ăшши парса, питĕ вăйлă тарларăм. Мунча вĕри пулнине питĕ шутсăр

юрататăп çав эпĕ, ку енчен хамăрăн асаттене хывнă пулмалла. Астăватăр та пулĕ, вăл мунчара ăшши парса тултарса çапăнма тытăнсан, никам та тӳссе тăраймастчĕ вĕт, пурте тухса таратчĕç! Эпĕ те çавăн манерлĕрех... Пĕрре çапăнтăм, иккĕ çапăнтăм, унтан пахчана тухса пĕр кана курăк çинче пăсланса выртрăм... Ах, ырă-çке! Унтан каялла кĕтĕм те тапратрăм çăвăнма... Шывĕ нумай, вĕри... Пуçа ик-виçĕ хут çурăм, унтан пĕтĕм шăмма-шакка кăпăкласа лартрăм — ниçта пĕр ӳт татки курăнмасть, мамăк кĕрĕк тăхăннă пек!.. Фронтра кун пек мунчасем ытла час-часах тĕл пулмаççĕ-çке, пĕрре май килнĕ чух ырă курас, терĕм ĕнтĕ...

Анчах çав вăхăтра маншăн пачах та кĕтмен япала пулса тăчĕ: мунча тулашĕнче сасартăк темскер кĕрс! кĕрс! кĕмсĕрт! турĕ те, мунча чӳречи чăнкăр-р вăркăнса тухса кайрĕ...

Мĕн шуйттанĕ? Мĕне пĕлтерет ку? Ниçта та ним те çукчĕ-çке?

— Кĕрс! кĕрс! шăтăр-шарт! — турĕ каллех. Мунча хăйне чун кĕнĕ пекех чĕтренсе илчĕ, маччаран манăн тап-таса çуса тасатнă пуç çине шăпăр! тăпрапа тусан тăкăнчĕ...

— Пĕтрĕм! Ак сана мунча! Вĕри мунча выранне тип мунча!

Пĕррех сиксе тухрăм тулалла...

Хăлхана самолет сасси кĕрсе кайрĕ:

— Ăррр... ăррр...

Пăхатăп — сывлăшра, шăп ман пуç тăрринче, нимĕççен «хейншелĕ», хайхи, «турчка» текенни, вĕçе парать! Ху-уллен вĕçет, пĕр выранта тăнă пекех...

— Кĕрс! кĕрс!

— Кĕмсĕрт!..

Шуйттан пуçĕ, çĕр çинче никама та сиен тумалли тупайманнипе улăхра çӳрекен пĕчĕк кĕтӳ çине гранатăсем ывăтать иккен. Тупнă вĕт «объект»! Пирĕн выльăхсене те пулин вĕлерсе хăварасшăн, çăхан! Ăнран тухса кайнă мĕскĕн ĕнесемпе пăрусем ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ, тискеррĕн мĕкĕрсе унталла та кунталла ыткăнаççĕ, виççĕшĕ-тăваттăшĕ вилнĕ е аманнă пулмалла, улăх варринче выртаççĕ.

Ы-ых, çилĕ килсе кайрĕ манăн! Чышкăсем хăйсемех чăмăртанчĕç, шăлсем шăтăртатса илчĕç... анчах мĕн тăватăн-ха ăна? Нимĕн те тăваймастăп! Тăратăп

ухмах пек пăхса... Хам çаппа-çарамас, ӳт çинчи супăнь кăпăкĕ типсе хытса ларма пуçларĕ, тата ытла ăшах та мар тес пулать. Анчах, мунчана кĕме шикленетĕп ĕнтĕ: паклаттарĕ те пĕрре, патĕнчех кукăрăлса выртăн!

Унччен те пулмарĕ, çак «турчка» пулеметран шатăртаттарчĕ. Темиçе пуля ман таврашрах çĕре тăрăнса тусан сирпĕтрĕ...

Аяккалла тапса сикрĕм вара, мĕн тăвас тетĕн? Чипчипер курса тăнă çĕртех вилсе выртни е аманни кама кирлĕ вăл? Ăçта та пулин пытанас пулать кунтан! Анчах ăçта пытанас-ха? Йĕри-тавра тип-тикĕс, пĕр шăтăкпутăк та çук, пĕр лакăм та! Пульăсенчен хăтăлма май пулĕ-ха хуть, анчах та вăл эсремет каллех гранатăсем ывăтма тытăнсан? Тен, унăн бомбăсем те пур, кам пĕлет ăна?

Хăвăрах чухлатăр ĕнтĕ, манăн шухăшласа тăма вăхăт пулман... Эпĕ çатан карта урлă яшт! сиксе каçрăм та юханшыв еннелле вăркăнтăм кăна — çат-çат-çат-çат... Хыçалта татах кĕрĕслетрĕ, татах шатăртатрĕ... Кĕç малта пăтранчăк шывлă лупашка пуррине асăрхарăм. Те тарăн вăл, те ăшăх, ăна-кăна шутламарăм, часрах чупса çитрĕм те лап! выртрăм çавăнта... Çуллахпа, шăрăх чух, кунта ăшăпа аптранă кăвакал чĕпписем ыр курнă пулмалла та ĕнтĕ, анчах халь мана та юрарĕ. Лайăхах вырнаçрăм — çывăхрах граната мар, бомба çурăлсан та осколоксем тивес çук мана. Ку та темех тăрать ун пек чух!

Выртатăп ĕнтĕ хашкаса... Хĕрсе кайнăскер, малтан нимĕнех те сисмерĕм, анчах та шывĕ сивĕ иккен. Алурана çатăрах тытма пуçларĕ. Туятăп — нумаях тӳссе выртаяс çук. Ытларах выртсан, пăсăлма та пулать, мур илесшĕ!

Нимĕç тата пĕр-икĕ хутчен печĕ те шăпланчĕ... Хуллен кăна пуçа çĕклесе пăхатăп... «Хейншель» улăх çийĕн тепре çаврăнчĕ те хĕвеланăçнелле çул тытрĕ. Киле каять... Выльăхсене вĕлерсе, амантса пĕтерчĕ те — чиперех, лăпкăнах каять халь! Никам та тивмест ăна, никам та кансĕрлемест! Эх, ирсĕр!..

Эп лупашкаран сиксе тухрăм. Ну... ним пытармасăрах калас пулать: хам çине пăхма та хăрушăччĕ çав! Тăп-тăр лапра вĕт! Лупашкинче шывран ытларах йăлмака пулнă та... Çав вăхăтра кам та пулин курас пулсан, кулсах вилмелле манран! «Ну, Çăпала-а, пи-ит

лайăх çăваннă иккен эс мунчара! Тепĕр сысна çури те кун пекех вараланаймасть!» — тейĕччĕç мана.

Тĕрĕс калана пулĕччĕç!

Анчах эп хам çинчен шухăшламарăм. Эпĕ «турчка» çинчен куç илеймесĕр тăтăм. Темĕн тĕрлĕ те ылхантăм ăна. Вăл инçетрен инçете кайса пырать, часах куçран та çухалать акă... Епле мăшкăл! Епле тарăхмалла ку!

Ним тăвайманнипе, чунăм пӳлĕнсе çитнипе, лач! суртăм та, каялла, мунча еннелле чупрăм.

— Тепре ăшши парса лайăххрах хĕртĕнес те тасалкаласа часрах ротăна таврăнас...

...Нумай та каяймарăм — сулахай енче самолетсем хыттăн кĕрлени илтĕнчĕ. Камăн-ши кусем? Каллех фашист çăханĕсем-ши?.. Çук иккен, хамăрăн! Хамăрăн! Вăрман хыçĕнчен хĕрлĕ çăлтăрлă икĕ «хурчка» çиçĕм пек вăркăнса тухрĕç те тӳрех хайхи «турчка» çинелле ыткăнчĕç.

— Ерр... кĕрр... ерр... кĕр...

Иккĕшĕ ик енчен пĕр харăс пырса тапăнчĕç фашиста. Пĕри çӳлерехрен, тепри аяларахран... Тапратрĕç пулеметсенчен çунтарма! Кун пек пуласса кĕтмен тăшман унталла пăрăнма тăчĕ, кунталла — çук, шалиш!

— Аха-а, лекрĕн-и, бандит! — кăшкăрса ятăм эпĕ, çав тери хĕпĕртесе кайса.— Тин вĕçерĕнеймĕн пирĕн аларан!..

Унччен те пулмарĕ, вут хыпса та илчĕ çакна. Малтан çулăм курăнчĕ, унтан хура кăвак тĕтĕм палкаса тухрĕ... Çав самантрах ун айĕнче шурă чăмăркка курăнчĕ — летчикĕ парашютпа сикрĕ ĕнтĕ...

— Пулчĕ! Капут! — такам илттĕр тенĕ пекех кăшкăртăм та вара эпĕ, мунча еннелле тата хытăрах чупрăм...

— Тытатăпах ку çăхана! Чĕрĕллех тытса килетĕп!..

Мунчана кĕнĕ-кĕменех хам тăрăх ик-виç курка шыв ятăм, унтан, васканипе, çара ӳт çинех брюки, пуртенкке чĕркемесĕрех ată тăхăнса ятăм та, автомата çĕклесе, каялла сиксе тухрăм.

Парашютист вăрман çинелле анать... Часах йывăçсем хушшине кĕрсе куçран çухалма та пултарать. Васкас пулать манăн! Эпĕ мĕнле чупнине хăвăрах чухламалла. Пĕлместĕп, тен, эпĕ нихçан та ун пек хытă чупман пулĕ...

Эпӗ вӑрман патне ҫитеспе парашютист чӑнах та курӑнми пулчӗ. Анчах куншӑн эпӗ пӑшӑрханмарӑм: пӗлетӗп вӗт-ха, парашютран ытла тӑруках вӗҫерӗнсе пытанма ҫук. Мана урӑххи тарӑхтарчӗ: кунта шурлӑх пуҫланать иккен... урасем путма пуҫларӗҫ! Анчах ним тума та ҫук, пурпӗрех малалла каймалла, тӑшмана тытмаллах манӑн. Тӗмеске ҫинчен тӗмеске ҫине, тунката ҫинчен тунката ҫине сиксе, тепӗр чух чӗркуҫҫи таранах кӗрсе ларса, вӑрмана ҫитрӗм. Вӑрманӗ ытла ҫӑрах мар иккен—чылай инҫетри курӑнать. Маншӑн ку аван пулчӗ-ха...

Вӑрмана кӗрсен, пӗр икҫӗр метр та чупмарӑм пулас — йывӑҫран ҫакӑннӑ сенкер парашют курӑнса та кайрӗ хайхи. Йывӑҫ ҫумӗнче ҫын мӗлки тӗрмешет: ахӑртнех, парашют стропписенчен часрах вӗҫерӗнме тӑрӑшать-тӗр.

— Сто-ой! Ха-альт!..— кӑшкӑрса ятӑм эпӗ.

Фашист, паллах, нимӗн те чӗнмерӗ. Йывӑҫ хыҫне пытанчӗ те ман еннелле умлӑн-хыҫлӑн виҫӗ хут печӗ. Пӗр пули хампа юнашар йывӑҫах пырса тиврӗ.

— Чанк! — терӗ те йывӑҫ хуппине вистесе кайрӗ.

«Аха-а, эс капла эппин-ха, парӑнма шутламастӑн пулать! — терӗм тата ытларах тарӑхса.— Юрӗ апла пулсан!..»

— Шатӑрр! — тутартӑм автоматран.

Пӗр хушӑ шӑп пулчӗ. Эп малаллах пыратӑп: пӗр йывӑҫ патӗнчен тепӗр йывӑҫ патне... Унтан нимӗҫ татах печӗ ман ҫинелле. Эпӗ те хирӗҫ петӗм... Вӑл перет—эпӗ перетӗп.

— Сдавайсь! Ха-альт! — кӑшкӑртӑм каллех.

Анчах та ҫак нимӗҫ епле пулсан та хӑтӑлатӑпах тенӗ пулмалла. Чупать те чупать вӑл, йывӑҫсем хушшинче вӗлт те вӗлт кӑна тӑвать унӑн кӗлетки. Эпӗ — ун хыҫҫӑн... Чухласа илтӗм: унӑн пистолетӗнче патронсем пӗтнӗ, тин ӗнтӗ вӑл мана нимӗн те тӑваяс ҫук та, тарса ӳкесшӗн...

Ҫук, фриц, хӑтӑлаймӑн!..

Чылай хӑваламалла пулчӗ ҫакна. Чупатӑн-чупатӑп та автоматран ҫунтарса илетӗп, унтан каллех чупатӑп. Патронсем пур-ха манӑн, ӗнер кӑна диска туп-тулли авӑрланӑччӗ!

Ҫав вӑхӑтра урасем каллех путма тытӑнчӗҫ: татах шурлӑх пуҫланчӗ. Куратӑп — фашист шурлӑха пӗҫӗ

кăкĕ таранах кĕрсе кайрĕ, путасран аллисемпе сывлăшран тытма хăтланнă пек хăлаçланать. Кĕçех манăн та ун хыççăн кĕрсе кайма тивет. Каллех вараланмалла пулать! Тарăхни-мĕнĕпе вара тепре чарăнса тăтăм та лайăх кăна тĕллесе шатăртаттартăм...

Фашист аллисене тăрук çӳлелле çĕклесе илчĕ те, вăрăммăн çухăрса ярса, малалла тирĕнсе кайрĕ. Пиçрĕ хайхискер!

Тепĕр минутран, шĕвĕ пылчăка пур еннелле сирпĕнтерсе, ун патнелле чупса çитсе тăтăм.

— Цурюк, эсрелĕ, каялла! — автоматпа султăм ун çинелле.

Ман тăшман, этем сăнне çухатмаллах вараланса пĕтнĕскер, ура çине тăма пикенчĕ, анчах çавăнтах ӳкрĕ. Аманнă ĕнтĕ, тăраймасть.

— Мой нога нет...— йынăшса ячĕ хăй.

Уринчен тивнĕ иккен. Утаймасть. Мĕн тăвас-ха кунпа? Тыткăна лекнĕ чĕрĕ тăшмана лачакара пăрахса хăвармастăп ĕнтĕ! «Чĕлхе» вĕт вăл! Епле паха «чĕлхе» тата! Летчик!..

Нумай шухăшласа тăмасăрах, çухавирен çавăрса тытрăм та çакна, шурлăхран типĕрех çĕре сĕтĕрсе кăларса хутăм.

— Нога...— каллех йынăшса ячĕ вăл.

— Кăтарт, хăш тĕлте? — тетĕп.

Вăл чĕркуççинчен çӳллерех тĕллесе кăтартрĕ. Ăна икĕ уринчен те лекнĕ пулнă. Ним тума та çук, хăйĕн аялти кĕпине çурсах суранĕсене çыхса ятăм. Анчах та ку нимех те мар-ха. Манăн ăна ротăна илсе çитермелле, унтан штаба ăсатмалла вĕт-ха! Таврара никам та çук... Ирĕксĕрех çак ним майсăр вараланса пĕтнĕ фашиста хамăн йăтса каймалла пулчĕ. Паллах, вăл мана çул çинче кансĕрлесрен эпĕ унăн аллисене каялла çыхса лартрăм. Тăшман мĕн шутланине ăçтан пĕлетĕн! Пычĕ вара ман хулпуççи çинче сысна тушки пек силленсе. Йывăр тата хăй. Юрать-ха, хамăн вăй пур та, аптрамарăм...

Вăрмантан тухнă чух ман пата хамăрăн ротăри йĕкĕтсем чупса çитрĕç. Пирĕн «хурчкасем» «хейншеле» çапса антарнине вĕсем те курнă-мĕн, вĕсем те çак парашютиста тытма васканă пулнă.

Хамăр йĕкĕтсем мана епле мухтани çинчен каламастăп ĕнтĕ, вăл ахалех пуллă. Вĕсем çавăнтах йывăç тураттисенчен наçилкке турĕç те нимĕçе ун çине хурса йăтса кайрĕç. Эпĕ вара, тепĕр хут мунчана таврăнса, тулли кăмăлпа, питĕ лайăх çăвăнса тухрăм. Анчах эпĕ лачакара йăваланни çинчен пĕлсен, юлташсем манран нумайччен кулса пурăнчĕç...




# Чечек çыххи

Юлашкинчен хам авланни çинчен каласа парам тата сире...

Вăрçă пĕтнĕ хыççăн эпĕ киле тăруках таврăнмарăм, виçĕ çула яхăн сверхсрочнăйра пултăм. Командирсем юрататчĕç те мана шав ӳкĕтлетчĕç:

— Тепрер çул юл ĕнтĕ службăра! Ăçта васкатăн? Килте сана арăму кĕтет-и, ачу-пăчу пур-и? — тетчĕç.

Старшина званине çитерчĕç, офицерсен столовăйĕнче начальник помощникĕ турĕç, ĕç укçи те лайăх тӳлесçĕ. Васкамарăм вара, служить турăм та турăм. Пурĕпĕр мар-им, хуть те ăçта ĕçлесен те — çĕршыв залли!

Анчах пĕр-ик çултан анне киле чĕнме пуçларĕ: ватăлатăп ĕнтĕ, кил-çуртăмăр пушă пек туйăнать, санпа пĕрле кайнисем тахçанах таврăнса арлă-арăмлă, ачаллă-пăчаллă пулса пĕтрĕç, манăн çеç кин те, мăнуксем те çук, çавăншăн питĕ кӳренетĕп, тет...

Шел пек туйăнчĕ карчăка. Хăçантанпа пĕччен пурăнать вĕт. Атте 1941 çултах, Мускава хӳтĕленĕ чух, пуçне хунă, аппан хăйĕн çемйи пур, эпĕ те килтен кайни нумай пулать.

Таврăнтăм вара. Çуркунне, çутçанталăк илемлĕ ешĕл тум тăхăнсан, çарансем çинче чечексем çурăлма тытăннă вăхăтра çитрĕм. Ну... паллă ĕнтĕ, анне çав тери

хĕпĕртерĕ, сăра турĕ, тăвансем пыра-пыра кайрĕç, хăйсем патне те чĕнчĕç. Йăлине хăвăр пĕлетĕр.

Çапла ик-виç кун иртрĕ кăна, анне мана авлантарасси çинчен калаçма тытăнчĕ. Вăхăчĕ çитрĕ ĕнтĕ, çирĕм улттă çине пусрăн, атту тата ват хусах ячĕ тухĕ, текелет.

Ăна хирĕç тăруках нимĕн те каламарăм. Кулкалатăп çеç:

— Халь те тиркеççĕ пуль ĕнтĕ мана,— тетĕп.

Çав вăхăтра, утта тухиччен, пирĕн тăрăхра «пухăсем» йышлă пулаççĕ: Ишлей пуххи, Ишек пуххи, Храути пуххи, Мамăш пуххи... Çуллахи ярмăрккăсем ĕнтĕ вĕсем. Хăшпĕр çĕрте вĕсене çимĕк теççĕ пулас.

— Хамăр ялта кăмăла каяканни çук пулсан, пухăсенче лайăхрах пăхса çӳре,— вĕрентет мана анне.

— Лайăхраххине тĕл пулсан, вăрласа килес-и? — каллех кулатăп эпĕ.

— Вăрлама саккун çук-ха вăл, ун пек тăвас мар, анчах пĕрре паллашсан, кайса калаçма юрамасть-им? Сан пек каччăнах тиркес çук-ха,— тет анне.

— Юрĕ, шыракалăп. Пĕр-пĕр чалăш куçли тупăнĕ-ха...

Ман хыççăн пĕр эрнерен хамăн ача чухнехи тусăм пулнă Христофор та çартан таврăнчĕ. Шкулта вĕреннĕ чух эпир ăна «Христофор Колумб» тесе чĕнеттĕмĕр, ма тесессĕн вăл çырмари пĕвере кĕпе çумалли валашкасене пухса «флот» тума юрататчĕ. Эпир пĕр çыранта индеецсем пулаттăмăр, унăн «флочĕ» çине ухăсемпе переттĕмĕр, вăл испанецсен командирĕ пулса пире тапăнатчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çак Христофор флота лекнĕ те чăнах та Америкăра пулса курнă иккен. Ик-виçĕ кун хушши каласа кăтартрĕ вăл Америка çинчен, хăй сура-сура вăрçать; пуринчен ытла унта негрсене этем вырăнне хуманни тарăхтарнă-мĕн ăна.

Анчах ку сăмах майĕн кăна-ха.

Çак «Колумб» та ман пекех хусахчĕ. Ăна та амăшĕ авлантарасшăнччĕ. Ман аннерен те ытларах хистетчĕ:

— Ĕç çине тухиччен кин тупнă пултăр ман валли!

Хайхи, тытăнтăмăр çакăнпа пухăсене çӳреме. Ятарласа хĕрсем тупас тесех мар, халăхпа пĕрле пулма, вăл савăннине курма. Ну... хĕрсемпе калаçма та хирĕçех пулман ĕнтĕ. Каччăсем вĕт.

Чăн малтан Ишлее кайрăмăр. Христофорăн кунта аппăшĕ пур, почтăра ĕçлет . Иртерех çитнипе вăл мана ун патне илсе кĕртрĕ. Хăна тукаларĕç пире. Эпир сĕтел хушшинче ларнă чух темле икĕ хĕр пырса кĕчĕç. Пĕри — сап-сарă, пысăк кăвак куçлă, вырăсла тумланнă, тепри — хурарах сăнлă, куçĕсем те хура хурлăхан пек, пĕвĕпе сарринчен лутрарах, ялти пек тумланнă: кĕрен тутăр, шап-шур катанпир кĕпе, симĕс пурçăн саппун, уринче хура туфли. Иккĕшĕ те çав тери кăмăла каймалласкерсем...

Пире паллаштарчĕç.

— Тоня,— терĕ сарри, пире алă парса.

— Вера,— пуçĕпе сулса илчĕ хурараххи.

Вĕсене те сĕтел хушшине лартрĕç. Эпир ĕнтĕ ку хĕрсемпе сăмах-юмах пуçласа ярасшăнччĕ, анчах Христофор аппăшĕсем патне татах эпир палламан çынсем пырса кĕчĕç те, калаçасси пулмарĕ. Вара эпир ярмăрккăна кайса çаврăнса çÿрес терĕмĕр.

— Атьăр пирĕнпе,— чĕнтĕмĕр хĕрсене.

Вĕсем килĕшрĕç. Урама тухсан, Христофор саррипе юнашар утрĕ, эпĕ — хурараххипе. Хĕрсем енĕпе моряксем хăюллăрах çав — Христофор тÿрех ыйтса пĕлме тытăнчĕ:

— Åçтисем пулатăр эсир, хитре хĕрсем? Пĕлме ирĕк парсамăрччĕ...

— Эп кунтисемех,— терĕ Тоня.

— Åçта ĕçлетĕр?

— Почтăра, сирĕн аппупа пĕрлех, телефонисткăра ĕçлетĕп.

— Эсир тата? — ыйтрăм эпĕ те Вера тенинчен.

— Çĕньялсем...

— Ĕçлетĕр-и?

— Ĕçлемесĕр кам çăкăр çиет?—темшĕн Вера хăйĕн юлташĕ çине чăрр... пăхса илчĕ. Унăн илемлĕ пит-куçĕ çинче вăрттăн кулă палăрчĕ.

— Секрет эппин?

— Ним секречĕ те çук. Колхозра ĕçлетĕп.

— Мĕнле ĕçре? Сирĕн пек çамрăк пикесем ку чухне фермăсенче ĕçлекен...

— Çук, унта мар. Пожарникре ĕçлетĕп.— Вера, хăхĕн хитре тутисене тутăр вĕçĕпе хупласа, сасăпах кулса илчĕ. Тÿрех сисрĕм: улталать ку, анчах сисмĕш пултăм.

— Пур йышши пушарсене те сӳнтеретӗр-и вара?— ун куҫӗнчен пӑхса ыйтрӗ Христофор.

— Пурне те,— терӗ Вера.

— Калӑпӑр, пӗр-пӗр каччӑн чӗри ҫунма тытӑнсан, ӑна та сӳнтерме пултаратӑр-и?

— Ун пеккинех сӳнтерсе курман та, анчах пит кирлех пулсан, сӳнтерме пулать те пулӗ.

— Пултармалла пек ҫав...

Чылай ҫӳрерӗмӗр ҫакӑн пек калаҫкаласа, кӑмӑллӑн кулкаласа. Ҫав хушӑрах хӗрсене грецки текен мӑйӑр илсе ҫитертӗмӗр, вӗсемпе пӗрле карусель ҫине ларса ҫаврӑнтӑмӑр, цирк курса тухрӑмӑр, унтан тухсан кремсода ӗҫрӗмӗр.

Ун пек чух вӑхӑт иртни сисӗнмест вӗт: каҫ пулма та пуҫларӗ.

— Ну, вӑхӑта лайӑх irttернӗшӗн тавтапуҫ сире, манӑн каяс пулать,— терӗ Вера, аллинчи сехечӗ ҫине пӑхса илсе.— Сыв пулӑр...

— Чимӗр-ха, мӗншӗн пит час?

— Ултӑ сехетре пирӗн колхоз машини каять. Машинран юлсан, ҫуран утмалла пулать...

— Ан васкӑр ӗнтӗ! — Хам сисмесӗрех, ҫакна ик аллинчен те ярса тытрӑм.— Ҫӳрӗр кӑштах!

— Ҫук, ҫук... Ан та ӳкӗтлӗр...— ман ҫине ҫав тери ӑшшӑн пӑхса, пуҫне пӑркаласа илчӗ хӗр.

— Эппин, тата хӑҫан курӑп-ха сире?—чӗрем сикме тытӑннине туйса ыйтрӑм эпӗ.— Ҫитес вырсарникун Мамӑш пуххине пымастӑр-и?

— Пӗлместӗп... Тен, пыратӑп та-и...

— Эппин, тӗл пулатпӑр? Тупатӑп эп сана!

— Халӑх нумай пулать те унта, ӑҫтан шыраса тупӑн?

— Эс карусель патне пыр!

— Каруселӗ пулмасан?

— Епле пулмасть? Пулать!

— Ну, сывӑ пулӑр...— Вӑл мана юлашки хут куҫӗпе ҫунтарса илчӗ те, татах сехечӗ ҫине пӑхса, халӑх хушшине кӗрсе кайса ҫухалчӗ.

— Тарчӗ пулать? — кулса илчӗ Тоньӑна хулӗнчен тытса тӑракан Христофор.— Эх, эсӗ те ҫав... кавалер! Хам пулсан, ниепле те вӗҫертессӗм ҫук...

— Нимех те мар,— терӗм эпӗ,— вӗҫернеймӗ-ха!

Сисетӗр пуль ӗнтӗ, ҫак хура хӗр ман чӗрене хытах

хускатрĕ. Киле таврăннă чух та куç умĕнчех тăчĕ вăл, çĕрле тĕлĕкре те курнăччĕ, ир тăрсан та тӳрех ăна аса илтĕм. Хам унăн ятне пĕлетĕп те-ха ĕнтĕ... Паллах, пожарник пирки юри каларĕ вăл. Хĕрсен йăли çавăн пек вĕт: хăйсем çинчен ытла тăрукках каласа памаççĕ... Тепĕр тесен, вăл ăçта тата кам пулса ĕçлени пурпĕр мар-и? Çынни лайăх пултăр! Ытти — тарам.

Эрнипех шухăшласа пурăнтăм çак Вера çинчен. Хăçан çитĕ-ши ку вырсарникун? Тӳсме çук курас килет вĕт... Христофора кун çинчен тĕп-тĕрĕссипе, ним пытармасăрах каласа патăм. Анчах вăл кулчĕ çеç:

— Швартовать * туса лартрĕ эппин сан чĕрӳне! Полундра, ** старшина!..

— Ан кул, санăн хăвăн та ĕçсем çавăн пекрех-ха,— терĕм ăна хирĕç.— Çак эрне хушшинче Ишлее мĕншĕн виçĕ хут кайса килнине чухлатпăр!

— Аппа патне кайрăм...— каллех кулчĕ вăл.

— Асту, аппу патне пулмасăр!

Вырсарникун ир-ирех тухса кайрăмăр Мамăша. Эпир çитнĕ чух ярмăркки тин çеç пухăнма пуçланăччĕ-ха. Тӳрех карусель патне пырса тăтăмăр. Вера курăнмарĕ.

— Улталанă сана хура куç,— йĕкĕлтесе илчĕ Христофор.

— Пулма пултараймасть! — терĕм ăна хирĕç.

— Пултарать çав; пĕлетĕн-и, вырăссен çавăн пек такмак пур: не влюбляйся в черный глаз, черный глаз — обманчив...

Чăнах, мана хама та Вера улталанă пек туйăнма пуçларĕ. Вуник сехет çитрĕ, пĕрре... Темиçе хут та çаврăнса пытăмăр карусель патне — ман хура куç пурпĕр курăнмарĕ. Çиллĕм те килме пуçларĕ: мĕнле тивĕçпе кун пек турĕ вăл? Мана, гварди старшинине, хăйĕнпе çав тери ырă кăмăлпа калаçнă çынна...

Çӳресен-çӳресен, Христофорпа иксĕмĕр малтан каласса татăлнă вырăна тата тепĕр хут пытăмăр та, карусель тавра тăракан çамрăксем хушшинче эпĕ сасартăк Вера майлăрах хĕре асăрхарăм: çавăн пекех çаврака питлĕ, хуп-хура куçлă... Анчах ку... чăвашла мар, вырăсла тумланнăччĕ. Чечеклĕ крепдешин платйĕпе, çӳçне ĕнси таран кастарнă та кăтралатнă, аллинче пĕчĕк

---

* Моряксен чĕлхипе — кăкарса лартрĕ, тени пулать.

** Сыхлан!

çеç ридикюль... Шăтарас пек пăхатăп. Вăл-ши, вăл мар-ши? Хĕр те ман çине темиçе хутчен пăхса кула-кула илчĕ. Кулли Верăннах! Вера ку! Ак сана... пожарник!

Вара çынсене сиркелесех ун патне пырса тăтăм та хăюллăнах алă патăм:

— Ырă кун пултăр!

Ман хыççăн Христофор та çитсе тăрса сывлăх сунчĕ ăна.

— Тупрăмăр хайхи таркăна! Ăçта çухалса пурăнтăн паян? — терĕ вăл ман хĕре.

— Нимĕнле таркăн та мар,— кулса илчĕ Вера,— çухалса та çӳремен. Сире эпĕ паçăрах куртăм... Хăвăр палламастăр та, эп айăплă-им уншăн?

— Артистка пулмалла эсир, мĕн тери улшăнма пултаратăр!

— Урăх тум тăхăнни — улшăнни пулать-и вара?

Христофор, мана шелленĕ пек, ассăн сывласа ячĕ:

— Эх, Ваня, Ваня! Хăвна ху разведчик тетĕн, анчах пĕрре курнă хĕре паллаймастăн!..

Унтан вăл нумай та тăмарĕ, таçта пăрăнса çухалчĕ. Пире кансĕрлес мар, терĕ пулмалла ĕнтĕ. Паллах, тĕрĕс турĕ, ун пек чух — виççĕмĕш ытлашши, теççĕ...

Каçченех çӳрерĕмĕр вара Верăпа... Питĕ уçăмлă хĕр пек туйăнчĕ вăл мана. Эп ун çинчен ытларах та ытларах ыйтса пĕлме тăрăшрăм, хам пирки те чылай каласа патăм. Пĕр-пĕринпе çывăхрах паллашас пулать-çке! Анчах хăй çинчен вăл ытлашши нимех те каламарĕ çав. Хĕрсем вĕсем — именекен халăх...

Хальхинче эпĕ ăна машинăпа ямарăм, хăйсен ялне çитиех хам ăсатрăм. Ешĕл вăрман витĕр тухрăмăр эпир, чечеклĕ улăхсем тăрăх, тинĕс пек хумханакан хирсем урлă утрăмăр... Ман чĕрем тулнăçемĕн тулса пычĕ. Юратса пăрахрăм эпĕ ку хĕре: фронтра пĕррехинче Сахвине ятлă тутар хĕрне юратнă пекех хĕрӳллĕн юратрăм...

Ял хыçне çитсен, Вера чарăнса тăчĕ:

— Урăх ан пыр... аван мар...

Вăл ман алла тытса чăмăртарĕ. Ку вара мана кăварпа тĕртнĕ пекех пулчĕ.

— Вера!..

— Мĕн? — куçран çав тери йăвашшăн пăхрĕ хĕр.

— Эпĕ... Эпĕ ыранах сирĕн пата пыратăп!

— Мĕн тума?
— Аçу-аннŭпе калаçма! Ăнлан эс мана...
— Çук, Ваня, ун пек пулма пултараймасть.
— Мĕншĕн? Нивушлĕ эс мана ним чухлĕ те килĕштерместĕн?
— Ыран ирех эпĕ Шупашкара тухса каятăп...
— Мĕн пирки?
— Эп Шупашкарта ĕçлетĕп вĕт. Отпуск пĕтрĕ манăн.
— Ăçта ĕçлетĕн? — тĕлĕнсех кайрăм эпĕ.
— Ун çинчен сана пĕлме кирлех те мар.
— Мĕншĕн апла?
— Ахалех.
Пĕр хушă эп ним калайми пулса тăтăм. Чĕре пăчăртанса илчĕ: эппин, ку хĕр ман валли мар, хулара унăн урăххи те пулма пултарать!
— Анчах сана Шупашкара пырсан курма пулать-и? — ыйтрăм чылайран тин.
— Ма юрамасть пуль? Ӳркенмесен — пыр: Белинский урамĕ, 22. Яланах хавас пулăп сана кĕтсе илме...
— Çак кунсенчех пыратăп! Мĕншĕн тесен малашне эпĕ сансăр... пултараймастăп!..
— Юрĕ, пыр... Анчах та халь кай... Çынсем курсан, аван мар! Сыв пул!
Вăл ман алла икĕ аллипех тытса чăмăртарĕ те пахчаналла вăшт кăна кĕрсе кайрĕ. Эпĕ чылайччен хама такам тухатнă пек пулса тăтăм...
— Белинский урамĕ, 22, 22...— пăшăлтатса илтĕм те, унтан хамăр ял еннелле тӳрĕрен тӳрĕ утрăм. Хамăн çав тери юрлас килчĕ...

* * *

Хăвăрах чухлама тивĕç, халь ĕнтĕ эпĕ кунĕн-çĕрĕн Вера çинчен кăна шухăшласа, ăна хам майлă çаврса çитерес ĕмĕтпе çеç пурăнтăм. Тепĕр шăматкун, вырсарние хирĕç, каç пулсан, Шупашкара персе те çитрĕм. Ыран — канмалли кун, хамăн савнă хĕрпе тĕл пулса калаçмалăх вăхăт çителĕклех пулать...
Автобус çинчен ансанах, Хĕрлĕ площадь варринче постра тăракан яштака милиционер патне пытăм та Белинский урамне мĕнле тупмалли çинчен ыйтрăм.
Вăл мана чеç парсах ăнлантарчĕ:
— Çапла хăпармалла та çавăнта пăрăнмалла...

— Тавтапуç! — тесе, хам та чеç патăм.

Анчах эпĕ темиçе утăм тусан, вăл мана каялла чĕнсе илчĕ:

— Хăш çурт кирлĕ сире?

— 22.

— Пĕлетĕп вăл çурта. Кама курасшăн унта эсир?

— Хамăр ялсене,— терĕм те уттара патăм. Анчах хам ăшăмра: «Верăна паллаканскер мар-ши ку? Каччи аптрамасть так-тă...» — тесе шухăшларăм. Анчах кĕвĕçес-тăвас кăмăл пулмарĕ.

Çитрĕм çитес çĕре. Крыльца çине хăпарса шаккарăм. Мана хирĕç шап-шур çӳçлĕ, питĕ кăмăллă карчăк тухса тăчĕ.

— Вера Петрова сирĕн патра пурăнать-и, асанне?

— Пирĕн патра та-ха, халь килте çук-ха вăл, ывăлăм. Вуниккĕччен дежурствăра пулать.

— Дежурствăран тӳрех киле килет-и?

— Аçта кайтăр ĕнтĕ тата?

Анмарĕ ман ĕç. Ну, юрĕ, тăхтăпăр, тесе, крыльца çинчен хуллен кăна каялла антăм.

— Ыран ирпе килĕр эппин! — терĕ карчăк.

— Тавтапуç.

— Кам килчĕ тесе калас Верăна?

— Хăвăр ялсем, те...

Эпĕ Хĕрлĕ площаде анса Атăл хĕрринелле утрăм. Тротуарсем çинче лăк-тулли халăх — ĕç хыççăн пурте уçăлма тухнă ĕнтĕ. Çамрăк мăшăрсем питĕ нумай, ман пек салтак пулнисем те хĕрсене çавăтнă, шăкăл-шăкăл калаçса пыраççĕ. Эп кăна пĕччен...

Атăл çине тухрăм — унта та тĕрлĕ халăх тем чухлех, анчах палланă пĕр çын та çук. Кичем пулма пуçларĕ. Аптранă енне, кино кĕрсе курас терĕм. Унтан пĕр вунă сехет тĕлĕнче тухрăм та сада кайса лартăм — музыка итлес кăмăл пулчĕ. Анчах хамăн шухăш Вера çинчех, урăх ним çинчен те шухăшлама пултараймастăп.

— Вуниккĕ тĕлне вĕсен крыльци çине кайса ларатăп... Мĕнле тĕл пулăпăр-ши, мĕн калĕ вăл мана?..

Чĕре хытăран хытă тапать хамăн...

Вунпĕр сехет иртсен, садра халăх сахалланчĕ. Унта-кунта, йывăç тĕмисем айĕнчи саксем çинче, кăмăллăн пăшăлтатакан мăшăрсем çеç юлчĕç.

— Каяс ĕнтĕ,—терĕм те тăрса утрăм...

Кукăр аллея мана чечексем патне илсе тухрĕ. Пысăк, илемлĕ клумба. Электричество çутинче хĕрлĕ, кăвак, сенкер чечексем тĕлĕрсе ларaççĕ. Сасартăк таçтан шухăш пырса кĕчĕ мана:

— Вера валли лайăх кăна букет туса каяс! Ăна чечек çыххипе кĕтсе илес... Питĕ лайăх пулать вĕт!..

Пĕлетĕп-ха ĕнтĕ кун пек çĕрте чечексем татма юраманнине, анчах... мĕн тăвас тетĕн? Юрату вĕт! Çав шар кăтартать çынна час-часах!

Унталла-кунталла пăхса илтĕм те, хӳтĕрех вырăна кукленсе ларса, çăтăр-çатăр, çăтăр-çатăр татма тытăнтăм... Сылтăм алăпа тататăп, сулахай алла пухатăп... Хитре букет пулать! Анчах...

— Мĕн тăватăр эсир кунта, гражданин? — терĕ хыçалта хулăн сасă.

Эпĕ вăшт кăна сиксе тăтăм та букета çурăм хыçне тытрăм. Ман умра милиционер тăра парать.

— Мĕн тăватăр, тетĕп!

— Нимĕн те тумастăп-çке...

— Çурăм хыçне мĕн пытартăр?

— Нимĕн те мар...

— Чечек татрăр эсир! Тӳлĕр 15 тенкĕ штраф! *

— Мĕншĕн? — тĕлĕннĕ пек пултăм эпĕ.— Çак курăкшăн 15 тенкĕ-и? Чипер калаçăр... Пасарта уншăн пĕр тенкĕ те памаççĕ!

— А эсир чипер хăтланăр! — сассине хытарчĕ милиционер.— Тӳлеместĕр? Апла пулсан, атьăр отделение.

— Тӳлеместĕп те, отделение те пымастăп,— татса хутăм эпĕ. Манăн, айванăн, укçа кăлармалла та тыттармалла пулнă, ĕçĕ те пĕтетчĕ, анчах... характер вĕт! Салтак-çке, гвардеец! Кайран ӳкĕнтĕм те çав...

Милиционер пĕррех шăхăртрĕ.

— Кайрăмăр! Утăр малтан! Чечекĕсене пăрахса хăварма ан шутлăр тата! — асăрхаттарчĕ вăл мана.

Мĕн тăвас тетĕн? Власть представительне хирĕç каятăн-им? Утрăмăр. Эпĕ — малта, ман алăра чечек çыххи, вăл — ман хыçра. Каялла çаврăнса пăхма та хушмасть, чăн-чăн преступнике илсе пынă пекех илсе пырать урампа!

Çитрĕмĕр отделение. Кĕрсенех, алăкран сулахаял-

* Çăпала Иванĕ çакăн пек милици аллине лекнĕ чух кивĕ укçа пулнă-ха.— Автор.

ла, çамрăк кăна кĕçĕн лейтенант темскер вуласа ларать. Мана илсе килекенни ун умне тăчĕ те хăвăрт кăна рапортларĕ:

— Ак çак паллă мар гражданин общество йĕркине пăсрĕ... Садра чечексем татрĕ!

— Документсем пур-и?

— Тĕрĕслемен. Вăл штраф тӳлесшĕн пулмарĕ.

— Гражданин, паспорт кăтартăр!—терĕ дежурнăй.

Эп маларах, çутă çĕререх тухрăм та, ман сывлăш пӳлĕнсех ларчĕ... Дежурнăй кĕçĕн лейтенант — манăн савнă Вера иккен! Вера! Çĕр çăттăр!

Паспорта кăларса тыттартăм. Хамăн пĕтĕм пит-куç вутпах çунать, хăлхасем те пĕçерсе кайрĕç. Паллать те акă, мĕн тери намăс пулать мана!..

— Паспорчĕ тĕрĕсех,— терĕ те Вера, ман çине куç харши айĕн пăхса, чутах кулса яратчĕ, темле тытăнса тăчĕ кăна.— Анчах штраф тӳлеттерес пулать.

Мана илсе килекенни хăйĕн сумкинче квитанци кĕнекине шырама пĕшкĕнчĕ, çав вăхăтра эпĕ, пĕр-ик утăм малалла ярса пусса:

— Вера, эп куна сан валли вĕт...— терĕм шăппăн.

Вăл мана пӳрнипе юнаса илчĕ:

— Вуниккĕччен кĕт!

Урăх нимĕн те каламарĕ. Ну, паллах ĕнтĕ, штрафне тӳлерĕм эпĕ, квитанци пачĕç мана...

— Кайма пултаратăр,— терĕ хама илсе килекенни.

Эп урама тухрăм. Хам йĕп-йĕпе тарланă иккен...

Çӳрерĕм вара вуниккĕччен каллĕ-маллĕ, алăри чечексен ырă шăршипе киленсе. Унтан Вера та тухрĕ. Питĕ шутсăр хытă кулчĕ манран...

Майĕпен Атăл хĕррине çитрĕмĕр, кăвак çутă киличченех шăкăл-шăкăл калаçса çӳрерĕмĕр. Юлашкинчен сăмах пине çитрĕ пулмалла, сак çине лартăмăр та пĕр хушă нимĕн те чĕнмерĕмĕр...

Эпĕ ăна пĕрремĕш хут питçăмартинчен чуптуса илтĕм.

— Каллех штраф тăвасран хăрамастăн-и?—хуллен ыйтрĕ вăл, пуçне ман кăкăр çине хурса.

— Çук, хăрамастăп, хуть те вунă квитанци çыр, çирĕм, вăтăр çыр,— терĕм те эпĕ, хĕре тутинченех чуптурăм.

...Çав ирхине вара пирĕн чĕресем ĕмĕрлĕхех пĕрлешрĕç.



# нихҫан та манас ҫук...



# Пуля ҫинчен ҫырнă сăвă

...Пин те тăхăрҫĕр вăтăр тăххăрмĕш ҫулхи декабрĕн 7-мĕшĕнче, шурă финсен Карельски перешеекри «Маннергейм линине» штурмланă чух амансан, эпĕ ытти аманнă салтаксемпе пĕрле Ленинградри пĕр госпитале лекрĕм. Госпиталĕ центртан аякра, хула хĕрринчеччĕ.

Унччен эпĕ Ленинградра ҫулталăк ытла пурăннăччĕ — ҫар службинче, рядовой салтак. Манпа пĕр ротăра Шупашкар каччисем тата ҫич-сакăр ҫын пулнăччĕ, пурте аслă шкулсенчен вĕренсе тухнăскерсем. Вĕсем хушшинче — Хветĕр (Хветут) Ҫитта, пултаруллă журналист, кĕнеке кăлармa та ĕлкĕрнĕ ҫамрăк писатель. Пирĕн интерессем пĕрешкелччĕ те, эпир унпа питĕ туслăччĕ. Канмалли кунсенче, командирсем ирĕк панипе, эпир час-часах хулана тухса ҫӳреттĕмĕр, музейсенче, киносенче пулаттăмăр, хăш чух пире — ушкăнĕпех — театрсене те илсе каятчĕҫ. Маншăн, театр институтĕнче вĕренсе тухнă, унтан Шупашкарта театрсем енĕпе ĕҫленĕ, пьесăсем те ҫыркаланă ҫыншăн, ку вара уйрăмах хаклăччĕ...

Астăватăп, Ленинградра пурăнма тытăнсан малтанхи уйăхрах, пире — ротипех — Петропавловски крепоҫе экскурсие илсе кайрĕҫ. Питĕ хăрушă вырăн! Патша

правительстви кунта вырăс халăхĕн чи ăслă та хăюллă ывăлĕ-хĕрĕсене, вĕсем хăйне хирĕç, пусмăра хирĕç, ирĕклĕхшĕн, халăх телейĕшĕн кĕрешнĕшĕн хупса лартса, вуншар-çирĕмшер çул хушши «чул михĕсенче», кун çути кăтартмасăр асаплантарса, хĕн кăтартса усранă.

Крепоçăн «Трубецкой бастионĕнче» (кунта патша тарçисем уйрăмах «империшĕн хăрушă» çынсене — паллă революционерсене хупса усранă) эпир Н. Г. Чернышевский, Вера Фигнер, Максим Горький ларнă «одиночкăсене» (пĕччен лармалли камерăсене) кĕрсе куртăмăр.

Литература историйĕ тăрăх эпĕ лайăх пĕлнĕ: Н. Г. Чернышевские кунта 1862 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче, çĕрле илсе килсе хупнă та 22 уйăх усранă, унтан суд туса 7 çуллăха Çĕпĕре, каторгăна ямалла тунă. Анчах Чернышевский патша правительстви хăйне çĕнтерчĕ тесе шутламан. Кĕрешме пăрахман. Крепоçре ларнă 22 уйăх хушшинче вăл «Что делать?» роман тата ытти нумай произведенисем çырнă.

39-мĕш номерлĕ камерăра эпир ытларах чарăнса тăтăмăр — 1905 çулхи январь уйăхĕнчи «юнлă вырсарникун» хыççăн çак камерăна Максим Горькие хупса лартнă. Çакăнтах вăл, 1905 çулхи январьпе февраль уйăхĕсенче, хăйĕн «Хĕвел ачисем» («Дети солнца») пьесине çырнă...

Экскурсирен таврăнсан, эпир Çиттапа иксĕмĕр çаксем çинчен самайччен калаçрăмăр. Ытла та тĕлĕнмелле вĕт-ха! Çын тĕрмере ларать, ăна патша правительстви хушнипе ыранах суд туса çакса вĕлерме те, ĕмĕрлĕхе каторгăна яма та пултараççĕ, анчах вăл, ним çине пăхмасăр, кăмăлне хытарса, илемлĕ произведенисем çырать!..

Чернышевскипе Горький произведенийĕсем самодержавие хирĕç кĕрешмелли çивĕч хĕçпăшал пулнă çав. Ахальтен мар хĕсĕрленĕ вĕсене патша правительстви. Анчах темле хĕсĕрлесен те, хупăрласа илсе «чул миххе» чиксен те хăйсен хĕçпăшалне алăран яман вĕсем!

Литература çинчен час-часах калаçаттăмăр Çиттапа. Хамăр та çырма ĕмĕтленнĕ-çке! Çыркаланă та май килнĕ таран. Рядовой салтакăн пушă вăхăт çукрах пулин те, иксĕмĕр те кашни пушă минутпах усă курса çырма тăрăшаттăмăр.

Шурă финсемпе вăрçă пуçлансан, пирĕн уйрăлмалла пулчĕ.

...Пысăк госпиталĕн виççĕмĕш этажĕнче выртакансем хушшинче палланă çын пĕрре те çукчĕ. Пирĕн подразделенире манпа пĕрле, пĕр çапăçура аманнисем татах пулнă, эп вĕсенчен хăшĕ-пĕрисене хамăра çапăçу хирĕнчен илсе тухса вăхăтлăха финсен пĕр ялĕнчи шкула вырнаçтарсан та, хамăра кайран Ленинграда пуйăспа илсе килнĕ чух та курнăччĕ, анчах халь вĕсем урăх этажсенче выртнă пулмалла.

Аманнисем хушшинче Ленинград çыннисем нумайччĕ. Ик-виç кунтанах вĕсем патне ашшĕ-амăшĕсем, арăмĕсемпе ачисем, тус-юлташĕсем çӳреме тытăнчĕç. Ман патăма, паллах, никам та пыман. Ленинградра манăн пĕртен-пĕр çывăх çын кăна пурччĕ — кунти консерваторинче вĕренекен студент, çамрăк композитор Гриша Хирбиков. (Кайран вăл хушаматне пăртак улăштарса Хирбю тесе çырма тытăнчĕ, халĕ Григорий Яковлевич Хирбю — Чăваш АССР тата РСФСР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ, К. В. Иванов тата Çеçпĕл Мишши ячĕсемпе хисепленекен премисен лауреачĕ). Вăл хула хĕрринчи пĕчĕкçеç йывăç çуртра хваттерте пурăнатчĕ. Эпир Çиттапа иксĕмĕр ун патĕнче темиçе хут та пулнă, вăл пире хăй çырнă юрăсемпе паллаштаратчĕ.

Эп палланă тепĕр çын — Ленинград Çар округĕн «На страже Родины» ятлă хаçачĕн литература пайĕнче ĕçлекен журналист пулнă, Скворцов хушаматлăскер. Нумай шухăшласа тăмасăрах, иккĕшин патне те çырусем çырса ятăм — Хирбикова май пулсан хам пата пырса курма чĕнтĕм, Скворцовран çырмалли хут ярса пама ыйтрăм.

Хирбиков нумай кĕттермерĕ — пĕр-икĕ кунтанах, каç пуласпа, персе çитрĕ. Студентăн пур-çук укçипех ман валли панулми, мандарин, пирус илнĕ. Вĕсем мана пĕртте кирлĕ марччĕ, мĕншĕн тесен ун чухне Ленинград ĕççыннисем аманнă воинсем валли кашни кун тĕрлĕ кучченеç илсе пыратчĕç — хума та вырăн çитместчĕ.

— Илсе кай каялла, ху çи ку çимĕçсене, пĕлетĕп вĕт-ха студент пурнăçне, хам та студент пулса курнă,— ӳкĕтлерĕм Гришăна.

— Кӳрентеретĕн эс мана, епле-ха эпĕ пĕтĕм чунтан,

ыр кăмăлпа илсе килнĕ япаласене йышăнмастăн пулать? — терĕ вăл, чăнах та кăмăлсăрланса.

Вара манăн ун кучченеçне илсе тав тумалли çеç юлчĕ.

Çĕрлеччченех калаçса лартăмăр унпа. Уйрăлнă чух вăл çак çитес кунсенче татах килесси çинчен каласа хăварчĕ.

«На страже Родины» редакцинчен ответ пулмарĕ.

— Ахăртнех, Скворцовĕ Ленинградра çук та-и, хаçат валли материал пухма фронта кайнă пуль,— тесе лăплантартăм хама.

Тепрер эрнерен пи́тĕ тĕлĕнмелле япала пулчĕ. Операци хыççăн (урара ларса юлнă пульăна касса кăларнă хыççăн) эпĕ тин кăна уткалама тытăннăччĕ-ха. Пĕррехинче палатăна ватăрах санитарка пырса кĕчĕ те, ун-кун пăхкаласа ыйтрĕ:

— Сирĕн кунта хăшĕ Агафов?

— Агафов хушаматли—çук пирĕн. Агаков — пур, эпĕ-ха вăл,— терĕм ăна.

— Йăнăшрăм пулинех... Утаятăн-и эсĕ?

— Утатăп. Мĕн вара?

— Аялта сана пĕр пит хитре хĕрарăм кĕтет...

— Пулма пултараймасть, йăнăш ку, аппа. Ленинградра манăн пĕр паллă хĕрарăм та çук—хитри те, хитре марри те. Тахăш палатăра чăнах хайхи Агафов хушаматлă çын пур пулĕ, шыраса пăх эсĕ.

— Шырамастăп,— ал сулчĕ санитарка,— вăл пиллĕкмĕш палатăна, сирĕн пата ячĕ мана. Атя, халатна тăхăн та, пĕрле анăпăр...

Питĕ шутсăр тĕлĕнсе, çаплах-ха иккĕленсе (мĕнле хĕрарăм килме пултарнă ман пата?! Йăнăш ку, йăнăш...), санитарка хыççăн пĕрремĕш этажри вестибюле антăм.

— Акă вăл, сирĕн Агафов,— терĕ санитарка, мана пысăк чечексем хуппинчи кресло çинче ларакан вăтăр-вăтăр пилĕк çулсенчи лайăх тумланнă хĕрарăм умне илсе пырса.

— Тавтапуç,— терĕ те эп палламан хĕрарăм, кресло çинчен тăрса аллине ман паталла тăсрĕ. Анчах хăй иккĕленчĕ курăнать.

— Сывлăх сунатăп...— терĕ те мана куçран пăхса, çийĕнчех ыйтрĕ: — Эсир — писатель-и? Союз членĕ-и?

— Çапла, союз членĕ...

— Пит аван апла пулсан. Хăвăрт шыраса тупрăм сире. Мана сирĕн пата Ленинградри писательсен союзĕн правленинчен ячĕç.

— Мĕнле пĕлнĕ вара унта ман çинчен?

— Пирĕн пата эсир «На страже Родины» редакцие çырнă çырăва ярса пачĕç. Эсир çырмалли хут ыйтнă...

— Ыйтсаттăм çав.

— Акă, сире валли илсе килтĕм...— Хĕрарăм хăйĕн пысăк сумкинчен пĕр стопа (пачка) хут, авторучка, ун валли чернил, унтан çимелли япаласем — шоколад, мандарин, панулми, темиçе пачка «Казбек» пирус кăларса хучĕ.

— Госпитальте халь пирĕн икĕ аманнă писатель выртать — эсир тата Владимир Петрович Ставский,— терĕ унтан хĕрарăм.— Ĕнер кăна ун патĕнче пултăмăр-ха...

— Ставский те вăрçăра пулнă-и? — тĕлĕнтĕм эпĕ.— Вăл ытла та пысăк çын-çке, «Новый мир» журнал редакторĕ вĕт-ха!

— Яланхи салтак çав вăл, ăçтан тылра лартăр çакăн пек вăхăтра? — терĕ хĕрарăм.— Владимир Петрович граждан вăрçинчех командир та, комиссар та пулнă...

— Паллă писательсенчен тата кам та пулин пур-ши фронтра?

— Ленинград писателĕсем пурте тенĕ пекех кайнă. Пĕрисем «На страже Родины», «Ленинградская правда», «Красная звезда» корреспонденчĕсем, теприсем дивизи хаçачĕсенче ĕçлеççĕ. Политработник пулса кайнисем чылай...

Пуринчен те ытла, эпĕ çак хĕрарăма ман валли «ĕç хатĕрĕсем» — хут, ручка, чернил илсе пырса панăшăн чĕререн тав турăм. Çав кунах, тенĕ пек, вĕсемпе усă курса, эпĕ хамăн вăрçă çинчен калакан пĕрремĕш произведение — «Разведчик Джунгали» ятлă калава çырма лартăм. Çырса пĕтерсенех, урăх хут çине куçарса, Шупашкара ярса патăм та, Аркадий Ĕçхĕл ăна хам госпитальрен тухичченех «Чăваш коммуни» хаçатра пичетлесе кăларнăччĕ.

Ленинградри писательсен союзĕнче ĕçлекен çав хĕрарăм ман пата Çĕнĕ Çул (1940) умĕн тепре пырса союз правленин ячĕпе çырнă саламлă çыру тата питĕ

пуян кучченеç парса хăварчĕ — портвейн та чиксе хунăччĕ пысăк пакета.

Гриша Хирбиков — хальхи Григорий Яковлевич Хирбю — темиçе хут та пырса кайрĕ.

Пĕррехинче вара пĕртте кĕтмен, шутлама та пултарайман, çав тери савăнмалли япала пулчĕ. Санитарка пырса чĕннипе аялти этажа анса «тĕлпулусен пӳлĕмне» кĕтĕм те, Хирбюпе юнашар... Петĕр Хусанкай ларнине курах кайрăм!

Хусанкай! Тус-юлташ. Тахçантанпах пĕлнĕ çын. Пĕтĕм чăваш халăхĕ юратса вулакан поэт!..

Эпир унпа 1928 çултах, эп Шупашкарти редакцисенче ĕçлеме пуçласанах паллашнă. Туслă пулнă. Шупашкара пырсан, ман хваттерте пĕррэ кăна мар çĕр выртнă. Вăл Хусанта вĕреннĕ чух, унта кайма тӳр килсен, студентсен общежитинче унпа пĕрле пĕр койка çинче çывăрнă. Кайран, эп Мускавра вĕреннĕ чух, тăтăшах тĕл пулнă. Институтран вĕренсе тухса Шупашкара таврăнсан та ялан пĕрлеччĕ — вăл, эпĕ, Петтоки, Тукташ, Алакĕр, Пайраш... Анчах 1937 çул пире тĕрлĕ çĕрелле салатрĕ. Пуринчен те йывăрри Хусанкай тĕлне килсе тухрĕ. Чылай хушă ăна курма тивмерĕ. Нимĕн те пĕлместĕмĕр ун çинчен. Халь акă... халь вăл ман умра ларать. Хирбюпе пĕрле çак госпитале мана, аманнă салтака, курма килнĕ!

Ыталанатпăр. Чуптăватпăр. Куççуль тухать.

— Сывă-и? Эсех-и ку, тусăм?

— Эпех-ха. Эпех, Петтоки пек каласан — вальшивăй мар, натуральнăях...

Татах ыталанатпăр. Хирбю кулать:

— Çитĕ сире! Мĕн, хĕрпе каччă пек эсир...

— Ху мĕнле тата? — ыйтать Хусанкай. — Амантрĕç пулать шюцкорсем?

— Лектерчĕç çав.

— Юрать-ха, ураран çеç тивнĕ...

— Эс лешне кăтарт, лешне! — тет Хирбю.

— Мĕнне?

— Ара, финсен «кучченеçне»! Çухатмарăн-и эс ăна?

— Çухатман-çке, акă, çумрах...

Эпĕ кĕсъерен марлĕ татăкĕпе чĕркенĕ пуля кăларса Хусанкая паратăп. Вăл ăна икĕ пӳрнипе тытса, вăраххен çавăркаласа пăхать.

— Пăхма пĕр пĕчĕк япала çеç хăй, анчах — вилĕм,— ассăн сывласа пульăна каялла парать вăл.

Вĕсем госпитальте «отбой» пуличченех ларчĕç. Хусанкай иксĕмĕр 1937 çулхи хура кĕркунне Шупашкар пристанĕнче уйрăлнă хыççăн хăйĕн мĕн-мĕн курма тивнĕ çинчен каласа кăтартрĕ. Калаçнă май, ун çинчен тӳсмелле мар элеклесе çырнă лапăрчăк статьясене те, вĕсен авторĕсене те асăнтăмăр.

— Курăн акă, çĕршывшăн ытах йывăр самантсем килсе тухас пулсан, вăл йышши борзописецсем пĕри те алла пăшал тытса атакăна каймаççĕ, хӳтĕре, тĕмĕ хыçĕнче ларса юлаççĕ,— терĕм эпĕ.

— Унтан хăрушăраххи те пулма пултарать,— терĕ Хусанкай.

Эпĕ госпитальтен тухас умĕн темиçе кун маларахран вăл ман пата тепĕр хут пычĕ. Хальхинче пĕччĕнех.

— Кучченеç тавраш илсе килмерĕм сан валли, каçар,— терĕ вăл,— анчах ак çакна илсе килтĕм, асăнмалăх пултăр, терĕм...

Поэт ман валли сăвă илсе пынă иккен.

Акă вăл сăвă...

## КУРНАÇУ

*Л. Агакова*

Юлташ больницăра, хула тулашĕнче.
Пĕлетĕп эп, унта туп ахăрăвĕ хыççăн,
Сасартăк лăпланса тăвăрланать тĕнче,
Хаçат листи çине куçсем тăрнаççĕ выççăн.

Çăмăл суранлисем лараççĕ иккĕн-виççĕн,
Выляççĕ шашкăлла, пуплеççĕ тем çинчен.
Аманнă урипе уксахласа, пĕччен
Анать чăваш ачи — хавас такам килнишĕн.

Пăхать. Кĕтмен. Пĕлмен. Виç çул курманччĕ пулĕ.
Кашнин расна сукмак. Анчах вăрçă вăрçах.
Шур тутăр ăшĕнчен кăларчĕ шĕвĕр пуля.

Усрать: калле ăна парасшăн тавăрса!
Кĕтмен çĕртен татах тĕнче кисренĕ кĕр.
Паян çĕнтертĕмĕр. Ыран — çĕнтерĕпĕр.

Сăвва Хусанкай хăй вуласа пачĕ те, вăл питĕ килĕшрĕ мана. Чунтан тав турăм уншăн тусăма. Кайран вăл сăвă пичетленсе те тухрĕ.*

Малашне мĕн пулассине яр-уççăн курса пĕлсе тăнă пекех çырнă-çке: «Кĕтмен çĕртен татах тĕнче кисренĕ... Паян çĕнтертĕмĕр. Ыран — çĕнтерĕпĕр...»

Чăнах çавăн пек пулчĕ. Хусанкай мана çак сăвва госпитальте вуласа панă хыççăн çулталăк та çурă çеç иртрĕ — тĕнче кисренчĕ. Германи фашисчĕсем пирĕн çĕршыва вăрă-хурахла килсе тапăнчĕç те—Отечественнăй Аслă вăрçă пуçланчĕ. Нумай хурлăх курма тиврĕ пирĕн халăхăн. Нумай юн тăкăнчĕ. Çирĕм миллион çын пĕтрĕ. Анчах эпир çĕнтертĕмĕр. Çĕнтертĕмĕр! Хамăр çĕршыва çеç мар, пĕтĕм Европăри халăхсене фашизм пусмăрĕнчен хăтартăмăр. Ытти пур тăванла халăхсемпе пĕрле, тискер тăшмана хирĕç чăваш халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсем те калама çук паттăррăн çапăçрĕç. Чаплă наградăсене тивĕçлĕ пулчĕç. Пирĕн, чăваш писателĕсен тӳпи те пур çав Аслă Çĕнтерӳре. Фронтра, вут-çулăм ăшĕнче, çирĕмĕн ытла пултăмăр. Çуррине яхăн таврăнаймарĕç. Тăпри çăмăл пултăр вĕсен...

...1941 çулхи декабрь уйăхĕн вĕçĕнче эпĕ пĕрре, каçалапа, Канашри вокзал тĕлĕпе иртсе пынă чух, кĕтмен-туман çĕртен Хусанкая тĕл пултăм. Эпĕ ĕнтĕ çар тумтирĕпеччĕ, вăл—«гражданскипе», кĕрентерех тĕслĕ ăшă çĕлĕк, кăвак драп пальто тăхăннă, уринче шурă бурки. Пĕр аллипе портфельтен те пысăк мар хура чăматан йăтнă.

— Салам, Петр Петрович! Ăçтан килетĕн, ăçта каятăн капла? — васкасах ун патне пырса ал патăм эпĕ.

— Хусантан килетĕп-ха, ăçта каясси паллă ĕнтĕ — Шупашкара... Анчах пуйăс ыран тин пулать, автобуссем çук. Ăçта та пулин вырăн тупса çĕр выртма тивет...— терĕ Хусанкай кăмăлсăртараххăн.

— Ку вăл пысăк проблемах мар-ха, хамăн хваттере те илсе кайма пултаратăп сана! Чăн та, кăштах утмалла пулать ĕнтĕ.

— Инçе пурăнатăн-им?

---

* П. Хусанкай. Суйласа илнĕ сăвăсемпе поэмăсем. Чăвашгиздат, Шупашкар, 1941 çул. 55-мĕш страница.

— Станци леш енчи ялта, Сухайкассинче, вăхăтлăха пĕр çамрăк учитель патĕнче пурăнатăп. Каччи пит лайăхскер, литературăна юрататъ, хăй те çырма хăтланать. Сана илсе пырсан, кăçсах каять пуль-ха.

Хусанкай манпа пĕрле пыма хапăл тусах килĕшрĕ.

— Анчах çула май пĕр çĕре кĕрсе тухăпăр,— терĕ вăл унтан.

— Аçта-ши? Кам патне?

— Хамăрăн маттур юптаруçă Николай Евдокимович Евдокимов арăмĕ патне. Пĕркун пулсаттăм унта — питĕ хуйхăрать хĕрарăм. Николай Евдокимовичран виçĕ уйăха яхăн пĕр çыру та çук, тет. Кам пĕлет, те вилнĕ, те ăнсăртран тыткăна лекнĕ-ха, тем те пулма пултарать вăрçăра, тет... Кĕрсе пĕлер, тен, халь тупăннă упăшки, çыру тавраше пур? Нумаях тытăнса тăмăпăр...

Евдокимов арăмĕ Зинаида Дмитриевна пире чи сывăх тăванĕсене йышăннă пекех йышăнчĕ. «Тавтапуçах хисеп тунăшăн, Николай Евдокимовича манмасăр ман пата килнĕшĕн...»

Упăшкинчен халĕ те хыпар çук иккен-ха. Хыпарĕ пулма та пултарайман çав: пирĕн паллă юптаруçă, темиçе кĕнеке авторĕ Николай Евдокимович Евдокимов професси енĕпе врач пулнă, Канашри больницăра ĕçленĕ. Вăрçă пуçлансанах ăна çара илнĕ те фронта янă. Аманнă салтаксемпе командирсен пурнăçĕсене сахал мар çăлнă вăл. Анчах 1941 çулхи октябрьте, тăшман Мускав еннелле талпăнса пынă вăхăтра, вăл ĕçлекен госпитале гитлеровецсем хупăрласа илнĕ те, Евдокимов, ытти медработниксемпе пĕрле, тăшман тыткăнне лекнĕ. Ăна кайран концлагере янă. Унта вăл 1945 çулхи февраль уйăхĕччен, Совет Çарĕ пырса çитсе ирĕке кăларичченех пурăннă. Вăрçă хыççăн киле таврăнсан, каллех больницăра ĕçлеме тытăннă, лайăх ĕçленĕшĕн ăна Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕн ятне панă.

Литература ĕçне те пăрахман Николай Евдокимович. Вăрçă хыççăн виçĕ кĕнеке çырса кăларчĕ вăл.

...Хальхинче эпир Хусанкайпа иксĕмĕр унăн арăмне нимĕнпе те лăплантарма пултараймарăмăр. Çапла çеç калакаларăмăр:

— Ытлашши ан хыпăнăр-ха, тен, сывах пулĕ Николай Евдокимович... Вăрçăра та ытла пурте вилмеççĕ. Халь авă партизансем çинчен нумай çыраççĕ... Ĕненес пулать, шанас пулать...

Унтан эпир Сухайкассине, ман пата кайрӑмӑр. Çул çинче, уйпа пынӑ чух, Хусанкай хӑйӗн çинчен каласа пачӗ. Çемйине вӑл вӑрçӑ пуçлансанах Ленинградран илсе тухса хӑйӗн тӑван ялне, Тутар республикинчи Сиктӗрмене леçнӗ, арӑмӗ унти шкулта ӗçлет. Хӑй юлашки вӑхӑтра хамӑрӑн тискер те хӑрушӑ тӑшмансене — нимӗç фашисчӗсене питлекен, вӗсене хирӗç пӗтӗм вӑя хурса, пурнӑçа та шеллемесӗр çапӑçма чӗнекен, пирӗн вӑрçӑри паттӑрсене мухтакан сӑвӑсем нумай çырнӑ.

— Çавсене пӗр çӗре пухса «Тупа» ятпа уйрӑм кӗнеке кӑларасшӑн-ха, Шупашкара çавӑнпа васкатӑп,— терӗ вӑл.— Халь акӑ тата «Таня» ятлӑ поэма çырма пуçӑнтӑм. «Правдӑра» Лидов статйисене вуланӑ-и эсӗ — Мускав комсомолки Зоя Космодемьянская çинчен?

— Вуланӑ-çке.

— Историре ӗмӗрлӗх паллӑ пулса юлмалли ӗç тунӑ вӑл. Епле çырмастӑн ун çинчен!

— Тӗрӗс. Çыр, Петр Петрович, çыр. Чаплӑ япала пулӗ.

— Халь те çине тӑрсах ӗçлетӗп. Кӗçех хамӑн та вӑрçа каймалла пулать пулӗ. Ку таранччен мана куçсем вӑйсӑртарах пирки илмесӗр тытӑнса тӑчӗç. Малашне ӑна пӑхса тӑмаççӗ пуль — вӑрçӑ çынсене арман пекех авӑртать. Ман пек «рядовой-необученнӑйсем» те сахалах мар кирлӗ. Çавӑнччен пӗтересчӗ çырса...

Эп ӑна хам та çамрӑк партизан çинчен çырма тытӑннӑ повеçе хӑвӑртрах çырса пӗтерме тӑрӑшни çинчен каларӑм.

Сухайкассинчи çамрӑк учитель эпӗ Хусанкая хампа пӗрле илсе пынӑшӑн чӑнах та савӑнсах кайрӗ!

— Ыран сире иксӗре хамӑрӑн шкул ачисемпе тӗлпултаратӑп. Хӗпӗртеччӗр пӗрре! Çак тарана çитсе, пирӗн шкулта пӗр писатель те пулман-ха. Произведенисене вӗрентетпӗр, авторӗсене куçпа та курман... Пит аван пулать!

— Юрать те пулӗ,— килӗшрӗ Хусанкай.— Çӗнӗ сӑвӑсене халӑх çинче тӗрӗслесе пӑхас, мӗнлерех йышӑнаççӗ?

Тепӗр кунне вӑл кунӗпех учитель хваттерӗнче ӗçлесе ларчӗ, эпӗ те хамӑн ӗçсемпе çӳрерӗм.

Каç пуласпа хваттере таврӑнтӑм та, эпир шкула кайрӑмӑр. Учитель шкул ачисене хӑйсем патне камсем

килнине каласа пачӗ. Шӑпӑрт ларчӗҫ ачасем — тӗлӗнчӗҫ курӑнать. Анчах эпир вулама тытӑнсан пурин те кӑмӑлӗсем уҫӑлса кайрӗҫ.

Малтан эпӗ хамӑн ун чухне ҫырса та пӗтермен «Партизан Мурат» повеҫӗн сыпӑкӗсене вуласа патӑм. Фашистсем яла мӗнле ҫӗмӗрсе пырса кӗни, совет ҫыннисене ҫаратни, фашистсен офицерӗ виҫӗ ват старике ним айӑпсӑрах персе пӑрахни ҫинчен, унтан повесть геройӗ партизансем патне мӗнле лекни, разведкӑран таврӑннӑ чух фашистсен салтакӗсене партизансен засади тӗлне илсе тухни, партизансем тӑшмансене «шӗкӗлчеме» тытӑнсан Мурат та граната ывӑтса нимӗҫсен малта пыракан офицерне лаши-мӗнӗпех вӗлерни ҫинчен каласа кӑтартнӑччӗ вӑл сыпӑксенче. Фашистсен хӑрушла тискер ӗҫӗсем ҫинчен итленӗ чух ачасем ним чӗнмесӗр, шӑлӗсене ҫыртнӑ пек, вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе ассӑн сывласа ларчӗҫ, Мурат питӗ паттӑр ӗҫ туса хунине илтсен вара шапӑр-шапӑр ал ҫупса ячӗҫ...

— Ку кӗнекене пӗтӗмпех вуласчӗ пирӗн!

— Часрах пичетлесе кӑларӑр-ха! — терӗҫ ачасем.

Ман хыҫҫӑн учитель Хусанкая сӑмах пачӗ.

— Ҫӗнӗ сӑвӑсем кусем, тин ҫеҫ ҫырнӑ, ниҫта та пичетленмен-ха, эсир вӗсене ӗнтӗ никамран малтан илтетӗр,— тесе пуҫларӗ Петр Петрович. Ачасем пурте ҫӑвара шыв сыпнӑ пек ларчӗҫ...

Поэт хӑй умӗнчи «аудитоpие» кӑмӑллӑн пӑхса ҫаврӑнчӗ те янравлӑ сасӑпа вулама тытӑнчӗ:

— Хӑюллӑн малалла!
...Аҫта пулсан та эп —
Ҫӗршыв манпа пӗрле.
Пӗлетӗп, ӗненетӗп:
Эпир ҫӗнтермелле!

Ҫӗр халӑхлӑ ҫӗршыв
Пӗр ӗмӗтпе тӑрсан,
Юлма ан асӑн сыв
Антӑхакан тӑшман!

Тӗсех сана эппин!
Эпир малтан тивмен.
Анчах ӗнтӗ халь тин
Ҫук каҫару пиртен.

Эпир курманах мар
Вутне те çулăмне.
Тăвар пек витнĕ тар
Пур пирĕн йăхсене...

Ăçта пулсан та эп —
Çĕршывăм манпала.
Пĕрех йыхрав илтеп:
Хăюллăн малалла!

Петр Петрович вулама чарăнчĕ. Темиçе самант хушши класра шăп пулчĕ. Унтан, сасартăк, пурте пĕр харăс вăраннă пек, ачасем ал çупса ячĕç.

— Халĕ, атьсемĕр, Ленинград çинчен çырнă сăвва вуласа паратăп сире. Пĕлетĕр вĕт-ха, илтнĕ пулĕ, нимĕç фашисчĕсем пирĕн çав чаплă хулана, Ленин хулине, «революци сăпки» текен хулана йĕри-тавра хупăрласа илнĕ, ăна тĕп тăвасшăн, çĕрпе танлаштарса хурасшăн. Анчах эпир, совет çыннисем...— ку тĕлте поэт сассине тăрук хытарса, сăвă ятне каларĕ: — Парăнмастпăр ирĕк хулана!

Унтан сăввине вулама тытăнчĕ:

Нева хаяррăн хумханать...
Ан ур, тăшман, ан антăх!
Парăнмастпăр ирĕк хулана
Нихçан та! Никама та!

Илемлĕ, чаплă çурт-кермен,
Пахчи, музейĕ, шкулĕ —
Мĕнпурĕ хамрăн ĕмĕртен,
Ялан вăл хамрăн пулĕ!

Çĕршыв пек анлă, сарлака
Хулан кашни урамĕ
Çĕклет ялавăн çунакан
Çулпуç ятне, курап эп.

Хăватлă броневик çинче,
Çĕнтерĕве пилленĕн,
Тăрать вăл хăйĕн хулинче —
Алне çĕкленĕ Ленин.

Тăрать çĕршывăн чунĕ пек,
Вăл бронза мар, вăл чĕрĕ,
Тăрать йыхрав пек. Ĕмĕрех
Çак вырăнта вăл тăрĕ.

Нева хаяррăн хумханать...
Ан ур, тăшман, ан антăх!
Памастпăр ирĕк хулана
Нихçан та! Никама та!

Ку сăвă итлесе ларакан ачасен чĕрисене тата хытăрах пырса тиврĕ пулмалла. Питĕ хĕрӳллĕн ал çупрĕç вĕсем. Хăшĕ-пĕрисем сике-сике тăчĕç.

— Мĕнле пек? — учительпе ман еннелле çаврăнса хуллен ыйтрĕ Петр Петрович, çамкине тутăрпа шăлса илсе.

— Аван! Пит аван! Курмастăн-им ара, еплерех итлеççĕ...

Кун хыççăн поэт «Тăван Мускавшăн», «Тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн, чысшăн», «Ленин пирĕнпе», унтан «Аслă туслăх» ятлă сăввисене вуларĕ. Юлашки сăввинчи çак йĕркесем пушшех çĕклентерчĕç ачасен кăмăлне:

...Аманнă снайпер Георгидзе
Хăюллă, витĕмлĕ грузин.
Ăна йăтса тухать ал вĕççĕн
Калуга вырăсĕ Ильин.

Суранлă лейтенант Сурбанов —
Чăваш ачи — аптранă-мĕн.
Ăна карел хĕрĕ юн панă,
Çăлса хăварнă вилĕмрен.

Хастар казах-пилот, тăшманăн
Умнех самантлăха анса,
Хăпарнă çĕклесе аманнă
Артиллерист-белоруса...

...Пире хапсăнакан ан мантăр:
Ĕçпе, хĕçпе, чĕрĕ юнпа
Сыхланă ирĕке нихçан та
Мăшкăллаттармăпăр юта! *

---

* Çак сăвăсем пурте «Тупа» ятлă кĕнекере пичетленнĕ (Чăвашиздат, 1942 ç.).

Унтан Петр Петрович пирӗн паттӑр салтаксем тӑшмана хирӗҫ епле хӑюллӑн, нимрен хӑрамасӑр ҫапӑҫни ҫинчен калакан сӑввисене вуларӗ: «Ширшов комсомолецӑн паттӑрлӑхӗ», «Арам Петросьян» (аманнӑ пулсан та, тӑшман тыткӑнӗнчен тарса тухса каллех строя тӑнӑ, тата хӑватлӑрах ҫапӑҫма тытӑннӑ салтак ҫинчен), «Ахмет Делиевӑн маттурлӑхӗ»... Ку сӑвӑсене поэт хаҫатсенче вуласа пӗлнӗ фактсемпе усӑ курса ҫырнӑ. Вӗсене те ҫав тери тимлӗн, сывламасӑр тенӗ пек ларса итлерӗҫ шкул ачисем.

Юлашкинчен кулма тытӑнчӗҫ...

Поэтӑн фашистсен ҫынҫиенле «ҫулпуҫӗсем» ҫинчен, вӗсене питлесе, вӗсенчен хаяррӑн тӑрӑхласа ҫырнӑ сатирӑллӑ сӑвӑсем пур-мӗн. Малтанхи сӑввин ятне вуласанах кулса ячӗ пӗтӗм «аудитори»:

— Сӳтӗк Гитлер ухмаххин сӳтӗлет суя ҫӑмхи... Пант! пант! пант! пуш параппан пантлаттарчӗ Берлинран...

Итлекенсен сӑнӗсем тӑруках ҫуталса, хавасланса кайрӗҫ. «Арӑсланпа кушак ҫури» сӑвӑра хӑйне Наполеонпа танлаштаракан Гитлер пӗтӗмпе те кушак ҫури кӑна пулни ҫинчен каланӑччӗ. «Геббельс е Кукша Иван? Вуласан пӗлен аван» текен сӑвӑра ҫак каппайчӑк тискер чӗрчун кашни утӑмрах суйнинчен, нимӗҫ халӑхне улталама тӑрӑшнинчен, вӑл каланисенче пӗр тӗрӗс сӑмах та ҫуккинчен питӗ ӑста тӑрӑхланӑччӗ. Ҫунтарнӑ кӑна! Ну, кулчӗҫ те вара ачасем ҫак сӑвӑсене итленӗ чух!

Вӑраха пычӗ пирӗн Сухайкасси шкулӗнчи «литвечер». Питӗ лайӑх иртрӗ вӑл. Усӑллӑ та пулчӗ пуль, тетӗп. Мӗншӗн тесен унта вуласа панӑ кашни произведени эпир вихҫан та тӑшман мӑшкӑлӗ пулас ҫукки, тӑшмана парӑнас ҫукки, тӑшмана эпирех ҫӗнтересси, хамӑрӑн ирӗклӗхе, чыса, телее ҫӑлса хӑварасси ҫинчен каланӑ.

Хальхи пекех астӑватӑп ҫав хӗллехи сивӗ те тӗттӗм каҫа. Тӑшмана ҫапса аркатса ҫӗнтерес кун питӗ инҫе пулнӑ-ха, анчах эпир ҫав телейлӗ кун килсе ҫитессе пӗр иккӗленмесӗр, пӗтӗм чун-чӗререн ӗненнӗ. Ҫынсене те ӗнентернӗ. Хамӑрӑн произведенисемпе. Сӑвӑсемпе, калавсемпе, повеҫсемпе. Шӑп та ҫавӑн чухне — вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче — штыкпа танлашрӗ пирӗн перо.

...Тепӗр кунне эпир Петр Петровичпа уйрӑлтӑмӑр. Нумайлӑха уйрӑлтӑмӑр. Кӗҫех эпӗ маршевӑй рота командирӗ пулса фронта тухса кайрӑм. Хусанкай та нумай тытӑнса тӑман, вӑл та вӑрҫа кайнӑ. Унӑн фронтри адресне мана чылайран тин пӗлтерчӗҫ. Хутран-ситрен пӗр-пӗрин патне ҫыркалаттӑмӑр. 1942 ҫулхи май уйӑхӗн вӗҫӗнче вӑл мана иксӗмӗрӗн юратнӑ тусӑмӑр Андрей Петокки ҫапӑҫура пуҫне хуни ҫинчен хурланса пӗлтерчӗ.

...Кунсем, уйӑхсем, ҫулсем иртсе пычӗҫ. Тем те куртӑмӑр, тем те тӳсрӗмӗр. Чӑтса ирттертӗмӗр!

Совет Ҫарӗ тӑшмана ҫапса аркатрӗ.

Аслӑ Ҫӗнтерӳ кунӗ те ҫитрӗ.

Ҫӗнтерӳ кунне Хусанкай госпитальте кӗтсе илнӗ, мӗншӗн тесен вӑл йывӑр аманнӑ.

Эпир унпа Канаш станцинче сывпуллашнӑ хыҫҫӑн виҫӗ ҫул ҫурӑ иртнӗччӗ ӗнтӗ. Виҫӗ ҫул ҫурӑран вара тӗл пултӑмӑр. Таҫта мар, ҫавӑнтах, Канаш станцинчех...

Акӑ мӗнле пулчӗ вӑл.

1945 ҫулхи июнӗн ҫирӗммӗш числисенче Чӑваш писателӗсен союзӗн правленине Хусанкай Мускавран панӑ телеграмма килчӗ. Паян Шупашкара пыма тухатӑп, Канашра кӗтсе илӗр, тенӗ. Пуйӑс номерне те, вагон номерне те палӑртнӑ. Кӗҫех Верховнӑй Советран шӑнкӑравларӗҫ — унта та телеграмма панӑ-мӗн вӑл.

«Салтака салтак кӗтсе илтӗр», тесе пулас, Канаша мана ячӗҫ. Ҫитсессӗнех станцири дежурнӑйран ҫав номерлӗ пуйӑс хӑш вӑхӑтра пулмаллине ыйтса пӗлтӗм.

— Кая юлса килет-ха вӑл, ирпе тин ҫитет пуль,— терӗҫ мана.

Ҫӗрӗпех кӗтрӗм вара. Ҫанталӑкӗ ытарма ҫук лайӑхчӗ, лӑпкӑ, ӑшӑ. Халӑх тулнӑ пӑчӑ вокзал ҫуртӗнче ларас килмерӗ, пӗрмай перрон тӑрӑх каллӗ-маллӗ уткаласа ҫӳрерӗм. Ун пек чух шухӑшлама лайӑх вӗт. Тем те аса килет. Эпӗ те вӑрҫӑччен Петр Петровичпа пӗрле ирттернӗ вӑхӑтсене, хӑҫан мӗн пулнине аса илтӗм. Пӗтӗмпех куҫ умне тухса тӑрать: вӑтӑр пӗрремӗш ҫулта вӑл «Канаш» хаҫат редакцин картишӗнче пире, редакцире ӗҫлекенсене, тин ҫеҫ ҫырса пӗтернӗ «Ҫӗрйӗркелӳ» поэмине ҫав тери хӗрӳллӗн вуласа пани, тӗрлӗ литвечерсенче пӗрле пулни, театрсене ҫӳрени, пӗр-пӗрин менелникӗсене пит те хавассӑн паллӑ туса ирттерни, ҫӑмӑл мар 37-мӗш ҫулта уйрӑлни, 1940 ҫулта вӑл

ман пата Ленинград госпитальне икĕ хут та пыни, мана халалласа пуля ҫинчен сăвă ҫырни, юлашки хут ҫак Канашра тĕл пулни...

Тĕлĕнмелле те пулса тухать-ҫке! Пилĕк ҫул ҫура каялла вăл ман пата госпитале пычĕ — ун чух эп аманнăччĕ, халь ĕнтĕ эп ăна кĕтсе илетĕп — вăл, йывăр аманнăскер, госпитальтен тин ҫеҫ тухнă та киле таврăнать...

«Паян ҫĕнтертĕмĕр. Ыран — ҫĕнтерĕпĕр!» — тесе ҫырнăччĕ вăл мана халалланă сăвăра.

Тĕрĕс пулчĕҫ унăн сăмахĕсем...

Пуйăс тул ҫутăлнă вăхăтра ҫитрĕ. Телеграммăра кăтартнă номерлĕ вагон ман тĕлпе иртсе кайрĕ те, эп ун хыҫҫăн чупрăм. Пуйăс чарăннă-чарăнман вагонран ҫынсем тухма пуҫларĕҫ. Пуринчен ытла — ҫар тумĕ тăхăннисем. Сыввисем те, туяллă-клюшкăллисем те. Ун чухне госпитальсенчен таврăнакансем пит нумайччĕ ҫав... Пĕри, тепри, вуннăмĕш, ҫирĕммĕш. Эп каҫса кайса кĕтекен Хусанкай ҫук-ха. Хытах пăлханма пуҫларăм: ларайман пуль вăл ку пуйăс ҫине, татăлса юлнă-тăр, шеремет! Анчах та пăртак тăхтасан тамбурта ун кĕлетки курăнчĕ. Симĕс карттуспа, акăлчан пуставĕнчен ҫĕленĕ гимнастеркăпа, кăкăрĕ ҫинче — Отечественнăй вăрçă орденĕ. Икĕ туяпа. Шинельне хулпуҫҫинчен уртса янă. Эпĕ, чупса пырса, ăна вагон пусми ҫинчен анма пулăшрăм. Ҫавăнтах ыталантăмăр, чуптурăмăр.

— Ҫапах та, ҫитрĕн пулать, Петр Петрович?

— Турă пур, иҫмасса...— кулса ячĕ вăл.

Машинăна эпĕ типографири рабочисем пурăнакан общежити картишне лартнăччĕ, станцирен инҫех те мар. Унта ҫуранах ҫитрĕмĕр те, лăпкăн ҫывăракан хĕрарăм-шофера вăратса, тепĕр темиҫе минутранах Шупашкаралла ҫул тытрăмăр...

Икĕ сехет хушшинче эпир мĕн-мĕн ҫинчен калаҫнине астуса та ҫитерес ҫук ĕнтĕ. Петр Петрович хамăрăн тус-юлташсем — вăрçăра пулнисем ҫинчен те, тылра ĕҫленисем ҫинчен те — ыйтса пĕлчĕ. Кам мĕн ҫырнă, мĕн пичетленсе тухнă. Издательство мĕнлерех ĕҫлет? — (Эп ун чухне кĕнеке издательствин аслă редакторĕччĕ.) — Кĕнекесем кăларма хут пур-и?

— Халь ĕнтĕ пирĕн сывлăш ҫавăрмасăр, лăш курмасăр ĕҫлемелле. Питĕ нумай пухăнчĕ-ҫке ҫырмалли! — терĕ вăл.

...Чăнах та ырми-канми ĕçлерĕ вăрçăран таврăннă хыççăн Петр Петрович. Ăна пирĕн вулакансем пит лайăх пĕлеççĕ. Çав тери нумай та ăнăçлă ĕçленĕшĕн вăл чăваш халăх поэчĕн хисеплĕ ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Совет правительстви ăна икĕ хутчен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăларĕ. Вăл Константин Васильевич Иванов тата Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премисен лауреачĕ пулчĕ.

...Чăваш литературин историне çеç мар, пĕтĕм чăваш халăхĕн историне кĕрсе юлчĕ унăн çутă ячĕ.



# Салтак чухнех туслашрăмăр...

Пирĕн, хальхи совет çыннисен, хăйне майлă вăхăт виçи пур. Хамăрăн пурнăçра пулса иртнĕ пĕр-пĕр ĕçе аса илме тӳр килсен, эпир чăн малтан çав ĕç хăш çулта пулнине çинчен калас вырăнне «вăрçăччен пулчĕ ку», «вăрçă вăхăтĕнче», «вăрçă хыççăн...» тетпĕр.

Вăхăта çакăн пек уйăрса пайлани питĕ тĕрĕс, мĕншĕн тесен пирĕн пурнăçăн çав тапхăрĕсем пĕр-пĕринчен пачах расна. Пур енчен те. Вăрçăччен эпир, мирлĕ çынсем, хамăр пурнăçа кунран-кун лайăхлатма, çĕршывра социализм тума тăрăшса ырми-канми ĕçленĕ, вăрçă вăхăтĕнче пĕтĕм вăя тискер тăшмана çапса аркатма панă, вăрçă хыççăн фашистсем ишĕлтернĕ ял-хуласене çĕнĕрен тунă, юхăннă хуçалăха ура çине тăратнă, парти ертсе пынипе коммунизм тăвас ĕçе кӳлĕннĕ...

Паллăрах писательсемпе поэтсен ĕçĕ-хĕлне, пултарулăхне пăхса тухас, тишкерес пулсан та, вăхăт çавăн пек пайланнине шута илме тивет. Хăйсем тĕллĕнех çакнашкал ыйтусем тухса тăраççĕ-çке: хăçантанпа ĕçлет вăл е ку писатель? Вăрçăччен мĕн çырнă? Вăрçă вăхăтĕнче мĕн тунă, мĕн çырнă? Аслă Çĕнтерӳ хыççăн, мирлĕ строительство тапхăрĕ пуçлансан, вулакансене мĕн панă, тăван литературăна мĕнле паха произведенисем-

пе пуянлатнă? Çак ыйтусене хирĕç тĕплĕ ответ памасăр литературăра самайранпа ĕçленĕ поэт-писателĕн творчество портретне ӳкерме çук...

...Хамăн çывăх тус-юлташ, Чăваш АССР халăх поэчĕ Александр Егорович Алга çинчен каласа кăтартма та вăрçăччĕнхи вăхăтран пуçлама тивет. Тĕрĕссипе, эпир пĕр-пĕрне вăрçăччен палласах кайман. Çулĕпе вăл манран чылай кĕçĕн, çырма кăшт каярахпа пуçланă, кунсăр пуçне тата эпир тĕрлĕ çĕрте пурăннă. Анчах вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче Шупашкарти хаçат-журналсенче «А. Бачков» тесе алă пуснă сăвăсем часчасах тухнине астăватăп. Çав «А. Бачков» халь кашни чăваш пĕлекен, вулакансем юратакан поэт Александр Алга пулнă (хушаматне вăл 1936 çулта улăштарчĕ).

Ун чухне те, хальхи пекех, çамрăксем хушшинче сăвă çыракансем нумайччĕ. Кашни журналтах (журналĕсем вăл вăхăтра пирĕн пиллĕкчĕ) çĕнĕ ятсем тухатчĕç, çавăнпа та эпĕ, литературăна юратакан çын пулнă пулин те, Бачков тесе ал пусаканнине уйрăмах асăрхаса, астуса юлма пултарайман. Çамрăк поэт хăйĕн хальхи хушамачĕпе çырма пуçланă вăхăтра эпĕ Шупашкартан тухса кайнă, пĕр хушă аякра пурăннă.

Пĕрремĕш хут эпĕ Александр Алга поэтпа 1940 çулта паллашрăм та ăна тӳрех юратса пăрахрăм. Анчах хăйне курса мар, заочно. Çитменнине — çуралнă çĕршывра та мар, Шупашкартан питĕ инçетре.

Акă мĕнле пулчĕ вăл. Ун чухне эпĕ, действительнăй службăри рядовой салтак, Эстонире, Балти тинĕсĕнчи пĕр утрав çинче пурăнаттăм. Хутран-ситрен Шупашкарти юлташсем мана чăваш писателĕсемпе поэчĕсен çĕнĕ кĕнекисене ярса паратчĕç. Аякра пурăннă чух тăван чĕлхепе çырса кăларнă кĕнекесем питĕ хаклă, каçса кайсах вулатăн вĕсене!

Пĕррехинче, çавнашкал, ман патăма чăваш поэзин антологийĕ çитрĕ. Ăна Чăваш АССРĕ 20 çул тултарнă ятпа кăларнăччĕ. Хулăн кĕнеке. Паллăрах поэтсен сăвви-юррисене пуринне те кĕртнĕ. Йĕркипе вуласа пынă чух мана Александр Алга сăввисем кăмăла кайрĕç — таса, уçă шухăшлă, янравлă. Ритмики вăйлă, рифмисем «стандартлă» мар. Уйрăмах «Çуркунне хĕрсем тухаççĕ ешĕл ĕшнене, юрласа тĕрĕ тĕрлеççĕ çӳхе пир çине» тенипе пуçланакан сăвă питĕ килĕшрĕ. Ха-

лăх юрри евĕрлех çырнă. Питĕ çăмăл вуланать. Чăннипех талантлă поэт çеç çырма пултарать ун пек! Манăн çак сăвă авторне саламласа тав тăвас, ун сăвви ман чĕре патне пыни çинчен пĕлтерес килсе кайрĕ. Алга ун чухне ман пекех Хĕрлĕ Çарта, рядовой салтак пулнине пĕлнĕччĕ эпĕ, анчах ун адресĕ çукчĕ манăн, çавăнпа та адресне Шупашкартан, «Сунтал» редакцийĕнчен ыйтса пĕлмелле пулчĕ.

Ку çеç те мар-ха. Пирĕн подразделенире пĕр Мускав каччи пурччĕ, Георгий Ладонщиков ятлăскер. Хăй вăл рабочи пулнă, анчах литературăна юратнă, заводри литкружока çÿренĕ, сăвăсем çырнă. Хăйне çара иличчен çамрăксен журналĕсенче пичетленсе те курнă. (Халь вăл Ладонщиков — ачасем валли çыракан паллă поэт, Мускаври издательствăсенче 40 кĕнеке ытла кăларнă. Вăлах манăн «Салтак ачисем» повеçе вырăсла куçарчĕ). Ман алăра чăваш сăввисен кĕнекине курсан, вăл питĕ интересленсе ыйтса пĕлме тытăнчĕ — поэтсем нумай-и пирĕн, лайăх çыраççĕ-и, ку кĕнекери сăвăсенчен хăшĕ мана ытларах кăмăла каять т. ыт. те. Эпĕ ăна Алга сăвви пирки каларăм. «Подстрочник туса пар, халех вырăсла куçаратăп!» — терĕ вăл. Чăн та, питĕ аван куçарчĕ,— хамăн çырупа пĕрле унăн куçаруне Алгана хăйне ярса патăм та (вăл таçта Хĕвеланăç Украинăра, Рава-Русска тăрăхĕнче, чикĕ çывăхĕнче пурăннă), тепĕр вунă кунтан ответ илтĕм. Çырушăн та, сăвăшăн та питĕ хытă тав туса çырнăччĕ...

Çавăн пек пулчĕ пирĕн малтанхи паллашу.

Тепĕр ик-виç уйăхран, 1940 çулхи хура кĕркунне, пĕр-пĕринпе Шупашкарта тĕл пултăмăр — «Нарспи» авторĕ К. В. Иванов çуралнăранпа аллă çул çитнине палăртнă чух. Эпĕ çартан демобилизаци йĕркипе таврăннăччĕ ĕнтĕ, Александр Егоровича хамăрăн писательсен Союзĕн правленийĕ çак чаплă уява ятарласа чĕнсе илнĕччĕ.

— Тепĕр çултан служба срокĕ тухать, таврăнсан çанна тавăрсах ĕçлес кăмăл пур-ха, плансем — пуç тулли,— терĕ вăл.

Шухăшласа хунă пек таврăнса ĕçлесси пулмарĕ поэтăн. Эпир тĕл пулнă хыççăн сакăр уйăхран Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланчĕ. Алгасен дивизийĕ, чикĕрен инçе те мар тăнăскер, малтанхи кунах çапăçăва кĕнĕ...

Ун çинчен Алга «Июнĕн 22-мĕшĕ» ятлă сăвăра çапла калать:

— Сасартăк тревога янрарĕ ирпе.
Сасартăк, пĕр харăс тăрса,
Эпир вĕтлĕх витĕр, сăрт урлă, хирпе
Васкарăмăр аслă вăрçа.

Эпир — малтисемччĕ; çĕнме çĕкленсе
Кĕрейрĕмĕр çулăм ăшне.
Ахлатрĕ тавралăх, шартах чĕтретсе,
Тем шăхăрчĕ: хăшĕ—хăшне!

Вăл ухă снаряд-мĕн шартлатрĕ çумра,
Сӳ килчĕ, сӳ кайрĕ хĕрӳ...
Пĕрех, çирĕп шанчăк çуралчĕ чунра.
Ун ячĕ — асту — Çĕнтерӳ.

Ку сăвва поэт вăрçă пуçлансанах çырнă. Эпир, чăваш писателĕсемпе поэчĕсем, нумайăшĕ фронтра пулнă, вилĕм куçĕнчен пăхнă. Анчах иртнĕ хăрушă вăрçăра пирĕнтен пуринчен те малтан вут-çулăм ăшне кĕрекенĕ Александр Егорович пулчĕ. Вăрçă çинчен пуринчен малтан (вăрçăрах!) çыраканĕ те вăлах.

Вăрçă пуçланнă хыççăн пĕр уйăх ытларах иртсен, Алга Шупашкара килсе çитрĕ. Вăрçăн саккăрмĕш кунĕнче, хаяр çапăçура, хытă аманнă вăл. Снаряд осколокĕ пуçран тивнĕ, тепри аллине лекнĕ. Госпитальте пĕр уйăх выртнă хыççăн ăна сывалса çитме пĕр уйăхлăх киле янă-мĕн.

Пĕр-ик кунтан Александр Егорович Етĕрнене кайрĕ (хăйне çара илес умĕн вăл унти педтехникумра чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ), эпĕ те, повестка илнĕскер, тăвансемпе сывпуллашма Етĕрнене çитрĕм те, ун патĕнче пĕр каç выртрăм. Нумай калаçрăмăр. Ирпе вăл мана Сăр урлă каçарсах ăсатса ячĕ. Тăшмана çĕнтересси ĕненсе, хамăр сывă юлса таврăнасса шанса, пĕр-пĕрине ыра сунса уйрăлтăмăр...

Çавăн хыççăн вара тăватă çултан, вăрçă пĕтсен, 1945 çулхи июльте тин тĕл пултăмăр. Эпĕ ĕнтĕ издательствăн аслă редакторĕнче ĕçлеттĕм. Тин çеç Шупашкара çитнĕ Алга (аслă лейтенант формипе, кителĕ çинче тăватă орден, темиçе медаль) ман сĕтел çине «Тăва-

тă çулталăк» тесе ят панă чылай хулăн алçырăвĕ кăларса хучĕ.

— Вăрçă вăхăтĕнче мĕн çырма ĕлкĕрнĕ — пĕтĕмпех çакăнта,— терĕ вăл.

Çак ал çырăвĕ издательствăра нумай тытăнса тăмарĕ, часах типографине анса кайрĕ. Питĕ лайăх кĕнеке хатĕрленĕ пирĕн поэт-салтак, поэт-фронтовик! Производствăна яриччен малтан вуласа тухнă юлташсем пурте пĕр шухăшлă пулса:

— Ку сборник Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçăн хăйне майлă «поэзилле летопиçĕ» пулса тăрать!..— терĕç.

Чăнах та çавăн пек çав. Кĕнеке эпĕ халь çеç илсе кăтартнă «Июнĕн 22-мĕшĕ» ятлă сăвăпа уçăлать. Ун айĕнче «Çапăçури çар, июнь, 1941» тесе паллă туни пур.

Малалли сăввисем вара вăраха кайнă вăрçăн тĕрлĕ сыпăкĕсемпе тапхăрĕсем çинчен каласа параççĕ, вĕсен айĕнчи çулталăк паллисем те улшăнса пыраççĕ — 1942, 1943, 1944, унтан вара — 1945-мĕш, Аслă Çĕнтерӳ, хăрушă вăрçăн юлашки çулĕ.

«Тăватă çулталăк» сборникри кашни сăвă — вĕри чĕреллĕ патриотăн хĕрӳллĕ сăмахĕ. Тăшмана курайманни. Ăна çапса аркатма чĕнни. Тăван çĕршывшăн пурнăçа та хĕрхенмесĕр çапăçма йыхăрни, Çĕнтерӳ çинчен ĕмĕтленни.

Акă мĕн калать вăл хăйĕн тантăшĕсене:

...Чун-чĕрӳпе ăнлан эс, тусăм:
Тăван çĕршывшăн çапăçан.
Эппин, пире ӳстернĕ халăх
Пиллетĕр пирĕн вăй-хала,
Паян ĕмĕр асăнтармалăх
Тăшмансене эс хăвала!
Чăваш ачи! Çĕклен маттуррăн,
Йывăрлăхра хавассăн тăр!

Поэт пирĕн паттăр салтаксем аслă Атăл хĕрринче икçĕр талăк пынă çапăçура тискер тăшмана аркатса тăкнăшăн чĕререн савăнса çырать, фашистсен тыткăнĕнчен хăтарнă Днепра саламлать, унтан Берлина çитсе, Бранденбург хапхи умĕнче хĕрӳллĕн те мăнкăмăллăн калаçать. Çĕнтерӳ хыççăн, çуралнă çĕршыва таврăн-

сан, çынсем пӗтӗм чун хавалӗпе, иксӗлми хастарлӑхпа ӗçе тытӑннине курса, поэт çапла калать:

...Çӗн хӑватпа вӗрет мухтавлӑ пурнӑç,
Сая каймасть эпир юхтарнӑ юн.
Эппин, яланшӑн ырӑ пултӑр пурнӑç,
Телейлӗ пултӑр киле килнӗ кун.

Çак сӑвӑ айӗнче «Берлин—Шупашкар, 1945» тесе паллӑ туни пур. Поэт Аслӑ Çӗнтерӳ хыççӑн киле таврӑнать.

* * *

Юратнӑ поэтӑмӑр вӑрçӑ хыççӑн мӗнле ӗçлени, халӑха мӗнле паха та кирлӗ кӗнекесем пани çинчен сӑмах пуçличчен, унӑн малтанхи биографийӗпе те кӑштах паллашар-ха.

«Большая советская энциклопедия» словарӗн пӗрремӗш томӗнче (Мускав, 1970) çапла çырнӑ:

Алга Александр Егорович (р. 27.II.1913, с. Кошки-Ново-Тимбаево Тетюшского р-на Тат. АССР), чувашский советский поэт. Чл. КПСС с 1943. Окончил Чебоксарский пед. ин-т (1938). Был учителем. Первый сб. стихов и поэм — «Солнечное утро» (1940). В послевоен. годы опубл. сб-ки «На родине» (1952), «Волжские волны» (1957) и др.

Кунта унӑн биографийӗ çинчен, хӑвӑрах куратӑр, питӗ сахал, кӗскен каласа панӑ, анчах ун çумне хушмалли те нумаях мар. Кӑнна Кушки ялӗнче, чухӑн хресчен çемйинче çуралнӑскер, вӑл пӗчӗклех тӑлӑха юлнӑ. Ялти пуçламӑш шкултан вӗренсе тухнӑ хыççӑн тӑлӑх ачасен колонинче пурӑнса вӗреннӗ, 1931 çулта Хусанти Чӑвашсен педагогика техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ.

Çав çулах Хусанта кӑларнӑ «Утӑм» альманахра унӑн малтанхи виçӗ сӑвви пичетленнӗ.

Техникумран вӗренсе тухнӑ хыççӑн пулас поэт виçӗ çул хушши ялти шкулсенче учительте ӗçленӗ. Унтан пединститута вӗренме кӗнӗ. Институтра вӗреннӗ чух вара литература ӗçне хастаррӑн хутшӑнма тытӑннӑ, унӑн сӑввисем хаçат-журналсенче тӑтӑшах пичетленнӗ. Пирӗн сӑмах ӑстисем (Эльгер, Хусанкай т. ыт. те) вӑл çырнисене тивӗçлипех ырланӑ.

Пединститут пӗтернӗ хыҫҫӑн, паллах, педагог пулмалла. Алгана Етӗрнери педтехникума ӗҫлеме яраҫҫӗ. Анчах пӗр ҫулталӑк ҫеҫ ӗҫлет вӑл унта — 1939 ҫулта Хӗрлӗ Ҫара каять. Ҫав ҫулах Хӗвеланӑҫ Украинӑна Польша панӗсен пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларнӑ похода хутшӑнать. 1941 ҫулта унӑн демобилизаципе киле таврӑнмалла пулнӑ, анчах фашистла Германи пирӗн ҫӗршыва вӑрӑ-хурахла килсе тапӑннӑ пирки унӑн тата тӑватӑ ҫул хушши Тӑван ҫӗршыва хӗҫпӑшалпа хӳтӗлекенсен ретӗнче пулма тивет...

Вӑрҫӑран таврӑннӑ хыҫҫӑн пирӗн поэт-фронтовик, поэт-коммунист (партие вӑл фронтра, 1943 ҫулта кӗнӗ) хӑйӗн пӗтӗм вӑйне, чун хавалне, пултарулӑхӗпе талантне тӑван литературӑна парса ӗҫлеме тытӑнчӗ.

Писательсем — партин шанчӑклӑ помощникӗсем, тетпӗр эпир. Александр Алга — вӗсенчен пӗри. Унӑн пӗтӗм творчестви пирӗн халӑх ӗҫӗн пӗр пайӗ пулса тӑрать.

Нумай, пархатарлӑ та тухӑҫлӑ ӗҫлерӗ Алга вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче. Пурӗ унӑн 25 кӗнеке ытла тухнӑ. Кӗнекесен ячӗсене асӑнмастӑп, вӗсене литературӑпа интересленекен кашни ҫын ахаль те пӗлет. Кашни библиотекӑрах, кашни шкултах пур вӗсем. Унӑн нумай произведенийӗсене шкул программисене, учебниксене кӗртнӗ. Унӑн кашни кӗнеки пиркиех пирӗн критиксем статьясем ҫырнӑ, поэт пултарулӑхӗ пӗрмай сарӑлса, тарӑнланса пынине, ӑсталӑхӗ ӳснине палӑртнӑ.

Ҫапах та Александр Егоровичӑн хӑшпӗр кӗнекисем (хама уйрӑмах килӗшнӗ кӗнекисем) пирки кӗскен те пулин калассӑм килет.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн пирӗн халӑхӑн нумай йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пымалла пулчӗ. Вӑл вӑрҫӑ кӳнӗ сурансене тӳрлетрӗ, хуҫалӑха ҫӗклерӗ. Пурнӑҫа юсас, вӑрҫӑччен-хи шая ҫитерес, унтан та иртсе кайса, ӳсӗм хыҫҫӑн ӳсӗм тӑвас тӗлӗшпе вӑрҫӑ вут-ҫулӑмӗ витӗр тухса киле таврӑннӑ салтаксем нумай вӑй хучӗҫ.

Александр Алга хӑйӗн «Ҫуралнӑ ҫӗршывра» ятлӑ кӗнекинче (1951) шӑп ҫавӑн ҫинчен — ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн таврӑннӑ совет воинӗсем мирлӗ ӗҫе гвардилле хастарлӑхпа тытӑнни ҫинчен — каласа парать: вӑрҫӑра танкист пулнисем тракторсемпе комбайнсем ҫине лараҫҫӗ, саперсем ҫӗнӗ кӗперсем тӑваҫҫӗ, кавалеристсем выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлеҫҫӗ, ҫапӑҫусенче чапа тухнӑ

командирсене ял ӗҫченӗсем колхозсене ертсе пыма суйлаççӗ. Пурнăçра, чăнах та, çавăн пек пулнă-çке!..

Мирлӗ ӗç! Мӗн тери ырă, чуна çӗклекен, кăмăла тултаракан сăмах! Вăл пирӗн пурнăçа пуянлатать, илемлетет, çынсене телейлӗ тăвать. Анчах нумай-ха çӗр чăмăрӗ çинче этемлӗх тăшманӗсем — империализм çăханӗсем, вӗсем вăрçă çинчен кранклатма чарăнмаççӗ-ха, вӗсене каллех пин-пин халăх юн ăшне путни, миллионшар çынсене вӗлерни кирлӗ — вӗсене вăрçă вӗçӗмсӗр тупăш, ылтăн купи парать. Çавăнпа та пирӗн мире тимлӗн сыхлас пулать. Пӗрмай, çине тăрса, çӗрӗн-кунӗн. Пирӗн Коммунистсен партийӗ, Совет государстви, совет халăхӗ çавăн пек тăвать те ӗнтӗ — пӗр вӗçӗм миршӗн кӗрешет.

Совет писателӗсем те, пӗтӗм халăхпа пӗрле, миршӗн хастаррăн кӗрешеççӗ. Ку вăл — пирӗн писательсен тӗп задачисенчен пӗри. Александр Алга çакна лайăх ăнланать кăна мар, вăл çак кӗрешӗве хӗрӳллӗн хутшăнать, унăн вăрçа хирӗç, мире хӳтӗлесе çырнă сăввисем яланах вăйлă, витӗмлӗ, вулакансен чӗри патне пыраççӗ.

...Пысăк писателӗн пултарулăхӗ яланах нумай енлӗ пулать. Пурнăçа анлăн кăтартса пама вăл тӗрлӗ жанрсемпе усă курма пултарать.

Александр Алга та поэзире кăна мар, ытти жанрсенче те ăнăçлă ӗçлет. Унăн вăрçă хыççăнхи çулсенче тухнă йышлă кӗнекисем хушшинче прозăпа çырнă кӗнекесем те сахал мар ӗнтӗ. Вулакансем «Юлташпа юнашар», «Çамрăксем», «Пурнăçпа вилӗм» ятлă повеçсемпе калавсен кӗнекисене ăшă кăмăлпа йышăнчӗç. Юлашки çулсенче тата вăл «Хӗçпе çурла» ятлă икӗ пайлă роман çырчӗ.

Мана хама уйрăмах «Юлташпа юнашар» кӗнекери произведенисем кăмăла каяççӗ. «Тăвата çулталăк» сборникри сăвăсем пекех, çак кӗнекене кӗртнӗ калавсем Тăван çӗршывшăн пынă Аслă вăрçăн малтанхи кунӗсене те, каярахри тӗрлӗ тапхăрсене те, Çӗнтерӳ кунне те кăтартса параççӗ. Калавсен тӗп геройӗ — совет салтакӗ, тискер тăшман пире хурахла килсе тапăннă пирки ăна çапса аркатма алла пăшал тытнă мирлӗ ӗçчен. Вăл нихăçан та урăх çӗршывсене тапăнман, ют пурлăха тытса илме, кама та пулин чура тума ӗмӗтленмен, вăл хăйӗн телейне хăй ӗçлесе тупнă, никама кӳрентермесӗр, макăртмасăр. Анчах сӗмсӗр тăшман килсе

сĕкĕнчĕ пулсан, ăна хăваласа яма унăн хаярлăхĕ те ҫителĕклĕ! Кĕнекери кашни калаврах — расна геройсем, тĕрлĕ халăхсен ывăлĕсем. Анчах вĕсене пурне те пĕр хăватлă туйăм — иксĕлми патриотизм, Тăван ҫĕршыва нимрен те ытларах юратни пĕр шухăш-кăмăллă тăвать, пĕр тĕллев патне илсе пырать: тăшмана ҫĕнтермелле, совет халăхĕн чысĕпе никама пăхăнманлăхне, унăн телейне упраса хăвармалла!

Ман шутпа, Александр Алган ҫак кĕнекинче тухнă калавсем чăваш писателĕсем вăрҫă ҫинчен ҫырнă чи лайăх произведенисен ретĕнче тăраҫҫĕ.

«Юлташпа юнашар» кĕнеке хыҫҫăн тухнă «Ҫамрăксем» сборникре виҫĕ повесть — «Ютра», «Лира» тата «Хурама та хурăн»... Вĕсен темисем те, автор усă курнă материал та пĕр-пĕринчен питĕ аякра тăраҫҫĕ, анчах вĕсене пĕр тĕп тема пĕрлештерет: этеме ĕненни, ăна юратни. Унти геройсем, темле йывăр условисене лексен те, темĕнле кăткăс лару-тăрăва ҫаклансан та, хуҫălмаҫҫĕ, парăнмаҫҫĕ, юлашкинчен ҫĕнтереҫҫĕ.

«Ютра» повеҫре сăмах фашистсем чуралăха хăваласа кайнă виҫĕ ҫамрăк хĕр ҫинчен пырать. Темĕн те тӳсме тивет ҫав хĕрсен — пурнăҫ мар, тамăк! — анчах ҫапах та вĕсем хăйсен этем тивĕҫĕпе чысне ҫухатмаҫҫĕ, май килнĕ таран кĕрешеҫҫĕ. «Лира» повеҫре автор совет воинĕсен мораллĕ тасалăхне, вĕсем нихҫан та ирсĕр ĕҫсем тăвас ҫулпа каяс ҫуккине пит аван кăтартнă. «Хурама та хурăн» повеҫри ҫамрăк учительница Ирина Юрова ялти интеллигенци хушшинче хăш чух тĕл пулакан кивĕ шухăшлă, лапăрчăк чунлă путсĕр ҫынсемпе кĕрешсе, вĕсене тăрă шыв ҫине кăларать, лешсем ăна хăйне тем тĕрлĕ варалама тăрăшаҫҫĕ пулин те, чăнлăх ҫиеле тухать. Пурнăҫа лайăх пĕлсе ҫырнă ҫак произведенисенчи сăнарсем нумайлăха асра юлаҫҫĕ. Ҫав кирлĕ те пире.

Юлашкинчен тата ҫакна палăртса хăварассăм килет. Сăвăсемпе поэмăсем, калавсемпе повеҫсем ҫырнă вăхăтрах, Александр Егорович тепĕр пысăк ĕҫ турĕ,— вăл хăйĕн поэмисем тăрăх «Шывармань» тата «Хамăр ялсем» ятлă оперăсен либреттисене ҫырчĕ. Федор Васильев композитор ҫав либреттăсемпе усă курса ҫырнă оперăсене халăх питĕ кăмăлласа йышăнчĕ. Ытти композиторсем Алга сăввисем тăрăх юрăсем нумай ҫырчĕҫ, вĕсем халăх хушшине анлăн сарăлчĕҫ.

Вырăсларан чăвашла куçарас тĕлĕшпе те нумай ĕç-лерĕ Александр Егорович: А. С. Пушкин, М. Ю. Лермонтов, Н. А. Некрасов сăввисене, Т. Г. Шевченкăн «Гайдамаки», Э. Багрицкин «Опанас çинчен хывнă юрă» поэмисене, В. Шекспирăн «Гамлет» трагедине, Ю. Збанацкин «Çеçпĕл» романне пит ăнăçлă куçарчĕ.

Поэт-салтак, патриот, поэт-коммунист яланах ĕçре. Хĕрӳлĕхĕ чакмасть унăн, пери мăкалмасть.

Ан мăкалтăр çав!



# Нихăçан та манас çук...

Атьăр, çынсем, нихăçан та
Манар мар çакăн çинчен!

А. Твардовский.

Кам вăрçăра пулнă, унти этемле мар йывăрлăхсене тӳснĕ, тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ пирĕн таса çĕр çинче тунă тискер ĕçсене курнă, камăн чи çывăх юлташĕсене, тусĕсене хăй аллипе çĕре чикме, уншăн калама çук хуйхăрма тивнĕ, кам чи хăватлă çапăçусене хутшăнса тăшмана хамăр çĕр çинчен каялла, хĕвеланăçнелле хăваланă çĕрте пулнă, çавăншăн чун-чĕререн савăннă — унăн çынсене каласа кăтартмалли питĕ нумай. Вăрçăра мĕн курнине, тӳснине унта пулнă çын нихçан та манма пултараймасть. Фронтра пĕрле çапăçнă ветерансем («ветеран» — латин сăмахĕ, чăвашла кучарса каласан, вăл ватă салтак, иртнĕ вăхăтсенче вăрçа хутшăннă çын тени пулать) пĕр-пĕринпе тĕл пулсан, вĕсен асаилĕвĕсен вĕçĕ-хĕрри те çук...

Фашистла Германие çĕнтернĕренпе 25 çул çитнине уявланă кунсенче эпĕ хампа пĕр дивизире пулнă юлташсем чĕннипе Пенза хулине кайрăм. Дивизи ветеранĕсем чылай пухăннăччĕ унта. Сăлтавĕ ак мĕнре: вăрçă пуçлансассăнах дивизи çак тăрăхра йĕркеленнĕ, ком-

составпа политсостав валли кунти партипе совет ӗҫӗнчи активистсене илнӗ, салтакӗсене те кунти ҫынсенченех пухнӑ. Кайран, ҫынсене темиҫе уйӑх хушши ҫар ӗҫне вӗрентнӗ хыҫҫӑн, дивизие Чӑваш республикине куҫарнӑ, пӗр хушӑ РГК (резерв главного командования) шутӗнче тытнӑ, вӑл пулас ҫапӑҫусене епле хатӗрленнине Мускавран представительсем килсе тӗрӗслесех тӑнӑ. Ку вӑл шӑнах нимӗҫсене Мускав патӗнче аркатма тытӑнас умӗн пулнӑ, темиҫе кунтан дивизие Мускав еннелле илсе кайнӑ.

Дивизи пирӗн республикӑра тӑнӑ чух унта чӑвашсем нумай хутшӑннӑ. Вӗсем ҫинчен сӑмах малалла пулӗ-ха.

...Питӗ хаваслӑ, савӑнӑҫлӑ пулчӗ Пензӑри тӗлпулу. Фронтри туссем мана кӗтсе илме аэродрома машинӑпах пынӑччӗ. Пӗр-пӗрне ҫирӗм пилӗк ҫул курман хыҫҫӑн тӗл пулсан, эпир мӗн тери хӗпӗртени, епле ыталашни, чуптуни ҫинчен калама та кирлӗ мар-тӑр. Анчах пирӗн васкамаллаччӗ: вуникӗ сехетре Ҫӗнтерӳ кунӗ ячӗпе пысӑк митинг пулать, терӗҫ. Гостиницӑна вырнаҫнӑ хыҫҫӑнах эпир унта васкарӑмӑр.

Ватӑ хулан (Пенза нумай пулмасть 300 ҫул тултарнӑ) ҫӗнӗ районӗнче, сакӑршар, вуншар хутлӑ ҫуртсем никам каҫайми хӳме пек йӗри-тавра ҫавӑрса илнӗ тем сарлакӑш Ҫӗнтерӳ площачӗн варринче ҫав кун пирӗн дивизи воинӗсене асӑнса лартакан палӑк никӗсне хыврӗҫ. Никӗс айне хума 1941 ҫулхи декабрӗн пуҫламӑшӗнче Мускав ҫывӑхӗнче фашистсене аркатма тытӑннӑ чух Тӑван ҫӗршывшӑн пуҫӗсене хунӑ, паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ салтаксен (пирӗн дивизи салтакӗсен) пирвайхи тӑванла масарӗ ҫинчен тӑпра илсе пычӗҫ — бронетранспортер пулас палӑк тӗлне шӑп вуникӗ сехетре ҫитсе тӑчӗ. Салтаксен масарӗ ҫинчен илнӗ тӑпрана чи шултра калибрлӑ снаряд гильзине тултарнӑччӗ.

Кӗҫех площадьри хӑватлӑ репродукторсем кӗрлеме тытӑнчӗҫ. Парти Пенза обкомӗн пӗрремӗш секретарӗ, облаҫри военком, хула Совечӗн председателӗ, дивизи ветеранӗсем ҫав тери хӗрӳллӗ сӑмахсем каларӗҫ... Пулас палӑк никӗсӗ ҫинчен шурӑ пӗркенчӗке илсен, автоматчиксен взвочӗ виҫӗ хутчен салют пачӗ... Унтан спорт парачӗ пуҫланчӗ. Питӗ хитре, чуна хавхалантаракан парад пулчӗ вӑл, сехет ытла тӑсӑлчӗ.

...Парад хыҫҫӑн эпир, фронтра пӗр-пӗринпе уйрӑмах

туслă пуранна юлташсем, пирĕн дивизири пĕр полкăн комиссарĕ пулнă, вăрçă хыççăн ватăлса пенсие тухичченех парти обкомĕнче ĕçленĕ Николай Васильевич Седов хваттерĕнче çур çĕрччченех лартăмăр.

Мĕн кăна аса илмерĕмĕр пуль эпир çав каçхине!..

Пĕри каласа пĕтернĕ-пĕтермен тепри пуçлать:

— Астăватăр-и тата...

Паллах, эпир нимĕн те манман. Мускав патĕнчи çапăçусене те, Калинин фронтне те, Курск пĕккине те, виçĕ мăн шыв — Десна, Сож, Днепр урлă мĕнле каçнине те, Белоруссри шурлăхĕсене те, фашистсем тĕппипе çунтарса янă ялсене те, эпир хĕссе пынипеваскасах тухса тарма тивсен, ялти юлашки çынсене пӳрте е сарайне хупса çунтарса янисене те. Çаксем çинчен эпир çын каласа панипе мар, хамăр курнипе пĕлетпĕр. Фашистсен тискер ĕçĕсем пирки пĕрре кăна мар актсем çырнă... Эпĕ, ав, кайран çав тискерлĕхсене хамăн произведенисенче те пултарулăхăм çитнĕ таран кăтартса пама тăрăшнă.

Хаяр çапăçусенче пуçĕсене хунă юлташсене те нихçан манас çук. Çав каçхине пирĕнпе пĕрле пĕр питĕ кăмăллă карчăк ларчĕ. Унăн упăшки, Николай Пазаев, кĕçĕр пире хăна тăвакан Седов пекех, дивизири полксенчен пĕрин комиссарĕ (каярахпа полк командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ) пулнăччĕ. Вăрçăччен учитель пулнăскер, çынсемпе ĕçлеме пĕлетчĕ вăл. Салтаксемпе офицерсем хушшинче унăн авторитечĕ питĕ пысăкчĕ. Анчах 1943 çулта, Днепр леш енчи плацдармра, артналет вăхăтĕнче йывăр аманса вилчĕ...

Пензăри юлташсем патне эпĕ хамăн фронтра çырнă (дивизи хаçатĕнче пичетленнĕ) очерксен, статьясен, фельетонсен «альбомне» илсе кайрăм. Манăн ун пек япала пуррине пĕлсе, вĕсем ăна хăйсем илсе пыма хушнăччĕ. Çав «альбомра» 1942 çулта Николай Пазаев çинчен çырнă очерк та пурччĕ. Сĕтел хушшинче ларнă çĕртех эпĕ ăна пурте илтмелле вуласа патăм.

— Питĕ тĕрĕс çырнă,— терĕ Седов,— шăп çавăн пек паттăр çынччĕ пирĕн Николай...

Пазаев арăмĕн куççулĕсем шăпăртатса анчĕç. Макăрма сăлтавĕ пулнă çав: иртнĕ вăрçăран унăн упăшки çеç мар, пĕртен-пĕр ывăлĕ те таврăнайман. Вăл та пирĕн дивизирех çапăçнă, кĕçĕн лейтенант, артиллери батарейин командирĕ пулнă, унăн паттăрлăхĕ çинчен

дивизи хаҫатӗнче те ҫырнӑ. Ман умрах вӑл хаҫат, унта, «Герои вчерашних боев» тенӗ рубрикӑра, пысӑк саспаллисемпе пичетлени пур: «Артиллеристы Владислава Пазаева истребили два взвода немцев и сожгли два танка» тесе ҫырнӑ.

Халь ҫав ватӑ хӗрарӑм пӗр-пӗччен пурӑнать. Анчах унӑн упӑшкин фронтри тусӗсем ӑна хӑйсен чи ҫывӑх тӑванӗ вырӑннех шутлаҫҫӗ, пурнӑҫра пулӑшса пыраҫҫӗ.

...Унччен пилӗк ҫул малтан, гитлерла Германие ҫӗнтернӗренпе 20 ҫул ҫитнӗ кунсенче, манӑн Пензӑри туссем, виҫҫӗн-тӑваттӑн пӗрле пухӑнса, хамӑрӑн дивизи ҫулӗпе ҫӳренӗ, вӑл ҫапӑҫнӑ вырӑнсене кайса курнӑ. Ун чухне вӗсем мана та чӗннӗччӗ те, ман кайма май пулмарӗ. Халь вӗсем хӑйсем ҫав асран кайми вырӑнсенче мӗн-мӗн курни, гитлеровецсем ишӗлтернӗ-ҫунтарнӑ ялсем ҫӗнӗрен ҫӗкленни, вӗсене малтанхинчен те лайӑхрах туса лартни, иртнӗ вӑрҫӑ кӳнӗ сурансен йӗрӗ те юлманни ҫинчен каласа пачӗҫ. Анчах кашни «халӑх пурӑнакан вырӑн» ячӗ (вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Совинформбюро сводкисенчи «населенный пункт» сӑмаха чӑвашла ҫапла куҫарса ҫыратчӗҫ) хамӑр унта мӗн курни-тӳснине аса илтерчӗ...

Аса илмелли, асран каймалла марри кашни салтакӑнах нумай ҫав! Пурин ҫинчен каласа кӑтартса та, ҫырса та пӗтерес ҫук. Тӗрӗссипе, 1941—1945 ҫулсенчи вӑрҫӑ вут-ҫулӑмӗ витӗр тухнӑ кашни салтакӑн биографинчех пӗр кӗнеке ҫырмалӑх материал пур. Ахальтен мар юлашки ҫулсенчен аслӑ ҫар пуҫлӑхӗсен — пысӑк военачальниксен, Совет Ҫарӗн Генеральнӑй штабӗнче ӗҫленӗ ҫынсен, фронт, арми командующийӗсен мемуарӗсем кӑна мар, вӗсенчен нумай кӗҫӗн командирсен, уйрӑм летчиксен, снайперсен, разведчиксен, партизансен тата ыттисен асаилӗвӗсем нумай туха пуҫларӗҫ. Вӗсем малтанхи страницӑсенчен пуҫласах вулакансене «тыткӑна илеҫҫӗ», чи кӑткӑс приключениллӗ кӗнекесем пек вуланаҫҫӗ. Шел, ку тарана ҫитсе эпир Совет Союзӗн Геройӗ Ф. Н. Орловӑн тата вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче паттӑр партизан пулнӑ, Белоруссире вӑрттӑн ӗҫлекен комсомол райкомӗн секретарӗ пулнӑ А. Г. Тарасовӑн асаилӳ кӗнекисене ҫеҫ кӑларнӑ-ха. Ҫак пархатарлӑ, кирлӗ, уйрӑмах ҫамрӑксемшӗн пысӑк усӑ кӳмелли ӗҫе пирӗн малалла аталантарсах пымалла. Ватӑ салтаксем — хисепе

тивĕçлĕ ветерансем — хальхи çамрăксене, пулас салтаксене нумай каласа кăтартма пултараççĕ...

...Фронтра эпĕ малтан рота командирĕ, унтан хаçатçă, журналист пулнă. Журналист вăрçăра атакăна та каймасть, алла граната тытса тăшман танкĕсене хирĕç те ыткăнмасть, ДОТсене те аркатмасть, самолетсене те персе ӳкермест. Унăн тĕп хĕç-пăшалĕ — çивĕч перо, витĕмлĕ, хĕрӳллĕ сăмах. Вăл куллен-кун вăрçă паттăрĕсем çинчен çырать, вĕсен çапăçури опытне сарать, тăшман тискерлĕхĕсем çинчен каласа кăтартать, ăна хирĕç тата хытăрах, тата хĕрӳллĕрех çапăçма чĕнет, хавхалантарать. Вăл — пропагандист, агитатор. Çавăнпа та журналист вăрçă вăхăчĕ çинчен аса илсе çырать пулсан та, вăл хăй çинчен мар, ыттисем çинчен, тăвата çула пынă хаяр вăрçăри паттăрсем, хăй куçĕпе курнă е шанчăклă çынсенчен илтсе пĕлнĕ событисемпе фактсем çинчен çырать. Ку тĕлĕшрен вырăссен хальхи паллă писателĕсен, фронтра журналистсем пулнă Константин Симоновпа Борис Полевой ĕçĕсем питĕ кăтартуллă.

Вăрçăра пулнă чăваш писателĕсем те — Александр Алга, Василий Долгов, Николай Ильбеков, Василий Ржанов, Александр Артемьев, Алексей Талвир, Василий Алендей тата ыттисем те мемуар евĕрлĕрех произведенисем чылай çырса кăларчĕç. Анчах та манăн вĕсем хăйсем мĕн калама пултарнине пĕтĕмпех каласа пĕтерчĕç тесе шутлассăм килмест-ха. Пĕлсех тăратăп — вĕсен асĕнче те, блокнот-дневникĕсенче те вулакансемшĕн интереслĕ те усăллă япаласем çырма май паракан материал сахал мар-ха. Вырăсла калас-тăк — «есть еще порох в пороховницах!» Тен, вăхăт нумаях та иртмĕ — фронтра пулнă чăваш писателĕсем пире совет халăхĕн иксĕлми паттăрлăхĕ, хастарлăхĕ, çулăмла патриотизмĕ çинчен вуласа тăранмалла мар чаплă кĕнекесем парĕç...

...Çак кĕске-кĕске тĕрленчĕксенче манăн вăрçă çулĕсенче уйрăмах асра юлнă самантсем çинчен каласа парас килет.

## «ХАМĂР ЯЛСЕМ». ТУС-ЮЛТАШСЕМ

Хамăр республикăри пĕр чугун сул станцинчен 1942 çулхи февраль уйăхĕн вĕçĕнче фронта илсе кайнă маршевăй ротăри салтаксенчен çуррине яхăн чăвашсемччĕ. Вĕсем хушшинче хам унччен паллана Шу-

пашкар çыннисем те, Етĕрне районĕнчи икĕ учитель те пурччĕ, вĕсем хама та, ман аттене те — ватă учителе — аван пĕлетчĕç. Пĕр сăмахпа — «хамăр ялсемччĕ». Çавсемпе пĕрле эшелонра эпир çывăх тăвансем пек, пĕр килйыш пек пулса кайрăмăр. Кăмăлсем пурин те лайăхчĕ. Ун чух нимĕçсене Мускавран 150—200 километр таранах хăваласа янăччĕ, Совинформбюро пирĕн çарсем тăтăшах малалла, хĕвеланăçнелле кайни, нумай хуласемпе ялсене ирĕке кăларни çинчен пĕлтерчĕ. «Аслă Германи çарне никам та çĕнтереймест» текен миф (юмах, легенда) арканнăччĕ, пăрахăça тухнăччĕ ĕнтĕ.

Мускав леш енчи пысăках мар хулара пире икĕ талăк тытрĕç. Тăшмана кунтан пĕр эрне малтарахран кăна çапса кăларнă. Эпĕ хамăн пĕчĕк дневнике вара çапла çырса хунă: «...Хула тăрăх çӳрерĕм. Пĕтĕмпех ишĕлтерсе пĕтернĕ, тĕрĕс-тĕкел юлнă çурт çукпа пĕрех. Пур çĕрте те — ванчăк тимĕр купи: танк, авто, самолет... Снаряд ванчăкĕсем, каскăсем, тупăсем... Пуринчен ирсĕрри — виçĕ нимĕç вилли, хула хĕрринче выртаççĕ, юри кайса куртăм. Хăйсем шыраса килнине тупнă, ĕмĕчĕсем — тулнă!»

Кайранхи вăхăтсенче эпĕ тăшман салтакĕсен виллисене пайтах курнă, анчах М. хулинче пуçласа курнă виçĕ виле яланлăхах асра юлчĕ. Мĕн тери тарăхса, йĕрĕнсе пăхса тăтăмăр эпир вĕсем çине тепĕр офицерпа пĕрле! Пыр патне темскер капланса хăпарчĕ... Вĕсем пирĕн телее пĕтерсе хума, пире хамăра та, пирĕн ачасене те хăйсен чурисем тума ĕмĕтленсе килнĕ-çке! Акă, çĕрсе выртăр халь, ирсĕрсем, çисе яччăр сире хуртсем!..

Ик кунтан пире малти линие илсе кайрĕç. Унта пĕр талăк ытларах пулнă хыççăн рота çапăçăва кĕчĕ. Пирĕн тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ «опорнăй пунктне» илмеллеччĕ. Тăвата кун та тăвата каç пычĕ çапăçу. Никам та чăлăм куç хупмарĕ çав хушăра. Ман землякcем лайăх çапăçрĕç. Пĕри те каялла пăхмарĕ, пурте малаллах ăнтăлчĕç. Анчах рота сайралса юлчĕ. Нумайăшĕ пĕтрĕç. Гитлеровецсен йĕплĕ пралук картинчен мала иртме пулмарĕ. Пиллĕкмĕш кун пуçламăшĕнче, тул çутăлас умĕн, пире пулăшма çĕнĕ батальон ячĕç, вара эпир опорнăй пункта çĕмĕрсе кĕтĕмĕр. Тухса тарас умĕн гитлеровецсем унччен ишĕлейми пӳрт-çуртсене пурне те вут тĕртсе хăварнă — ял тем пысăкăш кăвайт пек ялкăшса çунчĕ...

Тăвата талăк юр ăшĕнче выртса, эп сывлайми пулнăччĕ, ман урасем те ним туймастчĕç — шăнса тукмак пек пулса ларнăччĕ. Батальон командирĕ мана медпункта кайма ирĕк пачĕ. Эпĕ винтовка çине тайăна-тайăна тылалла утрăм. Анчах, пĕр аллă-утмăл метр пек кайсанах, ман тавра çутăлакан пульăсем тăкăнма тытăнчĕç. Ялта, пĕр-пĕр сарай тăрринче, фашистсен автоматчикĕ ларса юлнă пулмалла. Эп тӳрех пĕр виле хыçне ӳкрĕм. Ик-виç минутран тăрса утрăм та... каллех çутăлакан пульăсем, ылтăн çип пек йĕр хăварса, ман çумранах вĕçсе иртрĕç. Каллех тепĕр виле хыçне тĕршĕнме тиврĕ. Виç-тăвата хут пулса иртрĕ çапла. Анчах лектереймерĕ мана фашист.

...Тепĕр виçĕ эрнерен, медсанбатран сывалса тухнă хыççăн, дивизи хаçачĕн редакцинче ĕçлеме тытăнсан, пĕррехинче малти позицирен таврăнаттăм — унта хаçат валли материал пухма кайнăччĕ. Вăрманти ансăр çул çинче пĕр лав тĕл пулчĕ. Темле салтак апат-çимĕç турттарса пырать. Мана курсан, çав салтак кăшкăрсах ячĕ:

— Командир юлташ! Агаков! Эсех-и ку?!

Палласа илтĕм çакна — ман ротăри боец, Солдатов хушаматлăскер, Канаш районĕнчи чăваш. Эпĕ ăна Канашрах палланăччĕ, пĕррехинче вăл манран киле кайса килме пĕр кунлăх «увольнительнăй» та ыйтса илнĕччĕ.

— Эпех-çке,— терĕм çакна хирĕç.

— Эс... эс чĕрĕ эппин, сывă?!

— Хăвах куратăн, ара...

— Куратăп та-ха... Кострово ялне илнĕ кун хамăр юлташсем хушшинче ырă мар сăмах сарăлнăччĕ: сана вĕлернĕ, терĕç...

— Пит аван апла пулсан,— терĕм ăна кула-кула.— Вилнĕ ят тухнă çын кайран çĕр çул пурănать, теççĕ...

— Вăл апла пулĕ те-ха,— терĕ Солдатов айăпа кĕнĕ пек,— анчах пĕр лайăх мар япала пулма пултаратчĕ. Эпĕ чутах эс вилнĕ тесе Шупашкара, писательсем патне çырса ярattăм! Хут-конверт çуккипе çеç çырмарăм, хаçат татки çине çырса ярас килмерĕ...

— Ну, туса хураттăн вара камит! — пӳрнепе юнаса илтĕм ăна.— Тытса хĕнеттĕм эп сана куншăн...

Темиçе çул каялла, манăн «Юманлăхра çапла пул-

нă» кĕнеке тухсан, çак Солдатов ман пата пысăк çыру çырса ячĕ. Унта вăл эп «вилнĕ» пирки Шупашкара пĕлтерме тăни çинчен те аса илнĕччĕ.

...Хаçатра ĕçleme тытăнсан, эпĕ, ытти сотрудниксем пекех, кун сиктерсе, малти линире, тĕрлĕ подразделенисенче пулма тытăнтăм. Паян — чи малти траншейăсенчи стрелоксем патĕнче, унтан — артиллеристсем, минометчиксем, саперсем, связистсем, разведчиксем патĕнче. Материал пухатăн та, редакцие таврăнсан, çыратăн, хаçат кăларатăн, унтан каллех пăшал-тупă сасси кĕрленĕ çĕрелле утатăн.

Хуть ăçта пырсан та, аслăрах командирсенчен эпĕ: «Сирĕн подразделенире чăвашсем çук-и?» тесе ыйтаттăм. Ман чăвашсене курас, вĕсен çапăçусенчи ĕçĕсем çинчен пĕлес, вĕсен паттăрлăхĕ çинчен дивизи хаçатне çеç мар, Шупашкарти хаçатсенче те çырас килетчĕ. Пĕлччĕр вĕсем çинчен пĕлĕш-хурăнташĕсем, тус-тăванĕсем, ялйышĕсем. Чăн та, виçĕ çул хушшинче эпĕ хамăн земляксем çинчен, вĕсене ырласа-мухтаса, сахал мар çыртăм! Фронтри хаçатра та, Шупашкартисенче те. Каярахпа çав чăвашсен çапăçури биографийĕсем манăн калавсемпе повеçсене те кĕрсе кайрĕç. «Шанчăк» романра та чăвашсем сахал мар...

Ман умра хамăн фронтри дневниксем, дивизи хаçатĕнче пичетленнĕ очерксем выртаççĕ. Дневниксенче те, очерксенче те, «хамăр ялсем» çинчен çырнисем нумай.

Кам çинчен çырман пуль эпĕ! Акă, маттур минометчик, Вăтам Атăл чăвашĕ, Гурий Захаров сержант çинчен çырни. Очерка «Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕ» тесе ят панă. Сахал мар тустарнă вăл фашистсене. Пĕррехинче, пеме минăсем лĕтсен, хăйсен батарейине çавăрса илме пикеннĕ гитлеровецсене хирĕç юлташĕсене атакăна ертсе кайнă. Тăшмансем тӳсеймен, каялла тапса сикнĕ. Фронтрах вăл коммунистсен партине кĕнĕ...

Акă тата икĕ военфельдшер — Федор Емельяновпа Михаил Григорьев çинчен çырни. Иккĕшĕ те чăваш, вăрçă умĕн Киеври çар медицина училищинчен пĕрле вĕренсе тухнă. Мĕн вăрçă пуçланнăранпах фронтра. 1942 çулхи март уйăхĕ тĕлне иккĕшĕ те çапăçу хирĕнчен, вут-çулăм айĕнчен, хамăрăн аманнă салтаксемпе офицерсене аллăшар çын ытла, пирвайхи пулăшу пар-

са, лăпкăрах вырăна илсе тухнă. Иккĕшин те орденсем, иккĕшĕ те партие кĕнĕ.

Е тата «Çирĕм икĕ çулхи капитан» очерка илер. Ăна эпĕ Шăмăршă каччи Илья Павлов çинчен çырнă. Дивизири чăвашсемпе паллашма вăл нумай пулăшрĕ мана. (Чăвашсене хăй пурне те «хамăр ялсем» тетчĕ). Вăрçă пуçланнă чух вăл Çĕпĕрти пĕр хулара, çар училищинче вĕреннĕ. Вăрçă пуçлансанах хăйне фронта яма ыйтнă. Командовани ярасшăн пулман, анчах Павлов çине-çинех рапортсем панă. Фронта лексен, минвзвод командирĕ пулнă, хăйĕн взвочĕпе нимĕçсем йышăннă темиçе яла ирĕке кăларнă... Çапăçусенче паттăр пулнине шута илсе, кашни виçĕ уйăхрах унăн званине ӳстерсе пынă. Кĕçех вара вăл кĕçĕн лейтенантран капитана çитнĕ. Эпир унпа медсанбатра ăнсăртран паллашрăмăр. Вăл виççĕмĕш хут аманнăччĕ, юрать-ха суранĕ пысăках марччĕ.

Ун чухне Павлов полк штабĕн начальникĕччĕ... 22 çулта! Икĕ орденччĕ унăн кăкăрĕ çинче.

Пĕррехинче пирĕн редакцие дивизи политотделĕн начальникĕн заместителĕ пычĕ те кулнă пек, сăмах тĕкнĕ пек калаçа пуçларĕ:

— Пирĕн дивизи хаçатне йĕркипе вуласа пырсан,— терĕ вăл,— дивизире пĕр чăвашсем кăна лайăх çапăçççĕ теме пулать...

Вăл кун хаçатра шăпах эпĕ пĕр казах-снайпер çинчен çырнă пысăк очерк тухнăччĕ. Унăн сăнӳкерчĕкне те кăларнăччĕ.

— Ун пекех мар-çке,— терĕм эпĕ,— ак, казах çинчен çыртăмăр. Унччен малтан икĕ тутар пирки статья пулчĕ. Вырăссем çинчен вара — кашни номертех...

— Юрĕ, юрĕ,— ал сулчĕ подполковник.— Пурин çинчен те çырас пулать. Вырăс-и, грузин-и, тутар-и, чăваш-и — пурте пĕр çемье, пурте пĕр ĕмĕтпе, Тăван çĕршывшăн çапăçççĕ!

Дивизие илсе пынă çĕнĕ пополненипе (тин çеç килсе çитнĕ салтаксемпе) малтан яланах калаçусем ирттереççĕ, дивизи ку таранччен мĕнле çапăçни т. ыт. çинчен каласа кăтартаççĕ. Çĕнĕ салтаксем хушшинче чăвашсем нумай пулсан, политотделтан тӳрех мана хушатчĕç: кайса калаç хăвăн тăванусемпе! Эп вара ку ĕçе хаваслансах тăваттăм.

Акă, 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче дневнике мĕн

çырса хунă эпĕ: «Полксенче пултăм... Чăвашсемпе занятие ирттертĕм. Питĕ кăмăллă пулса юлчĕç вара. Татах пыма ыйтаççĕ. Икĕ сержант пур. Хамăн та кăмăл тулчĕ — чăвашсем вĕт! Манăн вулакансем, тăван халăх!»

1943 çулхи çулла, хамăр Курск хысакĕнче оборонăра тăнă вăхăтра, Илья Павлов капитанпа иксĕмĕр дивизири награда илнĕ чăвашсене пĕр çĕре пухса каласасси çинчен сăмах хускатрăмăр.

— Слет пекки тăвас, пĕр-пĕринпе лайăххрах паллаштарас хамăр çынсене!

Сăлтавне те тупрăмăр: кĕçех пирĕн тăван Чăваш республикин уявĕ пулать — вăл 23 çул тултарать! Салтаксене республика ўсĕмĕсем çинчен, чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем — Совет Союзĕн Геройĕсем çинчен (вĕсем пирки материал пулнă манăн), республика ĕççыннисем фронта мĕнле пулăшни çинчен каласа кăтартас, хамăр мĕнле çапăçни çинчен Шупашкарти хаçатсене çырса ярас, май килсен фотоўкерчĕк тăвас — асăнмалăх.

Хавасланасах кайрăмăр çакăн пек шут тунă хыççăн.

Павлов полкĕнчен таврăнсанах кун çинчен дивизи хаçачĕн редакторĕпе калаçрăм. Хирĕç пулмарĕ вăл, лайăх шухăш, терĕ. Тепĕр кунне политотдел начальникĕ патне кайрăм: çапла та çапла, хамăр республика юбилейĕ умĕн пĕр сĕтел хушшинче ларса калаçас, тăван халăх патне çыру ярас, тетпĕр...

— Аван ку, питĕ аван,— ырларĕ начальник,— пирĕн хамăр çĕршыври халăхсен тăванлăхне, тăшмана хирĕç пирĕн пур халăхсем те пĕр кăмăллă, пĕр чăмăр пулса çапăçнине кăтартакан япала! Эп полксене пĕлтерме хушăп, çынсене килме ан чарччăр,— терĕ.

Чылаййăн пухăнмаллаччĕ эпир, анчах та малти траншейăсенчен пурне те яраймарĕç. Редакцие пынисем хушшинче стрелоксем те, минометчиксем те, саперсем те, разведчиксем те, медработниксем те пурччĕ. Тĕрлĕ çĕрти чăвашсем — хамăр республикăрисем те, республика тулашĕнчисем те.

Пĕр-пĕрин çинчен лайăххрах пĕлес тесе, малтан эпир кашнине калаçтартăмăр: ăçтисем вăл, вăрçăччен мĕн ĕçпе пурăннă, кунта, фронтра, мĕнле «професси», хăйĕн кăкăрĕ çинче йăлтăртатакан ордена е медале мĕншĕн панă ăна...

Элĕ юлташсене республика ӳсĕмĕсем ҫинчен, чăвашран тухнă паттăрсем ҫинчен каласа патăм. Питĕ тимлĕн итлерĕҫ. Ҫавăнтах тăван чăваш халăхĕ патне ҫыру ҫырса яма йышăнтăмăр. Вăл ҫырăва эпĕ вăтăр ҫул иртсен «Чăваш коммуни» (халь — «Коммунизм ялавĕ») хаҫатăн 1943 ҫулхи июнĕн 3-мĕшĕнче тухнă номерĕнче тупса, питĕ пăлханса, тепĕр хут вуласа тухрăм...

— Эпир, пĕр чаҫри чăваш боецĕсемпе командирĕсем, Отечественнăй вăрҫă фронтĕнчен пĕтĕм чăваш халăхне хĕрӳллĕ, боевой салам ярапăр! — тенипе пуҫланать ҫав ҫыру.

Малалла ҫапла ҫырнă:

«...Икĕ ҫул ĕнтĕ чăваш халăхĕн ывăлĕсем, Совет Союзĕнчи ытти тăванла халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле, хамăрăн таса Тăван Ҫĕршывшăн, хамăрăн телейшĕн, ирĕклĕхшĕн ҫапăҫаҫҫĕ.

...Нумай паттăр ĕҫсем турĕҫ чăваш халăхĕн юратнă ывăлĕсем ҫапăҫу хирĕсенче. Тăшманпа хĕрӳллĕн ҫапăҫнăшăн, Гитлерăн симĕс шинеллĕ вăрă-хурахĕсене ăнăҫлă пĕтерсе пынăшăн, Совет правительстви чăваш ывăлĕсене нумай пысăк наградăсем пачĕ. Пиншер чăваш боецĕсемпе командирĕсем Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илчĕҫ. Ку ĕнтĕ калама та ҫук пысăк чыс, пысăк хисеп, чаплă пархатар.

...Эпир те, пĕр чаҫри боецсемпе командирсем, нимĕҫ захватчикĕсене хирĕҫ паттăррăн ҫапăҫнăшăн Совет правительствин наградисене илтĕмĕр. Ку наградăсене пани пире пулас татăклă ҫапăҫусенче тискер тăшмана хирĕҫ татах та вирлĕрех, тата та ҫирĕпрех, иксĕлми хастарлăхпа ҫапăҫма хавхалантарать.

...Эпир, правительство наградисене илнĕ чăваш боецĕсемпе командирĕсем, хамăрăн Тăван Ҫĕршыв телейĕшĕн хамăрăн вăя та, юна та, кирлĕ пулсан пурнăҫа та хĕрхенмесĕр ҫапăҫма тупа туса сăмах паратпăр!»

Ҫыру айне пурсăмăр та алă пусрăмăр: капитан Павлов, аслă лейтенант Косолапов, медицина службин лейтенанчĕ Емельянов, медицина службин аслă лейтенанчĕ Григорьев, аслă лейтенант Агаков, красноармеец Смольков, красноармеец Паликов, ефрейтор Калмыков, красноармеец Азюхин.

Юлашкинчен пурĕ пĕрле икĕ майлă сăн ӳкерттертĕмĕр. Пĕр ӳкерчĕкĕ кайран манăн «Чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсем» ятлă очеркпа пĕрле «Чăваш комму-

ни» хаҫатра 1943 ҫулхи сентябрӗн 5-мӗшӗнче тухнӑччӗ.

Манӑн юлташсем хӑйсем тупа туса панӑ сӑмаха ҫирӗп тытса пынӑ, тӑшмана хирӗҫ чӑн та паттӑррӑн, пурнӑҫа шеллемесӗр ҫапӑҫса, тата пысӑк наградӑсем илнӗ. Илья Павлов халь те Совет Ҫарӗнче, пӗр виҫӗ ҫул каялла Шупашкара килсе кайрӗ. Кӑкӑр тулли орденпа медаль. Вӑл ҫар академийӗнчен вӗренсе тухнӑ. Полковник. Пӗррехинче Тутар республикинчи Ҫарӑмсан районӗнчи Акрел ялӗнчен ҫыру килчӗ — Калмыков ҫырать. Курск хысакӗнчен наступлени пуҫланнӑ хыҫҫӑн, вӑл Десна шывӗ урлӑ каҫнӑ чух паттӑр ҫапӑҫнӑшӑн Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр илнӗ, Днепршӑн— Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗ. Киле инвалид пулса таврӑннӑ, ҫапах та виҫӗ ҫул ял Совет председателӗ, пилӗк ҫул колхоз председателӗ пулнӑ, ачисене халӑхшӑн усӑллӑ ҫынсем тума тӑрӑшса ӳстернӗ — икӗ ывӑлӗ инженера тухнӑ... Смольков сапер Днепр урлӑ кӗпер хывнӑ чух паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ, военфельдшер Емельянов пӗр ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче йывӑр аманнӑ пирки халь пенсире. Ыттисем пирки пӗлместӗп. Пурӑнаҫҫӗ пулсан — салтак ятне ямаҫҫӗ пулӗ, ӑна эпӗ ҫирӗп ӗненетӗп.

...Фронтра чухне хамӑн вӑрҫӑчченхи тус-юлташсем, чӑваш писателӗсем ҫинчен питӗ пӗлес килетчӗ. Ун чухне вӗсем пурте тенӗ пекех вӑрҫӑраччӗ — тӗрлӗ фронтсенче. Нумайӑшӗн адресӗсене пӗлме мана Семен Васильевич Эльгерпе Аркадий Эсхель тата Куҫма Чулкаҫ пулӑшрӗҫ. Майӗпе вара эпӗ П. Хусанкайпа, В. Алакӗрпе, В. Бараевпа, Ф. Ҫиттапа, Н. Илпекпе тата ытти хӑшпӗр юлташсемпе ҫыру ҫӳрете пуҫларӑм. Вӗсен кашни ҫырӑвӗ ҫав тери савӑнтаратчӗ, юнашар ларса калаҫнӑ пекех туйӑнатчӗ.

Анчах пурте мар ҫав. Хӑшӗсем кӑмӑла хуҫатчӗҫ, чӗрене ыраттаратчӗҫ.

1942 ҫулхи майӑн 26-мӗшӗнче эпӗ дневника ҫапла ҫырнӑ:

«Паян Хусанкай питӗ хурлӑхлӑ хыпар пӗлтерчӗ: Андрей Петтоки ҫапӑҫу хирӗнче пуҫне хунӑ иккен. Питӗ шел — таса чунлӑ ҫынччӗ!»

Калама та ҫук хытӑ хуйхӑртӑм эпӗ Петтоки вилнӗшӗн. Эпир унпа пӗр вунӑ ҫул хушши питӗ туслӑ пурӑннӑччӗ. Савӑнмалли те, хурланмалли те пулнӑ пирӗн. 1937 ҫулта пире иксӗмӗре те ним сӑлтавсӑрах «халӑх

тăшманĕсене пулăшакансем» тесе айăплама пуçласан, эпир çав элекрен тухнă йывăрлăхсене пĕрле тӳссе иртертĕмĕр. Яланах пĕр-пĕрне пулăшнă. Андрей, хăйĕн юлташне пулăшас тесе, юлашки кĕпине хывса пама хатĕрччĕ. 1939 çулхи декабрьте, эпĕ Финлянди вăрçинче, Карельски перешеекра аманнă хыççăн Ленинградри госпитальте выртнă чух, вăл, Куйбышевра историксен курсĕнче вĕренекенскер, пĕчĕк стипенди кăна илекенскер, мана телеграфпа вунă тенкĕ куçарса панчĕ: «Пирус илме те укçу çук пуль...» тенĕччĕ çырăвĕнче. Куççулĕ тухса кайрĕ çав укçана илсен! Тăвансем те, аттеанне те пĕр пус яман, ку вĕт — ют çын, тĕрĕссипе каласан!

Вилессе вăл, хăйĕн взвочĕпе тăшмана хирĕç атакăна ыткăнса вилнĕ, пичĕпе хĕвеланăç еннелле ӳкнĕ. Атака путланнă, сывă юлнисем малтанхи рубежа таврăннă. Андрей «нейтралка» («нейтральный», «никамăн та мар», пирĕн позицисемпе тăшман позицийĕсем хушшинчи çĕр) çинче выртса юлнă. Ун виллине кайран тин илсе пытарнă....

Ылтăн чунлă çынччĕ, хĕрӳ чĕреллĕ патриотчĕ, талантлă поэтчĕ халь Муркаш районне кĕрекен Ахмане чăвашĕ Андрей Трофимович Петтоки! «Нарспие» чăн малтан никам та мар, вăл — хăй пуçарнипе! — вырăсла куçарса Мускавра кăларчĕ вĕт! Унăн граждан вăрçи çинчен çырнă сăввисен хĕрӳлĕхĕ паян кун та сĕвĕрĕлмен.

Нихçан та манассăм çук эпĕ Андрее...

Акă тата 1942 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче çырса хуни: «Питĕ хурлăхлă хыпар килчĕ: Ивник вилнĕ, тет. Туберкулез пĕтернĕ-мĕн ăна... Питĕ шел, анчах тин мĕн тăвăн ĕнтĕ? Çара тухса кайнă чух вăл мана пылчăк ăшшĕнех пристане ăсатма пынăччĕ. Унтан, Владимиртан таврăнсан, ун патĕнче хăналаннăччĕ... Вăрçă пулман пулсан — вилместчĕ ĕнтĕ, сывалма кайса килетчĕ.

Сайралаççĕ пирĕн ретсем. Петтоки, Ивник... Çитесси кам-ши тата? Вăрçă пĕтиччен нумайăшĕ пуçĕсене хурĕç-ха. Тен, çитесси эпĕ пулăп? Ăçтан пĕлес? Кашни самантрах вилĕм айĕнче çӳретпĕр...»

Чăнах çав, Аслă Çĕнтерӳ кунĕ, пĕтĕм халăх телейĕн кунĕ, çитиччен тата нумай тус-юлташсем çапăçу хирĕсенче пуçĕсене хучĕç — Владимир Бараев, Максим Да-

нилов-Чалдун, Федот Çитта, Максим Ястран, Кăтра Мишша, Николай Чурбай...

Вĕсене пурне те эпĕ питĕ лайăх пĕлнĕ, хăшĕсем манăн çамрăк чухнехи çывăх туссем пулнă.

Шăп вăрçă пуçланас умĕн, вунпилĕк-çирĕм кун хушши, мана Владимир Бараевпа пĕр пÿлĕмре пурăнма тиврĕ. Пытарас мар, ун çинчен хулара ырă мар сăмахсем те калаçкалатчĕç — йĕркесĕр çын, хăйне тыткалама пĕлмест, хăш чух иртĕнсе каять, текелетчĕç. Анчах çынни пĕртте ун пек мар иккен! Ăна, тĕрĕссипе, «лăпкăн пурăнма» юратакансем, «эп сана тивместĕп, эс те мана ан тив» текен мещенле-обывателле чунлă этемсем тиркенĕ — чĕлхи тÿрĕ пулнăшăн, хăй пĕр-пĕр çын çинчен мĕн шутланине ним пытармасăр, куçран каланăшăн юратмасăр тиркеме тăрăшнă.

Çынни питĕ лайăхскер-мĕн! Аслă, сăпай, ĕçчен. Нумай вуланă. Тĕнчери лару-тăрăва, çĕршыври пурнăçа лайăх пĕлет. Вырăсла каласан — «на уровне века». Эпир пĕрле пурăннă вăхăтра çине тăрсах ĕçлерĕ — «Вилĕме çĕнтерекен» ятлă поэма-юмах çырчĕ. Пÿлĕмрен ир-ирех тухса кайса пысăк паркри пĕр-пĕр «грибок» айне вырнаçса ларать те, апат çинчен те манса каять. Шел, вăрçă пуçланнипе çав поэмăна çырса пĕтереймерĕ.

Фашистла Германи пирĕн çĕршыва тапăнни çинчен эпир июнĕн 22-мĕшĕнче, ирхи апат умĕн пĕлтĕмĕр.

— Пуçланчĕ эппин, Яккăлччă,— терĕ вăл мана.— Тĕнче хальччен курман вăрçă пулать ку. Аркататпăр Гитлера! Шăл çемми пулмасть пирĕн çĕршыв уншăн. Çапса ватапăр шăлĕсене, унтан пуçне касса илсе йытăсене пăрахса паратпăр...

Кунĕпех вăрçă çинчен пычĕ сăмах. Бараев питĕ хастаррăн калаçрĕ. Хăйне кăкăрĕнчен тĕллесе:

— Иккĕшĕнчен пĕри пулать ĕнтĕ — или грудь в крестах, или голова в кустах,— терĕ.

Каçалапа уйрăлтăмăр, манăн ун чухне ялта пурăнакан çемье патне часрах çитмеллеччĕ. Бараев мана Шупашкара каякан пăрахут çине ăсатса ячĕ.

— Встретимся в Берлине! — терĕ вырăсла, ман алла чăмăртаса.

Хĕрÿллĕ патриот çеç калама пултарнă çакна.

Темиçе кунтанах Шупашкарта тĕл пултăмăр. Вăл Хĕрлĕ площадь урлă питĕ васкаса утатчĕ.

— Эсремет Гитлерне ылханса пит хаяр сăвăсем çыртăм-ха, редакцие каятăп...

Тата темиçе кунтан вăл вăрçа тухса кайрĕ. Тек тĕл пулаймарăмăр вара.

Фронтра питĕ паттăр салтак пулнă пирĕн тусăмăр. Вăл ним хăрамасăр, тăшмана чун-чĕререн кураймасăр çапăçни çинчен П. Щипцов хăйĕн «Хӳме» ятлă документлă повеçĕнче тĕплĕн каласа кăтартнă.

Ку произведенире сăмах 1941 çулхи кĕркунне Подольскри пехотăпа артиллери училищисенче вĕренекен курсантсем Малоярославец тăрăхĕнче Мускав çинелле ăнтăлса килекен фашист танкĕсен çулне епле пӳлсе лартни çинчен пырать. Начар хĕçпăшалланнă курсантсене питĕ йывăр килнĕ, тăшман салтаксен йышĕ тĕлĕшпе те, техника енĕпе те курсантсенчен темиçе хут вăйлăрах пулнă, çапах та çамрăк патриотсем — пулас офицерсем — парăнман, Гитлер эшкерĕсене Мускав еннелле яман. Çав паттăрсем хушшинче Владимир Бараев та пулнă...

Унпа пĕрле çапăçнă юлташĕсем аса илсе каланисем те, вăл хăй фронтран çырса янă çырусем те, ăнсăртран упранса юлнă дневник сыпăкĕсем те вăл чăн-чăн совет салтакĕ, кăвар чĕреллĕ патриот пулнине кăтартаççĕ.

В. Бараев çырнисене пухса 1961 çулта «Сӳнми хĕлхем» ятпа уйрăм кĕнеке туса кăларнă. Унта Бараевăн фронтран янă хăшпĕр çырăвĕсене те кăтартнă. Кĕнеке умсăмахĕн авторĕ С. Шавлы çав çырусене тĕрĕс хакласа çырнă: «вĕсенче... (Бараев çырăвĕсенче — *Л. А.)* çирĕп шухăш-кăмăл, иксĕлми ĕмĕт-шанчăк, тĕрĕслĕх, вăй-хăват вĕресе тăрать. Йывăр та хĕсĕк килнĕ самантсенче те Бараев нихçан та пуç усман, малалла пăхнă, малаллах талпăннă. Çĕршыв чĕннипе, вăл ретри салтакран совет офицерне çити ӳссе, аслă партин членĕ пулса, Тăван çĕршывшăн пуçне хунă...»

Хăй Коммунистсен партине епле тата мĕнле кăмăлпа кĕни çинчен Бараев çапла çырнă: «...эпĕ парти билетне çăмăллăн мар, тивĕçсĕр хыпкаланчăкпа мар, юнпа илесшĕн пулнă! Мĕншĕн тесен — парти билечĕ, Ленин партийĕн билечĕ — сăмахпа каласа пама çук, хут çине çырса кăтартма çук хăватлă, пĕтĕм чун-чĕрене вăй-хăват паракан документ, ăна пĕтĕм чун-чĕререн парти ĕçĕн тĕрĕслĕхне парăннă çын çеç тивĕçлĕ, çăмăл-

лăн илнĕ билет пит йӳн пулĕ, эпĕ парти билетне юнпа илетĕп!»

Çак сăмахсенче — Бараевăн чунĕ, унăн çутă сăнарĕ.

...Федот Çиттапа та туслă пулнă эпĕ. 1938 çулхи ноябрь уйăхĕнче эпир Хĕрлĕ Çарти действительнăй службăна пĕрле кайрăмăр. Ун чух пире, аслă шкултан вĕренсе тухнă çамрăксене, пĕр çулталăклăх тесе илчĕç, анчах кайран саккун улшăнчĕ те, службăра икĕ çулталăкĕпех пултăмăр. Эпир Çиттапа иксĕмĕр пĕр ротăна, пĕр взвода, пĕр отделение лекрĕмĕр. Казармăра пирĕн койкăсем те юнашарччĕ. Сăмах майĕн каласан, çарта вăл мана эпĕ «Пĕрре çуркунне» повеçе çырнă чух юлташла пулăшрĕ, унтан ăна, журналистсен институтĕнчен вĕренсе тухнăскере, срокченех кĕçĕн политрук званине парса, дивизи хаçачĕн редакцине илчĕç. Финляндипе вăрçă пуçлансан, Карельски перешеекра эп ăна пĕрре кăна куртăм, вăл пирĕн стрелковăй подразделение хаçат валли материал илме пынăччĕ, унтан мана амантрĕç те эп госпитале лекрĕм. Вара вăрçă чарăннă хыççăн тин, Ленинградри консерваторинче вĕренекен çамрăк композитор Гриша Хирбиков (Хирбю) хваттерĕнче тĕл пулса, хамăрăн çĕнтерӳшĕн, эпир сывă юлнăшăн черккесем çĕклерĕмĕр...

Çитта Хĕрлĕ Çарта кадровăй офицер пулса юлчĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланнă чух вăл Ханко çурутравĕнче пулнă, паттăррăн çапăçнă, вăл пĕррехинче хамăрăн салтаксене контратакăна илсе кайса гитлеровецсене хăйсем йышăннă позицирен çапса кăларни çинчен Совинформбюро сводкинче те çырнăччĕ.

Унăн пурнăçĕ 1944 çулхи февралĕн 27-мĕшĕнче татăлнă...

...Максим Николаевич Данилов-Чалдунпа та, вăл манран нумай аслă пулин те, туслă пулнă эпĕ, 1935 çулта Мускавран институт пĕтерсе килнĕ хыççăн пĕр хушă чăваш писателĕсен союзĕнче пĕрле ĕçленĕ. Максим Ястрапа пĕр хваттерте пурăннă, Николай Чурбай — пирĕн енчи чăваш, эпир унпа Етĕрнери педтехникумра пĕр вăхăтра вĕреннĕ.

Нихçан та манас çук вĕсене. Яланах пирĕн асра пулĕç вĕсен ырă ячĕсем!

## ЮЛАШКИ СУХАРИ

1943 çулхи февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче пирĕн дивизие, Ржев тăрăхĕнчен кăларса, Мускав, Кашира, Лев Толстой станцийĕсем урлă кăнтăралла илсе кайрĕç те, Елец станцинче эшелонсем çинчен антарчĕç.

— Орелпа Курск еннелле каятпăр,— пĕлтерчĕ тин çеç политотдел начальникĕпе калаçнă пирĕн редактор.

Дивизие Сталинградра чапа тухнă Батов генералăн 65-мĕш армине кĕртнĕ-мĕн.

Çанталăк питĕ усалччĕ, пĕрмай çил-тăман вĕçтерет, çулсене юр ним палăрми шăлса лартнă. Пирĕн редакцин пĕтĕм «транспорчĕ» те виçĕ лаша кăначчĕ (Калинин облаçĕнче пĕр бомбежка вăхăтĕнче редакци грузовикĕ арканнă хыççăн пире машина тупса параймарĕç). Çунасем çине шрифт, хаçат пичетлемелли машина, икĕ рулон хут, радиоприемник тиенĕ май, хамăр, ытти салтаксем пекех, çуран утаттăмăр. Çăмăл марччĕ куçпуç курми çил-тăман витĕр пĕр хӳтлĕхсĕр çӳреме! Икĕ талăкран Ливны хулине (Елецран 80 километр) çитрĕмĕр. Ывăннипе вилесле çывăрас килнĕ пулин те, çĕрле хаçат кăлартăмăр — салтаксене пирĕн Совинформбюро пĕлтерĕвĕсене, епле пулсан та, памалла-çке-ха!

«Хули ку самай пысăк — Шупашкартан кая мар,— çырса хунă эпĕ Ливны çинчен,— анчах пĕтĕм хулипе те тĕрĕс-тĕкел çурт юлман. Нимĕçсем йăлтах аркатса пĕтернĕ...»

Пĕр вунă кун пуль ахăрчĕ çанталăк, айлăн-çийлĕн çил-тăман çавăрттарчĕ. Пĕтĕм пĕлĕт йăтăнса анать, тейĕн. Юр — пилĕк таран, кăкăр таран! Темиçе кун хушшинчех çавăн чухлĕ кĕрт хывса лартнине эпĕ нихăçан та курман. Артиллерие, тыл обозĕсене малалла илсе кайма саперсем пĕрмай юр хырчĕç, вĕсене пулăшма таврари ялсенчи «гражданскисене» нумай илсе тухрĕç, анчах мĕн усси? Траншейăсем пек тунă çулсене çур сехетрен каллех юр тулать.

Апла пулин те, эпир малаллах пытăмăр.

«Ĕнер тата 45 километр утрăмăр... Паян та 35 километр каймалла... Пурĕ вара — çуран утни — 200 км çитет...» — çырса хунă эпĕ дневнике.

Утмаллаччĕ çав, васкамаллаччĕ. Дивизин малти подразделенийĕсем гитлеровецсене чарăнса тăма памасăр хĕвеланăçнелле хăвалатчĕç. Тăшман салтакĕсене

тыткăна илетчĕç. Вĕсене эпир çул çинче кашни кунах кураттăмăр — автоматчиксем тыла илсе каятчĕç.

Çанталăк кăшт тамалсан, пирĕн пуç çийĕпе, фронт еннелле, «У-2» самолетсем йышлăн вĕçме тытăнчĕç. Ку тĕлĕнтерчĕ пире: мĕншĕн кăнтăрлах вĕçеççĕ? Ку йышши самолетсем тăшман позицийĕсем çине бомбăсем тăкма сĕм-çĕрле çеç вĕçекенччĕ-çке? Ржев тăрăхĕнче сахал мар курнă вĕсене. Лайăх ĕçлетчĕç!

Кайран тин пĕлтĕмĕр: пирĕн артиллеристсен снарядсем пĕтнĕ иккен. Машинăсемпе турттарса пыма май килмен — çул çук. Кузов таран юр. Ирĕксĕрех командовани снарядсене малти позицие çав хуть ăçта та анса ларма пултаракан «кукурузниксемпе» турттармалла тунă...

Юлашкинчен çанталăк çапах та йĕркене кĕчĕ. Малти подразделенисем тăшмана çаплах хĕвеланăçнелле хăваларĕç. Редакци те виç-тăват кунтанах малалла, фронт çывăхнерех куçса пычĕ. Кашни ялтах фашистсен хăрушла тискер ĕçĕсем çинчен илтрĕмĕр. Эпĕ кунти çынсем (стариксем, хĕрарăмсем, тепĕр чух ачасем те) каласа кăтартнисене кĕскен-кĕскен дневнике çырса пытăм — кайран питĕ кирлĕ пулчĕç вĕсем мана.

Çавăн пек кунсенчен пĕринче, каçалапа, Курск облаçĕнчи пĕр ялта, çĕтĕк-çатăк пӳртре вырнаçнă пирĕн редакцие икĕ палламан офицер пырса кĕчĕç. Иккĕшĕ те шур кĕрĕкпе, портупейлă пиçиххисем çыхнă, пĕр енче полевой сумка, тепĕр енче пистолет. Эп пĕчченехчĕ, çитес номер валли материал туса ларатăм.

— Çакă-и-ха дивизионка редакцийĕ? — ыйтрĕ пĕри, çамрăкраххи, сăнĕпе грузин евĕрлĕрехскер.

— Çакă,— терĕм эпĕ, пукан çинчен тăрса.

— Эсир хăвăр кам пулатăр?

— Редакци секретарĕ.

— Паллашар, эппин: эпир арми хаçачĕн редакцийĕнчен.

— Питĕ хавас сире курма...

Вĕсем мана пĕрин хыççăн тепри ал пачĕç.

— Илья Гурский,— терĕ малтан калаçма тытăнни.

— Шолохов-Синявский,— терĕ тепри, шуранкарах сăнли. Унăн тăнлавĕсем тĕлĕнчи çӳçĕ те кăвакарнăччĕ.

— Эп... эп пĕлетĕп сире,— терĕм ăна, кăштах именнĕ пек пулса.

— Епле майпа пĕлетĕр-ши?

— Вуланă сирĕнне... Сирĕн кĕнекĕрсем хамăн килти библиотекăра та пур.

Чăн та, эпĕ çак Ростовра пурăнакан Георгий Филиппович Шолохов-Синявский писателĕн икĕ кĕнекине — «Суровая путина» тата «Братья» романĕсене юратсах вуланăччĕ. Халь акă, унпа ăнсăртран тĕл пулма тиврĕ... Унăн юлташĕ И. Гурский те писатель иккен, Белоруссирен хăй. Арми хаçачĕн редакцинче ĕçлеççĕ. Пирĕн дивизири паттăрсем çинчен çырма килнĕ.

Редакцие чăн-чăн писательсем пырса тухни мана питĕ хавхалантарчĕ. Эпир вăрахчен калаçса лартăмăр — пуринчен ытларах писательсем вăрçă вăхăтĕнче мĕнле ĕçлени çинчен.

— Сывă юлма пӳрнисем вăрçă хыççăн нумай çырĕç-ха, тен, çĕнĕ «Война и мир» та çуралĕ,— терĕ Шолохов-Синявский.

Вăл хăй вăрçă хыççăн «Волгины» ятлă пит лайăх роман çырса кăларчĕ — вăрçă паттăрĕсем çинчен.

Ирхине, редактор хушнипе, эпĕ вĕсене малти линие ертсе кайрăм. Тĕрĕссипе, çав кунсенче ăна, çав «малти лини» тенине, тупма та хĕнтерехчĕ. Дивизин пĕр полкĕ чылай мала кайнă, тепри каярах юлнă, хăш чух вĕсем хушшинче пĕр салтаксăр пушă вырăн та пулкалатчĕ.

Çул çинче мыскара та курмалла пулчĕ. Пĕр тĕлте тем тиенĕ (ахăртнех, боеприпассем пуль) тăват-пилĕк грузовик лакса ларнă — çул çуккипе. Эпир вĕсем патнелле çывхарса пытăмăр. Сасартăк таçтан мурĕнчен «юнкерс-88» сиксе тухрĕ те, çав машинăсем çинелле чăмса, темиçе бомба ывăтрĕ, унтан каялла çаврăнчĕ те пулемечĕсенчен пеме тапратрĕ. Эпир, çултан пăрăнса, тарăн юр ăшне выртрăмăр. «Юнкерс» час каймарĕ, темиçе хут та каялла таврăна-таврăна печĕ. Пульăсем пиртен инçе те мар тăкăнчĕç...

Кунтан хăтăлса пĕр километр пек кайсан, пире «ирĕклĕ ухутана» тухнă «мессершмитт» хуса çитсе, пулеметран сапса иртрĕ.

— Телейлĕ эпир паян,— терĕ Гурский,— пĕри те лектерейместь...

— Эп çуралнă кун, çавăнпа тур сыхлать пире,— кулса илчĕ Шолохов-Синявский.

Эпир пĕр стрелковăй полкра пултăмăр, каялла килнĕ чух артдивизиона кĕрсе тухрăмăр, çынсемпе калаçрăмăр. Юлашки çапăçусенчи паллăрах фактсене çырса

илтĕмĕр. Пирĕн хыпăрсем хытах вырнаçчĕ ĕнтĕ, анчах полкра та, дивизионта та кухня тавраш̆ĕ курăнмарĕ. Ыйтма аван мар пулчĕ.

— Редакцие таврăнсан çийĕпĕр-ха,— терĕм юлташсене.

Анчах редакцире те нимĕн çук иккен. Старшина продовольстви паракан çĕре кайса килнĕ — пушăллах таврăннă. Обозсем татăлса юлнă-çке! Вĕсем валли çул тума пĕр танк янă имĕш.

Чăн та, старшина чейпе тăвар илсе килнĕччĕ. Пирĕн печатник (вăлах повар) шыв вĕретрĕ. Çавăн чух вара эпĕ хамăн алçырăвĕсене илсе çӳрекен фанер ещĕкре тахçантанпах НЗ — неприкосновенный запас! — темиçе сухари выртнине аса илтĕм. (Чăваш тĕплĕ вĕт вăл, яланах ыран мĕнле пурăнасси çинчен шухăшлать!). Вĕри чее тимĕр кружкăсене ярсан, эпĕ писательсем умне ултă самай пысăк сухари кăларса хутăм. Хитре канфет тыттарнă ачасем пек савăнса кайрĕç ман хăнасем!

— Деликатес! * Чăн-чăн деликатес!—терĕ Гурский, вĕри шывра йĕпетсе çемçетнĕ сухари çине тăвар сапса.

— Паян, хам çуралнă кун, çакăн пек тутлă апат çиессе ĕмĕтленмен те эпĕ,— терĕ Шолохов-Синявский.

Çапла хăна туса ятăм вĕсене. Темиçе уйăхран, çулла, арми политотделне хаçат валли хут илме кайсан, Гурскипе Синявский мана офицерсен столовăйне илсе кĕрсе хăналарĕç. Виçĕ тĕрлĕ апат çеç мар — трофейлă француз ромне те ĕçтерчĕç. Эпĕ вĕсен апатне те, эрехне те мухтарăм.

— Çапах та ку апат сан патра тăвар сапса çинĕ сухарие çитмест,— терĕ Синявский ним кулмасăр.

Вăрçă хыççăн чылайран — пĕр вунă çултан пулĕ — ман алла Ростоври писательсем кăларакан «Дон» журнал лекрĕ. Редколлеги членĕсем хушшинче эпĕ Шолохов-Синявский хушаматне куртăм. Савăнтăм: сывă-ха, эппин, старик! Тӳрех çыру ятăм — Курск пĕккинче мĕнле тĕл пулнине аса илтертĕм. Эрнеренех ответ килчĕ, вăл та эпĕ сывă юлнăшăн савăнать, мана телей, творчествăра ăнăçлă ĕçлеме ыр сунать.

Хăй çуралнă кун çитернĕ икĕ сухари çинчен те манман...

---

* Сайра тĕл пулакан тутлă апат.

Шел, çак талантлă çын пĕр икĕ çул каялла çĕре кĕчĕ.

## «ЧĔЛХЕ» ТЫТАКАНСЕМ ПАТĔНЧЕ

Çав çулах, çурхи шыв-шур тапраннă вăхăтра, эпĕ малти линирен хаçат валли материал пухса килтĕм кăна (питĕ ывăннăччĕ ĕнтĕ!), редактор мана тÿрех:

— Леонид, санăн халех политотдела каяс пулать! — терĕ.

— Мĕн тума? — тĕлĕнтĕм эпĕ.— Манăн ыранхи номер валли материал çырмалла-иç?

— Материалĕ тармĕ-ха вăл. Бурцев хăй шăнкăравлана медсанбата, унтан килсе каларĕç.

Бурцев пирĕн политотдел начальникĕччĕ, полковник, пит хаяр старик. Хăй хушнине вăхăтра тумасан — çисех ярать.

— Каяс пулать эппин,— терĕм эпĕ.— Анчах мĕншĕн, мĕн тума чĕннине каламан-и?

— Çук. Агаков халех ман пата килтĕр, тенĕ çеç.

Выçса килнĕскер, эпĕ васкасах апат çиме лартăм. Хам пĕрмай шухăшларăм: чăнах та, мĕншĕн чĕннĕ-ха мана Бурцев? Çитменнине, халех пыма хушнă... Ятлама чĕнес пулсан... мана ятлама сăлтавĕ çук пек, редакцири ĕç йĕркеллĕ пырать, айăпа кĕмен... Пĕр-пĕр ĕç хушать пулинех? Хĕлле эпĕ хаçатра «Огонь по детоубийцам!» ятлă очерк кăларсаттăм, Бурцев хамăр редактор умĕнчех мухтарĕ мана уншăн. Пур подразделенисенче те сасăпа вуласа пама хушрĕ, ун пек статьясем ытларах çырас пулать, терĕ. Тен, çавăн пекки мĕн те пулин çырма хушать?

Тулта тĕттĕмленме пуçланăччĕ ĕнтĕ. Çанталăк ахаль те ăмăр, тĕтреллĕрех. Мĕнле çиткелĕп политотдел тăракан М. ялне? Каймалăх пур — пилĕк-ултă километртан кая мар. Çулĕ начар, уйра юр ирĕлсе пĕтнĕпе пĕрех, çул хытти çеç юлнă, вăл та пулин нумай çĕрте таталнă, шыв кÿлленсе тăрать, халь кăна малти линирен таврăннă чух куртăм...

Анчах ним тума та çук, приказ — закон. Старшина редакци лашисенчен пĕрине, лайăххараххине, йĕнерлесе пачĕ те — утланса тухса кайрăм. Кĕçех пăч-тĕттĕм пулса ларчĕ, виç утăмри те курăнмасть. Лашана чуптарма та çук, урисем пĕрмай путаççĕ. Виç-тăватă хутчен хырăм таранах çурхи шывлă лакăма анса кайрĕ.

Çитрĕм çапах та.

— Полковник юлташ, эсир хушнипе лейтенант...— рапорт пама тăтăм эпĕ чей ĕçсе ларакан начальнике, анчах вăл итлесе те пĕтермерĕ, ал сулса, пукан çине кăтартрĕ:

— Лар, Агаков, сан валли васкавлă ĕç пур...

— Итлетĕп.

— Эсĕ пĕлетĕн вĕт-ха, эпир чылай хушă «чĕлхе» тытаймасăр пурăнатпăр. Арми штабĕнчен те лекрĕ пире унпăн. Ĕнер каç тинех пулчĕ ку ĕç — 201-мĕш полк разведчикĕсем «тимĕр хĕреслĕ» пĕр фельдфебеле сĕтĕрсе килнĕ. Маттур ачасем! Эпир паян вĕсене награ-дăсем патăмăр ĕнтĕ, хăшне — Хĕрлĕ Çăлтăр, хăшне— медаль... Санăн, халех вĕсем патне çитсе, полк развед-кин командирĕпе те, шыравра пулнă разведчиксемпе хăйсемпе те калаçмалла та — ыранхи хаçатра вĕсем çинчен лайăх статья кăлармалла. Ăнлантăн-и?— мана куçран пăхса ыйтрĕ начальник.

— Ăнланатăп...— терĕм эпĕ, анчах хам ăшра шу-хăшласа илтĕм: мĕнле ĕлкĕрĕп-ха эпĕ полковник хуш-нине тума? Разведчикĕсем патне çитмелле, вĕсем «чĕл-хе» мĕнле тытса килни çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлмелле, редакцие таврăнса, статйине çырмалла, унтан набор, вĕрстка, корректура...

Паллах, хам çакăн пек иккĕленнине пĕртте систер-мерĕм.

Полковник хăй умĕнче выртакан карттă çине кăтартрĕ.

— Разведчиксем ак çак пĕчĕк юханшыв хĕрринчи ялта,— ăнлантарчĕ вăл мана.— Тепĕр енче — нимĕç-сем. Вĕсем унта халь васкасах оборона линийĕ тăваç-çĕ — траншейăсем чаваççĕ, дзотсем хатĕрлеççĕ, тек кунтан чакмастпăр, теççĕ пулмалла. Санăн çыран хĕр-рипе кайма тивет — урăх çул çук, ик çырма урлă каçа-тăн, анчах асăрхан, нимĕçсем çĕрле те перкелеççĕ, уйрăмах ак çак ик çырма хушшинчи сăрта темшĕн пит юратаççĕ, минăсем те пăрахкалаççĕ унта. Эп сана ко-мендант взводĕнчен пĕр боец парăп, çулне пĕлет вăл, темиçе те пулнă унта... Задачăна ăнлантăн пуль?

— Ăнлантăм, полковник юлташ.

— Апла пулсан, кай, кашни минут хаклă.

Кĕçех политотдел йышăннă пÿрте автоматлă сал-так кĕрсе тăчĕ — лутака, патвар, тин çеç мунчаран

тухнă çын пек хĕп-хĕрлĕ питлĕ, пысăк кăвак куçлăскер, Хăй пĕр вăтăр çулсенче пулĕ.

— Илларионов,— терĕ ăна полковник,— çак лейтенанта халех 201-мĕш полк разведчикĕсем патне ертсе кай. Анчах асту, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пултăр, пуля е мина çине пырса ан тăрăнăр!

— Есть! — аллине тăнлавĕ патне тытрĕ салтак.

Кайрăмăр. Сĕм-тĕттĕм. Урам тăрăх анаталла анса, сăрта хăпартăмăр. Нимĕçсем енче (юнашар пекех!) «дежурнăй» пулеметсем лăкăртаткаласа илеççĕ, пĕр ик-виçĕ хут ракетăсем вĕçсе хăпарчĕç, анчах тĕтре витĕр хытах çутатаймарĕç. Пĕр сырма,— ун тĕпĕнче кĕпер пекки те пур-мĕн,— сăрт, унтан каллех çырма... Хăпарсанах сад пуçланчĕ—колхоз сачĕ пулнă пулмалла вăрçăччен, йывăçĕсем хуп-хура лараççĕ, вĕсем хушшинче юр та ирĕлсе пĕтмен. Сасартăк пиртен инçе те мар мина ӳлесе пырса ӳкрĕ. Унтан тепри вĕçсе килни илтĕнчĕ. Тӳрех çĕре выртрăмăр.

— Çак тĕттĕмре мĕне кура переççĕ-ши, шуйттансем! — мăкăртатса илчĕ Илларионов.

— Пире хăратма,— терĕм эпĕ.

Виççĕмĕш мина ӳксе çурăлсан, осколоксем пирĕн пуçсем çийĕпех шăхăрса иртрĕç. Анчах урăх пемерĕ нимĕç. Эпир сиксе тăтăмăр та лапри-çĕприне пăхмасăрах малалла ыткăнтăмăр.

...Разведчиксем ял хĕрринчен виççĕмĕш çуртра вырнаçнă. Эпир пырса кĕнĕ чух хăшĕсем урайĕнче çывăратчĕç, сĕтел çинче «сорокопятка» гильзинчен тунă «лампа» йăсăрланать, ун тавра темиçе çын ларнă — домино çапаççĕ, пĕри ватник çаннине саплать.

— Салам, юлташсем, Бурцев хушнипе сирĕн пата корреспондент илсе килтĕм,— пĕлтерчĕ Илларионов.

Домино çапакансем çавăнтах выляма пăрахрĕç. Сĕтел хушшинчен харăсах иккĕн тăрса тухрĕç — икĕ лейтенант, пĕри çӳллĕ те çинçешкерех, сарă, типшĕм питлĕскер, тепри лутрарах, хуп-хура çăра çӳçлĕскер, сылтăм аллине хăй марлĕпе çыхса мăйĕнчен çакса янă.

— Разведвзвод командирĕ лейтенант Инкин,— терĕ сарри.

— Политрук Косолапов,— сулахай аллине тăсрĕ лутрараххи.

Эпĕ вĕсем патне мĕншĕн пынине каларăм. Кĕçех сĕ-

тел хушшине вырнаçса лартăмăр. Эпĕ ĕнтĕ блокнот кăларса хутăм.

— Каласа парăр, тархасшăн, йĕркипе... «Чĕлхе» тытма кайма мĕнле хатĕрленнĕ эсир, мĕнле кайнă, миçен, камсемпе, хăшĕ мĕн тунă, «чĕлхине» мĕнле тытнă, епле илсе килнĕ...

— «Шыравра» пулнисенчен хăшне-пĕрне вăратас пуль? — ыйтрĕ Инкин.

— Вĕсемпе те калаçасчĕ çав манăн...— терĕм эпĕ ăна хирĕç.

Инкин çывăракансене вăратма кайрĕ, сĕтел хушшинче эпир Косолаповпа иксĕмĕрех юлтăмăр.

— Эс мана палламастăн, анчах эп сана пит лайăх паллатăп, Агаков юлташ,— терĕ вăл темиçе самантранах.

— Мĕнле майпа-ши? Ăçта тĕл пулнă эпир? — ыйтрăм унран.

— Тĕл пулма тӳр килмен, анчах паллатăп. Фотографисене курнă, Шупашкарти хаçатсенче вуланă эс çырнисене.

— Земляксем мар пуль те эпир?

— Чи çывăх земляксем! Эп Етĕрне хулинчен.

— Етĕрне хулинчен?! Кур-ха, епле тĕлпулу!

— Çапла çав. Етĕрнесем эпĕ. Совет урамĕнче пурăннă, эс те, эп те вĕреннĕ педтехникумран инçе те мар... Яков Ананьевич пурăнать-и? Çырать-и?

Ку ыйту мана тĕлĕнтерсех пăрахрĕ: Яков Ананьевич — ман атте вăл, вата учитель.

— Ăна... ăна ăçтан пĕлетĕн тата? — çийĕнчех ыйтрăм лейтенантран.

— Педтехникумран вĕренсе тухсан, эпĕ пĕр çулталăк унпа пĕрле Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче ĕçлерĕм. Ун чух эсĕ Мускаври вĕренеттĕн...

Сăмах хыççăн сăмах. Манăн Косолапов çинчен ытларах ыйтса пĕлессĕм килчĕ, анчах май пулмарĕ — ĕнер «чĕлхе» тытса килнисемпе калаçмаллаччĕ. Косолаповăн паттăр ĕçĕсем çинчен эпĕ кайран, çулла «дивизионка» редакцине правительство наградисене илнĕ хамăр земляксене пухсан тин пĕлтĕм. Ун чухне кашниех хăй фронтра мĕн-мĕн туни çинчен каласа парчĕ. Косолапов вăрçăн пирвайхи уйăхĕсенчех фронта лекнĕ, нумай хура-шур курнă. Орденне ăна пĕррехинче контратакăна ыткăннă гитлеровецсене нимĕçсен çĕмрĕк

(гусеницисем таталнă) танкĕн туппинчен пере-пере аркатса тăкнăшăн панă иккен...

Разведчиксем патĕнче пĕр виçĕ сехет пултăм, пурин çинчен те лайăх ыйтса пĕлтĕм. Политотдела таврăннă чух, икĕ çырма хушшинче сăрт çинче, сасартăк нимĕç пулемечĕн вут-çулăмĕ айне пултăмăр. Чылайччен çĕр çумĕпе хырăмпа шума тиврĕ. Темле майпа мана лекмерĕ, анчах манпа пĕрле пынă Илларионов боеца амантрĕç — пуля пĕççинчен тивнĕ. Сăртран çырмана ансан, ун суранне çыхкаларăмăр та майĕпе политотдела çитрĕмĕр.

Начальник мухтарĕ пире. Мана часрах редакцие таврăнма хушрĕ. Эп хамăн лаша çине утлантăм та, каллех шыв лакăмĕсене пута-пута, тул çутăлма пуçланă вăхăтра редакцие çитрĕм. Пĕр курка чей ĕçнĕ хыççăн çырма лартăм...

Ирхине, пĕр вунă сехет тĕлнелле, пирĕн хаçат тухрĕ. Иккĕмĕш страницăна пĕтĕмпе тенĕ пекех ман очерк йышăннăччĕ — «Как был захвачен «язык» тесе ят панăччĕ ăна. Унтанпа вăтăр çул иртрĕ. Пит нумай япаласене аса илтерекен çак очерк халь те ман умра выртать...

## ТĂВАН САС

Фронтри пур редакцисен те радиоприемник пулнă. Паллах, пирĕн те пурччĕ. Мĕнле йышши, мĕнле маркăллă приемникчĕ-ши вăл — пĕлместĕп, анчах питĕ лайăх ĕçлетчĕ. Тӳсĕмлĕччĕ, çав паха. Хуть те мĕнле çанталăк пултăр, хуть те ăçта кăларса ларт — ĕçлет. Çитменнине тата самай аякри станцисене те тытать.

«Питани» сахаллипе, ăна питĕ перекетлĕ тытаттăмăр. Ирĕн-каçăн Совинформбюро пĕлтерĕвĕсене тата ТАСС паракан паллăрах пĕлтерӳсене йышăнатпăр та, приемнике тек тĕкĕнместпĕр. Совет çарĕсен Курск пĕккинчи историлле çĕнтерĕвĕ хыççăн кашни кун тенĕ пекех радиопа Верховнăй Главнокомандующи приказĕсене пама тытăнсан, хаçатра пичетлесе кăларма çав приказсене йышăнма тытăнтăмăр.

...1943 çулхи çулла, июнь уйăхĕнче пулас, редакци Курск облаçĕнчи Погодино ялĕнче тăнă чух, эпĕ пĕр ирхине приемник умне лартăм та, Информбюро пĕлте-

рӳне итлеме Мускав хумне шырама тытӑнтӑм. Унталла пӑратӑп приемник тӳмине, кунталла. Ҫав вӑхӑтра ман приемник сасартӑк... ч ӑ в а ш л а калаҫма тытӑнчӗ— шартах сикрӗм! Шупашкар!..

Сывлама та чарӑнтӑм пулмалла ҫав. Диктор сасси питӗ уҫӑмлӑ илтӗнет. Хамӑр республикӑри хыпарсене пӗлтерет. Анчах вӗҫне ҫитиччченех итлеме пулмарӗ, мӗншӗн тесен манӑн Совинформбюро пӗлтерӳне йышӑнмалли вӑхӑт ҫитрӗ, ӑна ҫырса илмесен редактор ман пуҫа касать.

Ун чухне ман мӑшӑрӑм Александра Лазарева шӑпах Шупашкарта, радиокомитетра ӗҫлеме тытӑннӑччӗ. Эпваскасах ун патне ҫырса ятӑм: ҫапла та ҫапла, паян Шупашкар сассине илтрӗм, питӗ хӗпӗртерӗм уншӑн...

Тепӗр вунӑ кунтан ответ илтӗм:

— Вӑрҫӑ паттӑрӗсем ҫинчен ҫырнӑ ҫӗнӗ калав е очерк пекки пур пулсан — ярса пар, эпир ӑна радиопа вуламалла тӑвӑпӑр, хӑш кун, хӑш сехетре вулассине малтанах пӗлтерӗп те, эс ӑна итлӗн...

Шӑпах манӑн тин ҫеҫ ҫырнӑ «Вӗсен ним айӑп та пулман» ятлӑ калав пурччӗ — нимӗҫ карателӗсем икӗ арҫын ачана пӗр айӑпсӑрах айӑпласа ҫакса вӗлерни ҫинчен. Ҫавна таса хут ҫине куҫарса ҫыртӑм та ярса патӑм.

Август уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче ответ пычӗ:

— Сан калавна йышӑнчӗҫ, августӑн 14-мӗшӗнче 18 сехет те 20 минутра итле...

Ҫав куна, ҫав сехете вара эпӗ ниҫта кайса кӗрейми ӑшталанса кӗтсе пурӑнтӑм. Ҫуралнӑ ҫӗршывран, тӑван Шупашкартан 1000—1200 километр инҫетре, вӑрҫӑра, хамӑн калава тӑван чӗлхепе вуласа панине итлетӗп пулать те!..

Кунӗ те, сехечӗ те ҫитрӗ.

Августӑн 15-мӗшӗнче дневнике ҫапла ҫырса хунӑ:

«Ӗнер Мускав вӑхӑчӗпе 18—20-ре Чӑваш радиостанцийӗ тӑрӑх хамӑн «Вӗсен ним айӑп та пулман» калава вуласа панине илтрӗм. Вӑйсӑртарах пулин те, пӗтӗмпех ӑнланмалла илтӗнчӗ. Анчах кам вуланине уйӑрса илме пулмарӗ. Шура-ши? Кун ҫинчен ун патне ҫыру ҫырса ятӑм...»

Малтанхи калава итленӗ хыҫҫӑн ик-виҫ кунтанах эпӗ тата тепӗр калав — «Салтак чунӗ» — ятлине ярса патӑм. «Ҫӗнӗ калавна августӑн 28-мӗшӗнче, малтанхи-

не вуланă вăхăтра паратпăр, ăна хам вулатăп...» — пĕлтерчĕ мана мăшăрăм.

Хăй вулать! Эппин, эпĕ хамăн чи хаклă, чи çывăх çын сассине илтетĕп пулать! Пин çухрăмран...

Вăл кунсенче Курск пĕкки тавра питĕ вăйлă çапăçусем пулса пычĕç. Кунта тăракан совет çарĕсене татса илсе тĕппипех пĕтерме, пире валли те «Сталинград хуранĕ» пекки тума ĕмĕтленнĕ гитлеровецсем пирĕн çарсен хурçă стенине çапăнса арканчĕç, хăйсем каялла чакма тытăнчĕç, анчах парăнасшăн марччĕ-ха çапах та. Халь ĕнтĕ сывлăшра эпир вăйлăрах пулнă пулин те, вĕсен самолечĕсем фронт çывăхĕнчи ялсем çине вĕçĕмсĕр бомба тăкрĕç, ишĕлтерчĕç, çунтарчĕç. Унччен ялта тăнă пирĕн редакци тарăн çырмари блиндажсене куçрĕ. Кунта приемник сасси вăйсăрланчĕ, хăш чух Совинформбюро пĕлтерĕвĕсене те аран çырса илеттĕмĕр, Мускав ытлашши инçех мар пулин те.

Эпĕ çав числара, çав сехетре Шупашкартан ман калава парасси, ăна хамăн арăм вуласси çинчен редакцире ĕçлекенсене пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ.

— Телейлĕ эсĕ! Хăвăн арăмун сассине илтетĕн!..— ăмсанчĕç мана юлташсем.

Хайхи кунĕ те сехечĕ те çитрĕ. Эп Шупашкар хумне тытрăм. Блиндажра шăп пулчĕ. Наборщиксем ĕçе пăрахрĕç — мана кансĕрлес мар тесе. Хам калама çук пăлханатăп...

— Литература передачи пуçлатпăр. Паян эпир писатель-фронтовик Леонид Агаков çырнă «Салтак чунĕ» ятлă калава паратпăр. Ăна Александра Лазарева вулать,— терĕ диктор.

Питĕ вăйсăр, таçтан çĕр айĕнчен тухакан сасă пек çеç илтĕнет, çапах та илтĕнет. Илтĕнет!.. Санюк сасси! Тăван сас!..

Сывламан пек лартăм. Наборщиксенчен пĕри хуллен:

— Илтĕнет-и мĕн те пулин? — терĕ.

Эп ал султăм кăна: ан кансĕрле, тархасшăн!

Çав вăхăтра блиндажа редактор пырса кĕчĕ.

— Ма ĕçлеместĕр? Мĕн туса ларатăр? — кăмăлсăррăн ыйтрĕ вăл наборщиксенчен.

— Хуллентерех, майор юлташ, аслă лейтенант хăйĕн арăмĕ калаçнине итлет! — терĕ ăна печатник, редакцире пуринчен те аслăрах (çулĕпе аслăрах) çын.

— Ăнах-и? — тĕлĕнчĕ редактор.— Пулма пултараймасть!..

Эпĕ, ун еннелле çаврăнса, пуç тайнă пек турăм: чăнах!

— Кÿр-ха, эппин, эп итлесе пăхам! — терĕ те вара редактор, манпа юнашар пырса тăчĕ.

— Чăвашла калаçать вăл, майор юлташ, ăнланаймастăн...

— Сассине илтем!

Вăл, ман пуç çинчен наушниксене хывса илсе, хăй хăлхи патне тытрĕ. Кăштах итленĕ хыççăн таварса пачĕ те мана çурăмран çапса илчĕ:

— Анать сан пурнăç, мур! Хам арăмăн сассине илтесшĕн эп тем парăттăм!...

Çирĕм минута яхăн итлерĕм тăван сасса. Вăл илтĕнми пулсан та, Шупашкар дикторĕ: «Çакăнпа литература передачине пĕтеретпĕр»,— тесен те, вăл çĕнĕрен чăвашла калаçма тытăнасса кĕтнĕ пек, вăрахчен приемник умĕнче лартăм.

Чăн та телейлĕ пултăм эпĕ вăл кун!

Нихçан та манас çук ăна...



# Кĕнекесем вут-çулăмра çуралнă...

...Совет писателĕсем Отечественнăй Аслă вăрçă вăхăтĕнче мĕн тери хастаррăн ĕçлени, хăйсен пĕтĕм вăйне, чĕрери хĕрӳлĕхне, талантне хамăрăн юратнă Тăван çĕршыва фашист хурахĕсенчен хӳтĕлес, пире чура тăвас тискер ĕмĕтпе килсе кĕнĕ хăрушă тăшмана пуçĕпех çапса аркатас ĕçе пани çинчен нумай çырнă ĕнтĕ. Писательсен çав йывăр çулсенчи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа паракан кĕнекесем те сахал мар тухнă. Вĕсенчен уйрăмах фашистла Германие çĕнтернĕренпе 20 çул çитнине уявланă кунсенче СССР Наукăсен Академийĕ çумĕнчи А. М. Горький ячĕпе хисепленекен тĕнче литературин институчĕ кăларнă «Литературное наследство» икĕ томне палăртмалла. Вăл томсем «Советские писатели на фронтах Великой Отечественной войны» ятпа тухнă.

Çак пысăк кĕнекесен умсăмахне вырăссен хальхи чаплă писателĕсем — Константин Симонов, Алексей Сурков тата Николай Тихонов çырнă. Хăйсен статйине вĕсем ак çакăн пек пуçланă:

«Отечественнăй Аслă вăрçăра çарти журналистсем, командирсем, политработниксем, боецсем, ополченецсем, партизансем пулса пин ытла совет писателĕ çапăçнă.

Вĕсенчен кашни виççĕмĕш çын хамăрăн Тăван çĕр-

шыва хӳтӗлесе пуҫне хунӑ. Ҫак кӗнекен пирвайхи страницине уҫса, пирӗн нимрен малтан ҫав вӑрҫӑра вилнисене аса илсе тата тепӗр хут вӗсен умӗнче пуҫ таяс килет...»

Ҫапла ҫав, нумай нациллӗ совет литературинче ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗ, пӗтӗм халӑх юратнӑ 400 писатель ытла Аслӑ Ҫӗнтерӳ кунне кӗтсе илеймен,— ҫапӑҫу хирӗнче паттӑрсен вилӗмӗпе вилнӗ. Вӑрҫӑра халӑх телейӗшӗн ҫапӑҫса пуҫ хунӑ писательсен таса ячӗсем совет литературин историне ылтӑн саспаллисемпе ҫырӑнса юлчӗҫ.

Пирӗн писательсем те, ытти тӑванла халӑхсен писателӗсем пекех, вӑрҫӑра хӑшӗ стройри рядовой салтак-пехотинец, сапер, артиллерист пулнӑ, анчах, вӑрҫӑ малалла пынӑ май, вӗсем пурте офицера тухнӑ, тӗрлӗ подразделенисен командирӗсем пулса тӑнӑ. Хӑшӗсем политработниксем пулнӑ. Каярахпа фронтри чӑваш писателӗсенчен нумайӑшӗ ҫарти журналистсем пулса, арми, корпус, дивизи хаҫачӗсенче ӗҫленӗ.

Чӑваш писателӗсем Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑн тӗрлӗ фрончӗсенче епле паттӑррӑн ҫапӑҫни ҫинчен, вӗсен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пархатарлӑ ӗҫӗсем ҫинчен Николай Дедушкинӑн «Пӑшалпа та, перопа та...» ятлӑ кӗнекинче самаях тӗплӗн каласа кӑтартнӑ. Ку кӗнекене вуланӑ ҫын пирӗн писательсем — ҫапӑҫу хирӗнче пуҫ хунисем те, сывӑ юлса киле таврӑннисем те — хӗрӳ чӗреллӗ чӑн-чӑн совет патриочӗсем пулнине, вӗсем тӑшмана ҫапса аркатассишӗн пурнӑҫӗсене те хӗрхенсе тӑманнине пит лайӑх пӗлме пултарать.

...Салтак шинельне тӑхӑннӑ писателӗн аллинче винтовкӑпа е пистолетпа пӗр вӑхӑтрах тата урӑх хӗҫпӑшал — ахаль кӑранташ е ахаль ручка пулнӑ. Пурнӑҫ ҫакна кӑтартса пачӗ: фронтри писатель аллинчи ҫав иккӗмӗш хӗҫпӑшал та питӗ вӑйлӑ-мӗн, вӑл та тӑшмана снайпер винтовкинчен кая мар тӗл персе тивертнӗ, фашистсене пысӑк сиен кӳнӗ. Ахальтен мар фронтри писатель аллинчи перона штыкпа танлаштараҫҫӗ, ӳкерчӗксем ҫинче те вӗсене юнашар тӑратса ӳкереҫҫӗ.

Совет писателӗсен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи хӗрӳллӗ, ҫулӑмлӗ публицистики, вӗсен сӑввисем, очеркӗсем, калавӗсем пирӗн ҫынсен кӑмӑлне ҫӗкленӗ — фронтра ҫапӑҫакансенне те, тылра ҫӗнтерӳ валли ӗҫлекенсенне те: фашистсем вӑхӑтлӑха оккупациленӗ вырӑнсенче мӗн тери тискер ӗҫсем туни — ҫунтарни, ишӗлтерни, ним айӑпсӑр

совет çыннисене асаплантарни, пусмăрлани, ватти-вĕтнине пăхмасăрах çĕршерĕн те пиншерĕн вĕлерни çинчен каласа парса, писательсем совет çыннисене тăшмана ытларах курайми тунă, ăна тавăрма, пĕтерме, тĕп тума чĕннĕ. Тĕнчипе паллă совет писателĕсен — Алексей Толстойăн, Михаил Шолоховăн, Илья Эренбургăн, Леонид Леоновăн тата ыттисен «Правдăра», «Известире», «Красная звездара» тухакан статйисем пĕтĕм планетăна илтĕнекен чан сасси пек янранă. Вĕсем çĕр çинчи пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх умĕнче гитлеризма тăрă шыв çине кăларнă, унăн чи хăрушă тискер кайăкла ăшчиккине кăтартса питленĕ. Пурне те фашизма хирĕç кĕрешме чĕннĕ. Писательсен сасси пирĕн тăшмансене калама çук хытă пырса тивнĕ, вĕсене уртарсах янă. Сăмахран, 1941 çулхи августăн 20-мĕшĕнче «Красная звезда» хаçатра Алексей Толстойăн «Фашисты ответят за свои злодеяния» ятлă статйи тухсан, Берлинри радио совет писательне хирĕç темтепĕр каласа, ăна юнаса пĕтернĕ. Вăрçă вăхăтĕнче питĕ хастар ĕçленĕ публициста, Илья Эренбурга, фашистсем тытсанах çакса вĕлерме сăмах панă. Илья Сельвинский поэт «Я это видел» ятлă сăвăра фашистсен хăрушла тискер ĕçĕсем çинчен çырсан, ăна хирĕç Гитлерăн «сылтăм алли», каппайчăк Геббельс «хăй» радиопа тухса çухăрнă. Таллин хулине ирĕке кăларсан, унта юлнă гестапо хучĕсем хушшинче Ленинград поэтне Ю. Ингене «Красный балтийский флот» хаçатра пичетленĕ сăвăсемшĕн вĕлерме йышăннă приговор тупăннă...

Чăн та витĕрех пырса тивнĕ эппин фашистсене совет писателĕсен произведенийĕсем, вĕсен авторĕсене вĕлерме приговорсем йышăннă пулсан!

Фронтра, малти линире тухса тăнă çар хаçачĕсенче — пысăкраххисенче те, пĕчĕккисенче те — писательсем вăрçăри паттăрсен кулленхи хăюллă та хастар ĕçĕсене кăтартса панă, салтаксемпе офицерсен çапăçури опытне анлăрах сарма тăрăшнă. Вĕсем, фронтри писательсем, хăйсен хаçачĕн кашни çĕнĕ номерне кăларас умĕнех чи малти траншейăсенче, блиндажсенче, окопсенче çĕнĕрен çĕнĕ паттăрсемпе тĕл пулнă, вĕсен мухтава тивĕçлĕ ĕçĕсемпе паллашнă, редакцие таврăнсанах вĕсем çинчен ыран тухмалли хаçат валли çырма васканă. Вăрçăра унта паян, çак самантра тумалли ĕçе нихçан та ырана хăварма юраман.

Чăваш писателĕсенчен нумайăшĕ ĕçленĕ дивизи хаçачĕсенче: П. Хусанкай, Я. Ухсай, Н. Илпек, Л. Агаков, В. Алакĕр, В. Долгов, Ф. Çитта, В. Ржанов, А. Яндаш, ӳсăсла çыракансенчен — Н. Стуриков, А. Чистяков. Вĕсем пурте хăйсен пархатарлă ĕçĕсемшĕн темиçешер награда илме тивĕçлĕ пулнă.

Фронтри журналистсен ĕçне, вĕсем мĕн-мĕн çырнине пĕтĕмпе шута илме май та çук. Вĕсем хаçатсенче хăйсем алă пусса (хушамачĕсене лартса) кăларнă статьясем, очерксем, памфлетсем, калавсемпе сăвăсем çеç çырман. Вĕсем салтаксемпе офицерсен ячĕпе (хăйсем каласа панă тăрăх) çĕршер статья çырнă. Тепĕр чух аслăрах командирсен ячĕпе те çырнă, мĕншĕн тесен лешсен статьясем çырса ларма вăхăт пулман. Сăмахран, эпĕ хам та дивизи штабĕн начальникĕ хушнипе, ун ячĕпе, тактика ыйтăвĕсемпе темиçе пысăк статья çырса кăларнăччĕ. Кайран çав статьясене подразделенисенче политинформаци вăхăтĕнче вуласа панă.

Вырăссен паллă поэчĕ А. Сурков «Журналисты на войне» ятлă сборнике кĕртнĕ «Пушки и музы» статйинче çапла каланă: «Редакцие таврăнсан, писатель хăй паян мĕн курни-илтнин, сăнанин пĕр пайне хаçатăн черетлĕ номерĕнче палăртнă. Анчах писатель курни-илтнин, сăнанин пысăк пайĕ чĕрере, асра, блокнотсен страницисенче упранса юлнă, вĕсем кайран пĕтĕмлетнĕ картинсем ӳкерме, пĕтĕмлетнĕ сăнарсем тума маи панă».

Питĕ тĕрĕс çак сăмахсем!

Вăрçăра мĕн курни-илтнине, таврара мĕн пулса иртнине астуса юлас шутпа «анлă» дневниксем çырса пыма юраман. Чарнă ун пек тума. Ăнсăртран (вăрçăра ăнсăртран пулакан япаласем пит нумай!) çавăн йышши дневник тăшман аллине лексен, вăл «вăрçă вăрттăнлăхне» уçса паракан япала вырăнне пулма пултарать. Анчах фронтри пĕр писатель те блокнотсăр çӳремен. Хăй сăнанисене, курни-илтнине çырса пынах вăл. Кĕскен-кĕскен, темиçе сăмахпа, пĕр хăй çеç ăнланмалла. Манăн та çавăн пек пĕчĕкçеç, гимнастерка кĕсйине шăнăçакан «çыру кĕнекисем» пулнă. Вĕсем паян кун та упранаççĕ. Кашни кун тенĕ пекех темиçешер йĕрке çырнă унта — питĕ вĕттĕн, йĕркесене пĕр-пĕрин çумнех çыпăçтарса, нумай сăмахсене энциклопедисенчи пек кĕскетсе: пулемет — плм., артиллери — арт., автомат-

ный огонь — авт. ог., нимĕç — нм. т. ыт. те. Эп ун чух çырса пынисене халь урăх çын вуласан вуçех ăнланас çук, анчах эпĕ хам унти ик-виç йĕрке çине пăхса илсенех куç умне темĕн те пĕр тухса тăрать...

Малти линире, çапăçу хирĕнче пулнă писательсем—стройри командир-и вăл, политработник-и, хаçатçă-и, рядовой боец-и, пурĕпĕр — вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах, хăйсен фронтри тĕп ĕçне, тивĕçне туса пынă хушăра *писатель ĕçне те* туса пыма тăрăшнă, вăрçă çинчен, вăрçă паттăрĕсем çинчен тĕрлĕ жанрлă произведенисем, пуринчен ытларах сăвăсемпе очерккалавсем çырнă. Кашни пушă минутпах усă курнă çавăн валли. «Творчество условийĕсем» çине пăхса тăман. Çĕрпӳртре, блиндажра, пĕр-пĕр çĕтĕк-çатăк пӳртре, вăрманти йывăç кăкĕ çине тĕренсе, хуть те ăçта та çырма пикеннĕ.

Писательсем фронтра мĕнле ĕçлени çинчен А. Твардовский «Василий Теркин» поэминче пит чайăх калани пур:

...На войне под кровлей шаткой,
По дорогам, где пришлось,
Без отлучки от колес,
В дождь, укрывшись плащ-палаткой,
Иль зубами сняв перчатку,
На ветру, в лютой мороз,
Заносил в свою тетрадку
Строки, жившие вразброс.

Кунта хăшпĕр писатель-фронтовиксен хăйсен çырăвĕсене илсе кăтартни те вырăнлă пулĕ.

Акă М. Данилов-Чалдун 1943 çулхи майăн 6-мĕшĕнче парти Чăваш обкомне янă çыру сыпăкĕ:

«Эпĕ фронтран пĕр тухмасăр вунтăватă уйăх çапăçатăп ĕнтĕ... Пĕр йăпату — çапăçу лăплансан калавсем çырасси... Эп вĕсене çырнă чухне пӳрнерен ĕмсе кăлармастăп, халыхи вăрçă пурнăçĕнчен илетĕп. Чăнах та, вĕсем кĕскерех тата ытла якак та мар. Анчах, хăвăрах пĕлетĕр, эпĕ вĕсене час-часах чĕркуççи çинчех çыратăп...»

Василий Долгов 1942 çул вĕçĕнче (Германие çĕнтересси пит инçе пулнă-ха ун чух!) фронтран пĕр юлташ патне янă çырура çапла каланă: «Вăхăт çитĕ, пирĕн урамра та уяв пулĕ! — тетпĕр эпир. Ун чухне вара, хак-

лă тусăмсем, каллех пĕрле пулса, ушкăнпа, вуншарăн та çĕршерĕн, чăваш литературин урапине кӳлĕнĕпĕр, пĕр-пĕрне пулăшса, кирлĕ пулсан, ятласа-ырласа, халăх хушнă ĕçе тăвăпăр. Камăн таланчĕ пысăк, вăл Константин Иванов пек, Çеçпĕл Мишши пек çырĕ, вĕсенчен те лайăхрах çырма тăрăшĕ...»

Анчах писательсемпе поэтсем вăрçă пĕтессе, «пирĕн урамра уяв пуласса», пурĕ пĕрле пухăнасса кĕтсе тăман, вĕсем «чăваш литературин урапине» ун чухнех, вăрçă кĕрленĕ кунсенчех кӳлĕннĕ, халăха кирлĕ, тăшмана çĕнтерме пулăшакан произведенисем парас кăмăлпа хĕрӳллĕн ĕçленĕ. Уçса пăхăр-ха эсир 1941—1945 çулсенче тухнă чăваш хаçачĕсемпе журналĕсен комплекчĕсене — мĕн чухлĕ унта фронтовиксен сăвви-калавĕсем, очеркĕсем! Писатель-воинсем çырнă кĕнекесем те сахал мар тухнă. Эпир тин çеç илсе кăтартнă çыру авторĕ, гварди капитанĕ Василий Долгов хăй те фронтран тăтăшах очерксемпе калавсем ярса тăнă, вĕсене вăрçă пĕтичченех уйрăм кĕнеке туса кăларнă, кайран вĕсенчен чылайăшĕ литература учебникĕсене, хрестоматисене кĕрсе юлнă. Тăрăшса ĕçленĕ писатель-фронтовик!

Вăрçă чарăннă хыççăн чылайран П. Хусанкай çапла çырнă:

«Каламасăрах паллă, ун чухне эпир çырнă япаласем хушшинче пиçсех çитейменнисем те пулнă. Пурте ĕмĕрлĕхех упранса юлаймĕç. Анчах пурне те — юлашки сăмах таранччченех — пĕр аслă тĕллевшĕн çырнă. Тăван çĕршывăн, халăхăн, пирĕн кашниййĕн пурăнмалла-и, çук-и? — акă мĕнле ыйту тухса тăнăччĕ ун чухне пирĕн умма.— Пурăнмалла! — терĕмĕр эпир. Вара кашниех вăй-халпа пултарулăхăмăр çитнĕ таран пĕтĕм халăх ĕçне кӳлĕнме тăрăшрăмăр. Чăваш поэзийĕн пĕтĕм хĕçпăшалĕ, пĕтĕм жанрĕ — поэма, лирикăллă монолог, халăх ячĕпе унăн вăрçăри ывăлĕ-хĕрĕ патне янă çырусемпе салтаксен тупа туса çырнă явапĕсем, васкасарах хайланă сăвви-юрри — çаксем пурте çĕнтерӳшĕн ĕçлерĕç».

Тĕрĕс каланă. Пурте çĕнтерӳшĕн ĕçленĕ. Тискер тăшман вăрă-хурахла килсе тапăнсан ăна çапса аркатма пĕр çын пек кар тăнă халăх та, унăн юрăçисем те. Юрăçăсен юррисем те, çыравçăсем çырнă кĕнекесем те йăлтах çĕнтерӳшĕн пулнă.

* * *

Çĕнтерӳ хыççăн киле таврăннă салтаксем çав кунах тенĕ пек мирлĕ ĕçе тытăнчĕç. Ĕçĕ ун чух калама та çук нумай пулнă. Тăшман ишĕлтернĕ хуласемпе ялсене çĕнĕрен туса лартмалла, вăрçа пула хавшаса çитнĕ пĕтĕм хуçалăха ура çине тăратмалла. Анчах хуçалăха, экономикăна вăрçăчченхи шая çитернипе лăпланса ларма пултарайман эпир — пирĕн малтан мала каймалла, çӳлтен çӳле çĕкленмелле. Пирĕн аслă тĕллев — коммунизм, пĕтĕм халăх ырлăхĕ, телейĕ.

Кашни салтак хăйĕн малтанхи вырăнне тăчĕ — рабочи пулни станок умне, колхозник хире тухрĕ. Каменщиксем çĕнĕ çуртсем купаларĕç, учительсем çамрăк ăрăва вĕрентрĕç, ученăйсем лабораторисенче наукăпа техникăна малалла аталантармалли майсене шырарĕç. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе паттăр совет халăхĕ — çĕнтерӳçĕ-халăх — каллех, вăрçăччечхи пекех, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ турĕ.

Литературăпа искусство çыннисем те çĕнĕ вăйпа, çĕнĕ çĕкленӳпе ĕçе тытăнчĕç.

Писатель халь ĕнтĕ дивизи хаçачĕн çур страницине («подвала») вырнаçмалли сăвă-калав мар, мăн кĕнеке пулмалли пысăк формăллă произведенисем çырма пултарнă. Вăхăт та, услови те пулнă ун валли. Паллах, вăрçăран таврăннă писатель-салтаксем вăрçă çинчен, вут-çулăмра хăйсемпе юнашар пулнă çынсем çинчен çырнă. Вĕсенчен хăйсенчен те вăрçă тĕтĕмĕн шăрши кĕнĕ-ха, вĕсем шинельсемпе, салтак аттисемпех çӳренĕ, вăрçăра курнисем вĕсен куçĕ умĕнчех тăнă, тӳссе ирттернисем ним чухлĕ те манăçман. Тата ун чухне вăрçă çинчен çырма халăх хăй те ыйтнă, мĕншĕн тесен унăн вăрçă паттăрĕсем çинчен, хамăрăн Тăван çĕршыва çеç мар, пĕтĕм Европăна фашизмран хăтарнă совет салтакĕ çинчен епле те пулсан ытларах пĕлесси килнĕ. Вăрçă çинчен тĕплĕн, ĕнентерӳллĕ, вăйлă сăнарсем урлă каласа пани уйрăмах çамрăксене кирлĕ пулнă...

Нумай ĕçлерĕç вăрçăран таврăннă писательсем. Пурте — Хусанкай та, Ухсай та, Алга та, Алакĕр те, Долгов та, Илпек те, ыттисем те. Пурин те кĕнеке хыççăн кĕнеке тухрĕ. Вĕсемпе пĕрлех, вăрçă çинчен çамрăксем те нумай çырчĕç — В. Алендей, А. Артемьев, Г. Орлов, В. Урдаш, В. Садай. Вăрçăччен вĕсен ячĕсене

никам та пĕлмен — çамрăк пулнă-ха вĕсем, таçти-таçти ялсенче пуăннă, хăшĕсем шкулта кăна вĕреннĕ, çырсан та çыркаланă пуль район хаçачĕсенче, пысăк литературăна хутшăнайман. Çамрăклах, вунçич-вунсакăр çултах вăрçа тухса кайнă та вĕсем, вăрçă вут-çулăмĕнче пиçсе, унти пур йывăрлăхсене те тÿссе, аманса та курса, хăйсем сисмесĕрех «мăн çын» пулса тăнă. Киле таврăнсан вара хăйсем вăрçăра мĕн-мĕн курни-тÿсни çинчен каласа памасăр тăма пултарайман. Пĕчĕкрех калавсенчен, уйрăм сăвăсенчен пуçласа, вĕсем каярахпа пысăк формăллă произведенисем — повĕçсем, романсем, поэмăсем çырчĕç, пирĕн литературăра вĕсенчен кашниех çирĕп вырăн йышăнчĕ. Отечественнăй вăрçă теми паян кун та вĕсен творчествинче тĕп вырăнта тăрать, вĕсем совет çыннисен паттăрлăхне кăтартакан, совет салтакĕн чунне уçса паракан, Тăван çĕршыва юратма вĕрентекен, ялан сыхă пулма чĕнекен çĕнĕрен çĕнĕ кĕнекесем çыраççĕ.

Сăмах майĕн çакна каласа хăварас килет.

Чăваш писателĕсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçне-хĕлне, пĕтĕмĕшпе илсен, çителĕклех тĕпченĕ, тишкернĕ, хакланă, тес пулать. Н. Дедушкинăн «Пăшалпа та перопа та...» кĕнекисĕр пуçне ун çинчен М. Сироткинăн «Очерки истории чувашской советской литературы» кĕнекинче те, журналсемпе хаçатсенче тухнă статьясенче те чылай çырнă. Ку çеç те мар: СССР Наукăсен Академийĕ çумĕнчи А. М. Горький ячĕпе хисепленекен тĕнче литературин институчĕ халь кăларакан «История советской многонациональной литературы» кĕнекен 3-мĕш томĕнче те (509—515 страницăсенче) чăвашсен вăрçă вăхăтĕнчи литератури çинчен уйрăм статья пичетленнĕ (авторĕ Н. Дедушкин).

Эпир тулли кăмăлпах калама пултаратпăр: пирĕн вăрçăпа патриотизм темипе çырнă литература çултан çулах пуянланса пырать. Пур жанрсемпе те аталанать вăл. Пысăк калăплă повĕçсем, романсем те тухма пуçларĕç. Вĕсенчен хăшпĕрисене Мускаври издательствăсем вырăсла пысăк тиражпа пичетлесе кăлараççĕ те вĕсем пĕтĕм Совет Союзĕпех сарăлаççĕ. Çав кĕнекесене, вăрçă хыççăнхи чĕрĕк ĕмĕр хушшинче çырнă произведенисене, тĕплĕн тишкерме вăхăт ĕнтĕ. Акă, икĕ çул каялла Чăвашсен наукăпа тĕпчев институтĕнче истори темипе çырнă произведенисем çинчен пысăк калаçу пулса ирт-

нĕ — унта 15—20 çул ĕлĕкрех тухнă, унччен те нумай хут, нумай çĕрте сӳтсе явнă кĕнекесене тишкерчĕç. Отечественнăй вăрçă темипе çырнă произведенисене те çавăн пек тишкересси çинчен мĕншĕн сăмах та çук?!

* * *

Пирĕн вулакансем питĕ нумай, вĕсем литературăпа интересленесси çултан çул ӳсет. Ку вăл вулакансем хăйсем вуланă кĕнекесен авторĕсем патне çырусем нумай çырнинчен те курăнать. Шел, вулакансен çырăвĕсене пирĕн никам та тишкермест, тĕпчемест.

Мĕн çинчен çыраççĕ вĕсем? Вуласа тухнă кĕнекесем кăмăла кайни е кăмăла кайманни çинчен пĕлтереççĕ, кĕнекери геройсен малашнехи пурнăçĕ, шăпи çинчен ыйтаççĕ, час-часах кĕнекене (произведение) малалла çырма та хушаççĕ, канашсем те параççĕ.

Ун пек çырусене эпĕ те сахал мар илнĕ. Кашни çĕнĕ кĕнеке тухмассеренех вулакансен çырăвĕсене хирĕç нумай ответ пама тивет. Уйрăмах çамрăксем ыйтса çыраççĕ: эс ку кĕнекере çырса кăтартни чăнах пулнă-и? Хăçан, ăçта пулнă? Нумайăшĕ, илемлĕ литература спецификине, писатель хăйĕн произведенийĕсенче (вăл документлă произведени мар пулсан) конкретлă çынсене илменнине, пĕтĕмлетнĕ сăнарсем туса кăтартнине пĕлменнипе (çакна пĕлменни пирĕн шкулсенче литература теорин никĕсĕсене те пулин кирлĕ пек вĕрентменнинчен килет) кĕнекери геройсем халь ăçта пурăнни çинчен те, вĕсен адресĕсене те ыйтаççĕ. Ун пеккисене вара ответ пама та йывăр...

Çапах та вулакансенчен килекен кашни çыру савăнтарать: эппин, эс çырнисене халăх вулать, сан кĕнекӳсенчи геройсен шăпи çынсене хумхатать, вĕсен кăмăлне хускатать, шухăшлаттарать, эс ӳкерсе кăтартнă ырă сăнарсене юратаççĕ, усаллисене курайманççĕ. Эппин, санăн ĕçӳ ахаль пулман, сая кайман!

Пуринчен ытларах, вулакансем манăн вăрçă çинчен çырнă кĕнекесем пирки ыйтаççĕ, вĕсен геройĕсем пирки тĕплĕн пĕлесшĕн. Çавна шута илсе тата эпĕ ку статьяра вăрçăра пулнă писательсен кĕнекисем вутçулăмра çурални çинчен сăмах хускатнă май, манăн хăшпĕр произведенисен «биографине» каласа парас кăмăлăм пур. Вăрçă темипе эпĕ Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи вăрçăра пулнă хыççăн çырма тытăн-

нă. Ку вăрçăра эпĕ нумай та мар — пĕр-ик эрне çеç пулнă, анчах çав кĕске вăхăтрах нумай курма, тӳсме тиврĕ. Аманнă хыççăн Ленинградри госпитале лексе кăшт сывалма пуçласан, фронтра курнисене аса илсе, эпĕ госпитальтех вăрçă çинчен пĕрремĕш калав — «Разведчик Джунгали» çыртăм. Сывалса çитме киле отпуска ярсан икĕ калав çырăнчĕ — «Пулеметчик юрлать», «Приказ». Унтан, демобилизаципе действительнăй службăран таврăнсан, çав Финлянди вăрçипе çыхăнтарсах, повесть çырма тытăннăччĕ, анчах ăна çырса пĕтересси пулмарĕ, Отечественнăй вăрçă пуçланчĕ, эп каллех салтак пулса тăтăм...

Фронта эпĕ ытла тӳрех каяймарăм, малтан мана Мускав çывăхĕнчи пĕр хулана, командирсен шкулне ячĕç. Кĕр енне çав шкула «окруженецсем» — вăрçăра тăшман ункине лексе унтан хăтăлса тухнисем пит нумай пычĕç, вĕсене те пирĕнпе пĕрлех вĕрентме тытăнчĕç. Çак «окруженецсем» фронт леш енче мĕн тери хăрушă ĕçсем пулса иртни, оккупантсем пирĕн çынсене епле асаплантарни, вĕлерни çинчен, анчах совет çыннисем фашистсене пурпĕрех парăнманни, тăшмансене епле май килнĕ çапла сиен кӳни, пур çĕрте те партизансен отрячĕсем чăмăртанни, хаяр кĕрешĕве вăйпитти çынсем çеç мар, шкул ачисем те хутшăнни çинчен каласа кăтартатчĕç. Гитлеровецсем вăхăтлăха оккупациленĕ районсенче совет çыннисем вĕсене хирĕç епле хăюллăн та паттăррăн кĕрешни çинчен хаçатсенче те нумай çыратчĕç ĕнтĕ. Çавăн чух манăн «Партизан Мурат» повĕçе çырас шухăш çуралчĕ. Шухăш çуралчĕ çеç те мар, эпĕ ăна çав çар шкулĕнчех, каç-каç, çынсем çывăрнă чух тăра-тăра ларса, çырма тытăнтăм. Питĕ пысăк çĕкленӳпе çыртăм, темелле. Унтан эпĕ хамăр республикăра тăракан запаслă полка лекрĕм. Унта эпир фронт валли резервсем хатĕрлерĕмĕр. Кунта та, кашни пушă минутпа усă курса, эпĕ пĕр пуçланă япалана малалла çыртăм. Шăп фронта тухса каяс умĕн вара, повесть вĕçне кĕскенрех хайласа, алçырăвне Шупашкара ăсатрăм.

«Партизан Мурат» повесть «Илемлĕ литература» (хальхи «Тăван Атăл») альманахăн икĕ номерĕнче пичетленсе тухрĕ. Анчах фронта лексен, хамăр ирĕке кăларнă нумай ялта пулса унти çынсемпе, уйрăмах партизан пулнисемпе курса калаçнă хыççăн, манăн çав

произведение тĕпренех юсаса, улăштарса, хушса çырас килчĕ.

Акă, 1943 çулхи февралĕн 27-мĕшĕнче, Курск облаçĕнчи Лужки ятлă ялта эпĕ хамăн блокнота çакăн пек çырса хунă:

«...Нимĕçсен тискерлĕхĕсем çинчен ытларах та ытларах илтетпĕр. Кунти нумай ялсенче совет çыннисене ушкăнĕ-ушкăнĕпе сарайсене хупса çунтара-çунтара янă, пит нумай çынсене çакса вĕлернĕ...»

«Ĕнер Бобровăра *хамăн героя* курса калаçрăм! Вунвиçĕ çулхи партизан, Миша ятлă. Ултă уйăх отрядра пурăннă. Ашшĕ колхоз председателĕ, Деникинпа çапăçнă, коммунист. Нумай интереслĕ япаласем каласа кăтартрĕ. Чăн-чăн «Муратах», тупата!»

Мартăн 24-мĕшĕнче, Бычки ятлă ялта, çапла çырнă: «Çĕрле «Муратпа» ĕçлерĕм — пачах çĕнĕ глава çыртăм. Алçырăвĕ кашни кунах хулăнланса пырать...»

Август пуçламăшĕнче эпĕ повеçĕн çĕнĕ вариантне çырса пĕтерсе Шупашкара ятăм. 1944 çулхи март уйăхĕнче вăл «Тăван юншăн» ятпа пичетленсе тухрĕ. Вăрçă хыççăн ăна тата икĕ хут кăларчĕç, юлашки хутĕнче — каллех малтанхи ятпа («Партизан Мурат», 1966).

Эпĕ фронтра çырнă чи малтанхи калавсенчен пĕри — «Вĕсен ним айăп та пулман...» ятлă калав. Вăл манăн 1943 çулта тухнă «Фронтри ачасем» сборникре пичетленнĕ. Унта гитлеровецсем икĕ арçын ачана пĕр айăпсăрах çакса вĕлерни çинчен çырнă.

Çак калава мĕншĕн çырни манăн блокнотри темиçе йĕркене вуласанах паллă пулать:

«1942 çул, сентябрĕн 3-мĕшĕ. Калинин обл., Афанасово ялĕ. Çак ял варринче виселица тăрать. Ун çинче икĕ арçын ачана — шкул ачисене — çакса вĕлернĕ. Вăхăт нумай та иртмен унтанпа — ку тискер ĕç июнĕн 12-мĕшĕнче пулнă... Ачасем вилес пек чирлесе выртакан ашшĕ валли çиме юрăхлă курăк татма вăрмана кайнă-мĕн. Киле каç пуласпа тин таврăннă. Вĕсене тытнă, «эсир партизансем патне çимелли леçме кайнă», тесе айăплама тапратнă. Виçĕ кун хĕненĕ. Унтан хăйсен пӳрчĕ умĕнчех такан туса çакнă. Вĕсене çакнине пăхса тăма пĕтĕм ял халăхне хуса пынă. Пăхайманнисене, пуçĕсене усса тăракансене, хĕненĕ...»

Çакна çырса хунă хыççăн темиçе кунтан эпĕ фа-

шистсен çав хăрушла тискер ĕçĕ çинчен калав çырма тытăннă.

«Фронтри ачасем» сборнике кĕнĕ ытти калавсене те («Ĕнентерчĕç», «Ялав») çавăн чухнех, унти çынсем каласа панă фактсемпе усă курса çырнăччĕ. Вăл калавсене паян кун та кĕçĕн классем валли кăларакан учебниксене кĕртеççĕ.

Уйрăмах, вулакансем ман патăма «Ылтăн вăчăра» повесть пирки нумай çырчĕç. Малтан чăваш ачисем — тепĕр чух вуншарăн та алă пусса — çырчĕç, унтан, «Ылтăн вăчăра» икĕ хутчен те вырăсла пичетленсе тухса пĕтĕм Совет Союзĕпех сарăлсан, вырăс ачисенчен те — тĕрлĕ хуласенчен, тĕрлĕ облаçсенчен — çырусем пит йышлăн килчĕç. Çамрăк вулакансем пуринчен ытларах повеçри геройсем — Ванюшкăпа Санька — пурнăçра чăнах пулнă-и, кайран, суворовски училищене вĕренме ярсан, офицера тухнă-и, тесе ыйтаççĕ.

Ку произведенин «биографийĕ» çакăн пек.

1943 çулхи февраль уйăхĕнче, Курск облаçĕнчи Чернихово ялĕнче, эпĕ блокнота çапла çырса хунă: «Ĕненмелле мар хăрушă историсем каласа кăтартаççĕ. Нимĕçсем пирĕн çынсене çĕршерĕн-çĕршерĕн персе пăрахнă, вутта пăрахса çунтарса янă. Паян пĕр хĕрарăмпа калаçрăм. Ку ялсем мар вăл, темиçе çухрăмри Веретенино ялĕнчен. Халь вăл ял çук, çунтарса янă. Нимĕçсем вĕсен ялне тăрук хупăрласа илсе, пурне те хире хăваласа кăларса, 197 çынна персе пăрахнă. Ку хĕрарăмăн 7 ачине, упăшкине вĕлернĕ, хăй аманса тăнсăр пулса выртса юлнă. Унсăр пуçне тепĕр арçын ача — вăл та аманнă — чĕрĕ юлнă...»

Çакăн çинчен эпĕ пĕр-икĕ кунтанах «Убийцы» ятлă очерк çырса дивизи хаçатĕнче кăлартăм.

Пирĕн дивизи Курск облаçĕ тăрăх малалла пынă май, эпир фашистсем тĕппипех çунтарса янă, тарса хăтăлайман çыннисене вĕлерсе пĕтернĕ ялсене сахал мар куртăмăр. Ансăртран çăлăнса юлнă совет çыннисем каласа панисене итлеме те хăрушăччĕ...

Эпĕ «Ылтăн вăчăра» çырма пуçларăм. Малтан вăл повеçе «Персе вĕлернĕ ача» тесе ят панăччĕ. Фашист карателĕ Генрих Шварц сăнарĕ хама уçăмлăрах курăнма пуçласан (ун пек карательсем — чăн-чăн çынçиенсем — çинчен каласа панисене пĕрре кăна мар илтнĕ эпĕ), произведени ячĕ улшăнчĕ. Анчах фронтри услови-

сенче самаях пысăк калăплă япалана çырса пĕтерме пулмарĕ, эп ăна вăрçă хыççăн, киле таврăнсан, тин çырса пĕтертĕм. Çапах ăна пĕтĕмĕшпех вăрçăра, вăрçă вут-çулăмĕнче çуралнă произведени тесе шутлатăп.

1943 çулхи хĕлле Курск облаçĕнчех пĕр чылай ватă хĕрарăмпа, Варвара Васильевна Спиридоновăпа тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ. Вăл ялти активистка, парти членĕ пулнă, колхозсем тунă чух пит хĕрӳллĕ ĕçленĕ, кулаксемпе кĕрешнĕ. Фашистсем пырса кĕрсен, ăна тĕрмерен таврăннă кулак хĕрĕ тӳрех тыттарнă, вăл партизансемпе çыхăнни çинчен каласа панă. Тем тĕрлĕ те асаплантарнă çак хĕрарăма. Ансăртран кăна çăлăнса юлнă вăл. Хамăраннисем пырсан, унччен питĕ тĕплĕн пытарнă парти билетне чавса кăларса, каллех чĕри умне чикнĕ. Унпа калаçнă чух, эпир çав нимрен те хаклă хĕрлĕ хуплашкаллă кĕнекене хамăр та тытса пăхрăмăр, эпĕ билет номерне те çырса илтĕм.

Епле тӳсме пултарнă-ха эпĕ çав паттăр хĕрарăм çинчен çырмасăр? Унăн пĕтĕм биографийĕ, унăн хăюллă ĕçĕсем манăн «Вилĕмрен те вăйлăрах» («Вырăс хĕрарăмĕ») повеçе кĕрсе кайрĕç. Партбилет номерне те чăн-чăннипех кăтартрăм эпĕ унта. Мĕн тума улăштарса çырас пурнăçра пулнă, хам куçпа курнă япалана?

Çав çулхи кĕркуннех эпир Белорусси ялĕсене ирĕке кăларса пытăмăр. Сентябрĕн 30-мĕшĕнче эпĕ хамăн пĕчĕк дневнике çапла çырнă:

«Терюха ялĕ, Терехов р-нĕ, Гомель облаçĕ. Ĕнер нихçан курманнине куртăм... Ку ялта нимĕçсем 38 ял çыннине пухса пĕр пӳрте хупнă та чӳрече витĕр шалалла граната ыватнă, пӳртне çунтарма тытăннă. Çынсем алăка çĕмĕрсе сике-сике тухнă. Вара вĕсене кил хушшинче хăшне персе вĕлернĕ, хăшне чиксе пăрахнă, унтан вутта пăрахса çунтарнă. Хам куçпа куртăм çунса кăмрăкланнă çынсен кĕлеткисене. Пурте пур унта — ватти те, вĕтти те. Ах, тискер-çке! Акт çыртăмăр...»

Вăтăр сакăр çынран пĕр ватăрах хĕрарăм чĕрĕ юлнă-мĕн. Пӳртрен чӳрече витĕр сикнĕ чух фашист пули ăна çăварĕнчен лексе ĕнси витĕр тухса кайнă. Эпир çав хĕрарăма тупса унпа калаçрăмăр. Питĕ хăрушă пулчĕ унăн калавĕ. Пĕр эрне ытла шухăшласа çӳрерĕм çав кун курни-илтни çинчен. Çунса кайнă çынсен кĕлеткисем, кăкрине касса янă çамрăк хĕрарăм, хырăмне штыкпа чиксе шăтарнă виç-тăват çулхи

хĕрача вилли куç умĕнчен кайма пĕлмерĕç. Çак тискерлĕх çинчен дивизи хаçатĕнче çырса кăларнă хыççăнах «Амăшĕн сăмахĕ» ятлă калав çыртăм...

Кун пек тĕслĕхсене эпĕ татах нумай илсе кăтартма пултаратăп, анчах ку кирлех те мар пулĕ.

Çакна çеç çирĕплетсе калама пултаратăп: эпĕ вăрçăра çырнă, кайран «Çапăçу хирĕнче», «Салтак чунĕ» ятлă кĕнекесенче кăларнă калавсен — «Вĕри чĕре», «Старик № 33», «Юрă пурĕпĕр янранă» тата ыттисен те хăйсен «биографийĕ» пур. Вĕсене чăн та вут-çулăмран илнĕ фактсемпе, событисемпе усă курса çырнă. Вăрçă çинчен кайранхи вăхăтра çырнă произведенисем те çавăн пекех вăрçăра пулнă ĕçсем çинче никĕсленсе тăраççĕ. Анчах вĕсене нихăшĕ те «фактографи» принципĕпе çырнă теме çук, пурнăçра пулнисене автор хăйне кирлĕ пек майласа, тепĕр чух темиçе çĕрте пулнă япаласене пĕтĕçтерсе, тĕрлĕ çынсен сăнарĕсенчен пĕр сăнар туса çырнă.

Манăн çеç мар, ытти писательсен те çавăн пекех пулнă ĕнтĕ вăл: вĕсем те хăйсем вăрçăра курни-илтнисемпе, хăйсем тӳссе ирттернисемпе усă курса çыраççĕ. Вăрçă çинчен пуçран шухăшласа кăларса çырма çук. Тепĕр чух, ху аса илни, ху пĕлни çителĕксĕр пек туйăнсан, ытти фронтовиксен асаилĕвĕсемпе, тĕрлĕ документсемпе усă куратăн. Ку вăл произведение пуянлатма, ăна ĕнентерӳллĕрех, витĕмлĕрех тума пулăшать. Писатель çавăншăн тăрăшать те ĕнтĕ.

Отечественнăй вăрçă çинчен çырнă произведенисен пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Вăрçă çинчен каласа парса, вĕсем вăрçа хирĕç, фашизма хирĕç, империализма хирĕç кĕрешме чĕнеççĕ.

«Мире—мир!» тетпĕр эпир. Миршĕн кĕрешетпĕр. Çак кĕрешӳре вăрçă çинчен, вăрçă этемлĕхе мĕнешкел асаппа хурлăх кӳни çинчен хĕрӳллĕн каласа паракан кĕнекесем питех те паллă вырăн йышăнаççĕ.

Апла пулсан, вăрçă темипе, патриотизм темипе çырнă лайăх кĕнекесем тата ытларах, нумайрах тухчăр. Пирĕн алăри перо малашне те салтак аллинчи штык пекех пултăр.

**Советский патриот**

*Красноармейская газета*

# ФРОНТРИ ЖУРНАЛИСТ СУМКИНЧИ ТЕТРАДЬРЕН

## ФАШИСТСЕМ — ÇЫНСЕМ МАР, ÇЫНÇИЕНСЕМ

Пришли о н и, как черная чума,
Пришли
И кровью нашей упивались,
Угнали скот и подожгли дома,
Над старым и над малым
надругались...

М. И с а к о в с к и й.

**Ку хăрушă историе мана пирĕн боецсем халь çеç ирĕке кăларнă П. поселокĕнчи колхозница Варвара Евсеевна Капустина каласа пачĕ.**

**Тĕрĕссипе, ку поселок çук ĕнтĕ. Фашистла тискер кайăксем унта нимĕн те хăварман: килĕ-çурчĕсене çунтарса янă, çыннисене вĕлерсе пĕтернĕ. Варвара Евсеевнăна хăйне те эпир урăх ялта тĕл пултăмăр, кил-çуртсăр, çемьесĕр тăрса юлнă хыççăн вăл халь тăванĕсем патĕнче, хăйне Гитлер хурахĕсем кӳнĕ калама çук пысăк хуйха тӳссе ирттерсе пурăнать.**

**Фашистсем унăн упăшкине, ултă ачине тата ывăлĕн ывăлне вĕлернĕ, пур-çук выльăхне хăваласа кайнă, килне çунтарса янă. Кĕскен каласан, унăн пурнăçĕнче мĕн хакли пулнă — çавсене фашистсем пĕтĕмпех туртса илнĕ. Акă мĕнле пулса иртнĕ вăл...**

**Тăшмансем ку района пырса кĕрсенех, таврари вăрмансенче халăхшăн тавăракансем — партизансем пурри палăрнă. Гитлеровецсем вĕсене тем пекех пĕтерсе тăкма тăрăшнă, анчах партизансем юмахри паттăрсем пекех пулнă, хăйсем никама курăнман, анчах тăшмансене пĕрмаях сасартăк пыра-пыра çапнă. Партизансене таврари халăх пулăшса тăнă. Колхозниксем вĕсене апат-çимĕç пырса панă, хĕрарăмсем вĕсенс валли çăкăр пĕçернĕ, кĕпе-йĕм çунă. Нимĕççен çар эшелонĕсем çул çинчен çырманалла сирпĕннĕ. Вĕсен склачĕсем çуннă, постра тăракан часовойĕсем çухалнă. Обозĕсем кирлĕ çĕре çитеймен.**

**Фашистсем вара хăйсен пĕтĕм тарăхăвне мирлĕ халăх çине куçарнă. Партизансене вĕсем нимĕн те тăвайман, вĕсемпе кĕрешме вăй çитереймен, анчах ним хӳтлĕхсĕр хĕрарăмсемпе ачасене, ват стариксене пĕтерсе хума вăй кирлĕ пулман. Таврари темиçе яла çĕрпе танлаштарса хума, унти çынсене вĕлерме палăртнă фашистсем. Вăл шута Варвара Евсеевна хăйĕн упăшкипе, ултă ачипе тата ывăлĕн ывăлĕпе пурăннă поселок та кĕнĕ. Паллах, çак ялсенчи çынсем кун çинчен пĕртте пĕлмен...**

— Нимӗҫсем пирӗн пата кӑнтӑрла иртсен пырса кӗчӗҫ,— каласа парать Варвара Евсеевна,— ним ҫинчен пӗлтермесӗрех ялти пӗтӗм халӑха килӗсенчен хӑваласа кӑларчӗҫ те ял хӗррине пухрӗҫ. Унччен те пулмарӗ, арҫынсене пирӗнтен уйӑрса пӗр кӗлете хӑваласа кӗртрӗҫ. Пире, хӗрарӑмсемпе ачасене, ҫывӑхри пӳрте хупса хучӗҫ. Арҫынсене пурне те полицие илсе каяҫҫӗ, терӗҫ. Пире нимӗн те каламарӗҫ, ҫавӑнпа та эпир ним чухламасӑрах пӗр-икӗ сехет лартӑмӑр. Анчах та тӑшмансем темле ырӑ мар ӗҫ тума шут тытнине чӗре туйрӗ пирӗн—ахальтен хупса хуман пире! Унтан вӑхӑт нумай та иртмерӗ — пире уя хӑваласа кӑларчӗҫ те ҫул тӑрӑх кӳршӗри ял еннелле кайма хушрӗҫ. Эпир утрӑмӑр... Пирӗн хыҫҫӑн автоматлӑ нимӗҫ салтакӗсем пычӗҫ. Пӗр аллӑ-утмӑл чалӑш пек кайсан, тахӑшӗ хаяррӑн кӑшкӑрса команда пачӗ:

— На-пра-во-о!..

Эпир пӑрӑнтӑмӑр. Халь ӗнтӗ ҫулсӑр-мӗнсӗрех, вӑрман еннелле утрӑмӑр. Ҫӗрӗ тикӗс маррипе, хӑмӑл тирнипе ачасем такӑна-такӑна ӳкрӗҫ, нумайӑшӗ макӑрма тытӑнчӗҫ.

— Ан саланӑр! Пӗр-пӗринпе юнашар пырӑр! — каллех кӑшкӑрчӗ тахӑш.

Эпир, нимӗн те ӑнланмасӑр, ку приказа та итлерӗмӗр. Манӑн икӗ хӗрача — Зойӑпа Таня — ман умра утса пычӗҫ, пилӗк ҫулхи Витьӑна эп алра ҫӗклесе утрӑм. Сасартӑк пирӗн хыҫра пулеметсемпе автоматсем пӗр харӑс, хӑрушла шатӑртатма тапратрӗҫ... Нимӗҫсем пире ҫурӑмран пеме тытӑнчӗҫ! Пурте харӑсах ҫӗр ҫине ӳкрӗҫ. Эпӗ те ӳкрӗм, хамӑн кӗлеткепе Витьӑна хупларӑм. Уйра каласа памалла мар хӑрушла шав, кӑшкӑру, йынӑшу пуҫланса кайрӗ. Нимӗҫсем пӗр чарӑнмасӑр переҫҫӗ... Тахӑш самантра эпӗ пуҫа ҫӗклерӗм те, манӑн Зойӑпа Таня вилсе выртнине куртӑм. Манӑн ӑстӑн пӑтранма пуҫларӗ... Ҫав вӑхӑтра тепӗр пуля Витя пуҫӗнчен пырса ҫапрӗ те, унӑн пуҫ шӑмми катӑлса ывтӑнчӗ, пуҫ миминйӗ мана питрен сирпӗнчӗ. Вара эпӗ ӑнран кайрӑм пулмалла. Пӗр хушӑ мӗн пулнине астумастӑп...

...Тӑна кӗрсе куҫӑма уҫсан, эпӗ нимӗҫсем пире хыҫалтан пеме пӑрахнине тавҫӑрса илтӗм. Ҫӗкленсе тӑма шикленсе, итлеме тытӑнтӑм. Нимӗҫ салтакӗсем халь юнлӑ вилесем хушшипе ҫӳреҫҫӗмӗн. Кам вилеймен, кам сывлать-ха — ҫавӑн патне пырса, ӑна персе вӗлереҫҫӗ. Ман тӗлпе виҫӗ хутчен иртсе кайрӗҫ, анчах эпӗ хамӑн вилнӗ ачамсем хушшинче ним хускалмасӑр выртрӑм та, вӗсем мана хама та вилнӗ терӗҫ пулмалла — тивмерӗҫ...

Ҫав хушӑрах ял енчен питӗ вӑйлӑ взрывсем илтӗнчӗҫ. Кайран пӗлтӗмӗр: нимӗҫсем унта пирӗн арҫынсене вӗлернӗ. Вӗсене пурне те подвала хӑваласа кӗртнӗ те, алӑкран гранатӑсем ывӑтнӑ. Вара пӗр ҫын та чӗррӗн юлман. Вӗсем хушшинче манӑн упӑшка Афанасий Григорьевич тата ман икӗ ывӑл — Димитрипе Степан пӗтнӗ.

...Уйра выртакансене пурне те вӗлерсе пӗтерсен, нимӗҫсем вӗсене ҫиелтен кӑштах улӑмпа витсе тухрӗҫ те таҫталла кайрӗҫ.

Эпӗ тӗттӗм пуличченех ним хускалмасӑр выртрӑм. Пирӗн поселок унччен тӗппипех ҫунса пӗтрӗ — ӑна тӑшмансем пирӗн арҫынсене гранатӑсемпе персе вӗлернӗ хыҫҫӑнах чӗртсе янӑ.

Ҫӗрле вара вӑрман урлӑ каҫса, ҫак яла, хамӑн тӑвансем патне ҫиткелерӗм. Вӗсем, мана курсан, эпӗ ухмаха ернӗ пуль, тенӗ...

*1942 ҫ.*

# УРНА ЙЫТАСЕМ

Здесь только пепелище...
Здесь был фашист.
(Фронтри сăвă)

Эпĕ халь кăна Богдановка ялĕнчен таврăнтăм.

Виçĕмкунччен вăл ялта 372 кил пулнă. Халь пĕтĕмпе те 15—20 кил çеç юлнă,— ĕнер каç ăна чакса каякан гитлеровецсем çунтарса янă. Факельщиксем килтен киле çӳренĕ, пӳрт-çуртсене бензин сапса тивертнĕ,— çитменнине ял çыннисене пĕр япала та илсе тухма ирĕк паман. Совет çыннисене фашистсем малтан пурне те ял хыçне хăваласа кăларнă та, пӳртсенче юлнă пахарах япаласене çаратнă хыççăн çуртсене çунтарма тытăннă. Пушар патне никама та çывăха яман, пыма тăракансене автоматсенчен пенĕ... Халь вара çак ялта 350 çемье кил-çуртсăр, тумтирсĕр, çаппа-çарамас тăрса юлнă. Эп куртăм вăл çынсене. Вĕсем хăйсен тăван килĕсем пулнă вырăнсенчи кĕл ăшĕнче чакаланаççĕ,— мĕн те пулин юлман-ши, тесе шыраççĕ. Анчах нимĕн те юлман çав. Ытла та тĕплĕн çунтарса янă вĕсен пурлăхне Гитлер хурахĕсем!

Пин тĕслĕ тискер ĕç тунă ку вырăнсенче нимĕç фашисчĕсем.

Ивот ялне пырса кĕнĕ чух эпир никамран малтан пĕр вата карчăка куртăмăр. Вăл хăйĕн çунса пĕтекен пӳрчĕ умĕнче макăрса тăратчĕ.

— Ан йĕр, кинемей,— лăплантарма пикентĕмĕр эпир ăна,— вăрçă пĕтсен çĕнĕ пӳрт те, пурлăх та пулĕ...

— Эпĕ пӳрчĕ пирки макăрмастăп-ха,— терĕ вăл,— нимĕçсем паян ирхине манăн пĕртен-пĕр хĕрĕме хăйсемпе пĕрле хăваласа кайрĕç. Эпир ирĕке тухрăмăр ĕнтĕ, анчах ман хĕрĕн малашне те асаплă хурлăхра пулма тивет... Çав çунтарать ман ăшчике, ывăлăмсем!

Кайран пĕлтĕмĕр: Хĕрлĕ Çар кунталла çывхарса килме пуçласан, ку ялта тăнă гитлеровецсем ĕçлеме пултаракан совет çыннисене пурне те, 12—15 çулхи ачасенчен пуçласа 50—55 çулхи стариксем таранччен, Германие хăваласа кайма тапратнă. Нумайăшĕ унталла-кунталла тарса пĕтнĕ, ăçта май килнĕ — çавăнта пытаннă, хăшĕсене тăванĕсем çĕр айне — шăтăк алтса, çиелтен тăпра сапса — пытарнă, анчах çапах та чылайăшĕ хăтăлайман, вĕсене фашистсем выльăхсене хăваланă пекех пушăсемпе, патаксемпе, прикладсемпе çапа-çапа хĕвеланăçнелле хăваласа кайнă.

Ку ялта халь çын питĕ сахал юлнă. Арçынсем пачах та çук. Арçынсене нимĕçсем иртнĕ хĕллех пĕтерсе хунă. Яла пырса кĕрсенех, вĕсем кунти мĕнпур арçынсене пухнă та, вĕсенчен 380 çынна пĕр кунтах персе пăрахнă. Кашни килтех 2—3 виле пулнă...

Ял варринчи çунса пĕтекен пĕр кил тĕлĕнче эпир çичĕ çулхи Ваня ятлă ачапа калаçрăмăр. Вăл макăрайми те пулнăччĕ ĕнтĕ, çунăк юпа çумне тайăннă та, аран нăшăкласа тăрать.

— Аçу ăçта санăн? — ыйтрăмăр унран, лăплантарма пуçĕнчен шăлса.

— Немуйсем вĕлернĕ ăна, пĕлтĕрех,— терĕ вăл хурлăхлăн.

— Аннӳ тата?

— Ана та вĕлернĕ, партизансене кĕпе çуса панăшăн...

— Тата кама вĕлернĕ фашистсем?

— Пирĕн асаттене вĕлернĕ, Мишкăсен ашшĕне, Вовка пиччĕш-

не...— йӗркипех калама тытӑнчӗ вӑл. Унӑн куҫӗсенче шултӑра куҫ ҫулӗсем чӗтресе тӑраҫҫӗ. Ҫав куҫҫульсене нихҫан та манас ҫук, эпир, каҫарас та ҫук. Вӗсемшӗн хаяррӑн тавӑрма ҫеҫ пулать!

Тепӗр пысӑк салара гитлеровецсем тата хӑрушӑрах, тата тискертерех ӗҫсем тунӑ. Пӗр карчӑк, питӗ ватӑскер, хӑйӗн пӗртен-пӗр ывӑлӗпе пурӑннӑ. Ывӑлӗ — инвалид, ҫуралнӑ чухнех унӑн пӗр ури сиенлӗ пулнӑ, ҫавӑнпа та ӑна Хӗрлӗ Ҫара илмен. Ҫав йӗкӗте нимӗҫсем хӑйсем майлӑ ӗҫлеттерме хӑтланнӑ. Анчах та ҫак ҫамрӑк совет патриочӗ тискер тӑшмансен тарҫи пулма килӗшмен. Вара фашистсем ӑна хӑйсен картишӗнче хӑйнех шӑтӑк алттарса, ватӑ амӑшӗ умӗнчех персе пӑрахнӑ.

Ялти темиҫе ҫемьере партизансем пуррине пӗлсен, фашистсем вӗсене тӳсме ҫук хӗсӗрлеме тытӑннӑ, епле пулин те партизансем ҫинчен сведенисем пӗлме тӑрӑшнӑ. Усси пулман, партизансем ҫинчен тӑшмансене никам та пӗр сӑмах та каламан. Вара урса кайнӑ фашист йыттисем, ҫав темиҫе партизан ҫемйисене пӗр пӳрте хӑваласа хупса, чӗррӗнех ҫунтарса янӑ.

Хӗвелтухӑҫ енчен Хӗрлӗ Ҫар хытӑран хытӑ хӗссе килнӗ пирки ялтан тухса тарма вӑхӑт ҫитсен, хӑйсен пуҫӗсене епле те пулин ҫӑлма тӑрӑшса, гитлеровецсем ҫакӑн пек тискертен те тискер «меслет» шухӑшласа кӑларнӑ: вӗсем ялти пӗтӗм халӑха патаксемпе, кашкӑр пек овчарка-йытӑсемпе хӑваласа, мӑн ҫул ҫине илсе тухнӑ. Ҫул варрипе нимӗҫсен колонни — салтаксем, машинӑсем, лавсем шунӑ, ҫулӑн икӗ енӗпе — совет ҫыннисем, хӗрарӑмсемпе ачасем. Ҫапла майпа вӗсем хӑйсене совет самолечӗсем сывлӑшран пырса тапӑнасран хӑтӑлма шутланӑ. Анчах пирӗн конниксемпе пехотинецсем хуса ҫитме пуҫласан, гитлеровецсем ҫав хӗрарӑмсемпе ачасем ҫине гранатӑсем ывӑта-ывӑта, автоматсенчен персе вӗлерсе тарма тапратнӑ. Ҫапах та нумаях тарайман, пирӗн подразделенисем вӗсен ҫулне пӳлсе лартса, пурне те тенӗ пекех пӗтерсе тӑкнӑ.

...Эпӗ кунта уйрӑм фактсене ҫеҫ илсе кӑтартрӑм. Вӗсем ҫинчен вӗҫӗмсӗр ҫырса кайма пулать. Халӗ, Хӗрлӗ Ҫар ҫите-ҫите ҫапни сене тӳсеймесӗр, пӗрмаях чакса кайма тӳр килнипе, Гитлер хурахӗсем пушшех урса кайрӗҫ. Вӗсем хӑйсем кунта урӑх нихӑҫан та ура ярса пусас ҫуккине пит лайӑх пӗлеҫҫӗ те тата тискертерех пулса пыраҫҫӗ. Вӗсем совет ҫӗрӗсене «пушхир вырӑнӗсем» (зона пустыни) туса хӑварасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Анчах шӑписем тулаҫҫӗ ӗнтӗ. Темле тискерленсен те, темле урса хӑтлансан та, вӗсем пирӗн наступление чарма пултараяс ҫук!

*1943 ҫ.*

## А К Т

1943 ҫулхи сентябрӗн 29-мӗшӗнче эпир, аяла ал пуснӑ ҫынсем: ҫар чаҫӗн представителӗсем майор Иванов Н. И., аслӑ лейтенант Агаков Л. Я., аслӑ сержант Шугаев А., Гомель облаҫӗнчи Терехов районӗнчи Терюха ялӗнче пурӑнакансем Медведев П. И., Тегмянкова С. Л., Дубовик А. Д. тата Коптенко Т. Д. ҫакӑн пирки акт ҫыртӑмӑр:

1943 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕнче, хайсем Гомель облаçĕнчи Терехов районĕнчи Терюха ялĕнче чакса тухса каяс умĕн, нимĕç салтакĕсем хăрушла преступлени тунă — мирлĕ пурăнакан ял çыннисене 30 çын ытла вĕлерне тата чĕррĕн çунтарса янă.

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче, каçалапа, нимĕç салтакĕсен ушкăнĕ ял тăрăх, килтен киле кĕрсе чупса çӳренĕ, ялта юлнă граждансене персе вĕлерессипе хăратса урама хуса тухнă. Унтан вĕсене пурне те — пĕтĕмпе 38 çынна — Собко О. А. пӳртне хăваласа кĕртсе алăк патне хурал тăратнă. Кăшт вăхăт иртсенех нимĕçсем çав пӳрт чӳречисенчен шалалла гранатăсем ывăтма тытăннă. Пирвайхи взрывсем хыççăнах ăнсăртран чĕрĕ юлнă çынсем алăка çĕмĕрсе картишне сиксе тухнă. Кунта вара гитлеровецсем автоматсемпе винтовкăсенчен пеме тытăннă, тарса хăтăлма пикеннĕ совет çыннисене пере-пере вĕлернĕ, хăшĕ-пĕрисене хăваласа çитсе çĕçĕсемпе чикнĕ. Нумайăшне тыта-тыта чĕрĕллех вутта пăрахнă—пӳрчĕ кăвайт пекех çуннă ĕнтĕ. Хуса çитсе тытнă хĕрарăмсене малтан пусмăрланă, унтан вĕлернĕ. Лупиненко Федосья гражданкăна пусмăрласа мăшкăлланă хыççăн унăн кăкрине тата ар хатĕрне касса пĕтернĕ.

38 çынтан виççĕн çеç хăтăлма пултарнă — Ермакова У. Е., Ермаков П. Е., Ермакова В. П., — вĕсенчен иккĕшĕ гитлеровецсенчен тарнă чух хытă аманнă.

Вĕлернĕ тата çунтарса янă çынсем: Кротов Евмен Демьянович — 63 çулта, Шевцова Аксинья — 70 çулта, Лупиненко Федосья — 29 çулта, Лупиненко Афанасий Дмитриевич — 60 çулта, унăн мăнукĕсем — Петя 6 çулта, Коля — 3 çулта, Медведева Ирина Харитоновна — 85 çулта, Медведев Александр — 4 çулта, Ермакова Матрена Ивановна — 50 çулта, унăн ывăлĕ Иван — 10 çулта, Антошка Татьяна — 45 çулта.

Алă пуснă:

Çар чаçĕн представителĕсем: Майор Иванов, аслă лейтенант Агаков, аслă сержант Шугаев.

Терюха ял çыннисем: Медведев, Тегмянкова, Дубовик, Коптенко.

## ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН ПАТТĂР ЫВĂЛĔСЕМ

### ÇИРĔМ ÇУЛХИ КАПИТАН

Ун пеккисем çинчен: «Вăл вăрçăра ӳснĕ», теççĕ. Чăнах та çав, капитан Илья Николаевич Павлов Отечественнăй вăрçă вут-çулăмĕнче ӳснĕ.

Вăрçă пуçланнă чух вăл 18 çулта пулнă. Патăръелĕнчи педущилищĕрен вĕренсе тухнă та, хăйĕн тахçанхи ĕмĕтне — Хĕрлĕ Çар командирĕ пулассине пурнăçа кĕртес шутпа, тӳрех С. хулинчи артиллерипе миномет училищине кайса кĕнĕ. Анчах нумай вĕренме тӳр килмен: вăрçă пуçланнă...

Пĕр ирхине училище начальникĕ пур курсантсене те строя тăратнă.

— Кам хăйĕн ирĕкĕпе фронта кайма килĕшет? — тесе ыйтнă вăл.

Курсантсем пурте пĕр харăсах ал тăратнă. Вара начальник 60 курсанта суйласа илнĕ. Вăл шутра Шăмăршă районĕнчи Пуянкасси йĕкĕчĕ Илья Павлов та пулнă...

Икĕ эрнерен вăл фронта çитнĕ. Смоленск тăрăхĕнчи калама çук йывăр çапăçусене лекнĕ. Хĕрлĕ Çар ун чух чакнă-ха, анчах совет çĕрĕн кашни метрĕ тăшманшăн питĕ хакла ларнă, вăл хăйĕн салтакĕсен виллисем урлă çеç малалла шума пултарнă. Калама та çук хыттăн хирĕç тăнă пирĕн боецсем. Илья Павловсен подразделенийĕ, сăмахран, пĕр çапăçурах тăшманăн 48 танкне чарса лартнă — хăшне çĕмĕрнĕ, хăшне çунтарса янă. Унтан, пĕтĕмпе те вуппĕр çын юлсан та, пĕр рубежра гитлеровецсен батальонне икĕ талăк хушши малалла кайма паман.

— Питĕ хаяррăн çапăçрăмăр çав,— тет Илья Николаевич.— Боеприпассем пĕтрĕç, ахаллĕн пулсан татах чакмастăмăр...

Унтан вăл тăшман ункинче пулнă. Хăй çамрăк пулин те, унăн ун чухне нимĕнле командир званийĕ те пулман пулин те, вăл хамăр боецсен чылай пысăк ушкăнне ункăран илсе тухма пултарнă. Фронт линийĕ патнелле çывхарнă май унăн ушкăнĕ темиçе хутчен те засадăсем тăва-тăва тăшман салтакĕсене сахал мар пĕтернĕ.

Каллех хамăрăннисем патне çитсе тухсан, ăна кĕçĕн лейтенантсен курсне вĕренме яраççĕ. Виçĕ уйăхран вăл миномет взвочĕн командире пулса тăрать. Фашистсене Мускав патĕнчен каялла хăвалать. Уварово станцийĕ таврашĕнче хăйĕн взвочĕпе кĕрсе кайса икĕ яла гитлеровецсенчен тасатать. Унтан Гжатск тăрăхĕнчи хаяр çапăçусем вăхăтĕнче (унта фашистсем питĕ вăйлă укрепленисем тунă пулнă) кунĕ-кунĕпе йывăç тăрринче ларса, хăйĕн взводне ăçтарах пемеллине кăтартнă — корректировщик пулнă ĕнтĕ. Фашист салтакĕсене Павлов минометчикĕсем нумай «шĕкĕлченĕ» ун чух!

Çакăн хыççăн ăна татах кĕске вăхăтлăха вĕренме яраççĕ. Вăл унтан тӳрех аслă лейтенант пулса таврăнать.

...1942 çул. Август. Хĕвеланăç фронтĕнче эпир тăшманăн обоುронине 105 км сарлакăш татса, гитлеровецсене çĕмĕрсе кĕрсе каятпăр.

Çак çапăçусенче Илья Павлов хăй нимрен хăраман, хăюллă та паттăр командир пулнине пит те лайăх кăтартрĕ. Ун чухне вăл полк штабĕн начальникĕччĕ ĕнтĕ. Пĕрмаях подразделенисен умĕнче пулса, вăл темиçе яла тăшманран тасатать. Пĕррехинче танковăй десантпа кĕрсе каять, хăй темиçе тăшман салтакне пĕтерсе хурать. Тепрехинче, темиçе боецпа пĕрле, тăшман аллинчи яла юланутсемпе кĕрсе каять те, тăшман йăвинче ним майсăр паника туса хурать, çав вăхăтра пирĕн пехота яла пур енчен те хупăрласа илет...

Анчах вăрçăра час та часах кĕтмен япаласем пулаççĕ. Çав кунсенче, пĕрмай малтан мала пырса, подразделенисем сасартăк тăшман ункине лекнĕ. Фашистсем халь ĕнтĕ пирĕннисене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкма шутланă, анчах совет боецĕсене пурĕпĕр çĕнеймен вĕсем. Тăшманăн пур атакисене те пирĕн боецсем çапа-çапа аркатнă.

Пĕр кунĕнче фашистсем тăхăр хутчен атакăланă, юлашкийĕ— «психикăллă атака» пулнă. Шăпах пĕр батальон командирне амантнă та ун чух, Павловăн çав батальон пуçне тăма тивнĕ.

Малтан гитлеровецсем 30 танк янӑ. Пирӗн боецсем вӗсенчен ҫуррине яхӑн ҫӗмӗрсе, ҫунтарса ярсан, юлашкийӗсем каялла тарнӑ. Унтан тӑшманӑн 40 бомбардировщикӗ вӗҫсе ҫитнӗ, вӗсем бомба пӑрахман вырӑн та хӑварман, анчах тарӑн траншейӑсене кӗрсе ларнӑ батальона нимех те тӑваймап. Юлашкинчен вара, совет боецӗсем пуҫӗпех пӗтрӗҫ пулӗ тесе, гитлеровецсен батальонӗ ним пӗшкӗнмесӗрех, ҫаннисене тавӑрса, кӑшкӑрса, шӑхӑрса ҫывхарма тытӑннӑ. Фашистсем пурте ӳсӗр пулнӑ...

Павлов хӑйӗн боецӗсене пеме хушман. Вӗсене вӑл питӗ лайӑх хатӗрленсе тӑма ҫеҫ хушнӑ.

Акӑ, тӑшмансем 200 метр таран ҫывхарнӑ. Унтан 150, 100... 80—70 метра ҫитнӗ. Тӑшман салтакӗсен сӑнӗсем те, вӗсем ӳсӗрри те лайӑх курӑннӑ халь.

— Огонь! — тинех команда панӑ Павлов. Ҫав самантрах пур пулеметсем те, автоматсем те, винтовкӑсем те шатӑртатма тытӑннӑ...

Темиҫе минутран чӗррӗн юлнӑ фашистсем упалене-упалене тарнӑ. Пирӗн окопсем умӗнче 200 ытла фашист вилли выртса юлнӑ.

Ҫак ҫапӑҫура Павлова хытӑ амантнӑ (ку унӑн тӑваттӑмӗш суранӗ пулнӑ), анчах вӑл вырӑнтах юлнӑ, батальона ҫапӑҫу пӗтичченех ертсе пынӑ. Темиҫе кунтан унӑн кӑкӑрӗ ҫинче Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр йӑлтӑртатнӑ...

Иртнӗ хӗллехи ҫапӑҫусенче те вӑл питӗ хастарлӑ та хӑюллӑ пулнӑ. Пӗрре вунӑ кун хушши таттисӗр пынӑ наступлени вӑхӑтӗнче вӗсен подразделенийӗ ҫирӗм яла тӑшманран тасатрӗ.

Хӗллех ӑна, 22 ҫулхи чӑваш каччине, капитан званине пачӗҫ.

Ҫавӑн пек ӗнтӗ пирӗн чаҫри чӑвашсенчен пӗри, ҫамрӑк коммунист, пултаруллӑ командир.

## СНАЙПЕР ФЕДОТОВ

Хура сӑнлӑ лутра кӑна ҫын. Питӗ ҫемҫен, йӑвашшӑн калаҫать.

— Хушӑлкаран эпӗ, пӗлетӗр пуль — «Нарспи» ҫӗршывӗ...— тесе пуҫларӗ вӑл хӑйӗн калавне.

Ана итленӗ чух чӗрере темле иккӗленӳ ҫуралчӗ: мӗнле геройла ӗҫ тума пултарнӑ-ши ҫак ача сассиллӗ йӑваш ҫын, Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденне мӗншӗн панӑ-ши ӑна?

Анчах Хушӑлка чӑвашӗ Николай Дмитриевич Федотов хӑй ҫинчен каласа панине ҫав тери итлес килчӗ, кунпа пӗрлех малтанхи иккӗленӳ те пӗтрӗ, вӑл хӑй ман куҫ умӗнчех ӳссе пычӗ.

Тӗрӗс ӗнтӗ, Николай Дмитриевич Хушӑлкари Ворошилов ячӗпе хисепленекен колхозри конюхра ӗҫленӗ чухне пит ҫемҫе кӑмӑллӑ, йӑваш, сӑпайлӑ ҫын пулнӑ. Ӗҫлессе питӗ тӑрӑшса ӗҫленӗ, ялан ыр ятлӑ пулнӑ, хирӗҫме-тавлашма юратман, пур ҫӗрте те йӗркеллӗх пулнине килӗштернӗ. Лайӑх ӗҫленӗшӗн премисем те илнӗ вӑл. Анчах та ку вӑрҫӑччен, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыва тискер тӑшман килсе тапӑниччен пулнӑ. Мирлӗ, телейлӗ вӑхӑтра.

Фронта килсен Федотов пачах улшӑннӑ. Унӑн чӗринче вӗри курайманлӑх вӗреме тытӑннӑ, вӑл, совет ҫӗршывӗн чӑн-чӑн патриочӗ пулса, Гитлер захватчикӗсене епле те пулин хытӑрах, ҫирӗпрех тавӑрасси ҫинчен, симӗс шинеллӗ хурахсене ӑҫта тӗл пулнӑ, ҫавӑнтах пӗтересси ҫинчен ҫеҫ ӗмӗтленнӗ.

...Вӑл 1941 ҫул вӗҫӗнче тата 1942 ҫул пуҫламӑшӗнче фашистсене Мускав патӗнчен хӗвеланаҫнелле хӑваланӑ. Кашни кунах

тискер тăшман çунтарса янă совет ялĕсене, персе-çакса вĕлернĕ совет çыннисен виллисене курнă. Чĕринчи тарăху тата ытларах ÿснĕ унăн. Çавăнпа та наступлени вăхăтĕнче ялан малти ретре пынă, кашни куçа курăннă тăшмана персе ÿкерме тăрăшнă.

— Пĕррехинче эпир чарăнса тăтăмăр, çавăн пек тÿр килчĕ,— каласа парать Федотов.— Нимĕçсем контратака тума тытăнчĕç. Эпир юриех пемесĕр выртрăмăр. Çывăхарах килччĕр-ха, кăтартăпăр вара, тетпĕр. Чăнах та, хайхискерсем пирĕн çывăха 80—100 метра çитрĕç. «Парăнăр!» — тесе кăшкăрма тапратрĕç. Çав вăхăтра вара эпир пурте пĕр харăс автоматсемпе винтовкăсенчен çунтарма тытăнтăмăр та — фашистсем çавапа çулнă пекех тăкăнчĕç! Питĕ вĕри пулчĕ вĕсене!

...С. хули патĕнче аманса виçĕ уйăх госпитальте выртнă хыççăн хăйсен чаçне таврăнсан, Николай Федотов парти кандидатне кĕнĕ. Кандидат карточкине алла илнĕ чух вăл çакăн пек çирĕп сăмах панă:

— Тăван çĕршывшăн эпĕ пуçăма хума та хатĕр. Гитлер захватчикĕсене хамăрăн çĕр çинчен хăваласа яричченех паттăррăн çапăçатăп...

Шăп çав вăхăтра подразделенире снайперсен ушкăнне йĕркелеме пуçланă-мĕн. Федотов тÿрех кайса çырăннă çавăнта.

— Манăн куçсем пит лайăх кураççĕ. Алăсем çирĕп. Эпĕ фашиста инçетренех курса персе ÿкерме пултаратăп!

Çакăн хыççăн Федотов подразделенири чи хисеплĕ çынсенчен пĕри пулса тăрать. Снайпер винтовкипе оптически прибора вăл ик-виç кун хушшинчех пĕлсе çитет те, кулленех «ухутана» çÿреме тытăнать. Тул çутăличчен чăн малти лини хыçне кайса хăйне валли пĕчĕк окопсем хатĕрлет, унтан ниçтан курăнмалла мар маскировка туса, нимĕçсен оборонине сăнама тытăнать. Ăçта та пулин пĕр гитлеровец кĕлетки курăнсанах, ăна мушка тăррине лартать те — кĕрс! тутарать. Лешĕ вара тек нихçан та тăмалла мар ÿкет...

Федотов хырăмпа шуса тепĕр окопа кайса выртнаçать, татах сăнать.

Пĕтĕмпе вăл 22 фашиста вĕлернĕ ĕнтĕ.

— Пĕррехинче хама та лектеретчĕç, чееленнипе çеç хăтăлкаласа юлтăм,— тет Федотов, кăмăллăн кулса.

— Мĕн пулчĕ апла? — ыйтрăмăр эпир.

— Вĕсеп снайперĕ асăрханă мана. Перет те перет. Пульăсем хам çуммах пыра-пыра тăрăнчĕç. Позици улăштарас пулать, тесе шухăшларăм çеç — пуля алăри пăшала пырса чанклатрĕ. Тепри пуçри пилоткăна шăтарса кайрĕ. Ак япала! Мĕн тăвас куна? Шутсăр тарăхрăм. Пăхатăп — хампа юнашарах такам пăрахнă кив пиншак выртать. Часрах çавна туртса илсе бруствер çине çын пуçĕ пек туса хутăм та, хам часрах запасной окопа шуса кайса выртрăм. Сăнатăп... Нимĕç снайперĕ татах пеме тапратрĕ. Эпĕ вăл ăçтан пенине асăрхарăм. Персен-персен, хайхискер бруствер çинчен кăштах çĕкленчĕ — хăй пенинчен усси пулни-пулманнине тĕрĕслеме ĕмĕтленчĕ курăнать. Эп унччененех тĕллесе выртнăччĕ. Халĕ, вăл çĕкленнине курсанах, спусковой крючок çине пусрăм та фашиста шăпах лектертĕм! Каçченех курăнса выртрĕ вара унăн пуçĕ... Каярахри кунсенче çавнашкалах тепĕр икĕ снайпера тирпейлерĕм...

...Подразделенире Федотов юлташăн авторитечĕ кунран кун

ӳссе пырать. Халь вăл çамрăк снайперсене вĕрентме тытăннă. Нумай пулмасть подразделени командирĕпе парторг Федотовсен тăван колхозĕн членĕсем патне çакăн пек çыру çырса янă:

— Сирĕн колхозра конюх пулса ĕçленĕ Федотов юлташ — примерлă, хастарлă, нимрен те хăраман салтак. Вăл кашни кунах фашист салтакĕсене пĕтерсе пырать, пирĕн çĕнтерӳ сехетне çывхартма пĕтĕм вăйне хурса тăрăшать. Çавăншăн ăна правительство Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăларĕ. Федотов пек патриотсене — мухтав!

*1943 ç.*

# ТУПМАЛЛИ

Чăваш каччи Захаров тата ыттисем . . . 5
Майор калавĕ . . . . . . . . . 42
Старик № 33 . . . . . . . . 51
Куккук . . . . . . . . 89
Вырăс хĕрарăмĕ . . . . . . . . 112
Юрă пурĕпĕр янрать . . . . . . . 150

ПАТТĂРСЕМ ПИРĔНПЕ ЮНАШАР . . . 163

Ăмăрткайăк . . . . . . . . 165
Парăнман, çĕнтернĕ! . . . . . . . 183
Нумайăшĕнчен пĕри . . . . . . . 224

САЛТАКСЕМ КУЛМА ТА ЮРАТАТЧĔÇ . . 245

Салтаксем кулма та юрататчĕç . . . . 247
Сахвинепе «мессершмитт» . . . . . 252
Тигр чĕлхи . . . . . . . . 263
Мыскараллă кун . . . . . . . 274
Мунча . . . . . . . . 283
Чечек çыххи . . . . . . . 291

НИХÇАН ТА МАНАС ÇУК . . . . . 301

Пуля çинчен çырнă сăвă . . . . . . 303
Салтак чухнех туслашрăмăр . . . . 320
Нихçан та манас çук . . . . . . 330
Кĕнекесем вут-çулăмра çуралнă . . . 358
Советский патриот (фронтри журналист сумкинчи тетрадьрен) . . . . . . 372

Агаков Леонид Яковлевич

СОЛДАТЫ

ПОВЕСТИ И РАССКАЗЫ

*На чувашском языке*

Редактор *М. П. Сениэль*
Художник *Вл. Л. Агаков*
Худ. редактор *А. А. Афиногенов*
Тех. редактор *В. И. Павлова*
Корректоры *В. В. Ларионова, Л. А. Иванова*

С(ЧУВ)2
А 23

НТ 32227. Сдано в набор 29-VII-1974 г. Подписано к печати 14-III-1975 г. Формат 84×108/32. Бум. типографская № 2. Физ. печ. л. 12. Учетно-изд. л. 19,6. Заказ 2218. Тираж 25000 экз.
Цена 83 коп.

Чувашское книжное издательство
г. Чебоксары, пр. Ленина, 4

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли
Совета Министров Чувашской АССР.
г. Чебоксары, Канашское шоссе, 13

А $\frac{0733-076}{М136(03)-75}$ 40—75

© Чувашское книжное издательство, 1975 г.

*ХИСЕПЛĔ ВУЛАКАНСЕМ!*

*Çак кĕнекене вуланă хыççăн вăл сире килĕшни-килĕшменни çинчен, малашне сирĕн мĕнле кĕнекесем ытларах вулас килни çинчен çырса яма ыйтатпăр.*

*Пирĕн адрес: г. Чебоксары, пр. Ленина, 4, Чувашкнигоиздат, редакция художественной литературы.*